К84.09(=Чув)
А23

ЛЕОНИД АГАКОВ

4-38899

# ЫЛТĂН ВĂЧĂРА



Национальная библиотека ЧР
4-038899

МБА
28.04.16

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ЕНИЯ



Ау
А23

Шкул библиотеки

ЛЕОНИД АГАКОВ

# ПĔР ХУЛАРА — ЫЛТĂН ВĂЧĂРА

## КАЛАВСЕМ

ПРОВЕРЕНО

аб

Чăваш АССР
Государство Издательстви
Шупашкар · 1958

## ХАКЛА АЧАСЕМ, ВУЛАКАНСЕМ!

1941—1945 çулсенче пулнă Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, совет халăхĕ хамăрăн юратнă Тăван Çĕршывамăрăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн, хăйĕн телейĕшĕн хăватлăн та паттăррăн çапăçнă чух, пирĕн пионерсемпе шкул ачисем те нумай паттăр ĕçсем тунă. Тăшман вăхăтлăха йышăнса илнĕ вырăнсенче, хуласемпе ялсенче вĕсем фашистсене хирĕç пыракан кĕрешĕве хастаррăн хутшăннă.

Çак кĕнекери произведенисенче пуринче те çавăн пек паттăр ачасем çинчен çырнă. «Пĕр хулара» повĕçре ачасем йывăр аманнă совет воинĕсене çăлса сыватаççĕ, вăрттăн листовкăсем пичетлеме пулăшаççĕ, вĕсене халăх хушшинче салатса çынсен кăмăлне çĕклеççĕ. «Ылтăн вăчăра» повĕçре ачасем партизансен отрядĕнче пулса пысак ĕçсем тунине кăтартнă. Калавсенче те ачасем тăшмана хирĕç епле кĕрешни çинчен çырнă.

Кĕнекери повĕçсемпе калавсем пирки хăвăрăн шухăшăрсене, вĕсем сире кăмăла кайни е кайманни, малашне сирĕн мĕнле кĕнекесем ытларах вулас килни çинчен çак адреспа пĕлтерĕр: **г. Чебоксары, Дом печати, Чувашгиз, сектор детской литературы.**

Ч-38899

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО 20 11,15



# Пĕр хулара



...Манăн атте граждан вăрçи вăхăтěнчех взвод командирě пулнă. Нумай фронтсенче çапăçнă вăл. 1918 çулта Украинăра нимěçсене тӳпеленě. Вунтăххăрмěшěнче Çěпěртен Колчака хăваланă. Унтан тěрлě бандăсене пěтерсе çӳренě. Çапăçусенче темиçе хут та аманнă. Сывалнă та каллех çапăçăва кайнă. Пěр сăмахпа каласан, хамăрăн Тăван çěршывшăн пěтěм чунне, пуркăçне пама хатěр çын, чăн-чăн вырăс салтакě пулнă вăл. Çавăнпа та Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан тепěр куннех, хăйне повестка пырса парассине кěтмесěрех, çурăмě хыçне кутамкка çакса, вăл военкомата тухса утрě.

Атте вăрçа кайсан тепěр уйăхран аппа та тухса кайрě,— вăл пирěн телеграфра ěçлетчě,— вара эпир килте виççěн кăна тăрса юлтăмăр: анне, эпě тата манăн Коля ятлă шăллăм. Эпě ун чухне вунтăваттăраччě, Коля — вуниккěре.

Пурнăç пěтěмпех улшăнчě пирěн. Вăрçăччен эпир яланах питě шавлăн, туслăн та савăнăçлăн пурăнаттăмăр, анчах халě пирěн кил пушансах юлчě. Часах тата

анне те вăрçăччен атте ĕçлесе пурăннă завода ĕçлеме кайса кĕчĕ те, эпир килте Кольăпа иксĕмĕр çеç пурăнма пуçларăмăр. Вăхăт çав тери вăрахăн шурĕ, эпир хамăра киçта кайса чикме пĕлместĕмĕр...

Тӳсмелле мар кичем те салхуллă пулса çитрĕ юлашкинчен. Каçхине, анне ĕçрен таврăнсан та, çав салхулăх пĕтместчĕ, мĕншĕн тесен анне пĕрехмай хуйхăратчĕ. Чăнах та, куна вăл пире систересшĕн марччĕ, анчах эпир унăн сăнĕ куллен улшăнса, питçăмартисем путса пынине, вăл ялан тарăнăн сывла-сывла илнине, нихçан та ϵлĕкхи пек кулманнине асăрхаттăмăр. Хуйхăрма сăлтавĕ те пурччĕ çав: аттерен те, аппаран та çырусем пачах килме пăрахрĕç, радио кашни кун тенĕ пекех фашистсем пирĕн çĕр çинелле шалтан-шала кĕрсе пыни çинчен, вĕсем хăйсем йышăнса илнĕ вырăнсенче калама та çук тискеррĕн ашкăнни, ним айăпсăр совет çыннисене асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтерсе тăратчĕ...

— Текех эп капла пурăнма пултараймастăп,—терĕм аннене пĕр ирхине.

Вăл ман çине хăйĕн пысăк кăвак куçĕсемпе тĕлĕнсе пăхрĕ. Ман сăмахсене тăруках ăнланаймарĕ те пулас.

— Мĕн тетĕн çав эс?

Эпĕ тепĕр хут каларăм.

— Мĕн çитмест-ха сана?— терĕ вара вăл, кăмăлсăрланнă пек пулса.

— Ĕçлеме кĕретĕп ăçта та пулин,— пĕлтертĕм эп ăна хам малтанах шут туса хунине.

Анне тĕлĕнсех кайрĕ.

— Ан калаç кирлĕ мара,— аллипе сулчĕ вăл кăшт тăхтасан.— Тепĕр эрнерен шкула кайма пуçламалла. Тата... халлĕхе выçă лармастпăр вĕт-ха, эп ĕçлесе илни те çитет пире пурăнмалăх.

— Ман юлташсем нумайăшĕ ĕçе кĕнĕ, фронта кайнисен вырăнне тăнă. Эпĕ кăна ним тумасăр сулланса çӳретĕп. Анчах эпĕ мĕнрен кая вĕсенчен? Манăн та вĕсемпе тан пулас килет,— терĕм ăна хирĕç.

— Вĕренесси тата? Санăн вĕренес пулать!

— Вĕренесси те пулĕ хăй вăхăтĕнче.

Анне йывăррăн сывласа илчĕ.

— Ну, хăвăн кăмăлу пултăр эппин. Анчах аçу таврăнсан ятламĕ-ши пире куншăн?

— Ун чух эпĕ унпа хам калаçатăп,— терĕм.

Çав кунах эпĕ типографине кайса ĕçе кĕтĕм. Типографи директорĕ — манăн аттен пит те çывăх тусĕччĕ, вĕсем граждан вăрçинче пĕрле пулнă. Анчах унăн хăрах ури уксахчĕ те, халĕ вăрçа каяйман вăл. Эп ун патне ыырса хамăн шухăша каласа парсанах, вăл мана ырласа илчĕ.

— Маттур, Юрка, тĕрĕс тăватăн! Сисетĕп, санăн кăкрунта чăн-чăн патриот чĕри тапать,— терĕ.— Пире халь рабочисем питĕ кирлĕ, эпĕ сана темиçе кунтанах печатник ĕçне вĕрентсе çитеретĕп! Курăн акă...

Эпир кабинетран цеха тухрăмăр. Директор мана пĕр машина патĕнче ĕçлекен хытканрах, кăвакарнă уссиллĕ, куçлăхне çамки çине хăпартса лартнă рабочи патне илсе пычĕ те:

— Матвей Матвеич, пополнени килчĕ, вĕрентес пулать,— терĕ. Çавăнтах мана хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.— Кирилл Семенович Репкин ачи... Пĕлетĕн-и?

— Ашшĕне пĕлетĕп,— терĕ старик, унтан куçлăхне çамси çине антарса лартрĕ те, мана шанман пек пулса, куçран пăхрĕ:— Чăнласах ĕçлес тетĕн-и?

— Чăнласах,— терĕм эпĕ.— Фронта кайнисем вырăнне...

— Юрать апла пулсан!— Вăл каллех куçлăхне çамки çине хăпартса лартрĕ.— Сан пек шĕвĕрсенчен хам ĕмĕрте эпĕ нумай маçтăрсем çитĕнтернĕ. Анчах асту — итленĕ пултăр, иртĕнекенсене юратмастăп эпĕ,— асăрхаттарчĕ Матвей Матвеич.

Çав кунах вăл мана вĕрентме тытăнчĕ. Малтан хăй туса кăтартать, унтан мана тутарать. Эп йăнăшсан — тата тепĕр хут кăтартать, ман йăнăша тӳрлетет. Çапла

вара эпĕ пĕр эрне хушшинчех пичетлекен машина çинче ĕçлекен «накладчик» пулса тăтăм.

Питĕ тăрăшса ĕçлерĕм ĕнтĕ, тĕрĕссипех калас пулать. Ватă рабочисем те мухтатчĕç мана.

— Ашшĕ пекех хастар пулать ку...

Тепĕр чух васкавлă заказсем пулатчĕç те, вуншар-вуникшер сехет те тăраттăм машина патĕнче. Темле ыванни те сисĕнместчĕ, мĕншĕн тесен хушнă ĕçе епле те пулсан хăвăртрах, лайăхрах тăвасси çинчен çеç шухăшлаттăм. Манăн çеç мар, ыттисен те çавăн пекех пулнă ĕнтĕ вăл.

Эпĕ ĕçлеме тытăнсан пĕр виçĕ эрнерен пирĕн икĕ хĕр фронтри типографие ĕçлеме кайрĕç. Çаçалапа, ĕçрен киле каяс умĕн, мана Василий Дмитриевич (пирĕн директор çапла ятлăччĕ) темшĕн хăйĕн кабинетне чĕнсе кĕртрĕ.

— Итле-ха, Репкин, эсĕ пирĕн рабочисем каллех сахалланнине пĕлетĕн-и?— тесе ыйтрĕ вăл.

— Пĕлетĕп-çке,— терĕм эпĕ.

— Хамăра ĕçлеме тата йывăртарах пулассине чухлатăн-и? Пирĕн фронт заказĕсем нумай вĕт. Плана та тултармалла. Мĕн тăвăпăр?

— Йывăр пулсан та, ĕçлĕпĕр, заказсене пурпĕр вăхăтра туса пырăпăр.

Василий Дмитриевич ман çине кăмăллăн пăхса илчĕ.

— Тĕрĕс калатăн, Юрка. Маттур! Талăкĕ-талăкĕпе ĕçлемелле пулсан та, хамăртан мĕн ыйтнине тăватпăрах ĕнтĕ, çĕршыв умĕнче намăса кĕмĕпĕр, анчах фронта кайнисем вырăнне çĕнĕ рабочисем тупсассăн аван пулĕччĕ. Епле шутлатăн?

«Мĕншĕн ыйтать ку манран ахаль те паллă япала çинчен?.. Рабочисем тупсан аван пулассине хăй пĕлмен пек...»— тесе шутларăм эпĕ, кăштах тĕлĕнсе.

— Паллах, тупас пулать...

— Анчах та ăçтан тупас-ха вĕсене, Юрка?

— Пĕлместĕп...

— Тен, санăн хăвăн пек юлташусем пур? Тен, вĕсем пирĕн пата ĕçлеме килме килĕшĕç, э?— тĕпчеме тытăнчĕ Василий Дмитриевич, мана куçран тинкерсе пăхса.— Шухăшласа пăх-ха лайăххрах...

Эп çавăнтах хамăн çывăх туссене, пĕрин хыççăн теприне, аса илме тытăнтăм: Миша, Ваня, Никиша, Петя... Хамăр урамрисене йĕркипех асăнса тухрăм, анчах пĕри те типографире ĕçлеме юрăхлă пулас пек туйăнмарĕ. Вара эпĕ юнашар урама куçрăм. Пуçа тӳрех телейлĕ шухăш кĕрсе кайрĕ.

— Пур!— терĕм Василий Дмитриевича.—Ленин урамĕнче, кунтан инçех те мар, кĕтесри çуртра, икĕ ача пурăнаççĕ, тăвансем. Авдеев хушаматлăскерсем. Сăмах майĕн каласан — йĕкĕрешсем вĕсем, пĕр кунтах çуралнă. Иккĕшĕ те пĕр сăнлă. Пĕри кăшт çӳлĕрех кăна, Сережине Ваççинчен çавăнпа çеç уйăрса илме пулать. Ваççин çӳçĕ кăшт тĕксĕмрех те, Сережăран кăшт хăюсăртарах кăна...

— А эс вĕсене лайăх паллатăн-и?— пӳлчĕ мана Василий Дмитриевич, эпĕ ытлашши нумай калаçма тытăнкă пирки.— Асту, пире йăх-яхсем, çăмăлттайсем кирлĕ мар, пире йĕркеллисем, ĕçлеме юратакансем пулччăр, ху пĕлен...

— Палламасăр! Питĕ лайăх паллатăп, мĕншĕн тесен вĕсем пирĕнпе параллельнăй класра вĕренеççĕ. Пĕлтĕр эпĕ улттăмĕш «А»-раччĕ, вĕсем улттăмĕш «Б»-ра пулчĕç. Қашни переменăрах тĕл пулаттăмăр тата каçсерен кӳлĕ çинче конькипе те пĕрлех ярăнаттăмăр. Пĕринче Сережа пăр çине ӳксе сăмсине катса пăрахрĕ...

Василий Дмитриевич мана каллех пӳлчĕ.

— Ашшĕ кам вĕсен?

— Ашшĕ...— Эпĕ тăруках ланкса лартăм, мĕншĕн тесен Сережăпа Ваççан ашшĕ кам пулнине пĕлмен.

— Ну, вăл кирлех те мар,— аллипе сулса илчĕ Василий Дмитриевич, эпĕ хăйне ответ парайманнине ку-

ра.— Эсӗ каланӑ тӑрӑх, вӗсем начар ачасем пулма кирлӗ мар. Пионерсем пуль вӗт?

— Пионерсем, пионерсем!— хам тӗп-тӗрӗс пӗлсе тӑнине чсрах каласа пама тӑрӑшрӑм эпӗ.

— Апла пулсан, эсӗ вӗсем патне паянах ҫитсе калаҫса пӑхма тӑрӑш-ха. Урӑх ҫӗрте ӗҫлемеҫҫӗ пулсан, тата пирӗн патӑрта ӗҫлеме килӗшеҫҫӗ пулсан — ирхине кунта килччӗр. Тӗплӗрех калаҫса татӑлӑпӑр вара.

— Юрать, юрать, халех кӗрсе тухатӑп!— хаваслансах килӗшрӗм те эпӗ, типографирен тухсан тӳрех ҫав Авдеевсем патне ҫул тытрӑм.

* * *

Вӗсем апат ҫисе лараҫҫӗ-мӗн. Эп вӗсем патне типографи краскипе вараланса пӗтнӗ тумпа пырса кӗрсен— тӗлӗнсех кайрӗҫ, мӗншӗн тесен пире Кольӑпа иксӗмӗре те анне яланах таса, тирпейлӗ ҫӳрететчӗ.

— Эс мӗн кун пек? Ӑҫтан?— ыйтрӗ Сережа.

— Ӗҫрен таврӑнатӑп,— терӗм эпӗ,— ҫула май сирӗн пата кӗрсе тухма шут тытрӑм.

— Автобазӑра ӗҫлеместӗн пулӗ-ҫке?

Эп тӗрӗссипе каласа патӑм.

— Ха! Эпир ун ҫинчен нимӗн те пӗлмен!— куҫӗсене чарсах пӑрахрӗ Ваҫҫа, яланах питӗ тӗлӗнекенскер.

— Ҫавӑнпа юри пӗлтерме килтӗм те ӗнтӗ,— кулкаласа илтӗм эпӗ.

— Пит аван, пит аван!— ҫиме пӑрахсах калаҫма тытӑнчӗ Сережа.— Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа юлташсемпе пит сайра тӗл пулатпӑр. Пурте ерҫмеҫҫӗ пулас, ӗҫлеҫҫӗ. Нумайӑшӗсем колхозсене пулӑшма кайрӗҫ. Пирӗн Ваҫҫа та тӑватӑмкун ҫеҫ таврӑнчӗ. Халь те таврӑнас ҫукчӗ те, хамӑр чӗнсе илтӗмӗр, мӗншӗн тесен аттерен телеграмма килчӗ...

— Ӑҫунтан?— ӑна пӳлсех ыйтрӑм эпӗ.— Вӑл сирӗн ӑҫта вара? Вӑрҫӑра мар-им?

— Вăрçăра пулнă та аманнă. Васильки станцинчи госпитальте выртать, анчах çак кунсенче вĕсене Мускав хыçнелле илсе каяс хыпар пур, тет, çавăнпа та пире хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Курма ĕнтĕ...

— Курма çав. Анне чирлĕ пирки пыраймарĕ, эпир Ваççапа иксĕмĕр çеç кайса килтĕмĕр. Ак, нумай та пулмасть çитрĕмĕр. Питĕ хĕн пулчĕ, станцинче халăх калама çук нумай... Фронт еннелле тăтăшах çарсем кайса тăраççĕ, унтан эвакуированнăйсем вĕçĕ-хĕррисĕр килеççĕ... Эпĕ вакун çинче пĕр ачапа калаçса килтĕм те, ытла та хăрушă япаласем çинчен каласа пачĕ вăл. Тем тĕрлĕ асап та курса пĕтнĕ. Çав тери хĕрхенес килчĕ манăн ăна...

Сережа каланине итлесе ларнă çĕртех мана аттепе аппа аса килчĕç.

«Çав пур хăрушлăхсене те кураççĕ ĕнтĕ вĕсем... Тата... пуçĕсем сывă-ши-ха? Тен, пĕр-пĕр бомба лекнĕ пулсан...»

Чĕре пăчăртансах илчĕ.

«Хăçан курăпăр-ши эпир вĕсене? Курма пулĕ-ши?»

Анчах çавăнтах хам кунта мĕншĕн килнине астурăм та Сережа калама чарăнсанах сăмах пуçласа ятăм.

— Эп сирĕн пата пĕр ĕçпе килнĕччĕ...

— Мĕнле ĕçпе? Каласа пар.

— Эсир ăçта та пулин ĕçлеме кĕме шутламастăр-и?

Ку сăмахсене илтсенех Сережăсен амăшĕ, ку таранччен пирĕн калаçăва пачах та хутшăнмансккер, сĕтел çинчен пуçтарма тытăннă тарелкăсене каялла лартсах мана куçран пăхрĕ.

— Кун çинчен шухăшламан-ха эпир,— пуçне пăркаларĕ Сережа.— Кирлех те пулман та, тата вĕренме те пуçламалла...

— Пирĕн типографире рабочисем çитмеççĕ, нумайăшĕ фронта кайса пĕтрĕç, çавăнпа та директор мана

хамăн юлташсемпе калаçса пăхма хушрĕ,—терĕм эпĕ малалла.— Ĕçне часах вĕренме пулать...

— Эпĕ, хам енчен, пĕр-пĕр ĕçе кĕме те хирĕç мар,— амăшĕ çине пăхса илчĕ Сережа,— анчах анне темле шутлать?

Тинех вара амăшĕ те сăмах хушрĕ.

— Ун çинчен шухăшланă та-ха эпĕ,— терĕ вăл,— анчах хăвăра хĕрхенетĕп-çке, çамрăклах шăм-шакка ватмалла пулать...

— Çу-ук, кунта пĕрре те апла пулмасть, ĕçĕ йывăр мар!— часрах ĕнентерме тăрăшрăм эпĕ. — Машина патĕнче тăмалла кăна!

— Хăшне те пулин, тен, ĕçе ямаллах пулать-и...— эп каланине илтмен пекех, сăмахсене тăсарах каласа хучĕ амăшĕ.— Вăрçи вăрăма каять пулмалла, хаксем те ӳсме пуçларĕç, аттестатпа илсе тăнă укçа çитес çук, хам, сывах маррипе, ĕçлейместĕп...

— Эп хам та çавăнпа ĕçе кайрăм çав,— ăна майлă пулма тăрăшрăм эпĕ.— Халь пирĕн пеккисем нумайăшĕ ĕçлеççĕ — предприятисенче те, учрежденисенче те...

— Шухăшласа пăхас пулать, тӳрех татса калама çук,— терĕ те амăшĕ, турилккесене çĕклесе кухньăналла кĕрсе кайрĕ.

Эпĕ Сережăпа Ваççана тата ытларах калаçтарса çавăрма тытăнтăм.

— Ĕçлесех тесен, пĕрин çеç мар, иксĕрĕн те каяс пулать, атту хăшин те пулин кӳренмелле пулса тухать. Пире те шăпах икĕ çын кирлĕ. Вăт, виççĕмĕр те пĕрле ĕçлеттĕмĕрччĕ вара. Кичем те пулмастчĕ, ĕç те пит лайăх ăнса пыратчĕ пирĕн!

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ,— килĕшрĕç тăвансем.— Анне хирĕç пулмасан, иксĕмĕр те каятпăр.

— Эсир çине тăрарах калаçтарăр ăна. Ĕнентерме тăрăшăр. Пĕр енчен, хăвăра пурăнма çăмăлтарах пулать, тепĕр енчен тата хальхи вăхăтра вĕт... фронта кайнисем вырăнне тăмалла! Фашистсене хăваласа янă хыç-

çăн кашнинченех ыйтаççĕ акă: вăрçă вăхăтĕнче эсĕ мĕн тунă? Çĕнтерӳ валли мĕн панă? Куна мана пирĕн директор Василий Дмитриевич ăнлантарса пачĕ. Вăл шутсăр ăслă тата çав тери кăмăллă çын, граждан вăрçинчен аманса таврăннăскер...

Сережăпа Ваççа мана питех те тинкерсе итлесе ларчĕç. Манăн «агитаци» усăллă пулни сисĕнме пуçларĕ.

— Çапла, тусăмсем,— терĕм эпĕ юлашкинчен,—аннӳ килĕшет пулсан, эсир вара ыран ирхине, саккăр тĕлнелле, типографине пырăр, эпĕ сире тӳрех директор патне илсе кайăп та, пĕтĕмпех калаçса татăлăпăр...

— Юрĕ, пырăпăр,— тесе юлчĕç тăвансем.

Хама директор хушнă ĕçе ăнăçлăнах тума пултарнăшăн савăнса, эпĕ килелле сиккелесе, шăхăркаласа çеç пытăм.

* * *

Ирхине эпĕ хытă пăшăрхантăм: пыраççĕ-ши кусем, çук-ши? Амăшĕн кăмăлне çавăрма пултарчĕç-ши?

Эпĕ килтен çиччĕрех тухса кайма хатĕрленнине кура, анне манран: ăçта пит васкатăн паян?— тесе ыйтрĕ.

— Ĕç пур-ха, часрах çитмелле,— терĕм те эпĕ, вăшт кăна тухса шурăм. Çул тăршшипех пуçран пĕр шухăш тухмарĕ: «Пыраççĕ-ши, пымаççĕ-ши?..» Пымасан, Василий Дмитриевич умĕнче аван мар пулать-çке. Вăт, тейĕ, производствăна пулăшмашкăн пĕртен-пĕр ĕç хушрăм та, ăна та тăвайман!

— Çук, кусемпе ĕç тухмасан — эп урăххисене шыратăп, темле йывăр пулсан та — пурпĕрех тупатăп икĕ рабочи...

Анчах эпĕ ахалех пăшăрханнă иккен. Сережăпа Ваççа улталаман мана. Вĕсем амăшĕпе чиперех калаçса татăлнă та сакăр сехет тĕлне тĕп-тĕрĕс çитрĕç типографи умне. Вĕсене чӳрече витĕр курсассăнах эп машинăна чарса лартса цехран урама сиксе тухрăм. Хĕпĕр-

тенипе иккĕшне те ытала-ытала чăмăртарăм та вĕсене часрах Василий Дмитриевич патне илсе кайрăм.

— Акă вĕсем, хайхи манăн туссем! Килĕшрĕç, килчĕç!— тесе пĕлтертĕм ăна хавассăн.

— Аван, пит аван, çамрăк тусăмсем,— терĕ директор, тăвансем çине ăшшăн пăхса.— Хапăл тусах йышăнăпăр сире... Миçешер çулта-ха эсир?

— Иксĕмĕр те вунтăваттăра,— ответ пачĕ Сережа, çемçен кулса.

— О-о,— терĕ Василий Дмитриевич,— хăвăр çула кура мар маттур иккен эсир! Сире эп аслăрах тесе... Аçăр ăçта-ха сирĕн?

— Вăрçăра аманнă та халь госпитальре выртать.

— Аха, апла эсир герой ывăлĕсем? Ку та пит аван. Производствăра аçăр пекех паттăр пулса ĕçлессе шанатăп эппин...

Директор капла калани Сережăпа Ваççана кăшт иментерчĕ. Ăна сиссе, Василий Дмитриевич вĕсене çурăмĕсенчен лăпкаса илчĕ.

— Ничего, ничего, ачамушкăсем, часах хăнăхатăр акă. Эп çынни çавăн йышши — мухтама та, кирлĕ пулсан хăтăрма та юрататăп...

Эпир тăватсăмăр та цеха кайрăмăр. Василий Дмитриевич Сережăпа Ваççана та хайхи Матвей Матвеевич патне илсе пычĕ.

— Татах пополнени килчĕ, начальник,— терĕ вăл. (Матвей Матвеич печатнăй цех начальникĕччĕ).—Вĕрентес пулать...

— Мĕнех вара, вĕрентĕпĕр, пирĕн ĕçĕ çавă!— Ваççапа Сережа çине тинкерсе пăхрĕ старик.

Çавăнтах ачасене вĕсен мĕн тумалли çинчен калама тытăнчĕ. Вăл ăнлантарнисене тăвансем питĕ тимлĕн итлерĕç, кĕçех хайсем те ыйтса пĕлме тапратрĕç.

— Э-э, сиртен тулкки пулать!— терĕ вара Матвей Матвеич.— А эс,— пуçĕпе ман еннелле сулчĕ вăл,—

тăтăшах пулăшса пыр вĕсене. Эсĕ вĕт пирĕн кадровăй рабочи ĕнтĕ, пĕр уйăх ĕçлетĕн — пĕчĕк стаж мар ку!

Цехрисем пурте кула-кула илчĕç. Эпĕ хам та тӳсеймерĕм — вăл шӳт тунине пула кулса ятăм:

— Есть, Матвей Матвеич!

* * *

Шкулта та лайăх вĕреннĕскерсем, Сережăпа Ваççа кунта та ĕçе пит хăвăрт хăнăхса пычĕç. Тепĕр вунă кунтан Сережа ман пекех «накладчик» пулса тăчĕ, Ваççи «американка» текен машина çинче типографире темиçе çул ĕçленĕ квалификациллĕ рабочи нормине тултарса пыракан пулчĕ.

Василий Дмитриевич, цеха кĕрсен, никам патне пыриччен малтан пирĕн пата пыратчĕ.

— Салам, çамрăк рабочи класс! Ну, епле çĕмĕрттеретĕр? Сывлăхăрсем мĕнле, заданисем епле тулса пыраççĕ?

— Тавтапуç, нихăш енчен те аптрамастпăр-ха, пурте йĕркеллĕ,— тесе ответ параттăмăр эпир ăна.

— Ну, ну, пăхăпăр, курăпăр,— тетчĕ те вара вăл, пирĕн ĕçе тĕрĕслеме тытăнатчĕ. Ĕçĕ чăнах та аван пулнă пулсан, çурăмран лăпкаса е пуçран ачашласа илетчĕ, пĕр-пĕр кулăш каласа култаратчĕ, анчах та брак таврашĕ асăрхасан (калăпăр, темиçе листа чалăш çапăннă пултăр) — намăслантарма тытăнатчĕ.

— Ку мĕнле фокус тата? Қам ирĕк пачĕ сана кун пек брак тума? Эсĕ, ăслă пуç, шутласа пăх-ха: снарядсем тăвакан заводсенче те çакăн пек юрăхсăр продукци тума тытăнсан — мĕн пулса тухать? Пăсăк снаряд пĕр фашиста та вĕлерейместь вĕт, э? Кама кирлĕ кун пек ĕç? Кама усăллă? Тăшмана çеç усăллă эпир хальхи вăхăтра начар ĕçлени,— акă мĕн! Тылра та фронтри пекех ĕçлемелле!

Вăл çапла ăс пама тытăнсан, ниçта кайса кĕме çукчĕ.

Ху айӑплӑ та — хирӗç нимӗн те калаймастӑн, çӗрелле пӑхса кӑна тӑратӑн вара...

Çапах та, хӑш чухне çавнашкал хӑтӑркалатчӗ пулсан та, Василий Дмитриевич хӑй пит юрататчӗ пире, эпир ӑна кашни кунах, кашни утӑмрах сисеттӗмӗр. Яланах вӑл эпир мӗнле пурӑнни çинчен, килтисем çинчен ыйтса пӗлетчӗ. Пӗрре, Сережӑсен амӑшӗ хытах чирлеме тытӑнсан, ун патне хӑй кайса пӑхнӑ, унтан типографи лашине кӳлсе хӑй тухтӑр илсе пынӑ. Тепринче тата пире виçӗ лав вутӑ илсе пырса партарчӗ.

— Сире пулӑшмасан юрамасть, мӗншӗн тесен сирӗн аçӑрсем пирӗншӗн фронтра юн юхтараççӗ,— тетчӗ вӑл хӑйне тав тусан.

Ну, эпир те вара пур вӑя хурса, тӑрӑшса ӗçлеттӗмӗр. Кунран-кун аванланса пыратчӗ типографири ӗç. Пӗр шутласан, пирӗн савӑнмалла кӑначчӗ.

* * *

Анчах та вӑл кунсенче савӑнма çукчӗ çав...

Фронтран килекен хыпарсем кунран-кун хӑрушланчӗç. Фронт пирӗн пӗчӗк хула патнеллех куçса пычӗ. Эвакуированнӑйсен обозӗсем кунӗн-çӗрӗн, татти-сыпписӗр хӗвелтухӑçнелле, Мускав еннелле тӑсӑлатчӗç. Пирӗн хуларан та нумайӑшӗ тухса кайма пуçларӗç. Пур çӗрте те — килте те, ӗçре те, урамра та — фашистсем кунталлах çывхарса килни, пирӗн хӑрушӑ мар вырӑнсене, тыла куçса кайма кирли çинчен ытларах та ытларах калаçрӗç.

Манӑн анне те темиçе хутчен сӑмахласа илчӗ ун пирки.

— Малашне те кун пекех пулсан, пирӗннисем тӑшмана чараймасан, эпир те çынсем хыççӑн каятпӑр пуль...

— Аçта кайӑпӑр, анне?— ыйтрӗ Коля шӑллӑм.

— Вӑрçӑ çук çӗре...

— Халлӗхе кунта та вӑрçӑ çук-ха вӗт?

— Çук та, пулма пултарать çав... Фашистсем кунтан çĕр те çирĕм çухрăмра кăна, теççĕ.

— Унта, ют çĕрте, епле пурăнăпăр-ха эпир?

— Ĕçлĕпĕр, кунти пекех ĕçлесе пурăнăпăр. Совет çĕрĕнче пур çын валли те ĕç тупăнать вăл... Никам та выçса вилмест.

— Анчах эпир кунтан тухса кайсан, атте пире тупаймасть вĕт кайран? Ăна пуçĕпех çухататпăр?

— Ан хăра, ачам, вăрçă пĕтсен, пурте пĕр-пĕрне шыраса тупĕç...

Пирĕн директор та темле улшăнма пуçларĕ.

Хытă пăшăрханчĕ пулмалла вăл. Çынна палăртасшăн марччĕ вăл ăна, анчах та эпир аванах сисеттĕмĕр: рабочисене ытларах васкатма, тепĕр чух вĕсем çине кăшкăркалама та пуçларĕ, темшĕн типографи патне темиçе лав чус-хăма турттарса пырса, плотниксене пысăк ещĕксем тутарма тытăнчĕ, хăй те вĕсемпе пĕрле ĕçлерĕ. Малтанах эпир ку мĕне пĕлтернине чухласа илеймерĕмĕр, анчах темиçе кунтан тахăшĕн сăмах тухрĕ:

— Пирĕн директор типографие инçетри тыла ăсатма хатĕрленет...

— Эпир ăçта каятпăр вара?

— Тăвата еннелле...

Çапах та вăл цеха кĕрсен пире яланах хаваслантарма тăрăшатчĕ, кулкаласа та, шӳт туса та илетчĕ.

— Ничего, ничего, ачамушкăсем, пирĕн паттăрсем фрицсене часах каялла хӳтĕрсе яраççĕ акă...

Анчах радио çаплах ырă мар хыпарсем илсе килетчĕ.

Пĕр ирхине Василий Дмитриевич пирĕн цеха çав тери васкаса пырса кĕчĕ. Ун çине пăхсанах эпир темле ырă мар ĕç пулнине сисрĕмĕр.

— Нимĕçсем пирĕн хуларан çитмĕл километрта çеç, юлташсем,— терĕ вăл кăштах чĕтрекен сасăпа.— Кам пĕлет, тен, ик-виç кунтан пирĕн хулана та çитĕç. Лăпкă пулăр, юлташсем... Пирĕн хамăрăн типографине çăлас



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-38899

пулать. Пĕр машина та, пĕр литера* та фашистсен аллине ан лектĕр. Эпĕ типографин пĕтĕм пурлăхне тыла ăсатасшăнччĕ, анчах та халь кая юлтăмăр ĕнтĕ, вакунсем çитмеççĕ. Çавăнпа та пурлăха ăçта кирлĕ унта пытарас пулать... Тăшман кунта нумай тытăнса тăрас çук, ăна пурĕпĕр хăваласа ярăпăр, каллех малтанхи пек ĕçлеме пуçлăпăр. Машинăсене пурне те упрас пулать. Ăнланатăр-и?

— Ăнланатпăр,—терĕç рабочисем пĕр сасăпах, анчах та пит те салхуллăн.

Василий Дмитриевич кăтартнă тăрăх, эпир пурте ĕçе тытăнтăмăр. Пичетлекен машинăсен чи кирлĕ пайĕсене кăларса илсе, шрифтсене пĕр çĕре пухса, типографи хыçĕнчи пахчана шăтăксем алтса пытартăмăр, çиелтен ним палăрми туса шăлса лартрăмăр. Кирлĕ мар хутсене çунтарса ятăмăр, лайăххисене подвалăн чи тĕттĕм кĕтесне кĕртсе хурса, çиелтен тĕрлĕ ăпăр-тапăр купаларăмăр. Анчах «американка» текен пичетлемелли пĕр пĕчĕк машинăна тата темиçе кассăри вĕтĕ çĕнĕ шрифта Василий Дмитриевич пытарттармарĕ.

— Кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ-ха,— терĕ вăл.— Кусене эпир çĕр айне чикмĕпĕр. Кусене эпир урăх çĕре пытарăпăр...

Киле эпĕ питĕ салхуллăн таврăнтăм. Хамăр тĕле çитсен, сасартăк инçетре тупăсем хаяр аслати пек кĕмсĕртетнĕ сасă хăлхана кĕрсе кайрĕ. Юриех чарăнса тăрса итлерĕм. Кăшт тăхтасан, тупăсем тата вăйлăрах кĕмсĕртетрĕç.

— Килеççĕ вĕт ирсĕрсем...

Чĕре тӳсмелле мар ыратса кайрĕ.

— Мĕн пулĕ-ши малашне?..

Алăкран кухньăна кĕрсе тăрсанах эпĕ малти пӳлĕмре анне сасăпах макăрнине илтрĕм. Мĕн пулнине пĕлес тесе, часрах шалалла чупса кĕтĕм. Анне эпир Кольăпа

---

* *Литера*—саспалли.

иксĕмĕр ҫывăракан мăн койка патне ларнă та ҫав тери хурланса йĕрет. Койки ҫинче Коля шăллăм йывăррăн сывласа выртать.

— Мĕн пулнă капла?

— Темскер тăрук чирлесе ӳкнĕ вăл,— терĕ анне куҫҫулĕ витĕр. — Эпĕ заводран таврăннă ҫĕре ахлатса кăна выртать... Ыран, тен, заводăн юлашки машинĕсемпе те пулин сире кунтан илсе тухса кайма пулать-и, тенĕччĕ. Директор мана ун ҫинчен хăй патне чĕнсех каларĕ: вырăн пулать, сана ачусемпех пыма хушатăп, терĕ. Анчах халь пулмарĕ ĕнтĕ... Аҫта илсе тухатăн ăна, чирлĕскере?

Вăл каллех йĕме тытăнчĕ.

— Неуштă фашистсен чурисем пулма тӳр килет-ши пире?! Кун ҫинчен аҫу пĕлсен, чĕри ҫурăлсах каять ĕнтĕ унăн...

Эпĕ аннене лăплантарма тăрăшрăм.

— Ытлашши ан хуйхăр-ха, тен, ĕҫсем майлашĕҫ епле те пулсан... Эпир кăна мар вĕт, халăхпа пĕрле...

— Ох, темле-ҫке ĕнтĕ, темле пулать...

Кольăн температурине виҫсе пăхрăмăр—хĕрĕхе кăшт кăна ҫитеймен. Хамăр килте ҫук чух таҫта шăннă пулмалла ҫав.

— Тухтăр патне кайса килем-и?— ыйтрăм аннерен.

— Каҫ пулчĕ вĕт, кама тупатăн хальхи вăхăтра?— терĕ вăл.— Ҫитменнине, хулара пĕр тухтăр та юлман пулĕ...

Ҫапах та, хăш тухтăрне те пулин тупса килĕп-и тесе, эпĕ урама сиксе тухрăм.

Тĕттĕм. Ниҫта та пĕр ҫутă та курăнмасть. Сас-хура та ҫук, пĕтĕм хула ҫĕр ҫумне йăпшăнса ларнăн туйăнать. Вокзал патĕнче кăна пăравуссем салхуллăн, чуна ыраттармалла кăшкăртаҫҫĕ. Сивĕ, шăмма пырса тивекен ҫил вĕрет, ăна пула телефон пралукĕсем хурлăхлăн улеҫҫĕ...

Мана тăруках хăрушă пулса кайрĕ.

Урам тăрăх утса темиҫе кил тĕлĕпе иртсен чарăнса

тăтăм. Аçта, кам патне каяс-ха çак сивĕ те тĕттĕм каçхине?

Пĕр-ик минут пулĕ тăтăм çапла иккĕленсе.

Сасартăк хĕвеланăç енчен хăлхана темскерле йывăррăн ӳленĕ сасă пырса кĕчĕ. Малтанах ку мĕнне уйăрса илеймерĕм, анчах вăл сасă çывхарнăçемĕн çывхарса килчĕ те — ăнлантăм: тикĕт пек хура пĕлĕтре самолетсем вĕçеççĕ... Тĕрĕс, тĕрĕс: самолетсемех. Çавсен моторĕсен шавĕ ку. Анчах — камăн самолечĕсем? Пирĕн-и? Тăшманăн-и?..

Мана çавăнтах фашистсен самолечĕсем пирĕн мирлĕ хуласемпе ялсем çине тискеррĕн бомбăсем тăкни çинчен илтнисем аса килчĕç. Тата хăрушăрах пулса кайрĕ...

Енчен ку самолетсем чăнах та фашистсен пулсан, вĕсем халех бомбăсем тăкма тапратсан?..

Моторсен кĕрлевĕ ку хушăра тата çывăхарах илтĕнме пуçларĕ. Акă, вăл инçе те мар ĕнтĕ, пуç тăрĕнчех илтĕнет. Хĕллехи выçă кашкăрсен кĕтĕвĕ ӳленĕ пек туйăнать вĕсен сасси... Ирĕксĕрех çӳлелле пăхатăп, анчах нимĕн те курмастăп.

Чĕре кăкăртан сиксе тухас пек тапать. Эпĕ пĕрре пĕлĕт çинелле, тепре таврари тĕттĕмлĕхе пăхса илетĕп те, пур вăя пухса, килелле чупатăп. Часрах, часрах аннепе Коля патне çитес, вĕсене пĕлтерес...

Сасартăк сывлăшра темскер вăраммăн та çинçен шăхăрса ячĕ:

—Жи-у-уу...— Тепĕр самантран вокзал енчен çав тери вăйлă взрыв илтĕнчĕ. Шăтăртатрĕ, кĕмсĕртетрĕ... Пĕтĕм хула шартах сиксе, çӳçенсе илчĕ пулас.

Эпĕ, антăхса каяс пек хашкаса, çенĕкрен ыткăнса кĕтĕм çеç — вокзал енче пĕр харăсах темиçе бомба çурăлчĕ. Пирĕн çурт сивчир тытнă пек чĕтренчĕ, кухньăри чӳрече кантăкĕсем чăнкăртатса сирпĕнсе тухрĕç.

—Анне!.. Анне!..

Эпир унпа малти пӳлĕме кĕмелли алăкра тĕл пул-

тăмăр. Вăл ĕнтĕ чирлĕ Кольăна çĕклесе тулалла тухма тытăннă-мĕн. Хăраса ӳкнипе хăй аран сывлать:

— Атя, ывăлăм, часрах... ăçта та пулин...

— Нӳхрепе!— кăшкăртăм эпĕ.

Крыльца çине тухсанах, вокзал енчен пушар ялкăшни курăнса кайрĕ. Çав тери вăйлăн, шартлатса, пăлкаса çунать! Тата хытăрах хăраса кайрăмăр эпир. Вилĕм пирĕн хулана килсе кĕчĕ!..

Мĕн хал çитнĕ таран васкаса, тĕттĕм те сивĕ нӳхрепе антăмăр...

— Ах, мĕн те пулин сармалли илсе килмеллеччĕ-çке,— терĕ анне, йынăшакан Кольăна халь те аллинчех тытса тăрса.— Татах шăнтсан, вĕлерсех пăрахăпăр ăна капла...

Эпĕ пĕр сăмахсăрах тепĕр хут пӳрте чупса кайрăм та, утиялсем, тумтирсем сĕтĕрсе пырса, нӳхрепе çӳлтен аялалла пăрахрăм.

— Çитет-и е тата илсе килес-и мĕн те пулин?—тесе ыйтрăм аннерен.

— Çитĕ, ачам, ан часрах, тем курмалла пулĕ та-та,— терĕ вăл мана.

Пĕлнĕ пекех каларĕ вăл кăна. Эпĕ пусма тăрăх нӳхреп тĕпне анса та çитейменччĕ — таçта, çывăхрах, йывăр бомба ӳкрĕ. Нӳхреп стенисем те чĕтренсе илчĕç, чулсем хушшипе шăпăрах тăпра тăкăнчĕ. Анне кăшкăрсах макăрса ячĕ. Эпĕ те аран тӳссе тăтăм. Коля çаплах йывăррăн сывласа йынăшса выртрĕ.

* * *

Çав кунах, ир енне, фашистсем пирĕн хуларан пĕр 3—4 километртра десант антарнă пулнă. Вĕсем чугун çула та, шоссесене те татнă. Эпир паян хуларан тухса хĕвелтухăçнелле кайма тăнă пулсан та — кайма пултарайман ĕнтĕ...

Тепĕр кунне пирĕн пĕчĕк хулана фашистсен хура тискер танкĕсем гусеницисемпе хаяррăн чăнкăртатса пырса кĕчĕç. Эпир фашистсен пусмăрне лекрĕмĕр.

Ку октябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулчĕ.

* * *

Çакăнтан вара пирĕн пурнăç мĕнле хăрушла пулса кайни, эпир мĕн-мĕн курни, тӳсни çинчен виçĕ кун та виçĕ каç пĕр чарăнмасăр каласа парас пулать. Сăмах та çитес çук.

Чăтма çук хурлăх пусса илчĕ пире...

Малтанах эпир ниçта тухмасăр, килте питĕрĕнсе лартăмăр. Унтан, пĕр ирхине, пирĕн пата пилĕк гитлеровецпа пĕр вырăс-полицейски пырса кил таврашĕнче мĕн пуррине кутăн-пуçăн çавăрттарса ухтарчĕç. Темскер шырарĕç вĕсем — пĕлместĕп, пире вырăнтан та хускалма хушмарĕç те, эпир вĕсем пирĕн чи лайăх тумтирсене, утиялсене, атă-пушмаксене çĕклесе тухса кайни çине чĕтресе пăхса ларса юлтăмăр.

— Ним те шел мар, хамăра ан асаплантарччăр кăна... Пуринчен ытла çавăнтан хăратăп эпĕ,— терĕ анне вĕсем тухса кайсан.— Хĕрлĕ Çар каялла киличчен пуçăмăрсене епле те пулсан упраса усрасчĕ...

— Хĕрлĕ Çар вуçех таврăнмасан тата?— вăйсăр сасăпа ыйтрĕ кровать çинче выртакан чирлĕ Коля.

Анне ун çине çилĕпе пăхрĕ.

— Ун пек шухăшлама та ан хăй эсĕ!—терĕ вăл çирĕппĕн.— Пулма пултараймасть ун пек! Хĕрлĕ Çар пире çăлатех! Гитлер хурахĕсене кунтан пурĕпĕр хăваласа яраççĕ. Нумай тытăнса тăраймаççĕ вĕсем кунта...

Анне эпир фашистсен пусмăрĕнчен хăтăласса çав тери çирĕппĕн, пĕтĕм чĕререн ĕненни мана пит те кăмăла кайрĕ. Халь çеç вĕсенчен вилес пек хăраса, çав тери пăлханса ирттернĕ пулин те, анне сăмахĕсем хыççăн темле тăруках лăплантăм эпĕ, хамăн вăй та хутшăннă пек туйăнчĕ мана.

— Паллах, анне тĕрĕс калать. Вăхăтлăха çеç ку. Унтан каллех ирĕклĕ пулатпăр. Хĕрлĕ Çар тăшмансене çапса аркатать те, малтанхи пекех телейлĕ пурнăçпа пурăнма пуçлатпăр...

Тепĕр ирхине манăн урама тухса курас килчĕ. Нимĕçсем килсе кĕнĕренпе эпĕ хамăрăн килхушшинчен пĕрре те тухманччĕ. Мĕн пулса иртет-ши хулара?

— Каясси — кай та, анчах нумай ан çӳре,— тесе асăрхаттарчĕ мана анне.— Атту пăшăрханатăп эпĕ. Тем те пулма пултарать ку чухне...

— Юрĕ, кăшт çеç куркаласа çӳрĕп,— сăмах патăм эпĕ.

Чăн малтан мана урамри пур хӳмесем çумне те темĕн пысăкăш хут листисем çыпăçтарса тултарни тĕлĕнтерчĕ. Кашни утăмра тенĕ пекех приказ та пĕлтерӳ, пĕлтерӳ те приказ... Пурте тата «юрамасть», «уншăн персе вĕлереççĕ», «куншăн çакаççĕ», тенĕ сăмахсемпе вĕçленеççĕ.

... Каçхине 9 сехет хыççăн урама тухма юрамасть. Патруль курсан — асăрхаттармасăрах персе пăрахать.

...Хула хыçне комендатурăран пропуск илмесĕр тухма юрамасть. Куншăн çакаççĕ.

...Кам та кам партизансемпе çыхăнни е вĕсене пулăшни палăрать — ăна çакаççĕ, унăн пĕтĕм пурлăхне туртса илеççĕ.

Йĕркипех, йĕркипех çавăн пек!

Уйрăммăнах эпĕ тĕрлĕ сăрсемпе сăрласа тунă пĕр плакат умĕнче чарăнса тăтăм. Фашистсен темĕн пысăкăш танкĕ пирĕн красноармееца таптать. Аяла питĕ шултра саспаллисемпе çырнă: «Вырăс çыннисем! Германи çарĕ Хĕрлĕ Çара пĕтĕмпех аркатрĕ. Сирĕн текех нимĕн çине те шанмалли çук. Пире хирĕç тăни усăсăр. Эпир хушнисене тĕп-тĕрĕс туса пырăр. Вара сирĕн пурнăç йĕркеллех пырĕ!»

Ку плакат çине пăхса, ăна вуласа тухнă хыççăн манăн çамка та тарласа кайрĕ, чĕре сиксе тухас пек

тапма тытăнчĕ. Шăлсем хăйсем тĕллĕнех шатăртатса илчĕç...

— Суятăр, сволочьсем!.. Ĕмĕрте те пулма пултараймасть ун пек! Хĕрлĕ Çар та пĕтмен, пирĕн шанчăк та пĕтес çук... Кăтартĕ-ха вăл сире, йытăсене! Тăхтăр пăртак...

Текех пĕр приказ умĕнче те чарăнса тăмарăм, пĕр плакачĕ çине те çаврăнса пăхмарăм. Пуçа чикрĕм те, çилле шăнараймасăр, малалла утрăм.

Пĕр-икĕ квартал пек кайсан, эпĕ тăруках такамсем çуйăхнине, кăшкăрнине илтрĕм. Хăлхана темле ют сăмахсем кĕрсе кайрĕç:

— Шнель! Руссиш зобак! Убивай тебя тут!..

Тăпах чарăнса тăтăм. Малалла, йĕри-тавралла пăхрăм.Никамах та курăнмарĕ. Унччен те пулмарĕ — малти тăкăрлăкран эпĕ пыракан урама вунă-вуникĕ çын тухрĕç. Куçсем чарăлсах кайрĕç манăн. Малта — автомачĕсене майран çакса янă икĕ фриц утаççĕ, вĕсем хыççăн — пирĕн вырăс çыннисем, унтан каллех нимĕçсем, хĕç пек штыкĕсемпе вĕсене çурăмĕсенчен кĕç-вĕç чиксе пăрахас пек тĕллесе пыраççĕ.

Чĕре çӳçенсе, пăчăртанса илчĕ.

— Ăçта илсе каяççĕ-ши? Вĕлерме-ши? Çыннисем камсем-ши?.. Эх, мĕншĕн алăра пăшал çук-ши!.. Пĕрре малти фрицĕсене пересчĕ те, тепре кайрисене, вара хамăр çынсене пурне те тартасчĕ!..

Сасартăк арестленисенчен пĕри ӳкрĕ. Кайри пĕр фашисчĕ ăна тӳрех атă пуçĕпе çурăмĕнчен тапрĕ.

— Ставайт, звинния! Стреляйт тебя!

Ӳкни ура çине тăма пикенчĕ, анчах каллех ӳкрĕ. Конвоир винтовкине штыкĕпе çĕрелле туса çĕклерĕ те, çав çынна прикладпа çапрĕ. Леш йынăшса ярса, аран-аран тăркаларĕ.

Пĕтрĕ пуç! Манăн куçсем те хуралса килчĕç... Вăл çын — пирĕн типографи директорĕ, Василий Дмитриевич пулнă. Ури уксах пирки ыттисемпе пĕр тан утайман

вăл, такăна-такăна ÿкнĕ, ăна уншăн хăрушла хĕнесе пынă...

Хама хам астумарăм пулас вара. Арестленисем патне ыткăнтăм та:

— Василий Дмитриевич!—тесе кăшкăрса ятăм ухмаха ернĕ çын пек.

Хăйне ятпа чĕннине илтсен, вăл самантлăха каялла çаврăнса пăхрĕ те мана палласа аллипе сулчĕ. Анчах çав самантрах пĕр конвоирĕ ăна çурăмĕнчен чышрĕ, тепри мана винтовкипе юнарĕ.

— Пошель!..

Эпĕ юпа пек хытса, ним тума пĕлмесĕр тăрса юлтăм...

* * *

Кайран вара хулари пасар площадьне темле çитсе тухнă эпĕ, çавна ниепле те астăваймастăп. Василий Дмитриевича фашистсем хĕне-хĕне тытса кайнине курсан, вăйлă сĕрĕм тивнĕ çын пекех утнă пулмалла эпĕ урам тăрăх.

Площаде тухнă чух такам хыçалтан: «Эй, эй!»—тесе кăшкăрнипе çеç сасартăк тăна кĕрсе каялла çаврăнса пăхрăм. Мана чутах пĕр чаплă хура лаша кÿлнĕ çуна таптаса каятчĕ,— аран çеç пăрăнса юлма ĕлкĕртĕм. Анчах çакă тем пекех хăвăрт пулса иртнĕ пулин те, эпĕ çуна çинче икĕ нимĕçпе пĕрле пирĕн хулари сехет магазинĕн директорĕ пулнă ылтăн куçлăхлă кÿпшек этем ларса пынине асăрхаса юлтăм. Сăнĕ пĕртте хурлăхлă марччĕ вара унăн, çăварне тачка пирус хыпнăччĕ.

— Сутăннă эппин ку йытă,— шухăшларăм эпĕ,— фашистсем майлă пулса ларнă... Пирĕннисем каялла таврăнсан каçармĕç те-ха куншăн...

Акă эпĕ площаде тухрăм. Пуш-пушах. Вăрçăччен кунта кулленех шавлă суту-илÿ пулса пыратчĕ, иртен пуçласа каçченех халăх кĕшĕлтететчĕ. Халь никам та,

пĕр чун та çук. Хитре сенкер киосксене те такамсем сĕмĕрме пуçланă — вутă тума пуль ĕнтĕ. Сивĕ вĕт, ноябрь уйăхĕ çитрĕ... Анчах ку... Ку мĕн? Пĕтрĕ пуç! Площадь варринче, киосксем ларса тухнă тăваткăлта — çакмалли такан тăрать. Икĕ çӳлĕ юпа та — урлă кашта... Эпĕ ку таранччен такансене нихçан та курманччĕ, тахçан темле истори кĕнекисем çинче çеç курнăччĕ, çавăнпа та, хам тепĕр хут хăраса кайрăм пулин те, ун çывăхнерех пытăм. Чĕре каллех чарусăр тапма пуçларĕ хамăн...

Тĕрĕс, такан. Ятарласа площадь варринче, халăх курмалла çĕре туса лартнă такан. Урлă каштинчен икĕ çын çакăнса тăраççĕ. Пĕри — хĕрлĕрех сухаллă арçын, 40—50 çулхискер пулĕ, тепри — çамрăк кăна хĕр, пирĕн аппа евĕрлĕскер: сар çӳçлĕ, кăшт каçăртарах сăмсаллăскер... Камсем-ши вĕсем?.. Мĕншĕн çакнă вĕсене? Паллах, тăшмансене, фашистсене, Гитлерăн хурахĕсене хирĕç тăнăшăн. Урăх мĕншĕн пултăр-ха тата? Хăйсене майлă пулнисене çакас çук ĕнтĕ вĕсем! Ав, сехет магазинĕн директорне хăйсемпе пĕрле чаплă лашапах илсе çӳреççĕ!

Чун кӳтсе çитнипе манăн куççульсем шăпăртатса анчĕç. Эпĕ часрах киосксем хушшинчен тухрăм та килелле утрăм. Çитет, çитет паян кун чухлĕ хăрушă япаласем курса çӳренипе! Киле çитес те — пĕтĕмпех аннене каласа парас...

Хамăр урам патнелле çитнĕ чух эпĕ сасартăк Сережăпа Ваççа Авдеевсем çинчен аса илтĕм те, манăн малтан вĕсем патне кĕрсе тухас килсе кайрĕ.

— Мĕнле пурăнаççĕ-ши? Типографире ĕçлеме пăрахнăранпа та курман... Василий Дмитриевич çинчен каласа парас, тен, пĕлмеççĕ. Ăна вĕсем те хисеплеççĕ вĕт...

Кĕтĕм. Вĕсем, паллах, эп пынăшăн калама та çук савăнса кайрĕç.

— Ма хальччен пĕрре те килмерĕн, мĕншĕн манса кайрăн, сана çав тери курас килекен пулчĕ,— теççĕ.

— Эсир хăвăр та пымаpăр-çке ман пата, эпĕ ăçта пурăннине пĕлетĕр вĕт?— терĕм кусене хирĕç.

— Эпир ниçтах та тухса çӳремен çав...— теççĕ.

— Ну, эпĕ те çавăн пекех, пĕрмай килте ларса пурăнтăм, паян пуçласа тухрăм,— терĕм.

Унтан, темле, пĕр хушă сăмах тупăнмарĕ пирĕн.

Сережа хăйсен çывăрмалли пӳлĕмĕ еннелле пăхса илсе, тарăнăн сывласа ячĕ.

— Пирĕн анне чутах вилсе каятчĕ...

— Чирлерĕ-и?

— Çук... Комендатурăна чĕнсе допрос тунă хыççăн. Унта ăна хĕнесе пĕтернĕ. Ăшчикне хускатнă пулмалла. Халĕ те вырăн çинчен тăраймасть.

— Мĕншĕн вара ăна аплах?

— Нимшĕн те мар. Атте пирки. Вăл Хĕрлĕ Çар командирĕ-çке пирĕн. Фашистсене хирĕç çапăçать. Лешсем ăна таçтан пĕлнĕ...

Сережа каллех çывăрмалли пӳлĕм алăкĕ еннелле пăхрĕ. Унтан, ситцă чаршав хыçĕнчен, амăшĕ йынăшни илтĕнчĕ:

— Хăшĕ те пулин килĕр-ха...

Сережа тăванне пуçĕпе сулчĕ. Ваççа амăшĕ патне кĕрсе кайрĕ. Сережăпа иксĕмĕре те йывăр шухăшсем пусса илнипе пĕр вăхăт нимĕн те чĕнмерĕмĕр.

— Епле-ха,— терĕм эпĕ чылайран, çаплах Сережăсен амăшне комендатурăра хĕнени çинчен шухăшласа,— пирĕн атте те командир, анчах пирĕн аннене ниçта та чĕнмен. Пĕрре пиллĕкĕн пырса çаратса тухса кайрĕç те, урăх пыракан пулмарĕ-ха...

— Телей,—терĕ Сережа.—Вуçех пымасан тата авантарахчĕ.

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ...

Майĕпе калаçу урăххисем çине куçрĕ. Сережа хулари хыпарсене манран ытларах пĕлет-мĕн. Çак кунсенче фашистсем çĕр çын ытла тытса хупнă иккен, вунпĕр çынна çакнă, чылайăшне персе пăрахнă. Площадьри

такан çине çакнисем — ашшĕпе хĕрĕ пулнă, вĕсем патĕнче фашистсем хĕçпăшал тупнă. Эпĕ сехет магазинĕн директорĕ фашистсемпе пĕрле çӳрени çинчен каласан, Сережа куçĕсене çиллессĕн ялкăштарса кăна илчĕ.

— Ара, ăна фрицсем бургомистр тунă вĕт!

— А мĕн вăл «бургомистр»?

— Ну, хула пуçлăхĕ... Çынсене пурне те çав тыттарать, тет. Пирĕн аннене те çавах тыттарнă. Допросра пулчĕ тет вăл. Ăна пирĕн çынсем халь фашистсенчен те ытларах кураймаççĕ. Фашистсем — тăшмансем, ютран килнĕ, а ку вĕт совет çынни тесе шутланнă, ирсĕр сутăнчăк!

— Хамăрăннисем килсен ăна «бургомистр» кăтартаççĕ акă,— терĕм эпĕ, Сережа пекех çилĕпе.

— Эпĕ хам пăвса пăрахăттăм ăна, ирĕк парсан,— сăмахсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ те Сережа, унăн куçĕсем тăруках шывланчĕç.

Кусем — кӳренӳ, тарăху куççулĕсем пулнă.

Кăшт тăрсан, эпĕ вĕсем патĕнчен тухса, васкасах килелле утрăм. Паян курнисем, Сережăран илтнисем мана калама çук пăлхатса ячĕç. Пуç сĕрĕм тивнĕ пек кашларĕ. Анчах килте мана тата пысăкрах хуйхă кĕтнĕ. Эпĕ хулара çӳренĕ хушăра пирĕн аннене нимĕçсем тытса кайнă. Пĕччен юлнă чирлĕ Коля, макăра-макăра татах вăйсăрланса, калаçмиех пулса çитнĕ.

— Мĕн тăвас пулать халь? Мĕн тăвас?— тесе ыйтрăм та хамран хам, вырăн çине ӳпне ӳксе хам та макăрса ятăм...

Тем вăхăт макăрнă эпĕ — пĕлместĕп ăна. Анчах ирччен те тăрайман вара, епле выртнă — çаплипех, хывăнмасăрах, çывăрса кайнă.

Ирхине мана Коля вăратрĕ.

— Юрка, çиес килет...

Эпĕ кухньăна тухса çимелли шырама тытăнтăм. Кăмакана уçса пăхрăм, сĕтеле, шкапа ухтартăм, анчах

чугун тӗпне юлнӑ виҫӗ сивӗ ҫӗрулмисӗр пуҫне урӑх нимӗн те тупаймарӑм.

Ҫимеллисем пирӗн пӗтӗмпех пӗтсе ҫитнӗ иккен.

Малашне мӗнле пурӑнмалла-ши ӗнтӗ?

* * *

Виҫӗ кун хушши вутра ҫуннӑ пек пурӑнтӑмӑр. Анне пирки хуйхӑрнипе чӗре хыпсах тухатчӗ. Фашистсем мӗн тунӑ-ши ӑна? Чӗрӗ-ши вӑл, е хальччен вӗлернӗ? Ним те паллӑ мар, никамран ыйтса пӗлмелли те ҫук...

Анчах виҫӗ кунтан вӑл таврӑнчӗ. Хӑвӑрах ӑнланмалла — пирӗншӗн ку нимрен те пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ. Эпир хамӑр выҫса ҫитнине те, сивӗ пӳртре шӑнса кӳтнине те манса кайрӑмӑр...

Вӑл урам алӑкӗнчен кӗнине курсанах, эпӗ ӑна хирӗҫ чупса тухса мӑйӗнчен уртӑнтӑм.

— Килтӗн-и? Сывах-и эс?

— Сывах-ха, ывӑлӑм, сывах...— терӗ те вӑл, сулӑнса кайрӗ.— Чим-ха, пӳрте кӗрер... Коля епле?

Эпӗ ответ париччен алӑкран Коля пуҫӗ курӑнчӗ.

— Анне!..

Вӑл та ыталаса илчӗ аннене. Анчах анне каллех сулӑнса кайрӗ—ҫав тери вӑйсӑрланса ҫитнӗ иккен. Эпир ӑна ик енчен тытса пукан ҫине лартрӑмӑр та ҫине-ҫинех тӗпчеме тытӑнтӑмӑр.

— Мӗн пирки тытса кайрӗҫ?

— Хӗнемерӗҫ-и?

— Епле кӑларса ячӗҫ тата?

Сережӑсен амӑшӗ пекех, пирӗн аннене те атте Хӗрлӗ Ҫар командирӗ пулнӑ пирки тӗпченӗ-мӗн. Вӑл ӑҫта, ун ҫинчен мӗн хыпар пур, килте пурӑнмасть-и, партизансем патӗнче мар-и...

Анне тӗрӗссипе каланӑ: темиҫе уйӑх хушши пӗр хыпар та ҫук, тенӗ. Фашистсем аннене ӗненесшӗн пулман, икӗ талӑк пӗр тӗпренчӗк ҫӑкӑрсӑр, пӗр тумлам шывсӑр шӑршлӑ та йӗпе подвалта лартнӑ, унтан каллех чӗнсе

тухса допрос тума тытăннă. Анне пурĕпĕрех малтанхи пекех каланă. Допрос тăваканни ăна темиçе хутчен те питĕнчен çупа-çупа янă, халех персе пăрахассипе хăратнă. Анне парăнман: хуть перĕр, хуть çакăр, анчах эпĕ кунтан ытла урăх нимĕн те калама пултараймастăп, тенĕ. Тепĕр кунне ăна гестапоран чышса кăларса янă...

— Эсир епле пурăнкаларăр кунта?— ыйтрĕ вăл пирĕнтен, хăйĕн хăрушă калавне пĕтерсен.— Пуринчен ытла эпĕ хамшăн мар, сирĕншĕн хурланса пĕтрĕм çак виçĕ кун хушшинче.

— Чиперех пурăнтăмăр, аптрамарăмăр,— терĕм эпĕ юриех хавасланса. Ахаль те асапланса пĕтнĕ аннене кӳрентерес килмерĕ манăн.

— Мĕн çикелерĕр вара? Нимĕн те çукчĕ-çке...

— Юрка катка тĕпĕнчи çăнăха хырса çатма çинче пашалу пĕçерчĕ,— персе ячĕ Коля.— Ту-утлă пулчĕ.

Эпĕ кун çинчен аннене каласшăн та марччĕ, мĕншĕн тесен вăл пашалусем, пыра аннинчен ытла, çăвар маччине çыпăçса пĕтрĕç, çавăнпа та Коля çине кăмăлсăр пăхса илсе хĕрелсе кайрăм. Анне куна сисрĕ те, мана çурăмран лăпкаса:

— Маттур, маттур,— терĕ.— Ун пек тума пĕлни те аван, ытла ним çимесĕр ларни мар. Анчах малашне темле пурăнăпăр ĕнтĕ. Йывăр пулать. Ой, йывăр пулать...

* * *

Питĕ йывăр пулчĕ çав...

Чăн малтан анне фашистсенчен ăнсăртран упранса юлнă атте кĕрĕкне пасара илсе кайрĕ. Уншăн ăна çур пăт хывăхлă çăнăх панă. Унтан пĕр пăт çĕрулмилле стена синчи сехете сутрăмăр. Кусене сисе ярсан, анне пĕр çĕклем кĕпе-йĕм, тӳшек çиттисем кайса сутрĕ. Анчах çав пĕтĕм пурлăхшăн виçĕ килограмм сĕлĕ çăнăхĕ çеç çĕклесе таврăнчĕ...

Çитменнине тата вутă пĕтрĕ. Октябрь уявĕ кунĕсем



иртсен тӳсмелле мар шартлама сивӗсем тапранчӗҫ, пирӗн килхушшинче пӗр пуленке вутӑ та пулмарӗ. Выҫӑпа сивӗ хутӑш — пушшех кансӗр, ун пек чух ҫын антрасах ҫитет.

Ҫынсем вутта хула хыҫӗнчи вӑрмантан туртма пуҫларӗҫ. Эпир те Кольӑпа иксӗмӗр хӑмасенчен ҫапкаласа ҫунашка пекки турӑмӑр та темиҫе хутчен вӑрмантан вут-шанкӑ туртса килтӗмӗр. Анчах унта ҫӳреме те хӑрушӑ пулса тӑчӗ: партизансем тесе, вӑрмантан шанкӑ туртса тухакан икӗ ачана ӳсӗр фрицсем пенӗ пӑрахнӑ. Ирӗксӗрех килти хӳмесене ҫунтарма тытӑнмалла пулчӗ.

Пуринчен ытла пире выҫлӑх аптратса ҫитерме пуҫларӗ. Пасарта ҫӑнӑха стакансемпе, ҫӗрулмине пӗчӗк чашӑксемпе ҫеҫ сутма тытӑнчӗҫ. Тепӗр чух вӑл та пулмастчӗ. Хакӗсем вара — пырса та ан ҫулӑх! Пӗринче анне хӑйӗн пурҫӑн кӗпине сутса та пӗр яшкалӑх шӑннӑ ҫӗрулми кӑна илме пултарчӗ. Выҫӑпа вилесси куҫ умӗнчех курӑнса тӑчӗ. Вилекенсем те сахал марччӗ ӗнтӗ.

Ҫав вӑхӑтрах фашистсем тискерленнӗ ҫемӗн тискерленсе пычӗҫ. Кашни кун хӑрушӑран хӑрушӑ хыпарсем сарӑлатчӗҫ халӑх хушшинче. Тытса хупнӑ, персе пӑрахнӑ, ҫакса вӗлернӗ... Пачах кӗтмен ҫӗртен, ним айӑпсӑр ҫынсене — хӗрарӑм-и вӑл, арҫын-и, ҫамрӑк-и, ватӑ-и — пурӗпӗр, килӗнчен тытса тухаҫҫӗ те таҫта кайса чикеҫҫӗ, кайран-малтан пӗр сас-хура та ҫук!

Хулари пурнӑҫ пӗтӗмпех пӑчланса ларчӗ. Ҫынсем хӑйсене тӗрмене лартнӑ пек пурӑнчӗҫ. Урама тухма, пӗрпӗринпе тӗл пулса каласма та хӑракан пулса ҫитрӗҫ. Нимӗҫ салтакӗсем кӑна шӑннӑ урамсем тӑрӑх хӑйсен тимӗр кӗлеллӗ аттисемпе кӗрслеттерсе утатчӗҫ. Вӗсен утти кашнинех ҫӳҫентеретчӗ, хӑрататчӗ, кӗтесселле йӑпшӑнтаратчӗ.

— Кам пӗлет, тен, мана тытма килеҫҫӗ?..

Кӑштах пурӑнсан, ҫывӑхри вӑрмансенче партизансем — «халӑхшӑн тавӑракансем» ҫӳрени ҫинчен, вӗсем фашистсене ӑҫта килнӗ унта тапӑнни, тӑшманӑн поез-

чĕсене сиктерни çинчен калаçкалама пуçларĕç. Ку хыпарсем пурне те савăнтарчĕç, анчах кун çинчен халлĕхе питĕ вăрттăн, пĕр-пĕрин хушшинче çеç, никам илтмелле мар пăшăлтатса илетчĕç. Çапах та, вăл хыпарсем хулари çынсен чĕрисенчи шанчăка вăйланма çав тери пулăшрĕç.

— Хĕрлĕ Çар лерен, партизансем ку енчен, пĕр харăс хăватлăн çапма тытăнсан...

Фашисчĕсем пирĕн хулара ĕмĕр-ĕмĕр пурăнас пекех вырнаçма тапратрĕç. Нумайăшĕсен Германирен арăмĕсем те килнĕ, терĕç. Чи лайăх çуртсене вĕсем йышăнса лартрĕç. Районри культура çурчĕ çине «Германи офицерĕсен клубĕ» тесе çырса çапрĕç. Алăкпа юнашар, стена çине, «вырăссен кĕме юрамасть», тесе çырнăччĕ. Кунтан вара кашни каç музыка — фашистсен ирсĕр юррисем, ташă кĕввисем илтĕнетчĕç.

Кашни каç ташлатчĕç гитлеровецсем. Кашни каç урамсенче вĕсен ӳсĕр сассисем хăлхасене йӳçĕхтеретчĕç. Кашни ир хула çыннисем фашистсен тискер ĕçĕсем çинчен илтетчĕç.

— Юрлăрах, ташлăрах, ашкăнăрах, анчах та ку пурĕпĕр нумая пымĕ, часах макăрмалла та пулĕ акă!

Çапла калатчĕç хула çыннисем.

*

Фронт пирĕн патăртан хĕвелтухăçнелле, Мускав еннелле кайнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Пĕринче чĕрене питех те ыраттаракан хыпар сарăлчĕ пирĕн хулара:

— Нимĕçсем Мускав патнех çитнĕ...

Анчах нимĕçсем хăйсем, каппайланса, тата усалтарах хыпар сарма тытăнчĕç:

— Аслă Германи çарĕсем большевиксен столицине пырса кĕнĕ...

Ниепле те, ним тусан та ĕненес килмерĕ куна! Пĕр ирхине çавăн пирки юриех Авдеевсем патне кайрăм.

— Илтнĕ-и эсир?— тесе ыйтрăм Сережăран, кухньăпа кĕнĕ-кĕменех.

— Мĕн çинчен?— тĕлĕнсе пăхрĕ вăл ман çине, пашалу пĕçерме кантăр вăрри чусти тӳсе тăраканскер.

— Фашистсем Мускава пырса кĕнĕ, теççĕ...

— Пулма пултараймасть,— терĕ Сережа, ĕçне пăрахса.— Хăйсем юри суяççĕ ăна... Халăхăн кăмăлне хуçасшăн.

— Эпĕ те çапла шутлатăп.

— Урăхла шутлама май та çук. Мускав-ха вĕт вăл, пирĕнни пек пĕчĕк хула мар, пĕтĕм çĕршывăн столици. Унта темĕн чухлĕ çар, халăх... Çук, фашистсем Мускава илессе эпĕ ниепле те ĕненме пултараймастăп!

— Тĕрĕс, Сережа!

Туспа çапла калаçнă май манăн чĕрери йывăрлăх чакнăçемĕн чакса пычĕ те пачах çухалчĕ...

Мускава фашистсем нихçан та çĕнсе илес çукки çинчен калаçса килĕшсен, эпир пĕр-пĕрин пурнăçĕ пирки ыйтса пĕлме тытăнтăмăр. Авдеевсем те пирĕн пекех начар пурăнаççĕ иккен. Çимелли çук. Хутмалли çук. Тата тăвар çукки шутсăр кансĕр. Мĕнпур япаласене пасарта сĕлĕ çăнăхĕпе, шăннă çĕрулмипе, юлашкинчен, ĕнер, турантăпа улăштарнă. Амăшĕ халь те чирлĕ. Темисе кун каялла Ваççа та халсăр пулнă.

— Эпĕ кăна ура çинче çӳретĕп,— хурлăхлăн сывласа илчĕ Сережа.— Эпĕ те тӳнсен, пурсăмăр та пĕтетпĕр вара, пуçĕпех...

— Ун çинчен ма шухăшлас? Усалли çинчен мар, часах пирĕн телей таврăнасси çинчен шухăшлас пулать, Сережа. Çавна ĕненсе пурăнмалла пирĕн!— терĕм эпĕ.

— Халь те çав ĕмĕтпе анчах пурăнатăп,— ответ пачĕ манăн тус.— Çав ĕмĕтпе шанчăк вăй параççĕ мана...

Çавăн хыççăн эпĕ Сережа патне кашни кун тенĕ пекех çӳреме пуçларăм. Вăл та ман пата час-часах пыратчĕ.

Пирĕн туслăх тата ытларах çирĕпленсе пычĕ.



* * *

Выçлăх аптратсах çитерчĕ. Выçă пурăннипе вăй та юлмарĕ, ураран ура та аран иртекен пулчĕ. Хамăр ĕнтĕ чĕрĕ çынсем мар, мĕлкесем пек çеç пулса юлтăмăр.

Пĕринче, каçалапа, анне хăйĕн кĕпине пасарта хывăхлă çĕрĕк çăнăхпа улăштарса килчĕ.

— Ку — юлашки, урăх нимĕн те çук,— терĕ те вăл, макăрса ячĕ.

Эпĕ çĕрĕпех çывăраймарăм. Мĕнле хăтăлас выçса вилессинчен, мĕн шутласа кăларас?

Хуларан вунпилĕк-çирĕм çухрăмра, пĕр ялта, пирĕн аттен инçетри тăванĕсем пуррине аса илтĕм çав каç. Ир тăрсанах хам шухăша аннене каласа патăм.

— Çавăнта кайса пăхам мар-ши, мĕнпе те пулин пулăшмĕç-ши вĕсем пире? Темле пулсан та, вĕсем ялта пурăнаççĕ, тыră-пулă хăйсем акса тунă.

— Темле-çке,— пуçне пăркаласа илчĕ анне,— вĕсен те хальччен пĕтнĕ пулĕ, нимĕçсем ялти çынсенне те мĕн пуррине пĕтĕмпех шăлса тухнă, теççĕ...

— Çапах та, кайса пăхам-ха, тен, вĕсем нимĕçсенчен пытарса хăварма ĕлкĕрнĕ!— çинех тăтăм эпĕ.

Юлашкинчен, анне килĕшрĕ.

— Кай эппин, пултаратăн пулсан,— терĕ.— Кăштах çăнăх е паранкă тупса килсен — питĕ аванччĕ, унсăрăн виç-тăватă кунтан пурте вилсе выртатпăр...

— Епле пулсан та тупса килетĕпех!— терĕм эпĕ татăклăн.

Çав кунах комендатурăран пропуск илтĕм те тепĕр ирхине вăрăм çула тухса кайрăм. Çирĕм çухрăма пĕр ăра кун утрăм. Çул тăршшĕпе, ялсем витĕр тухнă чух, фашистсем мĕн-мĕн тунисене курнипе чĕре ыратса, çурăм çӳçенсе пычĕ. Темиçе ялта такансем çинче хресченсем çакăнса тăнине куртăм. Мăйĕсенчен «партизан» тесе çырнă хăмасем çакнă. Нумай пӳртсене çунтара-çунтара янă. Вĕсем шатах коммунистсемпе комсомолецсен тата партизансен çурчĕсем пулнă, тет. Пĕр çĕрте тата плена лекнĕ пирĕн боецсене хăваласа пынине тĕл пултăм. Юн юхнипе, выçăпа, сивĕпе халран кайса çитнĕскерсене, фашистсем прикладсемпе хĕнесе, урнă пек кăшкăрса хăваласа иртсе кайрĕç...

Ялти хĕрарăмсем тыткăна лекнисем çине çав тери хĕрхенсе, макăрса пăхса тăчĕç. Анчах никам та нимĕнпе те пулăшма пултараймарĕ. Нимĕç салтакĕсем вĕсене çывăха ямарĕç: пĕр хĕрарăмĕ çăкăр парас тесе тыткăна лекнисен колонни патне çывхарма тăчĕ те, ăна чутах персе пăрахатчĕç.

— Хăçанччен тăсăлĕ-ши ку мăшкăл, хăçан пĕтĕ-ши ку хурлăх...— тесе макăрчĕç хĕрарăмсем. Паллах ĕнтĕ, çак тыткăнри салтаксем çине пăхса, вĕсем хăйсен упăшкисене, ывăлĕсене, пур тăванĕсене аса илсе хурланнă. Кам пĕлет, тен, вĕсем те çавăн пекех асапа лекнĕ?..

...Тăвансем мана пит аван йышăнчĕç. Икĕ кун пурăнтăм унта. Чăнах та, вĕсем хăйсем те фашистсенчен нумай хурлăх курнă. Вĕсен мĕнпур выльăхне, кайăккĕшĕкне илсе тухса кайнă, анчах çапах та вĕсем выçах

ларман, чылай тырă-пулă пытарма ĕлкĕрнĕ. Мана вĕсем кăштах çăнăх, кăштах çĕрулми пачĕç те, эпĕ вĕсене çунашка çине хурса, каялла тухса кайрăм.

Пирĕн тăвансен Дружок ятлă пĕчĕк кăна йытă пулнă. Çав Дружок эпĕ вĕсем патне пырсанах мана темшĕн юратса пăрахрĕ те ниепле те уйрăлмарĕ. Эпĕ вĕсен ялĕ вĕçне çитсен темрен каялла çавранса пăхрăм та — Дружок ман хыççăн пынине курах кайрăм.

— Кай киле!— тесе хăвалама тытăнтăм çакна.

Дружок пĕр вунă-вуник метр каялла чупса кайрĕ те ларчĕ.

Эпĕ ăна татах хăваларăм, анчах вăл каллех çавăн пек турĕ. Вара эпĕ алăпа султăм та малалла утрăм. «Пырсан-пырсан хăех юлĕ-ха», терĕм.

Анчах Дружок юлмарĕ, хыççăнах пычĕ. Вăл ман хыççăн пыни кайран питĕ усăллă пулчĕ...

Çул çинче манпа темĕн те пĕр пулса иртрĕ.

Тăвансем патĕнчен вунă километр пек кайсан, эпĕ пĕр пĕчĕк вăрман пуçне канма лартăм. Пăхатăп — хамран аякра та мар, юр айĕнче, темле хӳра япала курăнать. Мĕн вара ку? Çунашка çинчен тăрса юра урапа тапкаласа сиртĕм те — ман умма кĕске пăшал, карабин, тухса выртрĕ. Такам пăрахса хăварнă ăна, кам пĕлет. Ун чухне çулсем тăрăх тем те йăванса выртатчĕ вĕт... Хайхискер, çакна алла тытрăм. Тутăхса ларнă, затворĕ çук.

Мĕн тăвас кунпа? Юрăхлă япала мар ĕнтĕ, çапах та, темшĕн, пăрахас килмест... Пăшал-çке-ха! Киле илсе кайсан — хамăн пулать. Лайăхрах пытарса хурас та — выртать вăл. Тен, ăçтан та пулин затвор тупма май килĕ. Кирлĕ кунта кирлĕ те пулĕ. Кайран, Хĕрлĕ Çар килсен, парса яма та юрать...

Çапла шухăшларăм та, карабина çунашка çумне тытса виçсе пăхрăм. Шăпах вырнаçать! Çавăнтах вара михĕсене çыхса хунă тилхепене салтрăм та карабина чăн аяла хурас терĕм.

Хам та çав ухмах пулнă. Пĕр тăрмашма тытăнсан, унталла-кунталла та пăхман, сыхланасси çинчен те шутламан... Çунашкана тепĕр хут чăптапа витсе çыхрăм çеç — сасартăк хам хыçра лаша ури сассисене илтрĕм. Пуçа çĕклесе каялла пăхиччен ман пата юланутсемпе икĕ фриц пычĕç тăчĕç. Чĕре çурăлсах каятчĕ...

— Мĕн тăватăн эс кунта?— тесе ыйтрĕ пĕри, пилотки çинчен хĕрарăм тутрине çыхнăскер, вырăс сăмахĕсене хуçкаласа.

Эпĕ тăруках ним калама та пĕлеймерĕм.

— Мĕн тăватăн?— ыйтрĕ каллех нимĕç.

— Çунашка тӳнсе каять те, çирĕплетсе çыхрăм,— гран ответ патăм çакна.

— Мĕн унта санăн?

— Çĕрулми...

— Кăтарт!

— Мĕн пăхмалли пур... Ак, анса тытса пăхăр хуть...

— Кăтарт, теççĕ сана!— аллинчи саламачĕпе юнарĕ фашист.

Ну, чун юлмарĕ вара... Пĕтрĕм, терĕм хама хам. Халех михĕсем айĕнче выртакан карабина кураççĕ те — тӳрех вĕлереççĕ мана! (Кам патĕнче те пулсан пăшал тавраш тупсан, пытарса усракана персе пăрахатпăр, текен приказсене нумай курнă-çке эпĕ.)

Анчах ним тума та çук... Нимĕçсем ман пуç çинчех тăраççĕ. Чĕтрекен аласемпе пăява салтма тытăнтăм. Хăраса ӳкнипе ниепле те салтаймастăп тата. Пуçра хамăн пĕр шухăш кăна: «Пĕтрĕм... пĕтрĕм... Халех, халех персе пăрахаççĕ...»

— Часрах, часрах эсĕ, йытă ывăлĕ, санпа аппаланса тăма вăхăт çук пирĕн!—васкатать тутăр çыхнă нимĕç хаяррăн.

Юлашкинчен пăяв салтăнчĕ. Халь ĕнтĕ чăптана усмалла та, вара...

Анчах эпĕ ăс çитертĕм. Чăптана çунашка пуçĕ па-

тĕнчен кăшт çеç уçрăм та, пĕр миххине салтса, йăпăр-япăр виçĕ çĕрулми кăларса кăтартрăм.

— Акă, пăхăр...

— Тата мĕн пур?— ыйтать нимĕç.

— Тата çăнăх... Акă...— Тепĕр миххинчен пĕр ывăç çăнăх илсе кăтартрăм.—Урăх нимĕн те çук, акă, турра асăнса калатăп...

Таçтан сиксе тухрĕ ку шухăш, хам та пĕлместĕп!

— Аçта каятăн эсĕ?— çаплах хăпма пĕлмеççĕ çаксем.

— Рогачев хулине.

— Кам пур унта санăн?

— Анне, пĕчĕк шăллăмсемпе йăмăксем, пиллĕкĕн, выçă лараççĕ... Анне чирлĕ, тифпа выртать,—тесе суйрăм та юриех макăрнă пек турăм.

Тинех уйрăлса кайрĕç фрицсем. Лашисене пĕррех малалла тапса сиктерчĕç. Вĕсем хамран пĕр çур километр пек кайсан, вара эпĕ карабина михĕсем айĕнчен кăларса юр ăшне ывăтрăм.

— Сăва патне, тутăхнă, затворсăр пăшалшăн пуçа çиме пулмĕ,— терĕм.

Каç пуласпа эпĕ хамăр хула çывăхĕнчи вăрмана пырса кĕтĕм. Ывăнса çитрĕм ĕнтĕ — тӳсме те çук, анчах епле те пулсан часрах киле çитесшĕн пулнипе, пĕрре те канса тăмарăм. Пĕрмай утатăп, пĕрмай утатăп... Пĕтĕм шухăш — аннепе шăллăм çинче: епле-ши вĕсем унта? Хăвăртрах çитсе савăнтарасчĕ вĕсене, тетĕп...

Хулана çитме тепĕр икĕ километр кăна юлчĕ. Акă, часах çак ансăр çул шоссе çине пăрăнса тухать те, вара çитнĕпе пĕрех пулать!

Çапла шухăшласа пынă вăхăтра çав тери тĕлĕнмелле ĕç пулса тăчĕ...

Шоссе çине тухасси пĕр пилĕкçĕр метр юлсан, хам уммăнах чупса пыракан Дружок сасартăк тăпах чарăнса сылтăмалла пăхрĕ те хăлхисене чăнк! тăратрĕ. Унччен те пулмарĕ — çав тери хытă вĕрме тытăнчĕ. Мĕн пулчĕ куна? Вăл вĕрнĕ еннелле пăхатăп — нимĕн те



курӑнмасть. Малалла темиҫе утӑм тусан, ман йытӑ ҫултан пӑрӑнса кӗрт ҫийӗпех вӑрманалла ыткӑнчӗ. Хам халӗ те нимӗн те ӑнланаймастӑп-ха. Пӗр-пӗр пакшана е мулкача сисрӗ-ши ку, тетӗп.

Кӗҫех Дружок йывӑҫсем хушшине кӗрсе кайса кусран ҫухалчӗ. Эпӗ ҫунашка кантрине алӑран пӑрахрӑм та йытӑ хыҫҫӑн чупрӑм. Вӑл вӗрни халӗ чылай инҫетре илтӗнет ёнтӗ. Каштах кайсан вӑл пӗр вырӑнта тӑрса вӗрнине куртӑм. Мана асӑрхасан, вӑл ман паталла ыткӑнса пычӗ. Ҫав вӑхӑтра ҫывӑхри йывӑҫсем хушшинче такам йынӑшни илтӗнсе кайрӗ... Эпӗ тӑпах чарӑнса тӑтӑм. Итлерӗм... Йынӑшни ҫине-ҫинех илтӗнет.

— Ох... ох... ох...

— Мӗне пӗлтерет ку? Кам пулма пултарать унта?

Ман пуҫра шухӑшсем ҫиҫӗм пек вӗҫе-вӗҫе илчӗҫ. Паллах, вӑрманта ҫын йынӑшать, анчах та кам вӑл?.. Фашист-ши? Фашист пулма пултараймасть. Кам килсе пӑрахтӑр ӑна кунта? Тем тесен те — хамӑр ҫынах ҫав. Е персе пӑрахнӑ, е ҫакса хӑварнӑ. Анчах ҫакнӑ ҫын йынӑшаймасть. Персе пӑрахнӑскер, вилеймен те, халь, чӗре тапма чарӑниччен, йынӑшса выртать пулӗ...

— Ой... ай... о-ох!..

Тěрěснех калас пулать — малтанах аптраса ӳкрěм эпě. Мěн тумалла халь манăн? Ну, фашист пулсан — ятнех-ха ăна, вилтěр вăл йытă вилěмěпе, суранěнчен юн юхнипе вилтěр е шăнса хытăр! (Çанталăкě ун чух, 1941 çулхи хěлле, ай-ай, сивěччě!) Анчах та, сасартăк, вăл хамăр çын пулсан? Халлěхе вăл чěрě-ха, çапах та, çавнашкал ахлатса выртаканскер, нумай тӳссе выртма пултарас çук... Вилетех...

Йынăшни тата темиçе хут илтěнчě.

— Мěн пулать килет, кайса пăхатăп,— шут турăм вара эпě. Юр ăшне пута-путах чупрăм çав сасă илтěннě çěрелле...

Нумай та чупмалла пулмарě манăн. Кěçех юр çинче этем кěлетки выртни курăнса кайрě. Эпě ун патне ашса çитрěм. Красноармеец выртать. Хăяккăн. Куçěсем хупă. Сăнě — кăн-кăвак, çăварěнчен юн сăрхăннă йěр пур. Хăрах алли юр ăшěнче, тепри шăнса хур ури тěслě пулса кайнă...

Манăн сывлăш пӳлěнсе ларчě. Куç умěнчех аманнă совет салтакě вилсе каять, анчах эпě нимěн те тăваймастăп! Такамран пулăшу тупас тенě пек унталла-кунталла пăхса илтěм те ку салтакран кăшт аяккарахра тата икě кěлетке выртнине асăрхарăм. Виççě-тăваттă сиксех вěсем патне çитсе тăтăм. Пěри месерле выртать, тепри юр ăшне ӳпне тăрăннă. Сас памаççě. Часах иккěшěнне те алтымарěсене тыта-тыта пăхрăм. Чěрě! Эппин — виççěшě те чěрě! Анчах мěнле çăлас вěсене? Вилнě пекех выртакан виçě çынна эпě пěччен ниепле майпа та, ниçта та илсе çитерме пултарассăм çук,— ку паллах. Мěн те пулин шухăшласа тупас пулать. Халех, халех, пěр тăхтаса тăмасăрах çаксене виççěшне те çăлмалли меслет тупмалла!

Темиçе самант хушши ăнран тухнă çын пек тăтăм.

— Юлташсене... Юлташсене чěнсе килес!— шухăш кěрсе кайрě пуçа.— Хăвăртрах хулана çитес, çунашкана пушатас, унтан Авдеевсем патне чупас, пěтěмпех кала-

са парас та çакăнта килме чĕнес. Килĕшеççех вĕсем... хăравçăсем мар пулсан. Çук, хăравçăсем пулма кирлĕ мар. Хĕрлĕ Çар командирĕн ывăлĕсем-çке!

Çунашкана туртрăм та, пĕтĕм вăя пухса, килелле васкарăм.

«Часрах, Юрка, часрах, тен, çăлăн эсĕ çак виçĕ боеца!»

* * *

Çул çинче татах тепĕр кĕтмен япала пулчĕ.

Шоссе хĕррине çитсен, ман умран хуланалла пысăк грузовик кĕрлеттерсе иртсе кайрĕ. Темскер, ун çине питĕ нумай тиенĕччĕ — çиелтен брезентпа витнĕ те, лайăххăн курса юлаймарăм.

— Эх, манăн халь çак машинăпа ларса каясчĕ,— шухăшласа юлтăм хам ăшăмра.— Киле йăпăрт кăна çитĕттĕм те, юлташсене часрах каялла илсе килĕттĕм— салтаксене çăлма.

Паллах, ку усăсăр ĕмĕт пулнă. Фашистсен машини вырăс ачине нихçан та лартса илсе кайма пултарайман.

Шоссе çинче çул тикĕсрех-мĕн, çавăнпа та çунашкана туртса пыма çăмăлтарах пулчĕ. Эпĕ хытăран хытă утма тăрăшрăм. Акă километр юпи. Хула хĕррине çитме кунтан шăп тата пĕр километр. Унтан манăн хула урамĕсем тăрăх çур километр пек каймалла.

— Тăрăш, Юрка, инçе мар,— тесе хавхалантаратăп хама хам. Утма çăмăлтарах пултăр тесе, хуллен юрлама та тытăнтăм:

И тот, кто с песней по жизни шагает,
Тот никогда и нигде не пропадет...

Тĕттĕмленме пуçларĕ. Эпĕ тата васкарах уграм. Хам йĕп-йĕпе тара ўкне ĕнтĕ. Анчах ывăннине пĕртте туймастăп...

Сасартăк çул çинче, хам умра, темскерле шурăрах

тăрăхла япала выртни курăнса кайрĕ. Малтанах эпĕ кунта каллех пасăрхи пек аманнă е вилнĕ çын выртать пулĕ, тенĕччĕ. Тĕрĕссипе каласан, пирĕн патăрта нимĕçсем тăнă чух çулсем çинче этем виллисене час-часах курма пулнă. Патнерех пырсан — ку этем марри паллă пулчĕ. Ак тамаша! Çула урлă çăнăх миххи выртса парать! Алăпа тытса пăхрăм — тĕрĕс, çăнăх! Пасăр ман тĕлпе иртсе кайнă грузовик çинчен ӳксе юлнă пулмалла ĕнтĕ вăл... Мĕн тăвас пулать кунпа? Неушлĕ çакнашкал хаклă япалана, хамăр выçă ларнă вăхăтра, çул çинех пăрахса хăвармалла? Çук, юрамасть. Тупнă япалана сая ямастăп. Халь илсе каймасан та, епле те пулсан кайран илсе кайăп!

Тытăнтăм çак миххе канавалла йăвантарма. Йывăр, мур, пĕр пилĕк пăт та пулĕ. Çапах та йăвалантарса антартăм та çиелтен юрпа витсе хутăм, ним палăрми, никам тупайми туса хăвартăм.

— Ну, халь ĕнтĕ килелле, Юрка!— терĕм вара. Малтанхинчен те хăвăртрах ыткăнтăм малалла.

Эпĕ хам чип-чиперех таврăннăшăн та, кăштах çимеллисем илсе килнĕшĕн те аннепе шăллăм çав тери хĕпĕртерĕç.

— Ах, маттур-çке эсĕ манăн, каламалла мар маттур,— тесе ыталаса чуптуса пĕтерчĕ мана анне.— Ывăнтăн пуль, часрах выртса кан...

— Çук-ха, анне,— терĕм эпĕ ăна,— манăн пĕр çĕре кайса килмелли пур.

— Аçта тата вал?

— Инçе мар, Авдеевсем патне кăна...

— Асту, нумай ан çӳре! (Килтен кайнă чух вăл мана яланах çапла хушса яратчĕ.)

— Çук, часах килетĕп, ан хăра.

Çапла каларăм та, çунашкана туртса, Сережăсем патне тухса чупрăм.

Вĕсем çывăрма выртма хатĕрленнĕ-мĕн. Эпĕ кун пек вăхăтра пырса кĕни çав тери тĕлĕнтерсе ячĕ вĕсене.

— Тем пулман пуль те?— хӑрарах ыйтрӗ Сережа.

— Нимех те пулман, анчах пӗр питӗ васкавлӑ ӗç пур...

— Мӗнле ӗç?

Эпӗ ӑна кухньӑна чӗнсе кӑларса, хӑйсем патне мӗншӗн килнине питӗ хӑвӑрт каласа патӑм.

— Епле пулсан та çӑлас пулать. Пыратӑн-и?

Вӑл тӳрех ответлемерӗ.

— Хӑратӑн-и-мӗн? —тӗксе илтӗм ӑна.— Эпӗ сана хӑравçӑ мар пуль тенӗччӗ, анчах...

— Кирлӗ мара ан калаç-ха эсӗ,— пӳлчӗ мана Сережа.

— А мӗн тата?

— Эпӗ вӗсене мӗнле илсе килесси тата ӑçта вырнаçтарасси çинчен шухӑшлатӑп...

— Ун çинчен шухӑшланӑ ӗнтӗ. Çунашкасем çине хурса килетпӗр те вӑхӑтлӑха пирӗн çырмари мунчана хуратпӑр.

— Кайран ӑçта?

— Курӑнӗ унта.

Сережа татах пӗр хушӑ чӗнмесӗр тӑчӗ.

— Ман шутпа, çунашкасемпе ӗç тухмасть,— терӗ вӑл.— Çунашка çине мӑн çынна ӑçтан вырнаçтаратӑн?

— Мӗнле илсе килес эппин? Васкас пулать вӗт! Вӗсем ахаль те шӑнса вилес пекех выртатчӗç,— васкатрӑм эпӗ.— Çитменнине, тӑхӑр сехетчен ӗлкӗрес пулать...

— Лаша тупасчӗ,— терӗ Сережа.— Е вӑкӑр... Вара пурне те çуна çине хураттӑмӑр та çиелтен мӗн те пулин витеттӗмӗр — улӑм-и унта, мӗн-и...

— Ӑçта тупас-ха лашине? Çук вӗт-ха!

— Атя, Родион мучи патне кайса пӑхатпӑр... Лаша парать вӑл. Пӗркунне пире шанкӑ турттарса килме пачӗ. Халӗ те çавӑн пекех калатпӑр: кӑнтӑрла хӑрӑк туратсем пухрӑмӑр та, илсе килмелле...

Сережа шухӑшӗ мана питӗ килӗшрӗ.

Родион мучи — вăрçăччен райĕçтăвком стороже пулнă старик, Хĕрлĕ Çар чакса кайнă чух уринчен аманнă лаша тупнă пулнă. Аран-аран утакан выльăха вăл килти майсемпе эмеллесех сыватнă, çуна туртакан тунă. Халĕ ăна кашни кунах хула урамĕсенче курма пулатчĕ: пĕрине шанкă кӳрсе парать, теприне — пичкепе шыв е тата мĕн те пулин. Çапла ĕçлесех тăранкаласа пурăнатчĕ.

— Атя, кайса ыйтатпăр! Анчах та... парĕ-ши?

—Парать, парать! Ырă старик вăл!

Сережа чăлана кĕрсе амăшне тем каларĕ те йăпăр-япăр тумланчĕ.

— Ваççана илсе каятпăр-и?—хуллен ыйтрĕ вăл манран.

— Пырать пулсан — пытăр ара...

Анчах Ваççа, эпир таçта кайма хатĕрленнине сиссе, хăех тухрĕ пирĕн пата.

— Мĕн эсир питĕ вăрттăн хăтланатăр? Мана та илсе кайăр.

— Тумлан часрах,— терĕ Сережа.

Хамăр ăçта тата мĕн тума каяссине эпир ăна çул çинче каласа патăмăр. Вăл хавасланса кайрĕ.

— Ку — питĕ пысăк ĕç, атьсемĕр! Çăлатпăрах эпир вĕсене!..

Родион мучи патне Сережа пĕчченех кĕчĕ, эпир урамра тăрса юлтăмăр. Анчах нумай кĕтмелле пулмарĕ пирĕн — хапха уçăлчĕ те, Сережа Родион мучи лашипе урама тухрĕ.

— Ларăр, кайрăмăр!

— Епле... тӳрех килĕшрĕ-и лашине пама? — ыйтрăм эпĕ Сережăран.

— Пĕр сăмахсăрах! Хăй чирлĕрех выртать те, лашине хамах кӳлтĕм. Н-но!

Ырхан лаша хула хĕрринелле юртрĕ.

Каç пулнă май çанталăк тата ытларах сивĕтрĕ, çуна тупанĕсем айĕнчи юр янравлăн кăчăртатса пычĕ. Сивĕ пире питçăмартисенчен, алăсенчен чĕпĕтрĕ, анчах эпир,

хамăр çав тери чаплă ĕç тăвасси, Хĕрлĕ Çарăн виçĕ салтакне çăласси çинчен шухăшласа, сивĕ пулнине те сисмерĕмĕр.

Чылай вăхăт чĕнмесĕр пынă хыççăн Сережа ман еннелле çаврăнчĕ те:

— Вĕсене эпир сирĕн мунчана мар, урăх çĕре илсе кайăпăр,— терĕ.— Шанчăклăрах пулать...

— Ăçта вăл?

— Пирĕн инке патне. Унăн питĕ лайăх вырăн пур...

— Йышăнмасан?

— Йышăнать!

Вăл мана инкĕшĕ çинчен каласа пачĕ те, эпĕ килĕшрĕм.

Вăрман хыçĕнчен ерипен шупка уйăх ярăнса тухрĕ, юрпа витĕннĕ тӳрем хир талкăшпех кĕмĕл тĕслĕ пулса йăлтăртатма пуçларĕ.

— Уйăх çути халĕ пĕртте кирлĕ марччĕ ĕнтĕ пире,— терĕ Сережа, йĕри-тавралла пăхса çаврăнса.

— Тĕрĕс,— килĕшрĕм эпĕ унпа,— тĕттĕм пулнă пулсан авантарахчĕ.

— Ним тума та çук, çутă пулин те, каясах пулать...

— Паллах, таврăнмастпăр,—хушса хучĕ ку таранччен шарламасăр пынă Ваççа.—Ку вăл хăравçăлла хăтланни пулĕччĕ!

Часах эпир аманнă салтаксем выртнă çĕре çитрĕмĕр. Тĕрĕслесе пăхрăмăр — пурте чĕрĕ, анчах пурăнасси нумай юлманччĕ ĕнтĕ. Вĕсене юр ăшĕнчен пĕререн-пĕрерĕн çĕклесе тухса ерипен кăна çуна çине хутăмăр, çиелтен чăрăш тураттисемпе витрĕмĕр те хулана таврăнтăмăр. Эпир хамăра тытасран епле шикленсе, пăшăрханса пыни çинчен каламастăп та. Ăна хăвăрах чухламалла: фашистсем ун чухне пирĕн хулара тăп-туллиех пулнă вĕт!

Чăнах та, хиртен пырса кĕрсенех, хула хĕрринчи урамра пире шăнса хытнă икĕ фриц тĕл пулчĕç, анчах пирĕн çине çаврăнса та пăхмарĕç. Пирĕн телее, шăпах эпир хула патнелле çитсе пынă вăхăтра уйăх пĕлĕт хыç-

пе кĕрсе кайрĕ те, таврара пачах тĕттĕм пулса тăчĕ. Çутăра, тен, патрульсем пирĕн çуна çинче мĕн пуррине асăрхама та пултарнă пулĕччĕç. Вара пурте пĕтеттĕмĕр. Анчах ун-пек кун-пек нимĕн те пулмарĕ.

* * *

Тăхăр сехет çитиччен, урăхла каласан, фашистсем хулари халăха урамра çӳреме чарнă вăхăтчен, салтаксене Сережăсен инкĕшĕ патне чиперех илсе çитертĕмĕр. Вăл хулан тепĕр вĕçĕнче, ытти çуртсенчен пачах уйрăм, пĕр пысăк килхушшинчи пĕчĕк пӳртре пурăнать-мĕн.

Эпир пырса шаккасан, Сережăн инкĕшĕ алăка питĕ шикленсе уçрĕ. (Паллах ара, ун чухне кашни килтех сасартăк фашист хурахĕсем пырса кĕресрен хăранă.)

— Кам унта?— тени илтĕнчĕ тĕттĕмре.

— Ан хăра, инке, эпĕ ку,— терĕ Сережа хуллен.

Унăн сассине хĕрарăм палларĕ пулмалла.

— Мĕн туса çӳретĕн çĕр хута?

— Малтан кĕрт, кайран ыйт,— терĕ Сережа.— Ĕçпе килнĕ.

Эпир виççĕмĕр те — Сережа, Ваçça, эпĕ — пӳрте кĕрсе тăтăмăр. Кил хуçи чăх куçĕ пек лампа çутрĕ. Эпĕ пара самаях кăвакарнă çӳçлĕ, пысăк хура куçлă хĕрарăма куртăм. Унăн сăнĕ мана тӳрех кăмăла кайрĕ.

«Ку ырă чĕреллĕ çын пулма кирлĕ. Тен, йышăнĕ пирĕн салтаксене...»

— Ну, мĕн пулнă?— ыйтрĕ вăл, пирĕн çине çаплах тĕлĕннĕ куçĕсемпе пăхса.

— Питĕ пысăк ĕçпе килтĕмĕр, инке,— терĕ Сережа, алăк патĕнчи пукан çине ларса.— Анчах малтанах çапла калаçса татăлăпăр: эпир ыйтнине пĕтĕмпех тăвас пулать. Хăрамалли нимĕн те çук...

— Каласам тата!

— Эпир виçĕ красноармееца илсе килтĕмĕр. Вĕсем вăрманта шăнса вилме пуçланă. Çавсене çăлас пулать

санăн. Хамăр пата илсе кайма шиклентĕмĕр, мĕншĕн тесен фрицсем кирек хăш самантра та пирĕн пата пырса тухма пултараççĕ, анчах кунта халь çинех никам та килсе кĕрес çук.

Сережа инкĕшĕн куçĕсенчен питĕ хыттăн пăхрĕ.

— Пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна. Мĕн калăн ĕнтĕ çакăн пирки?

Хĕрарăм чылайччен чĕнмесĕр тăчĕ. Асăрхарăм—унăн тутисем чĕтреме тытăнчĕç. Ана Сережа та сисрĕ пулмалла, çавăнпа та тепĕр хут асăрхаттарчĕ:

— Хăрамалли нимĕн те çук. Эпир вĕсене вăрмантан илсе тухса пĕтĕм хула урлă илсе килме хăрамарăмăр пулать те...

— Аçта халь вĕсем?— ыйтрĕ юлашкинчен хĕрарăм.

— Ак кунтах, килхушшинчех. Эс хĕрхенсе пӳрте кĕртессе кĕтеççĕ.

— Вĕсем хăçанччен пулаççĕ ман патра?— Сережа патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ хĕрарăм.

— Пĕр кун, икĕ кун... Ашăнса çитиччен. Унтан эпир вĕсене урăх çĕре куçарăпăр, сана нумаях чăрмантармăпăр.

Хĕрарăмăн иккĕленесси пĕтрĕ пулас.

— Чĕнсе кĕртĕр эппин,— терĕ.

Вăл ĕнтĕ красноармеецсем хăйсен урисемпех утаканскерсем, тесе шутланă, çавăнпа та, эпир малтанхи салтака çĕклесе кĕрсенех, аллисемпе шартах çапрĕ.

— Тур çырлах! Ку вилнĕ вĕт!..

— Вилмен, анчах вилме пултарать, инке,— терĕ Сережа, çамки çинчи тарне çĕлĕкĕпе шăлса.— Санăн вĕсене сыватма тăрăшас пулать... Çавăнпа илсе килтĕмĕр сан патна. Эпир мĕн тума пултаратпăр вĕсене? Эс — тухтăрпа пĕрех, хăвăн пĕтĕм ĕмĕрне эмелсем хушшинче ирттернĕ.

«Ку аптекăра ĕçлекенскер пулмалла»,— шухăшларăм эпĕ.

Тата икĕ салтака йăтса кĕртсе хурсан, Сережа инкĕшĕ пире вĕсен тумтирĕсене хывма хушрĕ. Хăй вĕсен пуçĕсене, аллисене тытса пăхрĕ.

— Ой, шăнса вилес патнех çитнĕ!

— Çапла çав,— çирĕплетрĕ Сережа.

— Ку мĕн тата? Ку мĕн?— терĕ унтан хĕрарăм, пĕр салтакĕн кăкăрне тытса пăхса.

Пурте вăл кăтартнă тĕле пăхрăмăр. Боецăн кĕпи-тумтирĕ чĕп-чĕр юн иккен. Халь тин аса илтĕм: унăн çăварĕнчен юн сăрхăннине эпĕ паçăр вăрмантах курнăччĕ.

Пĕри юнлине курсан, Сережа инкĕшĕ ыттисене те тĕрĕслесе пăхрĕ. Пурте аманнăскерсем иккен. Чылайран, вĕсем сывалма пуçласан, пĕлтĕмĕр: тыткăна лекнĕ красноармеецсене таçта ăсатма хăваласа пынă чух нумайăшĕ выçăпа, суранĕсем ыратнипе халран кайса çитнĕ, утайми пулнă. Ун пеккисене фашистсем пере-пере пăрахнă. Кусене те çавăн пекех пенĕ, анчах темле майпа вĕлереймен...

Хĕрарăм кăмака çумĕнче тăракан арчине уçса бинтсем, темле эмелсем туртса кăларчĕ. Салтаксен суранĕсене çыхма тытăнчĕ. Эпир вăл епле хăвăрт тата ăста ĕçленинчен тĕлĕнсе пăхса тăтăмăр.

— Ну, эсир киле кайăрах,— терĕ пире хĕрарăм, сурансене çыхса пĕтерсен.— Халь эпĕ вĕсен шăннă аллиурисене эмеллеме тытăнатăп. Анчах алăка тул енчен çăраççипех питĕрсе кайăр, эпĕ килте çук пек пултăр. Ыран килĕр вара...

— Юрĕ, инке, тавтапуç сана,— терĕ Сережа.

— Тавтапуçне кайран калăпăр ăна,— аллипе сулчĕ Сережа инкĕшĕ.

* * *

Эпир Родион мучин лашине леçсе патăмăр та, киле питĕ вăрттăн, хÿмесем çумне йăпшăнса, кашни утăмрах асăрханса таврăнтăмăр, мĕншĕн тесен вăхăт тăххăртан иртнĕччĕ ĕнтĕ.

Анне мана кĕте-кĕте хытă пăшăрханма тытăннă. Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхнă вăл.

— Урамра тытрĕç пуль те — персе пăрахрĕç пуль... Эпĕ пырса кĕрсен те, кăшт çеç макăрса ямарĕ.

— Аçта çӳрерĕн ку таранччен? Мĕн пулчĕ?

Тăруках тĕрĕссипе каласа парайманрăм эпĕ ăна, тытăнкаласа тăтăм, анчах та вăл çине тăрсах тĕпченĕ пирки тĕпĕ-йĕрĕпех каласа патăм.

— Ан ятла, анне,— терĕм,— хамăр салтаксем вилме пуçланине курса тăнă çĕртех эпĕ вĕсене çăлмасăр тăма пултараймам ĕнтĕ,— терĕм.

Анне кăштах шухăша кайса ларчĕ те мана ыталаса çамкаран чуптурĕ.

— Урăх нихçан та мана тĕрĕссине каламасăр ан кай. Çакнашкал ырă ĕç тума каймашкăн эпĕ сана нихçан та чарас çук, сыхланарах çӳреме хушмалла çеç,— терĕ вăл.

Çакăнтанпа эпĕ аннене тата ытларах юрататакан пултăм. Пирĕн анне пек ырă чĕреллĕ çын тĕнчипе те урăх çук пек туйăнчĕ мана...

* * *

— Санăн инкӳ мĕнле çын вăл?— тесе ыйтрăм Сережăран тепĕр кунне, ун патне кайсан.

— Унăн историйĕ вăрăм,— терĕ Сережа. — Кĕскен каласан, революци вăхăтĕнче унăн упăшки, манăн аттен шăлнĕ ĕнтĕ, хамăр хулара ревком — революционнăй комитет председателĕ пулнă. Ана контрреволюционерсем каçхине урамра сыхласа тăрса персе вĕлерне. Çавăн хыççăн инке хуйхăрнипе кăшт çеç ухмаха ерсе кайман, пĕрвăсен чирĕпе больницăра та сахал мар выртнă. Сывалсан вара çав пĕчĕк пӳрте куçнă та çирĕм пилĕк çул ĕнтĕ тăр-пĕччен пурăнать, çынсемпе те пит сахал хутшăнать. Пирĕн пата çеç кăшт-кашт çӳрекелетчĕ. Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн пата та пыман, хамăр çеç кайкаласа пăхатпăр.

— Ĕçлессе ăçта ĕçленĕ вăл?

— Аптекăра.

— Çавăнта пуль, терĕм çав. Ку аван ĕнтĕ пирĕншĕн, унăн эмелсем тупăнаççĕ эппин...

— Ĕнерех каларăм-иç. Курмарăн-и, сурансене епле ăста çыхрĕ вăл?

— Куртăм, куртăм...

Çапла калаçса илтĕмĕр те, пĕр вунă-вунпĕр сехет тĕлĕнче хамăрăн салтаксене курма кайрăмăр. Эпир çăраççие уçса кĕнĕ чух пўртре пурте çывăратчĕç: салтаксем те, Сережăн инкĕшĕ хăй те. Салтаксене çĕр хута пăхнипе ывăннă пулмалла. Саланман та: каçхине пынă чух мĕнле пулнă — çаплипех выртнă кровать çине. Салтакĕсем урайĕнче çывăраççĕ.

Кăштах пăхса тăнă хыççăн Сережа инкĕшне хуллен кăна хулпуççиñчен пўрнепе тĕкрĕ.

— Инке...

Лешĕ картах сиксе вăранса кайрĕ.

— Ах, килтĕр-и?— терĕ вăл, пирĕн çине темшĕн айăпа кĕнĕ çын пек пăхса.— Çывăрнă эпĕ... Нумай та пулмасть выртсаттăм...

— Вăл юрать-ха, — терĕ Сережа,— кусем мĕнле? (Вăл пуçĕпе çĕрте выртакан салтаксем еннелле сулчĕ).

— Аптрамаççĕ пек халь, хăрамаллиех çук,— терĕ хĕрарăм,— анчах çĕрĕпех асаплантăм вара... Пĕри кăшт тăна кĕрет те — шыв ыйтать, тепри аташса каять, виççĕмĕшĕ бинтсене çурса тăкма хăтланать... Çамрăкки, ак çакă, кĕрĕкпе витни, аташма пуçласан пĕрмай: вĕлерĕр часрах, вĕлерĕр, пурĕпĕр парăнмастăп! тесе кăшкăрать, унтан тăрук командăсем пама тапратать: вперед, братцы, бей гадов! Кам та пулин илтесрен питĕ хăрарăм..

— Командир пуль вăл,— терĕм эпĕ.

— Пĕлме çук, тен, командир та пулĕ...

Пурсăмăр та, ним шарламасăр, пĕр хушă урайĕнче кĕскен-кĕскен сывласа çывăракан боецсем çине пăхса тăтăмăр.

«Аҫтисем-ши вӗсем? Фашистсен аллине епле майпа лекнӗ-ши? Мӗнле-мӗнле асап тӳсме тӳр килнӗ-ши вӗсене?..»

— Эпӗ хамӑн ӗҫе турӑм ӗнтӗ, малашне те хамран мӗн килнине пӗтӗмпех тӑвӑп,— терӗ хӗрарӑм кӑшт тӑрсан,— анчах вӗсене ҫитерме пуҫлас пулать вӗт, ачасем... Чирлӗ ҫын апатсӑр сывалма пултараймасть. Хамӑн пулнӑ пулсан — хӗрхенсе тӑмӑттӑм, анчах манӑн нимӗн те ҫук, выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнатӑп.

— Ҫапла ӗнтӗ вӑл...— сӑмахсене тӑсса каларӗ Сережа, шухӑша кайнӑ мӑн ҫын пек хӑйне янахӗнчен тытса.

— Ытлашши хӑрама кирлӗ мар,— терӗм эпӗ.

Иккӗшӗ те ман ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗҫ.

— Епле-ха тата? Вӗсене мӗн те пулин ҫитерес пулать-ҫке, выҫӑ пурӑнма пултараймаҫҫӗ вӗсем!— ман ҫине ҫиленнӗ пекех каласа тӑкрӗ Сережа.

— Лӑплан, тусӑм,— терӗм эпӗ ӑна,— ҫимелли тупатпӑр.

— Аҫтан, епле? Эсир хӑвӑр та выҫӑ ларатӑр терӗнҫке нумай пулмасть?— ҫаплах лӑпланасшӑн пулмарӗ манӑн тус.

— Кайран калӑп ӑна...— Иккӗмӗш хут ҫеҫ куракан хӗрарӑм умӗнче, вӑл хамӑн тусӑн инкӗшӗ пулсан та, «эпӗ вӑрманта пӗр пысӑк михӗ ҫӑнӑх пытарса хунӑ» теме аван мар пулчӗ мана. Анчах хам эпӗ шӑпах ҫав михӗ ҫинчен шухӑшларӑм.

— Юрӗ эппин, май пулсан...— шанмасӑртарах мӑкӑртатса илчӗ Сережа.

Эпир татах пӗр вӑхӑт салтаксем ҫине пӑхса тӑтӑмӑр. Сасартӑк вӗсенчен чи ҫамрӑкки, хайхи ҫӗрле аташнӑ чух командӑсем параканни, вӑранчӗ те пирӗн ҫине хӑраса кайнӑ куҫӗсемпе пӑхма тапратрӗ.

— Сире мӗн, шыв парас-и?— йӑвашшӑн ыйтрӗ Сережӑн инкӗшӗ.

— Кирлӗ мар...— терӗ лешӗ ҫӗтсе ларнӑ сасӑпа.

— Тен, ҫиес килет пулӗ?

— Ним те кирлӗ мар,— татса хучӗ лешӗ каллех. Пирӗн ҫине вӑл халь ҫав тери курайман куҫӗсемпе пӑхса, йывӑррӑн сывласа выртрӗ. Пӗр хушӑ вӑл та чӗнмерӗ, эпир те ним калама аптрарӑмӑр. Чылайран тин, пире пурне те сӑнаса тухсан, хуллен ыйтрӗ:

— Қамсем эсир?

— Совет ҫыннисем эпир,— терӗ Сережа, хӑюланса.

— Ăҫта выртатӑп эпӗ?

— Шанчӑклӑ ҫӗрте, хӑрамалли ҫук...

— Тен, эсир фашистсене сутӑннӑскерсем?

— Ан кӳрентер ачасене,— терӗ Сережа инкӗшӗ,— вӗсем сана та, санӑн юлташусене те вӑрмантан илсе килчӗҫ. Эсир вилмех пуҫланӑччӗ...

— Ман инке сире ҫӗр ҫывӑрмасӑр сипленӗ,— хушса хучӗ Сережа.

— Қаҫарӑр апла пулсан...— Вӑл хаштах сывласа ячӗ те куҫӗсене каллех хупрӗ.

— Йывӑр-ха ӑна, температура пит пысӑк унӑн,— терӗ Сережа инкӗшӗ.— Анчах пурӑнатех вӑл. Вилме памастпӑр. Пурне те сывататпӑр...

* * *

Вӑрманта пытарса хӑварнӑ ҫӑнӑха кам та пулин илсе каясран эпӗ питӗ хӑранӑччӗ, анчах вӑл юр айӗнче чипчиперех выртнӑ пулнӑ. Вут-шанкӑ пуҫтарма кайнӑ пек пулса, Сережӑпа иксӗмӗр миххе ҫунашкапа туртса килтӗмӗр те ҫуррине унӑн инкӗшне леҫсе патӑмӑр.

— Чирлӗ салтаксем валли ку. Пӗҫерсе ҫитер...

Вӑл хапӑл тусах килӗшрӗ.

— Юрӗ, ачасем, юрӗ. Ёнтӗ пирӗн ӗҫсем тата лайӑхрах ӑнса пырӗҫ. Халь вӗсен сывлӑхӗшӗн хӑрамалли ҫук...

Ун патӗнчен таврӑннӑ чух Сережа мана ҫапла каларӗ:

— Тӗлӗнмелле ҫемҫелсе кайрӗ ман инкен кӑмӑлӗ. Нихҫан та кун пек пулман вӑл. Ăҫтан кӑна йӑтӑнса тух-

ре унăн ачашлăхě? Хăйне хушнă ěçе, боецсене пăхассине, юратса пăрахрě пулмалла...

— А мěн,— терěм эпě,— вăл совет çынни мар-им?

...Салтаксене Сережа инкěшěн пÿртěнче вырттарса усрама питě лайăхчě. Кунта вěсене ăшăччě, тăтăшах асăрхаса тăракан та пурччě, анчах çапах та эпир вěсене урăх çěре куçарма шут турăмăр. Пěринче Раиса Ивановна (Сережăн инкěшě çапла ятлăччě) хăй те каларě пире:

— Ăнсăртран, фашистсем сиссен, ман пуçа тÿрех татаççě ěнтě...

Гитлер йыттисем ку хушăра чăнах та малтанхинчен те ытларах урчěç. Қаçхине 6 сехет хыççăн урама тухма юрамасть, тесе приказ кăларчěç. Унччен 9 сехет таранччен çÿреме юратчě. Хула хыçне пачах та кăларми пулчěç,— унччен пропуск илсе те пулин унта-кунта кайса çÿреме май пурччě çынсен. Патрульсем кăнтăрла та, каç та кашни кварталрах тăваттăн-пиллěкěн çÿреме пуçларěç. Тăшман куçě тěлне пулмасăр ниçтан та иртсе каймалли çукчě. Эсě урампа утатăн — сан хыççăн фрицсем сăнасах тăраççě. Эс ăçталла кайнине, хăш хапхана кěнине — пěтěмпех кураççě. Çынни шанчăксăртарах пек туйăнсан, ун хыççăн кěрсе пăхаççě...

Кунран-кунах хăрушланса пычě пурнăç.

Çакăн пек чух ăнсăртран çăлăннă виçě совет воинне тěплěн пытармасăр усрама юраман ěнтě. Кун пирки эпир Сережăпа та нумай шухăшларăмăр, Раиса Ивановнăпа та канашласа пăхрăмăр.

— Ăçта шанчăклăрах вырăн тупас? Ăçта пытарас?

Юлашкинчен, салтаксене Раиса Ивановна пурăнакан килхушшинчи кладовой айěнчи подвала антарас, терěмěр. Унта тěрлěрен кивě япаласем, никама кирлě мар ăпăр-тапăр çеç выртнă, çав шăтăкра çынсем пурăнаççě, тесе никам та шухăшлама пултарайман.

Қаланă — тунă. Малтан, паллах, эпир подвала тасаткаларăмăр, хăмасем тупкаласа виççěн выртмалăх сак

турăмăр, улăм тупса сартăмăр. Унтан Раиса Ивановна пире тимĕр кăмака пачĕ те — хутса ăшăтрăмăр. Çапла вара пирĕн «подвалти лазарет» пулса та тăчĕ. Боецсем хăйсем те кăмăлласах куçрĕç кунта, мĕншĕн тесен подвалта чăнах та пӳртре выртнинчен нумай шанчăклăрахчĕ.

Хамăр хушăра салтаксене пăхма (шыв вĕретсе памалла-и унта, тӳрлетсе вырттармалла-и, е тата мĕнпе те пулин пулăшмалла) — дежурство турăмăр. Паян эпĕ, ыран — Сережа, тепĕр кунне — Ваçça... Дежурстви вара талăкласчĕ. Каçхине «лазарета» кĕретĕн те, сана тултан питĕрсе илеççĕ, алăкĕ умне пур ăпăр-тапăр пăрахса тултараççĕ: ним палли те ан пултăр.

Эпĕ шкулта вĕреннĕ чух приключениллĕ кĕнекесем пит вулаттăм. Тӳсме çук юрататтăм эпĕ вĕсен геройĕсене! Вĕсем темĕн пек йывăрлăха лексен те парăнмаççĕ, мĕн вăй çитнĕ таран кĕрешеççĕ, юлашкинчен, пурĕпĕрех, хăйсен тăшманĕсене çĕнтерсе çиеле тухаççĕ...

Подвалти салтаксем патĕнче дежурствăра пулнă чух мана час-часах çав кĕнекесем аса килетчĕç, хама хам эпĕ Жюль Верн е Майн Рид геройĕ пек туяттăм. Ку тĕттĕм подвал — подвал мар, пещера. Эпир, нумай йышлă тăшманпа çапăçса чакмалла пулнипе, вăхăтлăха çак пещерăна пытаннă. Пирĕн йĕри-тавра — тискер çынсем, вĕсем пире каçса кайсах шыраççĕ, анчах тупаймаççĕ. Эпĕ çапăçура аманнă юлташсене хураллатăп. Тăшмансем пире тупас пулсан, эпĕ вĕсемпе юлашки тумлам юн юлмиччен çапăçма хатĕр, анчах парăнассăм çук!

Тимĕр кăмакара вутă шăтăртатсах çунать. Кĕтесе лартнă «шăши куç» подвал ăшчиккине аран-аран çутатать. Ашă. Шăп. Çывăракан салтаксем йывăррăн сывлани çеç илтĕнет. Мана та ыйхă пусма пуçлать. Çав тери, тӳсмелле мар çывăрас килет...

— Юрка, шыв пар-ха, тархасшăн,— тенине илтетĕп ыйхă витĕр.

Картах сиксе вăранатăп та, пуçне çĕкленĕ лейтенанта

шыв пырса паратӑп. Вӑл антӑхса кайсах ӗҫет, унтан, хаш! сывласа ярса, пуҫне каллех улӑм ҫине хурать.

— Тавтапуҫ, Юрка...

— Эс ӑҫтисем, пичче?— тесе ыйтатӑп эпӗ, ун ҫумне ларса.

— Атӑл таврашӗнчен...— тет лейтенант.— Илтнӗ-и эс Атӑл ҫинчен?

— Питӗ лайӑх пӗлетӗп, вӑл Калинин облаҫӗнчех пуҫланса Каспи тинӗсӗ таран юхать.

— Тӗрӗс,— тет лейтенант. Унтан сывлӑш ҫавӑрса илет те куҫне уҫмасӑрах, ерипен, хӑйӑлтатакан сасӑпа калама тытӑнать.

— Ҫав аслӑ Атӑл ҫинче Чӑваш ҫӗршывӗ пур... Калама та ҫук илемлӗ, чечекленекен ҫӗршыв... Унта паттӑр Чапаев ҫуралнӑ... Эпӗ те ҫавӑнта ҫуралса ӳснӗ... Анчах эпӗ паттӑр ӗҫсемех тӑваймарӑм-ха ку таранччен. Пӗтӗмпе те темиҫе фашиста ҫеҫ тӗп турӑ. Манӑн вӗсене ҫӗр, икҫӗр, пинӗ-пинӗпе пӗтерессчӗ. Унтан вӗсен шуйттан йӑвине, Берлинне кайса аркатассчӗ. Сываласчӗ часрах!.. Тухтӑр мӗн калать? (Вӗсем Раиса Ивановнӑна «тухтӑр» тетчӗҫ).

— Пурте сывалатӑр, тет, хӑрушши нимӗн те ҫук, тет,— ответ паратӑп ӑна.

— Сываласчӗ те, каллех ҫапӑҫӑва каясчӗ...

Вӑл кӑштах чӗнмесӗр выртать те, вӗри тутисене ҫуласа, шӑлӗсене шӑтӑртаттарса илет.

— Фашистсене Атӑл шывне ӗҫтерес марччӗ...

— Вӗсем Атӑл шывне ӗҫесси нихҫан та пулмасть вӑл, пичче, нихҫан та пулмасть,— тесе лӑплантарап эпӗ ӑна.

* * *

Пӗр каҫхине, «подвалти лазаретра» талӑк ларса пурӑннӑ хыҫҫӑн киле таврӑнсан, анне мана апат ҫитеркелерӗ те, эпӗ тӳрех выртса ҫывӑртӑм. Темшӗн вӑл кун манӑн пуҫ ыраткалатчӗ. Темле пит аван тӗлӗк курма

пуçласаттăм кăна, сасартăк хама такам хулпуççинчен тытса силленипе вăранса кайрăм. Пăхатăп — умра анне тăрать. Хăй питĕ пăшăрханнă.

—Тăр-ха, ывăлăм, сан патна такам килчĕ,— терĕ вăл шăппăн.

— Кам? Сережа мар пуль?

Эпĕ çавăнтах: «Лере мĕн те пулин пулман-ши?»— тесе хыпăнса ӳкрĕм, мĕншĕн тесен эпир çапла калаçса татăлнăччĕ: енчен те пирĕн «лазаретра» аван мар япала пулас пулсан — часрах пĕр-пĕрине пĕлтермелле.

— Çук, Сережа мар,— пуçне пăркаларĕ анне,— ку мăн çын, санпа пĕрле ĕçленĕскер, тет...

Тĕлĕнсех кайрăм. Кам пулма пултарать манпа пĕрле ĕçленĕ çын? Тата мĕншĕн вăл çĕрле килсе кĕнĕ? Халь ултă сехет те иртнĕ пулĕ ĕнтĕ, урамра çӳреме те юрамасть пулĕ? Мĕне пĕлтерет ку?..

— Тух ĕнтĕ часрах, вăл сана кухньăра кĕтсе ларать,— васкатрĕ анне.

Эпĕ йăпăр-япăр тумланкаларăм та тухрăм.

— Мĕнле пурăнан, рабочи класс?— тесе аллине тăсса пачĕ мана хайхи çын.— Нумай пулать сана курманни.

Ак тамаша! Пирĕн пата Матвей Матвеич Кочетов, мана типографире ĕçлеме вĕрентнĕ ватă рабочи, пынă иккен. Ăна курсан эпĕ питĕ савăнтăм. Типографине хупăранпа, Сережăпа Ваççасăр пуçне, хамăрăннисенчен никама та курманччĕ те...

— Епле килме пĕлтĕн эсĕ пирĕн пата?— ыйтрăм эпĕ унăн аллине тытса чăмăртанă хыççăн.

— Шут тытрăм та — килтĕм,— терĕ вăл, кăмăллăн кулкаласа.— Юрамасть-им паллана çынсем патне çулай кĕрсе тухма?

— Юрать, ара, юрать... Питĕ аван вăл,— кăштах иментĕм эпĕ.

Кочетов чĕлĕм чĕртсе ячĕ те, çăварĕнчен çăра тĕтĕм кăларса, кăвакарнă уссийĕсене шăлкаласа илчĕ.

— Ну, вăхăта мĕн ĕçлекелесе ирттеретĕн, ывăлăм, сывлăхусем еплерех?— ыйтма пуçларĕ вăл манран.

— Сывлăх аптрамасть-ха, анчах ĕçлессе нимĕн те ĕçлеместĕп. Мĕн ĕçĕ пултăр ĕнтĕ ку чухне...

— Åçта кайса çӳретĕн, камсене тĕл пулкалатăн?

— Пĕрре яла çимелли илме кайса килтĕм те, урăх ниçта та тухман. Палланă çынсене те никамах та курман.

— А леш... Санпа пĕрле икĕ ача ĕçлетчĕç, вĕсене те тĕл пулмастăн-и? Эсир питĕ туслăччĕ пулас, çавăн пек астăватăп,— куçне темшĕн хĕссе илчĕ старик.

Хăрасах кайрăм: ку пĕтĕмпех пĕлет пулас? Мĕншĕн ыйтать вăл кусем çинчен? Фашистсене сутăнса шпион пулса тăман-ши вăл? Тен, ăна нимĕçсем юри манран тĕпчесе пĕлме янă?

Иккĕленнипе эпĕ шат та пат тунса лартрăм:

— Çук, курман, тĕл пулман...

— Шел,— терĕ старик, каллех уссийĕсене шăлкаласа,— питĕ шел, мĕншĕн тесен хальхи пек йывăр самантра çывăх туссемпе çыхăну тытни питĕ кирлĕ, усăллă япала.

— Вăл апла пулĕ те-ха...

— «Пулĕ» мар, чăнах çапла вăл. Акă, эпĕ те çавăн пиркиех килтĕм сан пата. Епле пулсан та, эпир санпа пĕр çĕрте ĕçленĕ, пĕр шухăш-кăмăлпа пурăннă.— Кочетов сăнĕ тăруках улшăнчĕ.— Астăватăн-и, епле хĕрӳллĕн ĕçлеттĕмĕр, ĕç епле ăнса пыратчĕ пирĕн?

— Астăватăп...

— Пурте пĕр çын пекчĕ вĕт!

— Тĕрĕс...

— Анчах та ун чух пĕрле ĕçленисенчен нумайăшĕ çук ĕнтĕ...—Старик ассăн сывласа илчĕ.—Василий Дмитриевич та фашистсен аллине лекнĕ ав... Хамăрăн директора астăватăн пулĕ?

— Астумасăр ара!— васкасах каларăм эпĕ.— Ăна

фашистсем тытса кайнине те куртăм. Хĕне-хĕнех илсе кайрĕç...

— Куртăн пулсан — пит аван... Анчах та çав курнисене лайăххрах астуса юлас пулать. Нихçан та манма юрамасть вĕсене, Юрка. Мĕншĕн тесен эпир, вăхăчĕ çитсен, тăшмана пуринщĕн те питĕ хытă тавăрăпăр.

— Ох, вăл вăхăт часрах килсе çиттĕрччĕ,— хаштах сывласа ячĕ анне, пирĕн калаçăва итлесе тăнăскер.

— Ан кулян, йăмăкăм, çитетех вăл, тен, нумаях та кĕтмелле пулмĕ,— терĕ ăна хирĕç Матвей Матвеич.— Ĕненес пулать. Шанчăка çухатас пулмасть. Тата...—вăл шăппăнрах калаçма тытăнчĕ,— мĕн вăй çитнĕ таран тăшмана хирĕç кĕрешес пулать, унăн вăйне хавшатас пулать...

Кочетов пĕрре анне çине, тепре ман çине пăхса илчĕ. Пĕр хушă эпир пĕри те сăмах хушмарăмăр.

— Халăхра тарăху çĕкленсех пырать,— терĕ Кочетов чылайран.— Халăх тăшмана курайманнине тата ытларах çĕклемелле, çынсен чĕрисенчи хаярлăха тата вăйлăрах вĕрекен тумалла. Нимĕн умĕнче те чарăнса тăми хăватлă вăй пулса кайтăр вăл...

Старикĕн сăмахĕсем мана питĕ кăмăла кайрĕç, анчах вĕсене эпĕ пĕтĕмĕшпех ăнланса çитерейменрĕм.

— Епле тумалла-ха ку ĕçе, Матвей Матвеич?—тесе ыйтрăм вара.

— Аслă çынсем пĕлеççĕ ăна, ывăлăм,— ответ пачĕ вăл мана.— Анчах пирĕнтен пулăшу ыйтаççĕ...

Ку сăмахсем те маншăн ăнланмалла пулмарĕç.

— Эсĕ ыран ирхине пыр-ха ман пата,— терĕ старик, сасартăк тухса кайма хатĕрленсе.— Пĕлетĕн пуль, эпĕ Совет ураменче, 98-мĕш çуртра пурăнатăп. Калаçса ларăпăр иксĕмĕр... Пĕтĕм чĕререн... Пĕр лайăх хыпар пĕлтерĕп тата сана...

— Мĕнле хыпар?

— Çук, çук, халь каламастăп,— пуçне пăркаласа, чееленнĕ пек кулкаласа илчĕ вăл.—Халь каласан, ыран

ҫымӑн тата эсӗ... Хам пата пырсан тин калатӑп. Юрать-и?

— Юрать!

* * *

Ку старик мана ӑнран кӑларсах ячӗ...

Вырӑн ҫине выртсан та тахҫанччен ҫывӑрса каяймарӑм эпӗ,— унӑн сӑмахӗсем ниепле те ман пуҫран тухма пӗлеймерӗҫ. Мӗнле ӑслӑ ҫынсем ҫинчен каларӗ вӑл? Камсем вӗсем, пирӗнтен пулӑшу ыйтаканскерсем? Тата мӗнле лайӑх хыпар пӗлтерме пултарать вӑл мана? Ҫитменнине, ма-ха хыпарне кунта, хамӑр патӑрта пӗлтерес-шӗн пулмарӗ, хӑйӗн патне пырсан тин калама пулчӗ? Мӗне пӗлтерет ку пӗтӗм истори?

Ҫавӑн пек шухӑшсемпе ҫывӑрса кайнӑ пирки эпӗ тӗлӗкре те куртӑм ватӑ Кочетова. Ыйтатӑп пек унтан, тӗпчетӗп, анчах та вӑл кулать кӑна манран:

— Киле пыр, унсӑрӑн каламастӑп...

Куҫа уҫсассӑнах тул ҫутӑлма пуҫланине куртӑм та калама ҫук савӑнса кайрӑм: ну ӗнтӗ, халех каятӑп та — пӗтӗмпех пӗлетӗп!

Эпӗ тумланнине сиссе вӑраннӑ анне мана хӑтӑрсах тӑкрӗ:

— Аҫта каятӑн халех?! Асту, патрульсен аллине лекетӗн! Пӗлместӗн-им, ытла ир ҫӳрекенсене вӗсем пушшех юратмаҫҫӗ. Выртса ҫывӑр тепӗр хушӑ!

Ирӗксӗрех тата тепӗр сехет пек выртмалла пулчӗ. Анчах хамӑр тӗлпе унталла-кунталла темиҫе ҫын мӗлки иртсе кайнине курсанах тухса чупрӑм вара...

Кочетовсем пиртен чылай инҫетре, пасар хыҫӗнчех пурӑнаҫҫӗ. Сахалтан та пӗр километр та ҫурӑ пулать ӗнтӗ. Сисмерӗм те — тахӑш вӑхӑтра ҫитрӗм вӗсем патне. Хашка-хашка, хапха ҫинчи «98» цифра ҫине пӑхса илтӗм те — шаккарӑм. Малтанах шалтан ним сас та илтӗнмерӗ. Кӑшт тӑрсан каллех шаккарӑм. Унтан та-

тах... Пĕр пилĕк минутран тин сăнчăрлă алăк сăлăпне хуллен шутарни сисĕнчĕ.

— Кам кун пек ирех кĕмсĕртеттерсе çӳрет?— илтĕнчĕ лăпкă сасă.

— Эпĕ ку, эпĕ,— терĕм васкаса.— Юрка Репкин...

— А-а... Çитрĕн те пулать? Çивĕч, çивĕч...

Хапхана Кочетов старик хăй уçрĕ.

— Кĕрех, ывăлăм, кĕрех... Сана йышăнма эпĕ яланах хавас...

Хăй çавăнтах хапхана тепĕр хут тĕкĕлесе лартрĕ.

Эпир кухня урлă малти пӳлĕме кĕтĕмĕр. Çав самантрах эпĕ йĕри-тавралла пăхкаласа илтĕм. Питĕ чухăн. Малта кивĕ сĕтел тăрать, темиçе пукан. Сулахай енче çĕтĕк утиял витсе янă йывăç койка... Стенисем те çапçарах — пĕтĕмпе те пĕр çурăк картина кăна çакса янă. Чӳречисене те темле кипке евĕр чаршавсемпе çеç карнă.

— Неушлĕ кусем яланах çакăн пек пурăннă?— шухăшларăм эпĕ тĕлĕнсе.— Нумайранпа ĕçленĕ-çке вăл...

Старик манăн шухăшсене витĕрех курса пĕлнĕ пек пулчĕ.

— Эпир чухăннинчен тĕлĕнетĕн пулас, ывăлăм? Тĕлĕнмелле çав, питĕ тĕлĕнмелле... Кун пек чухăна юлассине эпĕ тĕлĕкре те курма пултарайман. Анчах фашистсем кăтартрĕç. Тăвată лавпа тиесе тухса кайрĕç манăн вăтăр çул ĕçлесе пухнă пурлăха...

Вăл чĕлĕмне темле тĕпренчĕксем тултарса чĕртсе ячĕ те, уссисене шăлкаласа, сĕтел патне ларчĕ.

— Эс кунтарах ирт, мĕн алăк патĕнче тăратăн? Ура çинче чăнлăх çук, теççĕ.

Эпĕ пĕр сăмахсăрах ăна хирĕç пырса лартăм. Темшĕн, хам питĕ хытă пăлхантăм, чĕре çав тери вăйлăн тапрĕ. Пĕр хушă кил хуçи те чĕнмерĕ. Пӳлĕмре шăпах пулчĕ, старикĕн чĕлĕмĕнче тапак тĕпренчĕкĕсем çатăртатса çунни çеç илтĕнчĕ.

— Санăн хăвна мĕншĕн чĕннине пĕлес килет ĕнтĕ,— терĕ унтан Кочетов, мана куçран пăхса.

— Пĕлес килет çав,— терĕм эпĕ.

— Çапла пуль... Ахальрен мар çутăлнă-çутăлман персе çитрĕн ав...

Вăл ĕнер кaç хамăр патăртан тухса кайнă чухнехи пекех чеереххĕн кулса илчĕ.

«Мĕн ку, манран куласшăн-и?»— терĕм хам ăшра, кăна курса.

— Эсĕ ху чĕнтĕн вĕт-ха...

— Çапла çав, чĕнтĕм. Кирлĕ пирки чĕнтĕм.— Старикĕн тутисем çинчи кулă самантрах çухалчĕ те, вăл куххялла çирĕппĕн утса тухса кайрĕ. Эпĕ ун хыççăн тĕлĕнсе пăхса юлтăм, анчах вăл пĕр-ик минутранах каялла таврăнчĕ. Унпа пĕрле çӳлĕ, хура сăнлă, чылай пысăк хура сухаллă, сунарçă пек тумланнă çын кĕчĕ те манпа юнашар пукан çине ларчĕ.

— Паллаш,—терĕ ăна Кочетов, ман çине кăтартса,— Репкин ывăлĕ, Тамарăн шăлнĕ...

Сухаллă çын çавăнтах манăн алла тытса чăмăртарĕ те:

— Куçран пăхсанах паллама пулать Репкин тавра-шĕсене. Ав, епле çунса тăраççĕ вĕсем,— терĕ.

Эпĕ ним калама та пĕлмерĕм, именсех кайрăм.

Кочетов хăйĕн хăни çине пăхса куçне хĕссе илчĕ.

— Ну, савăнтар ĕнтĕ ачана...

— Халех, халех...— терĕ лешĕ. Унтан атă кунчи ăшĕнчен кăвак хут татки кăларса мана тыттарчĕ.

— Аппу çыру парса ячĕ сире валли...

— Мĕнле аппа?— яштах сиксе тăтăм эпĕ. Пĕтĕм питкуç вут пек пĕçерсе кайрĕ.

— А санăн миçе аппа?

— Пĕрре кăна...

— Мĕн ятлă?

— Тамара.

— Ну, вот, ку çырăва Тамара парса ячĕ. Тата сăмахпа та салам калама хушрĕ.

— Вăл... вăл Хĕрлĕ Çарта вĕт!

— Çырăва вуласан вăл ăçтине пĕтĕмпех пĕлетĕн акă.

Пĕр хушă эпĕ хытнă пек пулса тăтăм. Аçтан, мĕншĕн, епле... Анланмалла та, ĕненмелле те мар! Пирĕн аппа темиçе уйăх каялла хăйĕн ирĕкĕпе çара тухса кайнă, вилмен пулсан халь те çартах пулмалла, таçта, Мускав енче... Сасартăк палламан çын унăн çыруне килсе парать, ун ячĕпе салам калать... Чăнах-и ку, тĕлĕк-и? Тĕрĕсех пулсан, аннене пĕлтерсен... мĕн тăвĕ-ши вăл?

Хамăн сылтăм алă çырăва хытăран хытă чăмăртарĕ — ăна кам та пулин туртса илесрен хăранă пек.

— Вуласам тата çыруне,— терĕ Кочетов, пуçĕпе пукан çине кăтартса.— Лар та лăпкăн кăна вуласа тух...

Ку сăмахсем мана сасартăк тăна кĕртнĕ пек пулчĕç. Алăри хуçлатнă хут таткине эпĕ йăпăр-япăр тӳрлетсе, куçсемпе ун çине тăрăнтăм.

Тĕрĕс, тĕрĕс! Почеркĕ пирĕн аппаннах! Тамарах çырнă!..

«Хаклă аннеçĕм, юратнă шăллăмсем,— тесе çырнăччĕ вăл.— Эсир мана хальччен вилнĕ тесе шутланă пулĕ... Ун пек шутлама май та пулнă çав, мĕншĕн тесен эпĕ сире хам çинчен тăватă уйăх хушши нимĕн те пĕлтерейменĕм. Май пулмарĕ. Нумай пăшăрхантăр пулĕ ман пирки... Анчах халь лăпланăр ĕнтĕ,— эпĕ сывах, мана нимĕн те пулман. Часах сире курса, пурне те ыталаса чуптума ĕмĕтленетĕп...»

Çырăва пĕрре вуласа тухни çителĕксĕр пулчĕ маншăн. Эпĕ ăна тата тепĕр хут хăвăрт-хăвăрт вуларăм. Унтан, кăмăл тулса килнипе хаштах сывласа ятăм та, хам сисмесĕрех çĕлĕке тăхăнса, алăк еннелле пăхрăм.

— Эс халех тухса каясшăн пулас?— терĕ мана Кочетов.

Унăн сăмахĕсем мана картах сиктерчĕç.

— Çук, çук...— терĕм эпĕ, тăрук именсе.

Тӳррипе каласан, эпĕ çак самантра чăнах та кунтан хăвăртрах тухса чупасшăн, часрах анне патне çитсе,

ăна çак ырă хыпара пĕлтересшĕн, савăнтарасшăн пулнă...

— Пирĕн калаçмалла-ха вĕт санпа,— терĕ Кочетов малалла.— Тата эсĕ аппу çинчен ыйтса пĕлме те ĕлкĕреймерĕн... Е çыру илнĕ хыççăн пирĕнпе калаçас кăмăлу пĕтрĕ-и?— Унăн сассинче вăл каллех кăмăллăн кулни сисĕнчĕ.

— Çу-ук, апла мар...— терĕм эпĕ ăна хирĕç, пуçа пăркаласа.— Манăн сирĕнпе питĕ калаçас килет, аппа пирки те ытларах пĕлесчĕ, çырăвĕнче вăл нимех те пĕлтермен. Таçта пурăнать, тем тăвать...

— Ну, апла пулсан — итле...

* * *

Малтан вĕсем мана аппа çинчен каласа пачĕç. Унан историйĕ вăрăмах та пулман иккен.

Август уйăхĕн вĕçĕнче аппа служить тунă часть Смоленск облаçĕнче окруженине лекнĕ,— фашистсем вĕсене сасартăк пур енчен те хупăрласа илнĕ. Паллах ĕнтĕ, фрицсем вĕсен пĕтĕм чаçне тыткăна илме ĕмĕтленнĕ, анчах аппасен командирĕ питĕ паттăрскер пулнă та парăнман. Калама çук хытă çапăçнă вĕсем фашистсене хирĕç, хамăрăннисем патнелле тухма тăрăшнă, анчах вăйсем çителĕксĕр пулнă пирки — тухайман. Вара сĕм вăрмансем ăшне кĕрсе кайнă та унта партизансемпе пĕрлешнĕ.

Каларăм-çке, вăрçăччен пирĕн Тамара телеграфра ĕçлетчĕ. Фронтра вăл радистка пулса тăнă. Партизансем патĕнче те ăна çав ĕçех хушнă.

— Питĕ маттур вăл сирĕн,— терĕ ун çинчен ватă Кочетовăн хура сухаллă хăни,— калама та çук пултаруллă хĕр... Ана пула эпир «Пысăк Çĕрпе» çыхăнса тăратпăр, кунта, тăшман вăхăтлăха йышăнса илнĕ районсенче, мĕн-мĕн пулса пынисене пĕлтеретпĕр, хамăр самолетсен хăш вырăнсене вĕçсе килсе бомбăсем парах-

маллине кăтартса паратпăр. Сирĕн аппу фашистсене мĕн чухлĕ сиен кӳнине шутласа та кăларас çук!

Эпĕ, унăн пĕр сăмахне те ирттерсе ярас мар тесе, çав тери тăрăшса итлесе лартăм. Вăл каласа панисем пĕтĕмпех ман куç умĕнчех тăчĕç. Аппа çинчен ыйтса пĕлнипе пĕрлех манăн тата çав хура сухаллă çын çинчен те пĕлес килсе кайрĕ. Чылай вăхăт тытăнкаласа тăнă хыççăн ыйтма хăюлăх çитертĕм-çитертĕмех.

— Эсир хăвăр та партизан эппин, пичче?

— Пĕлместĕп,— кулса илчĕ вăл.— Тен, партизан та-и... Вăрман çынни, тесен — тĕрĕсрех пулĕ.

— Чăн аслă партизанĕ вăл,— терĕ Кочетов,— партизансен комиссарĕ. Ман пата хăнана килнĕ, темиçе кунлăх...

Сасартăк вăл калама чарăнчĕ те — мана куçран чăр-р... пăхрĕ. Унтан, кăшт тăрсан:

— Эсĕ аслă ача, Юрка,— терĕ.— Асту, ман патăмра пулни çинчен те, çак юлташа курни çинчен те, аннӳсĕр пуçне нихçан та, никама та, пĕр сăмах та ан кала. Санăн аçу Хĕрлĕ Çар командирĕ, аппу — партизанка, эсĕ ху — пионер, часах комсомолец пулмаллискер. Санăн тӳрĕ те çирĕп кăмăллă çын пулмалла. Ăнланатăн-и?

— Питĕ лайăх ăнланатăп.

— Пар аллуна!

Хăйĕн ĕçпе хытнă пысăк ывçипе Кочетов ман алла тытса хытă чăмăртарĕ. Пĕр вăхăт эпир пурсăмăр та ним чĕнмесĕр лартăмăр. Кочетов карчăкĕ сĕтел çине чейникпе вĕретнĕ шыв тата консерва коробкисенчен тунă виçĕ кружка лартса пачĕ, унтан — тĕлĕнсех кайрăм çав!— шап-шур кулач, çутă хутпа чĕркенĕ çу, сахăр пырса хучĕ.

— Ку — партизансен кучченеçĕ, тутанса пăхăр,— терĕ Кочетов, кулача касма тытăнса.

— Вăрмансенче пурăнса, ăçтан тупатăр вара эсир кун пек çимĕçсене?— тĕлĕннипех ыйтрăм партизансен комиссарĕнчен.

— Пире фашистсем туянтараççĕ вĕсене,— кулса ответ пачĕ вăл.— Лавĕ-лавĕпех парса хăвараççĕ тепĕр чух...

Тавçăрса илтĕм,— партизансем тăшман обозĕсене тапăнса аркатаççĕ те мĕн пуррине хăйсене валли илеççĕ. Кун çинчен эпĕ унччененех кăшт илтнĕччĕ.

— Тĕрĕссипех каласан, фашистсем хăйсем тунă апатçимĕç мар ку, пирĕн çынсенне çаратнăскер,— терĕ Кочетов, кружкăсене чей тултарса.— Эпир хамăр пурлăха каялла туртса илетпĕр кăна. Совет халăхĕ нихçан та ют пурлăха хапсăнмасть вăл...

* * *

Кăштах ларкаласан, калаçу урăххи çине куçрĕ.

— Пирĕн пĕр питĕ пысăк ĕç тумалла, Юрка,— тесе пуçларĕ Кочетов вăрахăн, кружкăри чее кашăкпа пăтратса.— Астăватăн-и, эпĕ сана ĕнер: «пирĕнтен пулăшу ыйтаççĕ», тесе каларăм?

— Астăватăп...

— Такама пулăшни мар вăл, хамăршăн тăрăшни пулать, анчах халлĕхе ку ĕçе эпир иксĕмĕр кăна тума пултаратпăр...

Çак сăмахсене илтсен эпĕ алăри кружкăна та сĕтел çине лартрăм, чăмлама та пăрахрăм. Çав хушăрах партизансен комиссарĕ ман çине пит те сăнавлăн пăхнине асăрхарăм.

— Калăр, мĕнле ĕç?

— А эс манпа пĕрле ĕçлеме килĕшетĕн-и?

— Хуть те мĕнле ĕç пултăр — килĕшетĕп!

— Питĕ аван апла пулсан.— Кочетов, пĕр çăвар чей сыпса илсе, ман пекех кружкăна сĕтел çине лартрĕ.

— Фашистсем кунта киличчен эпир хаçатсем, кĕнекесем пичетлесе кăлараттăмăр... Хальхи вăхăтра ун çинчен ĕмĕтленме кăна пултаратпăр-ха эпир. Чăн та, ун пек вăхăт каллех çитет-ха вăл, анчах ыран-паянах мар, Хĕрлĕ Çар тăшмансене каялла хăваласа ярсан тин...

«Аçталла илсе каять ку хăйĕн сăмахне?»— тĕлĕнсе лартăм эпĕ, ăна итлесе.

— Типографи те çук пирĕн, ху пĕлен — пĕтĕмпех çĕр айне пытартăмăр... Анчах çапах та, Юрка, темле кансĕр пулсан та, пирĕн хамăр ĕçе тытăнасах пулать. Кĕнеке-хаçат мар,— ун çинчен халь сăмах та çук,— халăх валли пĕчĕкçеç листовкăсем кăларма пуçламалла пирĕн... Анланатăн-и?

— Анланатăп,— терĕм шăппăн.

— Халăх хушшинче пирĕн пĕтĕм вăя хурса чăн сăмах сарас пулать... Вăрçă çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен, фашистсен тискерлĕхĕсем çинчен, вĕсене пăхăнма кирлĕ марри çинчен,— пурин çинчен те! Фашистсем пур майсемпе те суя сăмах сарма, халăх эпир çĕнтерессе шаннине пĕтерме тăрăшаççĕ. Пирĕн çавсене хирĕç хамăрăн чăн сăмахпа тухас пулать. Вăл чăн сăмаха эпир листовкăсем урлă сарăпăр...

Чылай каларĕ Кочетов. Унăн сăмахĕсемпе эпĕ хам ăшăмра пĕтĕмпех килĕшсе лартăм: тĕрĕс, терĕм, эс калана пекех тумалла, листовкăсем, чĕнӳсем кăлармалла! Истори урокĕсенче вĕреннисем аса килчĕç: ĕлĕк, патша саманинче, революционерсем, ĕççыннисене улпутсен пусмăрне хирĕç кĕрешме чĕнсе, çавнашкал пит нумай листовкăсем кăларса салатнă, вĕсен хăйсен вăрттăн типографисем пулнă...

Анчах ку ĕçе халĕ, çак самантра, пирĕн пĕчĕк хулара мĕнле майпа пуçласа ямалла? Куна ниепле те чухласа илме пултараймарăм эпĕ. Кочетов хăех каларĕ-çке: пирĕн типографи те çук, ăна эпир çĕр айне пытарнă... Неушлĕ вăл çав машинăсене чавса кăларса, вĕсене ăçта та пулин вырнаçтарма шутлать? Ытла та хăрушă ĕç ку,— часах лекме пулать, мĕншĕн тесен пичетлекен машинăна хĕве чиксе тухма çук, вăл ытла та пысăк япала...

Эпĕ çапла шухăшласа ларнă вăхăтра, сасартăк, Кочетов манăн пур иккĕленӳсене те пĕтерсе хучĕ.

— Паян-ыранах пĕр çĕрте пирĕн пĕчĕкçеç типографи пулса çитет,—терĕ вăл.—Питĕ шанчăклă вырăнта. Фрицсем хĕрĕх кун та хĕрĕх каç шырасан та тупас çук ăна. Çавăнта ĕçлеме тытăнăпăр вара эпир санпа.

— Урăх никам та пулмасть-и унта?— татах тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.— Иксĕмĕр çеç ĕçлетпĕр-и?

— Паллах, иккĕн кăна мар,— терĕ Кочетов,— пирĕн листовкисене çыраканнисем те пулаççĕ. Анчах наборласа пичетлекеннисем — иксĕмĕр çеç. Паллах, тата пĕрикĕ çын тупсан, аван пулмалла, анчах çук вĕт-ха никам та. Пуринчен ытла, печатниксем кирлĕ пире...

Кочетов шăпланчĕ те кружкăран сивĕнсе кайнă чее сыпса илчĕ. Манăн шухăшсем тӳрех Сережăпа Ваçça Авдеевсем çине куçса ӳкрĕç. Вĕсене ку ĕç çинчен пĕлтерсен, çак вăрттăн типографире ĕçлеме чĕнсен — епле-ши? Пырĕç-ши? Анчах... вĕсене те кунта илсе килсен, хамăрăн «подвалти лазаретра» выртакан аманнă салтаксене пăхма никам та пулмасть...

Çак самантра татах тĕлĕнмелли тупăнчĕ. Вată Кочетов каллех манăн шухăшсене витĕр пĕлсе тăнă пекех пулчĕ!

— Ĕнер ыйтрăм та-ха санран...— терĕ вăл, сăмахсене кăшт тăсарах,— эсĕ çав печатнăй цехра хăвăнпа пĕрле ĕçленĕ юлташусене ку яхăнта пĕртте курман-и? Хушамачĕ мĕнлеччĕ-ха вĕсен?

— Авдеевсем...

— Вĕсем хамăр хуларан тухса кайман-ши?

— Кайман пулмалла...— ĕнер суйнă пирки халĕ мана тӳррипе каласа пама аван мар пулчĕ.

— Çавсемпе курса калаç-ха эсĕ май пулсан. Паллах, тӳррĕн персе ан яр, майĕпе, вĕсен кăмăлĕсене пĕлсе калаç та, хамăра пулăшма чĕн. Вĕсенчен пĕри «американка» çинче ĕçлетчĕ пулас?

— Çапла.

— Питĕ аван пулатчĕ! Листовкăсене вара эпир пысăк тиражсемпех кăларма пултараттăмăр.

— Кам ачисем вара вĕсем?— тесе ыйтрĕ партизансен комиссарĕ, ку таранччен калаçăва хутшăнмасăр, темле хутсене пăхкаласа ларнăскер.—Эс пĕлетĕн-и вĕсене?

— Питĕ лайăх пĕлетĕп,— терĕм,— ашшĕ командир, фронтра аманнă, амăшĕ те чирлĕ, пĕркун фашистсем асаплантарса пĕтернĕ ăна...

— Апла пулсан — йыхăрас вĕсене. Шанчăклă.

Эпĕ малтанхинчен те ытларах пăлханса кайрăм. Пĕр енчен, мана касхине Кочетов çинчен аван мар шухăшласа ун умĕнче шарт та пат тунса лартнăшăн намăс пулчĕ, тепĕр енчен — халь манăн пĕтĕмпех каласа парас килчĕ. Авдеевсемпе эпĕ епле тусли, вĕсем мĕн тери шанчăкли, эпир виçĕ салтака мĕнле çăлса усрани çинчен...

— Юрĕ,— терĕм вара,— паянах кайса калаçăп. Вĕсем пирĕнпе пĕрле ĕçлеме килĕшессине малтанах пĕлсе тăратăп...

— Ăçтан пĕлетĕн тăруках?

— Мĕншĕн тесен...

Эпĕ темиçе самант хушши кирлĕ сăмахсем тупаймасăр тытăнса тăтăм, унтан юлашки вăхăтра хамăр мĕнмĕн туни çинчен пĕтĕмпех, йĕркипех каласа кăтартрăм вĕсене...

* * *

— Питĕ тĕлĕнмелле!— терĕ партизансен комиссарĕ, ман калава итлесе пĕтерсен.— Куратăн-и, пирĕн ачасем мĕн тăваççĕ, Матвей Матвеич? Никам та пулăшман вĕсене, ертсе пыман... Хăйсем тĕллĕнех ĕçленĕ!— Вăл Кочетов куçĕсенчен пăхрĕ.— Нихçан та, темле тискерленсе хăтлансан та, фашистсем парăнтарас çук пире, мĕншĕн тесен фашизма хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленсе тăчĕ. Ачасем те кĕрешеççĕ вĕт-ха хамăрăн Тăван çĕршывшăн! Нимрен хăрамасăр, пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ!..

— Тĕрĕс,— терĕ Кочетов.— Шанчăклă ăру ӳсет пирĕн... Çак вăрçă çулăмĕнче вĕсем тата ытларах пиçеççĕ акă, хурçăран та çирĕпрех пулса тăраççĕ. Тăшман пырса ан çыхлан вара вĕсене!

Пĕр минут пек шăп пултăмăр. Унтан Кочетов ман пата пырса хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.

— Халь киле кай ĕнтĕ,— терĕ вăл,— аннӳне савăнтар, унтан тусусемпе калаçса татăл. Ĕçсем епле ăннине ыран каçалапа пĕлтер.

— Леш аманнă салтаксем пирки ан пăшăрханăр, эпир вĕсене апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен хамăр пулăшма пуçлатпăр,— хушса хучĕ партизансен комиссарĕ.

— Юрĕ, пĕтĕмпех эсир каланă пек тăвăп,— тесе сăмах патăм эпĕ вĕсене.— Тĕп-тĕрĕс пулĕ!

Кочетов мана ăсатма килхушшине тухсан, эпĕ унтан шăппăн:

— Мĕн ятлă ку партизансен комиссарĕ?— тесе ыйтрăм.

— Нумай пĕлсен — çын час ватăлать, теççĕ,— кулса илчĕ старик.— Хаклă çын вăл. Фашистсем унăн пуçĕшĕн çĕр пин тенкĕ пама пулнă. Ыттисене кайран пĕлĕн... Ну, сывă пул, чипер çӳре. Ыран кĕтетĕп эппин сана.

* * *

...Аппа çыруне вуласан, ун çинчен хам мĕн-мĕн илтнине пĕлтерсен, пирĕн анне мĕнешкел савăнса, хаваслanса кайнине каласа пама та çук. Сăнĕ-пичĕ те çамрăкланса кайрĕ унăн, нихçан нимĕнле хуйхă-суйхă курман пекех пулса тăчĕ. Вăл Кольăпа иксĕмĕре черетлĕн тыта-тыта чуптурĕ, пуçсенчен ачашларĕ, унтан альбомран аппан сăнне кăларса илчĕ те ăна чуптума тапратрĕ.

— Хĕрĕм, савнă хĕрĕм!.. Сывах-ха эппин, пурăнатăн, пире те манмастăн... Чунăмçăм, чунăм!— тесе, унăн карточкине кăкри çумне пăчăртарĕ.

Унпа пĕрле эпир те пĕтĕм чĕререн савăнтăмăр çав.

— Тен, аçу та сывă-и-ха... Тен, вăл та таврăнĕ... Ой, епле телей пулĕччĕ вара!— пăшăлтатрĕç аннен тутисем.

— Аттене нихçан та пĕтнĕ тесе шутламастăп,— терĕм эпĕ, аннен кăмăлне татах çĕклеме тăрăшса.— Вăрçа пирвайхи хут кайман вĕт вăл, ĕлĕк те нумай çапăçнă, анчах нимĕн те пулман ăна. Халь те нимĕн те пулмасть, курăн акă!

— Тем пекехчĕ эс паланă пек пулсан,— терĕ анне.— Пирĕн юрату сыхласа усратăрах ăна...

Кăнтăрлахи апат çинĕ чух анне каллех эпĕ паян Матвей Кочетов патне кайса килни çинчен сăмах тапратрĕ.

— Сана вăл Тамара çырăвĕ пирки çеç чĕннĕ-и?

— Ун пирки çеç мар,— терĕм эпĕ кăшт тытăнарах,— пĕр пысăк ĕç çинчен калаçрĕç вĕсем манпа...

— Мĕнле ĕç тата?

Эпĕ тăруках ответ параймарăм, мĕншĕн тесен анне çак ĕç пысăк хăрушлăхпа çыхăнса тăнине пĕлсен, хама чарасран иккĕленерех патăм. Эпĕ ăна кун çинчен майĕпе, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пĕлтерсе пырасшăнччĕ...

— Кала тата, ма каламастăн? Ма пытарса тăратăн? Хуть ырă, хуть усал хыпар пултăр, аннӳне пурĕпĕр пĕлтермелле, вăл сана хирĕç пулас çук, пулăшма çеç тăрăшмалла,— кăмăлсăрланчĕ анне.

— Эпĕ санран нимĕн те пытарман, пытарма та пултараймастăп,— терĕм те вара ăна, Кочетов хама мĕн пирки чĕнни çинчен каласа пама тытăнтăм.

Анне мана, куçран пăхса, çав тери тинкерсе итлесе ларчĕ. Эпĕ хам та ун çинчен куç илмерĕм, анчах вăл ытлашши пăшăрханни те, хăрани те палăрмарĕ. Пĕрикĕ хут ассăн сывласа илчĕ çеç.

«Хирĕçмест... Килĕшет...»— терĕм хама хам.

Чăнах та, эпĕ калама чарăнсан, анне ман кăмăла пĕртте хуçмарĕ.

— Ухмах ача, эпĕ сана пĕркуннех каларăм вĕт:

халăхшăн усăллă ĕç тума эпĕ сана нихçан та чарас çук, сыхланарах çӳреме хушмалла кăна,— терĕ вăл.

Мана урăх нимĕн те кирлĕ пулман. Анне хирĕçменни маншăн халь пуринчен те хаклăрах пулчĕ!

* * *

Авдеевсене ӳкĕтлесе чăрманма тивмерĕ, вĕсем Кочетов мĕн тума шутланине ăнланса илсенех килĕшрĕç.

— Ку — чăн-чăн ĕç пулать,—терĕ Ваççа,— ĕлĕкхи подпольщиксен ĕçĕ пекех. Вăрттăн типографи, листовкăсем, воззванисем... Тен, вĕсене хамăрăннах салатса çӳремелле пулать-и-ха?..

Анчах Сережа ăна çавăнтах пӳлсе лартрĕ:

— Ытлашши ан вĕç-ха эсĕ. Ку ĕç çине урăхларах пăхас пулать, вăйă мар вăл. Никам пĕлмен подвалта аманнă салтаксене шыв ĕçтерсе ларнинчен нумай йывăртарах е́нтĕ, паллах.

— Вăл тĕрĕс,— килĕшрĕм епĕ,— анчах типографийĕ питĕ шанчăклă вырăнта пулать, терĕç-ха...

— Эпĕ листовкисене сарасси çинчен калатăп,— терĕ Сережа.

— Патне çитсен курăнĕ-ха вăл,— аллипе сулчĕ Ваççа, кăштах кăмăлсăрланса.— Павка Корчагин* темле йывăрлăха лексен те хăтăлса тухма пĕлнĕ...

Тăвансем кирлĕ мар çĕртенех хирĕçсе кайма пултарнине курса, эпĕ сăмаха урăх еннелле куçарса ятăм.

— Пирĕн «лазаретрисем» епле пурăнаççĕ унта? Эсир иксĕр те килте-çке, кам пăхать вĕсене паян?

— Эпĕ нумай пулмасть таврăнтăм,— терĕ Сережа.— Ман вырăна инке юлчĕ.

— Вĕсен çимелли пур-ши-ха?

— Инке: нумаях юлман,— терĕ,— сассине пусарчĕ Сережа.— Тепрер эрнерен кансĕр пулма пултарать...

---

* *Павел Корчагин*—Н. А. Островский çырнă «Хурçă епле хĕрнĕ» ятлă кĕнекери тĕп герой.

— Аптрамăпăр,— терĕм эпĕ ăна лăплантармалла.— Вĕсем валли апат-çимĕç ытлашшипех пулать акă пирĕн.

— Татах мĕн те пулин тупмарăн пуль те?— тĕлĕнсе пăхрĕ ман çине Ваççа.

— Тупрăм çав,— кулкаласа илтĕм эпĕ.

— Ăçта? Мĕн?

— Нумай пĕлсен — çын час ватăлать, теççĕ,— терĕм те эпĕ Кочетовăн сăмахĕсемпе, татах култăм.— Ан васкăр, тĕлĕнмелле япаласем нумай пулаççĕ акă...

* * *

Тепĕр кунне, кăнтăрла иртсен пĕр тăватă сехетре, хамăрăн «подвалти лазаретра» дежурить тума Ваççана хăвартăмăр та, Сережăпа иксĕмĕр Кочетов патне кайрăмăр.

Пасар площадьне тухиччен эпир пит те хаваслăн шăкăлтатса калаçса пытăмăр. Хамăр тума тытăнмалли ĕç, пуринчен ытла вăл самаях хăрушă, анчах интереслĕ пулни пире хумхантарса, çĕклентерсе янă ĕнтĕ. Анчах пасар площачĕ патне çитеспе пирĕн калаçу сасартăк татăлчĕ. Эпир кунта вĕçĕмсĕр нумай халăх пухăннине куртăмăр. Тĕлĕнтерсех ячĕ ку пире. Мĕншĕн, мĕн тума пухăннă ку халăх? Паян пасар мар... Тата пасар пулакан кунсенче те халĕ кун чухлĕ çын пухăнмасть.

Эпир хăвăртрах утрăмăр та часах площадьри халăхпа хутшăнса кайрăмăр. Пĕринчен, тепринчен ыйтатпăр:

— Мĕн пулнă? Халăх ма пухăннă?

Малтанах пире никам та йĕркеллĕ ответ памарĕ, унтан, халăх хушшине шаларах кĕрсен, пĕр çамрăкрах хĕрарăм ăнлантарса пачĕ:

— Кĕçĕр такамсем тăватă фашиста çапса пăрахнă, çавăншăн халь вĕсем хăйсем ку таранччен хупса усранă сакăр çынна çакаççĕ. Кашни фашистшăн — икĕ çын... Курмарăр-им, пур хӳмесем çине те пĕлтерӳсем çапса тухнă ун çинчен...

— Ҫамсене ҫакаҫҫӗ-ши вара? — ыйтрӗ Сережа чӗтрекен сасӑпа.

— Ҫамсене пултӑр, — ассӑн сывласа илчӗ хӗрарӑм, — паллах, пирӗн ҫынсене! Часах илсе килеҫҫӗ пуль ӗнтӗ, курӑпӑр-ха...

Эпир Сережӑпа иксӗмӗр те сиксе чӗтреме тытӑнтӑмӑр... Темиҫе минутранах халӑх хумханма, шавлӑн калаҫма тапратрӗ, пурте ӗлӗк военкомат вырнаҫнӑ тӑкӑрлӑкалла пӑхрӗҫ.

— Килеҫҫӗ... килеҫҫӗ...

Эпир чӗрне вӗҫҫӗн тӑрса ҫӳлелле кармашрӑмӑр, анчах та пӳсем пӗчӗккипе кураймарӑмӑр. Сасартӑк ҫынсем каялла чакма тытӑнчӗҫ. Пире чутах таптаса пӑрахатчӗҫ, ҫав тери хӗстерсе лартрӗҫ. Ку вӑл — фашистсем арестленисене площадь варринелле илсе пыма ҫул уҫса пынӑ пирки пулнӑ иккен. Ҫынсен хулпуҫҫийӗсем хушшипе эпӗ юланутлӑ нимӗҫ офицерӗ иртсе пынине куртӑм. Лашин мӑйне каҫӑртса лартнӑ та, кӑшкӑрать, аллинчи саламачӗпе пирӗн ҫынсене урлӑ та пирлӗ ҫапать...

Унтан ҫап-ҫутӑ штыксем курӑнчӗҫ. Темле хӗрарӑм кӑшкӑрса макӑрса ячӗ. Таврари ҫынсем пӑлхавлӑн калаҫни сӗр-сӗр-сӗр... туса кайрӗ. Арестленисене ҫывӑхрахран курас тесе, эпӗ пуҫа чикрӗм те халӑх хушшипе площадь варринелле пӑшатан пек шӑтарса кӗрсе кайрӑм. Сережа та манран юлмарӗ.

Эпир такан патнех, чӑн мала тухса тӑтӑмӑр. Хашкаса, куҫсене чарса пӑрахсах пӑхма тытӑнтӑмӑр... Йӗри-тавра — хӗҫпӑшаллӑ фашистсем, варринче арестленӗ вырӑс ҫыннисем. Саккӑрӑн. Виҫҫӗшӗ хӗрарӑм. Анчах вӗсене ҫурӑмӗсемпе пирӗн еннелле тӑратнӑ та, пӗрине те паллама ҫук. Тепӗр енчен кайса пӑхма май килмерӗ, ытла та хӗстерсе лартрӗҫ, малалла кайма мар — пӑркаланма та ҫук.

Такан айне темиҫе сӗтел лартнӑ-мӗн. (Вӗсем мӗн тума кирлӗ пулнине эпӗ кайран тин пӗлтӗм...) Ҫав сӗтелсем ҫине йӗркипех фашистсем хӑпара-хӑпара тӑчӗҫ:

комендант, унăн помощникĕсем, офицерсем... Хайхи «бургомистр» та, леш йытă, вăрçăччен сехет магазинĕн директорĕ пулни, нимĕçсем хушшинче тăрать... Чĕресем тапми пулчĕç ĕнтĕ пирĕн, сывлăш пӳлĕнсе ларчĕ, вăхă-чĕ-вăхăчĕпе пыр патне темскер чăмăртанса хăпарса хытса ларать. Эпир кăна мар, пĕтĕм халăх ниçта кайса кĕрейми пăлханнă ун чух.

— Итлĕр мана!— хăлхана касса кайрĕ сасартăк нимĕç команданчĕн тăкăскă сасси.— Сире эпир нумай хутчен асăрхаттарнă пулин те, эсир ниепле те ăса кĕрсе çитейместĕр. Хулара йĕркесĕрлĕхсем çаплах пĕтмеççĕ. Иртнĕ каç тахăшĕсем пирĕн патрульсене вĕлернĕ. Çавăншăн эпĕ паян сакăр çынна çакмалла турăм. Пĕл-сех тăрар: йĕркесĕрлĕхсем малашне те чарăнмасан, аслă Германи çарĕн салтакĕсене татах тивсен, эпĕ кашни салтакшăн вуншар, çирĕмшер, аллăшар çын çакма хушатăп!

Çапла пуçласа ячĕ те вăл, нумайччен çухăрчĕ. Юна-рĕ, хăратрĕ, халăха темĕн тĕрлĕ хурлăх кӳме пулчĕ. Халăх ăна ним чĕнмесĕр, шăппăн, шăлсене çыртса ит-лесе тăчĕ.

Комендант хыççăн «бургомистр» каларĕ. Унăн сăма-хĕсем комендант каланисенчен те усалтарах, ирсĕртерех пулчĕç. Малтанах пĕр-икĕ хутчен ӳсĕркелесе илчĕ, ун-тан халăх çинелле мар, таçта аяккалла пăхса калама тытăнчĕ. Паллах, вăл хула çыннисене куçран пăхма пул-тарайман, мĕншĕн тесен кашни çын ăна мĕн тери курай-маннине, кашниех ăна тытса çурса пăрахма хатĕр пул-нине ăнланнах ĕнтĕ.

— Хула çыннисем! Тăвансем,— тесе пуçларĕ вăл урмăшнă сасăпа,— хамăр пурăнма пĕлменнипех пирĕн питĕ пысăк хурлăх курма тивет... Германи командова-нийĕ сире лăпкăн, хирĕçмесĕр, законсене пăхăнса пурăн-ма хушать. Çавнашкал пурăнсан, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулмалла. Анчах та эсир çавна ниепле те ăнланасшăн мар, хăвăра туса панă йĕркесене пăсатăр, приказсене



пăхăнмастăр, пире çĕнĕ йĕрке туса пама килнĕ Германи çарĕсене хирĕç хĕçпăшалпа тухатăр... Çавăн пирки усăсăр юн тăкăнать те ĕнтĕ. (Çак вырăнта вăл, хăйне хыçалтан кам та пулин сасартăк пырса çапасран шикленнĕ пек, хулпуççи урлă каялла пăха-пăха илчĕ.) Ӳкĕтлесе калатăп сире,— сасартăк сассине хăпартрĕ вăл,— чарăнăр нимĕçсене хирĕç тăма! Нимĕçсемпе килĕштерсе пурăнни — хăвăршăнах аван пулĕ, вара халăх юнĕ те юхма чарăнĕ...

Вăл татах темскер калама çăварне уçрĕ, анчах çав вăхăтра халăх хушшинчен тахăшĕ пит те вăйлăн ыvăтнă чăмăр чул ăна янахĕнчен çитсе çапрĕ. «Бургомистр» картах сиксе чалăшса кайрĕ, аллипе янахĕнчен çавăрса тытрĕ, унăн сăмси çинчи ылтăн куçлăхĕ аяккалла сирпĕнсе кайрĕ.

Халăх тулли кăмăлпа кĕрлесе илчĕ...

— Ай-ай, лайăх тиврĕ ку,— терĕ ман хыçра пĕри.

— Пуçĕнчен лектермеллеччĕ ăна, шуйттана, çакăнтах тăнсăр пулса выртттăр!— хушса хучĕ тепри.

«Бургомистрпа» мĕн пулса иртнине тавçăрса илнĕ комендант тата ытларах урса кайрĕ çакăн хыççăн. Куçĕсене чарса пăрахса, çăварĕнчен кăпăк кăларса, икĕ

чышкине те чăмăртаса, халăх çинелле усал йытă пек хаяррăн кăшкăрма тапратрĕ:

— Молчайт! Молчайт! Всех стреляйт буду! Всех убивайт, вешайт буду, русски звинння!— Çавăнтах каялла çаврăнса хăйĕн помощникĕсене темскер кăшкăрчĕ.

Малашнехи ĕçсем питĕ хăвăрт пулса пычĕç. Таканăн урлă кашти çине икĕ енчен икĕ фашист хăпарса кайрĕç те мăйкăчламалли вĕренсем çыхса çакрĕç. Сĕтелсем çинче тăракан фашистсем çĕре анчĕç, вĕсен вырăнне такан айĕнче тăракан сакăр совет çыннине, кашнине уйрăм, мăйкăчлă вĕрен тĕлне хăпартрĕç. Пичĕсемпе вĕсем халь пирĕн еннелле çаврăнса тăчĕç.

Халăх каллех кĕр-кĕр-р... кĕрлесе кайрĕ.

Эпĕ Сережăна хулĕнчен пăчăртаса тытса, шак хытса тăтăм. Манăн куçăмсем фашистсем çакма хатĕрленнĕ çынсен сăнĕсем тăрăх шурĕç... Сулахай енче пĕр утмăл çулхи ырхан старик тăрать, унтан икĕ хĕрарăм — пĕри ватăрах, тепри çап-çамрăк, унтан... Ķам ку? Ķам ку?.. Сережăн хулне тата хытăрах пăчăртаса лартрăм.

— Куртăн-и? Паллатăн-и? Сулахай енчен тăваттăмăшне пăхсам...— хăвăрт пăшăлтатса илтĕм эпĕ.



— Паллаймастăп,— терĕ Сережа.

— Епле паллаймастăн?— çиленсе кайрăм эпĕ.— Пăх лайăхрах! Василий Дмитриевич вĕт! Пирĕн типографи директорĕ!

— Чăнах...— йывăррăн сывласа ячĕ те Сережа, эпир иксĕмĕр те шăп пулса, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр, хамăрăн юратнă çын çинчен куç илмесĕр пăхса тăтăмăр.

Акă, вăл чĕрĕ-ха, сывлать, унăн чĕри тапать, вăл халăх çинелле пăхать, куçĕсемпе, тен, хăйĕн тăванĕсене, палланă çыннисене шырать пулĕ. Анчах темиçе самантран вăл пулмасть, ăна вĕлереççĕ... Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл фашистсене, пире чурасем тума килнĕ хурахсене, пăхăнасшăн мар, пĕтĕм чунĕпе, чĕрипе кураймасть вĕсене... Ах, ма пăхмасть-ши вăл пирĕн еннелле? Юлашки хут куççемпе тĕл пулса та пулин сывпуллашса юласчĕ унпа... Қайран нихçан та, нихçан та курас çук вĕт ăна!..

— Вешайт!— тесе çухăрса ячĕ комендант.

Темиçе фашист пĕр харăсах сĕтел çинче тăракансене мăйкăчсем тăхăнтарчĕç.

Комендант татах темле команда пачĕ. Çав самантрах мăйкăч тăхăнтарнă Василий Дмитриевич пĕр утăм малалла ярса пусрĕ те хăйĕн уçă сассипе площадьри пĕтĕм халăх илтмелле кăшкăрчĕ:

— Ан парăнăр, юлташсем! Ĕненĕр — çăлăнăç сехечĕ инçе мар! Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕх!

Урăх нимĕн те калаймарĕ. Унăн ури айĕнчи сĕтеле туртса кăларчĕç те, вăл вĕрен çинче туртăнса пăвăнса ларчĕ.

Сережăпа иксĕмĕр те кăшкăрса макăрса ятăмăр...

* * *

— Ма час килмерĕр?— тесе ыйтрĕ пирентен Кочетов, эпир ун патне чупса пырсан. Унтан пирĕн çине тинкеререх пăхрĕ те, эпир сиксе чĕтренине асăрхарĕ пулас.

— Мĕн пулнă сире? Эсир макăрса та пăхнă тем паян?

— Ун пек те пулчĕ çав,— терĕм те эпĕ, пасар площадĕнче халь кăна мĕн пулни çинчен макăра-макăра каласа патăм.

Матвей Матвеич, тăруках салхулланса, сăнран улшăнса, çĕрелле пăхса ларчĕ. Темиçе хутчен ассăн, йывăррăн сывласа илчĕ... Эпир пĕлтернĕ хăрушă хыпар унăн чĕрине те çав тери хыттăн пырса тивсе ыраттарчĕ курăнать.

— Сакăр çынна çакрĕç, терĕр-и?— ыйтрĕ вăл чылай ларсан, пирĕн çине пăхмасăрах.

— Çапла çав, сакăр çынна...

— Пирĕн Василий Дмитриевич та çав шутра эппин?

— Çав шутрах.

— Н-да... Урсах кайрĕç... Анчах та вĕсене нимĕн те çăлаймĕ!— Матвей Матвеич лутра пукан çинчен сасартăк тăрса, хăйĕн шăмми-шаккинче мĕн чухлĕ вăй пуррине тĕрĕслене пек, карăнса, хулпуççисене вылятса илчĕ.— Эпир те фашистсем умĕнче парăмра юлмăпăр. Сакăр çын вырăнне пин пулĕ пирĕн, анчах вĕсен вăйĕ куллен-кун чакса пырĕ!

Ку сăмахсене вăл васкаса тумланнă май хăй тĕллĕн каларĕ.

— Атьăр, ачасем, кайрăмăр,— терĕ вăл тумланса çитсен.— Пирĕн халь, ырми-канми ĕçлесе, тăшмана кунĕн-çĕрĕн тавăрас пулать...

— Эс ман юлташпа калаçмарăн-çке,— терĕм эпĕ, пуçпа Сережа еннелле сулса.— Хайхи Авдеев вĕт ку...

— Мĕн калаçмалли пур?— хулпуççи урлă пăхрĕ вăл ман çине.— Пирĕнпе пĕрле ĕçлеме килĕшет вĕт вăл? Тата урăх мĕн кирлĕ?

Килхушшине тухсан, вăл самантлăха чарăнса тăчĕ.

— Эпĕ пĕр икçĕр метр малта утăп, эсир мана куççран вĕçертмесĕр каярахран пырăр, нимĕнле палли те ан пултăр.

...Эпир кукăр-макăр урамсем, ансăр тăкăрлăксем тăрăх, унтан темле килхушшисем витĕр пăтрашса пытăмăр. Пирĕн хыççăн хуть темле ăста сыщик йĕрлесен те çухалса каймаллаччĕ çав! Ӳлашкинчен «кивĕ хулана», ял пек вырăна çитсе тухрăмăр, сарайсем хыçĕпе пĕр килхушшине кĕтĕмĕр. Пире лупас айне тăратса хăварса, Матвей Матвеич пӳрте кĕрсе кайрĕ.

— Кунтан эпĕ каялла кайма та пĕлес çук пуль,— терĕ Сережа.

— Çухалсах каймăпăр-ха хамăр хулара,— алăпа султăм эпĕ.

Кĕçех Матвей Матвеич каялла тухрĕ. Унпа пĕрле пусма картлашкисем тăрăх ĕнерхи хура сухаллă çын, партизансен комиссарĕ анчĕ. Старик пире аллипе кăчăк туртрĕ те, эпир вĕсем хыççăн утрăмăр. Каллех пахчана тухрăмăр, сарай хыçĕсемпе пытăмăр, унтан çав тери çăра ӳссе ларнă чие йывăççисем хушшине алтса тунă омшаник* умне çитсе тăтăмăр.

— Çитрĕмĕр,— терĕ Матвей Матвеич,— пирĕн «полиграфкомбинат» çакăнта пулать ĕнтĕ. Епле пек? Çурчĕ чаплă вĕт?

Сережăпа иксĕмĕр те ăна хирĕç нимĕн те калаймарăмăр, мĕншĕн тесен эпир питĕ тĕлĕннĕччĕ. Анчах омшаника кĕрсен, Матвей Матвеич лампа çутса ярсан, тата ытларах тĕлĕнсе кайрăмăр. Çав пĕчĕк шăтăкра, çĕр айĕнче, чăн-чăн типографи туса хунă иккен! Хыçалти стена патне икĕ сĕтел лартнă та вĕсем çине кассăсем** хунă, унтах верстаткăсем, угольниксем*** выртаççĕ.

— Ак ку сире валли,— терĕ те Матвей Матвеич, кĕтесре тăракан «американка» çине кăтартрĕ.

— Ара, ку пирĕн Ваççа ĕçленĕ машина вĕт!— терĕ Сережа.— Епле килсе ларнă вăл кунта?!

---

* Вĕллесене хĕлле усрамалли çĕрпӳрт.
** Саспаллисем тултарнă ещĕксем.
*** Набор тунă чух кирлĕ япаласем.

— Тутăхса ларасшăн пулман, ĕçлесшĕн пулнă, çавăнпа килнĕ,— шӳт туса илчĕ Матвей Матвеич. Унтан кулмасăрах хушса хучĕ:— Эсир тĕрĕслесе пăхăр-ха ăна, чăхăмламасть-и? Кĕçĕр унăн нумай ĕçлемелле пулать...

Эпир машинăпа тăрмашма тытăнтăмăр. Матвей Матвеич таçта тухса кайрĕ те, вунă минут пек иртсен пĕр çĕклем вут-шанкă çĕклесе пырса, тепĕр кĕтесре тăракан пĕчĕк тимĕр кăмакана хутса ячĕ. Партизансен комиссарĕ вăл хушăра кассăсем патĕнче темскер вуласа ларчĕ.

— Ну, епле сирĕн ротаци*?— тесе ыйтрĕ пирĕнтен Матвей Матвеич, çиелти тумтирне хывса.

— Пĕтĕмпех йĕркеллĕ,— терĕмĕр эпир.— Краски шăнарах панă, валиксем çине сарăласшăн мар.

— Ав, кăмака патĕнче ăшăтăр.

Хăй çавăнтах партизансен комиссарĕпе юнашар пырса ларчĕ. Вĕсем темскер вуларĕç, хушшăн-хушшăн пĕр-пĕринпе калаçса илчĕç. Эпир «американкăн» валикĕсене ăшăтса çемçетсе çитериччен Матвей Матвеич, аллине верстатка тытса, шакăлтаттарма та пуçларĕ.

Тепĕр сехет çурăран вăл наборланă страницăна эпир машина ăшне кĕртсе лартса, темиçе оттиск турăмăр. Иккĕшне Матвей Матвеич çĕнĕрен пăхса тухса тӳрлетме илчĕ (типографире ĕçлекенсем ăна «корректура вулама» теççĕ), юлнисене эпир Сережăпа иксĕмĕр çавăрса тытрăмăр. Хамăрăн мĕн пичетлемелле пулассине пĕлес килет-çке...

Чăн-чăн хаçатах иккен! Пĕчĕккĕ ĕнтĕ, пурĕ те тетрадьри икĕ страница пысăкăш кăна, анчах çапах та — хаçат. Ячĕ те пур: «Тăшмана тавăрар!»,—тенĕ, кам кăларнине те кăтартнă: «ВКП(б)-н Р-ри вăрттăн ĕçлекен комитечĕн хаçачĕ», тенĕ. Номерне те лартнă. Çӳлти сылтăм кĕтесе, «Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!» тес вырăнне: «Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!» тесе çырса хунă.

---

* Хаçатсем пичетлемелли пысăк машина. Матвей Матвеич куна юптарса каланă.

Хальхи пекех астăватăп: çав пирвайхи номерте пурĕ те пĕр статья кăначчĕ, вăл «Юншăн — юн, вилĕмшĕн — вилĕм!» ятлăччĕ. Эпир çак статьяна каçса кайсах вулаca тухрăмăр, çав тери хĕрӳллĕ, вĕри сăмахсемпе çырнăччĕ ăна. Фашистсем паян пасар площадĕнче сакăр совет çыннине çакнинчен пуçласа янă та, тăшмана куллен тавăрма, кашни утăмра пĕтерсе пыма чĕнсе, эпир Гитлер çарне пурпĕрех çĕнтерессине ĕнентерсе panăччĕ.

Çĕрĕпех пичетлерĕмĕр вара эпир ăна. Пин ытла çапрăмăр...

Тул çутăлма пуçланă чух Матвей Матвеичпа партизансен комиссарĕ пире çапла каларĕç:

— Киле кайăр ĕнтĕ. Хăвăрпа пĕрле икçĕр-виççĕр хаçат илĕр. Çула май вĕсене ăçта кирлĕ çавăнта салатса пырăр. Анчах астăвăр, хытă сыхланăр...

— Юрĕ, пĕлĕпĕр,— тесе килĕшрĕмĕр эпир.

Çавăнтах хаçат листисене кĕсъесене, хĕвсене тултарма тытăнтăмăр.

— Чимĕр-ха, тăхтăр,— терĕ сасартăк партизансен комиссарĕ, эпир тухса кайма хатĕрленсе çитсен пирĕн паталла пырса.— Чутах манса каяттăм...

— Мĕн вара?

— Кăнтăрлапа, ну... çывăрса тăрсан, эсир Пушкин урамĕнчи 72-мĕш çурта кайăр. Сире унта пĕр карчăк кĕтсе илĕ. Эсир: пире Иван пичче ячĕ, тейĕр. Вара вăл сире леш хăвăрăн аманнă салтаксем валли çимеллисем парса ярĕ... Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăмăр.

— Ну, халь вĕçтерĕр.

— Кунта пирĕн хăçан килмелле тата?

— Кирлĕ пулсан — хамăрах чĕнĕпĕр.

— Юрĕ...

Матвей Матвеич, пирĕнпе пĕрле омшаникрен тухса, пире урамалла кăларса ячĕ. Сережăпа вара тӳрех уйрăлтăмăр: вăл пĕр еннелле кайрĕ, эпĕ — тепĕр еннелле.



Хӳмесем çумне йăпшăнса, пилĕк таран юр ăшшĕн ишсе пытăм эпĕ. Хула варринерех çитеспе хамăр хаçата çыпăçтарма тытăнтăм. Кăшт каятăп та — çыпăçтаратăп, тата тепĕр пăртак каятăп та — каллех çыпăçтаратăп, унтан пĕр-пĕр крыльца çине пăрахса хăваратăп, алăк айне чикетĕп...

Киле çитиччен çапла сахалтан та пĕр икçĕр хаçат салатрăм.

— Вулăр, пĕлĕр пирĕн чăн сăмаха!..

* * *

Урамран хӳме урлă каçса кĕрсе, хамăр çенĕк алăкĕнчен кăшт шаккасанах мана хирĕç анне чупса тухрĕ.

— Каллех хăратса пĕтертĕн мана, çĕрĕпех çывăраймарăм...— терĕ вăл.— Ма çак таранччен килмерĕн?

— Май пулмарĕ. Акă, кур, мĕн тунă эпир кĕçĕр,— терĕм те ăна хирĕç, хĕвре юлнă темиçе хаçат листисене тыттартăм.— Ĕç халь кăна пĕтрĕ.

— Апла пулсан, юрать хуть. Эсĕ патруль аллине лекнĕ пуль, тесе хăрарăм-çке...

Эпĕ кăштах çикелерĕм те кăмака çине хăпарса вырттăм. Талăк хушшинче ĕшенсе çитнĕскер, кăнтăрла çитиччен çывăрнă вара. Пĕр икĕ сехет тĕлĕнче мана анне вăратрĕ.

— Тăр-ха, тусу килчĕ...

Ман пата Сережа пынă иккен.

— Ну, Пушкин урамне каятпăр-и?— ыйтрĕ вăл.— «Лазаретра» çимелли пĕтнĕпе пĕрех, ырана та çитмест пулĕ.

— Эс унта пулнă-и-мĕн?

— Ваçça таврăнчĕ те, вăл каларĕ.

— Дежурство пирки мĕнле?

— Паян каллех инке пулать...

Эпĕ кăмака çинчен анса васкасах тумлантăм.

— Аçта тата?— ыйтрĕ çав вăхăтра малти пӳлĕмрен тухса тăнă анне.

— Пĕр çĕре кайса килмелли пур-ха пирĕн...
— Мĕн тума?
— Темле карчăкран салтаксем валли апат-çимĕçсем илсе килмелле,— тунса тăмарăм эпĕ.— Партизансен комиссарĕ хушрĕ.
Анне, пирĕн çине пăхса, тарăнăн сывласа илчĕ.
— Каясси кайăр та, тархасшăн, асăрханса çӳрĕр. Хăрушă-çке..., Паян тата, çав сирĕн листовкăсене пула, фашистсем пушшех урса кайнă. Мĕнпур салтаксене, полицейскисене ура çине тăратнă курăнать. Урамсем тăрăх çуран та, юланутсемпе те ыткăнса çӳреççĕ, кашни тĕл пулакан çыннах тытса çурма хатĕр...
Эпĕ Сережăн куçĕсенчен пăхрăм.
— Чăнах,— терĕ вăл, пуçĕпе сулса.— Пирĕн хаçата шыраççĕ. Хам куçпах куртăм. Ирĕклĕх урамĕнчен Максим Горький урамнелле пăраннă çĕрте вата çăка пур-çке? Эпĕ пĕр хаçатне çавăн çумне çыпăçтарса хăварнăччĕ. Урампа пыракан виçĕ фриц çавна асăрхарĕç те, тем пулнă пекех çухăрса ярса, виççĕшĕ те чупрĕç ун патне.
— Пĕр хаçата çурма — виççĕн-и?— кулса ятăм эпĕ.
— Виççĕн çав!— Сережа та кулса ячĕ.— Пĕлме çук, тен, вĕсем ротăпа пынă пулсан, ротипех чупатчĕç-и?
— Ун пек те пулма пултарнă,— хушса хучĕ анне,— мĕншĕн тесен сехрисем хăпса тухнă халь вĕсен. Çав кирлĕ!
Хамăрăн каçхи ĕç ăнăçлă пулни пире питех те савăнтарчĕ, фашистсене хирĕç малашне те çавăн пекех ĕçлес кăмăла тата ытларах çĕклерĕ.

* * *

Партизансен комиссарĕ каласа янă адреспа кайса, эпир подвалти «лазаретра» выртакан салтаксем валли чылай апат-çимĕç илсе килтĕмĕр: пĕр вунă пачка галет*, колбаса, çу, сахăр... Ку çеç те мар, икĕ бутылка

* Вĕтĕ пашалу.

французски эрех парса ячĕ пире Пушкин урамĕнчи 72-мĕш çуртра пурăнакан партизансен карчăкĕ.

— Ку мĕн тума тата? Вĕсем сывалса çитмен-ха вĕт, юрамасть те пулĕ,— иккĕленсе тăтăмăр эпир.

— Нимех те мар,— терĕ карчăк.— Сиенех пулмĕ, анчах кăмăлĕсене кăштах хăпартма пултарать. Эсир мана итлĕр, эпĕ çĕр çинче пурăнса курман çынах мар...

Текех хирĕçсе тăмарăмăр вара, эрехне те илтĕмĕр.

Анчах вăл çимĕçсене çав кунах «лазарета» леçсе пама пулмарĕ. Эпир киле таврăннă çĕре пирĕн пата Матвей Матвеич Кочетовăн карчăкĕ пырса ларнăччĕ. Малтанах паллаймарăм та эпĕ ăна—пĕр-пĕр ыйткаласа çӳрекен карчăк пырса ларнă пулĕ, терĕм, мĕншĕн тесен вăл çав тери çĕтĕк-çатăк тумланнăччĕ. Анне каланипе çеç пĕлтĕм.

— Кочетов сире каллех пыма хушнă,— терĕ вăл.

— Кам каларĕ?

— Акă ара, унăн арăмĕ...

— Паллаймарăн-им?— ман çине куларах пăхса илчĕ Кочетовăн карчăкĕ.— Сирĕн пата ятарласах килтĕм...

— Пымалла тет-и вара?

— Пымалла тет çав. Тем пулсан та, пурпĕрех пыма хушрĕç. Питĕ васкавлă ĕç пур, терĕç...

— Хăш вăхăтра?

— Мĕн тери хăвăртрах, çав тери авантарах, терĕç. Юлташна та илсе пыма хушрĕç. Пултаратăр-и? Манăн тĕп-тĕрĕс пĕлсе каяс пулать.

— Пыратпăр,— терĕм эпĕ ним тытăнса тăмасăрах.— Часах пыратпăр.

— Анчах та киле мар, каçхине хăвăр пулнă вырăна кайăр. Вĕсем сире унта кĕтеççĕ...

Çакăн хыççăн Матвей Матвеич арăмĕ кайрĕ. Эпир те нумаях тытăнса тăмарăмăр. Сережа, хăйĕн амăшĕ пăшăрханасран, ăна пĕлтерсе килчĕ те, вара тӳрех тухса утрăмăр.

Çул çинче темиçе хутчен те ыйтрăмăр пĕр-пĕринчен:

— Мĕншĕн кун пекех васкавлăн чĕннĕ-ши?

Тĕрлĕрен шухăшласа пăхрăмăр, анчах хамăра лăплантаракан ответ тупма пултараймарăмăр.

* * *

Эпир çĕр айĕнчи «типографие» пырса кĕнĕ чух Матвей Матвеич кассă умĕнче набор туса тăрать-мĕн. Пирĕн сасса илтсен, вăл ĕçе пăрахсах пире хирĕç васкавлăн утса пычĕ.

— Питĕ аван! Çав тери аван!— терĕ вăл..— Маттур ачасем эсир, тупата! Пĕлетĕр-и, пирĕн паян çав тери пысăк ĕç тумалла. Çавăнпа чĕнтертĕм...

— Мĕнле ĕç тата вăл?

Матвей Матвеич каска-пукан çине ларса хăвăрт кăна чĕлĕм тивертрĕ. Эпир кĕтсе тăтăмăр. Вăл, шăрăхра питĕ шыв ĕçес килнĕ пек, чĕлĕм тĕтĕмне çăтрĕ те хаштах сывласа ячĕ.

— Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче фашистсене аркатса тăкнă. Вунă хула ытла каялла илнĕ, çĕршер ялсене ирĕке кăларнă. Часах пирĕн пата çитеççĕ...

Эпир темиçе самантлăха хытнă пек пулса тăтăмăр, унтан Матвей Матвеич çине чутах сиксе лараттăмăр пулас.

— Чăнах-и?! Хăçан?

— Қам каларĕ? Тĕрĕсех-ши вăл?— васкаса ыйтма тытăнтăмăр эпир.

— Чăн пулмасăр тата?— кăшт кăмăлсăрланнă пек пулса пăхрĕ те пирĕн çине Матвей Матвеич, пысăк хут листи кăтартрĕ.— Акă, Совинформбюро пĕлтерĕвĕ, паян çеç партизансем патĕнчен килсе пачĕç. Ӑна пирĕн ыран ирччен пичетлесе халăх хушшине сармалла. Қаллех çĕр çывăрмалла пулмасть... Қилĕшетĕр-и?

— Ой, мĕн калаçатăн эс, Матвей Матвеич? Кун пек хыпаршăн эпир пĕр кас мар, эрнипе çывăрмасăр ĕçлеме хатĕр!— пӳлсех лартрăмăр эпир ăна.

— Çапла пуль тетĕп çав хам та,— яланхи пекех куçĕсене чеен хĕссе илчĕ вăл. Унтан аллинчи хута пире пачĕ.

— Мейĕр, вуласа тухăр малтан.

Антăхса кайсах вулама тытăнтăмăр Сережăпа... Хальхи пекех астăватăп: çав «Юлашки сехетре» тесе пуçланакан пĕлтерӳре фашистсем 1941 çулхи ноябрь уйăхĕнче питĕ нумай танковăй, пехотнăй тата мотопехотнăй дивизисем пухса пырса, Мускава çавăрса илсе йышăнма ĕмĕтленни çинчен çырнăччĕ. Унтан пирĕн Хĕрлĕ Çар декабрĕн 6-мĕшĕнче тăшмана хирĕç контрнаступлени пуçласа яни, вара декабрĕн 11-мĕшĕччен нумай хуласене каялла илни çинчен каланăччĕ. Рокоссовский, Говоров, Голиков тата ытти генералсен ячĕсене асăннăччĕ, мĕншĕн тесен фашистсене Мускав таврашĕнче аркатаканнисем — çавсен çарĕсем пулнă... Ну, унтан вара тăшманăн çĕршер те пиншер танкĕсене, орудисене, миномечĕсене, пулемечĕсене çĕмĕрсе, тытса илсе пĕтернисене, фашистсене 30 пин çын ытла вĕлернине кăтартса панăччĕ. Калама та çук хĕпĕртеттерекен цифрăсемччĕ вĕсем!

— Пуçланчĕ, тинех кĕтни çитрĕ!— терĕ те Сережа Совинформбюро пĕлтерĕвне вуласа пĕтерсен, иксĕмĕр те çавăнтах кăкăр туллин, савăнăçлăн та çăмăллăн сывласа илтĕмĕр.

— Тĕрĕс, кĕтни çитрĕ,— терĕ Матвей Матвеич та.— Гитлеровецсем тек-текех: «Хĕрлĕ Çара аркатрăмăр, Мускав ĕнтĕ пирĕн алăра», тесе çухăратчĕç, анчах та Хĕрлĕ Çар хăйсене хăлха чикки пама пуçланă ав, Мускав патĕнчен хăваласа янă... Вăхăт çитсен, Хĕрлĕ Çар тăшманăн пилĕкне те çапса хуçĕ-ха, хамăрăн çĕршывра фашистсен шăршине те хăвармĕ! Çапла-и, ачасем?

— Çапла, Матвей Матвеич! Тĕрĕс!— хаваслăн ответ патăмăр эпир.

— Урăхла пулма та пултараймасть...—Матвей Матвеич чĕлĕмне сӳнтерчĕ те, пукан çинчен тăрса, аллисене сăтăркаларĕ.— Ну, ĕçе тытăнăпăр, тусăмсем!



Каллех çĕрĕпех ĕçлерĕмĕр вара эпир. Çурçĕр тĕлĕнче партизансен комиссарĕ пырса çитрĕ. Вăл ку каçхине пачах урăхла тумтирпеччĕ — çĕтĕкрех кĕрĕкпе, мулахайпа, аллине туя тытнă. Ватă старик пекех. Куна вăл хăйне палласран юри çавăн пек тунă: унăн хăйне никама паллаттармасăр, питĕ вăрттăн çӳремелле пулнă-çке! Эпир çине тăрсах ĕçленине курсан, вăл пире хавхалантарса каларĕ:

— Тăрăшăр, ачасем, тăрăшăр... Часах акă каллех ирĕклĕ совет ачисем пулатăр. Çавăншăн ĕçлетпĕр вĕт!— Унтан хамăрăн «лазаретри» салтаксем çинчен ыйтрĕ:— Ну, епле? Çимеллисене кайса илтĕр-и? Леçсе патăр-и?

— Кайса илтĕмĕр, анчах леçсе пама ĕлкĕреймерĕмĕр. Матвей Матвеич чĕнме янă та — кунта килме васкарăмăр,— терĕм эпĕ.

— Ну, вăл нимех те мар, ĕлкĕретĕр. Паян акă куччеçсемпе пĕрле çак чаплă хыпара пырса пĕлтеретĕр. Кăмăлĕсем тата ытларах хăпарĕç...

— Мĕн каласси пур,— сăмах хушрĕ ĕçлесе тăракан Матвей Матвеич.— Ку хыпар пирĕн пур çынсене те çу-

натлантарса ярать ёнтĕ, темрен те пысăк савăнăç кӳрет...

Çурçĕр иртсен пĕр пилĕк сехетре пирĕн хаçат пулса çитрĕ. Малтанхи кунĕнчи пекех, Сережăпа иксĕмĕр хĕвсене, кĕсъесене тултартăмăр ăна. Килелле таврăннă май каллех урамсем тăрăх салатса пытăмăр. Анчах ку каçхине малтанхи пек те мар хытă асăрханма хушса ячĕ пире партизансен комиссарĕ, мĕншĕн тесен кашни кĕтесрех нимĕçсен патрулĕсем çине пырса тăрăнма май пулнă.

Пĕрмай унталла та кунталла сăнаса, хамăра стенасем çумне пăталаса лартнă пек йăпшăнса, нумай çĕрте хырăмпа шуса — эпир чиперех хамăрăн килсем патнелле çывхарса пытăмăр.

Хула масарĕ тĕлĕнчи тăкăрлăкра уйрăлтăмăр. Сережа сулахаялла пăрăнчĕ, эпĕ тӳрех кайрăм. Ман çумра хамăрăн хаçат татах та пурччĕ-ха, çавăнпа та кăштах кайсан эпĕ кĕтесри çуртăн хапхи умĕнче чарăнса тăрса çыпăçтартăм. Унтан урам урлă каçма тăрсаттăм çеç — сасартăк мана такам ĕнсерен çатăр! ярса тытрĕ. Çаврăнса пăхрăм — нимĕç салтакĕсем, иккĕн. Пуçĕсене тем те пĕр чĕркенĕ, мăйĕсенчен автоматсем çакăнса тăраççĕ.

— Патрульсем...— шухăш вĕлтлетсе илчĕ манăн.— Тытрĕç! Тинех пĕтрĕм!..

Урăх ним шухăшлама та ĕлкĕреймерĕм,— мана пуçран, хулпуççирен çапрĕç. Эпĕ ӳкрĕм, анчах мана çав самантрах çĕклесе тăратса çул çине сĕтĕрсе тухрĕç.

— Зволоч! Партизан зобак!— тесе, хăйсен чĕлхипе шăй-шай кăшкăрса, кашни темиçе утăмранах мана ăçтан май килнĕ унтан çапса, малалла тĕртсе пычĕç.

Манăн куççем хуралса килчĕç...

— Неушлĕ ку ман пурнăçри юлашки самант? Çăлăнăç... çăлăнăç... вăл пулас çук ĕнтĕ. Кайса хупаççĕ, доппрос тăваççĕ, асаплантараççĕ... унтан çакаççĕ... Çакаççех, мĕншĕн тесен вĕсем эпĕ хапха çумне хамăр хаçата çыпăçтарнине курнă, тата... тата ман çумра халь те пур

вёсем. Хёвре те, ҫӑмата кунчинче те... Вёсене ниепле те кӑларса пӑрахма май ҫук, манӑн кашни хусканӑвах сӑнаса пыраҫҫӗ...

Пӗр сӑмахпа, эпӗ вилӗм патнеллех утрӑм. Вилӗмрен хӑтӑласси ҫинчен шухӑшлама та май пулман манӑн.

— Пурӗпӗрех нимӗн те каламастӑп,— терӗм хам ӑшӑмра, пулас допроса куҫ умӗнчи пекех курса.— Хуть те мӗн туччӑр, анчах манран вӗсем нимӗн те пӗлеймеҫҫӗ... Аннене шел, уншӑн ытла та пысӑк хуйхӑ пулать... Мӗн тӑвас ӗнтӗ...

Тӑкӑрлӑк пӗтрӗ, эпир кӗтесрен пӑрӑнса Ленин урамне тухрӑмӑр. Эпӗ ниҫталла та пӑхмарӑм, ҫӗрелле пӑхса утрӑм... Сасартӑк, ман хӑлха патӗнчех икӗ хутчен пӑшал сасси кӗрслетрӗ. Мана хама пенӗ пекех туйӑнчӗ. Ним пӗлми пулса ҫул ҫине ӳкрӗм. Анчах ҫав самантрах мана такам ҫӗклесе тӑратрӗ те алӑран туртса аяккалла сӗтӗрсе кайрӗ. Лайӑххӑн астумастӑп... Тӗлӗкри пек ҫеҫ аса килет: такамӑн вӑйлӑ аллисем мана ҫӗклесе хӳме урлӑ пӑрахрӗҫ, унтан каллех малалла туртса кайрӗҫ. Пӗр хушӑ йывӑҫсем хушшипе чупрӑмӑр, унтан каллех темиҫе хут та карта урлӑ сикрӗмӗр... Юлашкинчен,— тем вӑхӑтран, пӗлместӗп,— пахчара ларакан пӗчӗк пӳрте пырса кӗтӗмӗр. Чӳречисене утиялсемпе карнӑ, сӗтел ҫинче шӑши куҫӗ пек лампа ҫунатчӗ.

— Ирччен санӑн кунтах пулас пулать, хывӑн,— терӗ мана сӗтӗрсе килнӗ ҫын, тумтирӗ ҫумне ҫыпҫӑннӑ юрне тасатса.

Унӑн сасси мана палланӑ пек туйӑнчӗ. Тумтирне хывса ҫакса ҫутӑ умнелле пырсан, чӑнах та палларӑм вара: вӑл партизансен комиссарӗ пулнӑ...

Эпӗ тӗлӗнсе хытса кайрӑм... Пӗр сехет — сехет ҫурӑ каялла вӑл пире, Сережӑпа иксӗмӗре, Матвей Матвеич патӗнчен ӑсатса кӑларса ячӗ, халь мана патрульсен аллинчен хӑтарса таҫта хӑямата илсе килчӗ.

— Мӗнле... пулса тухрӗ ку?— ыйтрӑм эпӗ ним ӑнланаймасӑр.

— Çаплах пулса тухрĕ,— çемçен кăна кулса илчĕ вăл.— Эпĕ сире хыçалтан хуралласах пытăм. Çĕрле тем те пулма пултарать-çке. Ик ураллă кашкăрсем нумай вĕт халь. Асатма тухни усăллă пулчĕ ав...

— Леш фрицĕсене вĕлертĕр-и эсир?..

— Чĕрĕ пулнă пулсан, вĕсем сана парса ямастчĕç вĕт.

— Çапла... Çапах та, эсир унта хăш вăхăтра пырса тухма ĕлкĕртĕр-ха? Ниепле те ăнланаймастăп...

Партизансен комиссарĕ ман çине тӳррĕн пăхрĕ.

— Эсĕ ху епле шутлатăн?

— Пĕлместĕп..

Кун çинчен мана кайран Матвей Матвеич каласа пачĕ: эпир ăнсăртран патрульсен аллине лекесрен хăраса, вĕсем кашнинчех пире ăсатнă иккен. Эпир ăна пĕлмен те...

Киле эпĕ ирпе тин пытăм. Анне хуйхăрса пĕтнĕ маншăн, çĕрĕпех куç хупман. Ăна ытлашши пăлхатас мар тесе, эпĕ çĕрле хампа мĕн тери хăрушла ĕç пулса иртни çинчен каламарăм. Матвей Матвеич патĕнчех çывăртăм, терĕм. Хамăн сăмахсене çирĕплетме эпир каçхине пичетленĕ хаçата кăларса тыттартăм. Ăна вуласан аннен куççулĕсем шăпăрах юхса анчĕç. Паллах, вăл халь хурланса мар, савăннипе макăрнă...

* * *

Эпĕ çывăрса тăнă çĕре Сережа каллех пирĕн пата çитрĕ.

— Ну, тусăм,— терĕ вăл, савăнăçлăн кулкаласа,— фрицсене ăнран кăларсах ятăмăр пулас эпир...

— Мĕн апла?

— Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех çӳреççĕ урамсем тăрăх! Йытăсем вĕрнĕ пекех шавлаççĕ, кашни килех кĕрсе çавăрттараççĕ; урамра тĕл пулакан кашни çынна тенĕ пекех чарса тăратса ухтараççĕ — пирĕн хаçата шыраççĕ... Приказсем

çырса çапма ĕлкĕрнĕ: партизансем салатакан листовкăсенче çырни — пĕтĕмпех суя, вĕсене ĕненмелле мар, тенĕ, кама та пулин çав листовкăсене вуланине асăрхасан, вĕсене кам патĕнче те пулин тупсан — çав кунах çакатпăр, тенĕ...

— Чăн малтан сире тивет ĕнтĕ ку приказ,— терĕ анне, Сережа каланине итлесе тăнăскер.

— Тытма пултарсан... Анчах тытаймаççĕ-çке пире!— куçĕсене йăлтăртаттарса илчĕ Сережа.

— Пĕлме çук ăна... Татах калатăп: тархасшăн, асăрханарах çӳрĕр,— пирĕн çине кăмăллăн пăха-пăха илчĕ анне.

— Пĕлетпĕр, пĕлетпĕр, аннеçĕм, ан пăшăрхан,—терĕм эпĕ ăна хирĕç. Унтан каçхине хамăр пичетленĕ листовкăна чăлха тĕпне хутласа чикрĕм, Пушкин урамĕнчи карчăк патĕнчен илсе килнĕ çимĕçсене карçинккана тултартăм та, Сережăпа иксĕмĕр васкасах «лазарета» кайрăмăр.

Эпир подвал алăкне уçса кĕнĕ чух лейтенант кăна ларатчĕ, салтаксем иккĕшĕ те çывăратчĕç. Сережăпа иксĕмĕр хăйне сывлăх суннине хирĕç вăл ерипен кăна пуçне тайса илчĕ, анчах пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Йывăр шухăша кайса ларнă пулмалла вăл.

— Ну, сывлăхсем-кăмăлсем мĕнле, пичче?— тесе ыйтрĕ Сережа, ун умĕнчи каска çине пырса ларса.

— Сывлăх аптрамасть, анчах кăмăл...— Лейтенант аллипе сулса ячĕ. «Ниме те юрăхсăр», тени пулчĕ ĕнтĕ ку.

— Мĕн апла?

— А мĕн пултăр...— Лейтенант ассăн сывласа илчĕ.— Ларса пурăн-ха çак шăтăкра... Ним те илтейместпĕр, ним те пĕлместпĕр... Хăçанччен пурăнмалла капла? Эпир — салтаксем, пирĕн тăшманпа çапăçас пулать, анчах халлĕхе эпир каюрасем пек çĕр айĕнче пытанса ларатпăр, хăçан тухма май пуласси те паллă мар...

Сережăпа иксĕмĕр пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр.

Вăл мана куç хёсрĕ те, çавăнтах пуçне лейтенант еннелле çавăрса, хăй чĕркуççинчен шарт! çапса илчĕ.

— Эпĕ сире пит лайăх ăнланатăп, пичче,— терĕ вăл.— Такам та йăлăхмалла ĕнтĕ çакăнта ларса... Анчах та — ан хуйхăрăр, мĕншĕн тесен...

— Мĕн?

— Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтерсе кунталла килет!

Лейтенант пĕтĕм кĕлеткипе картах сикрĕ.

— Хыпар пур-им? Камран, ăçтан илтрĕр?— куçĕсем çутăлса кайрĕç унăн.

— Акă, вулăр!— терĕм те эпĕ, ăна чăлха ăшĕнчен хамăрăн листовкăна кăларса тыттартăм.

Вăл çав тери васкавлăн вулама пуçларĕ. Куçĕсем енчен енне сиккелесе кăна тăчĕç. Тепĕр минутранах унăн сăнĕ çутăлса кайрĕ, хăй темшĕн хашкама пуçларĕ, унăн тутисем кулма тытăнчĕç... Листовкăна вуласа тухсан вара пачах та чирлĕ мар çын пек сиксе тăрса, юлташĕсене силлеме тытăнчĕ.

— Тăрăр-ха! Тăрăр! Викулов! Кукушкин! Юрамасть çывăрма! Кун чухлĕ çывăрса пурăннипе те çитĕ!..—асăрханма кирли çинчен манса кайсах кăшкăрчĕ вăл.

— Мĕн пулнă? Мĕн пулнă?— хăраса вăранса кайрĕç лешсем.

— Тем те пулнă! Хĕвел урăх майлă çаврăнма тытăннă, хĕл варринче чечексем çурăлма пуçланă!..

— Эсир чăннине калăр-ха, командир юлташ...

— Итлĕр, итлĕр! Хăлхăрсене тăратăр лайăхрах!..

Лейтенант «шăши куç» патнерех пĕшкĕнчĕ те листовкăна вуласа пама тытăнчĕ. Каçса кайса, чыхăна-чыхăна вуларĕ.

Ну ĕнтĕ, ниçта кайса кĕме, ним тума пĕлмерĕç вара пирĕн салтаксем! Пĕр-пĕрине ыталарĕç, пĕрне-пĕри чуптурĕç. Савăннипе пирĕн те куççулĕ тухса кайрĕ.

— Эх, часрах хамăрăн та çапăçава каймалла пултăрччĕ! Мĕнле çунтарăттăм-ши эпĕ вăл бандитсене, вăл

урнă йытăсене!.. Çиллĕме ниçта шăнăçтарма çук вĕт...— терĕ лейтенант.

Чылай вăхăт савăнăçлăн шавларĕç пирĕн туссем, ниепле те лăпланаймарĕç, мĕншĕн тесен вăл кунсенче ку хыпартан хакли нимĕн те пулман. Фашистсене ун чух Хĕрлĕ Çар пуçласа хăвалама тытăннă-çке хамăрăн çĕршывран! Эпир вĕсен калаçăвне питех хутшăнмарăмăр, ыйтнисене хирĕç каласа патăмăр çеç.

— Аçтан тупса килтĕр эсир ку листовкăна?

— Хуларанах...

— Çапах та — ăçтан, епле майпа?

— Ăна пур хӳмесем çине те çапса тухнă кĕçĕр...

— Чăнах-и?!

— Тĕрĕссине калатпăр.

— Эппин ăна пурте вуланă?

— Паллах!

— Ну, çынсем мĕнле... Хытă хĕпĕртенĕ ĕнтĕ?

— Хĕпĕртемесĕр ара...

— Фрицсем тата... вĕсем мĕнле?

— Урсах кайнă.

— Урччăр çав, урччăр, усал çăварĕсене кăпăклантарччăр. Анчах темле урсан та вĕсен пĕтмелли çитет!

Салтаксем пăртак лăпланнă пек пулсан, эпĕ подвала кĕрсенех алăк патне лартса хăварнă карçинккана малалла илсе пытăм та:

— Сире валли кăштах çимелли тупса килтĕмĕр,— терĕм.

— Ку кирлĕ мар вара,— терĕ лейтенант.— Раиса Ивановна пире ахаль те выçă усрамасть. Пĕлетпĕр вĕт, хăвăр та выçлă-тутлă пурăнатăр, çавăнпа та мĕн илсе килнине каялла илсе кайăр...

— Ну, çу-ук...— пуçне пăркаласа илчĕ кăна хирĕç Сережа.— Ку вăл ятарласах сире валли парса янă кучченеç!

— Мĕнле кучченеç пултăр тата?— тĕлĕнчĕ лейтенант.

— Ак çапласкер...

Çав самантрах иксĕмĕр те, карçинкка умне пĕшкĕнсе, унта мĕн пуррине кăларса хума тытăнтăмăр: галет, колбаса, çу, сахăр... Лейтенант та, салтаксем те çав тери тĕлĕнчĕç. Сережа юлашкинчен вĕсем умне икĕ бутылка хĕрлĕ эрех кăларса лартсан — çăварĕсене карсах пăрахрĕç вара.

— Ку... ку мĕне пĕлтерет тата?— сиксе тăчĕ лейтенант.

— Каларăм вĕт — кучченеç...— кулса илтĕмĕр эпир.

— Çук-ха, çук... Эсир тĕрĕссине калăр!

— Халь те тĕрĕссинех калатпăр. Ятарласа сире валли кучченеç.

— Камран? Мĕнле çакăн пек пуян çын тупăннă вара çак вăхăтра? Е... çаклатса тухрăр-и ăçтан та пулин?

— Ним те çаклатман, хăйсемех парса ячĕç.

— Ну, камсем эппин?

— Партизансем...

— Партизансем?! Ăçта тупнă эсир вĕсене?

— Хуларах тупăнчĕç...

Çакăн хыççăн пирĕн вĕсене юлашки темиçе кун хушшинче мĕн-мĕн пулса иртнине, хăйсем патне хамăр мĕншĕн килейменнине, листовкăсем пичетлесе çыпăçтарса çӳренине — пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа памалла пулчĕ. Темĕн тĕрлĕ те мухтаса пĕтерчĕç вара вĕсем пире. Эпир именкелесе çеç лартăмăр,— темле, аван мар вăл хăвна куç умĕнче мухтанине итлеме...

Подвалтан тухса каяс умĕн лейтенант пирĕн алăсене хыттăн чăмăртаса силлерĕ.

— Тархасшăн, партизансен комиссарне тепре курсан пирĕнтен пысăк салам калăр. Чĕреренех тав тăваççĕ, тейĕр. Ăнчах текех паянхи пек кучченеç парса ан яччăр.

— Мĕншĕн? Кăмăла каймарĕ-им?— кăштах тĕлĕнтĕмĕр эпир.

— Çук, уншăн мар... Вăхăчĕ халĕ хăналамалли вăхăт мар, çапăçмалли вăхăт. Çавăнпа та пире валли

пĕрер винтовка тата пĕр çĕршер патрон парса ярсан, авантарах пулĕччĕ. Эпир часах сывалса çитетпĕр вĕт...

* * *

Урампа пынă чух эпир унта та кунта пысăк афишăсем çакăнса тăнине куртăмăр.

**20/XII—1941 ç. ПАЯН 20/XII—1941 ç.**

**ХУЛАРИ КИНОТЕАТР ÇĔНĔРЕН УÇĂЛАТЬ**

Пĕр сеансра 3 картина пулать.
Пуçламăшĕ 4 сехетре.
Курма укçасăрах кĕртеççĕ.
Пурте пырăр!!!

— Мĕн шут тытнă-ши тата кусем?— тĕлĕнерех пăхса илтĕм эпĕ Сережа çине.— Пĕр-пĕр фокус мар-ши ку? Эс епле шутлатăн?

— Шуйттан пĕлет-и вĕсене...— терĕ манăн тус.

— Юриех кайса курмăпăр-и? Интереслĕ, мĕнле картинăсем кăтартма пултараççĕ вĕсем пире?

— Қаяр ара... Пĕр виçĕ сехетре ман пата пыр эппин.

Çапла калаçса татăлтăмăр та, кашни харпăр хăйĕн килĕсене кайрăмăр. Анчах та эпĕ çур сехетренех Сережа патне каялла чупса пытăм, мĕншĕн тесен эпĕ çук чухне пирĕн пата каллех Матвей Матвеич Кочетовăн карчăкĕ пырса кайнă.

— Ывăлна кала, часрах пирĕн пата пытăр,— тесе хăварнă вăл аннене. Хампа пĕрле Сережăна та илсе пыма хушнă.

Татах çĕнĕ хыпарсем пур ĕнтĕ, тесе, Матвей Матвеич патне чупнă пекех кайрăмăр. Вăл пире яланхи пекех хавассăн йышăнчĕ.

— Акă мĕн, рабочи класс,— терĕ вăл,— паян сире тата тепĕр ĕç хушма шут турăмăр-ха...

— Қалăр, эпир яланах хатĕр!

— Урамсенчи афишăсене вуларăр-и?
— Кино ҫинчен-и?
— Ҫавсене ҫав.
— Вуларăмăр.
— Кăна вĕсем юриех, халăха пухма тăваҫҫĕ. Вăл паллă. Тĕрĕссипех калама ҫук, анчах та пирĕн халăха хăйсене майлă ҫавăрас шутпа агитаци тăвасшăн пулмалла. Пирĕн ҫавна пачах пĕтерсе лартас пулать, ачасем... Ăнланатăр-и?
— Ăнланатпăр, анчах мĕнле майпа?
— Листовкăсемпе! Пирĕн пур-ха вĕсем. Ĕнер хăвăр пичетлени те чылай юлнă, тата урăххисем те пур.
Пĕр вунă-вунпилĕк минут хушши вара Матвей Матвеич пире ҫав ĕҫе мĕнле тумаллине вĕрентрĕ. Унтан тула тухса таҫтан пĕр хулхушши тĕрлĕ листовкăсем илсе кĕртсе сĕтел ҫине хучĕ.
— Ҫурмалла уйăрса илĕр. Лайăхрах пытарса кайăр...
Эпир листовкăсене кĕпесем айне, йĕм пĕҫҫисем ăшне — чĕркуҫҫисенчен аяларах пытарсан, вăл:
— Пирĕншĕн ҫав тери хĕрӳллĕ те татăклă самант ҫывхарса килет, ачасем,— терĕ.— Ҫак кунсенчех пысăк ĕҫсем пулса иртеҫҫĕ акă. Халĕ, епле пулсан та, халăха хавхалантарса ҫĕклеме тăрăшас пулать!

* * *

Кинотеатра эпир виҫҫĕн кайрăмăр,— пирĕнпе пĕрле Ваҫҫа та пычĕ. Юлашки кунсенче вăл чирлекелесе пурăнатчĕ, анчах та паян пирĕн мĕнле ĕҫ тумалли ҫинчен каласан, ҫав тери хавасланса, хăй сывах марри ҫинчен те манса кайрĕ.
— Эсир ĕнтĕ ахаль те нумай ĕҫсене мансăрах турăр,— терĕ вăл,— тек пĕр утăм та юлмастăп!
Амăшĕ хӗрӗҫленине те пăхмарĕ вăл, хăйĕн питех те кино курас килекен пулни ҫине ячĕ. Театра эпир пĕр

виçĕ сехет те çурăра çитрĕмĕр. Халăх чылаях пухăннăччĕ ĕнтĕ. Матвей Матвеич вĕрентсе янă пек, эпир тӳрех балкон çине хăпарса, виççĕмĕр виçĕ çĕре вырнаçрăмăр: Сережа — вăтаçĕре, Ваççа — сылтăм енне, эпĕ— сулахая. Ĕçе малтан Сережа пуçлать, тесе калаçса татăлтăмăр.

Эпĕ, балкон карлăкĕ çине чавсаланса, çӳлтен аялалла пăхса, партерта мĕн пулса пынине сăнаса лартăм. Зала майĕпе çынсем тулсах пычĕç. Пĕр çур сехетрен унта пушă вырăн та юлмарĕ. Кĕç пĕр звонок пулчĕ, унтан иккĕмĕш шăнкăртатрĕ. Шутпа, сеанс пуçланасси нумай та юлмарĕ ĕнтĕ. Анчах виççĕмĕш звонок пуличчен зала пĕр вăтăр нимĕç салтакĕ стройпах кĕпĕртеттерсе кĕчĕç те стенасем çумне тăрса тухрĕç. Тĕрĕссипе, вĕсем залри халăха пур енчен те хупăрласа илчĕç. Аçталла ан пăх — пур çĕрте те штык курăнать...

— Ак япала,— терĕ ман хыçри пĕр çын теприне шăппăн,— кино та конвойпа кăтартаççĕ...

Юлашкинчен, виççĕмĕш звонок пулчĕ. Залри электричество сӳнчĕ. Кĕçех кайри стенари шăтăкран экран çине сенкертерех çутă ӳкрĕ. Ак, халех сеанс пуçланмалла... Анчах, кино кăтартма тытăнас вырăнне, экран умне хула «бургомистрĕ», хайхи сехет магазинĕн директорĕ пулнă сутăнчăк, тухса тăчĕ!

— Сĕр-сĕр-сĕр-р...— туса кайрĕ залри çынсем кăмăлсăррăн мăкăртатни.

— Çак упăтене кăтартма чĕннĕ-ши паян халăха?— илтĕнчĕ ман хыçра паçăрхи сасах.

— Мĕн питпе тухса тăрать-ши халăх умне, йытă!

«Бургомистр» аллине çĕклерĕ. «Шăпланăр», терĕ ĕнтĕ. Халăх чăнах та шăпланнă пек пулчĕ. Вара «бургомистр» куçлăхне тӳрлетсе, ӳсĕркелесе, пĕр енчен тепĕр енне (каллех хăйне кам та пулин сасартăк çапса ӳкересрен шикленнĕ пек) пăхкаласа илчĕ те темле çинçе сасăпа çухăрса ячĕ:

— Хаклă тăвансем!..

— Йытă санăн тăвану,— терĕ ман хыçри çын.

— Хула çыннисем!— çухăрчĕ каллех «бургомистр».— Паян пирĕн хулара кинотеатр уçăлать. Ку вăл — пирĕн хула пурнăçĕ куллен йĕркеленсе пынине кăтартакан факт. Çакăншăн пирĕн никама та мар, Германи командованине тав тумалла, мĕншĕн тесен вăл, вăрçă пĕтессине кĕтмесĕрех, пире культура учрежденийĕсем туса пама тăрăшать. Çитес çывăх вăхăтрах акă хулара шкулсем уçăлаççĕ... Пĕр сăмахпа, каллех калатăп, Германи командованийĕ пирĕн пурнăçа юсаса çĕнĕлле йĕркелесе яма нимĕн те хĕрхенмест. Анчах та хăшĕсем çавна хакламаççĕ...

Унтан çак сутăнчăк каллех пĕркун площадьре каланă сăмахсене кăшкăрма тытăнчĕ: Хĕрлĕ Çар хавшаса çитнĕ, Германи çарне хирĕç ним тума та пултараймасть, вăл выçă, унăн хĕçпăшалĕ те çук, — темĕн те пĕр! Кун хыççăн пирĕн листовкăсем пирки çухăрма тапратрĕ: вĕсем пурте суяççĕ, нимĕçсем Мускав патĕнчен чакман, пĕр-ик кунтанах акă Мускава илеççĕ, терĕ...

Çак самантра сасартăк балконăн вăтаçĕрĕнчен вăраммăн шăхăрни, унтан хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Эс ху суятăн, предатель!..

Унччен те пулмарĕ, балкон çинчен аялалла, партералла ывăçласа пенĕ листовкăсем вăркăнчĕç...

Ку ĕнтĕ Сережа ĕçĕ пулчĕ. Кăна вăл ытла та пит асăрханмасăр турĕ, мĕншĕн тесен фашистсен агенчĕсем балкон çинче те пулнă ĕнтĕ, ăна çавăнтах тытма пултарнă, анчах та манăн тусăн вĕри чĕри текех тӳсеймен пулмалла çав, чăтма пултарайман «бургомистрăн» ирсĕр сăмахĕсене. Вăл пăрахнă листовкăсем пысăк лĕпĕшсем пек вĕлтĕртетсе аннине курсан, эпĕ те тăхтаса тăмарăм вара, хамăн листовкăсене хĕврен кăларса ывăтрăм. Манпа пĕр вăхăтрах балконăн сылтăм енчен Ваççа пеçĕ.

Мĕн пулса иртнине тавçăрса илсен, пĕтĕм зал темĕн пысăкăш хурт вĕлли пек сĕрлесе кайрĕ. Çынсем, вырă-

нěсенчен сиксе тăрса, вěçсе анакан листовкăсене тытма кармашрěç... Асар та писер шавлама тытăнчěç... Çав самантрах нимěçле командăсем пани илтěнчě те, вěсен салтакěсем хăйсем тăракан вырăнсенчен пěр харăс ыткăнса, кăшкăра-кăшкăра, çынсене çапа-çапа, вěсенчен листовкăсене туртса илме пикенчěç. Залра пěтěмпех пăтрашса кайрě... Тем пулатчě — калама хěн, анчах сасартăк çутă сӳнсе ларчě. Ик-виç çěртен кантăксем чăнкăртатни илтěнчě, партертан тӳрех урама тухмалли алăксем шатăртатса уçăлчěç. Темиçе фашист пěр харăсах электричество хунарěсем çутатса ячěç, пěри автоматран маччаналла шăтăртаттарса илчě, анчах халь вěсем нимěн тума та пултараймарěç ěнтě. Зал кěçех пушанса юлчě...

Эпě хам балкон çинчен тӳрех театр хыçěнчи пахчана кăларакан алăкпа тухса тапса сикрěм. Сережăпа Ваççа та киле чиперех çитнě,— вěсем листовкăсене пăрахсан, ман пекех халăх хушшине пытаннă та, театрта шăв-шав пуçлансанах тухса шăваннă.

* * *

Фашистсем вара çав каçхине хула тăрăх выçă кашкăр эшкерěсем пекех çӳренě. Çиллисене ниепле шăнараймасăр, ним тума аптранă енне, вěсем уйрăм çуртсене çěмěрсе кěнě, ухтарнă, хваттерсенчи юлашки япаласене çěмěрсе, çынсене вěлерес пек хěнесе хăварнă. Вăтăр çын ытла тěрмене илсе кайса хупнă. Анчах çав каçах вěсен хула хěрринчи склачěсене вут хыпса илнě,— ăна вěсем сисеймен. Çав каçах «бургомистра» çывăрнă çěртенех сěтěрсе кăларса хăйěн çурчě умěнчи хурăнран çакса хăварнă,— ăна вěсем хӳтěлеймен. Чăн та, «бургомистр» çуртне хураллама икě полицейски тăратнă пулнă, анчах вěсене икěшне те хăюллă çынсем çурăмěсенчен кинжалсемпе чиксе «тирпейлесе» хунă, вěсем пěр сас та кăларайман...

Ирхине пётём хула çав ĕçсем çинчен калаçрĕ. Çынсем пĕр-пĕринпе тĕл пулсан хăйсен савăнăçне пытармарĕç. Вĕсен сăнĕсем çурхи кун пек çутăлчĕç, куçĕсем иксĕлми шанчăкпа ялкăшрĕç.

Кăнтăрла çитеспе пирĕн хула халăхĕшĕн тата тепĕр пысăк савăнăç пулчĕ. Хĕвелтухăç енчен хула çине сасартăк виçĕ самолет вĕçсе пычĕç. Малтанах паллаймарăмăр вĕсене эпир, мĕншĕн тесен вĕсем питĕ çӳлтеччĕ, анчах кăшт тăхтасан, вĕсем аяларах анчĕç те — çунаттисем çинче хĕрлĕ çăлтăрсем курăнчĕç.

— Пирĕн! Пирĕн!

— Совет самолечĕсем!..

— Куратăр-и — çăлтăрсем! Çăлтăрсем!— кăшкăрса чупкалама тытăнчĕç урама тапса тухнă ачасем, савăннипе ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр. Унччен те пулмарĕ — самолетсем çинчен листовкăсем тăкăнма тапратрĕç: хĕрлĕ, кăвак, сарă, симĕс хутсем. Пурте вĕсене пуçтарма ыткăнчĕç. Паллах, ачасем чăн малта пулчĕç. Вĕсем пилĕк таран юр ăшне кĕрсе кайрĕç, хӳмесем урлă вăшт кăна сиксе каçса, ăçта листовка ӳкнĕ — çавăнта чупрĕç. Анчах çав вăхăтрах сасартăк темиçе çĕрте автоматсем шăтăртатрĕç, нимĕçле-вырăсла хаяррăн кăшкăрнисем илтĕнчĕç...

— Цурюк! Назад!

— Бросай! Хальт! Стреляйт!..

Хула çыннисем совет листовкисене пуçтарса вулама тытăннине сиссе, фашистсем вĕсене хăваласа салатма пикеннĕ-мĕн. Куçĕ-пуçĕсене чарса пăрахса, урса кайсах купма тапратрĕç пирĕн хыççăн. Кама хăваласа çитеççĕ— çавăнтах çапса ӳкереççĕ, таканлă тимĕр аттисемпе тапаççĕ, кĕсйисене, хĕвĕсене ухтараççĕ, вăл çыннăн листовка тупăнсан вара юр ăшне таптасах хăвараççĕ...

Совет летчикĕсем çакна асăрхарĕç пулмалла. Пĕри тăруках пирĕн еннелле çаврăнса пычĕ те — аялах анса пулемечĕсенчен вăрăм кăна черет кăларса ячĕ.

— Тр-р-рр...

Унтан тата, тата! Тепӗр самолеҫе хула варринелле, нимӗҫсен комендатури вырнаҫнӑ ҫӗрелле, пырса пӗр тӑруках виҫӗ бомба ярӑнтарчӗ. Ун хыҫҫӑн тепри те ҫавӑн пекех турӗ. Бомбӑсем шӑхӑрса ярсанах хайхи фрицсем ӑҫта май килнӗ — ҫавӑнталла пӗрхӗнчӗҫ, урамра пӗри те юлмарӗ. Анчах эпир ниҫта та тармарӑмӑр. Совет самолечӗсем ҫӗр бомба пӑрахсан та, пире вӗсем тивес ҫук пек туйӑнчӗ. Пирӗн вӗсене тата ытларах бомбӑсем тӑктарас, пулемечӗсенчен тата хытӑрах пертерес килчӗ. Ҫунтарччӑр вӗсем фашистсене, хыптарччӑр вӗсен ӑшчикӗсене, сывлайми туса хуччӑр.

Пирӗн кӑмӑла тултарасшӑн пулнӑ пекех, совет летчикӗсем комендатура таврашӗнче татах бомбӑсем пӑрахрӗҫ. Вӗсем ӳке-ӳке ҫурӑлсан ҫӗр чӗтреннӗн, пӗтӗм хула ҫӳҫенсе илнӗн туйӑнчӗ.

Малтан пырса пулеметсенчен шӑтӑртаттарнӑ самолет — юриех пулас ҫав — пирӗн тӗлпе темиҫе хут каллемалле вӗҫсе иртрӗ. Ҫав вӑхӑтра урамра пӗр фашист тӗсӗ те курӑнмарӗ, эпир куҫ курнӑ листовкӑсене пурне те пуҫтарса пӗтертӗмӗр. Юлашкинчен, самолет ҫӳлерех вӗҫсе хӑпарчӗ те, пирӗнпе сывпуллашнӑ пек, ҫунаттисемпе сулкаласа илсе, бомбӑсем пӑрахса кайнӑ самолетсем хыҫҫӑн вӗҫтерчӗ. Эпир, тепӗр хут фашистсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, часрах килсене тартӑмӑр...

Хулара ҫав листовкӑсене вуламан ҫын та юлмарӗ пулӗ, вӗсем килтен киле, алӑран алла куҫса ҫӳренӗ. Чылайӑшне хӳмесем ҫине те ҫыпӑҫтарса тухнӑччӗ. Кам тунӑ ӑна — пӗлместӗп. Пирӗн пек листовкӑсем сарса ҫӳрекенсем татах пулнӑ пулмалла ҫав.

— Ан парӑнӑр, фашистсене ан пӑхӑнӑр, вӗсене кашни утӑмрах сиен кӳрӗр, сывлӑш ҫавӑрма та ан парӑр, ӑҫта май килнӗ — ҫавӑнта вӗлерӗр, пусмӑртан хӑтӑлас самант инҫе мар. Хӗрлӗ Ҫар ҫывӑх, вӑл сире валли ирӗклӗх илсе килет!— тенӗччӗ листовкӑсенче.

Ҫынсен кӑмӑлӗсене вӗсем ҫав тери ҫӗклентерчӗҫ.

* * *

Анчах çав кунах манăн куççулĕпех макăрмалла пулчĕ...

Каç пуласпа, савăннипе, кăмăлăм çĕкленсе кайнипе килте ниепле те тӳссе лараймасăр, эпĕ Сережăсем патне кайрăм. Аякранах куртăм: вĕсен хапхи умне çынсем пухăнса тăнă — хĕрарăмсем, стариксем, ачасем. Хăшĕсем кĕреççĕ, хăшĕсем тухаççĕ.

— Ырра мар ку,— тесе, хăвăртрах утрăм. Чĕре, теме сиснĕ пек, пăчăртанса, ыратса кайрĕ, пĕтĕм ăшчикпе пăшăрханса ӳкрĕм.

— Мĕн пулнă?— тесе ыйтрăм хапха патне çитнĕçитмен пĕр хĕрарăмран.

— Эс илтмен-и вара?— тĕлĕнсе пăхрĕ вăл ман çине.

— Çук...

— Кусен ачине вĕлернĕ вĕт паян...

— Мĕ-ĕн?! Вĕлернĕ?! — сывлăш пӳлĕнсех ларчĕ манăн.

— Вĕлернĕ çав...

— Хăшне?

— Ваççине....

Иккĕ сиксех Сережăсен пӳртне кĕрсе тăтăм. Чăнах иккен. Пӳлĕм варринчи сĕтел çинче Ваççан ним хускалми кĕлетки выртать. Ăна шурă простыньпе витнĕ, пичĕ çеç курăнать. Ним те улшăнман хăй, халь çеç çывăрса кайнă пекех курăнать. Пуç вĕçĕнче çав тери шурса кайнă Сережа тăрать. Унăн питçăмартийĕсем тăрăх шултра куççулĕсем юха-юха анаççĕ. Çавăнтах, кивĕ кресло çинче, унăн амăшĕ куçĕсене хăрах аллипе хупласа хăяккăн выртать; вăл ĕнтĕ макăрайми те пулса çитнĕ, йынăша-йынăша ахлатса çеç илет. Ăна ик-виç хĕрарăм лăплантарма тăрăшаççĕ, анчах та вăл вĕсем мĕн каланине те итлемест пулмалла...

Эпĕ ерипен Сережа патнелле пырса тăтăм. Мана курсан, Сережа сасăпах макăрса ячĕ. Эпĕ те тӳссе

тăраймарам вара. Ваççа çине тепре пăхса илтĕм те, куç-çулĕсем хăйсемех шăпăртатса анчĕç. Аçтан чăтса тăратăн-ха: çав тери ăслă, кăмăллă ачана, манăн çывăх та шанчăклă юлташа вĕлерне-çке!

Ĕçĕ çапла пулнă иккен. Совет самолечĕ çинчен пăрахнă листовкăсем Сережăсен урамне те нумай ӳкнĕ. Пирĕн урамри пекех, кунти çынсем те вĕсене пуçтарма ыткăннă, вĕсем хушшинче Ваççа та пулнă. Часах вĕсене хăваласа салатма нимĕç салтакĕсем сиксе тухнă. Пĕри тӳрех урамри çынсем çинелле автоматран ик-виçĕ хут шатăртаттарнă. Темиçе çынна, вăл шутра Ваççана та, амантнă. Ваççа кĕрт ăшĕнче юн юхтарса, йынăшса выртнине курсан, икĕ хĕрача часрах вĕсен амăшĕ патне чупса кайса каланă, анчах амăшĕпе Сережа ăна киле çĕклесе çитериччен унăн чĕри тапма чарăннă. Амăшĕ, ăна курсан, çавăнтах тăнсăр пулса ӳкнĕ. Сережа хăйне пулăшма кӳршĕсене чĕнсе пынă та Ваççапа амăшне те киле çĕклесе кĕртнĕ. Қайран вара урамри пĕтĕм халăх вĕсем патне пухăнса пынă.

Тулта сасартăк шавлани, кăшкăрашни илтĕнчĕ. Эпĕ чӳрече витĕр пăхрăм та хапха умĕнче калаçса тăракан çынсене фашист салтакĕсем хăвалама тытăннине куртăм. Пĕрине çапса ӳкереççĕ, теприне тĕртсе яраççĕ, автомачĕсемпе хăмсараççĕ. Çыннисем саланасшăн мар, хирĕç тем каласа пӳрт çинелле кăтартаççĕ. «Унта вилнĕ çын пур, эпир унпа сывпуллашма килнĕ, ан тивĕр пире», теççĕ пулмалла ĕнтĕ. Анчах фашистсем ним çине те пăхмаççĕ, çаплах хăвалаççĕ.

Унччен те пулмарĕ, вĕсенчен пĕри пӳрте чупса кĕчĕ те, алăк патĕнче чарăнса тăрса, темскер кăшкăрчĕ. Çакна Сережăсен амăшĕ те илтрĕ курăнать. Вăл пĕтĕм кĕлеткипе картах сиксе алăк патнелле пăхрĕ. Çав самантрах унăн куçĕсем чарăлса кайса, каласа памалла мар курайманлăхпа, хăрушла хаярлăхпа тулчĕç... Вăл ура çине тăчĕ, кăкри тулли сывлăш туртса кĕртсе ассăн сывласа ячĕ те, чышкисене чăмăртаса ерипен кăна салтак

патнелле утрĕ. Ним те чĕнмерĕ вăл, пĕр сăмах та каламарĕ. Анчах нимĕç майĕпе каялла чакма пуçларĕ. Вăл нимрен те мар — çак хĕрарăмăн куçĕсенчен хăрарĕ пулас, ун пек хаярлăха вăл нихçан та курман-тăр!

Сережăсен амăшĕ алăк патнелле тата икĕ утăм ярса пуссан, фашист темскер мăкăртатса илчĕ те алăкран тухса сирпĕнчĕ.

— Павсах пăрахăттăм...— пăшăлтатса илчĕ Сережăсен амăшĕ, вăл тухса кайсан.— Вăй çитетчĕ манăн...

* * *

Ваççана эпир тепĕр кунне, кăнтăрла иртсен пытартăмăр. Ана юлашки хут ăсатма чылай çынсем — хăйсен тăванĕсем, кўршĕсем, унпа пĕрле шкулта вĕреннĕ юлташĕсем пухăнчĕç, анчах вĕсем пĕр квартал та пыраймарĕç. Тахăш тăкăрлăкран сиксе тухнă виçĕ фашист салтакĕ пурне те хăваласа салатрĕç. Демонстраци тăваççĕ, терĕç пулмалла. Ун чух йĕркине çавăн пек тунăччĕ-çке вĕсем: урамра икĕ çынтан ытла пухăнмалла мар!

Анчах эпĕ пурĕпĕр юлмарăм. Салтаксем халăха хăвалама тытăнсанах аяккалла тартăм та кайран каллех тупăк патне чупса пытăм. Эпĕ, тем тусан та, уйрăлма пултарайман çав хамăн тусран юлашки самантра...

Хурлăхлă пулчĕ вăл пытару. Масар çине пурĕ те пиллĕкĕн кăна çĕклесе çитертĕмĕр Ваççа тупăкне: унăн амăшĕ, Сережа, эпĕ тата икĕ ватă хĕрарăм. Амăшĕпе хĕрарăмсем пĕрмай макăрчĕç. Пирĕн те ĕнтĕ куççулĕсем шăпăртатрĕç, анчах çав хушăрах чĕре темле хытса пычĕ, чышкăсем чăмăртанчĕç, аласенче вăй хутшăнса пынăн туйăнчĕ.

— Қаçармăпăр-ха куншăн... Қаçармăпăр!— терĕм эпĕ Сережăна, Ваççа тупăкне шăтăка антарса ун çине тăпра сапма тытăнсан.

— Маншăн халь пурĕпĕр,— терĕ Сережа. Унăн сăнĕ чул тĕслĕ пулса кайнăччĕ.— Тек ĕнтĕ нимрен те хăраса тамастăп... Қашни утăмра, кашни кун... тавăратăп...

Илтетĕн-и эс мана, Ваçса? Саншăн тавăратăп!— Унăн каллех куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

Кăç пулса килнĕ май çанталăк пăсăлма пуçларĕ. Ним майсăр çил-тăман çавăрттарма тытăнчĕ. Масар шăтăкне тултарса çитернĕ чух куç-пуç та курми пулчĕ. Аран майласа хăваркаларăмăр. Сережăсен амăшне ку пушшех хурлантарса ячĕ.

— Этемле пытарма та май килмерĕ мĕскĕне...

Масар çинчен эпир ăна аран-аран çавăтса тухрăмăр. Ахаль те пĕрмай чирлекенскер, халĕ вăл хуйхăпа çав тери халран кайса çитрĕ, мăнтарăн.

Сережăсемпе пĕрле пĕр-икĕ квартал кайсан, эпĕ вĕсенчен уйрăлса юлтăм.

— Матвей Матвеич патне кайса пăхам-ха, тата çĕнĕ хыпарсем çук-и,— терĕм Сережăна.— Тен, татах пĕр-пĕр ĕç...

— Кай, кай,— пуçĕпе сулчĕ манăн тус.— Мĕнле те пулин ĕç пулсан, тӳрех ман пата пыр. Эс ăна çаплах кала: хуть те мĕн хушсан та — тăватпăр, те...

Матвей Матвеич килте пулман. Алăкран чылай вăхăт шаккаса тăнă хыççăн унăн карчăкĕ уçса кĕртрĕ.

— Килех, ачам, килех,— терĕ вăл кăмăллăн.—Старик сана асăнатчĕ-ха паян...

— Кирлĕ пулнă-ши эпир ăна?

— Çапларах пулнă пуль çав...

— Хăй ăçта вăл халь?

— Килет пуль-ха, килет пуль, кĕт пăртак...

Питĕ ырă чунлă карчăкчĕ вăл. Манран тӳрех сывлăх çинчен, килтисем мĕнле пурăнни çинчен ыйтма пикенчĕ, çавăнтах çиме ларма сĕнчĕ. Манăн ĕнтĕ кун каçа чăнах та хырăм выçнăччĕ те — именсе тăмарăм, сĕтел хушшине кĕрсе лартăм.

Çав вăхăтра Матвей Матвеич та пырса çитрĕ, хăй ним курăнмиех юр айне пулнă. Мана курсан хаваслансах кайрĕ.

— Вот, аван ку, пит аван! Сăмах пурччĕ-ха... Ну, мĕнле чупатăн? Ĕçсем мĕнлерех?

— Эсир хушнине турăмăр.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Пит лайăх кино кăтартнă терĕç эсир вĕсене... Маттур!— Вăл, лăх-лăх-лăх кулса, аллисене сăтăркаласа илчĕ.— Çапла вĕрентмелле те вĕсене.

— Анчах пирĕн паян питĕ пысăк хуйхă,— терĕм эпĕ.

— Мĕн тата? — хыпăнса ӳкрĕ вăл.

Эпĕ ăна Ваççа епле вилни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм.

— Этемле пытарма та памарĕç...— терĕм Сережăсен амăшĕн сăмахĕпе.

Старик, ассăн сывласа ярса, чылай хушă чĕнмесĕр ларчĕ. Унăн арăмĕ тутăр вĕçĕпе куçĕсене шăлса илчĕ.

— Çавăнпа та эпир Сережăпа иксĕмĕр фрицсене питĕ хытă тавăрасшăн,— терĕм эпĕ.— Ниепле те каçарма пултараймастпăр!

— Каçарасси эпир вĕсене нимшĕн те каçармастпăрха, ун пирки сăмах та çук,— мăкăртатса илчĕ Матвей Матвеич, тем çинчен шухăша кайса. Унтан тăрук мана куçран пăхрĕ:

— «Лазарет» мĕнле сирĕн?

— Çаплипех...

— Çаплипех? — Вăл татах шухăша кайнă пек пулчĕ.— Çаплипех хăварма юрамасть.

— Мĕн тумалла эппин?

— Ырă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, фашистсен тылĕсем паян-ыран кунта çитмелле. Чакса килеççĕ. Паллах, пирĕн хулара вĕсем — пурте мар пулсан та — чылайăшĕ чарăнса тăма пултараççĕ. Нимĕç пырса кĕмен çурт та пулмасть вара. Çавăн чух вĕсем сирĕн «лазарета» асăрхама пултараççĕ. Çавăнпа та сирĕн боецсене тĕплĕрех пытарас пулать, акă мĕн...

Эпĕ пăшăрхансах кайрăм.

— Аçта чикес-ха вĕсене? Пирĕн урăх вырăн çук-çке ниçта та...

— Ыран курăпăр... Тен тупăпăр...— Матвей Матвеич стена çинчи кивĕ сехет çине пăхса илчĕ.— Ыран эпир иксĕмĕр лайăхрах шухăшласа пăхăпăр. Паянлăха киле кай эсĕ. Унта сана аппу кĕтет пулĕ-ха...

— Аппа?! Тамара-и? — хама вĕри шывпа сапнă пекех сиксе тăтăм эпĕ.

— Тамара çав, кам пултăр тата? — лăпкăн кăна каларĕ Матвей Матвеич.

— Мĕнле майпа киле килнĕ вара вăл? Хăçан?— тĕпчеме тапратрăм эпĕ.

— Эсĕ ăна хăйĕнчен ыйт,— терĕ старик.

— Эппин... эппин эпĕ вĕçтеретĕп!

— Халь вĕçтер, анчах ыран эпĕ пыриччен ниçта та тухса ан вĕç. Анлантăн-и?

— Анлантăм.

* * *

Старик улталаман мана, тĕрĕснех каланă.

Манăн аппа, Тамара, чăнах та килте пулнă. Анне мана алăк уçса кĕртсенех, вăл, чăлантан сиксе тухрĕ те, ыталаса илсе лапчăтсах пăрахатчĕ. Эпĕ те ăна çĕр хут та чуптуса илтĕм пулмалла. Эпир пĕр-пĕрине çур çул курманччĕ-çке, тата, çитменнине, ун çинчен нумай вăхăт нимĕн те пĕлмен: чĕрĕ-и вăл, вилĕ-и...

Тамара самаях улшăннăччĕ, темле тĕрекленсе, патмарланса, çирĕпленсе кайнăччĕ. Питçăмартисем кĕрхи панулми пек, ӳчĕ кăна çилпе кăшт куштăрканă. Сасси те малтанхинчен улшăннă, чылай хулăнланнă пек туйăнчĕ.

— Пуçĕпех килтĕн-и ĕнтĕ, тек каймастăн-и? — тĕл пулнă пирки хумханни кăшт лăплансанах ыйтрăм эпĕ.

— Пурăнатăп-ха пăртак, тен, ниçта та каймастăп,— терĕ аппа.

— Эсӗ ӑҫта ҫӳрерӗн вара ҫак таранччен, ма хальччен килмерӗн? Ма пӗр ҫыру ҫеҫ ятӑн? — ҫине-ҫине ыйтма тытӑнтӑм эпӗ. Хӑвӑрах чухламалла ӗнтӗ: манӑн ун ҫинчен пӗтӗмпех, часрах пӗлес килнӗ.

— Ытла анваскат-ха, майӗпе хамах калӑп,— терӗ вӑл.

Анне пире сӗтел хушшине ларма чӗнчӗ. Вара эпир тахҫанчченех, ҫурҫӗрченех калаҫса лартӑмӑр. Аппа хӑйӗн ҫинчен питӗ нумай каласа пачӗ: окруженине мӗнле лекнӗ, унтан партизансемпе мӗнле майпа пӗрлешнӗ, вӗсен отрячӗ фашистсемпе епле ҫапӑҫнӑ... Эпӗ те хамӑрӑн ӗҫсем ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпех каласа кӑтартрӑм. Анчах вӑл та нумайӑшне малтанах пӗлнӗ иккен: салтаксене ҫӑлнине те, листовкӑсем сарнине те. Ӑна пирӗн ҫинчен партизансен комиссарӗ каласа панӑ-мӗн.

— Халь сана отпуск панӑ-и вара? — ыйтрӑм эпӗ юлашкинчен.

Тамара ҫемҫен кӑна кулса илчӗ:

— Отпуск вӑл — канмаллине пӗлтерет, анчах та фашистсене хамӑр ҫӗр ҫинчен хӑваласа яриччене пирӗн канасси ҫинчен шухӑшлама та юрамасть, шӑллӑм...

— Эппин курма анчах килтӗн-и?

— Курма ҫав... Сире курас килекен пулчӗ-ҫке!

Кун пек калани мана кӑшт лӑплантарчӗ, анчах темшӗн ман ӑна ӗненесех килмерӗ, вӑл манран тем пытарнӑ пек туйӑнчӗ.

Эпӗ йӑнӑшман иккен. Тамара хамӑр хулана партизансен заданийӗпе килнӗ-мӗн. Ӑна эпӗ кайран тин пӗлтӗм.

* * *

Каҫхине хӑй патӗнче калаҫса татӑлнӑ пек, Матвей Матвеич пирӗн пата ирех пырса ҫитрӗ. Чӑн малтан вӑл Тамарӑн аллине тытса чӑмӑртарӗ.

— Ну, епле кантӑн? Килте вӑрмантинчен лайӑхрах пуль вӗт?

— Хӑнӑхсан пур ҫӗрте те аван,— кулса илчӗ аппа.— Ҫитменнине, салтак вӗт эпӗ...

Унтан Матвей Матвеич ман ҫине пӑхса илчӗ.

— Тумлан, рабочи класс...

— Аҫта каймалла? — ыйтрӗ анне.

— Йӑпӑртлӑх кӑна,— терӗ старик.

Вӑл мана ӑҫта илсе каяссине эпӗ хам та пӗлмен, анчах пӗр сӑмахсӑрах тумланма тытӑнтӑм, мӗншӗн тесен эпӗ ун хыҫҫӑн хуть те ӑҫта та кайма хатӗр пулнӑ. Вӑл чӗнет пулсан — ӗҫ пур ӗнтӗ, паллах. Эпӗ тумланнӑ вӑхӑтра Матвей Матвеич Тамарӑна чӑланалла чӗнсе кӗртрӗ. Темскер ҫинчен хӑвӑрт-хӑвӑрт пӑшӑлтатрӗҫ вӗсем. Анчах эпӗ пӗр сӑмахне те ӑнланаймарӑм. Тамара темиҫе хутчен те: «Юрӗ, юрӗ, пӗлетӗп...» тени ҫеҫ хӑлхана кӗрсе юлчӗ.

Часах эпир урама тухрӑмӑр.

—Ну, илсе кай ӗнтӗ мана хӑвӑрӑн «лазарета»,—терӗ Матвей Матвеич хуллен.— Эсӗ пӗр ҫӗр чалӑш малта пыр...

Тӑруках тавҫӑрса илтӗм вара: старик пирӗн салтаксем пирки пӑшӑрханнӑ. Ахальрен мар вӑл ӗнер каҫхине вӗсем ҫинчен ыйтса пӗлчӗ.

Малтан эпир Раиса Ивановна хваттерне кӗтӗмӗр.

— Ан хӑра, ку хамӑр ҫын,— терӗм эпӗ ӑна, Матвей Матвеич хама вӗрентнӗ пек.—Салтаксене апат-ҫимӗҫ параканнисенчен пӗри пулать вӑл...

Ун пек каласан, Раиса Ивановна тӳрех боецсен сывлӑхӗ ҫинчен, вӗсен кӑмӑлӗ ҫинчен каласа пама тытӑнчӗ.

— Тӳрленсе ҫитеҫҫӗ ӗнтӗ, анчах ҫак шӑтӑкра ларса йӑлӑхрӑмӑр, тесе ӳпкелешеҫҫӗ...

— Вӑл нимех те мар-ха, пуҫӗсем сывӑ пулччӑр,— терӗ ӑна хирӗҫ Матвей Матвеич.— Ҫав хаклӑ...

Унтан эпир «лазарета» уҫса кӗтӗмӗр.

Яланхи пекех, боецсем эпир пынӑшӑн питӗ савӑнчӗҫ. Матвей Матвеич кам иккенне пӗлтерсен, лейтенанчӗ

пушшех хавасланса кайрĕ. Ыйтса пĕлме тытăнчĕ, хăйĕн çапăçасси килни çинчен каларĕ, хĕçпăшал пама ыйтрĕ.

— Алăсем кĕçтеççĕ, ниçта кайса кĕме çук...

— Хăй вăхăтĕнче пурте пулĕ,— терĕ ăна хирĕç Матвей Матвеич лăпкăн.— Эсир кунтан тухмалли вăхăт инçе мар. Анчах çавăн пек самант çитсе килет-ха... Сире темиçе кунлăха ним палăрми питĕрсе лартас пулать. Кĕмелле мар, тухмалла мар...

— Мĕншĕн?— тĕлĕнсе ыйтрĕ лейтенант.

— Лару-тăрăвĕ çапла. Паян-ыран нимĕçсем нумай пулаççĕ кунта. Вĕсем чакса килеççĕ. Юлашкинчен, таçта та кĕрсе кайма, тем туса хума пултараççĕ.

— Унтан вара?

— Унтан сире кăларатпăр.

— Фашистсене хăваласа ярсан-и?

— Çапла, тейĕпĕр.

— Çук, килĕшместĕп,— терĕ лейтенант сасартăк.— Тăшмансене хăваланă вăхăтра эпир кунта ларма пултараймастпăр. Ун чух пирĕн урамра пулас пулать!

— Уçма йывăр-им ун чух? — калаçăва хутшăнчĕ Раиса Ивановна.— Эпĕ килтех пулатăп вĕт.

— Апла пулсан хуть...

— Çаплах пулать!..

— Анчах эсир пире хĕçпăшал парăр.

— Ан пăшăрханăр, ăна тупса парăпăр. Тен, паянах май килĕ.

Çавăн пек калаçнă хыççăн боецсем питĕ кăмăллă пулса юлчĕç. Эпир вĕсемпе сывпуллашрăмăр та, Раиса Ивановнăна халех çимелли ытларах хатĕрлеме хушса, урамалла тухрăмăр.

— Лайăх йĕкĕтсем,— мухтаса илчĕ Матвей Матвеич пирĕн боецсене.

Çав вăхăтра сасартăк юнашар урамра машина сассисем илтĕнчĕç. Ик-виç машина мар — вуншар машина сасси пулчĕ вăл. Чылайранпа илтменччĕ эпир ун пек шав...

— Пуçланать пулмалла,—терĕ те Матвей Матвеич, хăвăртрах утрĕ.— Атя-ха часрах!..

Виç-тăват минутран эпир тепĕр урама тухрăмăр та, нимĕç машинисем вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса килнине курăмăр. Вĕсем, тен, икçĕр машина та ытла пулнă-и, кам пĕлет...

— Акă вăл, «никам çĕнейми» çаратуçă-çар каялла сирпĕнсе килет,— терĕ Матвей Матвеич, самантлăха чарăнса тăрса.— Пăс кăна тухать...—Унтан вăл мана хулпуççирен тĕртрĕ:

— Чуп часрах хăвăрăн «лазарета»! Тĕплĕрех пытарăр!..

* * *

Раиса Ивановнăпа иксĕмĕр подвал алăкне юрпа ним курăнми сапса лартсассăнах эпĕ киле ыткăнтăм.

Халь ĕнтĕ нимĕç машинĕсем пур урамсем тăрăх та чупатчĕç. Кĕçех икшер мăн лаша кӳлнĕ пысăк çунасем шума пуçларĕç. Вĕсене пурне те туп-тулли, капансем пекех тиесе лартнăччĕ,— вăл ĕнтĕ, паллах, совет çыннисене çаратса тултарнă пурлăх пулнă.

— Фрицсем тараççĕ вĕт,— терĕм аннене.

— Хамах куратăп...— Анне чӳречерен пăхса илчĕ.— Ох, часрах тасалччăрччĕ!

— Çук-ха, эпир вĕсене ахалех кăларса ямастпăр,— терĕ пирĕнпе пĕрле чӳречерен урамалла пăхса тăракан Тамара.— Қапла ытла çуллă пулать. Килнĕ, çаратнă та — тĕрĕс-тĕкĕлех тухса кайнă... Урăххине те тутанса пăхĕç-ха...

Хăй çавăнтах тумланма тытăнчĕ.

— Аçта каятăн тата? — хăраса ӳкрĕ анне.— Хула тулли нимĕç... Тем курса тăрăн... Ларччĕ килте!

— Нимĕн те пулмасть, анне. Ан шиклен. Тепĕр тесен, пĕлетĕн вĕт: эпĕ алăсене усса килте ларма килмен...

Анчах тумланасса вăл пĕртте ĕлĕкхи пек мар, темле карчăк пек тумланчĕ: çĕтĕк кĕрĕк, таçта йăваланса

выртнă кивĕ çăматă тăхăнчĕ, усал хура тутăр çыхрĕ, çитменнине тата, пĕр аллине хутаç, теприне патак тытрĕ. Чăн-чăн ыйткалакан пулса тăчĕ! Ун çине пăхсан, малтан пăшăрханма пăхнă анне те кулса ячĕ.

— Артистка иккен эсĕ!..

— Пирĕн ĕçре урăхла юрамасть,— терĕ ăна хирĕç Тамара, унтан, татах хăйĕн пирки пăшăрханма кирлĕ марри çинчен асăрхаттарса, килтен тухса кайрĕ. Манăн та килте ларас килмерĕ. Кăнтăрла çитеспе эпĕ те, Сережăсем патне каяс шухăшпа, килтен тухса шăвăнтăм.

Сережа килте çук-мĕн.

— Нумай пулмасть тухса кайрĕ,— терĕ амăшĕ.

Ывăлĕ ăçта, мĕн тума кайнине вăл пĕлмен. Сĕрĕм тивнĕ салтавпа пăртак уçăлса çӳреме тухса кайнă имĕш.

Киле манăн халех таврăнас килмерĕ, çавăнпа та эпĕ ним тĕлли-паллисĕрех Совет урамне тухрăм та пасар площачĕ еннелле утрăм. Тĕрĕссипех каласан, манăн çав чакакан фашистсем хулара мĕн хăтланнине курас килчĕ.

Куртăм вара...

Вĕсем Совет урамĕнчи кашни килте тенĕ пекех вырнаçнă иккен. Ăçта ан пăх — пур çĕрте те машина, машина... Грузовиксем, тягачсем, тиенĕ çунасем, повозкăсем... Кашни килхушшинче тенĕ пекех нимĕçле пакăлтатни, кăшкăрни илтĕнет. Кашни мăръеренех тĕтĕм тухать — салтаксем вут хуттарнă ĕнтĕ, унта сысна çухăрать, кунта чăхсем кăт-кăтиклеççĕ, пăшал сассисем илтĕнеççĕ — фашистсем хăйсен ирсĕр карланкисене тăрантарасшăн, пирĕн çынсен ăнсăртран упранса юлнă юлашки выльăхĕсене, кайăк-кĕшĕкĕсене пĕтереççĕ. Совет урамĕнчен Ленин урамне тухрăм — кунта та çав-çавах, ним майсăр шăв-шав.

Анчах ку мана питех тĕлĕнтермерĕ, мĕншĕн тесен нимĕçсем пире кун пеккине хăйсем пирĕн хулана малтанхи хут пырса кĕрсенех кăтартнăччĕ.

Нимрен ытла эпĕ пасар площадьне тухсан тĕлĕнтĕм. Çав тери машина нумай иккен кунта! Темĕн тĕрли те,

темĕн тĕсли те, пур çĕрте те... Çуртсем, хӳмесем çумĕнче, киосксем хушшинче, хула сачĕ хĕрринче — таçта та машинăсем! Пин те пулĕ. Ун чухлĕ машина эпĕ нихçан та курманччĕ.

— Эх, кусене пĕр харăс хыптарса ярсан, пит аван пулмалла-мĕн...— терĕм хам ăшăмра, машинăсем çине пăхса.

Ку ĕнтĕ пит лайăх шухăш пулнă, анчах эпĕ, паллах, ним тума та пултарайман. Çавăнпа та площадь урлă каçрăм та Матвей Матвеич патнелле утрăм.

— Пĕлес, мĕнле шухăшсемпе пурăнать вăл...

Пĕр квартала яхăн кайсан, сасартăк мана Тамара тĕл пулчĕ. Хам паллас та çукчĕ ăна, ытла та карчăк пек пулса утатчĕ вăл, анчах манпа танашсан хăй сăмах хушрĕ.

— Ăçта каятăн?

— Так... ниçта та мар, ахаль курса çӳретĕп,— терĕм эпĕ, тăруках нимле мар пулса кайса.

Вăл пуçĕпе хула хĕрринелле сĕлтсе илчĕ.

— Матвей Матвеич патне пуль?

— Çавăнта,— тунмарăм эпĕ.

— Кай, кай... унта санăн тусу та пынăччĕ-ха.

— Мĕнле тус?

— Сережа Авдеев, кам пултăр тата?

— А мĕн тума пынă вăл унта, пĕлмерĕн-и?

— Кайсан хăвах пĕлĕн...

— Эс ăçта каятăн?

— Киле васкатăп. Эс те нумаях ан çӳре.

Эпир ик еннелле уйрăлса кайрăмăр. Тамара — киле, эпĕ — Кочетовсем патне. Сережа унтине пĕлсен, эп пушшех васкарăм.

* * *

— Çылăхсăр çын та иккен эсĕ, Юрка,— терĕ мана Матвей Матвеич, эпĕ алăкран кĕрсе тăрсанах.

— Ма ун пек калатăр?— тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Асăннă çĕрех килсе кĕтĕн! Сережăпа иксĕмĕр халь çеç сан çинчен калаçрăмăр.

— Мĕн пирки тата?

— Паллах, ахальрен мар. Сережа хăйне пĕр-пĕр ĕç хушма ÿкĕтлет мана, анчах эпĕ ăна пĕччен яма тытăнарах тăтăм... Мĕншĕн тесен иккĕн авантарах пулать.

— Эпĕ яланах хатĕр! Хушăр. Фашистсем Васçана вĕлернĕ хыççăн эпир Сережăпа иксĕмĕр тупа турăмăр...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп...— Матвей Матвеич, пукан çине ларса, чĕлĕм тивертрĕ, унтан çăварĕнчен çăра тĕтĕм кăларса ячĕ те пĕрре Сережа çине, тепре ман çине тинкерсе пăха-пăха илчĕ.— Эпĕ сире пит лайăх ăнланатăп. Эсир тăшмана хирĕç тем тума та хатĕррине те пĕлсех тăратăп, анчах...

— Шанмастăр-им?— кăмăлсăр сасăпа пÿлчĕ ăна Сережа.

— Çу-ук, вăл мар,—аллипе сулчĕ Матвей Матвеич,— ун çинчен сăмах та çук. Эсир хăвăра пит лайăх кăтартрăр ĕнтĕ. Анчах халĕ эпĕ сире хушас тенĕ ĕç ытла та шиклĕскер...

— Пулин! Пултăр!

— Эпир нимрен те хăрамастпăр!— пĕр харăс персе ятăмăр Сережăпа иксĕмĕр.

Матвей Матвеич каллех пире куçсенчен тĕллесе пăхрĕ.

— Сирĕнпе мĕн те пулин пулсан, аннĕрсем умĕнче ответне кам тытĕ вара?

— Нимĕнле ответ та тытмалла пулмасть! Эсир ĕçĕ çинчен калăр!— хĕрÿленсех пытăмăр эпир. Старик хăй калас сăмахне каламасăр тăни пире пушшех вĕрилентерчĕ.

— Ну, ну, лăпланăр кăштах, атту-тăк эпĕ сирĕнпе вуçех калаçмастăп,— пÿрнипе юнаса илчĕ вăл.

Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕмĕр. Матвей Матвеич вякkалла пăхса шухăшласа ларчĕ, эпир — кĕтрĕмĕр.

Чылайран тин вăл пуçне пирĕн еннелле çавăрчĕ те, хуллен кăна:

— Ну, ну, юрĕ,— терĕ.— Хăвăр ытла та пит ыйтнă пирки кăна... Тăхтăр эппин пăртак...

Вăл килхушшине тухрĕ, калинккене уçса унталла-кунталла пăхрĕ (эпир чӳречерен сăнасах тăтăмăр). Унтан васкамасăр сарай патнелле кайрĕ те, тепĕр темиçе минутран михĕпе чĕркенĕ темле япала çĕклесе кĕртсе кухньăри сĕтел çине хучĕ. Ку мĕнле япала иккенне пĕлес килнипе пирĕн ăшчиксем хыпсах тухатчĕç пулас.

— Акă сире икĕ мина,— терĕ вăл кăшт тăхтасан, миххе уçса.— Вĕсем теме те сиктерсе яма пултараççĕ, шутсăр хăватлă япаласем... Каплипе, чăн та, вĕсенчен нимĕн хăрамалли те çук, мĕншĕн тесен вĕсем халь взрывательсĕр. Анчах та çак шăтăксене ак çак япаласене кĕртсе лартсан, кайран çиелтен хытăрах пуссан вара...

Матвей Матвеич ик аллине те пĕр харăсах çӳлелле çĕклерĕ. Ку ĕнтĕ взрыв пулса сирпĕнтерессе пĕлтерчĕ.

— Ăнланатăр-и?

— Ăнланатпăр,— пăшăлтатса илтĕмĕр эпир.

— Хăрамăр-и?

— Çук...

— Эппин, кăтартса парам сире. Лайăххрах пăхăр...

Вăл минăсене епле авăрламаллине, вĕсене епле хумаллине вĕрентме тытăнчĕ пире. Йывăрри, ăнланмалла марри нимех те çук иккен, ĕçне асăрханарах тумалла çеç.

...Çур сехетрен эпир минăсене çунашка çинче ларакан пăрланнă катка ăшне хутăмăр, çиелтен витре лартрăмăр, унтан шăнса хытнă михĕ таткипе витсе çыхрăмăр та — çунашкана туртса урамалла тухрăмăр.

Нимĕççем килнĕренпе пирĕн хулара водопровод ĕçлеми пулчĕ, хулари çăлсенчен те фашистсем хăйсем кăна ăсатчĕç, совет çыннисене ăсма памастчĕç, кашни çăл патĕнчех вĕсен часовойĕ тăратчĕ (кам та пулин наркăмăш пырса ярасран), çавăнпа та халăх шыв ăсма хула

çumĕнчи кӳлле çӳретчĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир каçа хирĕç шыв ăсма кайнă пек пулчĕ...

Матвей Матвеич вĕрентсе янă пек, эпир хуларан хĕвелтухăçнелле, Мускав еннелле каякан шоссепе тухса кӳлĕ çине антăмăр. Ун чух тĕттĕмленме пуçланăччĕ ĕнтĕ. Вакă тĕлне çитсен чарăнтăмăр та, малалла та, каялла та темиçе хутчен пăхса илтĕмĕр. Никам та курăнмарĕ. Ни унтан, ни кунтан килекен çук...

— Ну, эс шыв патне кай, эпĕ пуçлам...— пăшăлтатса илчĕ Сережа.— Ытла ан васка, куран — юрне асфальт пекех хытарса лартнă, чылай тăрмашмалла пулать...

Эпĕ витре йăтса вакă еннелле утрăм, вăл çунашка çине, çурăмĕпе катка еннелле ларса, хытнă юра кусарпа хăйпăтма, урăхла каласан — мина валли шăтăк алтма тытăнчĕ. (Кусарне пире Матвей Матвеичах парса ячĕ). Пĕр пилĕк минутран эпĕ ун патне тулли витрепе таврăнтăм, шăтăк хатĕр марччĕ-ха. Иккĕмĕш витре ăсса пынă çĕре вара шăтăк пулса çитнĕччĕ, анчах вăрман патĕнче сасартăк автомобиль фарисем çутатни курăнса кайрĕ... Çутă питĕ хăвăрт çывхарса килчĕ, çавăнпа та пирĕн çунашкана çул çинчен илсе тухмалла пулчĕ. Пирĕн тĕлпе икĕ грузовик ĕрĕхсе иртсе кайрĕç... Эпир çунашкана каллех малтанхи вырăна пырса лартрăмăр та, Сережа хăй тунă шăтăка йăпăр-япăр тасатрĕ. Унтан, çунашкана çулăн тепĕр еннерех туртса каçарса, тепĕр çĕрте чавма тытăнчĕ... Эпĕ ĕнтĕ каллех шыв ăсма каянçи пултăм. (Çын-мĕн асăрхас пулсан, пирĕн кӳлле шыв патне килнĕ ачасем пек курăнмалла-çке...)

Вакă патĕнчен эпĕ тăваттăмĕш хут таврăннă çĕре вара Сережа пĕтĕмпех туса çитернĕ. Минисене те вырнаçтарнă, çиелтен юрпа та витсе лартнă.

— Часрах, часрах...— пăшăлтатса илчĕ вăл хăвăрттăн.— Чупар!

— Шывне тăкмастпăр-и?— çавăн пекех васкавлăн ыйтрăм эпĕ.

— Ухмах!— терĕ Сережа.— Çырмаран кам пушă



каткапа хăпарать? Маскировка вĕт вăл! Такам тĕл пулсан та...

Эпир вара хамăра хыçалтан такам халь-халь тытмалла хăваласа пынă пекех чупрăмăр... Çур сăрта çитсен шоссе çинчен сылтăмалла утмаçул пурри палăрчĕ. Чăнкă пулин те, эпир, çав çулпах хăпарса, çыран хĕррипе ыткăнтăмăр. Хамăр çав хушăрах вăрман еннелле пăха-пăха илтĕмĕр: пĕр-пĕр машина курăнмасть-ши? Пирĕн ĕç выранлă пулĕ-ши?

Çук, нимĕн те курăнмарĕ. Вăхăт нумая кайнипе кĕтсе тăрас темерĕмĕр, хăрушă пулчĕ, ахалех лекме пулать-çке. Çавăн пиркиех çунашкана та Матвей Матвеич патне леçсе тăрас мар, ирччен Сережăсем патне лартас, терĕмĕр.

Анчах эпир çыран хĕрринчи урамран шалти урамалла кĕрсенех шоссе çинче сасартăк çав тери вăйлăн шартлатса çурăлнă сасă илтĕнсе кайрĕ. Шартах сиктерчĕ вăл пире.

— Пулчĕ!— терĕ Сережа.— Лекрĕ пĕри!

— Пулчĕ пулас,— терĕм эпĕ те.— Анчах мĕн лекрĕ-ши?

* * *

Киле эпĕ çав тери савăнса пырса кĕтĕм. Халь çеç мĕн пулса иртни çинчен çавăнтах Тамарăна каласа парасшăнччĕ, анчах та вăл темшĕн пӳртре курăнмарĕ. Унта пăхрăм, кунта,— çук.

— Аппа ăçта вара?— ыйтрăм çывăрма выртнă анне-рен.— Халь те килмен-и?

— Килтех-ха вăл, йăпăрт тула тухрĕ пулмалла,—терĕ мана анне.

Кухньăна тухса юлашки яшка сыпкаларăм та, çывăрма выртма хатĕрлентĕм. Аппа темшĕн çаплах та кĕмерĕ-ха. Пĕр вунпилĕк-çирĕм минут та иртрĕ пулмалла эпĕ аннепе калаçса илнĕренпе.

— Мĕн вара ку? Ăçта çухалчĕ?— тĕлĕнерех, пăшăрханарах шухăшларăм эпĕ.— Тен, алăка уçаймасть? Анчах, ун пек пулсан, шаккама кирлĕ-çке...

Çенĕке тухрăм та, алăка хыпашласа пăхрăм. Ана урлуççипех питĕрнĕ. Сасă пулмасть-и, тесе, пĕр хушă итлесе тăтăм. Малтанах нимĕнле сас-чĕв те илтĕнмерĕ, анчах унтан, тепĕр кăшт тăхтасан, хăлхана темле мăкăртатнă пек сасă пырса кĕчĕ.

— Çĕр, çĕр... итлĕр мана, итлĕр мана... Уйăх калаçать, уйăх калаçать... Итлетĕн-и, итлетĕн-и?..

Хытнă пек пулса тăтăм вара, сывлама та чарăнтăм. Тамара сасси мачча çинчен илтĕнет! Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ ку, кампа калаçать вăл? Нимĕн те ăнланмалла мар...

— Итлĕр мана, итлĕр мана,— терĕ аппа татах.— Эпĕ уйăх, эпĕ уйăх... Уйăх çинче кайăксем нумай... Уйăх çинче кайăксем нумай... Ăшă çĕрелле вĕçсе каяççĕ... Чĕкеçсем ярăр кунта... Чĕкеçсем ярăр кунта... Чĕкеçсем вĕсене килсе саламлаччăр, тутлă кучченеçсем çитерччĕр... Эсир мана илтетĕр-и?



Тупата, эпӗ нимӗн те ӑнланаймарӑм! Кампа калаҫать вӑл? Мӗнле кайӑксем ҫинчен калать? Мӗнле чӗкеҫсене чӗнет? Ахӑртнех, ку сасартӑк ухмаха ермен-ши?— тесе те шухӑшласа пӑхрӑм аптранӑ енне. Анчах вӑл ҫаплах калаҫрӗ-ха:

— Чӗкеҫсем ыран ирех килччӗр, атту кая юлма пулать... Итлетӗр-и? Ыран ирех...

Тек тӳссе тӑраймарӑм эпӗ.

— Тамара, эс кампа калаҫатӑн унта?— тесе ыйтрӑм.

— Халех анатӑп,— терӗ вӑл мана хирӗҫ.

Пӳрте кӗрсен, эпӗ унтан тӗпчесе пӗлме тытӑнтӑм.

— Мӗн турӑн эсӗ мачча ҫинче? Кампа калаҫса лартӑн? Мӗнле чӗкеҫсем ҫинчен? Мӗне пӗлтерет ку?

Ответ вырӑнне аппа мана сӑмсаран шаклаттарса илчӗ те кулса ячӗ.

— Мӗне пӗлтернине ыран пӗлӗн. Ҫывӑр!— Анчах та, эпӗ кӳреннине курса пулас, ҫавӑнтах мана ыталаса илчӗ те хӑлхаран шӑппӑн кӑна каларӗ:— Хамӑрӑннисемпе

радио тăрăх каласрăм... Чĕкеç тени — самолет тенине пĕлтерет. Ирхине курăн акă...

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ, анчах кунпа пĕрлех савăнтарчĕ те. Эппин, ман аппа пирĕн самолетсене чĕнсе илнĕ, вĕсем фашистсем çине бомбăсем тăкма килеççĕ...

Шăпах çавăн пек пулса тухрĕ. Ирхине, пĕр сакăр сехетре, пирĕн хула çине сасартăк вунă-вуник штурмовик çил пек пырса тухрĕç те тăшмансене ним майсăр çунтарма тытăнчĕç. Ой, çунтарчĕç, ой, тӳнккерĕç!.. Бомбăсем пăрахаççĕ, тупписенчен переççĕ, пулемечĕсенчен шăтăртаттараççĕ. Вут-çулăм ялкăшать, тĕтĕм-хăрăм пăсăрланать — каласа пама та сăмах çитес çук вĕсем фрицсене епле «тăн кӳртнине». Эпир, Тамарăпа иксĕмĕр, юриех сарай тăррине хăпарса лартăмăр та, пире питĕ аван курăнчĕ. Пуринчен ытла вĕсем пасар площадĕнче, машинăсем пит нумай пухăннă çĕрте, хытă ĕçлерĕç.

— Ах, маттурсем, ах, лайăх лектереççĕ пирĕн ăмăрткайăксем!— кашни бомба шартлатса çурăлмассеренех кăшкăрса илчĕ Тамара.

— Неушлĕ вĕсем эсĕ чĕннипех килчĕç?— ыйтрăм эпĕ, самолетсем лайăх ĕç тунăшăн хам та тем териех савăнса.

— Ĕнерех каларăм-çке сана!

— Каларăн та-ха ара...

Çак вăхăтра пирĕн калинкке питĕ хытă шатлатса уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Пăхрăм та — Сережа чупса кĕнине курах кайрăм. Сăнĕ унăн пит те хăрарă пекчĕ, кăвакарсах кайнăччĕ.

— Ку ĕнтĕ бомбежкăран хăранă,— терĕм хамăн ăшăмра, анчах çавăнтах урăх шухăш вĕçсе килчĕ:— Е лере, «лазаретра», мĕн те пулин ырă мар...

— Юрка, ан-ха часрах!— кăшкăрчĕ вăл мана асăрхасанах.— Питĕ васкамалли ĕç пур!

Эпĕ сарай тăрринчен йăпăртах сиксе антăм.

— Мĕн пулнă?

— Акă мĕн... Паян ир енне пирĕн пата Раиса Ивановна чупса пычĕ...—хашкаса каласа пама тытăнчĕ вăл. Хăй çав хушăрах халь те сарай тăрринчех ларакан Тамара çине шикленсе пăхса илчĕ.

— Ан хăра, ман аппа вăл,— хăвăрт кăна алăпа султăм эпĕ.— Вара мĕн? Мĕн пирки чупса пычĕ?

— Вăл виçĕ фрица вĕлернĕ...

— Вĕлернĕ? Виçĕ фрица? Епле майпа?— чĕре кăрт-кăрт тапса илчĕ манăн.

— Наркăмăш парса вĕлернĕ. Пĕлетĕн-ха вĕт, аптекăра ĕçленĕскерĕн, унăн темле эмел те пур...

— Ну, ну, пĕлетĕп...

— Хăй каланă тăрăх, çапла пулнă. Ĕнер ун патне виçĕ фашист хваттере пырса кĕнĕ. Ну, ăна тума хушнă, кăна хушнă. Апат пĕçер те, кофе те... Ку ĕнтĕ пурне те тунă. Çав хушăрах инкене шыв ăшăттарнă, кайран иртĕнме пуçланă. Çарамасланнă та, ним намăса пĕлмесĕрех, инке умĕнче çăвăнма тытăннă. Тытăннă та мар-ха, хăйне çутарнă, йытăсем. Инке пурне те чăтнă. Çăвăннă хыççăн вара апат çиме ларнă... Ĕçме тытăннă... Малтан илсе пынă эрехĕ пĕтсен, пĕри таçта кайса татах илсе пынă. Ку эрехĕ сивĕскер пулнă та, ăна ăшăтма хушнă. Çав вăхăтра инке, калама çук тарăхса çитнĕскер, эрехĕ ăшне наркăмăш ярса панă. Ну, лешсем вара пĕрин хыççăн тепри тӳннĕ те урăх тăрайман... Инке тула сиксе тухса алăка питĕрнĕ те нумайччен чĕтресе ларнă, шала кĕме те хăранă, тул çутăлма пуçласан тин алăка уçса, фрицсем ĕмĕрлĕхех пуçтарăнса выртнине курнă та алăка каллех тул енчен питĕрсе пирĕн пата чупса пычĕ. Тупата, хăй ĕнтĕ чăн-чăн ухмаха ернĕ çын пекех... Тем тумалла халь, пĕлместĕп. Енчен, нимĕçсем çав вилесене тупсан, ухтарман вырăн хăвармаççĕ ĕнтĕ, вара пирĕн «лазарета» та тупма пултараççĕ. Пĕтрĕмĕр вара!.. Çавăн

пирки сан пата чупса килтӗм. Шухӑшласа тупар-ха мӗн те пулин...

— Тата килеҫҫӗ! Тата тепӗр ушкӑн килет! Пӑхӑр-ха, пӑхӑр!— кӑшкӑрса ячӗ ҫав вӑхӑтра Тамара сарай тӑрринчен.

Унччен те пулмарӗ, пирӗн пуҫсем ҫийӗпе, хула варринелле, ҫичӗ самолет-штурмовик ӗрӗхсе иртрӗҫ. Тата тепӗр минутран каллех шартлатса ҫурӑлнӑ сасӑсем илтӗнме пуҫларӗҫ...

— Ну, мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ?— ыйтрӗ Сережа каллех.

Эпӗ ӑна нимӗнле ответ та параймарӑм. Чӑнах та, мӗн шухӑшласа тупма май пулнӑ-ха тӑруках? Сережа тӗрӗс каларӗ: фашистсем ӑнсӑртран вилесене тупсаҫ, тем те тума пултарнӑ. Анчах кӑнтӑр кунӗнче вилесене ӑҫта кайса чикетӗн?

Иксӗмӗр те, ҫӗрелле пӑхса, ӑнран тухса каймаллах шухӑшларӑмӑр.

— Мӗн пит хуйха кайнӑ пек тӑратӑр?— тесе ыйтрӗ пиртен халь ҫеҫ сарай ҫинчен аннӑ Тамара.— Мӗн пулчӗ тата?

— Пулнӑ-ха ҫав,— терӗм эпӗ, пуҫа ҫӗклемесӗрех.

— Қалӑр, тен, эпӗ пулӑшма пултаратӑп сире,— терӗ аппа ҫав тери уҫӑ кӑмӑлпа.

Эпӗ ун куҫӗнчен пӑхрӑм та, вӑл чӑнах та пире пулӑшма хатӗррине курса, хамӑрӑн хуйхӑ ҫинчен хӑвӑрт кӑна каласа патӑм. Ман калава итлесе пӗтерсен, Тамара пӗр ҫур минут пек шухӑша кайса тӑчӗ, унтан тӑрук:

— Ним хӑрамалли те ҫук,— тесе хучӗ.— Халех каймалла та вилесене пӳртрен сӗтӗрсе тухса ӑҫта та пулин пӑрахмалла. Ана тума халь чи лайӑх вӑхӑт: хула ҫинче пирӗн самолетсем ҫӗмӗрсе ҫӳреҫҫӗ, ун пек чухне пӗр фашист та шӑтӑкран тухмасть, пит лайӑх пӗлетӗп эп вӗсене... Иксӗрех кайма хӑратӑр пулсан — атьӑр, сирӗнпе пӗрле эпӗ те пыратӑп!

Вӑл ҫав тери ӗнентермелле каларӗ те, пирӗн унпа килӗшмелли ҫеҫ юлчӗ.

* * *

...Çула май Сережа хӑйсем патне чупса кӗрсе инкӗшӗнчен уççи илсе тухрӗ. Раиса Ивановнӑн хваттерне çитсен, çӑраççие Тамара уçрӗ, алӑкран та чӑн малтан вӑлах кӗрсе тӑчӗ. Эпир ун хыççӑн кӗтӗмӗр.

Питӗ ирсӗр картина курма тиврӗ вара пире. Пӳлӗмре çав тери йӗркесӗрлӗх пулни çинчен каламастӑп та ӗнтӗ. Пӗр япала та хӑй вырӑнӗнче марччӗ. Сӗтел çинче — пушӑ эрех кӗленчисем, стакансем, вараланчӑк турилккесем, çисе яман консервӑсем, сӗтел айӗнче — чӗлӗм тӗпӗсем, каллех пуш кӗленчесем, ванчӑк ваза, ялан кӗтесре тӑнӑ пысӑк фикус чечекӗ те урайне урлӑ выртать, чӳлмекӗ ваннӑ. Фрицӗсем хӑйсен чӗрисем тапма чарӑниччен çителӗклех асапланнӑ пулмалла. Пӗри кровать урлӑ выртать, пуçне кровать хыçнех чиксе янӑ, тепри кровать айне кӗрсе кайнӑ — урисем çеç курӑнаççӗ, виççӗмӗшӗ кӑмака умне, шыв бакӗ тӑнӑ çӗре пырса тӑсӑлса выртнӑ,— ӑшӗ çуннипе шыв ӗçесшӗн пулнӑ пулмалла, анчах та вӑй çитереймен.

— Ай-ай, хитре выртаççӗ,— терӗ те Тамара, вилесем çине темиçе самант пӑхса тӑрсан, лач! сурчӗ.

— Ну, мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ?— ыйтрӗ Сережа.

— Халех... мӗн те пулин шухӑшласа тупатпӑр.

Тамара тата тепӗр хут Раиса Ивановна хваттерӗн ӑшчиккине пӑхса çаврӑнчӗ, унтан килхушшине тухса кӗчӗ.

— Тулта ним тума та май килмест, ачасем,—терӗ вӑл пире.— Эпир вӗсене... тӗпсакайне ярӑпӑр. Каййран кӑларса тасатасси нимӗн те мар, анчах пире халь йӗрсене пытарни кирлӗ! Уçӑр!

Сережӑпа иксӗмӗр тӗпсакай алӑкне кусарпа хирсе уçрӑмӑр.

— Ну, сӗтӗрӗр вӗсене,— хушрӗ Тамара.

Эпир фашистсен виллисене пӗрин хыççӑн теприне тӗпсакайне чӑмтартӑмӑр. Çав хушӑра аппа вӗсен тумти-

рёсене те, унтан эрех кёленчисене те çавăнтах тыта-тыта варкăнтарчĕ.

— Шăрши те ан пултăр! Ку çурта фашист ури нихçан та ярса пусман пекех туйăнтăр.

— Кусемпе мĕн тăвăпăр?— тесе ыйтрăм эпĕ, стена çинче пĕр карабинпа икĕ автомат çакăнса тăнине асăрхаса.

— Вĕсене илĕпĕр-ха; вĕсем кирлĕ япаласем,— терĕ Тамара.— Анчах эсир часрах ик-виç пăта тупăр, тĕпсакай алăкне уçăлми çапса лартас пулать. Эпĕ урайне шăлса тирпейлесе хăварам...

Вăхăт нумай та иртмерĕ — эпир пурне те йĕркелесе çитертĕмĕр. Ку хваттерте нихçан та нимĕн те пулман пекех пулса тăчĕ. Хăй каларĕш — тап-таса та яп-яка. Тамара Раиса Ивановнăн выраннe те пуçтарчĕ. Сывлăш тасалтăр тесе, форточкине те уçса ятăмăр. Фрицсен хĕçпăшалĕсене простыньпе чĕркесе юр ăшне чикрĕмĕр.

— Шăпах пирĕн «лазаретрисене» валли ку,— терĕм эпĕ Сережăна.

Хваттер алăкне питĕрсе тăнă чух Тамара пире тиркенĕ пек каласа хучĕ:

— А эсир, ухмахсем, хăраса тăрататăр. Куртăр-и, ĕçе епле таса туса хутăмăр? Вăрçă вăхăтĕнче хăрама юрать-и вара?

* * *

Эпир вилнĕ фашистсемпе тăрмашнă вăхăтра пирĕн самолетсем хăйсен ĕçне туса каялла вĕçсе кайнă. Сывлăшра хăрушлăх çуккипе усă курса, хулара чарăнса тăнă фашистсем ним йĕркесĕр тарма пуçланă. Вĕсем ĕнтĕ пирĕн самолетсем каллех вĕçсе килсе татах тӳпелеме тытăнасран хăранă. Раиса Ивановна килĕнчен тухсанах асăрхарăмăр эпир ăна. Унта та кунта машинăсем кăшкăртни, моторсем кĕрлени илтĕнчĕ пире. Унччен пĕр сас та çукчĕ.

— Атя-ха, хула варринелле кайса пăхар, мĕн хăтланаççĕ унта,— терĕ Сережа.

Темшĕн манăн питех каяс килмерĕ. Те чĕре сиснĕ ырă мар пуласса, темскер, пĕлместĕп.

— Халь мар, варарахпа кайăпăр,— терĕм тусăма.— Эпĕ паян апат та çимен-ха...

— Ак тата, тупнă япала — апат,— аллипе сулчĕ Сережа.— Эпĕ те санашкалах нимĕн те çимен. Анчах халь пăхса çӳреме интереслĕ. Пирĕн самолетсем мĕн туса хăварнă? Тата хамăрăн çĕркаçхи ĕçе те кайса курас пулать вĕт. Пирĕн минăсем çине мĕн пырса тăрăннă? Атя ĕнтĕ, ан кутăнлан!

Ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ.

— Кӳлĕ çинех анас тетĕн пулсан, каллех çунашкапа катка туртса каяс пулать эппин, ним сăлтавсăр епле каятăн унта?— терĕм ăна эпĕ. Сережа ман шухăша хирĕç пулмарĕ.

— Матвей Матвеича шыв леçсе парсан та юрать...

Тухса кайрăмăр. Нимĕçсем кашни утăмра тенĕ пекех тĕл пулаççĕ, çултан пăрăнса та çитерме çук. Машинăсем иртсе каяççĕ, çунасем, тягачсем, тем шуйттанĕ те пур. Пурте хĕвелтухăçĕнчен, Мускав енчен килеççĕ. Тараççĕ ĕнтĕ, каялла çаврăнса пăхмасăрах хĕвеланăçнелле тапаççĕ...

Эпир, хула хĕррине тухса, кӳлĕ патне антăмăр та — пирĕн чĕресем çав тери савăнса кайрĕç! Матвей Матвеич хăй панă минăсем пирки: «Вĕсем теме те сиктерсе яма пултараççĕ, шутсăр хăватлă япаласем», тесе калани чăнах пулнă-мĕн. Вĕсем çине пырса тăрăннă грузовик спичка коробки пекех арканса кайнă! Пĕр çĕрте пĕр кустăрми выртать, тепĕр çĕрте, пĕр аллă метрта, тепри, виççĕмĕш çĕрте — ванчăк кабина, унта та кунта — кузов хăмисем. Çавăнтах темле ещĕксем йăваланса выртаççĕ...

— Çынсем пулнă-ши ун çинче? Вĕсем мĕнле-ши... вилнĕ-ши?— терĕ Сережа, унталла-кунталла пăхса.

— Машина хăй тĕллĕн çӳремест вĕт, ун çинче пĕр шофер та пулин пулнах ĕнтĕ,— терĕм эпĕ.

— А мĕншĕн вилни ниçта та курăнмасть?

— Тен, ăна халиччен пуçтарса кайнă?

Машина ванчăкĕсем çине тата кăштах пăхса тăтăмăр та, каткана темиçе витре шыв ярса, каялла хулана хăпартăмăр. Халь ĕнтĕ эпир каçхи пек васкамарăмăр, майĕпе калаçкаласа, хушăран вăрман енчен килекен машинăсене çул парса утрăмăр.

— Эх,— терĕ Сережа, сăрта хăпарса çитсен тепĕр хут аялалла, хамăр сиктернĕ машина юлашкийĕсем çине пăхса,— хамăн вăйăм çитес пулсан, вĕсен пур машинĕсене те, танкĕсене те, пурне те çакăн пек турпас туса тăкăттăм...

— Пулĕç-ха,— терĕм эпĕ.— Сахал сиктереççĕ-им вĕсене, сахал çунтараççĕ-и пирĕннисем?

Манăн сăмахсем эпир площаде тухсанах çирĕпленчĕç. Хам ĕнер курса тĕлĕннĕ йышлă машинăсенчен нимĕн те юлман иккен кунта. Пирĕн самолетсем вĕсене пурне те, Сережа калашле, турпас туса тăкнă. Чăн-чăн машина масарĕ пулса тăнă кунта.

— Ах, лайăх тӳнккенĕ-çке, ах, лайăх!— терĕ Сережа.— Хам пулсан, куншăн эпĕ кашни летчикнех орден памалла!

Площадьрен иртсен эпир сылтăмалла пăрăнса Матвей Матвеич пурăнакан урама тухрăмăр та, çав урам варринче çич-сакăр тулли грузовик умлăн-хыçлăн тăнине куртăмăр. Патнерех пырсан, вĕсен пурин те моторĕсем ĕçлесех тăнине илтрĕмĕр, вĕсем ĕнтĕ тапранса кайма хатĕр пулнă, такама кĕтсе тăнă çеç. Кĕçех машинăсем патĕнчи салтаксем çав тери хыттăн та шавлăн калаçма тапратрĕç, пĕр-пĕрине ятлаçнă пекех кăшкăрашрĕç.

Машинăсенчен иртсе кайма пирĕн çунашкана çултан пăрса кĕрт тăрăх туртса пымалла пулчĕ. Эпĕ туртатăп, Сережа каткаран тĕксе пырать. Питĕ йывăр пулчĕ,

анчах та эпир епле пулсан та шыва Матвей Матвеича ҫитерсех парас терӗмӗр.

Хамăр ҫав вăхăтрах машинăсем ҫине пăхса пытăмăр. Мӗн тиенӗ? Мӗн илсе каяҫҫӗ? Ҫайри ултă машина ҫине пӗтӗмпех ҫăнăх миххисем тултарнăччӗ, малти иккӗшӗ ҫине — какай, аллаппи хулăнăш ҫуллă, самăр сысна тушкисем тиенӗ. Ун пек какая вăл вăхăтра эпир тӗлӗкре те курман.

Грузовикӗсем хăйсене хирӗҫ ҫăмăл автомобиль пырса тăнă пирки чарăннă-мӗн. Тӗрӗссипе, ҫав автомобиль ҫинчен аннă фельдфебель чарнă вӗсене. Эпир чи малти грузовик тӗлне ҫитнӗ чух шоферсемпе фельдфебель усал йытăсем вӗрнӗ пекех шавлатчӗҫ. Паллах, вӗсем мӗн пирки шавланине эпир ăнланаймарăмăр, анчах та фельдфебель тек-текех аллипе хӗвеланăҫнелле кăтартса:

— Партизанен, партизанен,— тенинчен кăштах чухларăмăр.

«Таҫта, ҫав енче, партизансем кусене тăн кӗртнӗ пулмалла...»

Ҫăмăл автомобиль тӗлӗпе иртнӗ чух пирӗн ҫунашка сасартăк тайăлса кайрӗ те, каткари шыв кăштах машина ҫине сирпӗнчӗ. Уншăн машинăна нимӗн те пулмасть ӗнтӗ, ни вараланмасть, ни пăсăлмасть вăл, анчах та пӗр нимӗҫӗ ҫавна курчӗ пулмалла та, пире хăй-хай! кăшкăрса пăрахрӗ. Эпир, кусен куҫӗ умӗнчен часрах тасалас тесе, ҫунашкана тăрук малалла туртрăмăр. Чалăшнă каткари шыв тата ытларах сирпӗнчӗ, каллех машинăна лекрӗ... Унччен те пулмарӗ, хайхи фашист пирӗн паталла сиксе пырса Сережăна пӗррех пуҫӗнчен ҫапса ӳкерчӗ, унтан икӗ хут айăкӗнчен тапрӗ.

— Руссиш скот!..

Ним айăпсăр патак ҫинӗ Сережа тӳсеймерӗ, ҫав тери тарăхнипе салтака хирӗҫ кăшкăрса ячӗ.

— Ху выльăх эсӗ! Мӗн турăм эпӗ сана, фашист йытти!..

Пӗреххут шарламалла марччӗ унăн...

«Фашист» сăмаха илтсенех, салтак куçĕсене çав тери хăрушла чарса пăрахрĕ те тата темскер кăшкăрчĕ. Унтан тӳрех кабурĕнчи пистолетне туртса кăларса Сережăна печĕ...

— Ай-ай!— теме çеç ĕлкĕрчĕ те Сережа, юр çине ластах ӳкрĕ. Пĕр-ик самант хушши, ăнран тухса кайса, эпĕ ним тума пĕлмесĕр тăтăм, вара шариех макăрса ярса, тусăм патнелле ыткăнса пырса ӳкрĕм...

— Ăçтан? Ăçтан лекрĕ?..

— Пĕл...местĕп,— терĕ те Сережа, шурса кайма пуçларĕ. Эпĕ те уиталла та кунталла, хама пулăшма кам та пулин çук-ши, тесе пăхса илтĕм. Анчах таврара, фашистсемсĕр пуçне, никам та курăнмарĕ. Сережа айĕнчи юр юнпа хĕреле пуçларĕ, вăл шуралса, кăвакарсах пычĕ, куçĕсене те уçма пăрахрĕ.

— Мĕн тăвас... Мĕн тăвас?..— Эпĕ татах йĕри-тавралла пăхса илтĕм.

Шăп çав вăхăтра машинăсем патĕнче тăракан фашистсем патне юланутлă салтак ыткăнса çитрĕ те вĕсене темскер кăшкăрса каларĕ. Хăй çавăнтах лашине каялла çавăрса тĕпĕртеттерчĕ. Кусем те вара часрах кабинăсем ăшне кĕрсе ларчĕç. Çăмăл автомобилĕ кутăн чаккаласа тепĕр майлă çаврăнсанах, вĕсем пĕр харăс тапранса кайрĕç. Урамра эпир Сережăпа иксĕмĕр çеç юлтăмăр. Фашистсем куçран çухалсан, эпĕ хăюллантăм, тӳрех çывăхри килхушшине чупса кĕрсе, пĕр ватăрах хĕрарăма Сережăна çăлмашкăн пулăшма ыйтрăм. Хĕрарăм пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Эпир вара Сережăна пӳрте йăтса кĕртсе хутăмăр та, часрах унăн суранне тупса, таса алшăллисемпе çыхса лартрăмăр. Пуля унăн сулахай хулпуççине шăтарса кайнă иккен. Чĕререн лектерес тесех пенĕ ĕнтĕ ăна эсрелĕ фашисчĕ!

Сережа хăй ним пĕлми пулнă пекех выртрĕ.

Кил хуçи-хĕрарăм манран эпĕ камне, Сережа кам иккенне, хăш урамра пурăннине ыйтса пĕлме пикенчĕ, анчах эпĕ ăна йĕркеллĕн нимех те каламарăм Часрах



каткана килхушшине кĕртсе пăрахрăм, хĕрарăм пулăшнипе Сережăна илсе тухса çунашка çине хутăм та Матвей Матвеич патне туртса кайрăм.

— Унта шанчăклăрах пулать,— терĕм.

Матвей Матвеич хăй килте çукчĕ, анчах карчăкĕ, мĕн пулнине пĕлсенех, çав тери хыпăнса ӳкрĕ. Макăрса та илчĕ вăл, тăшмансене çĕр тĕслĕ ылханчĕ, ку хыпар Сережа амăшĕн чĕрине ытла та хытă пырса тивмелле пулнăшăн та пăшăрханчĕ...

Сережăна эпир малти пӳлĕме, йывăç диван çине хутăмăр. Вăл халь те тăна кĕмерĕ-ха, куçĕсене хупса йывăррăн сывласа выртрĕ.

— Тухтăр пулсан аванччĕ те ĕнтĕ... Суранĕсене те лайăхрах çыхĕччĕ, тен, эмел те пана пулĕччĕ, анчах вĕсене тупма çук ĕнтĕ ку чухне,— хурлăхлă сасăпа мăкăртатрĕ Кочетов карчăкĕ.

Эпĕ тӳрех Раиса Ивановна çинчен аса илтĕм:

«Аманнă боецсене сыватрĕ пулсан, хăйĕн тăванне сывататех!.. Вăл халĕ Сережăсем патĕнче пулĕ-ха...»

— Халех чĕнсе килетĕп,— терĕм вара карчăка, хывса хунă çĕлĕке васкасах тăхăнса.— Тухтăр пекки пур манăн...

— Палланăскер-и?— Карчăк куçĕсем шанчăкпа çуталса илчĕç.

— Пит лайăх палланăскер!

— Апла пулсан, чуп, ывăлăм, чуп, тухтăрĕ киличчен эпĕ кунтан пĕр шит те уйрăлмăп. Ах, шел-çке, ачи ытла та лайăх, ытарма çук... Çăласчĕ епле те пулин!..

* * *

Амăшĕн чĕрине ыраттарас мар тесе, эпĕ Сережăна мĕн пулни çинчен ăна нимĕн те каламарăм. Юриех Сережа патне килнĕ пек пултăм.

— Çук-ха вăл, ирех тухса кайрĕ те çак таранччен те килмерĕ,— терĕç мана.

Эпĕ кăштах кĕтенçи пулса лартăм, унтан, амăшĕ кухньăналла тухсан, чӳрече умĕнче ним чĕнмесĕр ларакан Раиса Ивановна патне пырса ăна хам хыççăн тухма кăчăк туртрăм. Çенĕкре вара эпĕ Сережăна мĕн пулни çинчен хăвăрт-хăвăрт каласа патăм.

— Сирĕн хваттере эпир пит лайăх тасатса хăвартăмăр, анчах Сережăна амантрĕç... Атьăр, тархасшăн, часрах...

Раиса Ивановна пуçĕпе сулчĕ кăна.

— Эсĕ кай, эпĕ хамах пыратăп. Эмелсем илсе тухатăп...

— Амăшне мĕн каламалла-ши?

— Нимĕн те систермелле мар. Питех кирлĕ пулсан, ман патра, аманнă боецсем патĕнче, тейĕпĕр. Хамах калăп ăна. Чупар!

— Юрать. Тавтапуçах сире...

Аннепе аппа пăшăрханасран эпĕ темиçе минутлăха киле кĕрсе тухрăм та каллех Матвей Матвеич патне васкарăм. Нумай та мар, пĕр вунпилĕк минут хушши утрăм пулĕ эпĕ, анчах çав вăхăтра ман пуç çийĕпе хĕвелanăçнелле виçĕ хутчен совет штурмовикĕсем иртсе кайрĕç.

— Фрицсене хăвалаççĕ ĕнтĕ кусем...— шухăшларăм эпĕ. Çав вăхăтрах манăн мĕнпур вăйпа кăшкăрас килчĕ вĕсене:— Хăвалăр, хытăрах хăвалăр вăл ирсĕрсене, çунтарăр хытăрах!..

Эпĕ пынă çĕре Матвей Матвеич таврăннăччĕ. Ман çине вăл ыvăннă куçĕсемпе пăхса илчĕ.

— Мĕнле пулчĕ ку? Аçта?— пуçĕпе диван çинче выртакан Сережа еннелле сулса илчĕ вăл.

Эпĕ ăна ĕç мĕнле пулнине кĕскен кăна каласа кăтартрăм.

— Пуçĕпех урса кайрĕç, явăлсем,— терĕ Матвей Матвеич.— Пĕрин те этем чунĕ çук вĕт вĕсен... Анчах хăйсене те пит лайăх тивет-ха. Кунтан тухса кайнă ма-

шинăсем Андрошкин вăрманĕ витĕр çурри ытла тухайман.

— Мĕн пулнă вара унта?

— Мĕн пуласси — пулнă. Хăшĕ сывлăшалла сирпĕннĕ, хăшĕ çунса тĕтĕмпе кĕл пулнă. Питĕ лайăх.

— Партизансем тунă-и вара ăна?

— Хуть кам пулсан та çавах. Пĕр сăмахпа каласан, вырăс çыннисем тунă. Малашне вăл кăна та мар пулĕ-ха... Сирĕн ĕнер ĕç тухрĕ-и çав? Турăр-и мĕн те пулин?

— Пĕр машинине сиктертĕмĕр. Чăл-пар саланнă, юри кайса пăхрăмăр...

— Пирĕншĕн вăл та тупăш!

Матвей Матвеич шкап патнелле табак илме утса кайрĕ. Çав вăхăтра эпĕ вăл хытах уксахланине асăрхарăм. Ытти чух вăл нихçан та уксахламан, çавăнпа та эпĕ унтан:

— Сирĕн урăра мĕн пулнă вара?— тесе ыйтрăм.

— А-а, пустуй... Ним те пулман, ахаль çеç, мозоль,— аллипе сулчĕ старик.

Анчах вăл мана çавăн чух тĕрĕссине каламан. Кайран пĕлтĕм: ун умĕнхи каçхине Матвей Матвеич варманти партизансем патĕнче пулнă, тăшман машинисен колоннисене аркатмалли операцие хутшăннă. Çавăнта аманнă та вăл...

Кĕçех Раиса Ивановна çитрĕ. Сережăн суранне тĕплĕн пăхса, ăна тасатса çыхсан, вăл пире пурне те лăплантарчĕ.

— Хăрушши нимĕн те çук. Юн нумайтарах кайнă пулас, çав вăйсăрлатса янă ăна,— терĕ.— Пĕр-ик эрнерен иртсе каять!

Тепĕр çур сехетрен эпир Сережăна çунашка çине хутăмăр та килне туртса кайрăмăр.

— Эсир амăшне лайăххрах лăплантарăр,— вĕрентсе ячĕ Матвей Матвеич карчăкĕ.— Питĕ хĕрхенетĕп эпĕ

ана... Халь çеç пĕр ачине пытарчĕ, паян тата тепĕр хуйхă сиксе тухрĕ. Ытлашши ан хыпăнтăр...

— Ана пĕлетпĕр-ха,— терĕ Раиса Ивановна.

...Каç пулма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Урамсем пуш-пушахчĕ. Ниçта та пĕр сас та çукчĕ, эпир те ним чĕнмесĕрех утрăмăр. Кашнин хăйĕн шухăшĕсем пулнă-çке... Анчах сасартăк таçта инçетре аслати кĕмсĕртетнĕ пек сасă илтĕнсе кайрĕ. Малтан умлăн-хыçлăн икĕ хут, кăшт тăхтасан тата темиçе хут кĕрлесе илчĕ. Эпĕ тăпах чарăнса тăтăм.

— Раиса Ивановна, эсир нимĕн те илтместĕр-и?

— Çук-çке...— терĕ вăл.

— Лайăххрах итлĕр-ха. Аслати авăтать мар-и?..

Раиса Ивановна та ман пекех чарăнса тăрса итлеме пикенчĕ. «Аслати» сасси татах илтĕнчĕ. Пĕрре хытăрах, тепре вăйсăртарах, унтан каллех вăйлăрах.

— Пĕлетĕн-и, мĕн ку?— ман çинелле пăхрĕ Раиса Ивановна. Артиллери сасси вăл. Тупăсем переççĕ...

— Мана та çавăн пек туйăнать çав. Эпĕ йăнăшатăп пулĕ, терĕм те, çавăнпа итлеттертĕм сире.

— Йăнăшмалли нимĕн те çук кунта... Хĕлле аслати авăтмасть. Хĕрлĕ Çар килнине пĕлтерет ку, ачам...

* * *

Çав каçхине вара эпир çĕрĕпех çывăраймарăмăр. Ним тусан та ыйхă килмерĕ. Çĕр каçа сахалтан та пĕр пилĕк хут тула тухса итлерĕмĕр инçетри аслати пек сасса. Вăл сасă пирĕн кăмăлсене çав тери çĕклентерчĕ, хавхалантарчĕ, чĕресене хыттăн таптарчĕ.

Çăлăнăç килет!.. Ирĕклĕх, пурнăç, телей!..

Ир енне инçетри горизонтра, хура пĕлĕт чаршавĕ çийĕнче, унта та кунта пушар çуттисем палăрчĕç. Пĕр çĕрти сÿннĕ çĕре тепĕр çĕрте ялкăшма пуçлать.

— Çунтараççĕ, хурахсем,— терĕ Тамара.— Хăйсем пулнă çĕрте пушхир туса хăварасшăн...

— Пирĕн хулана та çунтарĕç-ши?

— Хамăр чараймасан — хыптарса яма та пултараççĕ çав.

— Мĕнле чармалла-ха вĕсене?

— Тивертме памалла мар. Сыхламалла. Хытă тămалла.

Кăна эпĕ ăнлансах çитеймерĕм. Аçтан пурне те асăрхаса çитерĕн? Пĕр-пĕр çурт çине тăшман бензин пырса сапать, шăрпăк çутса пăрахать те — кайрĕ вара... Анчах сыхлакансем пулнă иккен, эпĕ ăна пĕлмен.

Ирхине, апат çикелесенех, эпĕ Авдеевсем патне кайрăм. Сережа çывăратчĕ, анчах эпир Раиса Ивановкăпа пĕр-ик сăмах калаçса илсенех вăранса куçĕсене уçрĕ. Эпĕ часрах ун умне пырса тăтăм.

— Ну, мĕнле? Хытă ыратать-и? Питĕ йывăр-и?

Сережа пуçне пăркаларĕ.

— Çук, ытлашши мар. Хускалман чух питех сисĕнмест...

— Мĕнле пулнине астăватăн-и?

— Темле хĕрарăмпа иксĕр пўрте йăтса кĕртнĕ таран астăватăп, анчах киле мĕнле лекнине пĕлместĕп...— Вăл вĕри сывлăшпа кушаланнă тутине çулласа илчĕ те пуçне ман еннелле çавăрчĕ.— Хулара мĕнле? Фрицсем халь те тараççĕ-и?

— Темшĕн, питĕ шăп-ха паян. Тармаллисем тарса пĕтрĕç пулмалла.

Сережа куçĕсем сасартăк савăнăçлăн çутăлса илчĕç, сăнĕ çинче кулă палăрчĕ.

— Ĕнер Матвей Матвеич каларĕ... Андрошкин вăрманĕнче вĕсене партизансем шутсăр лайăх тўнкқенĕ, тет! Юлашки шинелĕсене пăраха-пăраха тараççĕ, тет...

— Çапла çав, ăна вăл мана та каларĕ. А эс пĕлетĕн-и тата...

— Мĕн?

— Тупăсем çывăхрах переççĕ. Ĕнертенпех кĕмсĕртеттереççĕ. Аслати пек!

— Чăнах-и?

— Ма суям-ха эпё сана? Çывăхрах ёнтё...

Сережа калама та çук савăнса кайрё. Темиçе самант хушши ним чёнмесёр, ққăмăллăн кулса выртрё те, тепёр хут манран:

— Çывăхрах эппин?— тесе ыйтрё.

— Çывăхрах...

— Кунта хăçан çитеççё-ши?

— Нумай тăмаççё пуль ёнтё!

Çак вăхăтра тултан Сережа амăшё кёчё. Вăл ывăлё патне пырса ăна пуçёнчен ачашласа илчё, сывлăхё çинчен ыйтрё. Хытă хуйхăрнипе унăн сăнё шурăхса кайнă, куçёсем путса ларнă. Ывăлёпе пёр-ик сăмах калаçса илсен, вăл ун çинчи утияла тӳрлетсе кухньăналла тухрё.

Раиса Ивановна мана аяккалла чёнсе илчё.

— «Лазарета» кайса пăхман пуль эс?

— Кайман,— терём эпё.

— Мёнле пурăнкалаççё-ши ёнтё вёсем унта?

— Пёлместёп çав. Çимелли-ёçмелли çителёклех панăччё те...

— Выçсах вилмёç-ха. Эс акă мён...— Раиса Ивановна сассине пусарчё.— Хулара кёç-вёç тем те пёр пуçланса кайма пултарать. Ăна сисмесёр юлмастпăр ёнтё. Вара эс тӳрех вёсем патне чуп та уçса кăлар. Пăшалсем ăçтине пёлетён вёт? Тупса пар.

— Юрё,— пуçпа сулса илтём эпё.— Халё йăпăртлăха Матвей Матвеич патне кайса килетёп-ха. Вăл мён калать тата...

* * *

Кун лăпкă иртрё. Хулара нимёçсем çук пекех туйăнчё, вёсем куçа та курăнмарёç, сасси те илтёнмерё. Тахçан-тахçан пёр-икё машина иртсе каять те, кайран каллех нимён те çук. Шăплăха пёр-икё хутчен хамăрăн самолетсем хускатрёç — хула çийёпе хёвеланăçнелле вёçсе иртсе кайрёç.

Анчах та ку тăвăл умĕнхи шăплăх евĕрлĕ пулнă. Қаçалапа артиллери кĕрлевĕ вăйланнăçемĕн вăйланчĕ, ку ĕнтĕ çапăçу пирĕн хула патнеллех çывхарса килнине пелтерчĕ. Тĕттĕмленсен, эпĕ юриех сарай тăрне хăпарса, чылай вăхăт хĕвелтухăçнелле пăхса лартăм. Малтан нимех те курăнмарĕ, анчах кайран унта та кунта тупăсенчен пенĕ çулăмсем вĕлт-вĕлт курăна-курăна кайрĕç. Тĕттĕмре йăлт-ялт! туса илеççĕ. Унтан пĕр харăс вуншар-вуншар хĕмлĕ вутпуççисем ыткăнма тытăнчĕç. Кусем — «катюша» снарячĕсем пулнă. Эпĕ, вĕсем çине пăхса, ниçта кайса кĕрейми савăнса лартăм...

Çав вăхăтра сасартăк ман хыçра калама çук вăйлăн кĕмсĕртетни илтĕнчĕ. Пĕтĕм çĕр, хула чĕтресе илчĕ. Хама тăруках сывлăш пырса çапнипе эпĕ чутах сарай тăрринчен персе анаттăм. Кĕç тепĕр взрыв пулчĕ, унтан тата, тата... Қаялла çаврăнса пăхрăм та — хула варринче ик-виç çĕрте пушар пуçланнине куртăм.

— Ак хайхи, пуçларĕç... Сиктереççĕ, çунтараççĕ...

Сарай тăрринчен мечĕк пекех йăваланса антăм та пӳрте ыткăнса кĕтĕм.

— Илтетĕр-и? Хула çунать!

Малтан пӳлĕмрен Тамара чупса тухрĕ. Вăл тумланнăччĕ ĕнтĕ, васкасах тӳмисене тӳмелетчĕ.

— Эс ăçта каятăн?— тесе ыйтма çеç ĕлкĕртĕм эпĕ, вăл тухса кайрĕ. Эпĕ ăна çенĕкре хуса çитрĕм.

— Ăçта каятăн?

— Қаймалли пур,— терĕ вăл татăклăн. Хăй çавăнтах мачча çине хăпарса анчĕ. Темскер илсе анчĕ пулмалла вăл унтан, анчах тĕттĕмре нимĕн те курăнмарĕ.

— Эпĕ те пыратăп!— тесе унăн çаннинчен ярса тытрăм.

— Ăçта?

— Санпа пĕрле, урама.

— Ан пыр! Вилессӳ килет-и?— кăшкăрчĕ вăл мана.

— Манăн та каймалли ĕç пур...

— Мĕнле ĕç тата вăл? Ан калаç кирлĕ мара! Кĕр пўрте!

— Матвей Матвеич хушрĕ мана...— Эпĕ чутах макăрса ятраттăм,— Хулара ун пек кун пек пуçлансанах подвалти боецсене кăларма каларĕ! Акă, уççи те манрах! Юри пачĕ!

— Ах, сана... Йăлăхтармăш!— Аппа кăшт тытăнса тăчĕ.— Чим эппин, аннене каласа тухам,—терĕ юлашкинчен.

...Урама чупса тухсанах, эпир унта та кунта пăшал сассисем кĕрслетнине, автоматсем тăкăртатнине илтрĕмĕр. Çав вăхăтрах хула варринчи çуртсем шăтăртатса, шартлатса çунчĕç. Çулăм, пĕлĕт патнеллех çĕкленсе хăпарса, урамсене кăнтăрлахи пекех çутатса ячĕ. Ансăртран тăшман куçĕ тĕлне пулас мар тесе, эпир хўмесем çумĕпе йăпшăнса, пĕшкĕнсе чупрăмăр. Эпĕ — малта, эппа—ман хыççăн. Сасартăк малта çынсем чупни курăнчĕ: вĕсем пĕр тĕттĕм тăкăрлăкран тухса теприне кĕрсе кайрĕç. Кăшт тăхтасан тата тепĕр ушкăн чупса тухрĕ. Пушар çуттинче лайăхах курса юлтăм — нимĕçсем мар, пирĕн çынсем пулнă. Вĕсем пурте пăшаллăччĕ. Паллах, вĕсем пурте халь пирĕн хулана çунтарма тытăннă фашистсене шыранă.

Раиса Ивановна пурăнакан кукăр урамалла пăрăнсаттăмăр кăна—таçта, пирĕн хыçра, тупă пенĕ сасă ухлатрĕ. Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе эпĕ кукленсех лартăм. Самантран тупă татах печĕ. Унтан тата, тата... умлăн-хыçлăн, çине-çине. Кĕç пулемет черечĕсем шăтăртатма пуçларĕç...

Хамăрăн «лазарет» вырнаçнă килхушшине эпир ухă йĕпписем пекех вăркăнса пырса кĕтĕмĕр. Эпĕ тўрех крыльца айĕнчен кĕреçе туртса кăлартăм та подвал алăкĕ умне тултарнă юра чавса аяккалла ывăтма тытăнтăм. Хамăн чĕре сиксе тухас пекех тапрĕ.

— Мĕнле пурăнкаланă-ши вĕсем ку кунсенче?—Анчах пуринчен ытларах мана боецсем ирĕке тухсан мĕн

тери савӑнасси хавхалантарчӗ: ҫакӑн чухлӗ пытанса пурӑн-ха!..

Эпӗ ывӑнма пуҫланине сиссен, кӗреҫене Тамара тытрӗ. Вӑл та ман пекех пӗтӗм вӑйран, ҫине тӑрса ӗҫлерӗ.

Ҫав вӑхӑтра ҫывӑхрах умлӑн-хыҫлӑн темиҫе хут тупӑ кӗрслеттерчӗ. Унччен те пулмарӗ—эпир тимӗр чӑнкӑртатнине, моторсем вӑйлӑн кӗрленине илтрӗмӗр.

— Танксем!—терӗ те Тамара, подвал алӑкӗ ҫумне пӗшкӗнсе ларчӗ.—Ӑҫтан килсе тухрӗҫ-ха вӗсем, хулара нимӗҫсен пӗр танк та ҫукчӗ-ҫке?

— Тен, халь килнӗ...— пӑшӑлтатса илтӗм эпӗ.

— Пулма пултараймасть! Хула патнелле килмелли пур ҫулсем ҫинче те пирӗн ҫынсем сыхлаҫҫӗ, ирттерсе яма пултарайман вӗсем...

Эпир ҫапла калаҫнӑ хушӑра татах танксем кӗмсӗртетни илтӗнчӗ. Каллех тупӑсем кӗрслетрӗҫ. Тамара хапха патнелле ыткӑнчӗ те танксем иртсе кайсанах каялла чупса пычӗ.

— Юрик, пирӗн танксем кусем!—чутах кӑшкӑрса ятратчӗ вӑл.—Пирӗн!..

— Ӑҫтан килсе лекчӗр вӗсем кунта?—ӗненмерӗм эпӗ.

— Килнӗ ҫав, килнӗ! Эпӗ хамӑр танксене нимӗҫ танкӗсенчен уйӑрма пӗлетӗп ӗнтӗ! Вӗсем ӑҫтан та пулин тавраран ҫаврӑнса килсе кӗнӗ пулмалла...

— Ой, апла пулсан лайӑх-ҫке!

— Атя, часрах кӑларар кусене...

Тамара каллех алӑк умӗнчи юра чавма тытӑнчӗ. Унтан эпӗ подвал алӑкне уҫнӑ-уҫманах:

— Сывӑ-и, юлташсем?—тесе кӑшкӑртӑм.—Тухӑр!..

Анчах мана хирӗҫ никам та чӗнмерӗ. Эпӗ алӑкран кӗтӗм те тӑпах чарӑнса тӑтӑм. Подвалта пӑч тӗттӗм, куҫран пырса чиксен те, нимӗн те курӑнмасть...

— Сывӑ-и, юлташсем?—ыйтрӑм эпӗ каллех.—Эпӗ ку, Юрка. Тухӑр, вӑхӑт ҫитрӗ!..

Ҫапла каласан тин малти кӗтесре кӑштӑртатнисем, хускалнисем илтӗнчӗҫ.

— Чăнах эсё-и ку, Юрий? — терĕ пĕр сасă.

— Эпĕ, эпĕ!

— Эх, тусăм! Мĕншĕн çав тери нумай кĕттертĕн эс пире?

Эпĕ сасăранах лейтенанта палласа илтĕм. Вăл тĕттĕм çĕртех ман паталла чупса пычĕ те мана хыпашласа тупса ыталаса илчĕ.

— Эпир вилме хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ.

— Мĕншĕн апла?

— Сире мĕн те пулин пулнă пуль те, эпир çак шăтăкран нихăçан та тухас çук пуль, тесе...

— Халь ĕнтĕ тухмалли вăхăт çитрĕ, тетĕп-иç! Пĕлетĕр-и, хулана хамăрăн танксем килсе кĕнĕ!

— Чăнах-и?!

— Чăн çав!..

Малашнехи ĕçсем вара çав тери хăвăрт пулса пычĕç. Хамăрăн туссене подвалтан илсе тухсанах, эпĕ вĕсене юр ăшне пытарнă нимĕç карабинĕпе автомачĕсене кăларса патăм. Вĕсем, хĕçпăшал пирки тунсăхласа çитнĕскерсем, каççах кайрĕç вара. Тӳрех затворсене, обоймăсене тĕрĕслерĕç, пĕр-икшер хут сывлăшалла перепере пăхрĕç.

— Ну, куншăн сана нимрен те ытларах тавтапуç! — терĕ лейтенант хавассăн. — Халь ĕнтĕ эпир каллех çын шутне кĕретпĕр. Халь ĕнтĕ эпир...

Вăл каласа та пĕтерейменрĕ — урамра, сулахай енче, сасартăк автомат сассисем илтĕнчĕç. Такам хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Тытăр вĕсене, тытăр! Ав тараççĕ, авă! Тытă-ăр!.. Татах автомат шатăртатрĕ те, пульăсем пирĕн çывăхрах чăк-чăк! чăк-чăк! турĕç. Пĕрисем хапхана, теприсем пӳрт кĕтессине пырса çапăнчĕç. Эпир ирĕксĕрех чул стена çумне йăпшăнтăмăр... Çакăн хыççăн çур минут та иртмерĕ пулĕ—калинкке шант! туса уçăлса кайрĕ те, урамран килхушшинелле виçĕ çын вăркăнса кĕрсе, пахча

еннелле тапса сикрĕç. Вăрăм лăпсăркка тумсемпе, пуçĕсенче те çĕлĕк, те тутăр — ăнланма пулмарĕ.

— Фашистсем!—тăрук кăшкăрса ячĕ пирĕн лейтенант. Çавăнтах вĕсем хыçĕнчен автомачĕпе тĕллесе вăрăм черет кăларса ячĕ. Тахăшĕ пусса çитереймен сысна пек çухăрса илчĕ. Лейтенант пахчаналла ыткăнчĕ. Ун хыççăн салтаксем те чупрĕç, эпир те юлмарăмăр.

Автоматсем умлăн-хыçлăн çунтара-çунтара илчĕç. Темиçе самант хушшинче вара виçĕ фашисчĕ те тирпейленчĕç...

— Ĕçе пит аван пуçларăмăр-ха,—терĕ лейтенант, вĕсен виллисене урипе тĕрте-тĕрте пăхса.

— Малашне те çакăн пекех пултăрччĕ,—хушса хучĕ пĕр боецĕ.

— Урăхла пулма та пултараймасть,—ответ пачĕ ăна лейтенант.—Ниçта та пытанаймĕç вĕсем пирĕнтен, çĕр тĕпĕнчен те туртса кăларăпăр, пĕлĕт çинчен те çапса антарăпăр!..

* * *

Кайран мĕн-мĕн пулни çинчен йĕркеллĕн каласа пама питĕ хĕн.

Эпир урама тухнă чух пĕтĕм хулипех çапăçу кĕрлетчĕ. Пуринчен ытла хула варринче вăйлă пулнă вăл. Хулана пирĕн танксем сасартăк пырса кĕнипе ниçталла тарса ўкеймен фашистсем хулăн стеналлă чул çуртсене, чиркўсене вырнаçса хирĕç тăнă. Вĕсем ниепле те парăнасшăн пулман, çавăнпа та вĕсене тĕрлĕ майсемпе çунтарса, тĕтĕрсе кăларма тивнĕ. Юлашкинчен, хирĕç тăмалли майсем пĕтсе çитсен, фрицсем тĕрлĕ çĕрелле тарса хăтăлма пикеннĕ, анчах усси сахал пулнă, мĕншĕн тесен вĕсене кашни утăмра тенĕ пекех пирĕн танксем çине ларса килнĕ салтаксем е партизансемпе хула çыннисем пере-пере антарнă...

Пирĕн пĕчĕк ушкăн та ăнсăртран йĕркеленнĕ пĕчĕк боевой подразделени пекки пулчĕ. Лейтенантпа манàн

аппа ертсе пынипе эпир пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçрă-мăр, нимĕçсене ăçта тупма май килнĕ — çавăнта шакка-рăмăр. Уйрăмах пирĕн хулари телеграф патĕнче ĕç питĕ ăнăçлăн пулса иртрĕ. Фашистсем кунта сарлака крыль-ца çине вырнаçнă пулнă та, чул карлăксем, колоннăсем хыçне пытанса, пур еннелле те персе тăнă. Вĕсен çывăхне пыма ниепле те май килмен. Хăйсене атакăлама пикене-кенсене вĕсем çавăнтах çулса тăкнă. Аппа вара, вăрçă-ччен телеграфра ĕçленĕскер, пире темле килхушшисем витĕр, хӳмесем урлă телеграф çурчĕн хыçне илсе пычĕ. Кунта пушар пусми пулнă-мĕн. Эпир çавăн тăрăх çурт тăррине хăпартăмăр та крыльца çинчи фашистсене ик енчен вĕтрéмĕр кăна. Шăпах пулчĕç!..

Нумай фашистсем пурнăçпа сывпуллашрĕç вăл каç. Чĕрĕ юлнисене ирхине пухрĕç. Хăшне подвалтан, хăшне нӳхрепрен, хăшне çӳп-çап шăтăкĕнчен туртса кăлараççĕ. Кăмакана, питлĕх хыçне кĕрсе, пытаннисем те пулнă вĕт! Пĕр виççĕр çын ытла тупнăччĕ пĕтĕмпе.

Анчах эпĕ кăшт маларах иртсе кайрăм-ха. Фашист-сем тул çутăласпа хирĕç тăма пăрахрĕç. Унта-кунта уй-рăм винтовка сассисемпе автомат черечĕсем çеç илтĕне-кен пулчĕç. Часах хула варринчи каланча çинче темĕн пысăкăш хĕрлĕ хăмач ялав мăнаçлăн ялкăшма тытăнчĕ. Ку ĕнтĕ пирĕн хулана каллех совет влаçĕ таврăннине, Гитлер хурахĕсен пусмăрĕ пĕтнине пĕлтерчĕ...

Эпир вăл вăхăтра вăрçăччен хам вĕреннĕ шкулăн иккĕмĕш хутĕнче чӳрече витĕр пăхса тăраттăмăр.

— Урра, юлташсем!—алă çупса кăшкăрса ячĕ Тама-ра, ялава пуринчен малтан асăрханăскер.—Тинех кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ! Тинех!..

— Çук-ха, çитмен,—сасартăк пӳлчĕ ăна лейтенант.—Çитмен...

— Епле çитмен?—тĕлĕнчĕ аппа.—Ялава курмас-тăр-им?

— Куратăп,—терĕ лейтенант,—анчах та вăл сирĕн

хула çинче кăна-çке. Лере...—вăл аллипе хĕвеланăçнелле кăтартрĕ,—лере çакăн пек хĕрлĕ ялавсăр хуласем мĕн чухлĕ? Мĕн чухлĕ совет çыннисем çакăн пек ялава ирĕклĕн ялкăштарасси çинчен, фашистсен пусмăрĕнчен хăтăлассi çинчен ĕмĕтленеççĕ?

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ,—килĕшрĕ аппа,—нумай вĕсем...

— Çавăнпа та эпир халех «ĕмĕт çитрĕ» теме пултараймастпăр-ха. Пирĕн ĕмĕт — пĕтĕм совет çĕршывне усал тăшманран тасатасси, тăшмана пуçĕпех çапса аркатасси. Хăçан та хăçан Берлина çитсе фашистсене хăйсен йăвинчех аркататпăр—çавăн чух ĕмĕт тулать пирĕн...

Лейтенант кăкри умĕнче çакăнса тăракан автоматне тӳрлетрĕ те салтаксем çине пăхса илчĕ.

— Атьăр, юлташсем, аслăрах командирсене кайса тупар. Кĕçĕр эпир партизанла çапăçрăмăр, анчах эпир— Хĕрлĕ Çар воинĕсем, пирĕн пĕр-пĕр чаçра пулмалла. Çи-пуççене йĕркене кĕртĕр...—Унтан вăл ман еннелле çаврăнса тăчĕ.—Ну, Юрик, сывă пул... Эпир сире мĕнле тав тумаллине те пĕлместпĕр ĕнтĕ, тупата. Тен, сывă пулсан, хăçан та пулин тĕл пулăпăр. Эпĕ сана хамăр пата, Атăл çине хăнана илсе кайăп. Кимĕпе ярăнса çӳрĕпĕр, пулă тытăпăр, сунара кайăпăр. Чаплă Чапай ӳснĕ вырăнсене кăтартăп сана... Сывă пул, паттăр пулса ӳс!

Вăл мана мăйран ыталаса питçăмартинчен чуптурĕ. Манăн кăштах куççем шывланчĕç.

— Телей пултăр сире! Ан манăр эппин...

* * *

Эпĕ кунтан тӳрех Авдеевсем патне чупасшăнччĕ, Сережа çинчен пĕлес, ăна хулара кĕçĕр мĕн пулни çинчен каласа парасшăнччĕ, анчах аппа мана ним тусан та ямарĕ.

— Киле каймалла халь, киле,—терĕ вăл çирĕппĕн.— Анне тем пекех пăшăрханать пулĕ-ха, ăна лăплантарас пулать...



10. Л. Я. Агаков.

Ирĕксĕрех итлемелле пулчĕ.

«Ҫайран тӳрех Сережа патне каятăп», шут турăм эпĕ.

Урамсенче пур ҫĕрте те каҫхи ҫапăҫу йĕрĕсем палăратчĕҫ. Кунта темиҫе фашист вилли выртать, лере снаряд ӳксе ҫурăлнипе пысăк шăтăк пулнă та — таврари юр хăрăмпа витĕннĕ, тепĕр ҫĕрте ванчăк пулемет хăяккăн выртать... Тăшмансем сиктерсе янă ҫуртсем халĕ те йăсăрланаҫҫĕ-ха, пур ҫĕрте те ĕнĕк шăрши кĕрет... Анчах кунпа пĕрлех хула пирĕн алла куҫни те кашни утăмрах курăнать. Акă, шур халатсем тăхăннă, аллисене автоматсем тытнă салтаксем тыткăна лекнĕ фашистсен пысăк ушкăнне хăваласа пыраҫҫĕ, нимĕҫсен комендатури пулнă ҫурт умĕнче кухня йăсăрланма тытăннă, шурă сапунлă повар ҫĕнтерӳҫĕсене апат ҫитерме хатĕрленет, телеграф тĕлĕнче танксем йĕркеленсе тăраҫҫĕ, вĕсем патĕнче хура шлемлă танкистсем тăрмашаҫҫĕ,—машинăсене тĕрĕслеҫҫĕ пулас.

Ҫаланча тăрринчи хăмач ялав ирхи хĕвел ҫуттинче ҫулăм пек ялкăшать.

Эпир Тамарăпа иксĕмĕр хамăрăн килхушшине кĕретпĕр.

Алăк сассине илтсенех, пире хирĕҫ анне чупса тухать. Вăл ҫав тери савăнăҫлă, куҫĕсем ăшшăн йăлтăртатаҫҫĕ, тутисем ҫинче — кăмăллă кулă.

— Епле савăнăҫ, ачасем, епле пысăк савăнăҫ!..—тет вăл.—Кĕрĕр-ха часрах пӳрте! Эсир ним те пĕлместĕр-ха вĕт...

Эпир анне мĕншĕн ҫав териех савăнса кайнине чăнах пĕлместпĕр, анчах та ун хыҫҫăн малти пӳлĕме кĕрсе тăрсанах, вăл пирĕншĕн паллă пулать. Сĕтел хушшинче, кивĕ кресло ҫинче, пирĕн атте ларать — хулăн гимнастеркăпа, ваткăллă шăлаварпа, ҫăматăпа, пиҫиххийĕ ҫумĕнче пистолет, кăкри ҫинче Хĕрлĕ Ҫăлтăр орденĕ.

— Атте... Атте!— пĕр харăсах кăшкăрса ятăмăр та эпир, Тамарăпа иксĕмĕр, ун патнелле ыткăнтăмăр.

Атте пире чуптăвать, пуçсенчен ачашлать, хăй çумнелле пăчăртать.

— Ах, геройсем, ах, ылтăнăмсем!..

Ытла та савăнса кайнипе пирĕн тăруках сăмах та тупăнмасть. Атте пире çаплах ачашлать-ха. Унтан, пирĕн куçсенчен тинкерсе, кăмăллăн пăхать те:

— Эсир те çапăçатăр эппин?—тесе ыйтать.

— Çапăçатпăр,—тетĕп эпĕ.

— Маттур, питĕ маттур!

— Эпир Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшрăмăр...

— Каларĕ-ха аннӳ... Чылай ĕçсем тукаланă, тет, эсир.

Эпĕ аттерен хăй çинчен ыйтма тытăнатăп. Анчах вăл ытлашши нимех те каламасть. Пĕрмай çапăçусенче пулнă, аманса та курнă, кĕçĕр хамăр хулана танковăй десант командирĕ пулса килсе кĕнĕ, каллех çапăçнă.

— Орденне мĕншĕн панă сана?

— Çапăçнăшăн, ывăлăм, фашистсене тӳнккенĕшĕн...

— Халь кăштах килте пурăнатăн-и?

— Çук, юрамасть. Пирĕн тăшмансене часрах хĕвеланăçнелле хăваламалла. Хамăрăн çĕре вăл çĕлен-калтасенчен часрах тасатмалла.

— Паянах каятăр-и вара?

— Тепрер сехетренех каятпăр.

Манăн аттепе уйрăлас килмест, анчах эпĕ вăл тĕрĕс каланине пĕлетĕп, ăнланатăп: килте ларма юрамасть...

Анне васкасах апат хатĕрленĕ хушăра атте мана хамăр мĕнле пурăнни çинчен калаттарать. Эпĕ каланă май вăл мана мухта-мухта, çурăмран лăпкаса илет.

Çав вăхăтра пирĕн килхушшине темле çынсем пырса кĕчĕç. Пĕри пӳрт алăкĕнчен шаккарĕ.

— Кĕрĕр!—сас пачĕ кухньăри анне.

— Пирĕн Репкин капитана курасчĕ,—терĕ кĕнĕ çын.

— Иртĕр, малта вăл...

Питĕ тĕлĕнсе кайрăм вара эпĕ: пирĕн аттене ыйтаканни хайхи эпир хамăрăн «лазаретра» усраса сыватнă

лейтенант. Вăл аттене саламларĕ те хăйне калаçма ирĕк ыйтса илчĕ. Унтан хăй çинчен пĕлтерчĕ:

— Лейтенант Петров. Аманнă пирки тăшман аллине лекнĕччĕ. Совет патриочĕсем пытарса усраса сыватрĕç. Манпа пĕрле тата икĕ салтак пур. Кĕçĕр урамри çапăçура пултăмăр. Халĕ сирĕн подразделенине йышăнма ыйтатпăр...

Атте тӳрех ман çине пăхса илчĕ.

— Çаксем çинчен каларăн-и эсĕ пасăр?

— Çавсем çинчен,—терĕм эпĕ, темшĕн хĕрелсе кайса.

— Питĕ аван апла пулсан...

Атте лейтенанта ларма хушрĕ, ун çинчен ыйткаласа пĕлчĕ те — ăна та, леш салтаксене те хăй патне йышăнма пулчĕ. Унтан пĕчĕк хут çырса пачĕ.

— Манăн старшинана кайса парăр, вăл сире списока кӳртĕ, апат-çимĕç парĕ.

— Есть!—терĕ лейтенант.—Пысăк тав сире, юлташ капитан! Ку телейлĕ саманта эпир нумай кĕтнĕччĕ. Тинех ĕмĕт тулчĕ...

— Хам та савăнатăп сирĕншĕн,—тесе ал пачĕ ăна атте.—Эсир примерлă та паттăр воинсем пуласса шанатăп.

— Ун çинчен сăмах та çук,—кулса илчĕ лейтенант.— Çакăн пек тарăхса пурăннă хыççăн тем тума та хатĕр эпир. Епле пулсан та, Берлина çитетпĕрех!

— Тĕрĕс, юлташ. Çитетпĕр,—терĕ атте.

* * *

Тепĕр икĕ сехетрен эпир аттене ăсатрăмăр.

Малалла, хĕвеланăçнелле ăсатма хулари пĕтĕм халăх пухăнчĕ. Темле, хăй тĕллĕнех митинг пулса тăчĕ. Пĕрин хыççăн тепри тухса ăшă сăмахсем каларĕç, хамăра ирĕке кăларакансене саламласа тав турĕç. Хĕрлĕ Çар воинĕсен ячĕпе ман атте хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

— Тăван çĕршыва фашист ирсĕрĕсенчен тасататпăрах, çĕнтерӳ пирĕн пулать!..—терĕ те вăл юлашкинчен, пĕтĕм сывлăша виçĕ хутчен хăватлăн «урра» кăшкăрни чĕтретсе илчĕ.

Унтан машинăсем тапранса кайрĕç...

Урамри пĕтĕм халăх, вĕсем куçран çухаличченех хыçалтан пăхса, алăсемпе сулса тăчĕ. Çав вăхăтра ман çумма Матвей Матвеич пырса тăнă пулнă. Вăл мана хуллен кăна çурăмран лăпкаса илчĕ те:

— Ну, рабочи класс, халь мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? Ĕçе кӳлĕнетпĕр пулĕ? Пурнăçа юсама тытăнас пулать вĕт?—тесе ыйтрĕ.

— Паллах, тытăнатпăр,—ответ патăм эпĕ çирĕппĕн.

— Ыранах ĕçе пыр эппин...

— Юрать. Пыратăп.

Эпир пĕр-пĕрне алă парса хыттăн чăмăртарăмăр. Çакă вăл эпир малашне хамăрăн çĕнтерӳшĕн, хамăрăн телейшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса, вăйя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕррине палăртса çирĕплетрĕ.

Тепĕр ирхине ирех эпĕ ĕçе тухрăм. Фашистсен пусмăрĕ вăхăтĕнче сывă юлнă ытти рабочисем те пычĕç. Пирĕн ĕнтĕ пĕтĕм производствăна çĕнĕрен пуçласа ямалла пулнă, анчах та ку пире пĕртте хăратмарĕ, савăнтарчĕ кăна.





# Ылтăн вăчăра



«Ялти 198 çынран 15 çулхи
арçын ача çеç çăлăннă...»
(Акт)

I

...Ял парăнмарĕ. Нимĕç фашисчĕсем килсе кĕнĕрен вара çулталăк та ытла иртрĕ, вĕсем кашни кун, кашни сехетре тенĕ пекех хăрушă та тискер ĕçсем турĕç, темĕн тĕрлĕ приказсем кăларса халăха тăтăшах хăратса тăчĕç, анчах та ял пурĕпĕрех парăнмарĕ. Совет çыннисем ютран килнĕ кăвак-симĕс шинеллĕ хурахсенчен хăраса ӳкмерĕç, вĕсен умĕнче пуçĕсене таймарĕç, темĕнле хĕнхур тӳсмелле пулсан та, ирĕклĕх сывлăшĕ вĕсен кăкрисенчен тухса сирĕлмерĕ, тăшмана нихçан та парăнас çук кăмăлĕ пĕтсе лармарĕ.

Ĕнтĕ темиçе хутчен те яла карательсен отрячĕсем пыра-пыра çаратса тухрĕç. Қашни пымассеренех кама та пулин е вĕлерсе, е ним пĕлми пуличчен хĕнесе хăварчĕç, е тытса кайрĕç. Тытса кайнисенчен пĕри те каялла таврăнмарĕ,—чылай вăхăт иртсен тин вара вĕсене хулари тĕрме хыçĕнче персе пăрахни е çыннисем асапсене тӳсеймесĕр вилни çинчен хыпар килсе çитрĕ.

Қу та хăратаймарĕ. Малтанхи пекех, ял çыннисем çывăхри вăрмансенчи партизансемпе куллен çыхăну тытса тăчĕç, вĕсене мĕнпе май килнĕ—çавăнпа пулăшрĕç, партизансем хăйсем пырса тухсан, çăткăн тăшмансенчен пытарса усранă апат-çимĕçсене парса ячĕç.

Урăхла пулма та пултарайман çав. Қашни килтен,

кашни çемьерен тенĕ пекех, кам та пулин партизанра çӳренĕ. Килтисем урлă вĕсем тăшмансен кашни утăмнех пĕлсе тăнă. Çавна пула партизансем фашистсене пачах та кĕтмен çĕртен, сасартăк, çĕр айĕнчен сиксе тухнă пек тухса çапа-çапа, питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Пĕринче колхозниксен тыррине çаратса кайма тиенĕ обоза тапăнса туртса илнĕ, тепринче çамрăксене Германие каторгăна илсе кайма пынă «уполномоченнăйсене» тытса çавăнтах пĕтерсе тăкнă, виççĕмĕшĕнче—яла халь çеç пынă çĕнĕ коменданта, ăшă вырăнĕ çинченех сĕтĕрсе тухса, ял хыçĕнче персе пăрахнă.

Пит те хăюллă, тĕлĕнмелле паттăр пулнă кунти партизансем. Çамрăккисем час-часах каçхине яла пырса урам тăрăх купăспа юрласа иртме те шикленмен. Хăйсем хăраманнине, усал тăшмана нихçан та парăнас çуккине, ăна хамăрăн тăван çĕршывра пурăнма парас çуккине палăртса, фашистсенчен çав тери тăрăхласа юрланă вĕсем. Иксĕлми вăй, никам сӳнтерейми çулăмлă хастарлăх янăранă вĕсен вичкĕн юррисенче...

Нимĕçсем ку яла «партизансен йăви» теме тытăннă. Каярахпа вĕсем унта пыма та хăракан пулса çитнĕ. Вăхăтран вăхăта çеç кунта отрядсем пырса юлашки выльăхсене, чăх-чĕпсемпе хур-кăвакала, çĕр айĕнчен чавса кăларнă тырпулсене сăптăрса тухнă. Анчах та ку ялта çĕр каçма нихçан та юлман,— мĕн май килнине çаратнă та çийĕнчех каялла тухса кайнă.

Пуринчен ытла Гитлер хурахĕсене ял хыçĕнчи вăрман хăратнă. Пысăк пулнă вăл вăрман — çӳлĕ, çăра, тĕттĕм, çын пĕр икçĕр метр шалалла чупса кĕрсенех, ăна кунта никам та тупма пултарайман. Ку вăрмана пырса кĕме фашистсем пĕрре те хăяйман. Яла çаратмаçĕмĕрме пырсан, пĕрисем пӳртсемпе кĕлетсенче, нӳхрепсенче ухтарса çӳренĕ, теприсем, çав вăрман еннелле шултра калибрлă пулеметсем лартса, унтан партизансем сиксе тухасран сыхласа тăнă. Вăрă яланах шикленет вăл!

Анчах капла туни те пулăшман фашистсене. Пĕринче, вĕсен отрячĕ яла пырса кĕрсен, ял çыннисем ун çинчен партизансене питĕ хăвăрт систерме ĕлкĕрнĕ те, лешсем вара, вăрмантан вăрттăн çулсемпе тухса, тăшмансене сасартăк хыçалтан, пачах кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Кĕске кăна çапăçу хыççăн фашистсем ялта çаратса тултарнă пурлăха çеç мар, хăйсен лашисене те, хĕçпăшалĕсене те пăраха-пăраха тарнă. Вăтăр ытла тăшман салтакĕ партизансен аллине тыткăна лекнĕ.

Çакăн хыççăн яла пĕр-икĕ уйăх хушши нимĕç шăрши те пырса кĕмен.

Пурте лăпланнă пек пулнă. Ял пурнăçĕ вăрçăчченхи майлах шуса пынă. Нимĕçсем çĕре килĕрен валеçме хушнă, анчах та ял çыннисем пурпĕрех ĕлĕкхи пек колхозпа ĕçленĕ; нимĕçсем староста уйăрса лартнă пулнă, анчах лешĕ Совет влаçне юрататакан çын пулнă та колхоз председателĕ вырăнне пулса ĕçленĕ, колхозниксене хăйсен пурлăхне фашистсем çаратасран тĕплĕрех пытарма вĕрентнĕ. Партизансем кăнтăр кунĕнчех пыра-пыра кайнă, вĕсем ял çыннисем хушшинче совет хаçачĕсене салатнă, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен çĕнĕрен те çĕнĕ хыпар пĕлтерсе хаваслантарнă.

— Часах хăтăлатпăр ĕнтĕ Гитлер йыттисенчен,— тенĕ вĕсем.—Совет полкĕсем кулленех хĕвеланăçнелле килеççĕ!..

Çынсен чĕрисенче çак хăрушла пусмăрпа мăшкăлран çăлăнса тухас шанчăк ӳссе, çирĕпленсе пынă, çамрăксем тулли кăкăрпах совет юррисене юрланă...

Фашистсем унта та кунта калама çук тискер ĕçсем туни, çаратни, çĕмĕрни, вĕлерни, çунтарни çинчен куллен илтĕнекен хыпарсем çеç асăрханарах пурăнтарнă. Ял варринчи кивĕ чиркӳ тăрринче кунĕн-çĕрĕнех икĕ-виçĕ çын хуралласа тăнă. Хăш енчен те пулин нимĕçсем çывхарнине курсанах, вĕсен чан вырăнне çакнă пушă снаряд стаканĕсене çапса, пĕтĕм яла систермелле пулнă. Карательсем ытла тăрук пырса кĕресрен уй хапхи хы-

çĕнче кашни каçах пĕренесемпе хăмасенчен, кивĕ сӳресенчен чăрмавсем туса лартнă, унта та кунта шăтăксемпе канавсем чавса пĕтернĕ. Çĕрле урамсем тăрăх патрульсем çӳренĕ.

— Утрав çинчи пекех пурăнатпăр, тупата!—тесе калаçнă ял çыннисем пĕр-пĕрин хушшинче.—Йĕри-таврра тăшман асать, анчах эпир парăнмастпăр-ха, пурăнатпăр... Тен, Хĕрлĕ Çар хамăр пата килсе тухиччене хçапла тытăнса тăма пултарăпăр?..

Ку ĕнтĕ пурне те çав тери çĕклентерсе вăй паракан ĕмĕт пулнă, анчах та вăл ытла нумаях пырайман çав, унăн сасартăк татăлмалла пулнă...

## II

...Вăл кун чиркӳ тăрринчи хуралта вунпилĕк çулхи Ванюшка Долбинпа унăн улттăмĕш класра вĕреннĕ чухнехи тусĕ Илька Кузин тăнă. Çанталăк калама çук аван пулнă,—июль уйăхĕнче хĕвел пит те пархатарлăн пăхса тăрать вĕт-ха,—таврара пур ӳсентăран та илемлĕн ешернĕ, чиркӳ пахчинче кайăксем чĕвĕлтетнĕ.

Питĕ лăпкă, шăп пулнă ĕнтĕ таврара, çав тери! Яла фашист таврашĕсем тахçантан варах хăйсен сăмсисене те килсе кăтартман пирки ачасем халь вĕсем çинчен шухăшламан та. Ытахальрен тенĕ пек, сайра хутра çеç вĕсем хăйсен ялне виçĕ енчен пырса кĕрекен çулсем çине пăхкаласа илнĕ. Çулĕсем çинче пĕр чĕрчун та курăнман, икĕ еннипе ӳссе ларнă çӳлĕ мăян çеç вăрахăн хумханкаланă.

Малтан, поста тăрсанах, туссен калаçкаламаллисем тупăнкаларĕç,— вĕсем пĕр-пĕрне хăйсем çак кунсенче унта-кунта илтнĕ хыпарсене пĕлтерчĕç.

— Михайловка станцийĕ патĕнче пирĕннисем каллех нимĕçсен поездне çырмана сиктернĕ,—терĕ Илька.—Утмăл вакун турпас пулса выртнă.

— Кам каларĕ?

— Ĕнер каçхине вăрмантан пичче килсе кайрĕ...

— Тур патăр,—терĕ Ванюшка хăй аслашшĕ сăмахĕпе.—Хăçан пулнă вăл?

— Виçĕмкун.

— Ĕнер мĕн пулнине пĕлетĕн-и тата?

— Пĕлместĕп.

— Пурнăçран юлатăн апла. Нимĕçсен Михайловка станцинчи склачĕсем пĕри те юлман вĕт!

— Ķам каларĕ?

— Кĕçĕр кукка килсе кайрĕ.

— Хăçан аркатнă тет?

— Ĕнер каç. Хамăр самолетсем килсе тĕпĕртеттернĕ. Пĕр сехет хушши вĕçрĕç, тет, станци çинче, сахалтан та пĕр çĕр бомба пăрахрĕç пулĕ, тет. Склачĕсем çĕрĕпе çуннă, тет.

— Ай-яй, ăшă пулчĕ пуль!—кулса илчĕ Илька хаваслăн.

— Мĕн каласси пур!..

— «Немуйсем» пушшех ураççĕ ĕнтĕ.

— Ахаль те кашкăрсем пекех хăтланаççĕ-ха. Абрамовкăра, ав, ыйткаласа çӳрекен икĕ пĕчĕк хĕрачана çакса хунă, тет. Сăлтавсăр-мĕнсĕрех. Партизансен разведчикĕсем пек туйăннă, тет, вĕсем пĕр фрицне. Тытнă та çакнă вара.

— Эх, тискерсем!..

— Эпир çеç çак кĕтесре хăтăлкаласа пурăнатпăр.

— Партизансем-çке... Вăрман çывăх тата пирĕн. Çав çăлать.

— Çапах та, пĕрре-пĕрре килсе тухаççех-ха вĕсем пирĕн пата. Пĕркунне ĕнселесе янине манас çук вĕсем. Эпĕ ун чухне те хыççăнах йăтăнса килеççĕ пуль, тенĕччĕ те — темĕнле иртсе кайрĕ...

Ванюшка каллех чиркӳ тăрринчен аялалла, ял тавра сарăлса выртакан ула-чăла хирсем çине, кăвакрах сарă хăюсем евĕрлĕ курăнакан çулсем çине пăхса илчĕ.

— Сыхă пулас пулать. Халь фрицсем хăйсен умĕнче ытларах айăпа кĕнĕ ялсене—ну ĕнтĕ, хирĕç тăраканнисене—тĕпĕ-йĕрĕпех, ним юлмиччен çунтарса яма тытăннă, тет.

— Урăххине ан кĕт ĕнтĕ вĕсенчен...—тарăнăн сывласа илчĕ Илька.—Эх, хăçан хăтăлăпăр-ши ку хурахсенчен!.. Çав тери чĕре ыратать. Тепĕр çур çул е çулталăк хушши вĕсен айĕнче пурăнма тӳр килсен, тупата, тӳсейрес çук...

— Ан кулян, кĕтмелли ытла нумай юлмарĕ ĕнтĕ,—лăплантарма тăрăшрĕ ăна Ванюшка.—Акă, вуласа пăхха çакна...

Вăл кĕсйинчен тирпейлĕн хутлатса хунă хут татки кăларса тыттарчĕ.

— «Вести с Советской Родины»,— вуларĕ те Илька вăрахăн, тусĕ çине тĕлĕнерех пăхрĕ:—Ăçтан тупрăн?

— Кукка парса хăварчĕ. Пĕтĕмпех вуласа тух, унта пурин çинчен те питĕ лайăх каласа панă...

Илька каçса кайсах вулама тытăнчĕ. Листовкăна вуланăçемĕн унăн сăнĕ савăнăçлăн çутăлса пычĕ, куçĕсем ялкăшма тытăнчĕç.

Сывлăх енчен Илька имшерккерех ача. Унăн ашшĕне нимĕçсем персе пăрахнă, амăшĕ нумаях пулмасть килте чирлесе вилнĕ. Халь вăл питĕ хуйхăрса, салхуланса çӳрет.

— Совет влаçĕ таврăнсанах аптрамăттăм га-ха,—тет вăл,—сывлăха та тӳрлетĕттĕм, вĕренме те кайăттăм, çын пулнă пулăттăм...

Анчах халĕ ун умĕнче, ытти пур ачасенни пекех, ниçталла каймалли çул та пулман. Малашне мĕн тăвассине те пĕлмен вăл. Унăн кăмăлĕ хуçăлнăçемĕн хуçăлса пынă. Ванюшка ăна питĕ хĕрхеннĕ, вăл ăна пур чухне те йăпатма, унăн кăмăлне яланах мĕнле те пулин çĕклентемре тăрăшнă.

— Кĕçех Хĕрлĕ Çар кĕрлеттерсе çитет акă,—тенĕ Ванюшка,—ун чухне пĕтĕмпех улшăнать, пурнăç çăмăл-

ланать, çимелли те пулать, больницăсем те уçăлаççĕ... Сывалатăн эсĕ, каллех шкула çӳреме пуçлатпăр... Чăтас пулать ĕнтĕ унччен!

Халĕ те, Илька кăмăлне çĕклес шутпа, вăл ăна совет самолечĕсем килсе пăрахнă листовка тыттарчĕ. Листовкăна вуласа тухни чăнах та çĕклентерчĕ чирлĕ ачана.

— Аван!—терĕ вăл, Ванюшка çине темĕнле ырă та ăшă куçĕсемпе пăхса.—Çав тери аван!.. Пирĕннисем фашистсене Сталинград патĕнче темĕн чухлех пĕтернĕ иккен! Халь те кулленех çĕмĕреççĕ вĕсене, э? Хĕçпăшал та йышлансах пырать иккен пирĕн...

— Каларăм вĕт сана, ик-виçĕ уйăхран пирĕннисем кунта пулаççĕ, тесе.

— Хăвăртрах килччĕрччĕ,—каллех ассăн сывласа илчĕ Илька.—Курасчĕ вăл телейлĕ куна... Епле пулсан та курасчĕ!

— Куратпăр!—терĕ Ванюшка татăклăн.—Шансах тăр. Епле телейлĕ пурнăçпа пурăнăпăр-ха акă эпир санпа, ытармалла мар пулĕ!..

Илька чĕнмерĕ. Вăл çав пулас телейлĕ пурнăç çинчен ĕмĕтленсе шухăша кайса ларчĕ... Чылайранпа тин хуллен кăна сăмах хушрĕ:

— Пĕлетĕн-и, Ванюшка...—терĕ вăл,—юлашки вăхăтра эпĕ час-часах тĕлĕкре хамăрăн салтаксене, красноармеецсене куратăп. Вĕсем пирĕн патра пĕр фашист та хăварман, пурне те хăваласа янă пек... Пĕррехинче тата хамăрăн аманнă офицера куртăм. Астăватăн-и, пирĕннисем кунтан чакса кайнă чух пирĕн патра пĕр вуникĕ боец çĕр выртрĕç? Вĕсен командирĕ хытă уксахлатчĕ, унăн ури аманнăччĕ... Ирхине, тухса каяс умĕн, вăл пире иксĕмĕре: «Ытлашши ан кулянăр, ачасем, эпир таврăнатпăр-ха!»—терĕ. Асăнмалăх мана хĕрлĕ çăлтăр парса хăварчĕ... Халĕ çав офицер пирĕн пата чăнах та килнĕ пек куртăм. Çав тери савăннипе вăрансах кайрăм! Унтан тата тепĕр хут курăнчĕ вăл мана... Мĕншĕн-ши вăл, э?

— Çавна та чухлаймастăн-и?—тĕлĕнерех пăхрĕ ун çине Ванюшка.

— Пĕлместĕп çав...—терĕ Илька.

— Мĕншĕн тесен эпир хамăрăн салтаксем çинчен пĕрмаях шухăшлатпăр, вĕсене пĕрмай кĕтетпĕр!

—Тĕрĕс...—килĕшрĕ те Илька, кăмăлĕ тулнипе çăмăллăн сывласа илчĕ.—Чăнах та çавăнпа пулĕ вăл.

Пĕр хушă вĕсем нимĕн те чĕнмерĕç. Қашни хăйĕн шухăшне шухăшларĕ. Чĕрисем хавассăн тапрĕç вĕсен. Çутă, савăнăçлă ĕмĕтсем çуралчĕç...

Анчах вăхăт нумай та иртмерĕ — туссем сасартăк самолет моторĕсем хаяррăн кĕрленĕ сасса илтрĕç. Таçта, инçетре те мар кĕрлерĕç вĕсем, çитменнине çывхарнăçемĕн çывхарса килчĕç...

Ванюшкăпа Илька иккĕшĕ те, чиркӳ чанĕсем çакăнса тăнă вырăнтан пуçĕсене тулалла кăларса, пĕлĕтелле, унталла та кунталла пăхма тытăнчĕç. Ял çине икĕ «фокке-вульф»—разведка тăвакан самолетсем — вĕçсе килнĕ иккен. Вĕсем пĕрре кунталла, тепре лерелле чăмса, урамсем çийĕпе çăхансем пек явăнма тапратрĕç...

— Мĕне пĕлтерет ку?—хăраса ыйтрĕ Илька.

— Қу ырра мар, тусăм,—терĕ те Ванюшка, тутине çыртса лартрĕ.—Тем тесен те, ырра мар...

Ванюшка çапла калама ĕлкĕрчĕ çеç, сывлăша тăруках самолет çинчен пăрахнă бомба шăхăрнă çинçе сасă çурса кайрĕ. Самантран бомби, таçта, ял вĕçне ӳксе, хыттăн шартлатса çурăлчĕ. Тепĕр самолечĕ çав хушăра тури урам тăрăх пулеметран вăраммăн персе илчĕ:

— Ррр-р... Та-та-та... та-та-та..

— Қаларăм, килеççĕ тесе!—чышкисене чăмăртарĕ Ванюшка.—Çитрĕç вĕт, яла пĕтереççĕ ĕнтĕ халь!..

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? Сигнал парар мар-и?—васкавлăн ыйтрĕ Илька.— Тен, хамăр та анса каяр кунтан?

— Ан сӳпĕлтет,— терĕ ăна хирĕç Ванюшка, çаплах самолетсем ял çинче каллĕ-маллĕ ярăнса çӳренине сăнаса.— Бомба ӳкни ахаль те сигнал пулчĕ ĕнтĕ. Эпир

пострa тăратпăр. Постран пăрахса кайма юрамасть. Вырăнĕ те шанчăклăрах кунта.

— Мĕнрен шанчăклă?— çаплах лăпланса çитеймерĕ Илька.— Чиркӳ вăл — пит лайăх мишень вĕт...

— Қалаçатăн кирлĕ мара,— аллипе сулчĕ Ванюшка.— Çĕр бомба пăрахсан та тӳррĕн лектерейместĕ вĕсем пире. Пăх-ха ав, пĕри бомбине ял çине пăрахас тесех пăрахрĕ, анчах вăл ав ăçта кайса хаплатрĕ... Пульăран ан хăра, пурĕпĕр купола шăтараймасть; осколкăран та хăрушă мар. Меллĕ вырăнта эпир.

Ванюшка çакна пĕр пăлханмасăр, лăпкăн каларĕ. Ял çийĕнче вут-хĕм сапакан самолетсем мар, ахаль кайăксем çеç вĕçсе çӳренине сăнаса тăнă пек тыткаларĕ вăл хăйне хăй. Сăнĕ çеç кăшт улшăнчĕ унăн. Тусĕ хăраманни тата вăл çав тери ĕненмелле калани Илькăна та самаях лăплантарчĕ. Вăл та халь «фокке-вульфсем» каллĕ-маллĕ чăмкаласа çӳрени çине хăраса мар, интересленсе çеç пăхса тăчĕ.

— Вут хыптаракан бомбăсем ан пăрахчăр, шуйттансем ,— терĕ Ванюшка, пĕр самолечĕ вăрман тĕлне çитсе каялла çаврăннине кура.— Çунтарса яраççĕ вара яла...

— Шанма çук...

Самолетсем тек бомба пăрахмарĕç, пулеметран та пемерĕç. Хăйсене валли пĕр-пĕр шăлçемми чĕрчун тупса сасартăк тапăнма хатерленнĕ карапăлсем евĕр çеç явăнса çӳрерĕç. Анчах та вĕсен куçĕ тĕлне çын-мĕн курăнмарĕ ĕнтĕ. Ял çыннисем йăпăр-япăрах нӳхрепсене, подвалсене, ятарласа тунă блиндажсене пытанса пĕтрĕç.

Тĕрĕссипе, фашистсене çав кирлĕ пулнă та...

Сывлăшри хура хĕреслĕ хурçă çăхансене сăнанă хушăрах Ванюшка хирелле пăхса илчĕ те сасартăк хытнă пек пулса тăчĕ.

— Куратăн-и?!— терĕ вăл, Илькăна хулĕнчен çавăрса тытса.

— Пĕтрĕмĕр...— пăшăлтатса илчĕ Илька.

Ялалла унтан та кунтан юланутсем сиктерсе пынă.

Вĕсем хыççăн сарă тĕтĕм пек тусан мăкăрланса хăпарнă. Паллах, вĕсем нимĕç салтакĕсем пулнă. Қам пултăр ĕнтĕ урăх?

— Çап! Часрах çап, сигнал пар!— кăшкăрса ячĕ Илька.

Ванюшка чан каштинчен çакнă пысăк снаряд стаканĕсене тимĕр туяпа çапма тытăнчĕ. Пĕтĕм вăйпа, васкаса, капланса килекен хăрушлăх çинчен пурте илтчĕр, тесе çапрĕ.

— Чан-чан-чан!.. Чан-чан-чан...

Анчах ял çыннисем ку сигнала илтеймерĕç те пулĕ. Шăп çак вăхăтра, Ванюшка снаряд стаканĕсене шаккама тытăннă самантра, пĕр «фокке-вульфĕ» ял варрине бомба пăрахрĕ, вăл вара пĕтĕм тавралăха кисрентерсе илчĕ. Унтан çав çăханах пулеметран темиçе черет сапрĕ. Кăна вĕсем юри, ял çыннисем шăтăксенчен тухмасăр ларччăр, тесе тунă.

— Униче патне çитрĕç!— кăшкăрчĕ Илька.— Ялалла кĕреççĕ!

Ванюшка тимĕр туйине пăрахрĕ те, вĕсем Илькăпа иккĕшĕ те, чиркӳ тăрринчен ансăр та авкаланчăк пусма тăрăх чупса анса, килĕсене ыткăнчĕç...

## III

— Анне! Анне! Ăçта эсир? Тарас пулать!— кăшкăрса ячĕ Ванюшка килхушшине хашкаса чупса кĕрсенех.

Анчах килхушшинче никам та курăнмарĕ. Вăл пӳрте чупса кĕчĕ, чăланалла пăхрĕ, унтан, каллех тула сиксе тухса, пахчаналла чупрĕ. Қунта вара вăл пĕтĕм килйышне курчĕ. Амăшĕ, икĕ йăмăкĕпе пĕчĕк шăлнĕ сарай хыçĕнчи пусă шăтăкĕнче чĕрĕпсем пек хутланса лараççĕмĕн.

— Тухăр хăвăртрах! Нимĕçсем килсе çитрĕç! Тарас пулать!— ăнран кайнă пек кăшкăрса ячĕ Ванюшка.

— Хăрушă-çке...— чарăлса кайнă куçĕсемпе пăхрĕ ун çине амăшĕ.

— Вёсен аллине лексен тата хăрушăрах пулать!..

Ванюшка йăмăкĕсемпе шăлнĕне шăтăкран тухма пулăшма тытăннăччĕ кăна — пахчан тепĕр вĕçĕнче темле ăнланмалла мар сăмахсем кăшкăрни илтĕнчĕ. Çаврăнса пăхрĕ те Ванюшка — хăйсем патнелле икĕ нимĕç салтакĕ автомачĕсене малалла кăнтса чупнине курах кайрĕ.

— Лекрĕмĕр...— терĕ вăл хăй ăшĕнче.— Тин çăлăнасси пулас çук ĕнтĕ...

Чăн та çав, халь тин ни вăрмана тухса тарма, ни пытанма май килмен. Яла йĕри-таврах çавăрса илнĕ фашист салтакĕсем ялтан никама та кăларман. Кашни пахчана, арпалăхсене, нӳхрепе, çĕрулми йăранĕсем хушшине, подвалсемпе тĕпсакайсене ухтарса, пĕтĕм халăха урама хăваласа кăларнă та чиркӳ умĕнчи тӳрем вырăна пухнă. Икçĕр çынна яхăн пулнă унта. Вĕсем хушшинче туясем çине тайăнса аран утакан стариксем те, Ванюшка пек вăтам çулхи шкул ачисем те, икшер-виçшер пĕчĕк ача çавăтнă хĕрарăмсемпе карчăксем те пулнă. Вăйпитти арçынсем çеç пулман — вĕсем пурте вăрманта, партизанра çӳренĕ.

Выльăхсене хăваланă пек кăшкăрса, çурăмсенчен чыша-чыша, пăшалсемпе юнаса пĕр çĕре пухнă çынсем пĕр-пĕрин çумне йăпшăнчĕç. Автомачĕсене хатĕр тытса тăракан хура тимĕр калпаклă, хăрушла юмахсенчи шуйттан тĕслĕ фашист салтакĕсем çине вĕсем шикленсе, çав вăхăтрах пĕтĕм чун-чĕререн тарăхса пăхса тăчĕç.

— Мĕн пулать-ши ĕнтĕ? Мĕн тăваççĕ-ши пире кусем?..

Кашни çын пусĕнчех çак шухăш пулчĕ.

Ванюшка та çаплах шухăшларĕ. Йăмăкĕсем — Маринăпа Сима — ăна икĕ хулĕнчен тытса лартса, сивĕ чир тытнă чухнехи пек чĕтресе тăчĕç. Пĕчĕк Сашăна алла тытнă амăшĕ çине-çинех хурлăхлăн сывласа илчĕ. Анчах Ванюшка, чĕри çав тери пăлхануллăн тапрĕ пулин те, хăйне хăй çирĕппĕн тытма тăрăшрĕ.



Халăх чĕнмерĕ. Хутранситрен пĕр-пĕр ача макăрса ярсан та, унăн çăварне часрах хупласа лартма тăрăшрĕç. Автомат тытнă нимĕçсем те шарламарĕç,—хура калпакĕсем айĕнчен çынсем çине тискеррĕн, халь тесен халь персе пăрахас пек пăхса тăчĕç вĕсем.

— Неушлĕ персе вĕлерĕç-ши вара? — шухăшларĕ Ванюшка; унăн чĕри пăчăртанса, çĕçĕпе каснă пек ыратса илчĕ.— Çук, пулма пултараймасть... Мĕншĕн перес пире? Мĕн айăпшăн?..

Анчах ăçтан шанан-ха вĕсене, çынçиенсене?

Шăп çав вăхăтра тури урамран тусанпа витĕннĕ вăрăм кăвак автомобиль çаврăнса тухрĕ те халăх умне çитсе чарăнчĕ. Машина кĕтмен çĕртен килсе тухни Ванюшка шухăшĕсене татрĕ. Вăл, ыттисем пекех, çав автомобильре лараканнисем çине пăхрĕ. Машина çинче, шоферсăр пуçне, икĕ нимĕç ларнă. Пĕри лутрарах, сысна пек мăнтăр, хĕрлĕ сăнлă, тепри — вăрăм, хыткан, çутă кокардăллă çулĕ картуз тăхăннăскер пулнă.

— Аслисем пулас...— терĕ Ванюшка.

Вăл йăнăшман. Кусем чăнах та нимĕçсен аслă офицерĕсем пулнă-мĕн. Хыткан вăрăм нимĕçĕ — яла пырса кĕнĕ карательнăй отряд командирĕ пулнă. Вăл автомобиль çинчен ансанах, ун патне йĕнерленĕ кăвак ăйăр илсе пычĕç. Шофера хăйсен чĕлхипе темскер каланă хыççăн вăл вăшт кăна утланса ларчĕ. Ăйăрĕ авăнкаласа илчĕ, малти урипе çĕре кукалесе сирпĕтме тытăнчĕ. Офицер ним чĕнмесĕр, пĕр сывламасăр тенĕ пек тăракан халăх çине куçĕсене хĕссе, йĕрĕнчĕклĕн пăхса çаврăнчĕ. Халăх ăна хирĕç пăхрĕ... Май килнĕ пулсан, халăх ăна çавăнтах çапса антарса, çурса тăкнă пулĕччĕ... Мĕн тума

килнĕ вăл пирĕн пата? Кам чĕннĕ ăна? Мĕнле тивĕç-пе-ха вăл, ирсĕр тăшман, пирĕн çине выльăхсем çине пăхнă пек пăхать?..

Ванюшка сасартăк ун кăкрин сулахай енче ылтăн вăчăра çакăнса тăнине асăрхарĕ. Нимĕç хĕвел еннелле çаврăнсан вăчăра çав тери çуттăн ялтăртатса илчĕ. Вăчăрапа юнашар тата «тимĕр хĕрес»— нимĕçсен орденĕ çакăнса тăнă унăн.

— О-о, ку чăн-чăн шакалах иккен...— шухăшларĕ те Ванюшка, шăлĕсене çыртса лартрĕ. «Тимĕр хĕресе» Гитлер хăйĕн чи чарусăр хурахĕсене çеç пани çинчен вăл пĕрре кăна мар илтнĕ.— Ахальрен килмен ку... Ку пире тем тесен те шар кăтартать...

Чĕри сисрĕ пулас çав унăн... Вăхăт нумай та иртмерĕ, вăчăраллă офицер салтакĕсене темĕнле команда пачĕ. Салтаксем, икĕ еннелле сирĕлсе, урам тăрăх карта юпи-сем пек тăрса тухрĕç. Унтан офицер, халăха хаяррăн кăшкăрса, аллисемпе сулкаласа калама тытăнчĕ:

— Слюшай, ви, скотт! Зейчас все ходить поле! Туда... лес! Пошель, бистро!

Çынсем тăруках вырăнтан хускалмарĕç. Хăйсене мĕн пирки хирелле кайма хушнине ăнланаймасăр, тĕлĕнсе, пĕр-пĕрин çинелле пăха-пăха илчĕç. Анчах та çав вăхăт-рах хыçра юлнă фашист салтакĕсем вĕсене пăшалсемпе, урисемпе тĕртме тытăнчĕç. Халăх тин вара вырăнтан тапранса, тăвалла, униче карти еннелле, тĕркĕлтетсе кайрĕ.



— Аçта илсе каяççĕ-ши?

— Мĕн тума?

— Германие ăсатма шухăшламаççĕ-ши кусем пире?— тăшмансем илтесрен хăраса, хуллен пăшăлтатса пычĕç çынсем.

Ванюшка пуçне те çав шухăшсемех çĕмĕрчĕç, вăл та халь çавăн çинченех шухăшласа, çав тери пăшăрханса, пăлханса пычĕ. Анчах чĕрине лăплантарма вăл нимĕнле татăклă ответ та тупаймарĕ.

— Ваня, ăçта каятпăр эпир?— ыйтрĕ унран кĕçĕн йăмăкĕ Сима.

— Вăрмана пулас,— терĕ Ванюшка.

— Çырла тататпăр-и унта?

— Пулсан татăпăр... Пĕлместĕп-ха...

— Нимĕçсем те пыраççĕ-и?— çаплах ыйтрĕ йăмăкĕ.

— Пыраççĕ çав...

— Пире тивмеççĕ-и вĕсем?

— Тивмеççĕ, тивмеççĕ... Ма тивчĕр? Эпир вĕсене нимĕн те туман вĕт...—лăплантарчĕ йăмăкне Ванюшка.

— Эсĕ мана măйăр татса пар,— терĕ вĕсен калаçăвне итлесе пынă пĕчĕк Саша.— Мăйăр çиес килет...

Урам вĕçнелле çитнĕ чух Ванюшка патне таçтан Илька Кузин пырса тухрĕ. Паçăр, чиркӳ тăрринче хуралта тăнă чух, унăн этем сăнĕ пурччĕ, анчах та халь вăл вилнĕ çын тĕслех пулса кайнă.

— Эсĕ мĕн, чĕтретĕн пулас?— пăхса илчĕ ун çине Ванюшка.

— Хăратăп,— терĕ Илька.— Вĕлерме илсе каяççĕ вĕсем пире... Курăн акă.

— Ан хăра, пурне те вĕлерсе пĕтерейменĕç,— пӳлчĕ туссне Ванюшка.— Сăлтав çук вĕсен пире вĕлерме.

Çак самантра вăл хăй те Илька пекех иккĕленсе пычĕ, анчах та, чирлĕ юлташне хĕрхенсе, унăн кăмăлне пусарма тăрăшрĕ.

— Сăлтав çук тетĕн? Эпир—вырăс...— терĕ Илька.— Гитлер кашни вырăсах вĕлерме хушнă, тет...

— Ытлашши пăлханатăн эсĕ, Илька...

— Вилес килмест манăн...— Илькăн куçĕсем шывланчĕç.— Питĕ кӳренмелле вилĕм пулать. Усăсăр... Малтан пĕр-ик нимĕçе шаккаса хунă пулсан татахчĕ хăть...

— Чим акă, хăтăлса юлар çеç, малашне мĕн тумаллине пĕлĕпĕр!

...Халăх уй хапхинчен хирелле тухрĕ. Кунта вара хайхи юланутлă офицер лашине сасартăк тытса чарса кайри урисем çине тăратрĕ те, аллине çĕклесе, хăйĕн салтакĕсене темскер кăшкăрса каларĕ.

— Стой!

— Чарăнăр!— тесе кăшкăрчĕç ун хыççăн темиçе нимĕç пĕр харăс.

Халăх итлерĕ, чарăнчĕ.

Чăн та ĕнтĕ, итлемесĕр тăма та май çук,— кашни фашист аллинчех автомат пулнă, вĕсенчен кашниех — офицер пĕрре куç хĕснипех — хӳтлĕхсĕр, хĕçпăшалсăр çынсене персе пăрахма хатĕр пулнă.

Офицер лаши ташласа кăна тăчĕ. Ун чĕрнисем айĕнчен тăпра та тусан сирпĕнчĕ. Офицер кăкăрĕ çинчи ылтăн вăчăра хĕвел çуттинче куçа йăмăхтармаллах çутăла-çутăла илчĕ...

— Вперьед! На лас!— çухăрса ячĕ офицер, аллипе вăрман çинелле кăтартса.— Бистро, всем!..

Çак таранччен нимĕн те ăнланман халăх, вырăнтан хусканса, ыраш хăмăлĕ тăрăх вăрман еннелле утрĕ. Ваттисем, туясем çине таянса, пĕчĕккисем амăшĕсен аркисенчен тытса, хĕрарăмсем — алăри ачисене кăкрисем çумне пăчăртаса утрĕç...

Ванюшка хăйĕн йăмăкĕсене çавăтса пычĕ. Унпа юнашарах амăшĕ нăшăкласа утрĕ. Хытнă хăмăл урасене тирчĕ, пĕчĕкреххисем такăна-такăна ӳкрĕç, анчах та халь ĕнтĕ пурте хытăрах утма тăрăшрĕç, пурин те чĕрисенче пĕчĕк шанчăк çуралчĕ: кам пĕлет, тен, вăрманалла кĕрсе кайсан, нимĕçсем хыçранах пымĕç, кашни самантрах вилсе выртас хăрушлăх та иртсе кайĕ?

Хăвăрт утса пыракан Ванюшка самантлăха каялла çаврăнса пăхрĕ. Нимĕç салтакĕсем чăнахах та униче карти лаптăкне тăрса юлнă иккен. Вĕсем халь пĕр ше-

ренга пулса, автомачёсене паçăрхи пекех малалла тытса тăнă.

— Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ ку?— каллех пăлхануллăн шухăшларĕ Ванюшка.— Мĕн пулать капла?

Анчах та ответне вăл тупаймарĕ...

## IV

Ответ вырăнне хыçалтан сасартăк нумай автоматсенчен пĕр харăс персе яни илтĕнчĕ. Çутăлакан пульăсем хаяр сăпсасем пек шăхăра-шăхăра иртрĕç. Вĕсем пĕр тăруках вăтăр-хĕрĕх çынна çулса тăкрĕç. Çынна тивейменнисем çинçен шăхăрса иртсе кайрĕç, хăмăл ăшне çумăр çунă пек тăкăнса, тусан кăларчĕç...

Тахăш самантра Ванюшка йăпăрт кăна каялла пăхрĕ те, нимĕç салтакĕсем пурте чĕркуçленсе ларса, автоматсенчен халăх çинелле таттисĕр пенине курчĕ. Юланутлă офицер тем пирки аллипе сулчĕ,— татах команда пачĕ пулас.

Ванюшка ўкрĕ. Самантранах хăйĕн йăмăкĕ — Марина — хăрăлтатса, урисемпе тăпăлтатса выртнине курчĕ. Чĕререн хĕртнĕ тимĕрпе чикнĕ пекех туйăнса кайрĕ Ванюшкăна. Вăл часрах йăмăкĕ патнелле шуса пычĕ, анчах шăп çав хушăра Маринăна ĕнсинчен тепĕр пуля пырса çапрĕ... Марина лăштах пулчĕ, урăх хускалмарĕ те вара.

Автоматсем вĕçĕмсĕр, чарăна пĕлмесĕр тăкăртатрĕç, пульăсем ывăçласа сапнă пек тăкăнчĕç. Ванюшка çĕр çумне йăпшăнса, шăлĕсене çыртса, кăвар çинче выртнă пек выртрĕ.

— Пĕтрĕмĕр!.. Неушлĕ çак ĕнтĕ ман пурнăçри юлашки самант?..

Автомат сассисемпе хутăш халĕ ĕнтĕ хирте аманнă ял çыннисем асаплăн кăшкăрни, йынăшни, ачасем сухăрашни илтĕнчĕ; хăшĕсем ахлатса пулăшу ыйтрĕç, теприсем, юлашки хут тапаланса илсе, юнпа чыхăнса выртрĕç... Çĕкленмесĕрех, Ванюшка пуçне сулахаялла çавăр-

са пăхрĕ. Тата хытăрах пăчăртанчĕ вара унăн чĕри: кĕçĕн йăмăкĕ Сима та вилĕ выртать иккен,— çурăмĕ çинчи кĕпи чĕп-чĕр юн, пульăсем çурăмран пырса лекнĕ пулмалла. Вăл пичĕпе хăмăл ăшне тăраннă та алли-урисене аманнă кайăк чĕппи пек саркаласа пăрахнă... Сывламасть...

Ванюшка асăрханасси çинчен те манса кайрĕ. Пульăсем шăхăра-шăхăра иртнине пăхмасăрах, вăл ура çине сиксе тăчĕ те темиçе утăм каялла чупса кайрĕ. Вăл амăшĕпе пĕчĕк шăлнĕне курасшăн пулчĕ: чĕрĕ-ши вĕсем?

Çук иккен... Амăшĕпе пĕчĕк шăлнĕ те вилсе выртнă. Амăшĕ ӳппĕн ӳкнĕ. Çурăлакан пуля унăн ĕнсинчен кĕрсе çамкинчен тухнă чух стакан пысăкăш шăтăк туса хăварнă. Пĕчĕк Саша месерле выртать — пульăсем унăн кăкăрне темиçе çĕртен шăтарса кĕнĕ... Ванюшка вĕсем çине юпа пек хытса пăхса тăчĕ. Куçĕсем сасартăк ăнран тухса кайнă çынăнни пек чарăлса кайрĕç, темиçе самант хушши чĕри те тапмарĕ пулас.

Талкăшпех вилнĕ çын выртакан хир варринче пĕрпĕччен çын тăнине фашистсем çавăнтах асăрхарĕç пулас. Ванюшка çинелле вĕсем амтоматсенчен темиçен пĕр харăс персе ячĕç. Ванюшка ӳкрĕ,— унăн урипе сулахай аллине çутăлакан пульăсем шăтарса кайрĕç.

— Вилетĕп...— пăтранчăк шухăшсем вĕçсе иртрĕç Ванюшкăн пуçĕнче. Пур çĕртен те вĕри юн юхма пуçларĕ унăн. Куçĕсем темле кăвакрах тĕтрепе хупланма пуçларĕç.— Пурте вилнĕ... Эпĕ те вилетĕп... Халь пурĕпĕр ĕнтĕ...

Сасартăк ял енче питĕ вăйлă взрывсем илтĕнчĕç. Умлăн-хыçлăн темиçе хут кĕмсĕртетрĕç вĕсем.

— Ку тата мĕн-ши?— терĕ хăй ăшĕнче Ванюшка, юн кайнипе вăйсăрлансах пыраканскер.

Вăл, юлашки чунхавалне пухса, пуçне çĕклесе ял еннелле пáхрĕ те пĕтĕм яла вут-çулăм хыпса илнине курчĕ.

— Пĕтĕмпех пĕтересшĕн ĕнтĕ... Нимĕн те хăварасшăн

мар...— шухăшларĕ те Ванюшка, вăйсăрланса çитсе ăнран кая пуçларĕ.

Нумай выртрĕ вăл...

Хире хăваласа тухнă пĕтĕм ял халăхне персе пăрахнă фашистсем, кăшт тăхтасан, хăйсен тискер те хăрушă ĕçне мĕн тери тĕплĕ тунине тĕрĕслеме тытăннă. Икшерĕн-виçшерĕн уйрăлса, хирте юн юхтарса выртакан çынсем хушшинче çӳренĕ вĕсем. Вилсех çитеймен çынна асăрхасан, вăл йынăшнине илтсен е сывланине сиссен, ăна çавăнтах тепĕр хут пенĕ. Ванюшка тĕлĕпе икĕ хутчен те иртсе кайнă вĕсем, анчах вăл чĕп-чĕр юн пулса, ним хускалмасăр выртнине кура — ăна вилнĕ, тенĕ пулас. Тек тивмен.

Чăнах та, Ванюшка вилнĕ пекех пулнă çав. Юн нумай кайнипе унăн сăнĕ шурса, кăвакарса кайнă, чĕри те аран çеç тапнă, кĕлеткинче пĕр вăй та юлман. Ял çунма тытăнни çине пăхса илнĕ хыççăн вăл часах ăнран кайнă та çĕрлечченех выртнă. Анчах тăна кĕрсен те нумай вăхăт хушши хускалмасăр выртнă. Фашистсем халĕ те çав таврарах тăнă пек, пуçа çĕклесенех хăйне тепĕр хут персе вĕлерессĕн туйăннă ăна. Вилес килмен унăн... Ниепле те вилес килмен!

— Тен, хăтăлăп-и... Тен, çăлăнса тухăп-и...—Хăй халь тем пек вăйсăр пулин те, суранĕсем çав тери ыратнă пулин те, унăн чĕринче тăшмана тавăрас кăмăл, нихăçан сӳнмелле мар тарăху тулса, вĕресе хăпарнă.

— Кăтартăп-ха... сываласчĕ кăна...

...Майĕпе тул çутăлма пуçларĕ. Ванюшка хуллен кăна пуçне çĕклесе унталла-кунталла пăхрĕ, унтан вара чавсаланса ерипен çĕкленчĕ. Таврара шăпах. Çырмаран хăпаракан нӳрлĕхпе пĕрле ял енчен тĕтĕм, ĕнĕк шăрши туртăнать... Ванюшка тинкеререх пăхсан, тĕтĕм витĕр ялта темиçе çĕрте те кăвайт хунă пек çулăм йăлкăша-йăлкăша илнине асăрхарĕ.

— Яла та çунтарса ячĕç. Эх, хăйсене вутта пăрахса

çунтарасчĕ!— терĕ те вăл хăйне хăй, унăн шăлĕсем шатăртатса илчĕç.

Ванюшка майĕпен çĕкленсе чĕркуççи çине тăчĕ. Хирте пĕр чĕрĕ çын та çук. Нимĕçсем те кайнă пулас. Паллах ĕнтĕ, хăйсен тискер ĕçне тунă хыççăн мĕн туса тăччăр вĕсем кунта?

Темиçе хут сасăпах йынăшса ярса, вăл аран-аран ура çине тăркаларĕ. Тарăнăн сывласа илсе тавралла пăхса çаврăнчĕ.

Анлă хирте вилесем выртаççĕ... Хăшĕ ӳппĕн, хăшĕ месерле, тĕрлĕ майлă авăнса, алли-урисене саркаласа... Ĕнер кăна вĕсем пурте сывă пулнă, кашнин чĕринчех çутă ĕмĕт — çитес çывăх вăхăтрах чуралăхран хăтăлса ирĕке тухас шухăш пулнă, çав шухăш кашнин кăмăлнех çĕкленĕ, анчах халь... вĕсем пурте вилĕ, тискер тăшман вĕсен чĕрисене тапма чарнă. Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн?

Ванюшка, аманнă урине аран шутарса, малтан амăшĕ патне пычĕ. Ун умне пĕшкĕнсе, аллине тытрĕ. Вăл сип-сивех... Унтан йăмăкĕсене, пĕчĕк шăлнĕне тĕрĕслесе пăхрĕ. Хăшĕ те пулин чĕрĕ мар-ши, çăлма май пулмĕ-ши, тесе шухăшларĕ, анчах вĕсенчен пĕри те сывламан.

— Пĕчченех эппин эпĕ... Никам та çук халь манăн...— йывăррăн сывласа илчĕ Ванюшка. Куçĕсенчен шултра вĕри куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

— Мĕн тăвас пулать халь?.. Ăçта каяс?..

Вăл çак вилĕм хирĕ варринче чылайччен юпа пек хытса тăчĕ. Салху та йывăр шухăшсем çĕмĕрчĕç унăн пуçне. Унтан йĕпе куçĕсене шăлса типĕтрĕ те, тата тепĕр хут тарăнăн сывласа илсе — ирхи тĕтре витĕр вăрман еннелле утрĕ. Анчах темиçе утăм тусанах вăл хăйĕн тусĕ — Илька Кузин выртнине курчĕ. Ыттисем пекех, Илька та вилнĕ. Темшĕн вăл месерле выртнă. Кам пĕлет, тен, чĕри яланлăхах тапма чарăнас умĕн вăл юлашки хут çак çут тĕнчен илемĕ çине пăхса юласшăн пулнă-и...

Ванюшка, ун умне кукленсе ларса, питĕнчен пăхрĕ. Юлташĕн пичĕ çинче çав тери пысăк асап палăрнă. Вил-

нĕ чух ĕнтĕ çав тери хĕн курнă пулас — ÿт-пĕвĕпе те, чунĕпе те,— вăл пурнăçа калама çук хытă юратнă вĕт!..

— Сывпул, тусăм...— пăшăлтатса илчĕ Ванюшка.— Пуçăм сывă пулсан, саншăн тавăрăп-ха эпĕ... Хаяррăн тавăрăп!

Куна вăл пĕртте ача пек мар, чăн-чăн мăн çын пекех каларĕ. Ку сăмахсем унăн юнпа тулнă чĕринчен пăчăртанса тухрĕç.

Унтан вăл каллех вăрманалла утрĕ. Халран кайнипе аран-аран, кăшт çил вĕрес пулсанах кайса ÿкес пек, сулăнкаласа утса пычĕ. Вăл юлашки вăйĕсене пухрĕ.

— Каясах пулать кунтан... ах, хăтăласчĕ...

Анчах темĕнле тĕрекленме тăрăшсан та, вăрман ăшнелле пĕр икçĕр метр пек кĕрсен, унăн пуçĕ тÿсме çук çаврăнма тапратрĕ, пĕтĕм ăшчикĕ пăтранса килчĕ те— вăл çÿлĕ те çемçе курăк çине ласт! ÿксе каллех ăнран кайрĕ.

V

Ванюшкăна кайран партизансем тупнă.

Вĕсен ялĕнче çав хăрушă та тискер ĕç пулса иртни çинчен «Фашистсене — вилĕм!» ятлă партизансен отрядне хыпар тепĕр куннех çитнĕ. Отряд командирĕ вара, чи маттур партизансене пухса, çав хыпара тĕрĕслес шутпа, Ванюшкăсен ялне кайнă. Отрядри партизансем лăпкă пулман. Ăçтан-ха лăпкă пулан? Вĕсенчен нумайăшĕн вăл ялта ачи-пăчисем, аппĕ-амăшĕсем, тăванĕсем пулнă-çке...

— Неушлĕ çав териех? Неушлĕ пурне те вĕлерсе пĕтернĕ?— çула май пăшăрханса, кулянса пынă вĕсем.

Вырăна çитсе тăшмансем мĕн-мĕн тунине хăйсен куçĕпе курсан, партизансем хăйсен тăванĕсен виллисем умĕнче Гитлер хурахĕсене малашне тата хытăрах тавăрма тупа тунă, юнлă фашист йыттисене ăçта тĕл пулнă — çавăнта пĕтерсе пыма сăмах панă.

Вĕсене сасартăк нимĕçсем пырса тапăннă. Вĕсем партизансене юриех кĕтсе сыхласа тăнă пулмалла çав. Хурахсем йышлăн пулнă, партизансем — сахаллăн, çавăнпа та партизансен тăванĕсене этемле пытараймасăрах вăрманалла чакса кĕме тӳр килнĕ. Çак вăхăтра ĕнтĕ партизансенчен пĕри ватă юман айĕнче юнланса пĕтнĕ арçын ача йынăшса выртнине асăрханă. Ана вара часрах иккĕн-виççĕн çĕклесе хăйсен лагерьне илсе кайнă.

Ку ача — Ванюшка Долбин пулнă.

...Пĕр талăк ытла тăна кĕреймерĕ вăл. Отрядри фельдшер ăна çав тери тăрăшса пăхрĕ, çĕрĕпех ун вырăнĕ патĕнче ларчĕ. Тепĕр кунне каçалапа тин Ванюшка куçĕсене уçрĕ. Малтанах вăл хăй ăçта иккенне те тавçăрса илеймерĕ. Вăл темĕнле çĕрпӳртре, çемçе утă сарнă сарлака сак çинче выртать иккен. Хăй ăçта выртнине пĕлес шутпа тавралла пăхкаласа илнĕ хушăра, вăл алăк хыçĕнче такамсем хуллентерех калаçнине илтрĕ.

— Вĕсем ĕнер тата икĕ яла çунтарса янă тет,— терĕ пĕри.

— Мĕнле ялсене-ши?

— Пĕри — Погодино, тепри — Зайцево, тет... Çыннисене пере-пере пăрахнă, тет. Çӳç-пуç вирелле тăмалла... Нумайăшне вутта пăрахса çунтарнă, теççĕ...

— Кам каларĕ?

— Разведчиксем. Халь çеç заданирен таврăнчĕç.

— Эх!.. Хăçан шăпи тулĕ...

— Пирĕн хулара халь ятарласа янă карательнăй батальон тăрать, тет. Çавсем ашкăнаççĕ. Командирĕ питĕ юншăн антăхаканскер, тет. Генрих Шварц ятлăскер, обер-лейтенант.

— Шварц... Хура тени пулать вăл... Хура юн!

— Темиçе тимĕр хĕреслĕ, теççĕ.

— Ну, паллах ĕнтĕ, Гитлерăн шанчăклă йытти. Май килсенех хурăн хĕрес* лартса парăпăр-ха эпир ăна.

* Нимĕçсем хăйсен масарĕсем çине яланах хурăнран тунă хĕрессем лартатчĕç.— *Л. А.*

Ванюшка ăнланса илчĕ: кусем вăл пĕлекен нимĕç офицерĕ çинчен калаçаççĕ! Куçĕ умне тӳрех хăй курни тухса тăчĕ: вăрăм та хыткан, çутă кокардăллă картуз тăхăннă нимĕç офицерĕ, куçĕсем пăтранчăк шыв тĕслĕ, кăкри çинче, тимĕр хĕреспе юнашар, ылтăн вăчăра йăлтăртатать... Акă вăл, уя тухсанах, лашине чĕвен тăратрĕ те салтакĕсене темĕнле команда пачĕ... Унтан автоматсем шатăртатрĕç... Юн, вилĕм, темĕн чухлĕ вилĕм!

Çак аса-илӳсем капланса хăпарма пуçлансанах Ванюшкăн ăшчикки тепĕр хут пăтранса кайрĕ. Вăл, вăраммăн йынăшса илсе, куçĕсене хупрĕ. Каллех аташма тытăнчĕ. Куç умне тепĕр хут Генрих Шварц тухса тăчĕ, анчах халь ĕнтĕ унăн кăкри çинче тимĕр хĕрес мар, хурăн тураттинчен тунă хĕрес. Унпа юнашар, ылтăн вăчăра вырăнне, ункăланă тачка пăяв...

— Мĕнле, самайланать-и кăшт?— тĕлĕкри пек илтĕнчĕ тахăшĕн сасси.

— Йывăр аманнă. Виçĕ çĕртен,— терĕ тепри,— анчах сывалатех пулĕ тетĕп-ха... Шанатăп, ачи тĕреклĕ, аптрасах çук...



Ванюшка каллех куçĕсене уçрĕ.

Ун умĕнче хăйсен ялĕнчи фельдшер Федор Иванович тăрать. Вăл шĕвĕр пит-куçлă, сайра сар усиллĕ, мăтăкрах сухаллă пĕчĕк çын. Унпа юнашар тăраканни—сарлака хулпуççиллĕ, тĕреклĕ, аллă çулсене çитнĕ çын. Ванюшка ăна та палларĕ,—вăл кӳршĕ ял çынни, Смелов Иван ятлă тимĕрçĕ пулнă.

Федор Иванович Ванюшка умне пĕшкĕнчĕ.

— Ну, герой, чун кĕчĕ-и?

Ай-ай, хăратсах пăрахрăн эсĕ мана... Юрамасть апла, тăванăм, юрамасть...



— Шыв парăр,—терĕ Ванюшка, вĕрипе типсе ларнă тутисене çулласа илсе.

— Аха, шыв-и? Питĕ аван! — хыпăнса ўкрĕ Федор Иванович. Вăл стена çумĕнчи туратран çакса янă флягăна вĕçертсе илчĕ.— Сан валли хатĕрленĕскер ку, тутлă чей...

Çур фляга таранах ланкăртаттарса ĕçсе ячĕ Ванюшка. Унтан, хаштах сывласа илсе, Федор Иванович çине кăмăллăн пăхрĕ.

— Спасибо...

— Спасибине кайран, сывалсан калăпăр,— аллипе сулчĕ фельдшер.— Хăвна спасибо... сывă юлнăшăн. Шуткă-им çавнашкал тамăкран чĕррĕн тухасси? Телейлĕ пулнă эсĕ...

Ванюшка пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕ, унтан хуллен кăна ыйтрĕ:

— Аçта лекнĕ вара эпĕ?

— Питĕ шанчăклă вырăна, тăванăм. Пăшăрханмалли çук.

— Çапах та...

Федор Иванович сасартăк ун çине куçлăхне хывса пăхрĕ.

— Мана паллатăн-и?— ыйтрĕ вăл, уссисене шăлкаласа. Унăн сăнĕ çинче çемçе кулă палăрчĕ.

— Паллатăп...

— Мĕн кирлĕ тата сана урăх? Ют çынсем патĕнче мар эппин. Хамăр ялта, тес пулать. Тăванусем те пур санăн кунта.

— Кам?— тăрук çĕкленме пикенчĕ Ванюшка, анчах суранĕсем ыратнипе йынăшса ярса, часрах каялла выртрĕ.

— Ой-ой-ой, тăванăм, халех кун пек физкультура тума юрамасть сана!— пӳрнипе юнаса илчĕ фельдшер.— Юн кайма пултарать.

Ванюшка ыратни иртсе кайиччен ним чĕнмесĕр, маччаналла пăхса выртрĕ, унтан каллех ыйтрĕ:

— Мĕнле тàван çинчен калатăр эсир? Кам пур кунта манăн?

— Кукку.

— Мĕнле кукка?

— Мĕнле кукка пултăр? Аннӳн шăлнĕ...

— Манăн виçĕ кукка. Иван кукка, Павăл кукка, Çемен кукка..

— Пĕлетĕп, пит лайăх пĕлетĕп, тăванăм. Анчах кунта Çеменĕ çеç...

— Апла, партизансем патĕнче эп?

— Тĕп-тĕрĕс. «Фашистсене — вилĕм!» текен партизансен отрячĕн лагерĕнче. Санăн кукку — Семен Петрович Коробов — пирĕн отряд штабĕн начальникĕ. Калас пулать — паттăр çын!.. Килмелле-ха вăл кунта...

Çакна илтсен Ванюшкăн чĕри çав тери çăмăллăн тапма тытăнчĕ, куçĕсем хавассăн çутăлса илчĕç.

«Питĕ аван-ха ку...— шухăшласа выртрĕ вăл...—Питĕ аван... Мĕн пулса иртни çинчен кукkана пĕтĕмпех каласа паратăп, хама отрядрах хăварма ыйтатăп. Нимĕн те мар, çав ылтăн вăчăраллине çаклатасчĕ...»

Федор Иванович тем ĕçпе çĕрпӳртрен тула тухрĕ. Ванюшка умне ку таранччен калаçăва хутшăнман мăн сухаллă тимĕрçĕ пырса тăчĕ.

— Ыратать-и, ачам?— ыйтрĕ вăл йăвашшăн.

— Хускалман чух ыратсах каймасть,— терĕ Ванюшка.

— Калаçмалăх вăй пур-и сан?

— Пур...

— Эпĕ санран кăштах ыйтса пĕлесшĕнччĕ...

— Мĕн çинчен?

— Сирĕн ялта ман хĕрĕм пурăнатчĕ. Пĕртен-пĕр хĕрĕм. Икĕ ачаччĕ унăн... Пĕтнĕ ĕнтĕ вĕсем пурте. Мĕнле асапланса вилчĕç-ши, мĕскĕнсем, çавна пĕлес килет... Ĕмĕрлĕх астуса юлам, вара мĕн чĕре тапма пăрахиччен тавăрам, тетĕп-çке...

Малтан вăл Ванюшка çине хуйхăпа тулнă пысăк та кăвак куçĕсемпе пăхса тăчĕ. Анчах кăшт тăрсан унăн сăнĕ улшăнчĕ, куçĕсем курайманлăх вучĕпе йăлкăшса илчĕç. Унăн чунĕ çав тери вĕчĕхсе, кӳтсе çитни, вăл хăйĕн мăнукĕсемшĕн тавăрма хуть те епле вут ăшне те кĕме хатĕрри сăнран пăхсанах курăнчĕ.

— Эпир Илька Кузинпа чиркӳ тăрринче хуралта тăраттăмăр,— тесе пуçларĕ Ванюшка хăйĕн калавне.— Сасартăк пирĕн ял çине икĕ «рама» вĕçсе пычĕç те бомбăсем пăрахма тытăнчĕç. Кĕçех яла юланутсем пырса кĕчĕç. Вара...

Тулта лаша ури сассисем илтĕнчĕç. Ванюшка самантлăха калама чарăнчĕ. Унччен те пулмарĕ—çĕрпӳрте Ванюшкăн куккăшĕ, Семен Коробов чупса кĕчĕ. Ванюшка ăна тăруках палласа та илеймерĕ: ун çийĕнче нимĕç тумĕ, кăкăрĕ умĕнче нимĕçсен хура автомачĕ çакăнса тăнă. Сухалĕ те, чылайран вара хырмасăр пурăннăран, хура шăрт пек ӳссе ларнă. Ванюшка чăрлаттарсах пăхса выртнине курсан вăл çăмăллăн сывласа ячĕ.

— А-а, тинех çут тĕнче çине пăхакан пултăн-и!—терĕ вăл.— Ну, мĕнле?

— Ачи аптрамасть-ха вăл. Маттур,— Ванюшка вырăнне ответ пачĕ тимĕрç.

— Ну, пит аван апла пулсан. Сывалсанах, фашистсене тӳпелеме илсе кайăп сана. Пыратăн пулĕ? Мĕншĕн чĕнместĕн? Хăратăн-и-мĕн? Çук, ан хăра, шӳт туса çеç эпĕ. Пĕчĕккĕ вĕт-ха эс.

— Пĕчĕккĕ мар эпĕ, çапăçма вăй çитет манăн,—терĕ Ванюшка.

— Сывал эппин хӑвӑртрах...

Коробов тимӗрҫӗ еннелле ҫаврӑнчӗ.

— Халь ҫеҫ соединени штабӗнчен килтӗм-ха эпӗ, Иван Иванч. Пысӑк операци хатӗрлетпӗр. Ҫав каратель-нӑй батальона пӗтерсе хурасшӑн.

— Нимӗнрен ытла, вӗсен командирне тытасчӗ, кук-ка,— терӗ Ванюшка ерипен.— Чӑн усалли ҫавӑ, ылтӑн вӑчӑраллӑскер. Халӑха персе пӑрахма та ҫавӑ хушрӗ.

— Пӗлетпӗр эпир вӑл йытта...

Хӑй сисмесӗрех, Ванюшка ҫав хӑрушӑ ӗҫ епле пул-са иртни ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ. Куккӑшӗпе тимӗрҫӗ ӑна ним чӗнмесӗр итлесе ларчӗҫ. Итленӗҫемӗн вӗсен сӑнӗсем тӗксӗмленсе, хаярланса пычӗҫ. Хушӑран вӗсем йывӑррӑн сывла-сывла илчӗҫ...

— Ну, ан хыпӑн, Ванюшка,— терӗ куккӑшӗ, ура ҫи-не тӑрса.— Хамӑр тӑвансен айӑпсӑр тӑкӑннӑ юнӗшӗн эпир вӗсен хура юнӗпе тавӑрӑпӑр... Часрах сывалма тӑрӑш. Халь каям-ха эпӗ, каҫалапа килӗп. Пӑртак шо-колад пурччӗ-ха манӑн, ҫавна илсе килӗп. Чирлӗ ҫынна вӑй кӳртет вӑл...

— Юрӗ,— терӗ Ванюшка.

Куккӑшӗ, кайма хатӗрленсе, пиҫиххине тӳрлетрӗ, пи-лоткине майлӑрах пусса лартрӗ, унтан чӗлӗм чӗркеме тытӑнчӗ.

— Федор Иванович, штаб начальникне курман-и эсӗ?— илтӗнчӗ тултан тахӑшин сасси.

— А-а, кунтах-ҫке вӑл, ман пата кӗчӗ,— терӗ ӑна фельдшер.

Ҫӗрпӳрте отряд командирӗн ординарецӗ — цыган евӗрлӗрех тӗксӗм сӑнлӑ, хура кӑтра ҫӳҫлӗ ҫамрӑк йӗкӗт чупса кӗчӗ. Честь парса илсенех, вӑл питӗ васкавлӑн, хашка-хашка пӗлтерчӗ:

— Штаб начальникӗ юлташ, отряд командирӗ сире халех хӑй патне пыма хушрӗ... Питӗ васкавлӑ ӗҫ, тет.

— Мӗн пулнӑ тата ун пекех?

— Пĕлме пултараймастăп. Ун патĕнче разведчиксем лараççĕ, темскер пĕлсе килнĕ пулас...

Ванюшка куккăшĕ тек нимĕн те каламарĕ, çĕрпӳртрен чупнă пекех тухса кайрĕ. Ун хыççăн отряд командирĕн ординарецĕпе тимĕрçĕ те тухрĕç.

Кĕçех Федор Иванович çутă кастрюльпе пăсланакан яшка илсе кĕчĕ.

— Апатланăпăр, тăванăм,— терĕ вăл, Ванюшкăпа юнашар ларса.— Сывалас тесен, çиес пулать. Пурнăç саккунĕ çапла...

Пусне çĕклеймен Ванюшкăна вăл апатне кашăкпа çитерме тытăнчĕ.

— Сып, сып, анмасан та çи. Унсăр май килмест...

Çак вăхăтра сасартăк çĕрпӳрт тĕлĕпе çынсем чупса иртни илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ, çĕрпӳрте паçăрхи тимĕрçĕ кĕрсе тăчĕ. Вăл фельдшера кăчăк туртса алăк патнерех чĕнсе илчĕ те, хуллен кăна:

— Тревога, Федор Иванович,— терĕ.

— Мĕн пулнă вара?— ыйтрĕ фельдшер.— Лăпкахчĕ-çке?

— Пирĕн çынсем инçетри разведкăран таврăннă... Нимĕçсем пире хупăрласа илесшĕн иккен. Темиçе дивизи хатĕрленĕ пире хирĕç яма. Танксемпех...

— Мĕн тумалла вара?

— Хатĕр пулма хушрĕç. Вăйлă çапăçусем пулма пултараççĕ. Тен, урăх çĕре куçма тӳр килĕ, теççĕ. Кунта нимĕн те хăвармалла мар...

Çакна илтсен Ванюшка пăлханса кайрĕ.

— «Вăйлă çапăçусем пулма пултараççĕ...» Эх, мĕншĕн сывă мар-ши эп халь! Эпĕ те çапăçнă пулăттăм! Анчах каплипе эпĕ — чăрмав çеç...

## VI

Çак тăрăхри партизансене яланлăхах тĕп туса хума татăклă шут тытнă нимĕçсен командованийĕ кунта чăнах та нумай çар илсе пынă-мĕн: пехота та, артиллери те,

танксем те, темӗн те пӗр. Нимӗҫсен плане ҫакӑн пек пулнӑ: партизансемпе ҫыхӑннӑ ялсене карательнӑй отрядсем ҫунтарса, ишӗлтерсе, ҫӗрпе танлаштараҫҫӗ, партизансене хӑйсене вара ятарласа янӑ ҫар чаҫӗсем вӑрмансенче хупӑрласа илсе, пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе тӑкаҫҫӗ.

Чӑн та ёнтӗ, карательнӑй отрядсен ӗҫӗ ӑнса пынӑ. Хӳтлӗхсӗр ялсене хыптарса ярасси, хӗрарӑмсемпе ватӑ-вӗтӗсене пӗр ҫӗре пухса персе пӑрахасси — йывӑр ӗҫех пулман. Анчах та партизансене вӗсем нимех те тӑвайман. Вӗсен йышӗ ӳссех, вӑйлансах пынӑ, тӑшмана та вӗсем ытларан та ытларах сиен кӳрсе пынӑ. Ҫавна пула нимӗҫсем кунта пысӑк вӑйсем илсе килнӗ. Анчах партизансем те вӗсене тивӗҫлипе кӗтсе илме хатӗрленнӗ...

...«Фашистсене — вилӗм!» ятлӑ отряд партизансен пысӑк соединенине кӗнӗ. Фашистсем тапӑнасса сиссен вара ҫав соединенири пур отрядсенче те боевой тревога тунӑ. Ҫынсене, пӗтӗм хӗҫпӑшала, боеприпассене тӗрӗсленӗ. Кашни отряда, отрядри кашни ротӑна, взвода ҫапӑҫма участоксем уйӑрса панӑ.

Ҫапӑҫу ирхине пуҫланнӑ. Отряд тӑнӑ вырӑна нимӗҫсем пур енчен те тупӑсемпе минометсенчен ҫав тери вӑйлӑн пеме тытӑннӑ. Вӑрман татти-сыпписӗр кӗрленӗ, йывӑҫсем хуҫӑла-хуҫӑла, кӑклана-кӑклана вӑркӑннӑ, унта та кунта тӗтӗм мӑкӑрланнӑ, сывлӑша ёнӗк шӑрши ҫапнӑ.

Партизансем малтанах шарламан. Вӗсем фашистсем хӑйсен ҫывӑхнерех пырасса кӗтсе выртнӑ. Область хулинелле каякан автотракт енчен, йывӑҫсем хушшипе, нимӗҫ салтакӗсем килме пуҫлани курӑнсан вара — кашни тӗмӗ айӗнчен пулемет та винтовка, автомат та карабин шатӑртатма пуҫланӑ. Фашистсен цепӗсем пӗр ҫур сехетренех сайралса юлнӑ. Унта та кунта тӑшманӑн аманнӑ салтакӗсем кӑшкӑрашни, ҫухӑрашни илтӗннӗ...

Фашистсен малтанхи атаки путланнӑ. Анчах тепӗр сехетрен вӗсем ҫӗнӗ атака пуҫланӑ. Ку малтанхинчен те вӑйлӑрах пулнӑ, ҫапах та партизансем пӗр шит те чак-

ман, нимӗҫсене каялла тартнӑ. Ҫун хыҫҫӑн пӗр хушӑ ҫапӑҫу кӗрлевӗ лӑпланнӑ пек пулнӑ, сайра хутра минӑсем ҫеҫ йывӑҫсем хушшипе ӳлесе килсе шартлата-шартлата ҫурӑлнӑ. Анчах та нумая пыман ку. Ҫапӑҫу сасартӑк сылтӑм енчи ҫамрӑк вӑрманта хӗрсе кайнӑ.

Кунта йывӑҫсем вӗтӗрех пулнӑ. Ҫавӑнпа та фашистсем ку тӗле хӑйсен танкӗсене янӑ. Оборона тытаканни ку вӗтлӗхре Ванюшкӑн куккӑшӗ пулнӑ. Пӗр аллӑ-утмӑл партизанпа пӗрле вӑл оборона сооруженийӗсене пит васкавлӑн ҫирӗплетнӗ. Часах йывӑҫсем хыҫӗнчен пӗр харӑс виҫӗ пысӑк танк кӗмсӗртетсе тухнӑ. Вӗсем тупписенчен, пулемечӗсенчен вут-ҫулӑм тӑкса, хӑйсен ҫулӗ ҫинчи йывӑҫсене ава-ава, хуҫа-хуҫа малалла ыткӑннӑ. Малтанах вӗсене чарма пултаракан вӑй та пулас ҫук пек туйӑннӑ. Ытла та ҫӗр ҫӗмӗрсе пынӑ вӗсем... Анчах шӗшкӗ тӗми айне пытарса лартнӑ тупӑ пӗр-ик виҫӗ хут персенех малти танкӗ хыпса илнӗ. Тепӗр танкне хайхи мӑн сухаллӑ тимӗрҫӗ Иван Смелов нимӗҫсен противотанковӑй пӑшалӗпе персе тивертсе янӑ. Виҫҫӗмӗшӗ сасартӑк пӑрӑнса кайма тӑнӑ, анчах та хӑтӑлайман,— партизансем алтса хатӗрленӗ «кашкӑр шӑтӑкне» пуҫхӗрлӗн кӗрсе ларнӑ. Ана курсан тахӑшӗ йывӑҫ хыҫӗнчен сиксе тӑрса, граната ывӑтнӑ. Вара вӑл та тӗтӗмпе ҫулӑм ӑшне путнӑ. Танксем хыҫҫӑн чупакан салтаксем тек малалла каяйман. Партизансен пульлисем вӗсенчен нумайӑшне ҫулса тӑкнӑ, чӗрӗ юлнисем каялла тарнӑ.

Темиҫе хут та атакӑланӑ фашистсем партизансене. Ҫапах та усси пулман. Вӗсем сахалтан та пӗр 200—300 салтак, ҫичӗ танк ҫухатнӑ, ҫапах та партизансем малтанхи вырӑнтах тӑнӑ, нимӗн чухлӗ те чакман. Тӗттӗмленсен вара фашистсем хӑйсем каярах чакса тӑнӑ,— (вӑрманта чух вӗсем яланах шикленнӗ),— анчах ирхине ҫывӑхри аэродромран самолетсем чӗнсе илсе партизансем ҫине бомбӑсем пӑрахма тытӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсене флангсенчен хӗссе лартма, унтан тимӗр ункӑ ӑшне хупма ҫирӗм танк таран янӑ...

## VII

Çапăçу пуçланнă чух Ванюшка çывăрнă. Анчах малтанхи снарядсем ӳке-ӳке çурăлсанах, вăл вăранса кайса куçĕсене уçрĕ.

— Переççĕ мар-и?— пуçне çĕклесе ыйтрĕ вăл çĕрпӳртри тепĕр сак çинче бинтсемпе тăрмашса ларакан Федор Ивановичран.

— Переççĕ,—ним пулман пекех ответлерĕ ăна фельдшер.

— Камсем?

— Паллах, кам çапăçать — çав перет. Вĕсем те, эпир те. Вăрçăн йĕрки çапла. Анчах эсĕ ан хăра, эпир санпа шанчăклă çĕрте, çĕр айĕнче.

— Çук, эпĕ хăрамастăп...

— Вырт та çывăр. Хĕвел те тухман-ха.

— Эсĕ çывăрмастăн-çке?

— Ман çывăрма юрамасть. Çапăçу пынă вăхăтра эпĕ кашни самантрах кирлĕ пулма пултаратăп. Куратăн-и — сурансене çыхмалли хатĕрлетĕп...

Инçетре те мар, пĕр çĕр метрта пулĕ, йывăр снаряд ӳксе çурăлчĕ. Çĕрпӳрт стенисем чĕтренсе илчĕç, мачча вырăнне сарнă каштасем хушшипе тăпра тăкăнчĕ.

— Чи пысăк сысни килсе ӳкрĕ,— терĕ Федор Иванович, хăй пуçĕ çине тăкăннă тăпрана шăлса.— Анчах пирĕншĕн пурĕпĕр. Пирĕн пата чавса кĕме сăмси кĕскерех-ха унăн...

Ку сăмахсене вăл юри, Ванюшкăна шиклентерес мар тесе каларĕ. Ванюшка ăна ăнланчĕ, анчах та сисмĕш пулчĕ.

Тупăсем пени пĕрре вăйланчĕ, тепре кăштах чарăннă пек пулчĕ, унтан каллех çĕнĕ налет пуçланчĕ. Вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ, çĕрпӳрт алăкĕнчен хĕвел çутти шăвăнса кĕчĕ. Ванюшка ним шарламасăр, тупăсем пенĕ çĕрте халĕ мĕн пулса пыни çинчен шухăшласа выртрĕ.

— Эх, сывă пулсан... эпĕ те ĕнтĕ çавăнта кайăттăм, фашистсене çунтарнă пулăттăм...

Çавăнтах вăл хăйне хăй партизансем хушшинче, аллине автомат тытса, урра кăшкăрса малалла ыткăнса пынă пек курчĕ.

Унăн шухăшне тулта такам хыттăн кăшкăрни татрĕ.

— Эй, тухтăр! Федор Иванч! Аманнисене йышăн!

Лăпкăн, кăшт ыйхăланă çын пекрех ларакан фельдшер аллинчи япалисене хăпăл-хапăл аяккалла пуçтарса хучĕ те çамрăк çын пекех чупса тухса кайрĕ.

— Малтан йывăр аманнине илсе кĕрĕр,— тени илтĕнчĕ тултан.

Çĕрпӳрте хура кăтра çӳçлĕ йĕкĕте, отряд командирĕн ординарецне йăтса кĕчĕç. Унăн сăнĕ хут пекех шурса кайнă, хăй аран йынăшать. Хăрах алли наçилкка çинчен шуса аннă та, вĕрен татки пек кăна çакăнса тăрать.

— Тĕрĕс калатăр... Питĕ йывăр, юн нумай пĕтнĕ...— мăкăртатса илчĕ Федор Иванович, аманнă йĕкĕт çине пăхса.— Çамрăклăх çеç çăлма пултарать ăна... Анчах та шанăпăр, шанăпăр... Чи кирли вăл — шанчăка çухатманни.— Хăй çавăнтах ăна бинтсемпе васкавлăн çыхма тытăнчĕ, унтан укол турĕ.— Ах, герой, герой... Епле кун текех лектерчĕç-ха сана?

— Контратака вăхăтĕнче,— терĕ аманнă çынна çĕклесе кĕнĕ çамрăк партизан.— Юман хӳттине пытанса ларнă-мĕн эсрел фрицĕ. Пăхатăп — Петькăна тĕлленĕ, мур, кĕç-вĕç перет ĕнтĕ. Эпĕ чупса пырса çапса ӳкериччен персе яма ĕлкĕрчĕ, сатана!

— Чăн, сатана... Хăйне леш тĕнчене ăсатрăн-и хуть?— ыйтрĕ Федор Иванович, аманнин алтымарне тытса тăрса.

— Ăсанчĕ! Автомат аврипе пĕрре кăна патăм пуçĕнчен,— çавăнтах урисене çӳлелле тăратрĕ.

— Çав кирлĕ, çав кирлĕ...

Çамрăк партизан çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.

— Федор Иванч, чăннипе кала... Мĕнле? Пурăнас пек-и вăл? Шанчăк пур-и?

— Каларăм вĕт: çамрăклăх çеç çăлма пултарать... Хăйĕн вăйĕнчен килет...

— Ахаль чухне çав тери вăйлăччĕ те-ха вăл...

— Шанăпăр, тăванăм, шанăпăр! Қалатăп-иç, пурнăçра, нимĕнрен ытла, шанчăка çухатма юрамасть.

— Хăвăртрах унта эсир!— илтĕнчĕ тултан тепĕр сасă.

— Халех, халех!

Тепĕр минутран çĕрпӳрте тата икĕ çынна çĕклесе кĕчĕç. Пĕри — чылай ватă, кукша пуçлă çын, тепри — тулли питлĕ, пĕр вунтăхăр-çирĕм çулхи хĕр. Вĕсене иккĕшне те урисенчен амантнă.

— Ай-ай-ай... Епле-ха капла, епле-ха капла пулчĕ ку?— хыпăнса ӳкрĕ Федор Иванович, часрах эмелсем, çыхмаллисем хатĕрлесе.— Ашшĕпе хĕрне те пĕр харăс!..

— Ой-ой!— йынăшса илчĕ ватти.

— Халех, халех, Ефим Павлович... Çыхам-ха лайăхрах, атту юн сăрхăнать санăн... Епле тăрук пулчĕ-ха ку?

— О-ой!..

— Малтан аттене персе ӳкерчĕç,— терĕ хĕр вăйсăрланнă сасăпа,— эпĕ ăна пулăшас тесе чупса пытăм. Суранне çыхас тесеттĕм кăна — юнашарах мина ӳкрĕ.

— Шăммах лекмен курăнать-ха, хăрушах мар... Çапах та, ĕçсем мĕнле халь унта?

— Эпир пĕр утăм та чакман.

— Лешсем çаплах тапăнаççĕ-и?

— Қалама çук сĕмсĕр.

— Лапчăтсах хурасшăн эппин пире?

— Пырши çинçерех-ха вĕсен!

— Ах, Федор Иванович, пĕр çăвар та пулсан шыв парсамччĕ...— ыйтрĕ ватти.

— Ĕç, ĕç, акă чей... Тен, тутлах мар пулĕ — сахăрне хушса парăп. Сахăр усăллă вăл, вăй хушать. Ĕç, тĕппипех ĕç...

Ерипен сылтăм аяк çине çаврăнса выртнă Ванюшка çаксене пурне те курчĕ, пурне те илтрĕ. Сăнаса выртнăсемĕн ăна Федор Иванович ытларан та ытларах кăмăла кайса пычĕ. Епле ырă чĕреллĕ çын иккен вăл! Қашнинех йăпатма, кашнин кăмăлне хăпартма, çынсен асапĕсене

чакарма пĕлет, пуриншĕн те тăрăшать. Вăрçăччен, ялта ĕçлесе пурăннă чух, асăрхаман та вĕт çавна. Мĕн тери лайăх çынсем пулнă-мĕн йĕри-таврара! Ак çак старике те, Ефим Павлович тенине, Ванюшка асăрхасах кайман. Вăл колхоз утарĕнче ĕçлетчĕ, питĕ лăпкă çын тетчĕç ăна, ĕмĕрĕнче пĕр усал сăмах каласа курман-тăр. Халь авă, пăшал тытса çапăçăва тухнă. Çитменне пĕччен мар, хĕрĕпе пĕрле... Хĕрĕ унăн кăçал çеç учительницăна вĕренсе тухнă, анчах ачасене вĕрентес ырăнне—ав ăçта килнĕ вăл.

— Пурте çапăçаççĕ... Пурте! Эпĕ те ак... Сывалам кăна!

Вăхăт шурĕ. Акă ĕнтĕ çĕрпӳрт алăкĕнчен хĕвел каялла тухса кайрĕ, кăнтăрла та иртрĕ пулас. Анчах çапăçу шавĕ халь те-ха кĕрлесе тăрать. Хушăран, паçăрхи пекех, партизансен лагерĕ таврашне уйрăм снарядсем пыра-пыра ӳкеççĕ. Кашни снаряд ӳкмессерен, çĕр кисреннипе, маччаран тăпра тăкăнать.

Çĕрпӳрте малтан илсе кĕртнĕ хура кăтра каччă ним пĕлмиех выртрĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе аташа-аташа илчĕ. Федор Иванович унтан пĕртте уйрăлмарĕ, ăна шеллени-пе тек-текех тарăнăн сывла-сывла илчĕ.

Ефим Павлович утарçă та йывăррăн асапланса выртрĕ: ахлатрĕ, йынăшрĕ, фашистсене ылханчĕ. Ана кура, унăн хĕрĕ те лăпланма пĕлмерĕ.

— Тем тăвăттăм! Пĕтĕм асапне, ыратнисене хам çине илĕттĕм!.. Çук, тӳссе çитерейместпулĕ... Ах, атте, атте!— терĕ вăл шăппăн, старик çинчен пĕр самантлăха та куçне илмесĕр.

— Ытлашши ан хуйхăр-ха, тен, тӳрленĕ,— кĕтмен çĕртен сăмах хушрĕ Ванюшка, ку таранччен ним те чĕнменскер.— Эпĕ те ним пĕлми пулнăччĕ те, чиперех сывалатăп ав...

— Тата кам пур кунта санăн?— тĕлĕнсе ыйтрĕ хĕр Федор Ивановичран.— Хĕрарăм-и, арçын-и?

— Хамăр ялсемех, аманнăскер,— терĕ фельдшер.

— Кам?

— Хамӑрӑн штаб начальникӗн, Семен Петрович Коробовсен тавраш. Унӑн аппӑшӗн ывӑлӗ эппин, Ванюшка...

— Э-э, леш, пӗтӗм ял халӑхне персе пӑрахнӑ чух ансӑртран хӑтӑлса юлни-и?

— Шӑп ҫавӑ ӗнтӗ.

— Авӑ мӗн!.. Сывалать-и?

— Сывалатӑп, тет-иҫ...

— Миҫере эсӗ, Ванюшка?— ыйтрӗ хӗр, пуҫне ун еннелле ҫавӑрса.

— Вунпиллӗкре.

— Нимӗҫсем киличчен хӑш класра вӗреннӗ?

— Улттӑ пӗтерӗ.

— Питӗ аван... Фрицсене хӑваласа ярсанах, шкулсем уҫӑлаҫҫӗ те акӑ, малалла вӗренме тытӑнатӑн.

— Курӑнӗ-ха унта,— терӗ Ванюшка.— Те вӗренмелле пулать...

— Мӗн «те»? Фашистсем килсе вӗренме кансӗрленӗ пирки ун чух тата хытӑрах ҫине тӑрса вӗренес пулать! А мӗншӗн ҫапӑҫатпӑр халь эпир? Ҫавӑншӑн. Каллех ирӗклӗн пурӑнмалла, ирӗклӗн ӗҫлемелле, мӗне вӗренес килнӗ — ҫавна вӗренмелле пултӑр, тесе ҫапӑҫатпӑр.

— Тӗрӗс, тӗрӗс сан сӑмаху,— терӗ Федор Иванович, каллех кӑтра ҫӳҫлӗ каччӑн алтымарне тытса.— Пурнӑҫ вӗресе тӑтӑр, юрӑ шӑрантӑр, кашнин сӑнӗ ҫинче савӑнӑҫ ҫиҫтӗр...

Ҫӗрпӳрт умӗнче каллех такамсем калаҫни илтӗнчӗ.

— Хулллентерех эсӗ! Пуҫне ан перӗнтер, хулхушшинчен тыт!— терӗ пӗри.

— Халь те асӑрханса тытатӑп-ҫке,— тӳрре тухасшӑн пулчӗ тепри.

— Ут малтан!

Федор Иванович кӑтра ҫӳҫлӗ каччӑн аллине ячӗ те пуҫне алӑк еннелле ҫавӑрса итлерӗ.

— Татах такама илсе килчӗҫ...

Вăл тулалла тухма тăчĕ, анчах ăна хирĕç икĕ партизан нимĕç тумĕ тăхăннă тĕреклĕ арçынна алли-урисенчен çĕклесе кĕчĕç. Унăн пуçне, питне-куçне бинтсемпе ним курăнми çыхнă, бинчĕ чĕп-чĕрĕ юн, çавăнпа та ăна палласа илме те çук. Çын йывăррăн сывлать, пĕр сас та кăлармасть. Вăл питĕ йывăр аманнă пулас...

— Вырттарăр... Çакăнта вырттарăр... сак çине,—хĕрпе юнашар вырăна кăтартрĕ Федор Иванович. Аманнă çынна чипер вырнаçтарса хурсан, унăн юнлă бинчĕсене салтма тытăниччен малтан:— Кам пулчĕ ку?—тесе ыйтрĕ.

— Штаб начальникĕ,— терĕ партизансенчен пĕри, ассăн сывласа ярса.

— Мĕ-ĕн? Мĕн терĕн эсĕ?— куçлăхне хăвăрт кăна çамки çине хăпартса лартрĕ фельдшер.

— Хамăрăн отрядăн штаб начальникĕ,— терĕ партизан каллех.

— Семен Петрович-и? Коробов-и?— чавси çине çĕкленсе ыйтрĕ аманнă хĕр, Федор Иванович пекех тĕлĕнсе.

— Çавă çав...

— Пулма пултараймасть! Эсир темскер пăтраштаратăр!— хыпăнса ӳкрĕ те вара Федор Иванович, аманнă çыннăн пуçне çыхнă бинтсене салатма тытăнчĕ.— Ĕненместĕп!— мăкăртатрĕ вăл,— Семен Петрович халиччен вутра та çунман, шывра та путман... Ăна пуля та тивмен, снаряд та витмен... Кирлĕ мара калаçатăр!

Анчах партизан тĕрĕссинех каланă. Халĕ илсе килнĕ çын чăнах та Семен Коробов, отряд штабĕн начальникĕ, Ванюшка Долбинăн куккăшĕ пулнă.

Фашистсем ăна пуçĕнчен амантнă. Вăл ним пĕлми выртнă...

## VII

Куккăшне палласа илсен Ванюшка тăруках калаçайми пулчĕ. Ăшчикĕ сасартăк тăвăнса ларчĕ унăн, чĕри çав тери хытă пăчăртанса илчĕ, куçĕсем хуралса килчĕç.

«Кукка та пӗтрӗ эппин... Халь ӗнтӗ ман никам та, никам та çук»...

Çак шухăш Ванюшкăна вут пек çунтарса илчӗ. Ыратни-туни çинчен манса кайсах, вăл выртнă çӗртен йăпăртах тăрса ларчӗ. Чӗри хăвăрттăн тапрӗ, аллисем чӗтрерӗç, куçӗсенчен çут шăрçа пек куççулӗсем йăрлатса анчӗç.

— Федор Иванч! Федор Иванч! Вилнӗ-и вăл? Вилнӗ-и?— кăшкăрсах ячӗ унтан Ванюшка.— Калăр тӗрӗссине! Калăр...

Семен Коробовăн пуçне çыхса тăракан фельдшер ун çине хулпуççи урлă хаяррăн пăхса илчӗ.

— Эсӗ мӗн, ухмаха ертӗн-и? Çакăн пек çын ма вилтӗр вăл? Паллах, чӗрӗ. Вилес те çук!

— Улталатăр эсир! Вилнӗ вăл!..

— Ан çухăрса лар!— çиленсех кайрӗ Федор Иванович. Ытти тухтăрсем пекех, чирлӗ çынна эмелленӗ чухне вăл хăйне чăрмантарнине шутсăр юратман.— Кам хушрӗ сана тăрса ларма? Халех лăпланса вырт!

— Тӗрӗссине калăр... Пӗлес килет-çке манăн!

— Пуçӗнчен осколок чавса кайнă çеç, хăрамаллах мар...

— Сывалать-и эппин? Вилмест-и?

— Калатăп-çке, хăрамалли çук...

— Федор Иванович, епле пулсан та çăлăр ăна! Манăн урăх никам та çук вӗт, хăварах пӗлетӗр... Тархасшăн, çăлăр!—Ванюшкăн каллех куççулӗсем шăпăртатса анчӗç.

Федор Ивановичпа хӗр ăна чӗререн шеллесе лăплантарма тытăнчӗç.

— Чарăн ӗнтӗ, ачам... Хуйха куççулӗпе пурӗпӗр пулăшма çук...

— Çирӗпрех пулас пулать, тăванăм. Вăрçă çавăн пек япала вăл, вăрçăра темӗн те тӳссе ирттерме тӳр килет.

Федор Иванович çаплах Ванюшкăн куккăшӗ патӗнче хыпаланчӗ. Укол тунă хыççăн пулас, аманнă çын вăрăм-

мăн сывласа йынăшса ячĕ, шăлĕсене шатăртаттарса илчĕ. Унтан каллех лăпланса, çывăрнă пек пулса выртрĕ.

— Нумай юн тăкатпăр, нумай...— мăкăртатрĕ Федор Иванович, аллине çуса.— Усси часрах пултăрах...

— Пулать, Федор Иванович, пулатех...— терĕ хĕр.— Çĕнтерӳ инçех мар ĕнтĕ...

— Ана пĕлетĕп эпĕ. Пĕлмен пулсан, ват пуçăмпа партизана каяссăм та çук. Сире, çамрăксене, нимех те мар вăл, анчах та пире — сан аçуна та авă — йывăртарах. Тĕрĕсне калатăп. Анчах кĕтнĕ сехет çитиччен тӳсес пулать... Кĕрешес пулать...

Инçетре çапăçу çаплах кĕрлесе тăчĕ. Федор Ивановичпа аманнă хĕр калаçнине итлесе выртса, Ванюшка кăштах лăпланчĕ.

«Кĕтнĕ сехет çитиччен тӳсес пулать...»

Çĕрпӳрте çав вăхăтра паçăрхи тимĕрçĕ—Иван Смелов васкаса пырса кĕчĕ. Вăл автоматне алăк патне тăратрĕ те тӳрех сак çине ларчĕ.

— Ух, ывăнтăм...— тарланă çамкине шăлса илчĕ вăл.

— Сана та... лекрĕ-им, Иван Васильч?— тĕлĕнерех пăхрĕ ун çине Федор Иванович.

— Çук... Мана отряд командирĕ ячĕ сан патна. Приказ...

— Мĕнле приказ тата?

— Аманнисене халех кунтан илсе каймалла...

— Аçта, мĕншĕн?— шак хытса тăчĕ фельдшер. Çав хушăрах вăл пăлханма пуçлани палăрчĕ. — Ĕçсем япăх-им? Хĕсеççĕ-им?

Тимĕрçĕ аманнисем çине пăха-пăха илчĕ.

— Çук, уншăн мар... Тепĕр тесен — пĕлместĕп, ман ĕç çук унта. Приказ. Хĕвеланăçнелле, Замошкино еннелле каймалла. Астăватăн-и, çуркунне пултăмăр? Ефим Петрович унта пыл хурчĕсем ĕрчетме пит аван, тетчĕ...

— Пысăк Çĕр çинчен пирĕн пата икĕ самолет пырса кайнăччĕ, çавăнта-и?

— Тĕп-тĕрĕс. Анчах халĕ хамăр кунта килнĕ çулпа каймастпăр, тӳрĕрен, шурлăхпа... Ытлашши япала илмелле мар, терĕç.

Федор Иванович тимĕрçе куçран пăхрĕ. Сăмахсăрах ăнланчĕ вăл: фашистсем партизансене икĕ енчен хĕссе килме тытăннă, ахăртнех «миххе» хупса лартасшăн пулĕ, çавăнпа та тылсене каялла чакарма шухăшлаççĕ имĕш. Тăшман ан систĕр тесе ĕнтĕ, никам çӳремен çулпа каймалла. Кун пек пĕрре кăна мар тунă вĕсем.

— Мана пулăшма ячĕç,— терĕ Смелов.

— Ăнланатăп.

— Семен Петрович мĕнле?

— Қалама хĕнтерех...

— Командир ун сывлăхĕшĕн питĕ пăшăрханать. Мĕн тума май пуррине пĕтĕмпех тутăр, терĕ сана, кĕçĕр Пысăк Çĕр çинчен самолет чĕнетĕп, терĕ.

— Кирлĕ пулать пулĕ çав...

Федор Иванович Ванюшка çине пăхса илчĕ. Ача итлесе выртнине асăрхасан, чĕлхе вĕçне килнĕ сăмахĕсене çăтса ячĕ.

«Ух, çивĕч! Нимĕн те пытарма çук иккен унран...»— терĕ вăл хăй ăшĕнче ун çинчен.—«Маттур разведчик пулма пултарать малашне...»

Қаç пулнă чух вара отрядăн лазаречĕ обозпа пĕрле хĕвеланăçнелле тухса кайрĕ.

Çур километр таран тăсăлнă обоз пуçĕнче Иван Смелов пычĕ. Кунти вырăнсене вăл лайăх пĕлнĕ, мĕншĕн тесен ку таврара сунарта сахал мар çӳренĕ. Ахальрен мар ĕнтĕ ăна, ĕлĕк ăста сунарçă пулнăскере, отрядра бронебойщик тунă.

Ансăр проççексем, тахçанах пăрахăça тухнă ансăр сукмаксем тăрăх, чăтлăхсем витĕр, шурлăхлă лачакаллă вырăнсем урлă Смелов обоза ирччен пĕр вунпилĕк километр таран илсе кайрĕ. Кăвак çутăлла вара вĕсем питĕ тарăн çырма тĕпне çитсе чарăнчĕç те, лашасене тăварнă-тăварманах хӳшĕсем тума, çĕрпӳртсем чавма

пикенчĕç. Командир хушнă тăрăх, кунта отрядăн çĕнĕ лагерĕ пулмалла пулнă.

Федор Ивановичăн санитарнăй ещĕкĕсемпе пĕр урапа çинче выртса килнĕ Ванюшка сасартăк пуç тăрринче самолет ĕрленине илтрĕ. Çывăхранах вĕçсе иртсе кайрĕ вăл. Кăшт тăхтасан, самолет каялла таврăнса килсе тепĕр хут вĕçсе иртрĕ. Аялтанах, кустăрмисемпе йывăç тăррисене перĕнес пекех, ярăнса иртрĕ.

Ванюшка тĕлĕнсех кайрĕ:

— Неушлĕ нимĕçсем асăрхарĕç пулĕ пире?

Унăн чĕри каллех хăвăрттăн тапма тытăнчĕ.

Анчах та ку совет самолечĕ пулнă. Кунта вăл отряд командирĕ радиопа чĕннĕрен килнĕ. Партизансем çывăхри уçланкăра икĕ кăвайт чĕртсе ярсанах вăл çĕре анса ларчĕ те ĕнерхи çапăçура йывăр аманнисене йышăннă хыççăн каялла, Пысăк Çĕр çине вĕçсе кайрĕ.

Самолетпа ăсаннисем хушшинче Ванюшкăн куккăшĕ те пулнă. Ун çинчен ăна кайран Федор Иванович каласа пачĕ.

— Ероплан çине лартиччен сан кукку тăна кĕчĕ, мана та палласа илчĕ,— пĕлтерчĕ вăл Ванюшкăна.— Сан çинчен те ыйтса пĕлчĕ, лайăхрах пăхса усрама хушса хăварчĕ. Сывалсан каялла вĕçсе килетĕп, терĕ...

— Аçтан туптăр-ха вăл пире? Тен, хальхи пек, каллех урăх вырăна куçса каймалла пулĕ те?— ыйтрĕ Ванюшка.

— Э-э, уншăн ан кулян,— кăмăллăн аллипе сулчĕ Федор Иванович.— Тупать! Пирĕн çинчен Мускавра пĕлмеççĕ, тетĕн-им эсĕ? Пĕлеççĕ, ачам, пĕлнĕ пирки пулăшаççĕ те ĕнтĕ!

Ку сăмахсем Ванюшкăн кăмăлне çав тери çĕклесе ячĕç.

Кун каçа ĕшенсе çитнипе, ватă фельдшер ещĕксем çине вырнаçкаласа выртрĕ те часах çывăрса кайрĕ. Анчах Ванюшка, ыйхи килменнипе, тата чылай хушă куçĕсене хупмасăр выртрĕ. Вăл ниепле те лайăххăн тавçăрса

илеймерӗ: мӗнле майпа пӗлме пултараҫҫӗ-ха вӗсем ҫинчен Мускавра? Инҫе вӗт-ха Мускав! Партизансем пин километр аякра, сӗм вӑрмансенче ҫӳреҫҫӗ... Тӗлӗнмелле!

Унтан вӑл хӑйӗн тусне, Илька Кузина, вӗсем иккӗшӗ юлашки хут чиркӳ тӑрринче ларнине, Илька тӗлӗкре хамӑрӑн салтаксене курни ҫинчен каласа панине аса илчӗ. Вӗсем ун чухне фашистсене ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн каллех телейлӗ пурнӑҫ пуласси ҫинчен ӗмӗтленсе калаҫрӗҫ... Анчах Илькӑна вӗлерчӗҫ, пӗтрӗ вӑл, мӑнтарӑн...

— Ҫапах та, эпӗ вӑл телейлӗ саманта кӗтсе илетӗпех, тем пулсан та кӗтсе илетӗп,— терӗ Ванюшка хӑй ӑшӗнче.

Унӑн чӗри тата хӗрӳллӗрех тапма пуҫларӗ.

## IX

Виҫӗ талӑка яхӑн ҫапӑҫса фашистсене нумай сиен кӳнӗ хыҫҫӑн партизансем сасартӑк вӗсен куҫӗнчен ҫухалчӗҫ...

Тепӗр эрнерен ҫӗнӗ вырӑнта каллех малтанхи пек лагерь пулса тӑчӗ. Тарӑн ҫырмара ҫӗрпӳртсем алтрӗҫ, вӗсене ытамласа илмелле мар пысӑк юман пӗренесемпе темиҫешер хут витрӗҫ, чӑтлӑх вырӑна кухня турӗҫ, лашасем, ӗнесем валли йывӑҫсем айне лупассем туса пытарчӗҫ. Самолет-разведчик кунӗпе вӗҫсе сӑнаса ҫӳресен те нимӗн те асӑрхама пултарас ҫук. Ҫӳлтен пӑхсан — кунта сип-симӗс вӑрман ҫеҫ, анчах та йывӑҫсем айӗнче пурнӑҫ вӗресе тӑрать...

Кашни кун тенӗ пекех отрядран — штаб хушнипе — разведчиксем тӗрлӗ вырӑнсене кайса ҫӳренӗ, вӗсем хыҫҫӑн вара партизансен пысӑках мар ушкӑнӗсем унта та кунта — ҫулсем ҫине, кӗперсем айне минӑсем лартнӑ. Час та часах вӗсем нимӗҫсен обозӗсене тапӑннӑ, вара отряда тӗрлӗ трофейсем — апат ҫимӗҫ, пӑшал, боеприпассем, выльӑх-чӗрлӗх илсе пынӑ, хӑш чухне тата «чӗлхесем» те ҫаклаткаланӑ. Ун пек чухне вара отряд штабӗ

вырнаҫнӑ ҫӗрпӳрт умне яланах партизансем пурте тенӗ пекех пухӑннӑ.

Йӗпе шӑшисем пек хутланса, кӗрхи йывӑҫ ҫулҫи пек чӗтресе тӑракан фрицсене допрос тунӑ, лешсем хӑйсем мӗн пӗлме пултарнине пӗтӗмпех калаттарнӑ хыҫҫӑн вара, ҫырма тӑрӑх аяларах илсе антарса, «расхода» янӑ.

— Йытӑсене — йытӑ вилӗмӗ...

Ванюшка хӑвӑрт сывалса пычӗ. Федор Иванович ун пирки: «ачи тӗреклӗ-ха, аптрас ҫук», тесе чӑн каланӑ-мӗн. Пӗр-ик эрнерен вӑл чиперех ура ҫине тӑчӗ, ҫӗр-пӳртрен тухса ҫӳрекен пулчӗ, ерипен кухньӑна апат илме кайма та пуҫларӗ.

Апатне вӑл яланах виҫӗ ҫын валли илсе пычӗ, мӗн-шӗн тесен вӗсем виҫҫӗн пурӑнчӗҫ: Федор Иванович хӑй, Ванюшка тата пӗркун ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче ураран аманнӑ хӗр — Тоня.

Тоньӑпа Ванюшка питӗ туслашса кайрӗҫ. Тоньӑн ашшӗне те Ванюшкӑн куккӑшӗпе пӗрле Пысӑк Ҫӗр ҫине ӑсатнӑ. Халь вӗсем ҫавӑн ҫинчен час та часах аса илсе калаҫрӗҫ.

— Мӗнле ҫиткелерӗҫ-ши?

— Сывлӑхӗсем мӗнле-ши, тӳрленеҫҫӗ-ши?

— Чиперех ҫитрӗҫ пулсан, сыватаҫҫӗ пуль те-ха... Унта, Пысӑк Ҫӗр ҫинче, тухтӑрсем нумай...

— Эх, ҫыру ҫырма май пулсанччӗ!

— Таҫта ӑсатнӑ-ха вӗсене, кам пӗлет... Адресне те тупас ҫук.

— Анчах ман кукка сывалса ҫитсен каялла вӗҫсе килетӗп, тесе хӑварнӑ...

Тоньӑпа Ванюшка ҫакӑн пек шӑкӑлтатса калаҫнине курсан, Федор Иванович, вӗсем ҫине куҫлӑх ҫийӗн пӑхса, савӑнӑҫлӑн кула-кула илнӗ:

— Кӑвакарчӑнсем пекех-ҫке эсир... ачамсем!

Юлашки вӑхӑтра вӗсене вӑл пӗрмаях «ачамсем» тенӗ, хӑйне вӗсен ашшӗ вырӑнне шутланӑ.

— Ачамсем, апатланма вӑхӑт ҫитмерӗ-ши? Шыв

веретсе хырăмсене ăшăтмăпăр-и, ачамсем? Совинформбюро сводкине илсе килтĕм, ачамсем, хăшĕ вулать?

Ана вара Ванюшкăпа Тоня пĕр-пĕринпе ăмăртсах вуланă. Вĕсемшĕн ку чи пысăк савăнăç пулнă.

— Ĕнер Хĕрлĕ Çар тата тăватă хулана тăшманран каялла туртса илнĕ! Икçĕр çитмĕл яла ирĕке кăларнă! Фашистсен хĕрĕх сакăр самолетне çапса антарнă!..

— Ĕçсем кун пекех ăнса пырсан, хамăрăн çарсем пирĕн пата та часах çитеççĕ...

— Тур патăрах, тур патăрах,— хыпкаланса мăкăртатнă вара ун пек чухне Федор Иванович.— Часрах пĕтерсе тăкасчĕ вăл йытă йăхне!

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем кашнинех хавхалантарнă çав ун чух. Кĕтнĕ самант — çĕнтерӳ сехечĕ çывхарса килнине туйса, фронтри боецсем те, тăшман тылĕнчи партизансем те фашистсене хирĕç тата вăйлăрах, тата хаяртарах çапăçнă, тăшмана хĕснĕçемĕн хĕснĕ, сывлăш çавăрма та паман...

Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлă ĕçĕсем çинчен пĕлсех тăни Ванюшка кăмăлне те калама çук çĕклентерчĕ. Совинформбюро сводкине ун пек лайăх пĕлекенни те пулмарĕ халь. Вăл отрядри радистпа çывăхрах паллашрĕ те (ку ĕçре ăна Федор Иванович пулăшрĕ), хăйне майлă «счетовод» пулса тăчĕ: кашни ирех Хĕрлĕ Çар ĕнер миçе километр малалла кайнине, миçе хулапа яла ирĕке кăларнине, тăшманăн миçе самолетне çапса антарнине, миçе танкне аркатнине, трофейсем мĕн чухлĕ илнине уйрăм тетрадь çине çырса пычĕ. Унтан кашни пилĕк куншăн пĕтĕмпе пĕрлештерсе шутласа пĕлтерчĕ:

— Федор Иванович! Тоня! Итлĕр. Юлашки пилĕк кун хушшинче пирĕн çар 70 километр малалла кайнă, фрицсен 118 самолетне кутăн чăмтарнă, 242 танкне тĕп тунă...

— Трофейсем мен чухлĕ?

— 1246 автомашина, 58 самолет, 250 оруди, 300 пин снаряд... Аван вĕт, э?

— Аван пулмасăр, тăванăм!

— Çав 300 пин снаряда халĕ фашистсен хăйсен пуçĕ çине тăкаççĕ вĕт, э?

— Епле пултăр-ха тата?

— Автомашинăсемпе те усă кураççĕ ĕнтĕ...

— Паллах.

— Вăйлатать вĕт вăл пире?

— Мĕн калăн!

— Эх, кашни кун çавăн чухлĕ трофей пулсанччĕ!..

— Чим акă, ун чухлĕ кăна мар пулĕ!

Çакăн пек калаçусем санитарнăй çĕрпӳртре час-часах пулса иртрĕç.

Пĕрре Ванюшка радист патĕнче Информбюро сводкинчи цифрăсене тетрадь çине çырса ларнине отряд комиссарĕ, вăрçăччен комсомол райкомĕн секретарĕ пулнă çамрăк хĕр курчĕ.

— Мĕн тума кирлĕ ку сана?— ыйтрĕ вăл унран.



Ванюшка ăна хирĕç тăруках нимĕн те калаймарĕ, именчĕ.

— Так, ахалех...

— Мĕнле ахалех пулать вара вăл?

— Ну, пĕлсе тăма эппин...

— Хăвна валли-и?

— Хама валли çеç мар... Федор Иванча та пĕлтеретĕп.

Хĕр-комиссар Ванюшкăн тетрадьне тытса уçкаласа пăхрĕ те:

— Ха, питĕ лайăх ĕç туса пыратăн-çке эсĕ!— терĕ.— Куна санне «çĕнтерӳ арифметики» теме пулать. Чăнах та пит аван япала... Маттур, питĕ маттур!

Вăл кăштах шухăша кайнă пек пулса тăчĕ, унтан Ванюшкăран йăвашшăн ыйтрĕ:

— Сывлăху мĕнле-ха санăн? Тӳрленсе çитрĕн-и?

— Ытла тӳрленсех çитмен те, Федор Иванович çӳреме чармасть.

— Апла пулсан, сана пĕр ĕç хушам-и?

— Мĕнле ĕç? Хушăр ара.

— Эпĕ сана хут, тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсем парăп, эсĕ вара кашни кунах Информбюро пĕлтерĕвĕсене шултра саспаллисемпе çырăн, пурте вуламалла пултăр. Юрать-и?

— Юрать.

— Унтан тата ротăсене хаçатсем вуласа пама çӳрĕн...

— Юрĕ...— хапăл тусах килĕшрĕ Ванюшка.

Çакăнтан вара отрядра вăл чăн-чăн агитатор пулса тăчĕ. Ир тăрсанах радист патне чупрĕ, йышăннă сводкăна ик-виç хут çине çырса паллă вырăнсене çапрĕ, кайран хĕр-комиссар хушнипе ротăсем тăрăх çӳрерĕ. Отрядра ăна пурте пĕлекен пулса çитрĕç, кашни тĕл пулаканниех унран:

— Ну, мĕн хыпарлать унта Информбюро? — тесе ыйтрĕ.

— Берлина час çитетпĕр-и? Гитлер çакăнса вилмен-и-ха? — тесе шӳт турĕç теприсем.

— Вăхăт килсен çитетпĕр! Гитлерĕ эпир пырса çакасса кĕтет-ха! — хаваслăн ответ пачĕ Ванюшка.

Хăйне çакăн пек ĕç хушнăшăн вăл питех те савăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл отрядра «ытлашши çăвар» мар, ыттисемпе тан, усăллă çын пулчĕ, пур вăя хурса ĕçлерĕ.

Анчах унăн пурнăçĕнче сасартăк пысăк улшăну пулса тăчĕ...

## X

Пĕррехинче, лăпкă та ăшă каç, çурçĕр иртсен, «Фашистсене—вилĕм» ятлă отряд вырнаçнă вăрманти уçланкăна Пысăк Çĕр çинчен каллех самолет вĕçсе пырса ларнă. Вăл партизансем валли хĕçпăшал, патронсем, тĕрлĕ эмелсем тата почта — çĕнĕ хаçат-журналсем, çырусем илсе пынă. Пĕркунне, çапăçура йывăр аманнисене самолетпа ăсатнă чух, партизансенчен чылайăшĕ Пысăк Çĕр çинчи тăванĕсем, тусĕсем патне кĕске-кĕске кăна çырусем çырса янă пулнă, халь ĕнтĕ çав çырусене хирĕç ответсем килнĕ.

Пысăк Çĕр çинчен çырусем илесси отряд историйĕнче пĕрремĕш хут пулнă, çавăнпа та пурне те çав тери савăнтарса, çĕклентерсе янă.

Савăнмасăр ара! Хăшпĕрисем партизанра 1941-мĕш çултанпах çӳренĕ, унтан вара икĕ çула яхăн иртнĕ, çав хушăра килтисем вĕсем çинчен пачах та пĕлмен, вĕсене пуçĕпех пĕтнĕ пулĕ, тесе те шутланă, партизанĕсем хăйсем те килтисем çинчен нимĕн те пĕлме пултарайман, анчах халĕ пĕтĕмпех паллă пулнă ĕнтĕ: кам сывă, кам мĕнле пурăнать...

Çине-çинех, темиçешер хут та вуласа тухрĕç партизансем хăйсемшĕн нимĕнрен те хаклă хут таткисене, унтан вĕсене пĕр-пĕрине вулаттарчĕç, килтисем мĕн-мĕн çырнине каласа пачĕç, сӳтсе яврĕç.

— Анлан-ха эсӗ, тусăм! — тет çамрăк боец ватăраххине, хулпуççинчен çапса илсе.— Вăрçă пуçланиччен икӗ кун малтан кăна манăн ывăл çуралчӗ. Хам вăрçа тухса кайиччен аран ят хурса ӗлкӗртӗмӗр. Юриех Виктор ятлă хутăмăр, мӗншӗн тесен Виктор вăл—çӗнтерӳ тени пулать... Çав шӗпӗн халӗ чупакан пулнă, ман сăнӳкерчӗкӗ çине: «атте, атте!» тесе тӗллесе кăтартать, тет!

— А манăн ывăл,— тет ăна хирӗç ватăраххи, кăмăллăн кулкаласа,— Сталинградшăн çапăçса икӗ орден илнӗ. Аманнă пулнă та, халь сывалса каллех фронта кайнă.

Вӗсем патне виççӗмӗшӗ пырса тăрать.

— Эпӗ те тӗлӗнмелле хыпар илтӗм-ха, тăвансем,— тет вăл.— Вăрçă пуçланиччен пирӗн атте пӗр виçӗ çул хушши кăмака çинче ларса пурăнчӗ. Ултă ывăл пăхса ӳстертӗм, çитет мана, тăрантарччăр виличчен, тетчӗ. Пире ултсăмăра та фронта илсе кайсан, вăл кăмака çинчен сиксе аннă та каллех ӗçе тытăннă. Колхоз председателӗ, тет, халь, ларса канма та пӗлмест, тет, колхозӗ районта чăн малта пырать, тет иккен. Пăх та кур эсӗ ăна...

— Тӗлӗнмеллисем пур çав,— калаçăва хутшăнать çемçе курăк çине тăсăлса выртнă тепӗр партизан, аллинчи хут таткине çавăркаласа.— Хӗрачасем пур манăн. Пӗри халь вунпилӗк тултарнă, тепри вунçичче кайнă— иккӗшӗ те ФЗО шкулӗнче вӗренсе тухнă. Пирӗн пата Украинăран темле çар завочӗ куçса пынă, тет те, çавăнта ӗçлеççӗ иккен. Плана икçӗр процент таран тултараççӗ, тет...

Çак калаçăва Ванюшка Долбин радист патӗнчен Информбюро сводкине илсе таврăннă чух итлесе тăчӗ. Çынсем пӗр çӗре пухăннине асăрхасан, вăл юриех, вӗсене паянхи сводкăна вуласа парас шутпа чарăнчӗ, анчах та боецсем килти хыпарсем çинчен калаçнине тавçăрса илсен — кансӗрлес темерӗ. Çитменнине тата Пысăк Çӗр çинчи хыпарсем ăна хăйне те питӗ интереслентер-

чĕç: пурнăç мĕнлерех пырать унта, çынсем мĕн тăваççĕ, мĕнле сывлаççĕ?

Пуринчен ытла ăна пĕр партизанĕ хăйĕн хĕрĕсем шкултан вĕренсе тухни çинчен каласа пани кăмăла кайрĕ.

— Епле телейлĕ вĕсем унта... Халĕ те вĕренме пултараççĕ,— шухăшларĕ те вăл, хăй сисмесĕрех ассăн сывласа ячĕ.

Калаçса тăракан партизансене сасартăк строя тăма чĕнчĕç, çавăнпа та Ванюшкăн сводка вуласа парасси пулмарĕ. Вăл хăйсен çĕрпӳртнелле утрĕ. Алăкра ăна Федор Иванович тĕл пулчĕ.

— Тоньăна курмарăн-и эсĕ? — ыйтрĕ вăл.

— Курман,— терĕ Ванюшка.— Кирлĕччĕ-и?

— Кирли-мĕнĕ... Çыру илсе килсе пачĕç ăна.

— Çыру? Камран?

— Пысăк Çĕр çинчен, ашшĕ, Ефим Павлович, çырать пулмалла.

— Ашшĕ?! — Ванюшкăн тăруках пичĕ пĕçерсе кайрĕ, чĕри хăвăрттăн тапма тытăнчĕ.— Аçта çырăвĕ? Кăтартăр-ха!

— А мĕн тăватăн эсĕ унпа? Сана мар вĕт вăл, Тоньăна...

— Пулин! Кукка çинчен пĕлес килет. Тен, Тоня ашшĕ ун çинчен те çырнă?

— Пĕлетĕп ăна, анчах Тоня киличчен тăхтамалла пуль, ачам. Юрамасть ют çын çырăвĕсене вулама, тăванăм, аван мар... Тоня çиленме пултарать.

— Çиленмест! Эпĕ ăна хамах каласа паратăп, тӳсеймерĕм, тетĕп...

Федор Иванович пĕр хушă иккĕленсе тăчĕ. Тоньăна та кӳрентерес килмерĕ унăн, Ванюшкăна та шел пулчĕ.

— Ну, хуть те мĕн ту эппин, ман ĕç çук,— терĕ те вара юлашкинчен, халат кĕсйинчен кĕрен конверт кăларса Ванюшкăна пачĕ.— Тоня умĕнче ответне ху тыт...

Ванюшка çавăнтах çырăва уçса хăвăрт вулама тытăнчĕ.

«Хаклă хĕрĕм, Тоня,— тесе çырнă утарçă Ефим Павлович,— ашшĕн саламĕ сана Пысăк Çĕр çинчен! Чăн малтан çакна пĕлтеретĕп: фронт линийĕ урлă эпир чиперех каçса килтĕмĕр. Чăн та, нимĕçсем пире зениткăсенчен питĕ хытă печĕç, анчах нимех те тăваймарĕç...»

— Тав турра,— çăмăллăн сывласа ячĕ Федор Иванович.— Вула, вула часрах малалла...

«Ирхине, пĕр ултă сехетре, эпир фронтран нумай инçере вырнаçнă аэродрома çитсе антăмăр. Вăл хăш вырăнтине каламастăп, мĕншĕнне хăвах чухлатăн...»

— Тĕрĕс тăвать старик, çарти вăрттăнлăха тытма пĕлет,— куçлăхне шăлкаласа мăкăртатса илчĕ каллех Федор Иванович.— Çыру тăшман аллине те лекме пултарать...

«Семен Петрович Коробов пирки халлĕхе нимĕн те калама пултараймастăп. Самолет çинчен антарнă чух питĕ вăйсăрччĕ вăл. Шурса, кăвакарса кайнăччĕ. Самантлăха çеç курса юлма тӳр килчĕ. Те чĕрĕ вăл...»

Ку тĕле вуласа çитсен, Ванюшкăн тăрук сасси чĕтреме тытăнчĕ...

«...те çул çинче вилсе кайнă»,— аран вуласа пĕтерчĕ çырури пуплеве.

— Мĕн вăл... Мĕн вăл ухмаха ерет?— те хăраса, те çиленсе туртса илчĕ Федор Иванович Ванюшка аллинчи çырăва.— «Ăна тӳрех машина çине хурса илсе кайрĕç. Унтан вара тек курман эп ăна...»— вуларĕ старик малалла.— Вăт ухмах, хăй лайăххăн пĕлмест, çапах та çырать, çынсене хăратать...

Ванюшкăн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç. Сасăпах макăрса ярас марччĕ тесе, вăл шăлĕсене çыртса лартрĕ, аяккалла çаврăнса тăчĕ.

— Эсĕ ан кулян, тăванăм, ан пăлхан пустуй,— лăплантарма пикенчĕ ăна Федор Иванович.

— Çук, вилнех пуль вăл...— терĕ Ванюшка куççулĕ витĕр.

— Ан калаçса тăр кирлĕ мара!— Федор Иванович çиленнĕ пекех пулса кайрĕ.— Пĕркунне, аманнă хыççăн çĕклесе пырсан та, эсĕ ăна: вилнĕ те вилнĕ, терĕн. Анчах вăл вилме шутламан та. Самолетпа ăсатнă чух манпа чиперех калаçса уйрăлчĕ. Халь те çавах пулать акă... Вилнĕ пулсан, мĕншĕн-ха ăна часрах машина çине хурса илсе кайнă? Сан шутпа — мĕншĕн?

— Қам пĕлет...

— А эпĕ пĕлетĕп. Васкавлă пулăшу пама! Часрах сыватма, акă мĕншĕн! Эпĕ — ватă çын, çитменне çирĕм çул ытла фельдшер пулса ĕçлетĕп, çавăнпа та ун пек япаласене санран кăшт ытларах чухлатăп пулĕ, тетĕп!

Ванюшка, пĕр чĕнмесĕр, çĕрелле пăхса тăчĕ. Федор Ивановичăн сăмахĕсем ĕнентерӳллĕ пулчĕç ĕнтĕ, анчах вăл пурпĕр тăруках лăпланаймарĕ. Кĕске вăхăтра ашшĕ-амăшне, тăванĕсене çухатни ăна ытла та хурлантарнă çав. Куккăшĕ унăн пурнăçĕнче пĕртен-пĕр шанчăк пулнăччĕ, анчах халь ун пирки те питĕ иккĕленмелле пулса тăчĕ.

Çак вăхăтра çăра йывăçсем хушшинчен Тоньăпа хĕр-комиссар тухса Федор Ивановичпа Ванюшка патне пычĕç. Хĕр-комиссар пĕрре пăхсанах вĕсен кăмăлĕсем хуçăлнине асăрхарĕ.

— Мĕн пулнă çак сире, юлташсем, çăвара шыв сыпнă пек тăратăр?— ыйтрĕ вăл.

— Çук, нимех те пулман...— терĕ ăна хирĕç Федор Иванович, аяккалла пăхса. Анчах та хĕр-комиссар ăна ĕненмерĕ.

— Анултала, Федор Иванович, витĕрех куратăп.

— Ванюшкăпа кăштах шавласа илтĕмĕр...

— Мĕн пирки? Чиперех пурăнаттăрччĕ мар-и?

— Ак...—Федор Иванович кĕсйинчен Тоня ашшĕн çыруне кăларчĕ.— Ефим Павлович çырса янă...

— Атте-и?! Ой, Федор Иванович!..— каçсах кайрĕ Тоня.— Пар-ха кунта, пар часрах!..

Тоня, çырăва картах туртса илсе, ялкăшакан куçĕсемпе строкасем тăрăх чупма тытăнчĕ; хĕр-комиссар çаплах тĕпчеме чарăнмарĕ:

— Ну, каласамăр тӳррипе?

— Ванюшка Семен Петрович пирки пăшăрханать. Куккăшĕ-çке-ха вăл унăн, пĕлетĕр пуль...

Федор Иванович темиçе сăмахпа Тоньăн ашшĕ мĕн çырса пĕлтерни çинчен каласа пачĕ.

— Мĕн хăрамалли пур унта? Госпитале илсе кайнă ĕнтĕ ăна,— терĕ хĕр-комиссар.

— Эпĕ те çавнах калатăп,— çирĕплетрĕ фельдшер.

Тоня çав хушăра ашшĕ çырăвне вуласа тухрĕ те ăна кăкри çумне тытса ача пек сиккелесе илчĕ.

— Мĕн тери пысăк савăнăç!..

Анчах та Ванюшкăн кăмăлĕ уçăлмарĕ. Вăл никам çине те пăхмасăр, пĕр чĕнмесĕр çĕрпӳртелле кĕрсе кайрĕ.

## XI

Вăл кунсенче отряд пысăк операцие хатĕрленнĕ.

Лагерьтен пĕр вăтăр пилĕк-хĕрĕх километрти станци тавра, вăрманта, нимĕçсен командованийĕ юлашки вăхăтра складсем нумай тунă. Тем те пулнă унта: хĕç-пăшал та, боеприпассем те, ĕçмелли-çимелли те, тумтир таврашĕ те. Хĕвелтухăç енчен хĕссех килекен Хĕрлĕ Çара чарма ĕмĕтленсе, фашистсем кунталла çĕнĕрен çĕнĕ чаçсем куçарнă, вĕсене çапăçура мĕн-мĕн кирлисене те пĕтĕмпех янтăласа хунă. «Фашистсене — вилĕм» ятлă отрядăн çавсене пĕтĕмпех сывлăшалла сирпĕтсе, çунтарса, кĕл туса хумалла пулнă.

Пĕр каçхине Федор Ивановича штаба чĕнтерчĕç. Вăл пăч тĕттĕм пулсан тин таврăнчĕ те, çурта çутса ярса, санитарнăй сумкăсене эмелсемпе çыхмаллисем тултарма тытăнчĕ.

— Ма канмастӑн, Федор Иванович?— ыйтрӗ ун ҫине ҫивитти айӗнчен пӑхса тӑракан Ванюшка.

— Юрамасть, ӗҫ пур,— яланхи пекех лӑпкӑн ответ пачӗ ӑна фельдшер.— Хатӗрленме хушрӗҫ, тӑванӑм.

Ванюшка тӳрех пуҫне ҫӗклерӗ...

— Каяҫҫӗ-им?

— Каяҫҫӗ.

— Хӑҫан?

— Пӗлместӗп...

— Ҫапах та, калӑр-ха. Пӗлес килет.

— Мӗн тума кирлӗ вӑл сана? Эпир каяс ҫук вӗт унта, пире илсе те каяс ҫук. Эпӗ — ватӑ, эсӗ — ытла симӗс-ха. Ҫывӑр тавай. Мӗн кирлине хатӗрлесе паратӑп та ак —эпӗ те выртатӑп... Ан чӑрмантар.

Ванюша тек нимӗн те ыйтмарӗ, анчах ҫывӑрас шухӑш та пулмарӗ унӑн. Вӑл тӑруках пӑлханса кайрӗ...

Куккӑшӗ пирки пӑшӑрханмалла хыпар килнӗ хыҫҫӑн вӑл ӗнтӗ, темиҫе кун хушши кичемленсе, ҫынсенчен пӑрӑнарах ҫӳрерӗ. Унӑн пуҫӗнче ҫав хушӑра ҫӗр тӗслӗ шухӑш та пулчӗ.

— Фашистсем манӑн тӑвансене пӗтерчӗҫ... Анчах та эпӗ ку таранччен нимӗнле те тавӑрайман-ха вӗсене... Партизансем патне килни икӗ уйӑх ҫитет. Усӑсӑр иртет вӑхӑт. Тепӗр операцине каятӑпах,— тенӗ вӑл.

Анчах та кайма тӳр килмен. Юлашки вӑхӑтра партизансем уйрӑм пысӑк мар операцисем ҫеҫ турӗ, йышлӑн ҫӳремен, тата унта чи опытлӑ, пултаруллӑ, вӑйпитти ҫынсене ҫеҫ янӑ.

Хӑйсен отрячӗ К. станцинчи складсене аркатма хатӗрленни ҫинчен пӗлсен вара Ванюшка хаваслансах кайрӗ:

— Тинех ҫитрӗ кӗтнӗ самант. Каятӑп!..

Хӑйӗн шухӑшне вӑл ҫийӗнчех никама та пӗлтермерӗ. Операцие каяс вӑхӑт килессе чӑтӑмлӑн кӗтсе пурӑнчӗ, вӑхӑтсӑр пӗлтерсен командир килӗшмесрен шикленчӗ.

— Патне çитсен сасартăк çине тăрсах ыйтатăп та — килĕшетех вăл...

Халь акă Ванюшка иккĕленсе выртрĕ: Федор Иванович отряд операцие хăçан каяссине пĕлместĕп, тесе чăнах каларĕ-ши? Тен, улталать вăл? Чее старик... «Пире илсе каяс çук...» тет. Сана илсе каймаççĕ те пулĕ, анчах та манăн каймаллах! Штаба чупса кайса килес мар-ши? Тен, унта пурте хатĕр?

Шăп çак вăхăтра çĕрпӳрте икĕ çамрăк партизан васкаса пырса кĕчĕç. Хулпуççисем урлă хĕреслесе патрон ленттисем çакнă, çурăмĕсем хыçĕнче — автоматсем, пиçиххисем çинче — гранатăсем. Кĕнĕ-кĕменех вĕсенчен пĕри Федор Ивановичран:

— Пулса çитрĕ-и санăн? — тесе ыйтрĕ.

— Хатĕрлерĕм, акă, — терĕ те Федор Иванович, кашнинех пĕрер санитарнăй сумка тыттарчĕ. — Мĕн кирлине пурне те хунă унта...

Ванюшка, кăна кура, вăштах сиксе тăрса ларчĕ.

— Каятăр-и? Халех-и? — ыйтрĕ вăл.

— Каятпăр, шăллăм, — терĕ пĕр партизанĕ. — Телей сунса яр пире... Пысăк ĕçе каятпăр!

Анчах Ванюшка тек калаçса тăмарĕ, йăпăр-япăр вырăн çинчен сиксе анчĕ те, сак айĕнче выртакан аттине хăпăл-хапăл тăхăнса ярса, пуç айĕнчен пиншакне туртса кăларса, çĕрпӳртрен халь килнĕ партизансенчен те малтан тухса вăркăнчĕ.

— Ăçта эсĕ? Ăçта каятăн çĕр хута? — кăшкăрса юлчĕ ун хыççăн Федор Иванович.

Ответ пулмарĕ, Ванюшка чупса кайнă сасă çеç илтĕнсе юлчĕ.

— Шельма ачи, мĕн шут тытнă-ши тата? — мăкăртатса илчĕ старик. Унтан партизан-санитарсен аллисене чăмăртаса, вĕсене ырă сунса ăсатса кăларса ячĕ.

Ик-виçĕ минутран Ванюшка, штаб çĕрпӳртне чупса çитсе, сĕтел хушшинче карттă çине пăхса ларакан отряд командирĕ умĕнче хашкаса тăчĕ.

— Коля пичче... Командир юлташ! Сăмах калама ирĕк парăр...

— Мĕнле сăмах?— тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине лешĕ.— Кала.

— Эсир... Эсир халь операцие каятăр вĕт?

— Çапла тейĕпĕр. Мĕн вара?

— Эпĕ те пырасшăн сирĕнпе...

— Эсĕ?— тата ытларах тĕлĕнчĕ командир.— Мĕн тума?

Ванюшка самантлăха тытăнса тăчĕ, командире хирĕç калама ниепле те тăруках сăмах тупаймарĕ.

— Епле мĕн тума?

— Çаплах. Мĕн тума пырасшăн эсĕ?

— Хăвăрах пĕлетĕр вĕт...— Ванюшка пăлханнипе тарласах кайрĕ.— Эпĕ фашистсене тавăрма тивĕç... Вĕсем манăн аннене, пĕтĕм тăвансене пĕтерчĕç, куккана амантрĕç... Тавăрмаллах ман çавăншăн!

— А-а...— тăсса илчĕ командир.— Паллах, тавăрмалла вĕсене. Тĕрĕс шухăш. Анчах ку операцие илсе каймастăп сана...

— Мĕншĕн, командир юлташ?..

— А вăл ман ĕç, ачам.

— Çапах та... Мĕн, пултараймастăп тетĕр-и?

— Командир хăйĕнне хăй пĕлет. Унтан нихăçан та «мĕншĕн апла тăватăн?» тесе ыйтмаççĕ. Çавна пĕлетĕн-и?

Ванюшкăн чунĕ кӳтсе килчĕ, нимĕн тума аптранипе вăл макăрса ярас патнех çитрĕ. Анчах çав вăхăтра çĕрпӳрте хĕр-комиссар кĕрсе тăчĕ те, Ванюшка шăпăрт пулчĕ.

— Пĕтĕмпех хатĕр, Николай Васильч,— терĕ хĕр-комиссар.— Пурне те тĕрĕслесе тухрăм.

— Тепĕр пилĕк минутран хускалатпăр эппин,— аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ командир. Унтан халь те «смирно» командăпа тăракан Ванюшка еннелле çаврăнса:

— Çапла, ачам, май килмест, кайса çывăрах,— терĕ.

— Мĕн пулнă вара?— тĕлĕнерех ыйтрĕ хĕр-комиссар, тĕксĕм лампа çутинче тăракан Ванюшкăна халь тин палласа илсе.

— Çапăçасшăн пирĕн агитатор. Тăвансемшĕн тавăрас килет, тет...

— Çапла çав, унăн тăванĕсене...

— Пĕлетĕп. Анчах та кăмăлсăр ан пул эсĕ, ывăлăм...— Командир сасси тăруках йăвашланса кайрĕ.— Часах тавăрăпăр акă эпир санăн тусусемшĕн... Чăн малтан кама тавăрмаллине те пĕлетпĕр. Генрих Шварц тунă вăл ĕçе, каратель. Вăл халь те хамăр хуларах-ха. Çак операцирен таврăнсанах тытса шаккатпăр эпир ăна. Ун чух вара сана та илсе кайăпăр. Тен, вăл çынçиене хамăр алла чĕррĕн лектерсен, персе пăрахма та хăвнах ирĕк парăп...

Çакна илтсен Ванюшка кăштах лăпланнă пек пулчĕ. Унăн чĕринче урăх шанчăк çуралчĕ.

— Хăçан таврăнатăр?— тесе ыйтрĕ çеç вăл.

— Пĕр-икĕ кунтан таврăнма тивĕç.

— Вара хулана каятпăр-и?

— Вара санпа пĕрле карательсене тĕп тума каятпăр,— куçне хĕссе илчĕ командир.

## XII

Çак самантран пуçласа Ванюшка çав ĕмĕтпе кăна пурăнчĕ.

— Ак, станцинчи складсене сиктерме кайнисем таврăнаççĕ те, ылтăн вăчăраллине тытма каятпăр... Персе пăрахаканни хам пулатăп,— шухăшларĕ вăл час та часах.

Ванюшка чăнах та ĕнтĕ Генрих Шварцăн тискер чĕрине пĕр пуля мар, автомат дискинчи мĕнпур пульăсене, çитмĕлĕшĕпех кĕртсе янă пулĕччĕ çав!

Анчах ĕмĕт туласси вăраха тăсăлса пычĕ. Операцие кайнисем икĕ кунтан мар, пилĕк кунтан та таврăнмарĕç.

Унтан эрне те иртрĕ. Вĕсенчен нимĕнле хыпар та пулмарĕ. Лагерьте юлнисем пăшăрханма пуçларĕç: мĕн пулнă капла?..

Çиччĕмĕш каçхине Федор Иванович патне отрядра юлнă икĕ ватăрах партизан пырса ларчĕç. Вĕсем пынă чух Ванюшка çывăрма выртнăччĕ. Сăмах тӳрех операци мĕншĕн вăрăма тăсăлни çинчен пуçланчĕ.

— Мĕн пирки çак таранччен тытăнса тăчĕç-ха вĕсем?..

— Нимĕçсем сасартăк хупăрласа илмен-ши?

— Пулма пултараймасть! Ним пĕлмесĕр, разведкăсăр пырса кĕрес çук ĕнтĕ пирĕннисем. Николай Васильч опытсăр командир мар. Çарта та батальон командирĕ пулнă...

Апла та капла калаçса пăхрĕç вĕсем, анчах хăйсене лăплантармалли ответ тупаймарĕç.

— Кĕтсе пăхар-ха, мĕн пулĕ. Ытах, таврăнмасан, темиçе çынна вĕсен йĕрĕпе шырама ярас пулать...

Сăмах пĕр вăхăта татăлчĕ, пурте чĕлĕм туртса, ним чĕнмесĕр, йывăр шухăша кайса ларчĕç. Унтан партизансенчен пĕри сасартăк хăй ăссĕнех кулса илчĕ.

— Мĕн эсĕ?— тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине тепри.

— Кулăшла ара...

— Мĕн кулăшла?

— Хайхи карательсен пуçлăхĕ Генрих Шварц кашни ялтах пĕлтерӳсем çакса тухнă, тет...

— Мĕнле пĕлтерӳсем?

— Пирĕн çамрăксене хăй патне службăна кĕме чĕнет, тет. Полицейскисен отрячĕсене кĕме эппин... Темĕн тĕрлĕ ырлăх та сунаççĕ, тет: обмундировани, паёк, шалу, кашнине — лаша. Пĕр сăмахпа каласан, предательсен пурнăçĕ райри пек пулмалла, тет...

— Неушлĕ кам та пулин кайĕ вара вĕсем патне?

— Тупăнкаланă, тет, кăштах! Совет влаçĕ вăхăтĕнче хулиганла ĕçсем тунăшăн темиçешер хуг тĕрмере ларнисем, вăрă пулнисем, кулак таврашĕсен юлашкисем...

— Пуç касакансем, чыса та, намăса та çухатнисем, тăван çĕршыва та маннисем ĕнтĕ. Банда. Сутăнчăксен банди.

— Тĕрĕс, кам пултăр ĕнтĕ урăх? Генрих Шварц халь вĕсенчен уйрăм отряд тунă, тет. Ĕçсе ӳсĕрĕлсе, ашкăнса кăна çӳреççĕ, тет.

— Ах, ирсĕрсем!

— Кулăшла! Вăрăсемпе пьянцăсем çинче çар тытăнса тăма пултарать-и-мĕн? Шăршлă сывлăш анчах вĕт вăл! Пĕрре çил вĕрет те — сирĕлсе каять, нимĕн те юлмасть.

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ. Çапах та, çав тери тарăхмалла вĕт. Çакса вĕлермелле ун пеккисене!

— Мĕн тăвăн... Çемьере чăлахсăр пулмасть. Этем ӳт-тирĕ çине те кĕсен-çăпан тухать тепĕр чух. Анчах та çын пурпĕр тасалать вĕсенчен,— терĕ малтан каласа кăтартма тытăннă партизан.

Тата кăшт калаçкаласа ларсан вĕсем тухса кайрĕç, çĕрпӳртре каллех Федор Ивановичпа Ванюшка иккĕш çеç юлчĕç.

— Тем те илтĕн, тем те курăн ку пурнăçра... Иудăсем халь те пур иккен-ха вĕсем,— мăкăртатса илчĕ те Федор Иванович, лампăна сӳнтерсе выртрĕ. Часах вăл куллен хăрăлтатни те илтĕнме пуçларĕ.

Анчах Ванюшка çывăрмарĕ. Унăн пуçĕнче каллех тĕрлĕрен тĕрлĕ шухăшсем çаврăнчĕç. Куçĕ умне каллех, чирлесе выртнă чухнехи пекех, Генрих Шварцăн хăрушă сăнарĕ тухса тăчĕ... Акă, вăл Ванюшкăсен ялне сысна пек самăр тепĕр фашистпа пĕрле автомобильпе пырса кĕрет. Унтан йĕнерленĕ кăвак ăйăр çине утланать те чиркӳ умĕнчи тӳрем вырăна хăваласа тухнă ял халăхне йĕрĕнчĕклĕн пăхса çаврăнать. Хĕвел çутинче унăн кăкăрĕ çинче ылтăн вăчăра ялтăртатса илет... Кайран, халăха хирелле хăваласа тухсан, вăл, лашине чĕвен тăратса, пĕтĕм халăха персе пăрахма команда парать. Унăн кăкри çинче каллех ылтăн вăчăра ялтăртатать,

унтан тăруках автоматсем хăрушла, пĕр чарăнмасăр шатăртатма тытăнаççĕ...

Темĕн те пĕр аса илсе, шухăшласа, енчен енне çаврăнкаласа выртнă хыççăн, тул çутăласпа тин кăштах тĕлĕрсе кайрĕ вăл. Анчах вăранасса Федор Ивановичпа пĕрлех вăранчĕ. Вырăнĕ çинчен сиксе тăрса, сивĕ шыв ăсса килчĕ те хăвăрт кăна питне çурĕ, типтерлĕн тумланчĕ. Яланхи пекех, радист патне кайса Информбюро сводкине илсе килсе, ăна шултра саспаллисемпе уйрăм хутсем çине çырчĕ.

Ирхи апат çисе ларнă чух вăл сасартăк Федор Ивановичран:

— Хулана миçе километр пулать-ши кунтан?— тесе ыйтрĕ.

— Тĕрĕссинех пĕлместĕп, пĕр хĕрĕхсем пулать пулмалла,— терĕ ăна хирĕç фельдшер.

— Măн çул çине тухсан, сулахаялла каймалла вĕт?

— Сулахаялла мар, тăванăм, сылтăмалла. Мĕн тума кирлĕ пулчĕ сана ку?

— Ахалех...— Ванюшка Федор Иванович çине пăхмасăр çиме тăрăшрĕ. Темшĕн унăн кăштах аллисем чĕтрерĕç. Тек вăл Федор Ивановича çисе тăраниччен те сăмах хушмарĕ...

Апат çинĕ хыççăн Федор Иванович, эмел курăкĕсем пухма тесе, вăрмана тухса кайрĕ. Çанталăк аван пулнăран пулас, вăл чылайччен çӳрерĕ, лагере кăнтăрла иртсен тин таврăнчĕ. Малтанах вăл куракссне хĕвелпе типĕтме сарса хучĕ, унтан çĕрпӳрте кĕчĕ те — сасартăк малти стена çумĕнче шур хут листи çакăнса тăнине асăрхарĕ.

— Мĕн хучĕ вара ку?— тесе пычĕ вăл ун патне.— Çыру мар-и? Кам çырса хăварма пултарнă капла?

«Чĕререн юратнă, хисеплĕ Федор Иванович...— вулама тытăнчĕ вăл хуллен мăкăртатса.— Мана сыватнăшăн та, мана çак хушăра хăвăрăн тăван ачăра пăхнă пек пăхса усранăшăн та тем пекех пысăк тав сире.

(Сывă пулсан — манмăп, сире те мĕнле те пулин ырă тума тăрăшăп...) Анчах эпĕ кунта текех пурăнма пултараймастăп, чунăм тӳсеймест... Манăн çав тискер кайăка, Генрих Шварца, тавăрмаллах. Пуçа пĕр пысăк шухăш пырса кĕчĕ, эпĕ ăна пурнăçа кĕртмесĕр лăпланассăм çук. Ĕмĕтĕм тулсан, каллех сире килсе курăп-и тен...

Хăвăра чăрмав кӳрсе пурăннăшăн каçарăр, сивĕ сăмахпа ан асăнăр, эпĕ ăна тивĕçлĕ мар. Эпĕ хамăн чĕрем хушнипе тухса каятăп.

1943 ç. 28/VII. Сире хисеплекен **И. Долбин.»**

— Ак тата япала!— вырăн çине лаштах кайса ларчĕ Федор Иванович.— Тухса тапнă ман шĕвĕр... Командир умĕнче мĕнле ответ тытас пулать-ха ĕнтĕ? Тата куккăшĕ отряда каялла таврăнсан — мĕн каламалла?

Вăл чылайччен Ванюшкăн çыруне аллинче çавăркаласа ларчĕ. Унтан сасартăк ирхи апат вăхăтĕнчи калаçăва аса илчĕ те хăйне хăй çамкинчен çапса илчĕ:

— Эх, ватă ухмах! Çулне хамах кăтартса ятăм вĕтха ăна!

## XIII

...Малтанхи кунĕнче Ванюшка лагерьтен пĕр вунпилĕк километр çеç кайрĕ, мĕншĕн тесен каç пулса ларчĕ. Хĕвел ансан вăл çултан аяккарах пăрăнчĕ те вăрăм курăк ăшне кĕрсе выртса çывăрчĕ. Ирхине ирех, хĕвелпе пĕрлех сиксе тăрса, малалла, район хули еннелле уттарчĕ.

Çĕрле çумăр шăпăртатса илнипе çанталăк кăштах сулхăнланчĕ, çавăнпа та утма уçă, çăмăл пулчĕ. Ансăртран нимĕç таврашĕсене тĕл пулас мар тесе, Ванюшка шоссе çинчен пăрănса ахаль çулсем тăрăх пычĕ. Май килнĕ вырăнсенче ялсене те кĕмерĕ, тӳрĕрен тӳрĕ кайрĕ. Яла кĕмеллех пулсан — ыйткаласа çӳрекен ача пек пулма тăрăшрĕ, çав хушăрах хĕрарăмсенчен е хăй пекрех ачасенчен çул ыйтса пĕлчĕ. Пĕр-икĕ çĕрте ăна апат та

çитерсе ячĕç. Хăй ăçта кайни çинчен ыйтсан, вăл ялан вĕрешкел ответ пачĕ:

— Хулара ман кукка пурăнать, сапожник. Çав чĕнсе янă, ĕçе вĕрентетĕп, тенĕ.

Ку пĕртте тĕрĕс пулман. Чăн та, Ванюшкăсен ялĕнчен кайнă пĕр çын вăрçăччен хулара атă çĕлесе пурăннă, Ванюшка ăна шыраса тупма ĕмĕтленнĕ, анчах сапожник ĕçне вĕренесси унăн асра та пулман. Пуçĕнче унăн урăх план пулнă. Ун çинчен халĕ çĕр çинче Ванюшкăсăр хăйĕнсĕр пуçне никам та, пĕр чĕрчун та пĕлмен...

Федор Иванович çĕрпӳртĕнче ватăрах партизансем юлашки каçхине Генрих Шварц тĕрлĕ сутăнчăксенчен полицейскисен отрячĕ пухни çинчен калаçнине итлесе выртнă хыççăн çапла шут тунă вăл:

«Эпĕ те епле те пулсан çав отряда кайса кĕретĕп те вара Шварц çывăхĕнчех пулатăп... Мана та, ыттисем пекех, пăшал параççĕ... Майлă самант килсе тухсан, çав ирсĕре вĕлеретĕп те ăçталла май килнĕ — çавăнталла тухса таратăп...»

Питĕ хăрамалла план пулнă ку, анчах хăйĕн тăванĕсене вĕлерсе пĕтернĕ тăшмана тавăрас кăмăл ытла та вăйлă пулнă çав унăн, çавăнпа та, хăрушă пулин те, Ванюшка тытăнса тăман. Хăйне тытса чарасран шикленсе, кун çинчен вăл никама та калас темен, хăй тĕллĕнех тухса кайнă.

Хулана вăл кăнтăрла иртсен пĕр тăватă сехетре çитрĕ. Ку таранччен вăл пĕр нимĕçе те тĕл пулманччĕ (Ванюшка уншăн питĕ савăнчĕ), анчах хула çуммипе юхакан шыв хĕррине анса кĕпер патне çитсенех, ун умне икĕ фашист салтакĕ тухса тăчĕç. Ванюшкăн чĕри сӳ-сӳ-ӳ... туса кайрĕ, чĕлхи çăвар маччи çумне çыпçăнса ларчĕ. Анчах та хăй хăранине палăртмарĕ вăл, ним пулман пекех, кĕпер çинелле кĕрсе кайрĕ. Лешсем ăна чарса тăратмарĕç, хура хурçă калпакĕсем айĕпе пăхса пĕр чĕнмесĕр ирттерсе ячĕç.

— Ҫусем кĕпере хураллаççĕ пулас,— шутларĕ Ванюшка хăй ăшĕнче, тăшмансен куçĕнчен часрах çухалас шутпа уттине хăвăртлатса.

Пĕлмен çав Ванюшка нимĕн те... Вăл кун хула комендантчĕ хулана пыракансене пурне те кĕртмелле, анчах хуларан никама та кăларса ямалла мар, тесе приказ панă пулнă.

Кĕпер урлă каçсан çул, çӳлĕ сăрт çуммипе пăрănса, ту çинчи пысăк сад патне илсе тухрĕ. Ванюшка çавăнтах астуса илчĕ: вăрçăччен, пĕр-икĕ çул малтан, вăл ашшĕпе пĕрле хула пасарне килнĕччĕ те çак сад çине пăхса тĕлĕннĕччĕ. Çав тери илемлĕччĕ вăл! Сенкер ракатка хыçĕнчи улмуççисен турачĕсем, улмисен йывăрăшне чăтаймасăр, çĕрелле усăна-усăна аннăччĕ. Ытармалла марччĕ... Халь ракаткине те йăвантарса пĕтернĕ, улмуççийĕсем те хăшĕ хăрса ларнă, хăшне каса-каса пăрахнă, хăшĕсем темшĕн çунса кайнă...

Çак амантса, вараласа пĕтернĕ сад хĕррипе пĕр икçĕр метр пек тăвалла хăпарсан, Ванюшка сылтăм енче темĕн пысăкĕш хура хĕрес тăнине асăрхарĕ.

— Чим-ха...— терĕ вăл хăйне хăй, тăпах чарăнса тăрса.— Ара, кунта Ленин памятникĕ тăратчĕ-çке...

Вăл тинкеререх пăхрĕ. Чăнах иккен. Хĕресе памятникĕн никĕсĕ çине хăпартса лартнă.

— Епле тискер ĕç тунă, явăлсем!— пăшăлтатса илчĕ те Ванюшка, малалла утрĕ. Анчах нумай та каяймарĕ— сулахай енче, садри улмуççисем хушшинче, умлăн-хыçлăнах виçĕ хут пăшал сасси кĕрслетрĕ. Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе Ванюшка картах сиксе илчĕ. Унччен те пулмарĕ, вăл темĕнле хĕрарăм çав тери хыттăн: «А-а-ай!» тесе кăшкăрнине илтрĕ. Тепĕр самантранах садран çӳçне-пуçне сапалантарса янă пĕр 16—17 çулхи хĕрача аллисене çĕклесе чупса тухрĕ те пилĕк-ултă метр кайсанах ӳпне тăсăлса ӳкрĕ...

Ана-кăна тавçăрса илме ĕлкĕреймен Ванюшка ун патнелле ыткăнчĕ. Анчах та вăл çав хĕрача патне çитиччен

садран икӗ нимӗҫ сиксе тухрӗҫ. Малта чупаканӗн аллинче парабеллум пулнӑ, кайрин—автомат. Вӗсене курсан, кунта ҫав тери ырӑ мар ӗҫ пулнине тавҫӑрса илсе, Ванюшка аяккалла тапса сикрӗ, анчах лешсем ӑна асӑрхаса илме ӗлкӗрчӗҫ те ун ҫине, йытӑ вӗрнӗ пек, пӗр харӑсах кӑшкӑрса ячӗҫ...

— Хальт! Хальт!

— Стой, звинння! Назад! Стреляйт!..

Ванюшкӑн ним тумалли те юлмарӗ... Пульӑран ӑҫтан тарса ӳкетӗн? Вӑл чарӑнса тӑчӗ те — каялла пӑхрӗ. Ҫав самантрах ун патне автоматлӑ нимӗҫӗ, сиксе пырса, ӑна пуҫӗнчен ҫапса ӳкерчӗ.

— Зобак!..

— Мӗншӗн ҫапан? Эп нимӗн те туман!— кӑшкӑрса ячӗ Ванюшка, фашист ҫине калама ҫук хаяррӑн пӑхса.

— Вставайт!— пӑшалӗпе юнаса илчӗ лешӗ. Унтан ҫавӑнтах Ванюшкӑна хулӗнчен туртса тӑратрӗ те сад еннелле сӗтӗрсе кайрӗ.

Минутран вӗсем паҫӑр садран чупса тухса ӳкнӗ хӗрача патне ҫитрӗҫ. Вӑл ним пӗлми, ҫӑварӗнчен юн юхтарса, хӑрӑлтатса выртать-мӗн. Пульӑсем унӑн ӳпки витӗр тухса кайнӑ курӑнать. Парабеллум тытнӑ фашист ун ҫине йӗрӗнчӗклӗн пӑхса тӑрать.

Ванюшкӑна сӗтӗрсе пыни васкасах унран темскер ыйтрӗ.

— Капут,— терӗ лешӗ.

Чӑнах та, хӗрача тата темиҫе самант тапкаланса илчӗ те хускалми пулчӗ.

— Капут,— терӗ нимӗҫ каллех.— Зер гут!*

Унтан вӗсем пӗр-пӗринпе тем ҫинчен (хӗрача виллипе мӗн тӑвасси ҫинчен пулас) калаҫса илчӗҫ те — пӗри аллипе сулчӗ, тепри сурчӗ. Вырттӑрах, терӗ пулмалла.

— Ийдьом,— терӗ вара пӗри, Ванюшкӑна хулпуҫҫинчен хыттӑн тӗртсе илсе.— Ходить вперьед!

---

* Питӗ лайӑх.

— Аçта илсе каятăр? Ман тăвансем патне каймалла...— ăнлантарма тăчĕ Ванюшка. Паллах, усси пулмарĕ...

— Не говорить!— кăшкăрса пăрахрĕ те ăна фашист, аллине хăйĕн автомачĕ çине хучĕ.

Ванюшка вара тăруках темĕнле хутланса ларчĕ те вĕсем умĕн утрĕ.

— Мĕн тума шутлаççĕ ĕнтĕ кусем мана? Аçта илсе каяççĕ? Хупма-ши? Е халех вĕлерме?— тутисене юн тухмаллах çыртса лартса хăвăрт-хăвăрт шухăшласа пычĕ Ванюшка.— Ах, ăнăçсăр пулчĕ-çке! Килнĕ-килменех лекрĕм! Комендант патне илсе кайса допрос тусан юрĕччĕ хăть. Унта эпĕ: ятарласах полицая кĕме килтĕм, тесе каланă пулăттăм. Тем те пĕр суйăттăм: ман атте кулак пулнă, вăл тĕрмере вилнĕ, тем те пĕр... Çавăн пеккисене пухаççĕ вĕт-ха вĕсем полицай пулма...

Анчах ăна комендатурăна та илсе каймарĕç, допрос таврашĕ те тумарĕç, тӳрех хулан тепĕр енчи хире илсе тухрĕç те йĕри-тавра икĕ рет пралук карнă МТС килхушшине тĕртсе кĕртсе ячĕç.

Кунта Ванюшка йышши çамрăк ачасем, ӳссе çитнĕ хĕрсемпе вăйпитти хĕрарăмсем сахалран та пĕр пилĕкçĕр çын пулнă. Карта тулашĕнче, унта та кунта, мăйĕсенчен автомат çакнă нимĕç салтакĕсем кашкăр тĕслĕ йытăсемпе калле-малле çӳренĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку? Пурне те персе пăрахма пухнă-ши кусене?— пăшăлтатса илчĕ Ванюшка, тĕлĕннипе юпа пек хытса тăрса...

## XIV

Темиçе минут хушши йĕри-тавралла пăхса тăнă хыççăн Ванюшка хăйĕнчен инçетрех те мар, мăкланнă каска çинче çĕтĕк-çатăк тумланнă, ырханкка, нумайранпа касман сарă çӳçлĕ пĕр арçын ачапа пысăк уссиллĕ, кăвакарма пуçланă шăрт пек сухаллă çын ларнине асăрхарĕ те вĕсем патнелле пычĕ.

— Сирĕнпе ларма юрать-и?— ыйтрĕ вăл хуллен, тăруках нимĕн калама аптранă енне.

— Ларах ара, вырăн пур вĕт,— терĕ арçын ача, Ванюшка çине путса ларнă кăвак куçĕсемпе пăхса илсе.

Ванюшка каска çине ерипен ларчĕ те каллех йĕри-тавралла пăхса çаврăнчĕ. Унта та кунта — тĕрлĕрен-тĕрлĕ çынсем. Вĕсем ушкăнăн-ушкăнăн лараççĕ, хăшĕ выртаççĕ, хăшĕсем тата пуçĕсене усса пĕчченшерĕн ут-каласа çӳреççĕ. Пурте чĕмсĕр, çав тери ывăнса çитнĕ тĕслĕ, салху, кичем... Калăн, пурте халь çеç хăйсен чи юратнă, чи хаклă çыннисене масар çине пытарса таврăннă, е — унтан та ытларах — хăйсене кĕçех вĕлересси çинчен пĕлнĕ...

Ванюшкăпа юнашар ларакан арçын ачапа уссиллĕ çын та çавăн пекех. Йывăр шухăша кайса таçталла, пĕр тĕлсĕр пăхса лараççĕ. Сăнĕсем иккĕшин те шурса-кăва-карса кайнă, аллисем хуп-хура, нумайранпа çуман пул-малла вĕсене. Уссилли — кивĕ сăран пиншакпа, урине чăлхасăр-мĕнсĕрех çĕтĕк салтак пушмакĕ тăхăннă, ачи çинче — мăн çын пиншакĕ, урисем — çара, пылчăкланса сăранлансах ларнă.

Ванюшка вĕсем çине пăхса чылайччен чĕнмесĕр ларчĕ, унтан арçын ача кĕçĕннчен чĕрĕ кăшман касăкĕ кă-ларса ерипен кăшлама тытăннине курчĕ те тӳсеймерĕ, сăмах хушрĕ.

— Эсĕ кунта... Нумайранпа-и?

— Пиллĕкмĕш кун ĕнтĕ,— терĕ ача.

— Сана мĕн пирки тытса килнĕ?

— Мĕншĕн пултăр? Нимĕншĕн те мар, ахалех...

— Аçтан илсе килчĕç?

— Инçетрен... Винница хули патĕнченех.

— Эсĕ унтисем-и?

— Çук, анчах унта икĕ çула яхăн пурăннă... Çак Микола пичче патĕнче.— Ача пуçĕпе уссиллĕ çын еннел-ле сулса кăтартрĕ.

— Ху ăçтисем вара эсĕ?

— Питĕ инçетрисем... Чăваш республикинчен. Илтнĕ-и?

— Географи тăрăх пĕлетĕп,— терĕ Ванюшка.— Атăл çинче вăл...

— Тĕрĕс, çавăнта...— Ача хăй аллинчи кăшман касăкĕ çине пăхрĕ те ăна тата кăштах çыртса илсе каллех кĕсъене чиксе хучĕ.

Ванюшкăн ăна çав тери хĕрхенес килсе кайрĕ.

«Мĕскĕн... Епле майпа лекнĕ-ши вăл кунта, хăйĕн тăван çĕршывĕнчен темиçе пин çухрăма?»

— Эсĕ мĕн ятлă? — ун куçĕнчен пăхса ыйтрĕ Ванюшка.

— Санька.

— Итле-ха, Санька... Ман çакăнта пĕр татăк çăкăр пур, çиетĕн-и?— Ванюшка хăйне тахăш ялта пĕр ырă чĕреллĕ кинемей парса янă çăкăр юлашкине туртса кăларчĕ.— Ме, тыт...

Санька пĕрре çăкăр çине, тепре Ванюшка çине пăхрĕ. Унăн куçĕсем выççăн йăлкăшса илчĕç, анчах та вăл, пуçне пăркаласа:

— Çук, кирлĕ мар,— терĕ.

— Çи, çи!— сĕнчĕ Ванюшка.

— Хăвна кирлĕ пулать...

— Эпĕ çинĕ, тутă!

— Кунта çитермеççĕ... Пилĕк кун хушшинче пире икĕ хут çеç чĕрĕ кăшман тăкса пачĕç. Ана илме пырсан та темиçе çынна персе пăрахрĕç. Хăвăн выçă пурăнмалла пулать...

— Пулин тата! Пĕрле пулатпăр вĕт!

— Ну, пăртаках пар эппин...— Санька Ванюшка аллинчи çăкăр татăкне илчĕ те çуррине хуçса каялла пачĕ. Ванюшка ăна кĕсъене чикнĕ хушăра Санька, хăй илнĕ пайне татах çурмаран хуçса, тепĕр еннелле пăхса ларакан уссиллĕ çынна çурăмĕнчен хуллен кăна тĕртрĕ.

— Микола пичче, çийĕр...



Лешӗ ун еннелле ҫаврӑнчӗ те, хӑйне ҫӑкӑр сӗннине курсан, пит те тӗлӗнсе кайрӗ.

— Аҫтан тупрӑн?

— Ак, ҫак ача пачӗ,— терӗ Санька.

— Тавтапуҫ, ывӑлӑм...— Вӑл Ванюшкӑна пуҫ тайса илчӗ.— Мӗн ятлӑ-ха эс?

— Иван. Ванюшка.

— Аҫтисем пулатӑн?

— Ҫак районсемех, кунтан пӗр аллӑ километр.

— А эпир питӗ инҫетрен килсе лекрӗмӗр. Таҫта ҫитереҫҫӗ-ха тата. Хӑйсем патне, шуйттан йӑвине, неметчинӑнах илсе каяҫҫӗ пулас ӗнтӗ...

— Германие-и?!— хӑраса куҫӗсене чарсах пӑрахрӗ Ванюшка.

— Германие ҫав. Ҫӗлен шӑтӑкне. Пире каторгӑна илсе кайма пухнӑ вӗт... Пӗлместӗн-им?

Ку сӑмахсене илтсен Ванюшкӑн чӗри яштах турӗ, куҫӗсем сасартӑк хуралса килчӗҫ. Уншӑн ку ытла та йывӑр, кӗтмен хыпар пулчӗ.

— Неушлӗ... Неушлӗ Германие?!

Анчах Микола пичче тӗрӗссине каланӑ.

Хăйсем кунта текех нумай тытăнса тăрас çуккине туйса, фашистсем çав таврари пур вăйпитти çынсене те Германие хăваласа кайма тытăннă. Унччен малтан та нумай халăх илсе кайнă вĕсем, анчах халĕ ытла та тĕппипех шăлса кайма тапратнă. Никам çине те пăхса тăман — арçын-и вăл, хĕрарăм-и, çемьере пĕртен-пĕр ĕçлекен çын-и, пĕчĕк ачисем пур-и,— пурпĕр. Қамăн ĕçлемелĕх вăйĕ пур, камран ĕç выльăхĕ тума пулать — пурне те тыта-тыта сĕтĕрсе кайнă. Çавна пĕлсе çынсем пытанма, ăçта май килнĕ — çавăнталла тарма тытăннă, ялĕ-ялĕпе пушанса юлнă, килсенче вĕт-шак ачасемпе аран утакан ватăсене çеç тупма пулнă. Ку вара фашистсене пушшех уртарса янă. Вĕсем облава хыççăн облава тунă, кашни тĕл пулнă çыннах тытса хупнă, тарма пикеннисене пере-пере пăрахнă. Паçăр хулари сад патĕнче Ванюшка куçĕ умĕнчех вилсе кайнă хĕрача та çавăн пекскер пулнă: амăшĕ ăна тăшмансенчен пĕр эрне хушши пахчари мунча урайĕ айĕнче пытарса усранă, анчах та юлашкинчен фашистсем ăна пурпĕр тупнă та амăшĕнчен туртса илсе тухса кайнă. Апла та вилĕм, капла та вилĕм,— хĕрача конвоирсенчен вĕçерĕнсе тарнă, лешсем вара ăна садра хăваласа çитсе персе ӳкернĕ.

Ванюшкăна та нимĕç салтакĕсем çавăнпах тытса килнĕ. Вĕсемшĕн ансат пулнă — вилни вырăнне чĕрри тупăннă!

...Çав тери йывăр, асаплантаракан шухăшсем пусса илчĕç Ванюшкăна.

— Мĕн пулчĕ-ха ĕнтĕ ку? Қалăхах тухрăм пулать отрядран... Лармаллаччĕ хускалмасăр... Тăшмана тавăрас тесеттĕм, анчах ун вырăнне — чуралăха лекрĕм...

Сылтăм енче сасартăк хыттăн кăшкăрашни, макăрни, çуйăхни илтĕнсе кайрĕ. Ванюшка унталла хăвăрт çаврăнса пăхрĕ те йĕплĕ пралук-карта çуммипе юланутлă гитлеровецсем тата тепĕр çĕр çынна—хĕрарăмсене, çамрăк ачасене — хăваласа килнине курчĕ. Вăл çавăнтах каска çинчен сиксе тăрса карта патнелле чупса кайрĕ.

— Камсене илсе килеççĕ-ши? Ансăртран, палланă çынсем çук-ши?..

Хăрушла картина курчĕ вара вăл... Тыткăна илсе каймалли çынсене пурне те аллисене каялла туса пĕр-пĕрин çумне вĕренсемпе çыхса лартнă иккен. (Тарасран пулмалла ĕнтĕ). Вĕсене ăсатаканĕсем ик енĕпе утса пыраççĕ: макăраççĕ, татăлса йĕреççĕ, хăйсен тăванĕсем çывăхнерех пыма тăрăшаççĕ, анчах салтаксем вĕсене çывăхартмаççĕ, саламатсемпе пыра-пыра çапаççĕ, лашисемпе таптама тăраççĕ...

Акă, вĕсем хапха патне çитрĕç. Алăка уçса яриччен самантлăха чарăнса тăма тиврĕ. Макрашу, çуйăху татах вăйланса кайрĕ.

— Ах, ача-ам... Пĕтрĕн-çке ĕнтĕ, пĕтрĕ-ĕн!

— Ĕмĕрлĕхех уйăрлатпăр вĕт, тек нихçан та курас çук...

— Сывпул, чунăм... Ах, турă!..

Ăсатакансем хĕссех пыма пуçларĕç. Кашниех хăйĕн тăванне е çывăх çыннине юлашки хут ыталаса чуптăвасшăн пулчĕ. Нимĕç конвоирĕсем вĕсене хаяррăн кăшкăрса, çапа-çапа, чыша-чыша каялла хăвалама тапратрĕç. Пĕр-икĕ хут пăшал сасси кĕрслетрĕ...

Çав вăхăтра хапхана уçса ячĕç те, МТС килкартине çăмарта пек мăнтăр ăйăр çине утланнă хыткан та тăсланкă офицер сиктерсе кĕчĕ. Каçхи хĕвел çутинче унăн кăкри çинче пысăк ылтăн вăчăра йăлтăртатса илчĕ. Ванюшкăн сывлăшĕ пӳлĕнсе ларчĕ. Тӳрех палласа илчĕ вăл çав офицера... Ку — хайхи каратель, çĕр хут ылханлă Генрих Шварц пулнă.

Ванюшкăн чышкисем чăмăртанчĕç, вăл сиксе чĕтреме тытăнчĕ. Ах, çак самантра унăн аллинче мĕн те пулин— автомат-и, пистолет-и, граната-и — пулнă пулсанччĕ! Ним çине те пăхса тăман пулĕччĕ вăл, пĕррех персе ӳкерĕччĕ тискер тăшмана, кайран хуть те мĕн пултăр унта... Анчах пушă алăпа мĕн тăвăн ĕнтĕ? Шăлсене çыртса лартасси çеç юлать...

Генрих Шварц ăйăрне хапха çумне урлăн тăратрĕ те кайри конвоирсене темскер хыттăн кăшкăрчĕ. Лешсем тытса килнисен колоннине хыçалтан хăвалама тытăнчĕç. Вара, малтисем хапхаран кĕрсенех, Шварц вĕсене аллинчи саламачĕпе ăçтан лекнĕ — çавăнтан хĕнеме тытăнчĕ. Пĕтĕм колоннăна хĕнесе ирттерсе ячĕ вăл. Лаши çинчен карăнса саламачĕпе кашни сулмассеренех унăн кăкри çинче ылтăн вăчăра йăлтăртатрĕ...

Ванюшкăн куççулĕсем юхса анчĕç. Анчах вĕсем хурлану куççулĕсем мар, тарăху куççулĕсем пулчĕç. Çав вăхăтрах унăн чĕринче вĕри хаярлăх тулса хăпарчĕ.

— Çитĕ-ха вăхăт, тулĕ-ха сан шалчу! Эпĕ ним тăваймасан та, ыттисем тытса пăрса ярĕç сан мăйна!..

Халь хăваласа килнисене килхушши варринелле илсе çитерсен, вĕсен аллисене салтса ячĕç. Кунта лараканнисем вĕсене кăп'ăрах сырса илчĕç. Кашниех вĕсен хушшинче паллана çынсем çук-ши, тесе шырарĕ. Шавлă калаçу пуçланса кайрĕ, ыйтса пĕлме тытăнчĕç: ăçтисем, мĕнле çынсем, епле лекнĕ, халăх хушшинче мĕн хыпар пур...

Ыттисемпе пĕрле Ванюшка та вĕсем патне пырса тăчĕ. Пурте вĕсем çав тери ырханланса кайнă, салху сăн-питлĕ. Хăшĕсен хĕненипе пичĕ-куçĕсем кăвакарса ларнă, теприсен кĕпи-тумтирĕ çурăлса, таткаланса пĕтнĕ, хăшĕ-пĕрисен урисем шыçа-шыçа тухнă. Хăрушă!..

Чылайран тин таврăнчĕ вăл Санькăпа Микола пичче патне. Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕç.

— Хăвалаççĕ те хăвалаççĕ пирĕн çынсене, пурне те чура тăвасшăн,— терĕ унтан Микола пичче.—Мĕн чухлĕ куççулĕ, мĕн чухлĕ хуйхă... Анчах пурпĕрех шалчи тулать-ха вăл Гитлерăн, нумаях ашкăнаймĕ! Пуçсене усма кирлĕ мар. Хуть те мĕнле хурлăх пулсан та, парăнма юрамасть. Парăнман çын вăл, юлашкинчен, пурпĕр çĕнтерет. Çĕнтерет те — тата лайăхрах пурăнма пуçлать, мĕншĕн тесен пурнăç хакне ытларах пĕлекен пулать.— Вăл калама чарăнса пĕр хушă тем çинчен шухăшларĕ.

Унтан ачасене шăппăн-шăппăн каларĕ:— Ан хăрăр. Эпир пурпĕр хăтăлатпăр. Каймастпăр эпир каторгăна. Курăр акă. Анчах эсир манран пĕр шит те ан уйăрлăр, эпĕ хушнисене пурне те тĕп-тĕрĕс туса пырăр.

Микола пичче çав тери ĕнентермелле каларĕ. Халлĕхе ним тĕлли-палли те пулман пулин те, ачасен чĕрисенче тыткăнран çăлăнас шанчăк çуралчĕ...

## XV

Хĕвел аннă вăхăтра фашистсем МТС килхушшинчи халăха кирпĕчрен тунă вăрăм сарайне хăваласа кĕртрĕç. Мирлĕ вăхăтра кунта машинăсем юсамалли мастерской пулнă пулмалла,— Ванюшка шала кĕрсенех тĕрлĕрен станоксем, сунталсем тăнине, тимĕр хатĕрĕсем йăваланса выртнине асăрхарĕ, сарайăн стенисем те тĕтĕм-хăрăмпа хуралса ларнă-мĕн...

— Эпир ĕнер каç ав çавăнта выртнаçнăччĕ,— терĕ Санька, сарайне кĕрсенех сулахаялла тĕллесе кăтартса.

Вĕсем — Микола пичче, Санька, Ванюшка — çав инçетри кĕтесселле кайрĕç. Пысăках мар улăм купи патне çитсен, Санька тӳрех ун çине ларчĕ.

— Çакă пирĕн йăва...

— Аван, çĕр çинче выртниех мар,— терĕ Ванюшка.

Сарайне халăх тулчĕ, кĕçех ниçта пĕр пушă вырăн та юлмарĕ. Пур енчен те тыткăна лекнĕ çынсем пĕрпĕринпе хуллен, шăппăн калаçни илтĕнчĕ. Пирĕн туссем хушшинче те, вĕсем улăм çине пĕр-пĕрин çумнерех йăпшăнса выртсан, майĕпе сăмах пуçланса кайрĕ.

Ванюшкăн паçăрах Санька çинчен çав тери пĕлесси килчĕ: инçетри Чăваш çĕршывĕнчен епле лекнĕ-ха вăл кунта, мĕншĕн икĕ çула яхăн Микола пичче патĕнче пурăннă тата лагере мĕнле килсе çакланнă? Ытла та тĕлĕнмелле-çке вăл! Халь ĕнтĕ, тĕттĕм сарайĕнче, улăм çинче юнашар выртма тӳр килсен, урăх ним çинчен те калаçмалли çук чух, вăл унтан майĕпе ыйтма тытăнчĕ.

— Итле-ха, Саня... Епле-ха эсĕ...

— Мĕн?

— Атăл ҫинчен ҫакăнта ҫити килнĕ? Эсĕ ҫуралса ҫитĕннĕ вырăнсене фашистсем ҫитмен-ҫке унта?

— Ҫитмен, теҫҫĕ...

— Апла-тăк — епле майпа лекнĕ эсĕ вĕсен аллине? Ансăртран-и вăл?

— Мĕнле калас сана...— Санька ассăн сывласа илчĕ те пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕ, унтан вара хăйĕн хурлăхлă калавне пуҫласа ячĕ.

— Ансăртран теме те пулать, анчах, тепĕр майлă шутласан, ăнсăртран та мар... Манăн атте ҫар шкулĕнчен вĕренсе тухнă та командир пулнă. Малтан эпир Инҫетри Хĕвелтухăҫĕнче пурăнаттăмăр, унтан—1940 ҫулта — ăна хĕвеланăҫне, Рава-Русска хули хыҫне куҫарчĕҫ. Лайăх пурăнаттăмăр эпир унта. Атте службăра тăнă ҫĕрте ятарласах командирсен ачисем валли шкул пурччĕ. Эпĕ ĕнтĕ пиллĕкмĕш класс пĕтерсе улттăмĕшне куҫаттăм... Сасартăк вăрҫă пуҫланчĕ. Атте, пограничник пулнипе, фашистсем пирĕн чикĕ патне ҫитсе тухсанах ҫапăҫăва кĕрсе кайнă. Пире, командирсен ҫемйисене, ҫав кунах хĕвелтухăҫнелле ăсатма тытăнчĕҫ. Астăватăп, пире темле пĕчĕк станцире поезд ҫине лартса илсе кайрĕҫ. Сĕм ҫĕрле, тĕттĕм... Анчах ҫуллахи каҫ кĕске вĕт вăл. Тул ҫутăличчен эпир нумай та каяйман. Хĕвел тухнă-тухманах пирĕн эшелона тăшман самолечĕсем хăваласа ҫитсе ун ҫине бомбăсем ывăтма тытăнчĕҫ... Ҫав тери хăрушă бомбежка пулчĕ вăл,— нимĕнле сăмахсемпе те каласа пама пĕлес ҫук ун ҫинчен! Темĕн чухлĕ халăх пĕтрĕ, поезда турпас туса хучĕҫ, ҫунтарса ячĕҫ... Эпир виҫҫĕмĕр — анне, манăн йăмăк Рина (вăл манран икĕ ҫул кĕҫĕнччĕ) — поезд чарăнсанах, пĕтĕм япаласене пăрахса, вакунран сиксе тухса хирелле тартăмăр та темиҫе сехет хушши ҫӳлĕ тырă ăшĕнче выртрăмăр. Унтан, самолет сассисем илтĕнми пулсан, каллех чугун ҫул патнелле тухрăмăр. Епле те пулсан кил еннелле каймалла-ҫке... Анчах кунтан малалла поездпа каясси пулмарĕ, мĕншĕн

тесен чугун çула пĕтĕмпех ишĕлтерсе пĕтернĕччĕ. Вара эпир сывă юлнă ытти çынсемпе пĕрле хĕвелтухăçнелле çурранах утрăмăр... Тепĕр кунне, ир енне, темле станцине çитсе тухрăмăр. Ăна çунтарса янăччĕ ĕнтĕ, ăçта ан пăх — пур çĕрте те тĕтĕм, хăрăм, кăвар. Çапах та пире станцирен пĕр-ик километр аякра тăракан поезд çине вырнаçтарса илсе кайрĕç. Ну, тен, хăтăлатпăр пулĕ-ха, тесеттĕмĕр ĕнтĕ. Пулаймарĕ... Нимĕçсем эпир çитсе тухас тепĕр станци патне самолетсемпе пырса пысăк десант антарма ĕлкĕрнĕ пулнă та, çавсем пирĕн поезда станцине çитичченех пулеметсенчен персе кĕтсе илчĕç. Поездпа килнисенчен нумайăшĕ вилчĕç, нумайăшĕ аманчĕç... Юлашкисене, сывă юлнисене, поезд çинчен хăвалаласа антарчĕç те пĕр çĕрелле пухса ухтарма тытăнчĕç. Камăн мĕнле хаклăрах япала пулнă — сехетсем, çĕрĕсем, хăлха алкисем — пурне те тăпăлтарса илчĕç. Çакăнта вара манăн аннен пĕтмелле пулчĕ...

Санька калама патах чарăнчĕ, çак пур хăрушла ĕçсене аса илнипе унăн чĕри ытла та ыратса кайрĕ пулмалла. Ванюшка та ним чĕнмесĕр выртрĕ, мĕншĕн тесен вăл та хăйĕн амăшне аса илчĕ. Нимрен те хаклă-çке вăл анне тени, ăна вăхăтсăр çухатма тӳр килсен — вăл нихçан та асран каймасть!

— Мĕнле пулчĕ вара вăл?— шăппăн ыйтрĕ Ванюшка.

— Пĕр вăрăм, хыткан, шуйттан тĕслĕ фашист, офицер, анне аллинчи сумкăна карт! тытса илсе уçрĕ те тӳрех аттен ылтăн сехетне тупса кăларчĕ. Куçĕсем алчăрасах кайрĕç çакăн, мĕншĕн тесен сехечĕ калама çук чаплăччĕ... Ăна ман аттене 1938 çулта Хасан кӳлли патĕнче Япони самурайĕсене хирĕç паттăр çапăçнăшăн тав туса оборона халăх комиссарĕ ячĕпе парнеленĕччĕ. Унăн пĕр вăчăришĕн аттене пин тенкĕ пама пулнăччĕ, мĕншĕн тесен вăл тăп-тăр ылтăнран тунăскерччĕ те, виçĕ шит тăршшĕччĕ... Ну, паллах ĕнтĕ, анне ним те шарламарĕ,— камăн вилес килтĕр? Сехечĕ-мĕнĕ — мур патне, пуç сывă юлтăр... Анчах та леш бандита çавăн пек хаклă япалана

туртса илни те ҫитмен вӗт. Вӑл анне пӳрни ҫинче тата ҫӗрӗ пуррине асӑрханӑ. Ҫӗрри — ахальскер, ҫиелтен ылтӑн тӗслӗ туса хунӑскер кӑначчӗ, анчах фашист ӑна хаклӑ япала тесе шутланӑ пулмалла ҫав. Вӑл аннене аллинчен тытрӗ те ҫав ҫӗрре пӳрни ҫинчен туртса кӑларма тапратрӗ. Анне кӑшкӑрса ячӗ, мӗншӗн тесен ҫӗрри питӗ тӑвӑр пулнӑ, ӑна вӑл хӑй те кӑлараймастчӗ. Лешӗ каллех туртрӗ. Анне ыратнине тӳсеймерӗ, унран вӗҫерӗнме пикенчӗ. Вара — ку хӗрарӑм хӑйне хирӗҫ тӑрать, тесе пулас ҫав — фашист йӑпӑр-япӑр пистолетне кӑларчӗ те аннене кӑкринчен персе ячӗ. Анне, ҫавӑнтах ӳксе, пӗр сас кӑлармасӑрах вилсе кайрӗ... Эпӗ фашист ҫинелле ыткӑнтӑм, анчах вӑл мана пӗрре тапсах вӑркӑнтарса ячӗ. Унтан анне патне кукленчӗ те унӑн ҫӗрӗллӗ пӳрнине ҫӗҫӗпе татса илчӗ...

Ванюшка ҫак сӑмахсене куҫсене хупса, шӑлӗсене сыртса итлесе выртрӗ. Чӗри пӑчӑртана-пӑчӑртана илчӗ. Темшӗн, Санькӑн амӑшне ҫавӑн пек тискеррӗн вӗлернӗ нимӗҫ ӑна леш ылтӑн вӑчӑраллӑ Генрих Шварц пекех туйӑнса кайрӗ... Ҫавӑн сӑннех курса выртрӗ вӑл: вӑрӑм, хыткан, шуйттан тӗслӗ... Чӑн та, ку ӗҫ икӗ ҫул маларах, тата кунта мар, пачах урӑх ҫӗрте пулнӑ, анчах кам пӗлет, тен — вӑлах, ҫав урнӑ кашкӑрах?

— Кайран вара пире чугун ҫултан аяккалла хӑваласа кайрӗҫ,— терӗ Санька малалла, хурлӑхлӑн сывласа илсе.— Анне вилли ҫавӑнтах выртса юлчӗ. Эпир, Ринӑпа иксӗмӗр, макӑра-макӑра тата ним ҫименнипе халран кайса утайми пулса ҫитрӗмӗр. Пӗреххут, аннепе пӗрле хамӑра та мӗншӗн вӗлермерӗҫ-ши тесе, пин хут та каларӑм пулӗ...

Санька каллех ассӑн сывласа илчӗ.

— Нумай хӑваласа ҫӳрерӗҫ пире... Пӗр яла илсе пырса пӗр-пӗр выльӑх картине хупса усраҫҫӗ-усраҫҫӗ те татах хӑваласа каяҫҫӗ, унтан каллех ӑҫта та пулин кырса хупаҫҫӗ. Сахалран та пӗр-икӗ эрне сӗтӗрсе ҫӳрерӗҫ ҫавӑн пек. Выҫӑпа аптраса ҫитнипе нумайӑшӗ вил-

чĕç, чылайăшне тата пере-пере пăрахрĕç. Çын утайми пулса çитет те — ăна ĕнсинчен персе, йытă вилли пек, çул çинчен темиçе утăм аяккарах сĕтĕрсе кайса хăвараççĕ... Ну, юлашкинчен эпир вĕсене йăлăхтарса çитертĕмĕр пулмалла. Пĕр ирхине çавăн пек сарайĕнчен кăларчĕç те уя хăваласа тухса вăйлăрах хĕрарăмсене уйăрса илчĕç, ыттисене: «Килĕрсене кайăр!»— терĕç. Анчах пирĕн ăçта кайма пĕлес-ха? Никам та çук пирĕн,— аннене вĕлерчĕç, атте вăрçăра... Тăркаларăмăр-тăркаларăмăр та, хамăра халь çеç илсе тухнă поселока каялла таврăнса, пĕр пўрте кĕтĕмĕр — мĕн те пулин çимелли ыйтма. Шăпах çак Микола пичче килĕ пулнă вăл. Арăмĕпе иккĕшĕ те калама çук ырă кăмăлпа йышăнчĕç пире: апат çитерчĕç, ыйтса пĕлчĕç, тем пекех хĕрхенчĕç... Апат çикелесен, кăштах кансан эпир тухса кайма хатĕрлентĕмĕр, анчах Микола пичче ямарĕ. «Сирĕн ниçта каймалли те çук вĕт, юлăр пирĕн патра, пурăнкалăпăр мĕнле те пулин»,— терĕ. Паллах, эпĕ пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм. Вара вĕсем пирĕншĕн аттепе анне пекех пулчĕç, хăйсен ачисене пăхнă пекех пăхса усрарĕç... Ĕмĕрне те, виличчен те манас çук вĕсем пире мĕнле ырă тунине!

— Хăйсен ачисем çукчĕ-и?— ыйтрĕ Ванюшка.

— Ывăлĕ пулнă та — вăрçа кайнă.

— Тыткăна мĕнле майпа лекмелле пулчĕ вара?

— Пĕр çулталăк çурă иртсен, нимĕçсем Микола пиччесен поселокĕ çывăхĕнчи пĕр завода ĕçе яма пикенчĕç. Микола пичче вăл заводра çирĕм çул ытла слесарь пулса ĕçленĕ, анчах фашистсем валли ĕçлесшĕн пулмарĕ. Темиçе хутчен те чĕнчĕç ăна,— вăл пурпĕр каймарĕ. Юлашкинчен ăна тытса кайрĕç... Заводра ĕçлеме килĕшменшĕн ăна комендатурăра хĕнесе пĕтернĕ, анчах парăнтарайман... Тепĕр эрнерен вара, çĕрле, пирĕн пата виçĕ нимĕçпе икĕ полицай пычĕç те — ăна та, унпа пĕрле мана та илсе тухса кайрĕç. Пĕр уйăх ытла эпир тĕрмере лартăмăр, унтан ак çакăнта илсе килчĕç. Германие ăсатаççĕ пулмалла ĕнтĕ халь...

## XVI

Сарай тăрринчи шăтăк-çурăксем витĕр ирхи хĕвелĕн малтанхи кĕрен пайăркисем шуса кĕрсенех, тулта йытăсем вĕрни, лашасем тапăртатни, нимĕçле командăсем пани илтĕнчĕ. Кĕçех вара сарай алăкĕ уçăлчĕ те, темиçе нимĕç пĕр харăс кăшкăрса ячĕç:

— Встава-айт! Выходить! Всем!

— Скоро! Зейчас!..

Сарайĕнче выртакансем пурте вăранса йăшаланма тытăнчĕç, унтан, нимĕçсем çине-çинех хаяррăн кăшкăрнипе, сике-сике тăчĕç те тулалла тухма тапратрĕç. Халăхпа пĕрле пирĕн туссем те улăм çинчен тăрса алăк патнелле утрĕç, анчах вырăнтан тапраниччен малтан Микола пичче ачасене шăппăн кăна: «Çаксене илĕр, кирлĕ вăхăтра кирлĕ пулма пултараççĕ вĕсем пире» тесе, улăм айĕнчен темиçе тимĕр кăларса тыттарчĕ. Ванюшкăна пысăк плуг уççи, Санькăна алтуйи пек çаврака та сулăмлă болт пачĕ вăл.

— Йĕмĕрсем ăшне пытарăр...

Ыйхăран анчахрах вăраннă, çÿхе тумланнă ачасене ирхи сулхăн çÿçентерчĕ, сарайĕнчен тухсанах вĕсем сиксех чĕтреме тытăнчĕç. Анчах та шăлĕсемпе шаккаса нумай тăмалла пулмарĕ вĕсен. Сарайĕнчен юлашки çынсем тухса пĕтсенех фашистсем вĕсене пилĕкшерĕн-пилĕкшерĕн тăратрĕç те, МТС килхушшинчен кĕпĕртеттерсе кăларса, чугун çул станцийĕ еннелле хăвăрттăн хăваласа кайрĕç.

— Шнель! Шнель!

— Бистро ходить, скоро!—лашисем çинчен саламатсемпе юнарĕç конвоирсем. Ĕлкĕрсе пырайманнисене, такăнаканнисене пуçĕсенчен, çурăмĕсенчен—ăçтан тивнĕ унтан турта-турта çапрĕç, тем тĕрлĕ усал сăмахсемпе вăрçрĕç.

Станцире, запаслă çул çинче, ĕнертенпех пушă эшелон тăнă. Кашни вагон çинех нимĕçле «Нах Дрезден»

тесе çырнă пулнă: ку ĕнтĕ çак эшелон ылханлă Германири Дрезден хулине каяссине пĕлтернĕ...

Чуралăха илсе кайма пухса килнисене кĕçех çав эшелона тиеме тытăнчĕç. Кунта вара каллех ним майсăр шăв-шав пуçланса кайрĕ. Пур енчен те йĕни, ылханни, çуралса ӳснĕ хаклă çĕршывпа сывпуллашса кăшкăрнисем, фашистсем тискеррĕн çухăрса команда панисем, вĕсен йыттисем вĕрни илтĕнсе тăчĕ.

— Пĕр-пĕринчен уйрăлса ан кайăр, пĕрле кĕрĕпĕр,— пăшăлтатса каларĕ ачасене Микола пичче, хăйсене вăрăм вагон умĕнче чарса тăратсан.— Пĕр-пĕрине самантлăха та ан çухатăр!

Çав вăхăтра Ванюшка сасартăк поездăн тепĕр вĕçĕнчен хăйсем патнелле юланутпа Генрих Шварц темскер кăшкăрса, аллинчи саламатне сулкаласа килнине асăрхарĕ. Унăн кăкри çинче яланхи пекех ылтăн вăчăра ялтăртатрĕ...

Ванюшка хăй сисмесĕрех Санькăна хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ.

— Пăх-ха çавна, пăх! Çав мар-и? Çав мар-и?

— Хăшĕ? Кам?— тăруках ăнланаймарĕ Санька.

— Нимĕç! Сан аннӳне вĕлерекенни... Лайăххрах сăнаса, тишкеререх пăх, ав килет!— Шварц çине тĕллесе кăтартрĕ Ванюшка.

Санька куçĕсене чарса пăрахсах пăхрĕ... Пăхнăçемĕн унăн сăнĕ улшăнса пычĕ, тутисем кăвакарса чĕтреме пуçларĕç, куçĕсем хаяррăн йăлкăшма тытăнчĕç.

— Çавă... Çав çĕлен, çавă!— пăшăлтатса илчĕ вăл.— Авă, кăкри çинче пирĕн атте сехечĕн вăчăри йăлтăртатать... Çавах! Мăйракаллă шуйттан! Эх, пăшал пуласчĕ алăра... Ним çине те пăхса тăмăттăм!

— Эпĕ те,— терĕ Ванюшка, час-час сывласа.

Анчах вĕсен тек калаçса тăмалла пулмарĕ. Шварц хăйсем патне çитиччен салтаксем вĕсене кăшкăра-кăшкăра хыçалтан тĕрткелеме тытăнчĕç те, хăмасем тăрăх хăпартса, вагона кĕртсе ячĕç. Кунта вĕсен умĕн те халăх

нумай пулнӑ, вӗсем хыҫҫӑн та нумай ҫынсене кӗртсе тултарчӗҫ. Юлашкинчен вагонра ларма мар — тӑма та вырӑн юлмарӗ, савӑлпа ҫапса хӗссе лартнӑ пекех. Часах вагон алӑкне тул енчен хӑнкӑр-ханкӑр питӗрсе хучӗҫ; шалта каҫхи пекех тӗттӗм пулса тӑчӗ, мачча ҫумӗнчи решеткеллӗ пӗчӗк шӑтӑкран ҫеҫ кӑшт кӑна кун ҫути кӗчӗ.

Алӑка питӗрсе лартсан, вагонри халӑх малтанхинчен те хытӑрах пӑлханса шавлама тапратрӗ.

— Пӗтрӗмӗрех ӗнтӗ... Пуҫӗпех пӗтрӗмӗр!

— Тинех пулас ҫук кун ҫути курасси...

— Тамӑках каятпӑр...

— Шуйттан Германийӗ! Пирӗн ылхан ҫиттӗрех ӑна, вутрах ҫунса кайтӑрччӗ вӑл, кӗл пулса тӑтӑрччӗ!

Ҫӗр ҫын ҫӗр тӗслӗ хурланса калаҫрӗ, ҫӗр тӗслӗ ылханчӗ. Анчах поезд тапранса кайнӑ хыҫҫӑн пӗр сехет пек вӑхӑт иртсен, ҫынсем майӗпе шӑпланма пуҫларӗҫ, мӗншӗн тесен халь тин ним тума та май килмен, темле пӑлхансан та, вӑрҫсан та, ылхансан та усси пулман...

Поезд питӗ хӑвӑрт ыткӑнса пычӗ. Вӑл ӗнтӗ совет ҫыннисене хӗвеланӑҫнелле, тӑван йӑвисенчен инҫетрен инҫете, Германи еннелле илсе кайрӗ. Станци хыҫҫӑн станци иртсе юлчӗ, кустӑрмасем кашни ҫаврӑнмассеренех тискер те хӑрушӑ чуралӑх ҫӗршывӗ ҫывхарчӗ.

Каҫ пулма пуҫласан (ку вӑл вагон маччи ҫумӗнчи шӑтӑкран кӗрекен ҫутӑ тӗксӗмленнинчен палӑрчӗ), ҫак таранччен пӗр сӑмах та хушман Микола пичче хӑйӗн пӗчӗк тусӗсене хуллен кӑна чӗнчӗ.

— Ачасем, эсир кунтах-и? Саня!

— Кунтах,— сас пачӗ Санька.

— Эпӗ те кунтах,— терӗ Ванюшка.

— Ҫывӑрӑр, анчах пӗрле пулӑр!— каллех асӑрхаттарчӗ Микола пичче.

Ҫав вӑхӑтра унӑн пуҫӗнче мӗнле шухӑш, мӗнле ӗмӗт пулнине никам та, вӑл шутрах унӑн ҫамрӑк тусӗсем те пӗлмен.

— Каймастпăр эпир неметчинăна!— тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче çирĕппĕн.— Каймастпăр!..

Вагонта тĕпсакайĕнчи пекех ним курăнми тĕттĕм пулса ларсан, Микола пичче ура çине тăчĕ те темшĕн алăк патнелле кайрĕ. Ачасем, пĕр-пĕрин çумне тайăнса, хăйсем сисмесĕрех тĕлĕрме пуçларĕç, унтан çывăрса та кайрĕç.

Темĕн чухлĕ çывăрнă вĕсем — ăна нихăшĕ те каласа пама пултарайман, анчах иккĕшĕ те пĕр харăсах хăйсене такам хулпуççисенчен лăсканипе тăрук вăранчĕç.

— Хатĕр пулăр,— Микола пичче пит те шăппăн каланине илтрĕç вĕсем.— Пирĕн хăтăлмалли вăхăт çитрĕ... Поезд тепре тапранса кайсанах, сиксе анса юлатпăр...

— Епле майпа?— тĕлĕнсех кайрĕç ачасем.— Алăкне леш енчен питĕрнĕ вĕт?

— Нимĕн те ан ыйтăр,— терĕ вĕсене хирĕç Микола пичче.— Малтан хам сикетĕп, эсир — ман хыççăн... Астăвăр, тытăнса ан тăрăр, унсăрăн пĕрне-пĕри çухатма пултаратпăр. Халь шăпăрт пулăр...

Микола пиччен çак сăмахĕсене илтнĕ хыççăн ачасем мĕн тери пăлханса кайнине каласа пама та май çук. Ытла та савăнăçлă та кĕтмен хыпар пулнă-çке вĕсемшĕн ку: темиçе минутран вĕсем каллех ирĕкре пулма пултараççĕ! Ĕненмелле те мар...

## XVII

Тепĕр кăшт тăрсанах поезд карт! туртăнчĕ. Эшелон тăршшипех буферсем чанкăртатса илчĕç. Кĕçех вара кустăрмасем каллех хăвăртран хăвăрт çаврăнма тытăнчĕç те, поезд, çĕрлехи тĕттĕмлĕхе çурса, кĕмсĕртетсе, чĕтренсе, малалла ыткăнма пуçларĕ. Урнă урхамах пек вĕçтерчĕ вăл хĕвеланăçнелле, ылханлă та хăрушă Германи еннелле...

— Ну, тусăмсем, вăхăт çитрĕ,— терĕ Микола пичче шăппăн.— Малтан — эпĕ, унтан — эсир. Астăвăр, малалла сикĕр, унсăрăн мăйсене хуçма пулать. Поезд иртсе

кайсанах, каялла чупăр, эпĕ сире кĕтсе выртăп. Пурĕ пĕрле пухăнсан — ăçталла каяссине курăпăр. Анлантăр-и?

— Анлантăмăр...

— Хăрамастăр-и?

— Манăн пĕр шик те çук,— терĕ Ванюшка.

— Эп те хăрамастăп,— илтĕнчĕ Санька сасси.

Микола пичче алăка темскерпе хирме пуçларĕ. Пӳрнесем кĕмелĕх хушăк пулсан, вăл ăна икĕ аллипе пĕр харăс тытса пĕррех туртрĕ те тăруках çур метр сарлакăш уçса ячĕ. Алăкран вагона сивĕ çил парлатса кĕрсе кайрĕ. Ачасем Микола пичче çумнех пырса тăчĕç... Ак, халех, халех, Микола пичче сиксенех, вĕсем те вагон çинчен пăрçа пекех тăкăнаççĕ... Çăлăнăç саманчĕ çывăх...

Анчах çак вăхăтра сасартăк пачах кĕтмен ĕç пулса тăчĕ. Микола пичче, сикес тесе, кĕлеткипе кăшт малалла сулăннăччĕ кăна — вагонри темле çын ăна тăрук икĕ аллипе пĕр харăс хулпуççийĕсенчен тытрĕ те пĕтĕм вăйĕпе каялла туртрĕ. Микола пичче сулăнсах кайрĕ, анчах темле тытăнса юлчĕ. Вара леш çын ăна мăйĕнчен пăвса лартса вагон ăшнелле сĕтĕрме тапратрĕ. Хăй хаяррăн хăрлатса илчĕ:

— Тарас шут пур эппин, виле... Çу-ук, пирĕн алăран ьĕçерĕнеймĕн!..

Ачасем темиçе самант хушши, ним тума пĕлмесĕр, хытнă пек пулса тăчĕç. Микола пичче çав такам аллинчен вĕçерĕнме тăрăшрĕ, тем тĕрлĕ пăркаланчĕ, анчах лешĕ ăна ниепле те ямарĕ, пăвнăçемĕн пăврĕ, каялла туртрĕ. Юлашкинчен Микола пичче ăс çитерчĕ: аллисемпе алăк хĕрринчен тытса тăнипех пĕтĕм кĕлеткипе каялла сулăнчĕ те хăйне пăвакан çынна пуçĕпе питĕнчен чышрĕ. Лешĕ вара, ах! тесе, хăрах аллипе тути-çăварĕнчен тытрĕ — питĕ хытă лекрĕ пулмалла ăна! Çав самантра усă курса, Микола пичче вăшт кăна каялла çаврăнчĕ те сутăнчăк пуçĕнчен темскерпе туртса çапрĕ. (Лешĕ чăнах та сутăнчăк пулнă. Çул çинче вагонсене

тул енчен хураллама çуккипе фашистсем кашни ватонах çавăн пек çынсене кĕртсе лартнă-мĕн).

Акă вăл тепĕр аллипе пуçĕнчен çавăрса тытрĕ, унăн шăпăрах юн пĕрхĕнсе анчĕ пулмалла. Тăшмана сывлăш çавăрса илме парас мар тесе, Микола пичче ăна, хăрах аллипе çухинчен тытса, пуçĕнчен тата тепре çапса урайне ӳкерчĕ те, ун çине хăпарса выртса, ăна часрах мăйĕнчен тытма пикенчĕ. Анчах тăшман та парăнасшăн пулмарĕ, вăл та Микола пиччене пырĕнчен ярса илме тăрăшрĕ. Вĕсем хушшинче хăрушă тытăçу пуçланса кайрĕ. Микола пичче, хăй çамрăк мар пулин те, вăйлă пулнă, анчах лешĕ те вăкăр пекех тĕреклĕ-мĕн. Акă, вăл Микола пиччене хăй çинчен сирсе пăрахма пуçларĕ, ăна ĕнтĕ каллех хăрах аллипе пырĕнчен пăчăртаса лартрĕ. Анчах Микола пичче, ăна çӳçĕнчен çавăрса илсе, пуçне урайĕнчен çĕклеме памарĕ.

— Çавах вĕлеретĕп... вĕл-лер-ретĕп... ямастăп!..— шăлĕсене шатăртаттарчĕ сутăнчăк.

Микола пичче каллех меслет тупрĕ. Хăйĕн айĕнче тапаланакан çын урисене сарса янă вăхăтра ăна вăл пĕррех чĕркуççипе çемçе çĕртен тапрĕ.

— Ах...— йынăшса ячĕ те вара лешĕ, Микола пиччен пырĕнчен тытнă аллине ластах ячĕ.

Поезд çаплах малалла ыткăнчĕ, уçă алăкран çил çапрĕ. Вагонри çынсем нумайăшĕ вăранчĕç, алăк патĕнче такамсем йывăррăн хашкаса тăрмашнине уççăнах илтрĕç, анчах мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланаймарĕç.

— Камсем унта?

— Мĕн тăватăр? Кам кĕрешет, мĕншĕн?— тесе ыйтрĕç унтан та кунтан, анчах вĕсене хирĕç чĕнекен пулмарĕ.

Поезд кĕç-вĕçех пĕр-пĕр станцине çитсе чарăнма пултарнă. Нимĕçсем кашни чарăнмассеренех эшелона тăршшĕпех тĕрĕслесе тухнă. Ку станцире те тĕрĕслеççех ĕнтĕ.

Алăк уççине кураççĕ... Вара пĕтĕмпех пĕтме пултарать. Тытаççĕ...

Кĕрешсе халран кайма пуçланă Микола пиччен пуçĕнче çак шухăш çиçĕм пек вĕçсе илчĕ те, вăл:

— Ачасем! Килĕр часрах, çапăр пуçĕнчен çак шуйттана!— тесе кăшкăрчĕ.— Халех, пуçĕнчен, тимĕрпе!..

Унăн пĕчĕк тусĕсем паçăрах ăна пулăшма хатĕр тăчĕç, анчах тĕттĕмре ним тума та пĕлмерĕç. Микола пичче чĕнсен, вара ун патне Ванюшка сиксе пычĕ.

— Ăçта вăл? Хăш тĕлте?

— Ак, ман айра... Çап!

Ванюшка малтан Микола пиччене хыпашласа илчĕ, унтан ун аллине тăшманăн пуçĕ кĕрсе кайрĕ. Çавăнтах вăл ăна аллинчи плуг уççипе икĕ хутчен нач! нач! тутарчĕ.

— Тата çап! Вилтĕр вăл йытă!

Ванюшка умлăн-хыçлăн тата виç-тăватă хут çапрĕ. Лешĕ вара вăрăмăн йынăшса илчĕ те хускалми пулчĕ.

Микола пичче ăна тата пĕр минут пек хăй айĕнче тытрĕ, унтан, вăл тинех сывлакан пулас çуккине кура, йăпăр-япăр сиксе тăрса, унăн кĕлеткине алăк патнелле сĕтĕрсе кайрĕ. Тепĕр самантран тăшман вилли çул хĕрринчи çырма тĕпнелле вĕлт çеç ыткăнса юлчĕ.

— Йытта — йытă вилĕмĕ!..

Поезд халь те малтанхи пекех чарусăр ыткăнса пычĕ. Микола пичче пуçне алăкран кăларса йĕри-тавралла, пĕлĕт çинелле пăхса илчĕ. Кăвак çутă çапма пуçланă иккен. Халь часрах васкамалла, тул çутăличчен ăçта та пулин çитсе пытанмалла!

— Кайрăмăр, ачасем!— чĕнчĕ вăл пуçне каялла çаврăнса.— Тытăнса ан тăрăр! Эпĕ каланисене астăвăр!

Çак сăмахсене каланă-каламанах, унăн кĕлетки вагон алăкĕнче курăнми пулчĕ. Пĕр çур минутран Санька сикрĕ. Ун хыççăн — Ванюшка... Анчах сикиччен малтан вăл каялла çаврăнса пăхрĕ те вагонри пĕтĕм халăх илтмелле кăшкăрчĕ:

— Юлташсем! Алăк уçă! Çăлăнăр! Тарăр!

Вагонран уйрăлсанах, ăна сивĕ çил çавăрса илсе çӳлелле çĕкленĕ пек туйăнчĕ, анчах самантранах вăл, çул хĕрринчи нӳрĕ вăрăм курăк çине ӳксе, канавалла кăлтăрмач пек йăванса анса кайрĕ. Ним ыратни-тунине те сисмерĕ вăл, анчах пĕр-ик минут хушши çĕр çумне йăпшăнса, сывламан пек пулса выртрĕ. Хăй тĕлĕпе юлашки вагон кĕмсĕртетсе иртсе кайсан тин пуçне çĕклесе çӳлелле пăхрĕ.

Тӳпере пăч-пач çăлтăрсем çутăлса тăраççĕ, инçетри пĕлĕт хĕрри илемлĕн шупкаланма пуçланă. Эппин тул çутăласси инçе мар...

Ванюшка сиксе тăчĕ те каялла чупрĕ. Пĕр çĕр метр пек кайсан, вăл Санькăпа тĕл пулчĕ, вара вĕсем чугун çул хĕррипе утрĕç.

Çав вăхăтра, ачасем хăй патне час çитейменшĕн пăшăрханса, Микола пичче темиçе хут та канав тĕпĕнчен тăра-тăра пăхнă. Ачасен мĕлкисене курсан вара çав тери савăнса хыттăн кăшкăрчĕ:

— Часрах, ачасем, часрах, чупăр! Пирĕншĕн халĕ кашни минут та хаклă! Ав, вăрман курăнать, çавăнта пытанăпăр...

## XVIII

...Тепĕр çур сехетрен вĕсем, йĕп-йĕпе тара ӳксе, хашкаса, сĕм вăрмана чупса кĕчĕç. Ачасем те, Микола пичче те çав тери ывăнса çитрĕç, анчах вăрман ăшнелле пĕрикĕ километра яхăн кĕрсе каймасăр чарăнса тăмарĕç. Унтан тарăн çырма тĕпне анса лапсăркка йывăç тĕмисем айне пытанчĕç те сывлăш çавăрса илчĕç.

— Тарса хăтăлтăмăр,— терĕ Микола пичче, çемçе курăк çинче выртса кăштах лăпланнă хыççăн.— Халĕ ĕнтĕ пирĕн малашне мĕнле пурăнасси çинчен шухăшламалла... Чăн малтан, ачасем, пирĕн мĕн те пулин çиес пулать, унсăрăн эпир нумай малалла каяймастпăр. Мĕнле шухăшлатăр эсир?

Ачасем ăна хирĕç нимех те калаймарĕç. Вăрманта ăçта тупас-ха çимелли? Пĕр-пĕр яла кĕрсе ыйтсан кăна... Анчах та каллех нимĕçсем тĕлне пулсан? Тепĕр хут тыткана лекме пулать. Е тата хăрушăрах та пулма пултарать. Тытĕç те — персе пăрахĕç...

— Акă мĕн, ачасем,— терĕ Микола пичче.— Асăрхарăм эпĕ, вăрман хĕрринчех çĕрулми анисем пур... Çавăнта кайса пĕр-иккĕ çимелĕх кăларса килесех пулать. Эсир ларăр çакăнта. Эпĕ кайса килем. Ан хăрăр, нумаях тăмăп. Пĕр витре пек кăларатăп та—каялла... Юрать-и?

— Юрать, Микола пичче!

Чăн та, вăл часах таврăнчĕ, пĕр сехет те иртмерĕ пулĕ. Питĕ васканă пулмалла: паçăр поезд çинчен сиксе анса тарнă чухнехи пекех чăм шыва ӳкнĕ хăй.

— Ну, тусăмсем, выçă вилместпĕр,— терĕ вăл, ачасем умне шултра çĕрулми тултарнă кĕпине пăрахса.— Пĕр виçĕ куна çитет ку пире. Унтан, тен, тата мĕн те пулин шухăшласа тупăпăр.

— Мĕнле пĕçерĕпĕр-ха эпир ăна?— ыйтрĕ Санька.

— Уншăн ан пăшăрхан, чĕрĕллех çитермĕп,— аллипе сулчĕ Микола пичче.— Анчах кунтан вăрман хĕрри ытла сывăх-ха, ăнсăртран темрен тем пулма пултарать. Шаларах кĕрер, пирĕн çав тери сыхланмалла.

Ачасен хырăмĕсем тӳсме çук выçнă, çĕрулми курсан вĕсен пушшех çиесси килсе кайнă, анчах Микола пичче çавăн пек каласанах вĕсем нимĕн те чĕнмерĕç, тӳрех ура çине тăчĕç те ун хыççăн утрĕç. Хĕвел вăрманти чи çӳлĕ йывăççенчен те çӳле хăпарсан тин нихçан этем ури пырса пусман çырмари чăтлăхра чарăнчĕç вара вĕсем.

— Халĕ ĕнтĕ эпир апат пĕçерсе çиме те пултаратпăр. Типĕрех вутă пуçтарăр,— терĕ Микола пичче.

Кунта хăрăк турат нумай пулнă. Ачасем темиçе минут хушшинчех пĕр пысăк купа вутă пухса хатĕрлерĕç.

— Чĕртессе мĕнпе чĕртсе ярăпăр-ха, Микола пичче? — хăйсен шăрпăк çуккине сасартăк аса илчĕ Ванюшка.

Микола пичче ун çине кударах пăхрĕ.

— Эсĕ хăвăн ăслă пуçупа епле шутлатăн?

— Мĕн шутлама пĕлес манăн?— аллисене саркаласа илчĕ Ванюшка.— Йывăçпа йывăçа сăтăрсан кăна...

— Ну, ун пек тăрмашма эпир тахçанхи, авалхи çынсем мар-ха, хăватлă техника ĕмĕрĕнче пурăнатпăр...

Çакăн хыççăнах Микола пичче пиншак подкладки айĕнчен пĕр ывçă веткă тăпăлтарса илчĕ, унтан кĕсйинчен пистолет кăларса çав ваткă çине печĕ. Ваткă тӳрех çунма пуçларĕ. Унтан Микола пичче ваткă çине типĕ çулçăсем хурса вĕрме тытăнчĕ те, темиçе самантранах кăвак тĕтĕм витĕр çулăм курăнса кайрĕ.

— Акă, пулчĕ те хайхи!— терĕ вăл хаваслăн.

Ачасем тĕлĕннипе хытнă пек пулса пăхса тăчĕç. Епле япала ку?Ăçтан сиксе тухрĕ Микола пиччен пистолет? Неушлĕ ăна вăл пĕрмаях пытарса усранă? Пулма пултараймасть. Нимĕçсем кашни арестленĕ çыннах тĕплĕн ухтараççĕ.

Ванюшка тӳсеймерĕ, ыйтрĕ:

— Микола пичче, ăçтан тупрăн ку япалана?

Вăл сылтăм аллин шĕвĕр пӳрнипе пистолетăн спусковой крючокĕнчен туртнă пек туса кăтартрĕ.

— Пăшал çинчен калатăн-и эс?

— Тата. Хăçантанпа вăл санăн? Килтен тухнăранпах-и?

Микола пичче ун çине каллех кударах пăхса илчĕ.

— Ăна турă пачĕ пире... хĕрхенсе.

— Çук, чăннипе каласа пар-ха эсĕ.

— Чăннипех калас килет пулсан — акă мĕн. Эпĕ ăна хамăр пасăр вагон çинче çапса пăрахнă этемĕн кĕсйинчен кăларса илтĕм. Ăна вăл халь пурпĕр кирлĕ мар, анчах пире усăллă пулма пултарать... Ак çак япала та çав бандитăннах...— Вăл йĕм кĕсйинчен кĕмĕл авăрлă чылай пысăк кинжал кăларса кăтартрĕ.— Ку та кирлĕ кунта кирлĕ пулма пултарать... Çапла-и?

— Тĕрĕс, тĕрĕс!— терĕç ачасем.

Типĕ шанкă шатăртатса, тĕтĕмсĕр, хĕрӳллĕн çунчĕ. Часах пĕр купа шĕл-кăвар пулса тăчĕ. Микола пичче ăна патакпа чавса ик еннелле сирчĕ те, вăтăр-хĕрĕх çĕрулми пăрахса, çиелтен вĕсене каллех кăварпа витрĕ. Тепĕр çур сехетрен çĕрулми хатĕр те пулчĕ. Қалама та çук тутлă пулчĕ вăл, çисе тăранмалла мар! Кун пек тутлă апат нихçан та çисе курман пек туйăнчĕ вĕсене...

— Микола пичче,— терĕ Ванюшка çисе тăранма пуçласан,— каласа пар-ха çапах та...

— Мĕн?

— Вагон алăкне мĕнле уçрăн эсĕ? Пире тул енчен питĕрнĕччĕ вĕт-ха. Вагон урлуççийĕсем — апайтурух, ал туни пекех вĕт!

— Чăнах, мĕнле турăн эсĕ вăл ĕçе?— ыйтрĕ Санька та.— Питĕ тĕлĕнмелле...

Микола вĕсем çине кăмăллăн пăхса илчĕ.

— Эпĕ ватă слесарь вĕт, ачамсем,— терĕ вăл.— Леш МТС сарайĕнче, сире тимĕрсем панă чух, эпĕ хам рашпильпе ножовка тупса чиксеттĕм. Çавсем пулăшрĕç мана... Эсир çывăрнă чух эпĕ çĕрĕпех ĕçлерĕм. Алăкĕ уçăлма пуçласан вара сире вăратрăм.

Ачасем ун калавне çăварĕсене карсах итлерĕç...

Çырма тĕпĕпе тăп-тăрă сивĕ çăлкуçĕ шăнкăртатса юхса выртнă. Çисе тăраннă хыççăн туссем çав шыва анса ĕçрĕç, пичĕсене çурĕç.

— Ну, мĕнле пек халь, ачасем?— ыйтрĕ Микола пичче.— Вăй кĕчĕ-и пăртак?

— Қĕчĕ, кĕчĕ... Питĕ лайăх пулчĕ, тавтапуçах сана!

— Эппин малалла кайма пултаратпăр?

— Пултаратпăр!

Микола пичче пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ, унтан татах ачасем çине пăхса илчĕ.

— Анчах ăçта кайăпăр-ха? Йĕри-тавра вăрман, пирĕнсĕр пуçне кунта чĕрчун та çук — кайăксене çеç тĕл пулма пулать... Мĕн шыраса утăпăр çак чăтлăхсенче? Епле шутлатăр эсир?

Ку сăмахсем ачасен кăмăлĕсене хуçсах пăрахрĕç. Нимĕн те каламарĕç вĕсем. Чăнах та, ăçталла çул тытмалла пулать халь? Киле? Çитменнине Ванюшкăпа Санькăн килĕсем те çук. Микола пиччен хăйĕн те килĕ кунтан пин çухрăмра пулĕ... Тата кайма та хăрушă, вăрмантан тухсанах фашистсен аллине лекме пулать, вара каллех — чуралăх... е вилĕм.

Ачасем салхуланса кайнине кура, Микола пичче хăвăрт кăна ура çине тăчĕ те:

— Ан пăлханăр, тусăмсем, ан хуйхăрăр,— терĕ.— Кулянмалли нимĕн те çук. Эпĕ сире юри каларăм. Пĕтместпĕр. Халь кашни вăрмантах камсем пуррине пĕлетĕр-и?

— Пĕлетпĕр, — терĕ Ванюшка çирĕппĕн. — Партизансем...

— Атьăр эппин, шыраса тупар вĕсене.

## XIX

Чылай вăхăт утрĕç вĕсем вăрманпа. Темиçе çырма урлă каçрĕç, пĕринче, лапам вырăна çитсе тухсан, вăрăм хăмăшпа витĕннĕ пысăк шурлăха пырса тăрăнчĕç, ун тĕлĕпе иртсе кайма 4—5 километр тавраран кайма тӳр килчĕ. Çулĕ питĕ йывăр пулчĕ, кашни пусмассерен урасем вуншар çул купаланса çĕрсе выртнă çулçăсем ăшне путаççĕ, пĕрмай урлă-пирлĕ выртакан йывăççем урлă каçма тивет.

Хĕвел каçалалла сулăнсан, вăрман сасартăк вĕтелме, унтан сайраланма пуçларĕ.

— Асăрханарах пырас пулать кунта,— терĕ Микола пичче, малалла тинкерсе пăхса.— Кам пĕлет, тем шуйттанĕ пур унта, малта... Ансăртран каллех тăшман капканне лекес мар...

Вăл çурăмĕ хыçĕнчи çĕрулми хутаççине çĕре пăрахрĕ те Ванюшка çине пăхса илчĕ.

— Атя-ха, эпир санпа разведкăна кайса килер. Санька çакăнтах, йывăççем хыçĕнче кĕтсе выртăр. Хăрушши

нимех те çук пулсан, эпир сана куккукла авăтса чĕнĕпĕр...

— Юрĕ,— терĕ Санька.

Микола пиччепе Ванюшка малалла кайрĕç. Йывăçсем сайраланнăçемĕн сайраланнă пирки, вĕсем çав тери асăрханса, йĕри-тавралла пит те тимлĕн пăхса, пĕр йывăç тĕми патĕнчен теприн хыçне куçса пычĕç. Микола пичче малта, Ванюшка — ун хыçĕнче...

Сасартăк Микола пичче чарăнса тăрса аллине çĕклерĕ. Ку ĕнтĕ Ванюшкăна: «Тăр!» тени пулчĕ. Ванюшка, тăпах чарăнса, йывăç çумнерех йăпшăнчĕ.

— Итле,— терĕ Микола пичче шăппăн, самантлăха çамрăк тусĕ еннелле çаврăнса.— Итле лайăхрах...

Ванюшка итлерĕ... Малтан ăна нимех те илтĕнмен пек туйăнчĕ, юнашар йывăç туратти çинче ларакан темле хĕрлĕ пĕсехеллĕ пĕчĕк кайăк чĕвĕлтетнĕ сасă çеç янăрарĕ хăлхара, анчах ик-виç минут пек итлесе тăрсан, таçта инçетре темскер кĕмсĕртетнĕн туйăна пуçларĕ. Çав вăхăтра Микола пичче лап! выртрĕ те вăрăм курăк ăшшĕн малалла хырăмпа шуçса кайрĕ. Ванюшка та çавăн пекех турĕ.

Пĕр 200—300 метр упаленсе пычĕç вĕсем. Куна валли сахалран та çур сехет кирлĕ пулчĕ. Микола пичче тек-текех пуçне çĕкле-çĕкле пăхрĕ, каллех малалла шурĕ, унтан, тепре çĕклесе пăхсан, чарăнчĕ те — тек вырăнтан хускалмарĕ. Ванюшка, ывăннипе хашкаса, унпа юнашар пырса выртрĕ.

— Куратăн-и?— Микола пичче пуçĕпе малалла сулса кăтартрĕ.

— Нимĕн те курмастăп...

— Эсĕ çав икĕ хурăн хушшипе пăх. Тĕмескеллĕ вырăн... Шоссе çулĕ вăл.

— Мĕн-ха вара?— ăнланмарĕ Ванюшка.

— Ку пире ик япала çинчен систерет... Пĕрремĕшĕ, пирĕн ку вырăнтан халлĕхе аяккарах каяс пулать: фашистсем çулсене хытă сыхлаççĕ. Куратăн пуль—çулăн

ик енĕпе те йывăçсене касса тăкнă... Иккĕмĕшĕ, çак таврара партизансем пулмалла: вĕсем яланах тăшманăн мăн çулсем тăрăх иртсе пыракан обозĕсене тапăнаççĕ, çулсене минăласа вĕсен машинĕсене сиктереççĕ...

— Эпир тĕл пулатпăр-и эппин вĕсене?

— Шыраса тупатпăр...

Икĕ тус çапла шăппăн калаçса выртнă вăхăтра инçетре, сылтăм енче, каллех паçăрхи пек кĕмсĕртетнĕ сасă илтĕнчĕ. Микола пичче чавсисем çине çĕкленсех итлеме тытăнчĕ. Ванюшка та итлерĕ, анчах ку мĕн шавĕ пулнине ăнланаймасăр Микола пичче çине ыйтуллăн пахса илчĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?

— Çул тăрăх йывăр машинăсем килеççĕ... Хăвăрт килеççĕ пулас. Каяр кунтан часрах.

Вĕсем пĕр харăсах сиксе тăчĕç те Санькăпа çĕрулми хутаççине хăварнă çĕрелле чупса кайрĕç. Унтан вĕсемпе пĕрле каллех çăра вăрман ăшнелле кĕрсе çухалчĕç.

Ĕнтĕ каç та пулма пуçларĕ. Сывлăш сулхăнланчĕ. Туссен хырăмĕсем те каллех выçрĕç. Анчах Микола пичче темшĕн чарăнас темерĕ-ха, ачасене çаплах малалла илсе кайрĕ. Вăл ĕнтĕ хăйсене çĕр каçмашкăн майлăрах, улахрах вырăн тупма ĕмĕтленчĕ пулмалла.

Кайсан-кайсан, кĕтмен çĕртен вĕсем паçăрхи пекех пысăк шурлăх хĕррине пырса тухрĕç. Урасем айĕнче шыв лăчăртатма тытăнчĕ, вĕсем путма пуçларĕç.

— А, шуйттан, — вăрçса илчĕ те Микола пичче, çурăмĕ çинчи çĕрулми хутаççине лайăхрах вырнаçтарса, сылтăмарах пăрăнса, хытăрах утса кайрĕ. Ачасем ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пычĕç.

— Тӳсĕр ĕнтĕ пăртак, тӳсĕр епле те пулин, час канăпăр акă, каçхи апат та çиĕпĕр,— терĕ Микола пичче, хăйĕн пĕчĕк тусĕсем ывăнса çитме пуçланине курса.

Вĕсем лапам вырăнтан пысăках мар сăрта хăпарчĕç. Кунта, йывăçсем хушшипе, ансăр сукмак йĕрĕ авкаланса выртнă. Ун çине ĕнтĕ малтанхи сарă çулçăсем тăкăн-

нă. Микола пичче сукмак çине пит те тинкерсе пăхрĕ. Çын ури йĕрĕ çук. Вара вăл ачасене пуçĕпе сулахаялла сулса кăтартрĕ те сукмакпа малалла утрĕ.

Анчах нумай та каймарĕç вĕсем...

Сукмак çырманалла пăрăннă тĕле çитсен, сылтăм енче сасартăк ик-виçĕ йытă вĕрни илтĕнчĕ. Хаяррăн, антăхса каяс пек, хушăран темле йынăша-йынăша вĕресçĕ... Малта пыракан Микола пичче юпа пек чарăнса тăчĕ. Ванюшкăпа Санька унăн сăнĕ сасартăк улшăнса, тĕксĕмленсе кайнине асăрхарĕç.

— Мĕне пĕлтерет ку?

— Нимĕçсем, йытăсемпе...— пăшăлтатса илчĕ Микола пичче кăвакарнă тутисемпе.—Çăлăнас пулать! Чупар!

Çав самантрах вăл сукмакран пăрăнса каялла, паçăрхи шурлăх еннелле ыткăнчĕ. Ачасем те унтан юлмарĕç. Вĕсем шурлăх еннелле тӳрĕрен тӳрĕ, тункатасем урлă сиксе, йывăç тĕмисене сирсе, ним çине пăхмасăр чупрĕç. Туратсем вĕсене пичĕсенчен çапрĕç, тумтирĕсене çурчĕç, алли-урисене чĕркелерĕç. Анчах вĕсен халĕ епле пулсан та нимĕç йыттисенчен — тăватă уралисенчен те, икĕ уралисенчен те — тарса ӳкмелле, хăтăлмалла пулнă. Вĕсем, шыва кĕрсе ура йĕрĕсене çухатас тесе, часрах шурлăх патнелле васкарĕç.

Çук, ĕлкĕрме пулмарĕ. Йытă сассисем çывăхрах, çывăхрах ĕнтĕ...

— Таркăнсем кунта, пирĕн умра, килсе тытăр вĕсене часрах,— тесе хăйсен хуçисене йыхăрнă пек вĕрчĕç вĕсем. Вĕрчĕç кăна мар, йынăшрĕç, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕç.

Халех, халех хăваласа çитеççĕ ĕнтĕ вĕсем...

Ванюшка каялла çаврăнса пăхрĕ те çăмламас, хура, хĕрлĕ чĕлхине тем тăршшĕ кăларса янă пысăках мар йытă йывăç тĕми урлă сиксе каçнине курах кайрĕ. Тепĕр самантран вăл, Ванюшка хыççăн чупса пыракан Санькăн çурăмĕ çине сиксе ларса, ăна ĕнсинчен çыртса çĕре персе антарчĕ.

— А-а-а!— вăрăмăн йынăшса ячĕ Санька.

— Микола пичче-е! Вĕлере-ет!— кăшкăрчĕ те Ванюшка, тӳрех Санькăна çăлма ыткăнчĕ. Çав самантрах тĕмĕсем хыçĕнчен тата икĕ йытă вăркăнса тухрĕç. Пĕри Ванюшка çине сикрĕ, ăна пырĕнчен хыпса илме пикенчĕ. Йыттăн юнпа тулнă куçĕсем Ванюшкăн пичĕ умĕнчех ялкăшса илчĕç... Ванюшка ăна ик аллипе харăс чышса каялла ӳкерчĕ, анчах йытă каллех ун çинелле сикрĕ. Ванюшка сулăнса кайрĕ, çапах та йытă хăйне çыртнă вăхăтра Ванюшка ăна, мĕнпур вăйне пухса, пуçĕнчен çапрĕ. Йытă ӳкрĕ. Тепĕр хут тăма ĕлкĕриччен Ванюшка йытта кайри урисенчен ярса тытрĕ те сывлăшра çĕклесе çавăрчĕ.

— Йывăç çумне! Пуçĕпе ав çав йывăç çумне çап!..— Микола пичче кăшкăрнине илтрĕ Ванюшка.

Ванюшка йытта пĕтĕм вăйпа тепре çавăрса ячĕ те пуçĕпе йывăç çумне начлаттарчĕ. Йытă йынăшса, пур шăнăрсемпе туртăнса, тапкаланса илчĕ.

— Тата çап! Тата!— кăшкăрчĕ Микола пичче.

Ванюшка йытта умлăн-хыçлăн тата виçĕ хут çавăрса çапрĕ. Йыттăн пуçĕ чĕп-чĕрĕ юн пулчĕ.

— Аминь,— терĕ Микола пичче.— Пăрах.

Йытă виллине аяккалла ывăтса, Ванюшка тинех Микола пиччене тинкерсе пăхрĕ. Вăл хайхи кĕмĕл аврлă кинжала тытса тăрать. Кинжалĕ чĕп-чĕр юн. Çывăхрах тата икĕ йытă вилли выртаççĕ. Ванюшка ку йытăпа çапăçнă хушăра вăл чăн малтан сиксе тухса Санькăна пусса антарнă йытта та, кайранхине те чиксе пăрахнă иккен. Санька йытă виллисенчен инçетре те мар, курăк çинче, аллипе ĕнсинчен тытса ларать, унăн пичĕ тăрăх юн сăрханать...

— Хытах çыртрĕ-и?— ун патнелле васкаса пычĕ Ванюшка.

— Чутах вĕлеретчĕ, эсрел.

— Уншăн хăйсене те тирпейлерĕмĕр...

— Тăвата ураллисенченех хăрамăпăр-ха,— терĕ аллисене курăкпа тасатса таракан Микола пичче,— анчах вĕсем хыççăн икĕ уралла йыттисем килсе тухма пултараççĕ. Ухутана пĕрле тухнă ĕнтĕ вĕсем... Тарас пулать кунтан часрах.

Вăл çапла каларĕ çеç — сулахайра, йытăсем килнĕ енче, икĕ хутчен автомат черечĕсем шатăртатрĕç. Унтан инçетре çын кăшкăрнă сасă илтĕнчĕ:

— Хай! Хай!..

Ку сасă, вăрман тăрăх хутлăн-хутлăн янраса, таçта çитиех сапаланса кайрĕ: ай! ай! ай!

— Ав вĕсем, анчăкĕсене шыраççĕ,— терĕ Микола пичче.

Туссем тек пĕр минут та тытăнса тăмарĕç. Виçĕ усал йытă вилли çеç выртса юлчĕ тĕмĕсем хушшинче.

## XX

Пăч тĕттĕм пулса çитрĕ. Таркăнсем, каллех тарăн çырмана анса, ватă чăрăш айне йăпшăнчĕç. Вĕсем ĕнтĕ тек малалла кайма та пултарайман. Кун каçа çӳресе ывăннипе, ӳсĕрсем пек сулăнкаласа, кĕç-вĕç ӳкес пек пынă юлашки самантсенче.

— Ну, ачасем, сире çĕрулми пĕçерсе çитермеллеччĕ те ĕнтĕ, халь юрамасть,—терĕ Микола пичче çĕре ларсанах.— Çĕрле пирус çути те таçта çитиех курăнать. Ирхине иртерех пĕçерĕпĕр; кун çутинче çулăм та курăнмасть, ирхи тĕтрепе хутăш тĕтĕм те палăрмасть...

Çак сăмахсене вăл темшĕн хăй айăпа кĕнĕ пекрех каларĕ. Анчах унăн çамрăк тусĕсем çиесси çинчен шухăшламан та: вĕсен çав тери çывăрас килнĕ.

— Мана нимĕн те кирлĕ мар,—терĕ Ванюшка, чăрăш айне кĕнĕ-кĕмен тăсăлса выртнăскер.

— Манăн куç та хупăнсах ларать,— терĕ Санька.

Тепĕр самантран вĕсем вилнĕ пекех çывăрса кайрĕç. Микола пичче хăй те, ачасемпе юнашар вырнаçса, тĕлĕрме пуçларĕ.

Малтанах вăрманта лăпкăччĕ, çӳлĕ йывăç тăррисем кăна пĕр-пĕринпе пăшăлтатса хумханкалатчĕç. Анчах сасартăк хĕвеланăç енчен çил кашласа килчĕ, вăрман шавлама пуçларĕ, йывăçсем авăнса шăтăртатма тытăнчĕç, унта та кунта хăрăк туратсем хуçăла-хуçăла çĕрелле патлатрĕç.

Вăрманта тăвăл пуçланчĕ...

Вайлă çил хăйĕнпе пĕрле хура пĕлĕтсем хăваласа килчĕ, вăрман çине çумăр чашлаттарма тапратрĕ. Çăра туратлă лăпсăркка чăрăш айĕнче çывăракансене вăл тивеймерĕ, вĕсем кунта лайăх лупасайĕнчи пекех выртрĕç, анчах вăрман çав тери хытă кашланипе Микола пичче вăранчĕ те кайран ниепле те çывăрса каяймарĕ.

Çавăн пек чух вара çын хăй сисмесĕрех шухăша каять. Шухăшсем пĕрин хыççăн тепри, çăмха çиппи пек, тăсăлса пыраççĕ, вĕсен пуçламăшĕ те, вĕçĕ те çук... Микола пиччен те çавăн пек пулчĕ халь. Тем çинчен те шухăшларĕ вăл. Инçетри килне, хăйĕн лăпкă та сăпайлă карчăкне, унпа пĕрле юлнă Санька йăмăкне аса илчĕ. Мĕнлерех пурăнаççĕ-ши вĕсем?.. Анчах пуринчен ытла унăн шухăшĕ халь хăйĕнпе юнашар выртакан ачасем тавра çаврăнчĕ.

Ачасемшĕн вăл çак вăхăтра пĕртен-пĕр шанăç пулнă. Анчах çăлса çитерме пулĕ-ши вĕсене? Халлĕхе нимĕн те паллă мар-ха... Вĕсем вăрманта сунарçăсенчен пытанакан кайăксем пек çӳреççĕ... Паян авă вĕсене йытăсемпе хăваларĕç. Юрать, ĕç телейлĕ вĕçленчĕ. Ыран мĕн пулĕ? Эх, часрах пĕр-пĕр партизансен отрядне тĕл пуласчĕ!

Тăвăл кĕрлерĕ-кĕрлерĕ те майĕпен лăпланма пуçларĕ. Часах çумăр та чарăнчĕ. Вăрман шăпланчĕ. Анчах çав самантра тӳпере сасартăк самолет сасси илтĕнчĕ. Вăл çывхарнăçемĕн çывхарса килчĕ, кăшт тăрсан самолет пирĕн туссем пытаннă тĕлтенех ĕрлесе иртсе кайрĕ.

— Шуйттан фашисчĕсем, çĕрле те çывăрма пĕлмеççĕ, чăн-чăн выçă кашкăрсемех çав!— çилĕпе ятлаçса ил-

чĕ Микола пичче хăй ăшĕнче.— Пырса тăрăнасчĕ пĕр-пĕр çӳлĕрех юман çине!

Пилĕк минутран ытла та иртмерĕ пулĕ — самолет, каялла çаврăнса пырса, хăй малтан вĕçсе килнĕ еннелле çул тытрĕ. Тепĕр çавăн чухлĕ вăхăтран каллех çаврăнса çитрĕ.

— Мĕнле урса кайнă нимĕç ку? Мĕн мурĕ шырать вăл ку тĕлте?— тĕлĕнсе ларчĕ Микола пичче.— Çак тĕттĕмре пурпĕр нимĕн те кураймастăн вĕт, йытă!— туратсем хушшипе пĕлĕтелле пăхрĕ вăл.

Самолет тата тепĕр хут çаврăнса çитрĕ. Халь вăл паçăрхинчен чылай çӳлте вĕçни сисĕнчĕ.

— Вăт, эсрелĕ!— вăрçса илчĕ Микола пичче.—Ахăртнех, партизансене шырать пулĕ-ха!

...Тăваттăмĕш хут вĕçсе иртнĕ хыççăн самолет урăх таврăнмарĕ. Унăн сасси инçетрен инçете кайса пычĕ. Микола пичче каллех ачасем çумне выртрĕ, анчах унччен те пулмарĕ — çывăхрах, пĕр çĕр метрта, йывăç туратсем чаштăртатрĕç, шăтăртатрĕç. Çав самантрах:

— Ы-ых, шуйттан!— терĕ такам хыттăн.

Çакна Микола пичче уççăнах илтрĕ те вăшт кăна ура çине тăчĕ. Унăн сылтăм алли пистолет аврине чăмăртаса тытрĕ, чĕри хыттăн-хыттăн тапма пуçларĕ.

— Мĕн мурĕ? Кам пулма пултарать?..

Вăл часрах ачасене вăратасшăн пулчĕ, анчах ку шухăша çавăнтах пăрахрĕ, мĕншĕн тесен ыйхă уçăлман ачасем ним пĕлменнипе калаçма, ытса пĕлме пултарнă, анчах халь пĕр сас та кăларма юраман.

— Мĕн тăвас?

Микола пичче темиçе самант иккĕленсе тăчĕ. Тен, хăвăртрах аяккалла тармалла? Е халлĕхе тăхтас-и? Çапах та, мĕнле çын-ха вăл? Нимĕç-ши? Анчах вырăсла вăрçса илчĕ-çке? Тен, вăл та нимĕçсенчен тараканскер, кам пĕлет...

Юлашкинчен Микола пичче çав сасă илтĕнне çĕре çывăхарах кайса сăнама шут тытрĕ.

Вăл пистолетне кăларса предохранительне вĕçертрĕ те, шăши патнелле пыракан кушак пек асăрханса, ерипен çырманалла анма пуçларĕ. Кашни пилĕк-ултă утăмранах чарăнса тăрса итлерĕ вăл, анчах çын сасси тек илтĕнмерĕ. Çырма тĕпнерех ансан тин хăйĕнчен сулахаярахра йывăç тураттисем темиçе хутчен силлене-силлене илнине илтрĕ. Туратсене юри такам тыта-тыта лăсканă пек...

— Ластăр-ластăр!.. Ластăр-ластăр!..

Микола пичче тата çывăхарах пычĕ, каллех итлерĕ. Кăшт тăрсан туратсем татах çине-çине силленсе илчĕç те, хыççăнах вырăсла мăкăртатни илтĕнчĕ.

— Эх, шуйттан япали!

— Вырăс. Хăрамаллиех çук,— терĕ те Микола пичче хăй ăшĕнче, сасă илтĕннĕ çĕрелле хăюллăнах утса кайрĕ. Пилĕк-ултă метртанах вара акă мĕн курчĕ вăл: икĕ йывăç хушшинче çын çакăнса тăрать, урисем хăйĕн икĕ метр ытла пулĕ çĕре çитеймеççĕ... Вăл пĕтĕм кĕлеткипех унăн-кунăн пăркаланать, аллисемпе çӳлелле кармашать.

Микола пичче ун çине йывăç хыçĕнчен темиçе минут хушши хытнă пек пулса пăхса тăчĕ те, çын темле кантрасенчен вĕçерĕнме тăрăшнине асăрхаса, вăл парашютист пулнине тавçăрса илчĕ.

— Çӳлтен аннă чух йывăçсенчен çакланса ларнă... Паçăрхи самолет çинчен сикнĕ пуль ĕнтĕ...

Тек тӳссе тăраймарĕ, сăмах хушрĕ:

— Эй, çын! Кам эсĕ?

Сывлăшра çакăнса тăраканни тӳрех хускалкалама тытăнчĕ, анчах нимĕн те чĕнмерĕ. Микола пичче тепĕр хут ыйтрĕ:

— Кам эсĕ, мĕн пулнă сана?

Каллех чĕнмерĕ лешĕ. Тен, ку илтмест пулĕ тесе, Микола пичче ун патнелле темиçе утăм ярса пусрĕ. Çакăнса тăраканни ăна тинех курчĕ пулмалла.

— Ан çывăхарăр ман пата, перетĕп!— терĕ вăл хыттăн.— Тӳрех персе пăрахатăп! Ман алăра — пистолет!

Микола пичче тата ытларах тӗлӗнсе кайрӗ: хӗрарӑмҫке ку! Сасси ҫепӗҫ, уҫӑ, янравлӑ...

— Юрӗ, юрӗ,—терӗ вӑл ӑна хирӗҫ лӑпкӑн,—ан хӑрат ытлашши, кирлех пулсан — ун пек вылямалли япала ман хамӑн та пур, унсӑрах ҫӳреместпӗр. Эсӗ мана тӗрӗсне каласа пар: кам эсӗ, мӗнле ҫын?

— А эсӗ ху кам?

— Эпӗ... Илтетӗн, вырӑсла калаҫатӑп.

— Эпӗ те нимӗҫле мар.

— Чухлатӑп...

— Эсӗ, ӑнсӑртран, партизан мар пуль те?

— Ӑнсӑртран партизан мар ҫав.

— Эппин ҫӗрле сӗм вӑрманта мӗн туса ҫӳретӗн?

— Телей шыратӑп.

— Кулса мар, чӑннине кала эсӗ. Атту...

— Каллех хӑрататӑн-и?

— А мӗн ҫыпҫӑнатӑн эсӗ ман ҫумма? Иртсе кай хӑвӑн ҫулупа.

Хӗрарӑм сассине хаярлатма пикенчӗ, анчах ҫак калаҫу вӑхӑтӗнче ун патнех пырса тӑнӑ Микола пиччене ку култарса ячӗ.

— Акӑ мӗн, хӗрӗм,— терӗ вӑл, сывлӑшри хӗрарӑм ҫине ҫӳлелле пӑхса,— ҫитӗ сана унта пӗлӗт ҫинчен аннӑ ангел пек ларма... Йӑлӑхрӑн пуль ӗнтӗ чуччу ярӑнса. Ҫӗре ан-ха, куҫран куҫа пӑхса калаҫӑпӑр. Кӑмӑлӑмӑрсем килӗшсен, тен, пӗрле пулӑпӑр, килӗшмесен — вӑрман аслӑ, кашниех хӑйне валли ҫул тупӗ.

— Май пулнӑ пулсан, эп тахҫанах анаттӑм та, ҫакланса лартӑм-ҫке,— терӗ хӗрарӑм куна хирӗҫ кӳренӳллӗ сасӑпа.— Аптрасах ҫитрӗм...

— Мӗн тумалла эппин халь?

— Парашют кантрисене татса ямалла.

— Ана эпир халех майлаштарӑпӑр...

Микола пичче ҫавӑнтах кинжалне ҫӑвара хыпса йывӑҫ тӑрнелле хӑпарма тытӑнчӗ...

## XXI

Çӳлĕ йывăç тăррисене ирхи хĕвел кĕренлетме тытăнкă вăхăтра пирĕн туссем чăрăш айне чĕртнĕ кăвайт кутĕнче çамрăк хĕр-парашютистăн калавне итлесе ларчĕç.

Вăрçăччен вăл Мускаври пĕр институтра вĕреннĕ, вăрçă пуçлансанах хăй ирĕкĕпе çара кайнă. Малтан госпитальре ĕçленĕ, анчах ку ĕç ăна килĕшмен, фронта каяс тесе радио ĕçне вĕреннĕ, унтан парашютистсен шкулĕнче пулнă. Тăшман тылне вăл ĕнтĕ иккĕмĕш хут килнĕ. Малтанхинче хытах аманнă пулнă, ăна Пысăк Çĕр çине самолетпа илсе тухнă, анчах сывалсанах вăл хăйне каллех тăшман тылне яма ыйтнă. Халь вăл çак вăрманти партизансен пысăк отрядĕнче радистка пулса ĕçлеме килнĕ, анчах çĕрле летчик ăна кирлĕ çĕре тĕрĕс антарса хăварайман.

— Вăл нимех те мар,— терĕ хĕр,— эпĕ вĕсене пурĕпĕр тупатăп. Манăн карттă пур, компас пур. Пĕр-пĕр ориентир тупасси кăна.

— Мĕнле ориентир?— ыйтрĕ Микола пичче.

— Ну, калăпăр, пĕр-пĕр çул е вăрманти поселок... Карттă çинче вĕсем пурте пур, кайран вара шырама та çăмăл пулать. Компас кăтартнă тăрăх кай кăна.

Микола пичче пĕр хушă шухăша кайнă пек пулчĕ. Ачасем кăвак комбинезонлă парашютистка çине куç илмесĕр пăхса ларчĕç. Ытла та тĕлĕнтерчĕ вăл вĕсене.

— Епле хăюллă вăл...— шухăшларĕ Ванюшка.— Çамрăк кăна хĕр хăй, анчах тăшман йышăнса илнĕ вырăна пĕр-пĕччен сикнĕ! Енчен те, кĕçĕр вăл пирĕн тĕле мар, тăшмансем тĕлне пулнă пулсан?.. Тытатчĕç ăна, асаплантаратчĕç ĕнтĕ... Анчах вăл нимрен те хăраман!

— Ориентир шырама та кирлĕ мар,— терĕ çав вăхăтра Микола пичче парашютисткăна.— Ав çав енче,— аллине тăсса кăтартрĕ вăл,— кунтан пĕр улт-çичĕ километрта, çурçĕр енчен кăнтăралла пысăк шоссе иртет.

— Эсир ăçтан пĕлетĕр ăна?— васкавлăн ыйтрĕ хĕр.

— Эпир ĕнер пулнă унта. Анчах пире йытăсемпе лÿтерсе ячĕç, хытă сыхлаççĕ курăнать.

Хĕр йапăр-япăр карттă кăларса сарса хучĕ. Çавăнтах компасĕ çине пăхса илчĕ.

— Çурçĕр... кăнтăр...

Пĕр-икĕ минут хушши вăл карттă çинчен куç илмесĕр пăхрĕ, унтан пÿрнипе тĕллесе кăтартрĕ.

— Çак шоссе пулма кирлĕ вăл. Акă М. еннелле каякан чугун çул, шоссе урлă каçса, Ч. еннелле каять...

— Тĕрĕс, çав пулма кирлĕ,—терĕ унпа пĕрлех карттă çине пăхса ларнă Микола пичче.

— Эсир улт-çичĕ километр килтĕмĕр, тетĕр пулсан, ак çак вырăнта шурлăх тĕл пултăр-и?

— Пире йытăсем чутах хăваласа кĕртсе ячĕç унта...

— Тĕрĕсех эппин!— парашютистка карттине хуçлатса чикрĕ те хăйĕн çĕнĕ тусĕсене хаваслăн пăхса çаврăнчĕ.— Аптрамастпăр, юлташсем! Çухалмастпăр!

Çав вăхăтра Микола пичче кĕл ăшĕнчен патакпа чавса пĕр паранкине кăларчĕ те ăна йăвалакаласа пăхрĕ.

— Пиçнĕ, ачасем, апатланăр...

— Тĕрĕс, кăштах çырткалас пулать,— терĕ парашютистка та. Çавăнтах хăйĕн сумкинчен консерва банки, шоколад, печени кăлара-кăлара хучĕ.

— Илĕр, çиййĕр,— сĕнчĕ вăл пурне те. Унтан, никам та илме хăяйманнине кура, çимеллисене хăех валеçме тытăнчĕ. Ванюшка унпа юнашар ларнăччĕ те, парашютистка ăна пуринчен малтан темиçе печенипе шоколад катăкĕ хурса пачĕ.

— Çи, шăллăм... Вăй паракан япаласем вĕсем.

— Мана кирлĕ мар, хăвăр çиййĕр...— именчĕ Ванюшка.

— Çи, çи, вăтанса ан тăр,— терĕ хĕр.— Пирĕн енче: çук та çурмалла, теççĕ...

— Сăмах майăн каласан, хăш енчисем вара эсир?— ыйтрĕ кун хыççăн Микола пичче.

— Шупашкар хулинчен эпĕ, Атăл çинчен,— терĕ консерва банкине уçма тытăннă парашютистка, пуçне çĕклемесĕрех. Унăн сăмахĕсем Микола пиччене Санька еннелле пăхтарчĕç. Санька вара çăварне карсах пăрахрĕ, çав тери тĕлĕнсе кайрĕ...

— Итлĕр-ха, юлташ...— сăмах хушрĕ кăшт тăрсан Микола пичче.— Каçарăр, сирĕн ятăра пĕлместĕп-ха...

— Зоя тесе чĕнеççĕ мана. Зоя Сергеева.

— Итлĕр-ха, Зоя Сергеева юлташ. Эсир Чăваш республикинчен эппин?

— Çавăнтан.

— Апла пулсан, пирĕн хушăмăрта сирĕн земляк пур.

Зоя тӳрех çиме пăрахса, çав тери тĕлĕнсе, ун çинелле хăйĕн пысăк кăвак куçĕсемпе пăхрĕ:

— Земляк? Кам? Хăшĕ?

— Ак çакă...— Микола пичче Санька çине кăтартрĕ.

— Эсĕ чăнах чăваш-и вара?— аллине ача хулпуççийĕ çине хурса ыйтрĕ парашютистка.

— Чăваш...— Санька хĕрелсе кайрĕ.

— Ак япала! Хăш район?

— Сĕнтĕр...

— Ан тĕлĕнтер! Эпĕ хам та çавăнтанах вĕт! Эпир Шупашкара пурăнма куçни пĕр вунă çул кăна... Анчах эсĕ пĕчĕк пуçупа мĕнле килсе çакланнă кунта? Хăçантанпа?— тĕпчеме тытăнчĕ Зоя.

— Вăрăм истори вăл,— терĕ Санька,— час каласа пĕтерес çук...

— Ну, юрĕ эппин, хăçан та пулин кайран каласа парăн,— килĕшрĕ Зоя.— Халь çи-ха, çи, атту эсĕ ытла пĕтсе кайнă... Ах, земляк, хамăр ял... Пулаççĕ вĕт пурнăçра çавăн пек тĕлĕнмелле тĕлпулусем!

Зойăпа Санька чăвашла калаçрĕç, вĕсен калаçуне Микола пиччепе Ванюшка ăнланмарĕç, анчах пĕр-пĕринпе тĕл пулнăшăн вĕсем питĕ савăнчĕç...

— Ну, хускалатпăр пулĕ, тусăмсем,— терĕ Микола пичче юлашкинчен, ачасем çисе тăраннине асăрхаса.— Çитмелле çĕре çитесех, тупмаллине тупасах пулать...

— Халех каятпăр,— пуринчен малтан сиксе тăчĕ Зоя.— Анчах малтан парашюта çĕр айне чавса пытарса хурас пулать. Саккунĕ çапла, унсăрăн йĕр юлать.

— Мĕн тума пытарас? Хамăрпа пĕрле илсе каятпăр,— терĕ ăна хирĕç Микола пичче.— Нумайăн вĕт халь эпир. Тата йывăр япала та мар вăл. Вăрманти пурнăçра пир-авăр та кирлĕ пулать, сутăн илме универмагсем çук кунта...

Ку шухăшпа пурте килĕшрĕç.

Кăшт тăхтасан вĕсем кăнтăрпа хĕвелтухăç еннелле утрĕç. Зоя, тек-текех аллинчи компасĕ çине пăхкаласа, малта пычĕ. Кăнтăрла иртсен каллех пĕр улах вырăна ларса апатланчĕç те татах малалла шурĕç.

Каç пулас умĕн, пĕр ансăр, кукăр-макăр сукмакпа утса пынă чух, çăра тĕмесем хыçĕнчен вĕсем умне сасартăк аллисене автоматсем тытнă икĕ çын сиксе тухрĕç.

— Стой! Руки вверх!— татăклă команда пачĕ вĕсенчен пĕри, пысăках мар хĕрлĕ сухаллăскер.— Мĕнле çынсем эсир?

— Куратăн — вырăссем,— терĕ ăна хирĕç Зоя ним пăлханмасăрах, çынăн куçĕсенчен тӳррĕн пăхса.

— Аçта каятăр?

— «Юншăн—юн!» ятлă партизансен отрядне шыратпăр.

— Вăл ăçтине пĕлетĕр-им?

— Ак çак ертсе каять пире,— терĕ Зоя, аллинчи компасĕ çине кăтартса.— Халь акă эсир те пулăшатăр ĕнтĕ ăна тупма. Атьăр, илсе кайăр часрах.

Зоя çав тери хăюллăн калаçни сухаллă çынна тĕлĕнтерчĕ пулмалла. Вăл ăна уринчен пуçласа пуçĕ патне çитиех пăхса илчĕ те:

— Ытла та çивĕчĕ-çке эсĕ, хитре пике,—терĕ.—Ахаль кайăках мар курăнать...

— Хуть те мĕнле пулам, унта сирĕн ĕç çук,— татса хучĕ Зоя.— Эсир хăвăрăн ĕçĕре тăвăр: ют çынсене тыткăр пулсан — часрах штаба илсе кайăр. Йĕркине пĕлместĕр-им?

— Хуллентерех, хуллентерех,— терĕ куна хирĕç сухаллин юлташĕ, сарă кăтра çӳçне чалăш лартнă çĕлĕкĕ айĕпе кăларса янă каччă.— Командовать ан ту питех. Атту ĕç чĕрре кĕрсе кайма пултарать. Пирĕн каласу кĕске: йывăç çумне тăратнă та çамкаран пуля кĕртсе лартнă...

— Ай-ай, паттăр иккен эсĕ,— йуççĕнтерех кулса илчĕ Зоя.— Кравчук юлташ та пĕлмест пулĕ-ха кун çинчен. Çитсенех каласа парас-ха...

«Кравчук» тенине илтсенех, пирĕн туссен çулне пӳлнĕ çынсем пĕр-пĕрин çине чалăшшăн пăхса илчĕç. Темскер каласса илчĕç вĕсем куçĕсемпе...

— Ну, атьăр эппин,— терĕ вара сухалли, аллипе сулса.

Хăй çавăнтах автоматне хулпуççинчен çакса сукмакпа малалла утрĕ. Çамрăкки, кая юлса, хыçалтан пычĕ.

## XXII

Парашютистка Зоя тĕрĕс çулпа пынă. Вăл çак вăрманти «Юншăн — юн!» ятлă партизансен отрядне шыранă пулнă, халĕ ĕнтĕ шăпах çав отрядăн секречĕ çине пырса тăрăннă. Сукмак çине автоматсемпе тухса тăнă хĕрлĕ сухаллă ватăрах çынпа сарă кăтра çӳçлĕ каччă çав отрядăн боецĕсем пулнă.

Тĕл пулсанах кăшт тавлашкаласа илнĕ пирки пулас, çул çинче вĕсем нимĕн те каласмарĕç.

Малтан вĕсем вĕтĕрех хутăш вăрман тăрăх пычĕç, унтан чăрăшлăх пуçланчĕ. Хĕвел анма пуçланă чух вара çăра та çӳлĕ вăрмана пырса кĕчĕç те, тарăн çырма тăрăх пĕр километр пек кайсан, отряд вырнаçнă çĕре пырса тухрĕç. Хĕрлĕ сухалли пирĕн туссене (вĕсемпе

пĕрлех кăтра çӳçлĕ çамрăк партизана та) ватă юман айне тăратса хăварчĕ те хăй пĕр çĕрпӳрте кĕрсе кайрĕ.

— Эп халех,— тесе хăварчĕ вăл.

Чăнах та, нумай кĕтмелле пулмарĕ. Вĕсем патне, хĕрлĕ сухаллă партизанпа пĕрле, çар картузĕ, кăвак пустав френч, галифе, çӳлĕ кунчаллă атă тăхăннă, пиçиххинчен пысăк хура кабур çакнă вăтам пӳллĕ, хурарах сăнлă çын пырса тăчĕ.

— Акă вĕсем, командир юлташ,— терĕ хĕрлĕ сухалли, Зойăпа Микола пичче тата ачасем çине кăтартса.

Çав вăхăтрах партизансен командирĕ умне Зоя чăнчăн çар çынни пек йăрст! тăсăлса честь пачĕ.

— Отряд командирĕ юлташ! Командовани приказĕпе сирĕн распоряженине килтĕм. Радистка Зоя Сергеева,— тесе рапорт пачĕ вăл.

— Питĕ аван,— терĕ те командир, Зойăна ал пачĕ.— Чунтан саламлатăп. Эпир сире пĕр эрне ытла кĕтетпĕр ĕнтĕ. Тинех кĕтсе илтĕмĕр эппин.

— Манăн айăппа мар, командир юлташ...

— Пулĕ, пулĕ... Ун çинчен кайран калăр. Кусем камсем пулаççĕ тата?— командир Микола пиччепе ачасем çине пуçĕпе сулчĕ.

— Ансăртран тĕл пулнă юлташсем. Хăйсем каланă тăрăх, вĕсем Германие каякан эшелон çинчен сиксе юлнă.

— Хăçан?

— Ĕнер ирхине, пĕр виçĕ сехетре,— терĕ Микола пичче.

— Хăвăр ăçтисем?

— Украинăран, Винница патĕнчен.

— Винница патĕнчен?

— Так точно...

— Хм...— Отряд командирĕ Микола пичче çине тинкерсе пăхрĕ.— Земляксем эппин эпир.

— Пулма пултарать...

— Ачисем ăçтан?

— Вĕсем тĕрлĕ ҫĕртен. Лагерьте паллашрăмăр. Кайран, хама тарма май килсен, вĕсене те каторгăна ярас мар, терĕм.

— Тĕрĕс тунă... Питĕ тĕрĕс!

Командир пĕр хушă ачасем ҫине пăхса тăчĕ, унтан тăрук хĕрлĕ сухалли еннелле ҫаврăнчĕ.

— Степан пичче, ку юлташсене халех кухньăна илсе кайăр. Лайăхрах ҫитерччĕр. Унтан канмалли вырăн тупса парăр. Эсир, Сергеева юлташ, манпа пĕрле пыратăр...

Командирпа Зоя штаб ҫĕрпӳртне кайрĕҫ, Микола пичче, Ванюшка, Санька — хĕрлĕ сухалли хыҫҫăн утрĕҫ. Отряд командирĕ вĕсене ҫавăн пек кăмăллăн йышăннине кура, хĕрлĕ сухал халь пĕтĕмпех урăхланса кайрĕ, чарăна пĕлмесĕр калаҫса пычĕ.

— Пирĕн пурнăҫа пĕртте хурламалли ҫук! Выҫă лармастпăр, ҫĕтĕк-ҫатăк ҫӳреместпĕр, вăрманта пурăнатпăр пулин те, тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех пĕлсе тăратпăр... Тăшмана кулленех шаккатпăр, ăҫтан май килнĕ — ҫавăнтан пырса ҫапатпăр. Паллах, пĕтĕмпех командиртан килет. Пирĕн командир, ҫак Кравчук юлташ, питĕ пултаракан этем, питĕ паттăр, граждан вăрҫинчех орден илнĕ ҫын. Ҫынсемшĕн вара ҫав тери тăрăшать. Сире те ав килнĕ-килменех хăна тума хушрĕ. Тепри пулсан — шалишь! Тепри сана: тăхта, малтан паллашам-ха, тет, эсир камне лайăхрах шĕкĕлчесе пĕлем, тен, эсĕ партизансен ҫăкăрне ҫиме тивĕҫсĕр? Ку ун пек мар. Ку пирĕн ҫынна пĕрре пăхсах уйăрса илет: ырă сунакан ҫын-и вăл, тăшман-и... Уйăх каялла, ҫавнашкалах, пĕррескер килсе тухрĕ пирĕн пата. Ҫамрăк мар ĕнтĕ, сухалĕнче кăвак пĕрчĕсем те пур. Питне-куҫне тăрмаласа пĕтернĕ, тумтирĕ ним майĕ ҫук — йытă туллань, тейĕн. Нимĕҫсене юлашки сысна ҫурине парасшăн пулмарăм та, ҫавăншăн чут вĕлеретчĕҫ, аран сирĕн пата тарса ӳкрĕм, тет. Анчах ĕненмерĕ ҫавна пирĕн командир. Хăваласа ямарĕ, ҫапах та сăнама хушрĕ. Мĕн тетĕр-ха эсир? Персе пăрахмалла пулчĕ вĕт ҫавна юлаш-

кинчен! Чăн шуйттанах пулнă — фашистсем ăна юриех пирĕн командире вĕлерме янă иккен...

— Пулать, пулать ун пекки,— терĕ Микола пичче.

— Эп хам та çынсене витĕрех куратăп,— каллех сăмах пуçларĕ хĕрлĕ сухал.— Ак паçăр, сире курсан...

Анчах сăмахне пĕтермелле пулмарĕ унăн—вĕсем отряд кухни патне çитсе тăчĕç. Малашнехи ĕçсем вара питĕ тикĕс пулса пычĕç: командир приказне пурнăçласа, повар пирĕн туссене çав тери лайăх çитерсе ĕçтерчĕ. Нумай вăхăт хушши йĕркеллĕ апат курман çынсене малтанах тăранассăн та туйăнмарĕ, анчах повар вĕсен чашкисене апат çине-çинех ярса пачĕ те, виçи тулчĕ...

Унтан хĕрлĕ сухал вĕсене пĕр пушă çĕрпӳрте илсе кайса вырнаçтарчĕ.

— Хуçисем заданире, ыран каçчен килмеççĕ, талăкĕпех канма пултаратăр,— терĕ те вăл, ыр сунса тухса кайрĕ.

Туссем ун хыççăнах тутлă шăршăллă çемçе утă сарнă сарлака саксем çине выртса пĕр-пĕринпе икшер сăмах та калаçса илеймерĕç ,тӳрех çывăрса кайрĕç. Чăн та, хĕрлĕ сухал сĕннĕ пек, талăкĕпех çывăрчĕç вĕсем, тепĕр кунне кăнтăрлапа тин вăранчĕç.

— Ну, çамрăк халăх, мĕнле пек?— ыйтрĕ Микола пичче.

— Питĕ аван...— терĕ Санька.

— Кунтан лайăх пулма та пултараймасть,— хушса хучĕ Ванюшка.

Çĕрпӳрт алăкĕ умне пĕр боец пырса тăчĕ. Вăл пурне те сывлăх сунчĕ те:

— Апата чĕнеççĕ сире,—терĕ.—Ирхине вăратас темерĕмĕр...

Микола пичче тӳсеймерĕ, кулса ячĕ.

— Курорта лекрĕмĕр пулас эпир, тупата...

— Унтан командир сирĕнтен аслине хăй патне пыма калана,— хушса хучĕ боец.

Командир чĕнни ҫинчен илтсен, Микола пичче васкама тытăнчĕ.

— Атьăр, часрах, ачасем... Командир хушнине ялавах хăвăрт тăвас пулать...

Пилĕк минутран вĕсем каҫхи вырăнтах апат ҫисе ларчĕҫ, ҫур сехетрен Микола пичче командирăн ҫĕрпӳртне кĕрсе кайрĕ. Ачасем ăна кăшт аяккарахра, йывăҫсем айĕнче, кĕтсе ларчĕҫ.

Чылай вăхăт иртрĕ вăл каялла тухиччен, пĕр сехет те ытла пулĕ. Ҫав хушăра ачасем кашни хăй тĕллĕн шухăшларĕҫ: малашне пурнăҫ мĕнле пулса пырĕ-ши? Командир вĕсене отрядра хăварма килĕшĕ-ши? Йышăнмасан вара... Мĕн тумалла?

Ванюшка ҫирĕп шут турĕ:

— Ҫине тăрсах тархаслатăп. Ĕҫ ыйтатăп... Хуть те мĕн хушчăр — тăватăп...

Анчах Микола пичче ҫĕрпӳртрен тухсанах ачасен иккĕленесси пĕтрĕ. Ачасем патне вăл аякранах кулкаласа, уссисене шăлкаласа утса пычĕ.

— Ну, мĕнле? Мĕн терĕ?— харăсах ыйтрĕҫ ачасем.

— Леш, хĕрлĕ сухалли, тĕрĕс калана,— терĕ Микола пичче.— Тĕлĕнмелле лайăх ҫын... Украинец, пирĕн енчисем. Вăрҫăччен учитель пулнăскер.

— Отрядра хăварать-и пире?

— Йышăнатăп, терĕ.

— Ой, ку аван вара! Урăх пире ним те кирлĕ мар!.. Ванюшкăн куҫĕсем савăнăҫлăн ҫутăлма тытăнчĕҫ. Вăл ҫавăнтах Санька ҫине пăха-пăха илчĕ, тусĕ ку хыгара мĕнле йышăннине пĕлесшĕн пулчĕ курăнать. Анчах Санька та Ванюшкăран кая мар савăннă.

— Вăл тата сирĕнпе те калаҫасшăн-ха,— терĕ Микола пичче.— Халех пыма хушрĕ.

— А мĕн ҫинчен калаҫасшăн?— тĕлĕнчĕ Ванюшка.— Эсĕ пирĕн пирки каласа патăн пуль вĕт?

— Эп каласа патăм та-ха, вăл сирĕнпе хăвăрпа паллашасшăн. Командирăн отрядри кашни çыннах пĕлес пулать-çке. Кам вăл, мĕн тума пултарать...

Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç; вĕсем каллех иккĕленме пуçлани сисĕнчĕ.

— Эсир ним те ан пăшăрханăр,— терĕ çакна кура Микола пичче,— ыйтса пĕлет çеç вăл.

...Чăнах та, Кравчук тени çав тери ăшă кăмăллă, юратмалла çын пулнă. Ачасем унăн çĕрпӳртне кĕрсенех, вăл вĕсене ларма сĕнчĕ, унтан иртнĕ каçхине мĕнле канни çинчен, апат çини-çименни çинчен, сывлăх çинчен ыйтса пĕлчĕ. Унтан вара кашнинчен уйрăмăн ыйтса пĕлме пуçларĕ. Мĕн ятлă, миçе çулта, ăçтисем, кунта мĕнле килсе лекнĕ, ашшĕ-амăшĕсем ăçта... Ачасем хăйсем çинчен пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕç. Ванюшка калавĕ командира уйрăмах пăлхатса ячĕ.

— Эх, йытăсем, çынçиенсем!— пуçне пăркаласа илчĕ вăл, Ванюшка нимĕçсем унăн тăванĕсене епле вĕлерни çинчен каласа панă чух.

Унтан, Ванюшкăна партизансем тупса илсе кайни, вăл чылай хушă отрядра пурăнни çинчен пĕлсен, Кравчук тӳрех:

— Мĕнле отрядри партизансем пулнă вĕсем?— тесе ыйтрĕ.

— «Фашистсене — вилĕм!» ятлă отрядран, — терĕ Ванюшка.

— Эсĕ вара вĕсем патĕнче пурăнтăн-и?

— Ийя.

— Командирăн хушамачĕ мĕнлеччĕ?

— Хушаматне... астумастăп.

— Епле-ха апла эсĕ, хăвăрăн командирăн хушаматне те пĕлмен?— Ванюшка куçĕнчен ыйтуллăн пăхрĕ Кравчук.

— Ăна пурте «Коля пичче» тесе чĕнетчĕç те...— хăйне аван мар пулнипе хĕрелсе кайрĕ Ванюшка.

— Николай Васильевич мар-и? Асту-ха?

— Тĕрĕс, тĕрĕс! Отряд фельдшерĕ, Федор Иванович, ăна яланах Николай Васильевич тесе чĕнетчĕ.

— Штаб начальникĕ камччĕ?

— Вăл ман кукка пулнă, Семен Петрович Коробов. Анчах кайран ăна амантрĕç те...

— Пĕлетĕп, ăна Пысăк Çĕр çине ăсатнă,— терĕ Кравчук, Ванюшкăна каласа пĕтерме памасăрах.

Ванюшкăна ку тĕлĕнтерсех ячĕ.

— Ăçтан пĕлетĕр эсир ун çинчен?

— Пĕлетĕп çав...— çемçен кулса илчĕ командир.— Николай Васильевича та, унăн хушаматне те лайăх пĕлетĕп. Ломов, теççĕ ăна. Виçĕмкун çеç курса калаçрăмăр-ха эпир унпа.

— Ăçта, епле?!

— Партизан командирĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ, çавăнта тĕл пултăмăр. Санăн кукку çинчен те каларĕ: сывалать, тет, часах Пысăк Çĕр çинчен отряда каялла таврăнма шутлать, тет...

— Ой, командир юлташ!..— яштах сиксе тăчĕ Ванюшка.— Неушлĕ чăнах ку?! Улталамастăр-и?

— Тĕрĕсне калатăп.

— Ěненес те килмест... Мĕн тери савăнăç ку маншăн!..

Пĕр хушă чĕнмерĕç. Кравчук ачасем çине пăхса ларчĕ, тем çинчен шухăшларĕ. Ачасен те сăмах тупăнмарĕ, весем командир каласса кĕтрĕç.

— Ну, малашне мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ?— ыйтрĕ Кравчук юлашкинчен.— Пирĕн кунта йĕрки çапла: кашниех пĕр-пĕр ĕçшĕн ответ тытать.

— Мĕн хушатăр, çавна тăватпăр,— терĕ Санька.

— Манăн алла хĕçпăшал тытса çапăçасчĕ,— терĕ Ванюшка, каллех ура çине тăрса.

— Юрĕ, пурне валли те ĕç тупăпăр. Кам мĕне пултарать...

## XXII

«Юншăн—юн!» отряд командирĕ Кравчук юлташ хăйĕн сăмахĕсене яланах çирĕп тытса пынă. Хăй шутланине кирек хăçан та пурнăçа кĕртнĕ вăл.

— Пирĕн командирăн сăмахĕ — хурçă,— тенĕ партизансем ăна ырласа.— Вăл калани — пуртăпа касса татнă пекех...

Ачасене çĕрпӳртрен ăсатса кăларса ярсанах, вăл хăй патне Михаç Чуб ятлă партизана чĕнтерчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, ун умне сарă кăтра çӳçлĕ, çамрăк кăна каччă пырса тăчĕ. Ку — ĕнер Ванюшкăсене вăрманта тĕл пулса отряда илсе килнĕ икĕ партизанран пĕри пулнă.

— Юлташ командир, эсир хушнипе...— тесе рапорт пама пуçларĕ вăл, анчах Кравчук ăна аллипе пукан çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Лар...

Михаç ларчĕ те командир куçĕнчен чăрлаттарса пăхма тытăнчĕ.— Мĕн тума сасартăк чĕнтернĕ-ши мана ку?— кăшт пăлханарах шухăшларĕ вăл.— Татах хăтăрать-ши ĕнтĕ мĕншĕн те пулин?

Тĕрĕссипе каласан, отряд командирĕ ăна хăй патне чĕнсен кирек хăçан та ятласа янă. Каччи вăл питĕ маттурскер пулнă, нихçан та, нимĕнрен те хăраман, пĕр заданирен те приказа пурнăçа кĕртмесĕр таврăнман, хуть епле йывăрлăха лексен те, хăтăлса тухма пĕлнĕ, анчах апла пулин те, ăна кашнинчех ятламалли тупăнса пынă. Хăйĕн çамрăк хĕрӳлĕхне пула вăл час-часах иртĕнерех панă, тепĕр чух унăн ытлашши çăмăлланнисем те пулкаланă.

Пĕррехинче, разведкăна кайсан, вăл пĕр пысăк яла пырса кĕнĕ те фашистсем урамра темле пуху иртternине курнă. Сысна пек самăр комендант сĕт-çупа çăмарта вăхăтра парса тăманшăн ял çыннисене вăрçнă, темĕн те пĕр каласа хăратнă... Халăх хушшине хĕсĕнсе кĕрсе

тăнă Михаç çавна итленĕ-итленĕ те — тӳсеймен. Нимĕç коменданчĕ халăха чышкисемпе юнаса:

— Приказсене пăхăнмастăр пулсан, пурне те Германие ăсататăп!—тесе кăшкăрма тапратсан, Михаç маларах тухнă та ун çинелле умлăн-хыçлăн икĕ чăмăр граната ывăтнă.

Комендант та, унпа юнашар ларакан сутăнчăк староста та çавăнтах тĕшĕрĕлсе аннă. Анчах ĕç кунпах вĕçленмен. Пахчасем урлă вăрман еннелле тапса сикнĕ Михаçа нимĕçсем хăвалама тытăннă. Пульăсем пăрçа пек тăкăннă ун таврашĕнче. Михаç тилĕ пек енчен енне вăрт-варт çаврăнкалама пĕлмен пулсан, тата мулкач пек хытă чупма пултарайман пулсан, унăн вилли те пулин фашистсен аллине лекмеллех-мĕн, хăй çав тери çивĕччине пула çеç тарса ӳкнĕ вăл. Çапах та унăн вăрманта пĕр талăка яхăн мăй таран шурлăхра ларма тивнĕ. Отряда вара вăл икĕ кунтан тин, çитменнине тăптăр лапра пулса таврăннă. Хăйĕнпе мĕн пулни çинчен штабра каласа парсан, ăна çавăн пек ытлашши вĕриленсе хăтланнăшăн хытă ятланă. Михаç малтанах хирĕç нимĕн те чĕнмен, унтан кĕскен кăна:

— Тӳсеймерĕм,— тенĕ.

Çакăн майлă историсем унăн татах та пулнă. Çавăнпа та, Михаç отряд штабĕнчен тухнине кам та пулин курсан, ыттисем унтан яланах кула-кула:

— Каллех мунчара пултăн-и?— тесе ыйтнă.

Михаç ăна хирĕç аллипе сулнă çеç.

— Лайăх çапса янă курăнать...— тесе юлнă ыйтакансем.

Михаç хăй те хăнăхса çитнĕ кăна. «Сана штаба чĕнеççĕ» тенине илтсенех, каллĕ-маллĕ шухăшласа, тавçăрса илме тăрăшнă:

— Мĕншĕн лекме пултарать-ха мана паян?

Халĕ те вăл командир патне çавăн пек шухăшласа пычĕ. Хăйне ларма сĕнсен те иккĕленчĕ:

— Хытах лектересшĕн пулмалла ку мана, лартсах

ятласшăн. Ĕнер çав радисткăпа хирĕçнĕшĕн пулмалла ĕнтĕ...

Анчах Кравчук ăна паян пĕртте ятлама шутламан, пачах урăххишĕн чĕнтернĕ.

— Акă мĕн, тусăм,— пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне ытти чухнехи пек мар йăвашшăн, Михаç куçĕнчен пăхса.— Эпĕ сана пĕр пысăк ĕç хушасшăн...

— Итлетĕп,— терĕ Михаç тӳрех.— Задачăна каласа парăр...

— Пирĕн отряда икĕ ача килсе кĕнине пĕлетĕн-и эсĕ?

— Пĕлетĕп. Хамăр илсе килтĕмĕр эпир вĕсене.

— Мĕнле пек туйăнчĕç вĕсем сана?

— Епле калас... Аван ачасем. Шухăскерсем.

— Мана та çавăн пек туйăнать. Анчах халлĕхе вĕсем нимĕн те пĕлмеççĕ-ха. Вĕсене вĕрентес, хăнăхтарас пулать. Урăхла каласан, вĕсенчен партизансем тăвас пулать.

— Тĕрĕс.

— Çав ĕçе эпĕ сана хушасшăн.

Михаç командир çине тĕлĕнерех пăхрĕ. Пĕр хушă иккĕшĕ те чĕнмерĕç. Михаçшăн ку сĕнӳ ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ, вăл тăруках нимĕн те тупса калаймарĕ, анчах Кравчук унăн ответне кĕтрĕ.

— Ну, мĕн калăн?— ыйтрĕ вăл кăшт тăрсан.

— Шанатăр пулсан...— терĕ Михаç тытăнарах.

— Шанмасан, санпа кун çинчен калаçас та çук,— татса хучĕ командир.— Ман шутпа, эсĕ вĕсемшĕн питĕ лайăх учитель пулма пултаратăн, мĕншĕн тесен эсĕ çамрăк, ху та нумай пулмасть вĕсем пекех ача пулнă. Эсĕ вĕсемпе туслă пулма пултаратăн...

— Вăл тĕрĕс те пулĕ,— именерех килĕшрĕ Михаç.

— Эпир сана пулăшăпăр. Анчах асту — дисциплина пултăр. Вĕрентекенĕн яланах хăйĕн пример кăтартмалла.

— Анланатăп, командир юлташ.

— Ĕçсем мĕнле пыни çинчен мана пĕлтерсех тăр.

— Есть.

Командир çĕрпӳртĕнчен Михаç Чуб питĕ хаваслăн тухса кайрĕ. Çынсене вĕрентме шанса пани — ăна хăйне тинех тивĕçлипе хакласа хисепленĕн туйăнчĕ.

## XXIV

Партизан вăрçи питех те хăйне майлă вăрçă вăл, партизан ĕçĕ çав тери кăткăс, унăн тем те пĕлес, тем тума та пултарас пулать. Çавăн пирки Михаç ачасене калама та çук тĕлĕнмелле япаласем вĕрентрĕ...

Малтанхи кунсенче вĕсене вăл тĕрлĕрен хĕçпăшалпа: карабинпа, вырăс тата нимĕç автомачĕсемпе паллаштарчĕ, гранатăсем ывăтма вĕрентрĕ, тĕрлĕ йышши минăсене епле хумаллине кăтартрĕ. Унтан, пĕр ирхине, ачасене вăрмана шаларах илсе кĕртрĕ те:

— Халĕ, тусăмсем, эпир сирĕнпе чăн-чăн партизан наукине вĕренме тытăнăпăр,— терĕ.— Ку кăшт йывăртарах пулать...

Тĕлĕнтерсех ячĕ вара вăл ачасене. Малтан икĕ пӳрнине çăварне чиксе, юмахри леш Соловей-разбойник пек, хăлхана çурса пăрахмалла шăхăрса ячĕ. Унтан сасартăк тăманалла кăшкăрса илчĕ, кĕçех куккук пек авăтма тапратрĕ, шапалла квакларĕ, шăнкăрч пек юрларĕ, чакак пек чаклатрĕ, вăрманти ытти нумай кайăксем пек чĕвĕлтетрĕ...

— Çаксене пурне те вĕренсе çитмелле сирĕн,— терĕ ачасене юлашкинчен.— Епле калас... Ку сирĕншĕн БГТО* значокне илмелли норма вырăнне пулать...

Анчах ĕç кунпа та пĕтмерĕ. Михаç ачасене тата çӳлĕ йывăçсем тăрне кушак пек хăпарса кайма, çулçăсем хушшинче ним палăрми пулса ларма, туратсем çинче вырнаçса çывăрма, вăрманта пĕччен юлсан ăçталла каймаллине йывăç хупписем тăрăх пĕлме хăнăхтарчĕ...

---

* «Будь готов к труду и обороне».

Чăн юлашкинчен вĕсене вăл шывра кĕпçе витĕр сывласа пытанса лармаллине кăтартрĕ.

Ачасем çине тăрсах вĕренчĕç. Михаç çав тери çивĕч те пултаруллă пулнине кура, вĕсем те ун пек пулма тăрăшрĕç. Отряд командирĕ Кравчук юлташ вĕсем вĕреннĕ çĕре темиçе хутчен те пырса пăхрĕ, кашнинчех мухтаса хăварчĕ.

— Маттур, ачасем. Тăрăшăр, тăрăшăр. Чăн-чăн партизансемех пулатăр. Кĕçех заданисене кайма пуçлатăр...

Ачасен хăйсен те халь задание каясси килнĕ. Ванюшка Михаçран темиçе хутчен те ыйтнă:

— Вĕренни лайăх та-ха вăл, анчах чăн-чăн ĕçе хăçан явăçтараççĕ пире?

— Ана пирĕнтен ыйтмĕç,—тенĕ Михаç,—командирсем хăйсемех пĕлеççĕ мĕн тумаллине. Эпĕ хам та тунсăхласа çитрĕм те — ним тума та çук. Приказ памаççĕ. Тăхтас пулать...

«Чăн-чăн ĕç» хушасса вĕсен чăнах та нумай кĕтмелле пулмарĕ. Пĕррехинче Михаçа пĕчĕк уçланкăра ачасене вĕрентсе ларнă çĕртенех отряд командирĕ патне чĕнсе кайрĕç. Пĕр сехет пек вăхăт иртсен, вăл каялла пит хавасланса таврăнчĕ.

— Ну, тусăм-юлташсем, пире те черет çитрĕ!— терĕ вăл, ачасем умне, сарăхма пуçланă вăрăм курăк çине тăсăлса выртса.

— Мĕнле черет?

— Задани пачĕç... Питĕ чаплă задани!

— Чăнах-и? Кала-ха, кала! Мĕн тумалла пулать?— хыпăнсах ӳкрĕç ачасем.

— Ку задание йĕркеллĕн пурнăçа кĕртме пултарсан — пурте чапа тухатпăр. Анчах ĕçне мĕнле тăвасси çинчен лайăххах шухăшлас пулать-ха. Шухăшлама ыранччен срок пачĕç...

— Эсĕ заданийĕ çинчен кала-ха!— Михаç аллинчен тытса туртрĕ Ванюшка.

Михаç хăвăрт кăна тăрса ларчĕ, унтан çамрăк туссене куçĕсенчен пăхса калама тытăнчĕ.

— Кунтан вунпилĕк-çирĕм километрта, Бараниха ятлă ялта, пĕр йытăлла этем фашистсене сутăннă... Сăнран этем тĕслех вăл, анчах чунĕ — йыттăн. Староста пулнă та совет çыннисене сутма тытăннă. Пирĕн отрядри икĕ партизанăн çемйине çактарнă, пире пулăшакансене тыта-тыта панă. Юлашки вăхăтра пирĕн тăрăхра кун пек предательсем курăнсах каймастчĕç-ха, анчах халĕ пĕри тупăннă ав... Пирĕн çавна епле пулсан та тупса шаккаса хурас пулать. Ăнлантăр-и?

— Ăнланатпăр,— пуçĕпе сулчĕ Ванюшка, тăруках типсе ларнă çăвар маччине чĕлхепе йĕпетсе. Унăн чĕри хыттăн-хыттăн тапрĕ...

— Питĕ интереслĕ номер тума май пур,— терĕ Михаç малалла.— Анчах шухăшлас пулать-ха... Хытă шухăшлас пулать...— Вăл çамкине сăтăркаласа илчĕ.

— Хăçан каймалла вара унта?— ыйтрĕ Санька.

— Ыран каятпăр.— Михаç, пĕр хушă шухăша кайса, ним чĕнмесĕр ларчĕ.—Халь хăвăр пата кайăр-ха эсир,— терĕ вăл кăшт тăрсан.— Қаçалапа пырăп эпĕ...

Анчах ачасем патне вăл каç пуличченех пычĕ. Хăй сак çине ларчĕ, Ванюшкăпа Санькăна урай варрине юнашар кăларса тăратрĕ те:

— Çакăн пек пултăр,— терĕ.— Эпĕ вăл — эпĕ мар, Бараниха ялĕнчи староста, предатель. Эсир халĕ ун умĕнче тăратăр... Мĕн тумалла сирĕн? Ну?

— Мĕн те пулин суймалла!— терĕ Санька.

— Анчах мĕнле суймалла?

— Хамăр кам пулни, ку яла мĕн тума килни çинчен...

— Тĕрĕс. Вăт, çавна туса пăхăпăр та ĕнтĕ... Эпĕ ыйтам, эсир мана ответ парса пырăр.— Михаç çавăнтах сăнне хаярлатса çилĕпе кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн шуйттанĕшĕн çапкаланса çӳретĕр эсир ялсем тăрăх? Мĕн шыратăр? Қилĕрсем çук-и-мĕн сирĕн?..

— Эпир... Эпир киле каятпăр, лагерьтен тартăмăр,— терĕ Ванюшка, нăшăкланă пек туса.— Пĕр татăк çăкăр памăр-ши?

— Отставить!—урипе çĕре тапрĕ Михаç.—Юрамасть апла. Шутласа пăх-ха пуçупа лайăхрах, кам патне пырса кĕнĕ эсир?

— Староста патне,— пĕр шухăшламасăрах ответ пачĕ Ванюшка.

— Тоттă çав, староста патне! Кам вăл староста? Предатель, фашистсен йытти. Эсир нимĕçсен лагерĕнчен тарни çинчен çăвар уçсанах, вăл сана тытса хупать. Туртса çакаççĕ те сана, ĕçĕ те пĕтрĕ. Çапла-и?

— Тĕрĕс,— килĕшрĕç ачасем.

— Ун кăмăлне çавăрас тетĕр пулсан, пачах урăхла калаçас пулать. Эсир пĕтĕмпех нимĕçсем майлă пулнă пек курăнтăр, вара тин ĕç тухма пултарать. Тавай, çĕнĕрен пуçлатпăр...

Михаç ачасене хăй туса хунă план тăрăх вĕрентме тытăнчĕ. Нумая пычĕ ку «урок». Вăл ачасене тĕрлĕрен тĕрлĕ, пăтраштарса ямалла ыйтусем пачĕ, ачасем ответсем тупса пычĕç. Отвечĕсем ăнăçлах пулмасан, Михаç хăй пулăшрĕ.

Кайран çак «урок» ачасене питĕ пысăк усă кӳчĕ...

## XXV

Задание кăларса ярас умĕн ачасем хăйсен ролĕсене епле вĕренсе çитнине Кравчук хăй тепĕр хут тĕрĕслерĕ. Чăн-чăн спектакль пекех пулчĕ вăл. Михаç, предатель вырăнĕнче пулса, ачасенчен кăшкăра-кăшкăра ыйтрĕ, вĕсене халех çакса вĕлерме пулчĕ, çапнă пек турĕ, Ванюшкăпа Санька ăна хирĕç хурлăхлăн ответсем парса тăчĕç, макăрса та кăтартрĕç. Кравчука та, унăн çĕрпӳртне çав вăхăтра пырса кĕнĕ радистка Зойăна та çак «спектакль» кăмăла кайрĕ.

— Аван,— терĕ Кравчук,— питĕ аван, анчах тăшманпа куçа-куç тĕл пулсан, çухалса ан кайăр. Астăвăр,

енчен те эсир ӑна тӗплӗн улталаймасан, питӗ хӗн пулма пултарать...

— Тӑрӑшӑпӑр,— терӗ ӑна хирӗҫ Ванюшка.

Ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсем вӑрӑм та хӑрушӑ ҫула тухса кайрӗҫ...

Малтан шутласа хунӑ тӑрӑх, вӗсем отряда пӗр виҫӗ кунтан таврӑнмалла пулнӑ. Анчах виҫӗ кун мар — пиллӗк те иртрӗ, туссем ҫаплах та таврӑнмарӗҫ, вӗсем ҫинчен нимӗнле хыпар та пулмарӗ. Отряд командирӗ те, Михаҫпа ачасем ӑҫта кайнине пӗлекен ытти партизансем те, уйрӑмах Микола пиччепе Зоя кун пирки ҫав тери пӑшӑрханса пӑлханма тытӑнчӗҫ.

Микола пичче, халь отрядра хӗҫпӑшал мастерскойӗнче ӗҫлекенскер, кашни каҫах тӗттӗм пуласпа Кравчук патне кӗре-кӗре ыйтрӗ:

— Таврӑнмарӗҫ-и-ха пирӗн шӑнкӑрчсем?

— Ҫук-ха,— салхуллӑн ответ пачӗ ӑна командир.

— Мӗн пулма пултарчӗ-ши вӗсемпе?

— Аҫтан пӗлетӗн...

— Неушлӗ лекрӗҫ-ши?

— Қалама хӗн...

— Лешӗ, вӗсене ертсе кайнӑ йӗкӗт, опытлӑскер пулас-ха вӑл?

— Опытлӑ та — вӗрирех. Ҫавӑн пирки иккӗленетӗп...

Тата тепӗр кун кӗтрӗҫ вӗсене. Юлашкинчен Кравчукӑн тӳсӗмӗ пӗтрӗ. Вӑл ӗнтӗ Михаҫпа унӑн ҫамрӑк тусӗсем чӑнах та тӑшман аллине лекнӗ тесе шутларӗ.

— Хыҫҫӑн йӗрлеме ярас, мӗн пулнине пӗлес хуть,— терӗ вӑл.

Ҫак шутпа хӑй патне разведчиксен взводӗнчен чи ҫивӗч икӗ партизана чӗнтерчӗ те задачӑна ӑнлантарса пама тытӑнчӗ.

— Епле пулсан та, хамӑр ҫынсен йӗрӗсене тупӑр. Мӗн пулнӑ, ӑҫта кайса чикнӗ вӗсене? Леш сутӑнчӑкӗ халь те сывах пулсан, ӑна расхода яма тӑрӑшӑр. Ачасемшӗн тавӑрнӑ ятпа пултӑр вӑл...

— Юрать. Ахаль таврӑнмӑпӑр,— терӗҫ разведчиксем.

Кравчук вӗсен аллисене тыта-тыта чӑмӑртарӗ.

— Асӑрханарах ҫӳрӗр, пӗр йытӑшӑн темиҫе ҫын ҫухатас марччӗ...

Анчах разведчиксен ниҫта та каймалла пулмарӗ. Вӗсем тухса кайма хатӗрленнӗ самантра ҫӗрпӳрте радистка Зоя хыпаланса чупса кӗчӗ.

— Килеҫҫӗ!— терӗ вӑл хаваслӑн.— Килеҫҫӗ!..

— Камсем?— сиксе тӑчӗ Кравчук.

— Пирӗн ачасем.

— Пурте-и?

— Пурте, вӗсемпе пӗрле тата тепӗр ҫын...

Кравчук урӑх ыйтса тӑмарӗ, часрах ҫӗрпӳртрен тухса чупрӗ. Ун хыҫҫӑн ыттисем те тухрӗҫ.

Зоя тӗрӗсне каланӑ. Сӑртран ҫырманалла, ансӑр сукмак тӑрӑх, умлӑн-хыҫлӑн Санька, Ванюшка, палламан темле ҫын тата Михаҫ утса анаҫҫӗ.

Отряд командирӗ, хӑй пӑлханнине пытармасӑрах, вӗсене хирӗҫ чупса кайрӗ.

Кашнинех тыта-тыта ыталарӗ вӑл. Ҫав хушӑрах ют ҫын ҫине чалӑшшӑн пӑхса илчӗ. Кӑшт курпунтарах, хӗсӗк куҫлӑ, типнӗ курӑк тӗслӗ сайра сухаллӑ нӗрсӗр этем пулнӑ вӑл. Унӑн аллисене хыҫалалла ҫыхнине курсанах, Кравчук вӑл кам иккенне ӑнланчӗ.

— Предатель...

Михаҫ ҫакна асӑрхарӗ те, Кравчук ҫине пӑхса, чеереххӗн кулса илчӗ.

— Расхода ярас мар, малтан сире илсе килсе кӑтартас терӗмӗр...

Унччен те пулмарӗ, вӗсене пур енчен те партизансем сырса илчӗҫ. Кашниех саламларӗ паттӑр ҫамрӑксене, кашниех ыйтса пӗлме тӑрӑшрӗ:

— Мӗншӗн ытла нумай пурӑнтӑр?

— Ку ирсӗрне епле сӗтӗркелесе ҫитертӗр?

Малтан Михаҫпа ачасем хӑйсем мӗн тунисем ҫинчен

каласа паркаларĕç, анчах халăх пухăннăçемĕн пухăннине, пурне те каласа çитерес çуккине кура, Михаç аллипе сулчĕ.

— Итлĕр-ха, тусăм-юлташсем... Эпир виçĕ кун çыварман, нимĕн те çимен. Анланатăр-и çавна?

— Тĕрĕс,— терĕ командир та.— Куратăр — ачасен çын сăнĕ юлман. Кантарас пулать...

Михаçпа ачасене вăл хăйĕн çĕрпӳртне илсе кĕчĕ, вĕсем валли çимелли илсе пыма хушрĕ. Апат çинĕ чух вара вĕсем отрядран тухса кайнăранпа мĕн-мĕн пулни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕç.

## XXVI

...Баранихăна туссем каç пуласпа çитнĕ. Михаç пĕр тăкăрлăк хĕрринчи кивĕ арпалăхра выртса юлнă. Ванюшкăпа Санька яла кĕнĕ. Çăл кутĕнче шыв ăсса тăракан ватăрах хĕрарăм патне пынă та тӳрех староста ăçтарах пурăнни çинчен ыйтнă.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сире?— тĕлĕннĕ хĕрарăм.

— Эпир килелле таврăнатпăр та сирĕн ялта çĕр выртас тетпĕр,— ним тытăнса тăмасăрах ответ панă Ванюшка.— Анчах нимĕçсем пур иртен-çӳренсене те, яла пырса кĕрсен, старостăна курăнма хушаççĕ...

Хĕрарăм ачасем çине тата тинкererех пăхнă та ассăн сывласа илнĕ.

— Вăл апла пулĕ те-ха, ывăлăмсем... Эсир урăх яла çитсе выртсан авантарах пулмĕ-ши?

— Мĕншĕн, инке?

— Юратмасть вăл иртен-çӳренсене...—Хĕрарăм шăппăнрах калама пуçланă.— Нимĕçсене тытса парать. Ак, нумаях пулмасть пĕр пĕчĕк ачаллă хĕрарăм килсе кĕчĕ те çавнашкал...

Çак вăхăтра çăлтан кăшт тăварахра хапха уçăлни илтĕннĕ те, урама тĕреклĕ кăвак лаша кӳлнĕ тимĕрленĕ урапа шалтăртатса тухнă. Урапа çинче кăшт курпунта-

рах, сайра сухаллă арçын ларнă. Ун хыççăн тухса тăнă чăсланкă хĕрарăм хыттăн кăшкăрса ыйтнă:

— Хăçан таврăнатăн?

— Пĕр ик-виçĕ кунсăр килейместĕп пулĕ,— тенĕ те арçынĕ, лашине çурăмĕ тăрăх тилхепипе туртса çапса, самантрах тăкăрлăкалла пăрăнса куçран çухалнă. Чăсланкă хĕрарăм килхушшине кĕрсе хапхана шал енчен хупса хунă.

Çăл кутĕнчи хĕрарăм, ачасене староста çинчен каласа пама тытăннăскер, çак хушăра ним чĕнмесĕр тăнă. Леш хĕрарăм хапхана хупса хурсан тин тепĕр хут сăмах хушнă:

— Çаксем вĕсем...

— Қамсем?— тĕлĕнерех ыйтнă Ванюшкăпа Санька.

— Старостăпа арăмĕ... çĕр çăтманскерсем...

— Аçта кайрĕ вара вăл?

— Хулана, хăйĕн начальникĕсем патне ĕнтĕ. Илтрĕр пулĕ, пĕр ик-виçĕ кунсăр килейместĕп, терĕ.

— Анăçсăр пулчĕ эппин пирĕн...— тенĕ Ванюшка, староста килĕ çине тепĕр хут пăхса илсе.— Қалаçаймарăмăр...

— Ой, ывăлăм, калаçманни те аван,— аллипе сулнă хĕрарăм. Этем мар вăл, сутăнчăк, турра та, чыса та маннăскер! Питех çĕр выртмалли çук пулсан, атьăр, хам патрах çывăратса ярăп. Ав çавăнта, ял вĕçĕнче, пурăнатăп эпĕ...

Ачасемшĕн ку питĕ аван пулнă. Вĕсем çав хĕрарăм патне кайса вырнаçнă та, тĕттĕм пулсан Ванюшка кун çинчен Михаçа кайса пĕлтернĕ:

— Лайăх карчăк, хăрамалли çук...

— Юрĕ,— тенĕ Михаç.— Эсĕ кай, кăшт тăхтасан эпĕ те пырăп. Майлаштаркалăпăр мĕнле те пулин...

Хĕрарăм Ванюшкăпа Санькăна çенĕкре апат çиме лартнă вăхăтра вара Михаç та пырса кĕнĕ. Вăл та хăйне çĕр выртма яма ыйтнă.

— Килелле каятăп та, ывăнса çитрĕм... Чирлетĕп пулмалла тата...

Кил хуçи ăна та хĕрхеннĕ, выртах, тенĕ.

Ир енне çанталăк пăсăлса кайнă. Сасартăк çил йăтăнса тухнă, унтан пĕтĕм тӳпене тăхлан тĕслĕ пĕлĕтсем карса илнĕ те, çумăр чашлаттарма тытăннă. Вăл кунĕпе, çĕрĕпе çунă тата тепĕр кунне те чарăнман. Михаç, тек-текех чӳрече витĕр тулалла пăхса, юриех кăмăлсăр пулнă пек ӳпкелешсе илнĕ:

— Ах, пĕтерчĕ пире ку çумăр... Халиччен таçта та çитеттĕмĕр эпир! Чарăнасса кĕтсе илейрес çук, каяс пулĕ...

Кил хуçи ăна лăплантарма тăрăшнă:

— Мĕн нуши сана çакăн пек çанталăкра ăшă пӳртрен тухса кайма? Чарăнĕ-ха, эрнипех çумĕ.

Анчах, тĕрĕссипе, Михаç çанталăк кун пек пулнăшăн чунтан савăннă. Çумăр çуман пулсан, вĕсен ку карчăк патĕнчен тухса кайса, староста яла таврăнасса ăçта та пулин урăх çĕрте кĕтсе выртмалла пулатчĕ, халь—çанталăк япăх пулнă сăлтавпа — чиперех пурăнма май килнĕ.

Икĕ кун хушшинче вĕсем кил хуçипе лайăхах паллашса çитнĕ, ун урлă ку ялти пурнăç çинчен те, староста мĕн-мĕн хăтланни çинчен те тĕплĕн пĕлнĕ. Чăн та, нумай ирсĕр ĕçсем туса тăкнă иккен вăл. Вăрçăччен хăй темиçе хутчен те тĕрмере ларнăскер пулнă. Кăçал çуркунне таçтан мурĕнчен яла килсе кĕнĕ те, кăшт пурăнсанах фашистсем ăна староста туса хунă. «Ял пуçе» пулса тăнă хыççăнах вара ним майсăр ашкăнма тытăннă. Ялта ĕлĕк кам активист пулнă, халь нимĕççене хирĕç пĕр сăмах та пулин каланă — пурне те тыттара-тыттара янă. Çак кил хуçи хĕрарăмĕн упăшкине те, йывăç ура çинче çӳрекен инвалида, çынсене Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан листовкăна вуласа панăшăн тĕрмене ăсатнă...

— Шалчи тултăрах шуйттанăн, кам та пулин тытса

майне пăртăрах,— тесе ылханнă хĕрарăм куççулĕ витĕр.— Ăна вĕлерекен çын сывлăхĕшĕн эпир ĕмĕр-ĕмĕр кĕлтăваттăмăр! Тупăнмасть пуль çав ун пек çын...

— Тен, тупăнĕ-ха, ăçтан пĕлес,— карчăк кăмăлне çĕклеме тăрăшнă Михаç. Унăн çак самантра ăна: «Вăл çын — эпĕ пулатăп!»— тесе каласси килнĕ, анчах — юраман...

Виççĕмĕш кунĕнче, кăнтăрла иртсен, çумăр чарăнма пуçланă.

— Ну, ачасем, каятпăр пулĕ,— тенĕ Михаç, урамалла пăхса — Çитĕ, инкене ахаль те нумай чăрмантартăмăр...

Анчах кил хуçи тӳрех пӳлнĕ ăна:

— Чимĕр-ха, мĕн те пулин пĕçерсе çитерсе ярам... Тахçан вĕри апат çимелле пулать-ха тата сирĕн?

Вăл витресем йăтса шыв патне кайма хатĕрленсен, Михаç ăна староста çинчен пĕлме ыйтнă.

— Тен, килнĕ вăл? Епле пулсан та, манăн пропуск çине хам ку ялта пулнине паллă тутармалла, унсăрăн ытти çĕрте тытса чарма пултараççĕ...

Вăл тухса кайсанах, Михаç Ванюшкăпа Санька çине пăхса илнĕ.

— Ку таранччен маттур пултăр, тавтапуç уншăн, анчах малашне чи йывăрри пуçланать, астăвăр. Леш йытă паян таврăнмаллах. Кĕçĕр пирĕн хамăр ĕçе туса пĕтерес пулать...

Чăн та, староста таврăннă. Кил хуçи хĕрарăмĕ шыв ăсса тăнă чух унăн ӳсĕр сассине илтнĕ. Вăл хăй пӳртĕнче пĕчченех юрласа ларнă.

— Ахăртнех, хĕпĕртемелли тупăннă-тăр явăлăн,— тенĕ карчăк.— Каллех кама та пулин тытса панă пуль те, çавăншăн савăнать пуль, вилме маннăскер!

Кун çинчен пĕлсен, Михаç хыпаланма тытăннă.

— Çанталăк лайăх, часрах каяс...

Карчăк пĕçернĕ апата вĕсем хăпăл-хапăл çикеленĕ те ăна чĕререн тав туса тухнă. Анчах урам тăрăх кай-

ман, тăкăрлăкпа пăрăнса, хир еннелле утнă, унтан часах виçĕмкун Михаç пытаннă арпалăха пырса кĕнĕ. Кунта вĕсем тĕттĕмленме пуçличченех ларнă. Михаç ачасене хăй малтан вĕрентнине тата тепĕр хут каласа панă.

— Ну, халь кайăр ĕнтĕ,— тенĕ вăл юлашкинчен.— Эпĕ сирĕнтен инçетре пулмастăп. Кирлĕ самантра тăмакалла кăшкăрăр...

Ванюшкăпа Санька тăкăрлăкпа каллех урама тухнă та староста патне кайнă. Вăл сĕтел хушшинче апатланса ларнă, ун умĕнче халь çеç пуçланă самогонка бутылкки пулнă. Алăк урлă каçсанах ачасем, ăна пуç тайса, турăшсем еннелле пăхса сăхсăхса илнĕ.

— Ырă тете, тархасшăн çĕр выртма ярăр пире,— тенĕ вĕсем.— Никам та кĕртмест, аптраса çитрĕмĕр...

— Ăçтисем вара эсир?— ыйтнă староста, аллине тытнă стаканне сĕтел çине лартса.

— Инçетрисем, тете... Минск патĕнчисемех. Килелле каятпăр... Раскулачить тунăскерсем... Атте-аннесем ссылкăра вилчĕç, эпир тăлăха юлтăмăр, ăçта май килнĕ — çавăнта пурăнкаларăмăр. Нимĕçсем пирĕн пеккисене хĕрхенеççĕ тенине илтрĕмĕр те хĕрлисемпе юриех чакса каймарăмăр...

— Тĕрĕс тунă,— тенĕ староста.— Ларăр манпа сĕтел хушшине. Сирĕн пеккисене эпир килĕштеретпĕр, пулăшма та пултаратпăр. Сирĕнтен çын тума пулать!

— Пире пулăшсан, эпир те хăçан та пулин тав тума пĕлĕттĕмĕр сире... Атту пĕтес пулать... Никам та хĕрхенмест...

Ванюшка, макăрнă пек туса, куçĕсене вăйпах сăтăрма тытăннă.

— Макăрма кирлĕ мар,— аллипе сулнă староста.— Пирĕн макăрмалли вăхăт иртсе кайрĕ ĕнтĕ, малашне эпир савăнса кăна пурăнатпăр... Ларăр, ларăр!

Ванюшкăпа Санька сĕтел хушшине пырса ларнă. Староста стаканри самогонкăна çавăрса хунă та, какай чăмла-чăмла, мухтанма тытăннă.

— Эпĕ те нумай асап куртăм советсем вăхăтĕнче. Темиçе хут тĕрмере лартрĕç. Пĕтĕм пурлăха, ак çак пÿрте те туртса илчĕç... Анчах халь пĕтĕмпех каялла илтĕм. Ял пуçĕ пулса тăтăм. Пурне те хам алăра тытма пуçларăм...— Вăл тата тепĕр стакан ярса ĕçнĕ.— Килсе çулăх-ха халь ман çумма! Хуть те кама та пĕкĕ пек авса хуратăп! Пире вĕт пысăк власть панă... Акă, ĕнер хулара пирĕн съезд пулчĕ. Çĕнĕ пуçлăх килнĕ. Обершуурм... Оберштурмфер... Фу! Чĕлхене хуçсах пăрахма пулать хăнăхиччен...— Староста, çĕрĕк хура шăлĕсене йĕрсе, лăх-лăх-лăх кулса илнĕ.— Маттур нимĕç! Генрих Шварц теççĕ хăйне...

Ванюшкăпа Санька пĕр харăсах чăмлама чарăннă. «Генрих Шварц...» Ку ята вĕсем ытла та лайăх пĕлнĕçке... Çав ятлă фашиста вĕсем пуринчен те ытларах курайман. Ун ятне илтсен, вĕсем тăруках сăнран та улшăннă.

— Çав бандитах пуль вăл, пирĕн аннесене вĕлерекенниех...— тесе шухăшланă кашни, пĕр-пĕрин çине пăхса илсе.

Анчах ÿсĕр староста нимĕн те сисмен, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырса, малтанхи çемĕпех пакăлтатнă.

— Чаплă нимĕç тет çав Генрих Шварц! Ăна Гитлер хăй аллипе тимĕр хĕрес çакса янă, тет... Çав обер... Оберфур мана çурăмран лăпкасах мухтарĕ,— каппайнă староста.— Малалла та хальхи пекех ĕçлесен, награда пама пулчĕ... Пурлăх енчен вара — хуть те мĕн чухлĕ ил хăвна валли, терĕ. Çĕр те, выльăх-чĕрлĕх те, тем те... Помещик пек пурăн, терĕ... Во! А сире... сире эпĕ, кăмăлăр пулсан, хам пата илме пултаратăп. Пурăнăр! Тарçăсăр çавах май килмест мана...

Староста татах ĕçнĕ те пуçĕпех ÿсĕрĕлсе кайнă, тек чĕлхине те çавăркалайман. Арăмĕ вара ăна алăк патĕнчи кровать çине сĕтĕрсе кайса выртарнă.

— Сире ăçта çывратас?— тесе ыйтнă вăл ачасенчен.— Кунтах выртатăр-и, е малти пÿрте сарса парас?

— Çук, çук, пире кунтах юрать... Урайне мĕн те пулин пăрахса парсан çитет. Атту эпир çĕрле тула тухма та пĕлеймĕпĕр, сире вăратса чăрмантармалла пулĕ...

— Анчах эсир тухас-кĕрес пулсан, алăксене лайăххах питĕрсе кĕрĕр вара. Ку чухне такам та сĕтĕрĕнсе çӳрет, хăрамалла,— тенĕ хĕрарăм.

— Юрĕ, инке, юрĕ! Эсир хушнă пекех пулĕ...

Староста арăмĕ часах шалти пӳлĕме, ачасем патне, кĕрсе выртнă та, пӳртре шăпах пулнă. Кровать çинче предатель йывăррăн сывласа çывăрни çеç илтĕннĕ. Ванюшкăпа Санька чылай вăхăт ним те чĕнмен, çывăрнă пек пулса выртнă. Тулта каллех çумăр çума пуçланă, вăл таттисĕрех чӳречерен тăкăртаттарнă. Çумăр сунă çемĕпе староста арăмĕ те хытă çывăрса кайнă, вăл хăрлаттарни алăк витĕрех илтĕннĕ.

— Вăхăт,— тенĕ Ванюшка Санькăна хăлхинчен.— Эсĕ вырт, эпĕ Михаçа тухса чĕнем...

— Юрать...

Ванюшка пӳрт алăкне çаклатнине, çенĕк алăкне тĕкĕленине çав тери ерипен, пĕр сасăсăр уçса тула тухнă та кăшт тăрсанах пӳрте Михаçпа пĕрле çавăн пекех шăппăн таврăннă. Ана староста çывăракан тĕле çавăтса çитерсен хулĕнчен пăчăртанă. Михаç вара йăпăрт кăна электричество хунарĕпе çутатса илнĕ. Предатель, çурăмĕ çинче выртса, çăварне карса пăрахсах çывăрнă... Михаç çавăнтах ун çăварне кипке татăкĕпе пăкăласа лартнă,— лешĕ пĕр сасă та кăларайман. Унтан ăна, ӳппĕн çавăрса пăрахса, алли-урисене çыхнă та хăвăрт кăна килхушшине çĕклесе тухнă. Вăраннă сутăнчăк тапаланма пикеннĕ, анчах Михаç ăна пуçĕнчен пистолет аврипе шаккаса илнĕ:

— Халех вилес килмест пулсан — ан хускал, сволочь!..

Пĕр вунă минутран вĕсем, анкартисем витĕр тухса, ял хыçĕнчи çырмана аннă та сутăнчăка çĕре пăрахнă.



— Çитет сана кун чухлĕ çĕклесе килнипе,— тенĕ ăна Михаç,— ытла пысăк чыс пулать. Хăвах лайăх утма пултаратăн!

Унăн урисене салтса янă, анчах вăл вырăнтан та хускалман. Михаç хăйĕн пистолетне унăн тăнлавĕ патне тĕртĕнтерсен тин вăл ура çине тăнă.

Пăч тĕттĕмре вĕсем сăрта хăпарнă та васкасах вăрман еннелле утнă. Çур километр пек кайсан, вĕсен çулне сасартăк тарăн çырма пӳлсе лартнă. Михаç унăн-кунăн пăхкаланă хушăра хайхи сутăнчăк чăнкă сăртран пĕр-рех аялалла сикнĕ... Шухăшласа тăмалли пулман, тĕт-тĕмре сутăнчăк куçран çухалма та пултарнă, çавăнпа та Михаç: «Стой!» тесе кăшкăрнă та çырмана сикнĕ. Ванюшкăпа Санька — ун хыççăн. Тарайман вара лешĕ, Михаç ăна çырма тĕпĕнче хунарпа шыраса тупнă. Паллах, тарăхни-мĕнĕпе пăртак ĕнселекелесе те илнĕ.

Староста сывлайми пулса вăхăтсăр вилсе выртас-ран шикленсе, унăн çăварне чикнĕ кипке татăкне кăлар-нă. Сутăнчăк нăйкăшма тытăннă:

— Ăçта илсе каятăр эсир мана?
— Халăхпа суд тума...
— Ан хăтланăрах кирлĕ мара, ярăр тархасшăн! Эпĕ сире луччă укçа парăп... Пин! Вунă пин!— чĕтре-чĕтре тархасланă староста.
— Хуп шăршлă çăварна!— кăшкăрнă ун çине Михаç.— Ун пек калаçатăн пулсан, çăварна каллех пăкăласа лартатпăр. Ут!
Ир енне вĕсем вăрмана çитнĕ. Хăйне вăрманалла шалтан шала илсе кайнине кура, староста каллех кутăнланма тапратнă.
— Хуть те çакăнта персе вĕлерĕр — малалла пымастăп!
— Ытлашши пуля çук,— мăшкăласа илнĕ унтан Михаç.
Вĕсем кăшт каннă та каллех малалла утнă. Каçалапа самаях сарлака шыв хĕррине çитсе тухнă. Кунталла килнĕ чух туссем ун урлă пĕр çĕтĕк кимĕ тупса каçнă-мĕн, анчах халĕ ку таврашра нимĕн те пулман.
— Ишсе каçмалла пулать,— тенĕ Михаç.— Ним тума та çук, аллисене салтма тивет çакăнне. Эсир ишме пĕлетĕр-и?— ыйтнă вăл ачасенчен.
Ванюшкăпа Санька ишме пĕлнĕ, анчах староста пуçне пăркаласах каланă:
— Ишме пĕлместĕп эпĕ... Путса вилетĕп!
— Ан хăра, путармăпăр! Ишме пĕлместĕн пулсан — çапла тăвăпăр...— Михаç пилĕкне йĕри-тавра чĕркенĕ вăрăм кантрана салтса сутăнчăка мăйĕнчен çыхнă.
— Ан вĕлерĕр! Тархасшăн ан вĕлерĕр, ачасене те пулин хĕрхенĕр,— çуйăхма тытăннă староста, хăйне партизансем халех çакма хатĕрленеççĕ пулĕ тесе.— Ишетĕп эпĕ! Хамах ишетĕп!..
Çав вăхăтра инçетрех те мар йытăсем вĕрни илтĕнсе кайнă. Паллах, унта нимĕçсем пулнă. Куна пирĕн туссем çеç мар, староста та тавçăрса илнĕ. Вăл юриех хыттăн кăшкăрса янă:

— А-а-а!.. Виле-е-еп!.. Çăлă-ăр!..

Староста нимĕçсене часрах пыма йыхăрни пулнă ку. Михаç çакăншăн шутсăр тарăхса кайнă. Вăл сутăнчăка çăварĕнчен питĕ хытă çапса часрах шывалла сикнĕ те ăна кантрапа шалалла туртма тытăннă.

— Хыçалтан хăваласа пырăр!— кăшкăрнă вăл ачасене.

Вĕсем çапла шыв варринелле ишсе çитсен, хыçалта, йытăсем вĕрнипе хутăш, пăшал сассисем илтĕннĕ. Пульăсем унта та кунта чăк-чак! чăк-чак! туса шыва сирпĕнтернĕ. Пуля никама та тиркесе тăманнине чухласа, староста та хытăрах ишме тытăннă.

Шывран тухсан, хăйсем йĕп-йĕпех пулнă пулин те, туссем пĕр чарăнмасăр чупнă. Сутăнчăк аран-аран сывлакан пулса çитнĕ, анчах ăна çаплах хăвалана, хăвалана...

## XXVII

Баранихăри старостăна допрос тунă çĕрте Михаç та, Ванюшкăпа Санька та пулчĕç. Пит те йĕрĕнсе пăхса ларчĕç ачасем ун çине. Килĕнче вăл çав тери «паттăрччĕ», анчах кунта, халăх сучĕ умĕнче, калама та çук çемçелсе, епресе, çĕр ăшĕнчи ăман пек пулса тăчĕ. Сасси — вăрăмтуна сасси пек, алли-урисем чĕтреççĕ, куçĕсем пушшех хĕсĕнсе ларнă, çынсем çине пăхма та хăяймасть.

Хăйне вăл тап-таса, нихăш енчен те айăплă мар çын пек туса кăтартма тăрăшрĕ, темĕн тĕрлĕ пăркаланчĕ,— улталама хăтланчĕ:

— Эпĕ хам ирĕкпе мар... Лăпкăн кăна пурăнасшăнччĕ, анчах мана вăйпах староста турĕç, итлемесен— хăвна çакатпăр, терĕç... Тупата... Акă, хĕрес...

Анчах Кравчук ун историне пĕтĕмпех пĕлнĕ. Ачасем те нумай пĕлсе килнĕ ун çинчен. Çавăнпа та староста суйни кăлăхах пулнă. Фашистсене сутăнса совет çынни-

сене калама çук нумай хурлăх кăтартнăшăн партизансем ăна персе пăрахма йышăнчĕç.

— Чимĕр-ха, манăн ыйтмалли пурччĕ тата унтан,— терĕ сасартăк Ванюшка, сиксе чĕтрекен сутăнчăка икĕ партизан тулалла илсе тухма тăрсан.

— Мĕн çинчен?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Кравчук.

— Хăй килĕнче вăл пире хулара нимĕçсен çĕнĕ начальникĕ пурри çинчен каларĕ... Генрих Шварц ятлăскер, тет. Ун патĕнче пулнă вăл... Каласа патăр, унăн кăкри çинче ылтăн вăчăра çук-и?

— А мĕн тума кирлĕ вăл сана?— ăнланаймасăр пăхрĕ ун çине Кравчук.

— Питĕ кирлĕ...— пăлханнăçемĕн пăлханса пычĕ Ванюшка.— Мана та, Санькăна та...

— Кала эсĕ, мĕн тума?

— Сире эпир ун çинчен кайран каласа парăпăр, халь вăл калатăр,— терĕ Ванюшка çирĕппĕн, пуçĕпе сутăнчăк еннелле сулса.— Пĕлес пулать пирĕн! Эпĕ ăна çул çинчех ыйтасшăнччĕ те, май килмерĕ.

— Эй, эсĕ, господин староста,— тесе чĕнчĕ вара Кравчук.— Çак ача мĕн çинчен ыйтнине илтрĕн-и?

— Илтрĕм...

— Каласа пар эппин, ылтăн вăчăра пурччĕ-и сан тусун?.. Çав оберштурмфюрер Шварцăн?

Сутăнчăк кăшт шухăша кайнă пек пулса тăчĕ.

— Пурччĕ пулас... Вăл тек-текех кăкри çинчи кĕсйинчен сехет кăларса пăхатчĕ...

— Çавах эппин!— терĕ Ванюшка.— Мана урăх нимĕн те кирлĕ мар, пĕтĕмпех паллă... Çавах вăл!

— Çавах,— терĕ Санька та.

Сутăнчăка илсе тухса кайрĕç. Çĕрпӳртри ытти çынсемпе пĕрле Ванюшкăпа Санька та тухма тăчĕç, анчах Кравчук вĕсене чĕнсе юлчĕ.

— Мĕнле ылтăн вăчăра çинчен ыйтрăр эсир? Мĕне пĕлтерет ку? Нимĕн те ăнланаймарăм эпĕ...

— Пĕлмен çынна ăнланма йывăр çав ăна,— терĕ Ванюшка, ассăн сывласа.

Кравчук хушнипе вĕсем сĕтел патне ларчĕç те çав ылтăн вăчăран хăрушла историне йĕркипе каласа пачĕç.

— Апла-ха эппин,— терĕ командир, ачасене итлесе пĕтерсен.— Питĕ тĕлĕнмелле!— Вăл, чĕлĕм тивертсе ярса, пĕр хушă аяккалла пăхса ларчĕ. Унтан тăрук ура çине тăчĕ те çĕрпӳртре каллĕ-маллĕ уткаласа илчĕ.— Ну, ан кӳренĕр, ачасем, эпир вăл ылтăн юратакан çынçиене ахалех каçармăпăр. Лекĕ-ха вăл пирĕн алла, çĕлен...

— Эпир те çавăн çинчен кăна ĕмĕтленсе пурăнатпăр,— терĕ Ванюшка.— Унăн мăйне пăрни — пирĕншĕн çав тери пысăк телей пулĕччĕ...

— Асрах тытăпăр эпир ăна. Тен, ак çак çывăх кунсенчех май килĕ... Хăвăра сире ку задание пурнăçа лайăх кĕртнĕшĕн, эпир шаннине тӳрре кăларнăшăн — пысăк тав. Эсир малашне те çакăн пекех паттăр пулассa çирĕп шанатăп. Халь кайса канăр ĕнтĕ, пулас ĕçсем валли вăй пухăр...

Командир çакăн пек ырлани ачасене калама та çук хаваслантарса ячĕ. Вĕсен, часрах тепĕр задание кайса, ăна тата лайăхрах пурнăçлас килчĕ...

## XXVIII

Хăйсене иккĕмĕш задание ярасса та ачасен нумай кĕтмелле пулмарĕ. Темиçе кунтанах отрядри разведчиксем тĕрлĕ çĕртен фашистсем ку еннелле пур йышши çарсене те йышлăн куçарма тытăннине пĕлсе килнĕ. Ку вăл шăпах пирĕн Совет Çарĕ Гитлер çарĕсене Днепр шывĕ патнелле çав тери вайлăн хĕссе пынă вăхăт пулнă. Ун чухне гитлеровецсем пирĕн наступление епле пулсан та чарса лартма тăрăшнă. Çавăн пирки партизансен питĕ хĕрӳ ĕç пуçланнă: вĕсен пур майсемпе те тăшмана фронт линийĕ патне çĕнĕ чаçсем, боеприпассем, апат-

çимĕç илсе пыма чăрмантармалла пулнă. Вĕсем тăшман эшелонĕсене сывлăшалла сиктернĕ, кĕперсене ишĕлтернĕ, вăрмансенчи çулсем çинче икĕ енчен те ĕмĕрхи йывăççене касса ярса, нимĕнле иртмелле мар завалсем тунă, минăсем лартнă, улахрах вырăнсенче засадăсем туса, нимĕççене сасартăк пырса тапăннă, обозĕсене аркатнă...

Отрядра пĕр вăйпитти партизан та юлман, пурте боевой операцисенче пулнă. Пĕр çĕртен таврăнсан кăшт канкаласа илнĕ те тепĕр çĕре тухса кайнă.

Ванюшка çак кунсенче икĕ-виçĕ хутчен те командиртан хăйсене задание яма ыйтрĕ, анчах лешĕ килĕшмерĕ.

— Халь юрамасть-ха... Тăхтăр акă, эпĕ сире хăвăра шăлçемми ĕç тупса парăп,— терĕ вăл.

— Мĕн туса пурăнас эппин пирĕн?— кăмăлсăр пулчĕ Ванюшка.

— Авă, поварсене пулăшăр. Аманнисене пăхма пулăшăр... Сахал-им ĕç?

Кун пек ответ Ванюшкăпа Санькăна ниепле те çырлахтарма пултарайман. Пĕр ирхине вĕсем каç кăна таврăннă Михаç каллех партизансен пысăках мар ушкăнĕпе операцие кайма хатĕрленнине курчĕç те ăна çыпăçмаллипех çыпăçрĕç:

— Пире те хăвăнпа пĕрле илсе кай-ха, тархасшăн!

Анчах Михаç итлесшĕн те пулмарĕ, аллипе сулчĕ кăна:

— Ой, сирĕнпе çӳремелли вăхăт мар!

— Мĕншĕн?

— Ытла та вĕри...

Тепĕр кунтан Михаçа юлташĕсем йывăç тураттисенчен авкаласа тунă наçилккапа çĕклесе таврăнчĕç. Ăна ик уринчен те амантнă иккен. Кун çинчен пĕлсен, Ванюшкăпа Санька вăл выртакан санитарнăй çĕрпӳрте чупса пычĕç. Михаç пĕр кун хушшинчех сăнран улшăнса, шурса кайнă, куçĕсем темле шалалла путса кĕнĕ. Вăл хытă асапланнă курăнать. Çапах та, çĕрпӳрте хăйĕн çамрăк

тусёсем пырса кӗрсен, вӑл чавси ҫине ҫӗкленсе ерипен кулса илчӗ.

— Мӗн пулчӗ сана, Михаҫ пичче?— ыйтрӗ Ванюшка, ун патне пуринчен малтан пырса тӑрса.

— Мӗн пултӑр... Шаккаса ячӗҫ пӑртак...

— Епле пулчӗ-ха апла?

— Кӑштах йӑнӑш турӑмӑр... Ҫул ҫиневаскарах сиксе тухрӑмӑр та, пӑтӑ пуҫланса кайрӗ. Вӗсем нумайӑн пулнӑ иккен, эпир асӑрхайман ӑна...

— Вилекенсем те пулчӗҫ-и вара?

— Пулчӗҫ ҫав. Икӗ ҫын ҫухатрӑмӑр. Ҫичӗ ҫынна амантрӗҫ...

— Хӑйсене лектертӗр-и хуть?

— Вӗсене лайӑхах лекрӗ-ха, сахалран та пӗр вӑтӑрӑшӗ леш тӗнчене ӑсанчӗҫ. Анчах задачӑна пурнӑҫа кӗртеймерӗмӗр, пирӗн вӗт вӗсен обозне аркатмаллаччӗ. Пулаймарӗ...

Михаҫа йывӑр пулса килчӗ пулмалла. Вӑл пуҫне улӑм минтер ҫине хучӗ те куҫӗсене хупрӗ. Унтан ачасем вӑл вӑрӑмӑн йынӑшса илнине илтрӗҫ.

Ҫак вӑхӑтра ҫӗрпӳрте шӑппӑн кӑна Кравчук кӗчӗ. Вӑл тӳрех Михаҫ пуҫӗ вӗҫне пырса ӑна питӗнчен пӑхрӗ

— Ҫывӑратӑн-и эс?— ыйтрӗ вӑл хуллен.

— Ҫук...— Михаҫ куҫӗсене уҫрӗ.

— Ну, мӗнле?

— Нимех те мар. Аптрамастӑп...

Кравчук пушӑтран ҫыхса тунӑ пукан ҫине ларса чӗлӗм тивертсе ячӗ (пӑлханнӑ чух вӑл ялан чӗлӗм туртнӑ).

— Ах, Михаҫ, Михаҫ...— терӗ вӑл, кӑшт ларсан.— Вӑхӑтсӑр пулчӗ ку сан! Тарӑхмалла.

— Мӗн тӑвас тетӗн?..

— Паллах, халь тин ним тума та ҫук. Мӗншӗн тӗрӗс расчет тӑваймарӑн-ха эсӗ? Пӗлсех тӑратӑп, ытлашши вӗриленнипе пулнӑ вӑл. Мӗн чухлӗ каларӑм пуль эп

сана ун çинчен! Ак, туса хутăн халь: ĕçе те пăсрăн, хăвна та юрăхсăра кăлартăн...

Михаç йывăррăн сывласа, чĕнмесĕр выртрĕ. Командира хирĕç калама сăмахĕ те пулмарĕ çав унăн. Засадăран вăхăтсăр сиксе тухман пулсан, ĕç çакнашкал юрăхсăр пулмастчĕ, паллах.

Темиçе минут хушши шăп пулчĕ.

— Командир кунта мар-и?— ыйтрĕ сасартăк тахăшĕ алăка уçса.

— Кунта,— терĕ ăна хирĕç тепĕр сасă.

— Кам унта? Кĕрĕр!— чĕнчĕ куна илтсен Кравчук.

Алăкран вараланса пĕтнĕ, килти çĕтĕк-çурăк сăхман тăхăннă, хĕп-хĕрлĕ шăрт пек сухаллă лутака партизан, пĕркун Ванюшкăсене Михаçпа тĕл пулса илсе килекенни, кĕрсе тăчĕ. Винтовкине шăпăр кĕтессине тăратрĕ вăл, честь паран пекки туса илчĕ.

— Пĕлтерме ирĕк парăр, юлташ командир...

— Кала, кала часрах,— ăна куçĕнчен шăтарас пек пăхрĕ Кравчук.— Мĕн хыпар? Мĕн пĕлсе килтĕн?

— Ырри сахал, юлташ командир... Липовка патĕнчи кĕпере фрицсем каллех юсанă.

— Пулма пултараймасть!— яштах сиксе тăчĕ Кравчук.— Эпир ăна пĕр эрне каялла çеç ишĕлтернĕ! Урăх кĕперпе пăтраштармастăн-и?

— Никак нет, юлташ командир. Машинăсем те çӳреме пуçланă ĕнтĕ ун урлă, хам куçпах куртăм... Хăмăш хушшинчен пăхса выртрăм.

— Йывăр машинăсемех каяççĕ-и?

— Грузовиксем. Анчах мĕн тиени паллă пулмарĕ, пурне те çиелтен витнĕ.

— Нумай иртсе кайрĕç-и?— пуçне çĕклесе ыйтрĕ Михаç.

— Пĕр вунă машина иртнине çеç куртăм, анчах кĕперĕ юсав пулсан — çӳреççех ĕнтĕ.

— Ку питех те кĕтмен япала пулчĕ вара,— хаштах

сывласа илчӗ Кравчук.— Ытла час юсасса кӗтменччӗ эпӗ... Мӗн шухӑшласа кӑларма пулать-ха ӗнтӗ халь?

Вӑл каллех Михаҫ ҫине пӑхса илчӗ. Ку ӑна ӳпкелесе:

— Эсӗ сывӑ пулсан, майне тупаттӑмӑр тен,— тесе каланӑ пекех тухрӗ.

— Васкаҫҫӗ, сволочьсем, сисеҫҫӗ хӑйсен вилӗм сехечӗ ҫывхарса килнине...— Командир чӗлӗм тӗпне алӑк патнелле ывӑтрӗ те каллӗ-маллӗ уткаласа илчӗ. Унтан каллех пукан ҫине пырса ларса, хӗрлӗ сухаллӑ партизана та, ачасене те тухса кайма хушрӗ.

— Епле пулсан та, ҫав кӗпере сиктерсе ярасах пулать,— терӗ вӑл, ҫӗрпӳртре Михаҫпа иккӗшӗ анчах юлсан.— Ҫав ҫула татаймасан — эпир виҫӗ пуса тӑми пулатпӑр, ӑнланатӑн-и ҫавна?

— Ӑнланатӑп...— хуллен кӑна ответ пачӗ Михаҫ.

— Епле пулсан та! Паянах, кӗҫӗрех!— Командир хӑйӗн кашни сӑмахнех уйрӑмӑн, касса татнӑ пек каларӗ.

— Паллах, вӑраха яма юрамасть,— килӗшрӗ Михаҫ.

— Анчах кам тума пултарӗ-ха пирӗн вӑл ӗҫе? Халь ҫине кунта никам та ҫук, пурте заданире... Ҫак хӗрлӗ сухаллӑ упана яраймастӑн вӗт унта, пурпӗр усси пулмасть унтан!

Ҫурӑм ҫинче выртакан Михаҫ тӑрса ларчӗ.

— Эпӗ каятӑп!— терӗ вӑл йывӑррӑн сывласа.

Унӑн чарӑлса кайнӑ куҫӗсем хаярран ялкӑшса илчӗҫ.

— Шӳт тумалли вӑхӑт мар халӗ, тусӑм,— кӑмӑлсӑр пӑхса илчӗ ун ҫине Кравчук.— Эпӗ санпа ӗҫ ҫинчен чӑнласа калаҫатӑп пулсан...

— Эпӗ те чӑнласах калатӑп,— терӗ ӑна хирӗҫ Михаҫ ҫирӗппӗн.— Кӗпере сиктерме эпӗ каятӑп.

— Мӗн... аташма пуҫларӑн-и?

— Аташмастӑп. Пуҫ ӗҫлет ман. Урасем ҫеҫ ӗҫлесех каймаҫҫӗ. Анчах вӑл нимех те мар... Кӗпер ҫывӑхнерех леҫсе яччӑр та взрывчатка ҫитерсе паччӑр. Тек ура кирлӗ мар вара, пурпӗр хырӑмпа шуса каймалла...

— Ай-ай, ăслă-çке эсĕ!— терĕ Кравчук, пуçне пăркаласа.— Аçтан кăна йăтăнса тухрĕ санăн ку ăс... Пăх-ха эсĕ ăна! Çук, ачам, эс кирлĕ мара сӳпĕлтетсе ан вырт. Каласа пар-ха луччĕ...— Кравчук хăй питне Михаç пичĕ патнерех илсе пычĕ.— Çак ачасене... Ванюшкăпа Санькăна ярсан... Мĕнле-ши?

Михаç тăруках ответ памарĕ, темшĕн куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса илчĕ.

— Ĕç тухмĕ-ши?— ыйтрĕ Кравчук каллех.

— Лайăхрах вĕрентсе ярсан...— терĕ Михаç хуллен.

— Ну, вăл паллах ĕнтĕ. Чĕнер эппин?

Ачасемпе вĕсем тӳррĕн, ку ĕç мĕн тери йывăр, хăрушă пулнине ним пытармасăр калаçрĕç. Паллах, нимĕçсем халь вăл кĕпере питĕ хытă сыхлаççĕ, мĕншĕн тесен ăна темиçе кун маларах çеç сиктернĕ. Пĕр те пĕр, ĕçе лайăх пытанса тума пĕлменнипе вĕсен аллине лексен, каçару пуласса шанмалли çук. Çакаççех. Çавăнпа та ĕçе çав тери тĕплĕн, асăрханса тăвас пулать... Çитменнине — ку кĕпер вăрманта мар, уçă вырăнта, анат енчен кăна вĕтлĕх пур. Мĕнле пулсан та çав вăрмана лекме тăрăшмалла. Ун витĕр вара кĕпер патне пыма пулать...

Нумайччен калаçса, пулас ĕçĕн кашни сыпăкне сӳтсе явса, кашни вак япалана хисепе илсе ларчĕç вĕсем. Юлашкинчен план пулса çитрĕ.

Липовка патĕнчи кĕпере сиктерме тăваттăн тухса кайрĕç: хайхи хĕрлĕ сухаллă лутака партизан, Ванюшка, Санька тата имшерккерех ула ĕне.

## XXIX

Вăрмантан тухиччен хĕрлĕ сухаллă партизан ертсе пычĕ. Ачасене вăл çамрăк хăва тĕмисем хушшипе шыв хĕрринех илсе çитерчĕ те анаталла тĕллесе кăтартрĕ:

— Акă вăл кĕпер... Кунтан пĕр-икĕ километр çеç, унтан ытла мар...

— Турă пулăштăрах сире...— хĕрес хурса илчĕ ватă партизан.

Ванюшка мăйĕнчен çакса янă йывăр хутаçа кĕпи витĕр тытса пăхрĕ. Хутаçĕнче унăн темиçе килограмм взрывчатка—тол пулнă. Унтан вăл, аллине хĕвне чиксе, михĕрен тухса таракан шнура тĕрĕслерĕ. Кĕсйинчи шăрпăк коробкине хыпашласа тупрĕ. Пурте йĕркеллех пулнă.

Ачасем, чĕрне вĕççĕн тăрса, карăна-карăна пăхрĕç. Инçетре, кăвакрах тĕтре ăшĕнче ларнă пек, кĕпер курăннă. Сылтăмри çыран енче вăл хура пулнă, сулахай енче — шурă. Халь çеç çĕнĕрен юсаса лартнă пирки унăн кăрлăкĕсем те, юписем те хуралайман мĕн-ха.

— Ну, атя, кайрăмăр,— терĕ вăл Санькăна кăштах чĕтрекен сасăпа.

Паллах ĕнтĕ, вăл пăлханнă. Вăйă выляма мар вĕт, питех те шикленмелле, хăрушла ĕç тума кайнă вĕсем. Унта, кĕпер çинче, фашистсем. Вĕсен куçне курăнмасăр иртме çук. Чарса тăратма та, тĕпчеме те пултараççĕ. Вĕсене мĕнле те пулин улталама пĕлес пулать. Анчах ухтарма шут тытсан — пĕтрĕ вара...

Ванюшка ĕнене мăйракинчен çыхнă пăявран çавăтрĕ, Санька ăна хыçалтан çапăпа хăваларĕ. Чылай хушă вĕсем вăрман хĕррипе, тĕмĕсем хыçĕпе пычĕç. Вĕсем çул урлă кĕпертен аяккарахран каçса кайма шутларĕç. Хăйсене нимĕçсем тытса чарсан — вĕсен пĕр сăмах çеç пулмалла пулнă:

— Пирĕн ĕне çухалнăччĕ те, ăна шыраса çӳрерĕмĕр... Халь киле каятпăр...

Çав вăхăтрах ачасем кĕпер çинчен куç илмесĕр сăнаса пычĕç. Малтан вăл пит уçăмлăнах курăнмарĕ, анчах пĕр çур километр пек кайсан, вĕсем кăшт çӳлĕрех вырăна тухрĕç те, кĕпер те, ун таврашĕнчи вырăнсем те ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнакан пулчĕç.

Кĕперĕн ик вĕçĕнче те «кăмпасем»— çумăртан пытанмалли будка пеккисем тăраççĕ. Вĕсем патĕнче ери-

пен кăна часовойсем уткалаççĕ. Йĕри-тавра шăп. Акă, леш енчен, урăм-сурăм тусан мăкăрлантарса, мотоциклет ыткăнса килни курăнчĕ. Кĕпер патне çитсен, вăл темиçе самантлăха чарăнса тăчĕ те шоссе тăрăх малалла вĕçтерчĕ. Унтан каллех шăп пулчĕ.

Вăрман хĕррипе пыракан ачасем сасартăк ансăр урапа çулĕ çине тухрĕç. Вăл çул, проççек тăрăх пыраканскер, çип çапнă пек тӳрĕ, шоссе урлă каçса каять.

— Çулпа пырсан авантарах пулать вĕт, фрицсем çулăхасран хăтăлма çăмăлтарах,— шухăшларĕ те Ванюшка, кун çинчен Санькăна каласа парса, сылтăмалла пăрăнчĕ.

— Хытăрах хăвала ĕнине, васканă пек пултăр...

Акă, вĕсем шоссе патне çите пуçларĕç. Юлсан юлчĕ пулĕ çирĕм чалăш. Никам та курăнмасть. Кĕпер — сылтăмра, пĕр çур километрта. Унти часовойсем, тен, асăрхамĕç? Питĕ аван пулĕччĕ... Чăрмавсăр...

Анчах нимĕç куçĕсем пур çĕрте те пур-мĕн.

Шоссе çине хăпарасси темиçе утăм кăна юлнăччĕ, вĕсен умне таçтан мурĕнчен, çĕр айĕнчен тухнă пекех, шапа тирĕ тĕслĕ маскировочнăй халат пĕркеннĕ пысăк сарă куçлăхлă нимĕç салтакĕ тухса тăчĕ.

— Ха-альт!

Ванюшка тăпах чарăнчĕ. Унпа пĕр вăхăтрах ĕнепе Санька та чарăнчĕç.

Нимĕç, сылтăм аллине кăкри умĕнчи автомачĕ çине хурса, вĕсем патнелле ерипен утса пычĕ те куçĕсемпе Ванюшка çине тăрăнчĕ.

— Куда идьйот, малшик?

Ванюшка тӳрех шоссе урлă каякан çул çинелле тĕллесе кăтартрĕ.

— Киле каятпăр... Хауз... А-ав çавăнта пирĕн ял, Липовка. Пирĕн ĕне, ак çакă, Пеструшка, çухалчĕ те — ăна шыраса çӳрерĕмĕр, аран тупрăмăр...— пулемет пек шатăртаттарса ăнлантарма тытăнчĕ Ванюшка.

— Короф-ф... Млеко?— терĕ те нимĕç, ĕне çилли çине пĕшкĕнсе пăхрĕ. Унăн сĕт ĕçесси килнĕ пулас.

— Никс, никс, пан...— аллисене саркаласа илчĕ Ванюшка.— Хĕсĕр вăл пирĕн, сĕчĕ çук унăн...

Те нимĕç ăнланмарĕ Ванюшкăн сăмахĕсене, те унăн чăнах та çав териех сĕт ĕçесси килнĕ,— вăл ачасене аллипе сулса шоссе тепĕр енне каçма хушрĕ те çул хĕррине пĕр çын вырнаçмалăх тунă шăтăкран йăпăр-япăр котелок хупăлчине илсе тухрĕ.

— Млеко, млеко!— Вăл котелок хупăлчи çине икĕ пӳрнипе ĕне сунă пек туса кăтартрĕ. Ачасем ăна лайăххах ăнланчĕç.

— Суса пар, — терĕ Ванюшка Санькăна, ĕнене çавăтнă пăява кĕскетсе тытса.

Санька аллинчи хулла пăрахрĕ те ăна хирĕç пĕр сăмах каламасăрах ĕне сума ларчĕ.

Чылай тăрмашрĕ вăл, йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ. Çапах та котелок хупăлчи хĕррипе тан туличченех суса тултарчĕ. Çăра ăшă сĕт тулса пынине пăхса тăрса, нимĕç темиçе хутчен те ватă кушак аçи пекех чĕлхине кăларса, тутисене çулласа илчĕ.

— Халех ĕçетĕп,— терĕ пулас ĕнтĕ вăл.

Анчах Санька ĕне чĕччинчен юлашки хут туртнă чух ĕнене темскер пулчĕ. Вăл пуçне пăркаларĕ, хӳрипе шăтраткаларĕ те Санькăн котелок хупăлчине тытнă аллинчен шач! тапрĕ. Пулмарĕ нимĕçĕн сĕт ĕçесси, пĕр тумлам та юлмарĕ ăна валли.

Çав тери тарăхса кайрĕ нимĕç куншăн. Хăр-хар! кăшкăрса пăрахрĕ те пĕрре Санькăна, тепре ĕнене тапрĕ, Ванюшкăна автомачĕпе хăмсарса илчĕ.

— Пошоль, звиня!.. Скот!.. Зейчас тебя пуф, пуф! Шнель!..

Ачасене çакă çеç кирлĕ пулнă. Ванюшка ĕнене пăявран туртрĕ. Санька часрах сиксе тăрса ăна хулăпа çапрĕ. Вара вĕсем ĕнене çул тăрăх чуптарсах кайрĕç.

...Ванюшка, чупнӑ май, темиҫе хут та каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Малтанах нимӗҫ вӗсем хыҫҫӑн пӑхса тӑратчӗ, анчах кайран курӑнми пулчӗ, каллех хӑйӗн шӑтӑкне кӗрсе ларчӗ пулмалла. Ӗне хӑваласа каякан икӗ ҫӗтӗк-ҫатӑк ачана питех мӗн сӑнамалли пур ӗнтӗ? Иртнӗ те кайнӑ вӗсем хӑйсен ҫулӗпе... Анчах ачисем хӑйсем нимӗҫ тӗлӗпе чиперех иртме пултарнӑшӑн ҫав тери савӑнчӗҫ. Вӗсемшӗн пӗрремӗш хӑрушлӑх, малтанхи йывӑрлӑх иртсе кайрӗ.

Ҫул вӗтлӗхелле пырса кӗчӗ. Ванюшка юлашки хут каялла пӑхса илчӗ.

— Ну, ҫитет кун чухлӗ кайса,— терӗ вӑл шӑппӑн.

Вӗсем ӗнене ҫул ҫинчен кӑшт ҫеҫ илсе кӗртсе хӑварчӗҫ те, сылтӑмалла пӑрӑнса, йывӑҫсем хушшипе кӗпер еннелле утрӗҫ...

## XXX

Ӗнтӗ каҫ пулса килме те пуҫларӗ. Хӗвел саралнӑ йывӑҫ тӑррисене ҫутатса, вӗсене ытармалла мар илемлетсе тӑрать. Ҫав вӑхӑтрах ҫӗртен нӳрлӗх ҫӗкленни сисӗнет. Таврара ҫав тери лӑпкӑ, шӑп, унта-кунта кайӑксем юрлани ҫеҫ илтӗнет.

Чылай утрӗҫ ачасем. Шӑппӑн, асӑрханса, кашни утӑмра тенӗ пекех йӗри-тавралла пӑхса пычӗҫ.

— Ҫывхаратпӑр та пулӗ,—терӗ Ванюшка, пӗр-пӗччен тӑракан питӗ ҫӳлӗ чӑрӑш ҫумне йӑпшӑнса.

— Хӑпарса пӑх-ха...

Санька пиншакне хывса пӑрахрӗ те чӑрӑш тӑрнелле ҫӑтӑр-ҫатӑр улӑхса кайрӗ. Чӑн ҫӳлех хӑпарчӗ вӑл. Темиҫе самантран ҫавӑн пекех хӑвӑрт анса тӑчӗ.

— Инҫе мар,— терӗ вӑл.— Лайӑх курӑнать... Часовойсем те курӑнаҫҫӗ... Эпир кӑшт сылтӑмарах пӑрӑннӑ, пирӗн ав ҫав еннеллерех каймалла.

Вӗсем татах малалла кайрӗҫ. Анчах темиҫе утӑмранах хыҫалта тӗмӗсем чаштӑртатни, такамсем, ҫӗре йы-

вăррăн пусса, ура айĕнчи типĕ туратсене шăтăртаттарса утса килни илтĕнчĕ.

Ачасем самантлăха чарăнса тăчĕç те, ура сассисем хăйсем патнеллех çывхарса килнине сиссе, йывăçсем çăрарах ӳснĕ çĕрелле тапса сикрĕç.

Ванюшкăпа Санька, халĕ хăйсем хыççăн такамсем юриех йĕрлесе пыраççĕ пуль тесе, хăвăртрах вăрманалла кĕрсе çухалма тăрăшрĕç. Анчах нумаях та каяймарĕç, хыçалта умлăн-хыçлăнах ĕне мĕкĕрни илтĕнчĕ. Вăрăмăн, хурланнă пек мĕкĕре-мĕкĕре илчĕ вăл.

Ванюшка тăпах чарăнса тăчĕ.

— Фу, шуйттан! Пеструшка вĕт ку!..

— Чăнах...

— Вăрманта пĕччен çӳресшĕн мар, çавăнпа пирĕн хыççăн утать.

— Атя хытăрах, вăл пире пурпĕр тупаймасть.

Анчах Ванюшка Санькăн сĕнĕвĕпе килĕшмерĕ.

— Сасартăк, шăп эпир ĕç тума тытăннă вăхăтра, хыççăн пырса тухрĕ-тĕк — пĕтерет вăл пире. Кĕпер çинчи часовойсем ăна тӳрех асăрхама пултараççĕ. Ана кула — аяла анса пăхма шут тытĕç. Çук, май килмест...

— А мĕн тăвăпăр эппин?

Туссем çапла калаçса тăнă вăхăтра ĕне ури сассисем юнашар тĕмĕсем хыçĕнчех илтĕнчĕç. Самантран вăл ачасем умне тăчĕ те кĕскен кăна «му-у!» тесе илчĕ.

— Пĕччен çӳреме кичем эппин?— кулса илчĕ те Ванюшка, унăн майракинчен пăява салтма тытăнчĕ.— Аслă иккен эсĕ, Пеструшка, нимĕçе те сĕт ĕçме памарăн, халь пирĕнтен те юлмастăн. Анчах халлĕхе санăн çапах та çакăнта кĕтсе тăмалла пулать...

Ванюшка ĕнене çăра тĕмĕсем ăшнерех çавăтса кĕрсе кăкарчĕ.

— Тăхта пăртак. Килĕпĕр-ха эпир сан патна,— лăпкаса илчĕ вăл ăна.

Çак вăхăтра хĕвел анчĕ. Вăрманта сулхăнланчĕ. Çил тухнипе йывăç тăррисем сулкаланса кашлама тытăнчĕç,

хĕвелтухăç енчен хура-кăвак пĕлĕтсем шуса килни курăнчĕ.

— Çанталăк пăсăлать,— терĕ Санька, çӳлелле пăхса.

— Ку лайăх-ха пирĕншĕн...

Ванюшка кĕпи айне пытарнă хутаçри тола, тĕркĕмлесе чикнĕ шнура, кĕсйинчи шăрпăк коробкине татах хыпашласа тĕрĕслерĕ те куçĕпе кĕпер еннелле сулчĕ:

— Атя...

Пĕр çирĕм минутран вĕсем тĕмĕсем витĕр хурарах кăвак тĕкĕр пек шыв юхса выртнине курчĕç.

— Сылтăмалла каймалла...— пăшăлтатса илчĕ Ванюшка.

Малтанхи пек те мар хытăрах асăрханса, хăйсем умĕнчи тĕмĕсене хуллен сиркелесе, пĕшкĕне-пĕшкĕне, кушаксем пек йăпшăнса пычĕç. Урăхла юраман та çав: халь вĕсем кĕпер патнелле çывхарнăçемĕн çывхарса пынă: кĕпер çинче часовойсем çӳренĕ, кăшт кăна асăрхасан пеме пултарнă. Вара задание пурнăçа кĕртесси те пулас çук, хăйсем те пĕтмелле...

Акă ĕнтĕ тĕмĕсем сайраланма пуçларĕç. Малта пыракан Ванюшка юлашки хут ура çине тăрса, ерипен карăнса пăхрĕ те инçех те мар çара вырăн пуçланнине асăрхарĕ. Ахăртнех, фашистсем, кĕпер çывăхĕнчи йывăçсене ятарласах касса, ун патнелле пымалли вырăнсене юри тасатнă пулмалла.

Лап! выртрĕ Ванюшка.

— Ну, мĕн?— ыйтрĕ унран Санька шăппăн.

— Кĕпер патне çывхарма çук, уçă вырăн...

— Мĕн тăватпăр апла?

Ванюшка тăруках ответ памарĕ. Унăн чĕри сиксе тухас пек тапрĕ, пуçри шухăшсем пĕрин çине тепри пырса кĕчĕç, тăнлавĕсем янлатса тăчĕç...

Мĕн тăвас? Кĕпер патне мĕнле майпа çитес, ун айне мĕнле кĕрсе каяс? Неушлĕ заданине пурнăçламасăрах, кĕпере сиктерсе ямасăрах таврăнмалла пулать? Çук... Кун çинчен шухăш та пулма пултараймасть. Тем пул-

сан та, хӑйсене шанса панӑ ӗҫе тӑвасах пулать. Хуть те — вилмелле пултӑр...

— Тӗттӗм пуласса кӗтетпӗр,— терӗ вӑл чылайран.

Урӑх вӗсем нимӗн те чӗнмерӗҫ, тӗмӗсем хушшинчи вӑрӑм курӑк ӑшне лӑпчӑнса выртса, хушӑран ҫеҫ унӑн-кунӑн пӑхкаласа илчӗҫ.

Вӑхӑт тӳсме ҫук вӑрахӑн шунӑн туйӑнчӗ. Хӗвел па-ҫӑрах аннӑ ӗнтӗ, анчах тӗмшӗн тӗттӗмленсе ҫитмест. Хӗвеланӑҫ хӗртнӗ тимӗр пек хӗрелсе ларнӑ та, унӑн ҫути каялла ӳксе ҫутатса тӑрать. Хӗвелтухӑҫӗ енчен шӑвакан пӗлӗтсене те унтан кӗрен тӗс ҫапнӑ ав, вӗсем те ҫӗре хура чаршавпа хупласа илейместӗ...

Пӑт-пат ҫумӑр ӳккелеме пуҫларӗ. Ҫил тата ытларах вӑйланса, туратсене авса, типе пуҫланӑ ҫулҫӑсене чаш-тӑртаттарма, вӗсене татса вӗҫтерме тытӑнчӗ. Тӗмӗсем хушшинчи тӗттӗмлӗх тинех ҫӑраланма пуҫларӗ. Кӗҫех вӗтӗ ҫумӑр чашлаттарчӗ.

— Ку та аван-ха пирӗншӗн... Халех каятӑп...— пӑ-шӑлтатса илчӗ Ванюшка.

— Эпӗ пымастӑп-им?— ҫавӑн пекех шӑппӑн ыйтрӗ Санька.

— Иккӗн каймалӑх ӗҫӗ те ҫук унта. Эсӗ кунтах вырт... Эпӗ йӑпӑрт кӑна: ҫитетӗп те — тӳрех каялла...

Ҫумӑр вӑйланчӗ. Вӑл ачасен ҫӳхе тумӗсем витӗрех ҫапрӗ, анчах вӗсем ун ҫине пӑхмарӗҫ, малтанхи пекех хускалмасӑр выртрӗҫ...

Тинех тӗттӗм пулса ҫитрӗ.

Ванюшка упаленме хатӗрленчӗ.

— Ну, эпӗ кайрӑм... Кӗт мана...

Самантран вӑл малти тӗмӗсем хушшине упаленсе кӗрсе ҫухалчӗ. Санька ӑна сывламан пек пулса пӑхса выртса юлчӗ. Анчах Ванюшка пилӗк метр та каяймарӗ пулӗ — сывлӑшра сасартӑк темскер чашкӑрса илчӗ те, таврара кӑнтӑрлахи пек ҫап-ҫутӑ пулса тӑчӗ. Ку ытла та кӗтмен ҫӗртен, тӑрук пулнипе Санька, ҫав тери хӑра-са, пуҫне курӑк ӑшне чикрӗ...

Кĕпер еннелле шăвакан Ванюшка та тăпах чарăнса, çĕр çумне çыпăçса выртрĕ.

— Ракета ячĕç... Кĕпер таврашне юри çутатаççĕ,— тавçăрса илчĕ Ванюшка.— Сыхласах тăраççĕ, шуйттансем!

Ракета хура пĕлĕте темиçе самант хушши çутатса тăчĕ те, унăн çунăкĕ Ванюшкăран инçетре те мар ўксе сўнчĕ. Таврара каллех пăч тĕттĕм пулчĕ.

— Васкас!..

Ванюшка хăвăрт-хăвăрт малалла упаленме тытăнчĕ. Тĕттĕмре вăл сулахай аллине темле шĕвĕр япала çине тăрăнтарчĕ те, унăн алли тўсме çук ыратса кайрĕ, анчах та вăл кун çине çаврăнса пăхмарĕ, çаплах малалла шурĕ.

Вăл ĕнтĕ тĕмĕсем хушшинчен уçă çĕре тухрĕ. Халь вăл тата ытларах васкарĕ, мĕншĕн тесен кунта хўтлĕх çук, яр уçă вырăн.

— Каллех ракета ярса çутатсан — пĕтрĕм...

Ванюшка çапла шухăшласа илме ĕлкĕрчĕ çеç—кĕпер çинчен сывлăшалла чăнах та тепĕр ракета чашкăрса хăпарса кайрĕ. Вăл çав самантрах çĕр çумне лăпчăнчĕ, унăн тăруках сывлăшĕ те пўлĕнсе ларчĕ.

— Лекрĕм... Пулмарĕ çитесси...

Анчах нимĕçсем ракетăна халь кĕперĕн тепĕр еннелле янă пулнă, çавăнпа та вăл Ванюшка упаленсе пынă енне кăшт çеç çутатса илчĕ. Вăл ўксенех Ванюшка сиксе тăчĕ те мĕнпур вăйне пухса малалла ыткăнчĕ. Минутран вăл кĕпер айне çитсе кĕрсе, свай юписем хыçне йăпшăнчĕ...

Темиçе самант хушши вăл чул пек хытса тăчĕ, кăшт та пулин хускалма та хăрарĕ. Хăй хашканине кам та пулин илтес пек, çăварне ывçипе хупласа, сăмсипе сывлама тăрăшрĕ. Унтан, пуçне ерипен пăркаласа, итлеме тытăнчĕ. Анчах çумăр хуллен шăпăртатса тăнисĕр тата çырмари шыв майĕпен чăмпăлтатнисĕр пуçне нимĕн те илтĕнмерĕ.

Таврара питĕ лăпкă пулчĕ...

Ванюшка ĕçе тытăнчĕ. Кĕпе айĕнчен тол тултарнă хутаçа кăларса юпасене пĕрлештернĕ урлă каштасем, кĕпер хăмисем çумнех хучĕ, шнура хыпашласа тупса толпа пĕтĕçтерчĕ. Халь ĕнтĕ шнурне тивертсе хӳтлĕхелле кайса вырнаçмалли çеç юлчĕ унăн, анчах çак самантра тавралăх каллех çутăлса кайрĕ: часовойсем татах ракета ячĕç. Ванюшка чĕрĕп пек хутланса ларчĕ. Унччен те пулмарĕ — çырма леш енче мотор сассисем илтĕнчĕç. Автомобиль вăрăмăн кăшкăртрĕ, кĕпер çинче, пуç тăрринчех, йывăр ура сассисем кĕпĕртетрĕç. Унтан каллех автомобиль кăшкăртнă сасă илтĕнчĕ. Пĕрре, иккĕ...

— Машинăсем килеççĕ! Халех кĕпер урлă каçса каяççĕ...

Тек ĕнтĕ нимĕн чухлĕ те тăхтаса тăма юраман. Ванюшка кĕсйинчен хăвăрт кăна шăрпăк кăларчĕ те, çутă ан курăнтăр тесе, ăна пиншак аркипе хупласа чăрт! тутарчĕ. Анчах шăрпăк сӳнчĕ. Каллех чĕртрĕ. Ку та сӳнчĕ. Вара вăл, ним тума аптранипе, пĕр харăсах пилĕк-ултă шăрпăк кăларса çутрĕ те шнур вĕçне тивретрĕ. Шнур тӳрех чăшлатса çунма тытăнчĕ. Ванюшка, взрыв пуличчен тарса ĕлкĕрес тесе кĕпер айĕнчен çиçĕмле хăвăртлăхпа сиксе тухрĕ те, Санька выртса юлнă çĕрелле чупрĕ. Çыранри тĕмĕсем хушшинелле çитсен тин лăпчăнса выртрĕ вăл. Тĕттĕмре Ванюшка машинăсем айĕнче кĕпер хăмисем хăнтăртатнине илтрĕ, унтан хыçалтан каллех ракета çуталчĕ те — тахăш са-



мантра вăл, каялла пăхса илсе, машинсем кĕперĕн ку ьĕçнех çитме пуçланине курса юлма ĕлкĕрчĕ.

Кĕпер çинчи тахăш часовой ăна асăрхарĕ пулмалла — автоматран вăрăм черет кăларса ячĕ. Ванюшка тавра пульăсем ивăçласа сапна пекех тăкăнчĕç, анчах автомат сасси çав самантрах çухалчĕ, ун вырăнне калама çук вăйлăн кĕмсĕртетни, шатăртатни, хуçăлни илтĕнчĕ. Хыçалтан тăрук вĕри сывлăш пырса çапнипе Ванюшка малалла ывтăнса кайрĕ...



## XXXI

Вăл хăйне хулпуççирен такам хыттăн лăсканипе тăна кĕрсе куçĕсене уçрĕ.

— Ванюшка, Ваня! Тăр! Тăр часрах, каймалла...

Ку Санька пулчĕ. Тусĕ вилсех кайнă пуль тесе, вăл ăна хăра-хăрах лăскарĕ.

Анчах Ванюшкăна нимĕн те пулман. Вăл йăпăр-япăр ура

çине сиксе тăчĕ те, хыçалтан çулăм ялкăшнине курса, пĕтĕмпех тавçăрса илчĕ. Эппин ĕç ăнăçлă пулнă, кĕпер сывлăшалла сирпĕннĕ, халĕ унăн юлашкисем çунаççĕ...

Вăл халь çеç инçетрен йывăр япала çĕклесе килсе пăрахнă пек хашт! сывласа ячĕ. Ку ĕнтĕ унăн кăмăлĕ тулнине пĕлтерчĕ.

— Каяр часрах,— терĕ кăна вăл.

Йĕпе тĕмĕсем хушшипе чупнă пекех пынă чух Санька ăна хăй мĕн курса тăни çинчен каласа пачĕ.

— Нимĕн те ыратмасть-и?— ыйтрĕ вăл мĕн курнине каласа пĕтерсен.

— Пĕççе çеç шăйăрса пăрахнă пулмалла. Тата чавса кăшт ыратать те, вăл нимех те мар...

Пĕр хушă вĕсем чĕнмесĕр пычĕç. Вăрман шăпланчĕ, хушăран çеç пĕр-пĕр качхи кайăк çунаттисемпе лăпсăртаттарса пĕр йывăç çинчен тепĕр йывăç çине куçса ларчĕ те, çулçăсем çинчен шыв тумламĕсем пăтлата-пăтлата анчĕç. Анчах хыçалта, кĕпер патĕнче, çаплах-ха нимĕçсем кăшкăрашрĕç, вăхăчĕ-вăхăчĕпе пăшал сассисем илтĕнчĕç.

— Халь ăçта каятпăр эпир?— ыйтрĕ Санька чылайран.— Киле-и? («Кил» тесе вăл отряда каланă).

— Хуть те ăçта пултăр,— терĕ ăна хирĕç Ванюшка,— çак вырăнтан инçерех каясчĕ кăна. Ку таврара вĕсем халь пĕтĕмпех кутăн-пуçăн çавăрттарма тытăнаççĕ ĕнтĕ.

Çав вăхăтра малта ĕне мĕкĕрнĕ сасă илтĕнчĕ.

— Пеструшкăпа мĕн тăвăпăр?— ыйтрĕ Санька.— Пăрахса хăварма шел...

— Хăварма шутламастăп та эп ăна,— терĕ Ванюшка.— Хамăр пата çитиччен пирĕн такама та тĕл пулма тӳр килĕ-ха, темле те суймалла пулĕ. Ĕне шырарáмăр, теме пит ансат...

Малалла вĕсем паçăр кунта мĕнле килнĕ, çавăн пекех кайрĕç. Ванюшка ĕне çавăтса утрĕ, Санька ăна

хыçалтан хăвaлаca пычĕ. Анчах халь вĕсем питĕ хăвăрт, тӳрĕрен тӳрĕ, ним çине пăхмасăр утрĕç.

— Йытăсемпе йĕрлеме ан тытăнччăрах!— шиклĕн шухăшлаca пычĕ Ванюшка, анчах кун çинчен тусне нимĕн те каламарĕ.

Вĕсем темле ансăр çул çине тухрĕç. Вăл вăрман хушшипе çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ тăсăлса выртнă, проççек йышшискер пулнă пулмалла. Ванюшка ун тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа пăхрĕ те:

— Ку пaçăр хамăр килнĕ çулах,— терĕ.— Кайма юрамасть кунпа. Шоссе çине пырса тăрăнатпăр та, тӳрех лексе ларатпăр. Унта вĕсем халь шуйттан чухлех пулĕ-ха, хускатнă кăткă йăви пекех йăшаланаççĕ пулĕ. Шоссе çывăхне пырасси çинчен шухăшламалли те çук...

Вăл хăй куçĕпе курса тăнă пекех тĕрĕс каланă. Кĕпере сиктерсе яни çинчен телефонпа унта-кунта пĕлтернĕ хыççăн ун патнелле нимĕçсен тĕрлĕ начальникĕсем ыткăннă, хăйсемпе пĕрле вĕсем машинĕ-машинĕпе салтаксем илсе кайнă, çул çинчи хурала пĕтĕмпех ура çине тăратнă. Халĕ те, Ванюшка хăй шухăшĕсене каласа панă-паманах, шоссе тăрăх кĕпер еннелле темиçе машина ыткăнса иртни илтĕнчĕ.

— Авă, епле хыпăнса чупаççĕ вĕсем...— аллипе сулахаялла тĕллесе кăтартрĕ Ванюшка.— Пулмастех унта пуçа кайса чикме...

Вĕсем каллех вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

Чылай хушă утсан, ывăннипе, çав тери çывăрас килнипе, вĕсен пынă çĕртех куçĕсем хупăнма тытăнчĕç. Юлашкинчен шухăшсем те темле пăтранма пуçларĕç. Малта утакан Ванюшка пĕр-икĕ хутчен йывăç çумне пырса çапăнчĕ.

— Кăштах канса илетпĕр,— терĕ вăл чарăнса тăрса.— Пурпĕрех эпир кĕçĕр ниçта та çитес çук...

— Юрĕ ара,— килĕшрĕ Санька.

— Тупата, ураран ура иртмест.

— Ман хамăн та çавах.

— Анчах çĕре ларма юрамасть...— Ванюшка каллех нимĕçсем вăрман тăрăх йытăсемпе çӳреме пултарасси çинчен шухăшларĕ.— Пеструшкăна ярса хăваратпăр та хамăр йывăç тăрне хăпаратпăр...

— Çывăрса кайсан — ӳкмĕпĕр-и?

— А эс хăвна пиçиххипе турат çумне çых. Астумастăн-им Михаç епле вĕрентнине?

Темиçе минутран вĕсем пĕр çăра туратлă, çӳлĕ йывăç тăрне улăхса вырнаçса ларчĕç.

— Ну, мĕнле?— ыйтрĕ çӳлерех хăпарнă Ванюшка.

— Чиперех,— терĕ Санька.

— Асту, лайăхрах кăкарăн...

Урăх вĕсем пĕр сăмах та каламарĕç, вилнĕ пек çывăрса кайрĕç те сутăличчен те хускалмарĕç.

Малтан Санька картах сиксе вăранса кайрĕ.

— Вăт шуйттан! — терĕ вăл куçне уçнă-уçман. Çавăнтах хăйĕн сылтăм хулне те, урисене те хускатма çуккине туйрĕ. Алли унăн çĕрĕпех туратран çакăнса тăнипе ыратакан пулнă, урисем кукленсе тăнипе çывăрса ларнă. Ал-урине тӳрлетес тесе хускалкалама тытăнсан, туратсем сулкаланнипе Ванюшка та вăранчĕ.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ вăл, аялалла пăхса.

— Пĕтĕмпех хытса ларнă-ха эпĕ. Тата шутсăр усал тĕлĕк курнă...

— Мĕнле тĕлĕк?

— Мана леш ĕнер сĕт ĕçесшĕн пулнă фриц тытрĕ те... çанна хул кăкĕ таранах хăпартса çĕçĕпе касма тытăнчĕ. Сĕрет çав çĕçĕпе, сĕрет, анчах хăй нимĕн те тăваймасть, ман юн та тухмасть. Çапах та шутсăр ыратать. Вĕçерĕнсе тарма тăтăм — урасем иккĕшĕ те чĕркуççи таран хуçăлса ӳкрĕç. Вăранса кайрăм вара...

— Юрать-ха, фрицран тарма хăтланса çĕре начлатман,— пуçĕпе аялалла кăтартрĕ Ванюшка.— Урусене чăнах хуçаттăн вара...

Вăл çавăнтах унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ те, тĕлĕннипе, çăварне карсах пăрахрĕ:

— Тусам, ара эпир вăрман хĕрринчех çĕр kaçнă вĕт... Пăх-ха эсĕ — ял!..

Санька вăл кăтартнă еннелле пăхса сайра йывăççем хушшипе инçетре те мар улăм витнĕ çуртсене асăрхарĕ. Вĕсенчен кăшт леререхре чус витнисем те, тимĕр витнисем те курăнаççĕ.

— Чăнах та-çке...

— Çакăнта чарăнса тăман пулсан — пырса лекеттĕмĕр кашкăр çăварне. Тем тесен те, нимĕççем пурах ĕнтĕ унта. Çĕрле вĕсем пирĕнпе каласcах тăмастчĕç. Пуринчен ытла, кĕпере сиктерсе янă kaç...

— Кунта пĕлмеççĕ-ши вара ун çинчен?

— Ухмах... Ун çинчен кунта мар, Германине те пĕлгернĕ пуль кĕçĕр! Ну, ан!

— Ăçта каятпăр ĕнтĕ халь?— ыйтрĕ Санька çĕре анса тăрсан.

— Халь-и? Манăн çак яла кĕрсе тухас шут пур-ха...

Санька хăйĕн тусĕ çине шанмасăртарах пăхрĕ.

— Шӳт тăватăн пуль эсĕ...

— Тĕрĕснех калатăп.

— Мĕн тума кĕресшĕн вара эс кунта?

— Хырăм выçă. Тен пĕр-пĕр инке хĕрхенсе мĕн те пулин çитерсе ярĕ. Ку пĕрре. Унтан... Ялта кам, мĕн пуррине пăхкалăпăр, çынсем мĕн калаçнине итлĕпĕр. Астумастăн-им Михаç мĕнле вĕрентнине? Хуть те ăçта пулсан та ытларах пĕлме тăрăш, куçу куртăр, хăлху илттĕр, тетчĕ.

— Вăл тĕрĕс, анчах...

— Мĕн тата? Хăрушă, тетĕн-и? Ним те хăрушă мар. Сăн-сăпатран эпир — ялти ачасемех. Çумра нимĕн те çук: ни пăшал тавраш, ни ĕнерхи хутаç... Ĕне пур та ĕнтĕ, вăл хăрушă япала мар...

Ванюшка çаксене пĕтĕмпех лăпкăн, пăлханмасăр калани Санькăна та лăплантарчĕ.

— Кĕрер эппин...

Вĕсем çывăхрах курăк çисе çӳренĕ Пеструшкăна ĕнерхи пек çаватрĕç те вăрман хĕрринелле утрĕç.

— Кам пĕлет,— терĕ Ванюшка кăшт кайсан,— тен, эпир тата пĕр-пĕр усăллă ĕç туса хурăпăр...

Сасартăк сылтăм енче, вĕсенчен малараах, вăйлă взрыв кĕрслетрĕ те, пĕтĕм вăрман кĕрлесе кайрĕ. Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Мĕн пулчĕ ку?

— Мина пулмалла...

— Кам сиктерет-ши?

— Ăçтан пĕлен ăна...

Чăнах та, çурăлаканни мина пулнă. Ачасем ун çинчен каярахпа пĕлчĕç.

## XXXII

Яла вĕсем анкарти хыçĕпе, пĕр ансăр тăкăрлăкпа пырса кĕчĕç. Те ытла ир пулнипе, те урăх сăлтавпа, урамра пĕр çын та курăнмарĕ, сас-чĕв те илтĕнмерĕ. Ку ялта никам та пурăнман пекех туйăнса кайрĕ. Ванюшка тӳрех нимĕçсем хăйсен ялĕнчи халăха хире хăваласа тухса персе пăрахнине аса илчĕ. Ирĕксĕрех ун чĕри шиклĕн тапма пуçларĕ.

— Мĕн пулнă вара кунта?..

Вĕсем, хӳмесем çуммипе ерипен утса, унталла-кунталла пăхса пычĕç. Чылайран тин урама тăрăх ларакан пĕр самаях пысăк, илемлĕ пӳрт мăрйинчен çинçе кăна тĕтĕм йĕрĕ тухса тăнине асăрхарĕç. Ванюшка вара çавăнталла пăрăнса утрĕ.

Ку килĕн хапхине питĕрмен пулнă, çавăнпа та ачасем ĕни-мĕнĕпех килкартине кĕрсе тăчĕç. Ванюшка Санькăна крыльца умне хăварчĕ те хăй пӳрте кĕчĕ. Алăк сассине илтсе пулас, чăлантан шап-шурă çӳçлĕ, курпунтарах, юмахри пек карчăк пуçне чĕтретсе тухрĕ те аллипе икĕ хут сулчĕ.

— Килте никам та çук!

— Пире никамах та кирлӗ мар, кинемей,—терӗ Ванюшка йӑвашшӑн, ун ҫине тӗлӗнсе пӑхса.—Эпир пӗрер стакан шыв ӗҫес те кӑштах канас тенӗччӗ кӑна... Юрать-ши?

— Ма ыйтан?— карчӑк тӑруках пуҫне Ванюшка енелле ҫаврӑнчӗ.— Халь кам ыйтса тӑрать? Халь вӗт килсе кӗреҫҫӗ, мӗн пуррине ӗҫсе-ҫисе яраҫҫӗ, юлашкинчен хуҫисене те хӑваласа тухса каяҫҫӗ. Атту тата, спасибо калас вырӑнне, ак... хапха каштинчен ҫакса хӑвараҫҫӗ.

— Эпир ун пеккисем мар ӗнтӗ, кинемей, эпир хамӑр ҫынсем, вырӑс ачисем. Пирӗн хамӑрӑн атте-аннесене фашистсем вӗлернӗ...

Ҫак юлашки сӑмахсем карчӑк кӑмӑлне тӑруках ҫемҫетрӗҫ пулас. Вӑл Ванюшка ҫине тата тепӗр хут тинкерсе пӑхрӗ те, унӑн куҫҫулӗсем шӑпӑртатса анчӗҫ.

— Мана та ватлӑхра пӗр-пӗччен тӑратса хӑварчӗҫ... Пӳрт тулли йышчӗ — пурне те пӗтерчӗҫ... Пурӑнатӑп халь уй тӑмани пек, ни вилӗм килмест...

Ванюшка Санькӑна чӗнсе кӗртрӗ те майӗпе карчӑкран ыйтса пӗлме тытӑнчӗ. Питӗ нумай тӳссе ирттернӗ иккен вӑл. Пӗр эрне маларах нимӗҫсем ялти ӗҫлеме пултаракан ҫынсене пурне те Германие хӑваласа кайма тытӑннӑ. Ҫав шута унӑн икӗ хӗрӗ те, пӗчӗк ачаллӑ кинӗ те лекнӗ. Кинӗ, каторгӑна каясран хӑтӑлас тесе, вӑрмана тарнӑ, анчах ӑна тытнӑ та хӑйсен хапхинченех ҫакнӑ, унӑн ывӑлне ик уринчен тытса йӑмра ҫумне ҫапса вӗлерсе хӑварнӑ. Карчӑк ҫавна пӗтӗмпех курса тӑнӑ, тӑрук чӗлхесӗр пулса ларса ик-виҫ кун калаҫайман. Вӑл малтанах хӑйне хӑй вӗлерме шутланӑ, анчах Хӗрлӗ Ҫарти ывӑлне аса илсе, пурӑнас тенӗ.

— Питӗ хастарлӑскер вӑл манӑн, пысӑк начальник. Ҫавна кӗтетӗп... Нимӗҫсем ун ҫемйине мӗн тунине эпӗ ӑна хам каласа парас тетӗп,— лайӑхрах тавӑртӑр...

— Тӗрӗс шутлатӑн, кинемей, тӗрӗс,— терӗ Ванюшка.

— Пуҫӗ сывӑ пулсан — паллах, таврӑнать...— хушса хучӗ Санька.

— Сывах вăл,— терĕ карчăк ĕненӳллĕн.— Тĕлĕкне хам куртăм. Тем пулсан та килетех.

Ачасемпе калаçнă май вăл сĕтел çине пысăк тăм чашăкпа пăсланса тăракан çĕрулми пырса лартрĕ.

— Çийĕр, ывăлăмсем... Ан ятлăр, урăх нимĕн те çук. Сĕт пулсан аванччĕ те, ĕнене те илсе кайрĕç вĕт, эсрелĕсем.

— Ĕне пирĕн пур!— тăрук персе ячĕ Санька.— Сăвас ăна.

— Мĕнле ĕне вара вăл сирĕн, ăçтан тупрăр?—тĕлĕнсе ыйтрĕ карчăк.— Ку таврара ĕне хăварман пуль вĕсем?

— Эпир ăна пĕр çĕрте пытарса усранăччĕ. Халь киле илсе каятпăр,— кил хуçи çине пăхмасăр мăкăртатса илчĕ Ванюшка.— Ĕнертенпе суман.

— Сăвар эппин...

Карчăк чăлантан тăм чӳлмек илсе тухрĕ те, вĕсем виççĕшĕ те килкартине тухрĕç. Ĕнен çилли карăнса чăрлатсах юхса тăнă. Пысăках мар чӳлмек тулнăçемĕн тулса пычĕ.

Çак вăхăтра урамра машинăсем иртсе пынă сасă илтĕнчĕ. Ванюшка вĕсене шăтăк витĕр пăхса юлас шутпа хапха патнелле чупрĕ, анчах вăл унта çитиччен калинккерен килхушшине икĕ нимĕç кĕрсе те тăчĕç. Вĕсем, автомачĕсене хатĕр тытса, чăн-чăн вăрăлла йăлтялт пăхкаласа илчĕç, унтан, кунта хăйсемшĕн нимĕнле хăрушлăх та çуккине кура, тӳрех кил хуçи карчăкĕ ĕне суса ларнă çĕре пырса тăчĕç.

— Млеко? — терĕ пĕри, пӳрнипе чӳлмек çине кăтартса.

Вăл çапла каласанах, Ванюшкăпа Санька ăна паллаласа илчĕç: ку — ĕнер шоссе çинче сĕт ĕçме ĕмĕтленнĕ фриц иккен. Вăл хăй те ачасене палларĕ пулас... Малтан ĕнене мăйракинчен тытса тăракан Санька çине, унтан Ванюшка çине пит те тинкерсе пăхса илчĕ, анчах

нимĕн те шарламарĕ, чӳлмек сĕтпе тулса пынине сăнама тытăнчĕ.

— Аçтан килсе тухрĕ-ха ку мур?..— шухăшларĕ Ванюшка хăй ăшĕнче.— Ĕнер ĕçейменнине паян ĕçетех пулас ĕнтĕ, йытă...

Санька та çав майлах шухăшларĕ:

— Ахальрен мар тĕлĕкре курăнчĕ вăл мана!

Юлашкинчен карчăк ĕне суса пĕтерчĕ те чӳлмеке йăтса крыльца еннелле кайма тăчĕ. Анчах нимĕç ун çулне пӳлчĕ:

— Млеко... Дай!— терĕ вăл хăйăлтатакан сасăпа.

— Хама кирлĕ! Ав, ман ачасем выçă!— пуçĕпе хаяррăн чĕтретсе илчĕ карчăк.

— Дай!— терĕ нимĕç тепĕр хут.

— Памастăп!

Вăл нимĕçрен иртсе кайма тăчĕ, анчах лешĕ чӳлмеке ун аллинчен вăштах туртса илчĕ те хăйне урипе тапса ячĕ.

Карчăк ӳкрĕ.

— Эх, йытă! Мĕн питпе тиветĕн эсĕ ват çынна, намăссăр!..— макăрса ячĕ вăл.

— Молчайт!

Санькăпа Ванюшка пĕр харăсах карчăк патне чупса пырса ăна çĕклесе тăратма пикенчĕç.

— Ан чĕн, асанне... Ан çыхлан, тем туса хурĕç тата...

— Хăрамастăп! Вĕлерччĕр! Анчах вилсен те кураймастăп вĕсене... Леш тĕнчере те канăç памăп...

Вĕсем ăна крыльца çинелле çавăтса хăпарчĕç. Нимĕç, чӳлмекри сĕте çурри ытла ĕçсе, юлашкине юлташне пачĕ. Юлташĕ вара пĕтĕмпех ĕçсе ячĕ те, чӳлмеке пуçĕнчен çӳле çĕклесе, çĕре персе ватрĕ.

— Санăн хăвăн пуçна çавăн пек персе салатасчĕ, çынçиен!— кăшкăрса ячĕ карчăк.— Урнă йытăсем, çĕленсем эсир!..— чышкине çĕклесе юнарĕ вăл.

Нимĕç ăна автомачĕпе тĕллерĕ. Тен, перетехчĕ пулĕ вăл, анчах шăп çав вăхăтра урам хапхинчен тепĕр нимĕç

кĕчĕ. Вăл аслăраххи пулчĕ пулмалла, ăна курсан кусем йăрстах тăчĕç. Вĕсем хăйсем хушшинче тем çинчен мăкăл-мăкăл калаçса илчĕç, унтан халь килни пӳрте кĕрсе çаврăнса тухрĕ.

— Матка! Здесь сегодня пудет шивьот гросс... Польшой начальник,— терĕ вăл карчăк умне пырса тăрса.— Надо метать...— Вăл аллипе урай шăлнă пек туса кăтартрĕ.— Чисто!

Карчăк ним те чĕнмерĕ. Вăл пуçне чĕтретсе илчĕ кăна.

— Сам не можешь — вот есть киндер... малшик. Скоро!

Вăл тек калаçса тăмарĕ, тӳрех калинкке патнелле утрĕ, ун хыççăн малтанхи нимĕçсем те тухса кайрĕç.

— Мĕн терĕ вăл йытă, ăнланса юлтăр-и эсир?— ыйтрĕ карчăк пӳртне кĕрсен.

— Ăнлантăмăр,— терĕ Ванюшка.— Кунта вĕсен пысăк начальникĕ пурăнма килет, терĕ. Урай шăлса тасатма хушрĕ.

— Çапса пăрахсан та вырăнтан хускалмастăп вĕсемшĕн...

Ачасем тинех çиме ларчĕç. Карчăк та майĕпе кăштах лăпланса вĕсемпе пĕрле сĕтел хушшине ларчĕ.

— Эсир çиййĕр, çиййĕр...

Санька Ванюшкăн кусĕнчен пăхса илчĕ:

— Эпир час каятпăр-и?

— Тек тăмастпăр ĕнтĕ. Урама тухса кăштах куркаласа çӳретпĕр те — каятпăр,— терĕ Ванюшка.

Анчах ĕçсем сасартăк улшăнса тăчĕç.

Ачасем çисе тăраничченех пӳрте хайхи урай шăлса тасатма хушса хăварнă нимĕç ефрейторĕ икĕ чăматан çĕклесе пырса кĕчĕ, ун хыççăнах хулпуççинчен хура çутă плащ уртса янă, çӳлĕ картуз тăхăннă, вăрăм хыткан офицер кĕрсе тăчĕ.

Вăл пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ те плащне вăшт кăна хывса ефрейтора тыттарчĕ. Çав самантрах

унӑн кӑкри ҫинче пысӑк ылтӑн вӑчӑра йӑлтӑртатрӗ. Ванюшкӑпа Санька, сасартӑк ҫав тери тӗлӗнсе, хытнӑ пек пулчӗҫ. Вӗсен куҫӗсем чарӑлса, сӑнӗсем улшӑнса, шуралса кайрӗҫ. Вӗсем Генрих Шварца палласа илчӗҫ...

## XXXIII

Генрих Шварц ку яла сӑлтавсӑр килсе кӗмен иккен. Каҫхине, шоссе ҫинчи кӗпере сиктерсе яни ҫинчен пӗлсенех, вӑл часрах унта ыткӑннӑ, хӑйне пуринчен те ытларах пултаракан сыщик пек шутласа, кӗпере сиктерсе яракансене йӗрлесе тупма ӗмӗтленнӗ, анчах нимӗн тума та пултарайман. Икӗ взвод салтакпа темиҫе йытӑ ярса ухтарттарнӑ вӑл таврари вырӑнсене — усси пулман. Кӗпере сиктерсе яракансем ҫӗр айне анса кайнӑ пекех пулнӑ. (Анчах вулакан пӗлет: вӗсем чип-чиперех йывӑҫ тӑрринче ҫӗр каҫнӑ...) Юлашкинчен, ҫурӑлса каяс пек тарӑхса ҫитнипе, ним тума аптранипе, вӑл кӗпер патӗнчи караул начальникне хӗнесе тӑкнӑ та, ӑна «службӑна начар туса пынӑшӑн» суда парассипе хӑратса, каялла кайма тухнӑ. Малта та, кайра та салтаксем тиенӗ грузовиксем пынӑ, Шварц машинӗ — вӗсем хушшинче. Вӑрмантан тухас умӗн малти грузовик сасартӑк сывлӑшалла сирпӗннӗ: вӑл мина ҫине пырса тӑрӑннӑ. Взрыв хумӗ ун хыҫҫӑн пыракан Шварц машинне те ҫӗклесе ҫапнӑ. Грузовик ҫинчи салтаксем чылайӑшӗ вилнӗ, чӗрӗ юлнисем аманса пӗтнӗ, анчах Шварц хӑй, машина тӳнсен, ҫамкине шӑйӑрса пӑрахнӑ ҫеҫ.

Ҫак пачах та кӗтмен ҫӗртен пулса тӑнӑ ӗҫ ӑна тата ытларах тарӑхтарса, ӑнран тухса каяс патнех ҫитернӗ. Темиҫе сехет маларах ҫеҫ ҫак ҫулпа чиперех иртсе кайнӑ вӗт-ха вӑл, ҫул ҫинче нимӗн те пулман. Ку минӑна ҫӗрле, Шварц кӗпер патӗнче пулнӑ чух килсе лартнӑ. Эппин, такам пур кунта... Камӗ паллах—партизансем... Халь унӑн кун ҫинчен васкаса хӑйӗн аслӑ начальникӗсене пӗлтермелле пулнӑ. Лешсем, паллах, ӑна хӑйне айӑплаҫҫӗ ӗнтӗ: мӗншӗн хӑвна шанса панӑ районра пар-

тизансене ҫак таранччен пӗтерейместӗн? Начар ӗҫлетӗн, теме пултараҫҫӗ... Вӗсене приказсем ҫырса ларма лайӑх унта, анчах кунта ӗҫлесе пӑхтарасчӗ... Партизансем ҫумӑр хыҫҫӑн кӑмпа шӑтнӑ пекех ӳссе пыраҫҫӗ. Пуринчен ытла, Хӗрлӗ Ҫар наступленийӗ пуҫланнӑранпа...

Генрих Шварц вилнӗ салтаксене пытармашкӑн шӑтӑк алтма, аманнисене яла илсе кӗртсе хума приказ панӑ та, хӑй ҫав хушӑра кӑштах апатланса канса илме шут тунӑ. Денщикӗ ӑна Ванюшкӑпа Санька кӗнӗ карчӑк патне илсе пынӑ, мӗншӗн тесен карчӑк пӳрчӗ ыттисенчен аслӑрах, тасарах пулнӑ.

...Плащне денщике тыттарсанах, вӑл сӗтел хушшинче ларакансем ҫине тӗллесе ыйтрӗ:

— Камсем?

— Килйыш,— терӗ денщик.

— Тухчӑр!

Денщик, сӗтел патнелле пырса, аллипе алӑк еннелле сулса кӑтартрӗ.

— Пошель!

Ванюшкӑпа Санька пӗр сӑмахсӑрах килкартине тухрӗҫ. Вӗсем халь иккӗшӗ те хӑйсене сивӗ чир тытма пуҫланӑ пек чӗтрерӗҫ. Анчах ку вӗсем хӑранипе мар, ҫав тери пӑлханса кайнипе пулчӗ.

— Палларӑн-и?— пӑшӑлтатса ыйтрӗ Ванюшка

— Палларӑм...

— Ҫавӑ вӗт?

— Ҫавӑ...

— Отряда санӑн пӗчченех каймалла пулать,— терӗ Ванюшка.— Эпӗ юлатӑп...

— Мӗн тума?

— Мӗн тӑвассине... пӗлместӗп, анчах юлатӑп. Хӑрамалли ҫук, вӗсем пире ҫак карчӑкӑн ачисем вырӑнне шутлаҫҫӗ. А эс ӗне ҫавӑт та — чуп часрах, командира ҫитсе пӗлтер... Тен, заданирен таврӑннӑ ҫынсем пур пулӗ. Ванюшка пыма ыйтрӗ, те... Шварц кунтине пӗлсен — яратех вӑл...

Ванюшка ăна отряда мĕнле çитмелли çинчен васкавлăн ăнлантарма тытăнчĕ.

— Анкарти хыçне тухсан сулахаялла пăрăн, унтан вăрмана, ĕнер хамăра леш хĕрлĕ сухал илсе пынă вырăна пыратăн. Унта проççек пур. Тӳп-тӳрех вара...

— Пĕлетĕп...

— Вĕçтер эппин халех. Урампа мар, ак, пахчапа тухса кай.

Санька часрах ĕнене çавăтрĕ. Лупасайĕнчен анкартинелле тухмалли алăка уçсан вăл Ванюшка çине тархасланăн пăхса илчĕ.

— Асту эсĕ... Ытлашши ан вĕрилен... Темрен тем пулĕ...

— Юрĕ, хамах пĕлетĕп,— аллипе сулчĕ Ванюшка.

Вăл килкартине каялла кĕрсен, ăна крыльца çине тухса тăнă ефрейтор чĕнчĕ:

— Малшик! Гей, сюда!

Ванюшка ун патнелле пырса тăчĕ.

— Где есть другой малшик?

— Вăл ĕне çитерме кайрĕ,— терĕ Ванюшка пĕр тытăнмасăрах.

Нимĕç ăна халех шыв ăсса килсе ăшăтма хушрĕ, хăйĕн начальникĕ çăвăнасшăн, терĕ. Ванюшка вăл хушнине тума пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

— Халех ăсса килетĕп, пан...

Тĕрĕссипе, Ванюшка малашне хăй мĕн тăвассине те, мĕн пулма пултарассине те пĕлмен-ха, анчах темле шалти сасă ăна пĕрмай хушса тăнă: «Эсĕ тахçантанпах ăна тавăрасшăн пурăнатăн. Ак, халь эсĕ ăна тĕл пултăн. Эсĕ унпа пĕр пӳртре. Тухса ан кай. Мĕн те пулин тăватăнах... Анчах çирĕп пул. Нимĕн те ан палăрт»... Çавăн пирки вăл çак çуртран тухса каясшăн пулмарĕ.

Пӳрте витресем илме кĕрсен, вăл Генрих Шварц сĕтел хушшинче мундирне вĕçертсе ярсах васкавлăн çырса ларнине курчĕ. Çырнипе чĕтреннĕ май унăн кăкри çинче

ылтӑн вӑчӑра сулкаланса тӑнӑ. Ана курсан Ванюшкӑн каллех сывлӑшӗ пӳлӗнсе ларнӑ пек пулчӗ.

Вӑл чӑланта карчӑкран вӗсем шыв ӑҫтан ӑсни ҫинчен ыйтрӗ те, витресене чӑнкӑртаттарса, урама чупса тухрӗ. Ҫӑл ялӑн анат вӗҫӗнчех пулнӑ иккен. Унта ҫитсен Ванюшка укӑлча хыҫӗнче нимӗҫ салтакӗсем палканине илтрӗ те, витресене лартса хӑварса, хӳме урлӑ кармашса пӑхрӗ. Вӗсем масар шӑтӑкӗсем алтаҫҫӗ иккен. Инҫетре те мар сахалран та пӗр вунӑ хурӑн хӗрес выртать...

— Кусем мина ҫине тӑраннисем пулмалла ӗнтӗ...— шухӑшларӗ Ванюшка.

Каялла таврӑннӑ чух вӑл урамӑн сылтӑм енче, ватӑ хурама айӗнче, ҫиелтен брезент витнӗ пысӑк грузовик тӑнине асӑрхарӗ. Унӑн малти кустӑрмисене иккӗшне те кӑларса пӑрахнӑ, моторӗ патӗнче темиҫен тӑрмашаҫҫӗ— юсаҫҫӗ пулас. Юнашар килхушшинчен тӗтӗм тухса тӑрать, нимӗҫле пакӑлтатни илтӗнет. Унта салтаксем апат пӗҫереҫҫӗ пулас.

— Халех тухса кайма шутламаҫҫӗ курӑнать-ха,— шухӑшларӗ Ванюшка.— Кусем ӗҫлеҫҫӗ, леш кашкӑрӗ ҫӑвӑнма хатӗрленет, унтан апатланать пулӗ-ха, кайран канать... Унччен, тен, каҫ та пулса ларӗ... Санька отряда чипер ҫитсен — каҫчен хамӑрӑннисене ертсе килме пултарать... Эх, аван пулӗччӗ!..

Шыв ӑсса таврӑнсан Генрих Шварц денщикӗ Ванюшкӑна шанкӑ хатӗрлеттерчӗ, шыв ӑшӑттарчӗ, унтан, Шварц пилӗкӗ таран хывӑнса ҫӑваннӑ хыҫҫӑн, унӑн урайне те ҫуса тухмалла пулчӗ. Ванюшка хӑйне мӗн хушнине пурне те пӗр хирӗҫмесӗрех турӗ, анчах ӗҫлессе питӗ вӑрахӑн, васкамасӑр ӗҫлерӗ. Денщик ун ҫине тек-текех кӑшкӑркаласа васкатрӗ, анчах Ванюшка хӑй ҫеммине улӑштармарӗ. Вӑл епле те пулсан вӑхӑта ытларах тӑсма тӑрӑшрӗ...

Юлашкинчен Шварц апатланма ларчӗ. Малтан вӑл эрех ӗҫрӗ: пысӑк кӗмӗл черккене умлӑн-хыҫлӑн, умлӑн-хыҫлӑн ӳпӗнтерчӗ, денщикӗ ярса парса тӑма та ӗлкӗрей-

мерӗ. Ванюшка ун ҫине чӑлантан хушӑк витӗр ҫав тери тӗлӗнсе пӑхса тӑчӗ.

— Вӑт кӳпет! Лаша пек... Тьфу! Наркӑмӑш ярса парасчӗ!— мӑкӑртатса илчӗ те Ванюшкӑпа юнашар хушӑк витӗр пӑхса тӑнӑ карчӑк, сура-сура тулалла тухса кайрӗ.

Анчах ҫиме тытӑнсан та тӗлӗнтерсе пӑрахрӗ вӑл: тутисене чаплаттарса, чӗлхине тем тӑршшӗ кӑларса ярса, асав шӑлӗсене кӑтартса, питне пӑркаласа, куҫсене чарса пӑрахса ҫирӗ... Ҫиет-ҫиет те ӗҫет, ӗҫет те — каллех кавлеме тытӑнать. Ванюшкӑна вӑл нихҫан та тӑранас ҫук пекех туйӑнчӗ.

— Кашкӑр-тӑк, кашкӑрах ҫав!..

Пӗр сехет ытла ларчӗ вӑл сӗтел хушшинче ӗҫсе-ҫисе. Татах та ларатчӗ-и тен те, сасартӑк урамра шӑй-шай кӑшкӑрашни, унтан хапха хӑлт-халт уҫӑлса хупӑнни илтӗнчӗ. Денщик килкартинелле тухакан чӳречерен пӑхса Шварца темскер каларӗ, вара леш тӳрех сиксе тӑчӗ. Унччен те пулмарӗ, пӳрте тепӗр нимӗҫ салтакӗ кӗрсе Шварц умӗнче йӑрст тӑсӑлса тӑчӗ.

— Герр оберштурмфюрер... — Малалла вӑл мӗн каланине Ванюшка ӑнланмарӗ.

— Партизан?!— кӑшкӑрса ячӗ вара Шварц.— О-о!..

Вӑл чышкисене чӑмӑртаса, тутисене чалӑштарса илчӗ. Сӑнӗ малтанхинчен те хӑрушӑрах пулса кайрӗ унӑн.

— Такама тытса килчӗҫ пулмалла кусем...— шухӑш вӗҫрӗ те Ванюшкӑн, чӗри ыратса пӑчӑртанса илчӗ.

— Санька лекмен-ши? Пӗтрӗмӗр вара...

Анчах вӑл Санька пулман. Икӗ гитлеровец пӳрте темле питӗ ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑ, мӑйӗнчен вараланчӑк хутаҫ ҫакнӑ хӗрарӑма пӗтӗрсе кӗртсе тӑратрӗҫ. Ванюшка хӑма хушӑкӗ витӗр чӑрлаттарса пӑхма тытӑнчӗ.

— Партизан?— кӑшкӑрса ячӗ Шварц каллех.

Хӗрарӑм нимӗн те чӗнмерӗ. Шварц ик-виҫ секунда кӗтсе тӑчӗ те ҫав тери хытӑ ҫупса ячӗ.

— Говорить!..

Вăл çапнипе хĕрарăм сулăнса кайрĕ те, унăн пичĕ чăлан еннелле çаврăнчĕ. Тепре çапасса кĕтнĕ пек, вăл çапла пăраннипех тăчĕ. Хăй темскер мăкăртатса илчĕ, анчах вăл мăкăртатни пĕрре те этем калаçнă пек пулмарĕ. Ванюшка ун çине тата хытăрах пăхрĕ. Ана вăл таçта курнă пек, паллана пек туйăнчĕ.

— Кто есть ты? Куда ходиль? Что делать?— ун çине кĕç-вĕç сиксе ларас пек тăчĕ Шварц.

— А-а, а... ва-ва...— пуçĕпе пăркаларĕ ăна хирĕç хĕрарăм, пӳрнине çăварĕ çине кăтартрĕ.— Нэ, нэ, нэ...

— Чĕлхесĕр ку...— шухăшларĕ Ванюшка.

— Не-не!— витлесе илчĕ Шварц.— Зейчас будешь сказать!..

Икĕ салтак хĕрарăмăн аллисене каялла шăтăрах пăрса лартрĕç. Ыратнине тӳсейменнипе хĕрарăм хăрушла кăшкăрса ярса питне каллех чăлан еннелле çаврăнчĕ. Ванюшкăна вăл каллех паллана, таçта курнă çын пек туйăнчĕ. Анчах кам вăл, ăçта курнăскер — ăна Ванюшка тавçăрса илеймерĕ.

Кăшт тăрсан хĕрарăмăн аллисене пăртак пушатрĕç. Вăл малтанхи пекех чĕлхесĕрле лăпăлтатма тапратрĕ.

— Ва-ва-ва... у-у, нэ, нэ...

Анчах нимĕçсем вăл чăнах та чĕлхесĕр пулнине ĕненесшĕн пулмарĕç пулас. Татах асаплантарма тытăнчĕç. Аллисене пăра-пăра лартрĕç, çупа-çупа ячĕç, пистолетпа юнарĕç. Ванюшка ăна çав тери хĕрхенсе, макăрса ярас пек тăчĕ...

Çав вăхăтра тултан кил хуçи карчăкĕ кĕчĕ. Хĕрарăма асаплантарнине курсанах вăл тĕпелелле хыттăн утса пычĕ те, хĕрарăмпа Шварц хушшине тăрса, пăлханнипе пуçне тата ытларах чĕтретсе, куçĕсене çутăлтарса кăшкăрчĕ:

— Чарăн, путсĕр! Мĕн турĕ сана çак мĕскĕн ыйткалакан?!.

Анчах пĕр салтакĕ ăна çавăнтах хулĕнчен тытса алăк

патнелле вăрчĕ. Вăл ӳкнине курсан, Ванюшка та чалантан сиксе тухрĕ.

— Ан тивĕр асаннене!..

Вăл часрах карчăка ура çине тăратма пикенчĕ.

— Пошел!— кăшкăрчĕ те ăна карчăка тытса ывăтнă фашист, таканлă атă кĕллипе çурăмĕнчен тапрĕ.

Вĕсене иккĕшне те килкартине чышкаласа кăларса ячĕç. Чунĕ вĕчĕхсе çитнипе Ванюшкăн куççулĕсем шăпăрах юхса анчĕç. Карчăк пур турăсемпе усалсене те асăнса ылханчĕ...

## XXXIV

Пӳртре хĕрарăма çаплах асаплантарчĕç. Вăл кашни кăшкăрмассеренех Ванюшкăна хăйне чĕререн çĕçĕпе каснă пек туйăнчĕ...

Юлашкинчен хĕрарăм вăйсăрланса, халран кайса çитрĕ пулмалла. Унăн сасси чылай хушă пачах та илтĕнмерĕ.

— Неушлĕ вĕлерсех пăрахрĕç?— ниçта кайса кĕрейми пăшăрханса илчĕ Ванюшка.— Эх!..

— Пулĕ, тем те пулĕ...— терĕ унпа юнашар пĕрене çинче ахлатса ларакан карчăк.— Ман кине те çавăн пек асаплантарчĕç-асаплантарчĕç те кайран ав... хапхаран çакса хăварчĕç.

Анчах хĕрарăма вĕлерсех çитерейменччĕ. Темле майпа асаплантарсан та вăл этемле пĕр сăмах та каламаннине кура, фашистсем тĕпчеме пăрахнă. Чĕлхесĕр çынна ăçтан калаçтаран? Çавăн пирки, Шварц хушнипе, пĕр салтакĕ ăна крыльца çинчен ĕнсерен чышса антарса ячĕ.

— Зволч!

Хĕрарăм талт-талт-талт чупса кайрĕ те темрен такăнса ӳппĕн ӳкрĕ. Анчах нимĕç ун хыçĕнчен: «Уходить! Убить тебя, звиня!»— тесе кăшкăрсанах ерипен тăрса ларчĕ.

Хăрушла сăнлă пулнă вăл... Çӳçĕ-пуçĕ арпашса

кайнă, пĕр куçĕ шыçса ларнă, кĕпи темиçе çĕртен çурăла-çурăла аннă, сылтăм тăнлавĕнчен юн сăрхăнать... Хăй аран-аран, йывăррăн сывлать... Хĕрарăм мăйĕпе пуçне çĕклерĕ те, Ванюшкăн куçĕсем унăн куçĕсемпе тĕл пулчĕç. Ванюшкăн вара тăруках сывлăшĕ пӳлĕнсе ларчĕ. Вăл ăна палласа илчĕ... Ку — Тоня, «Фашистсене — вилĕм!» отрядри хĕр иккен. Ванюшка пĕркун унпа пĕрле Федор Иванович фельдшерăн çĕрпӳртĕнче пурăннă. Анчах халь вăл мĕнле майпа кунта килсе лекнĕ?.. Тата мĕншĕн чĕлхесĕр вăл? Тен... вăл мар?

Пĕр харăсах темĕн тĕрлĕ шухăш çуралса, пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕ Ванюшка пуçĕнче. Хăйĕн куçĕсем çаплах хĕрарăм çинче пулчĕç, ăна вăл витĕр шăтарас пек пăхрĕ.

— Вăлах... вăлах!— чĕри кăрт-кăрт тапса тăчĕ ачан.

Хĕрарăм та ун çине куçхаршисем айĕн тинкерсе пăхрĕ. Сасартăк тутине çыртса лартрĕ. Унтан ерипен тăчĕ те сулкалана-сулкалана хапха патнелле утрĕ. Ванюшкăн çав самантрах ун хыççăн ыткăнас, ăна чарса тăратас, хăйне паллаттарас, мĕнле майпа та пулин ыйтса пĕлес килчĕ, анчах çавăнтах апла та тума юраманнине тавçăрса илчĕ.

Хĕрарăм тухса кайрĕ. Ванюшкăн ăшчикки хыпса тухас патнех çитрĕ, вăл нимĕн тума аптраса ӳкрĕ.

— Неушлĕ палламарĕ вăл мана? Неушлĕ çаплипех уйрăлса каймалла пулать?.. Ах, пĕр сăмах та пулин калаçасчĕ... Чĕлхесĕр пулин те, алăпа кăтарткаласа та...

Крыльца çинчи нимĕç салтакĕ пӳрте кĕрсе кайрĕ. Ванюшка унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ те урама чупса тухрĕ. Хĕрарăм тăвалла, урамваррипе сулăна-сулăна, енчен енне пăхса утса пырать. Ака вăл урам урлă ларакан пĕр пӳрт патне пычĕ те чӳречерен шаккаса сăхсăхма тытăнчĕ. Шалтан сасă паракан пулмарĕ пулас. Вăл малалла утрĕ. Тепĕр пӳрт чӳречинчен каллех шаккаса, чылай вăхăт хĕрес хывса тăчĕ. Унтан каллех утрĕ. Çав хушăрах вăл, хăйне хыçалтан кам та пулин йĕр-

лесе пырасран хăранă пек, темиçе хутчен каялла çаврăна-çаврăна пăхрĕ.

Ванюшка урамăн тепĕр енĕпе утрĕ. Вăл хĕрарăм патне пыма улахрах вырăн, майлăрах самант пуласса кĕтрĕ. Чĕри ниçта кайса кĕрейми кăртлатса тапрĕ унăн...

Ҫайсан-кайсан Тоня икĕ сад хушшинчи ансăр тăкăрлăка пăрăнса кĕчĕ. Куçран çухалас умĕн вăл тата тепĕр хут каялла пăхса илчĕ. Ванюшка урам урлă каçрĕ те ун хыççăн чупрĕ...

— Тоня! Тоня! Эсĕ-и ку?— хашкаса хулĕнчен çавăрса тытрĕ вăл ăна.

— Хуллен!— пÿрнипе хăвăрт юнаса илчĕ лешĕ.

— Эпĕ сана тÿрех палласа илтĕм, анчах ниепле те калаçма май килмерĕ...

— Эсĕ калаçнă пулсан та, эпĕ сăмах хушмастăмччĕ. Курмарăн-им чĕлхесĕр пулнине?— терĕ Тоня, унталла-кунталла хăвăрт пăхса илсе.

— Куртăм, пĕтĕмпех куртăм... Сана епле асаплантарнине те курса тăтăм...— Ванюшка антăха-антăха калаçма тытăнчĕ.— Эсĕ те палларăн-и мана?

— Курсанах палларăм... Чим-ха, ытла куç умĕнчех тăрар мар...— Вăл йăпăртах Ванюшкăна аллинчен тытрĕ те, хуçăк ракатка хушшипе пахчана илсе кĕрсе, лаç çумĕнчи хурлăхан тĕмисем ăшне пĕшкĕнсе ларчĕ.

— Аçтан, епле килсе лекрĕн эсĕ кунта?— васкаса тĕпчеме тытăнчĕ Ванюшка.— Ыттисем ăçта? Пурте сывах-и? Ман кукка çинчен хыпар çук-и? Федор Иванович епле пурăнать?

Тоня каллех унталла-кунталла пăхса илчĕ:

— Нумай тăма вăхăт çук, Ванюшка. Нимĕн те ан ыйт. Эпĕ те санран нимĕн те ыйтмастăп. Кайран тăраниччене калаçăпăр-ха, халлĕхе хамăр сывви çинчен пĕлни те çитĕ. Манăн часрах отряда çитмелле. Эсĕ мĕн тăватăн кунта?

— Эпĕ... Нимех те тумастăп та-ха...

— Ҫак ялта пурăнатăн-и?

— Çук, пурăнмастăп...

— Мĕн тата эппин?

Ванюшка хăй кунта мĕнле лекнине, халь мĕншĕн юлнине кĕскен кăна каласа пачĕ.

— Çав урнă йытта, Шварца, куçран вĕçертес килмест. Хам ăна нимех те тума пултарас çук, анчах хамăрăннисем килсен мĕн пулĕ... Тарма памастпăрах ăна...

— Лайăх шут тунă,— ырларĕ Тоня.— Эпир те кĕçĕр кунта «хăнана» килесшĕн. Вăл Шварца эпир те тахçанах йĕрлетпĕр ĕнтĕ. Ниепле те тытма тӳр килмест ирсĕре. Кĕçĕр унăн çулĕ çине юри мина лартрăм. Пĕр çирĕм салтак пĕтрĕç пулмалла, анчах ку шуйттан каллех сывă юлнă. Кайран хамах ун аллине лекрĕм авă.

— Юрать-ха вĕлермерĕ...

— Чĕлхесĕре пемен пулсан — пĕтеттĕм.— Вăл темиçе самант хушши шухăша кайнă пек пулчĕ.— Апла... акă мĕн, Ванюшка... Эсĕ çав Шварц вырнаçнă çуртрах çĕр каçасшăн вĕт-ха?

— Çавăнтах...

— Çĕр каçа çывăрмасăр чăтма пултаратăн-и?

— Ма пултарас мар...

— Ан çывăр эппин. Тӳс мĕнле те пулсан. Шварцпа унăн йыттисем те кĕçĕр кунтах юлаççĕ пулсан, эсĕ вĕсем çывăрса каясса кĕт. Унтан мĕнле те пулин çак вырăна кил. Эпир çитсен вара пире пĕлтерĕн, мĕнле кунта... Пултаратăн-и çавна тума?

— Пултаратăп,— терĕ Ванюшка çирĕппĕн.

— Эпир вара ăна ăшă вырăн çинченех çĕклесе тухса çакăпăр.

— Тем пекчĕ!..

— Халь каятăп эпĕ. Эсĕ те кай. Асту, лайăх сăна, вĕсен таврашĕнчех пулма, пурне те пĕлме, сисме тăрăш.

— Мана вĕсем çав килти çын тесе шутлаççĕ...

— Çаплах шутлаччăр çав. Хăвăншăнах аван вăл

— Ну, сывпул...

— Куккуна салам калас-и?

— Вăл пур-и вара?— куçĕсене çутăлтарса илчĕ Ванюшка.

— Пысăк Çĕр çинчен виçĕмкун таврăнчĕ.

— Ҫаламасăр тата! Ой, хăйне курасчĕ! Сывалса çитнĕ эппин? Суранĕсем тӳрленнĕ-и?

— Вăкăр пек тĕреклĕ.

— Ах...— Ванюшка хаштах сывласа ячĕ.— Часрах курасчĕ-çке!

— Ĕçсем йĕркеллĕ пулсан, ыран ир куратăн. Асту, ĕç ăнăçлă пуласси санран та килет...

## XXXV

Тоньăпа çакăн пек калаçни Ванюшкăна çав тери савăнтарса, хавхалантарса ячĕ. Вăл хăйĕн урисем çĕре перĕннине те туймарĕ. Тоньăпа тĕл пулни темле телейлĕ тĕлĕк курнă пекех пулчĕ-çке...

— Куккасем килсе çитсен... Тата Санька хамăр çынсене ертсе килсен... ах, лайăх пулса тухĕччĕ! Ку шуйттансем тем шут тытса кунтан тухса ан кайччăр кăна...

Ванюшка çавăн пек пăлханса, иккĕленкелесе шухăшласа пынă чух ăна вăрăм симĕс автомобиль хăваласа çитсе иртсе кайрĕ. Вăл урамра грузовик юсакан салтаксем тĕлĕнче пăтах чарăнчĕ, унтан, лешсем аллипе тепĕр еннелле сулса кăтартсан, каялла çаврăнса кэрчăк килĕ умне пырса тăчĕ. Машина çинчен виçĕ офицер тухрĕç те тӳрех пӳрте кĕрсе кайрĕç.

— Мĕнлескерсем килчĕç-ши тата?..— хăрарах шухăшларĕ Ванюшка.— Ку Шварцне илме мар-ши?..

Анчах вăл кăлăхах пăшăрханнă,— нимĕçсем кĕçĕр ниçта кайма та шутламан. Малтанах вĕсем хăйсем хушшинче питĕ шавлăн калаçрĕç, тем çинчен хĕрсе кайсах тавлашрĕç, анчах кайран майĕпе лăпланчĕç те, Генрих Шварцăн денщикĕ каллех сĕтел çине ĕçмелли-çимеллисем кăларса лартрĕ.

Вĕсем ĕçкĕ пуçласа ячĕç.

Паçăрхи пекех, пуринчен ытла Шварц ĕçрĕ. Хăй ĕмĕ-

рёнче юлашки хут ёçнине, урăх нихçан та çавнашкал сётел хушшинче кӳпсе ларас çуккине сиснĕ пекех ĕçрĕ вăл. Черкке хыççăн черкке çавăра-çавăра хучĕ, унтан сике-сике тăрса, ăнланмалла мар кăшкăркаласа, аллисемпе çил арманĕ пек хăлаçланкаларĕ.

Ванюшка пĕр хушă тулта çӳрекелерĕ. Хăй çак килти çын пек курăнас тесе, вăл кил таврашĕнче ĕçленçи турĕ: хӳмерен тухса ӳкме пуçланă хăмасене тӳрлетрĕ, таçтан кивĕ шăпăр тупса килхушшинче шăлкаларĕ тата тепĕр хут çăла шыв ăсма кайса килчĕ. Хăй çав хушăрах ялти ытти нимĕççем мĕн тунине, вĕсем хăш пӳрте вырнаçнине сăнаса çӳреме тăрăшрĕ.

Хĕвел ансан, вăл пӳрте кĕме шут турĕ. Алăк патĕнчи часовой ун çулне пӳлсе лартрĕ, анчах Ванюшка аллаппине пичĕ çумне тытса пуçне сулкаласа илчĕ.

— Çывăрас килет, пан... Тулта сивĕ.

Часовой вара ăна чарса тăмарĕ.

Ванюшка йăпăртах чăлана кĕрсе кайрĕ. Кунта, ĕнтĕркенĕ пек пулса, хăй тĕллĕн темскер пăшăлтатса, кил хуçи карчăкĕ ун çине йĕпе куçĕсемпе пăхрĕ те пуçĕпе кăмака еннелле сулчĕ:

— Хăпарса вырт çавăнта...

Ванюшкăшăн ку çав тери аван пулчĕ. Çӳлтен, кăмака çинчен, ăна аялта мĕн пулса иртни питĕ лайăх курăнса тăчĕ. Пуринчен ытла вăл Генрих Шварц çине, унăн кăкри çинче сулкаланакан ылтăн вăчăра çине пăхрĕ... Акă ĕнтĕ, çак урнă кашкăр, Ванюшкăн амăшне, шăллĕсемпе йăмăкĕсене тискеррĕн вĕлерттернĕ бандит, хăрушă хурах, халĕ ун умĕнче, пурĕ те темиçе утăмра кăна. Алăра пистолет пулас пулсан — ăна çакăнтах персе пăрахмалла... Анчах алăра пистолет çук. Тепĕр тесен, вăл пулнă пулсан та пеме юраман, мĕншĕн тесен тарса хăтăлма май пулас çук. Хамăр çынсем килессе кĕтес пулать... Вĕсем килеççех ĕнтĕ, епле пулсан та килмеллех, вара... О, вĕсем килсен, Ванюшка мĕн тумаллине пĕлĕччĕ!

Сӗтел хушшинчи нимӗçсем çаплах йăсларӗç. Шварц денщикӗ çӗнӗрен çӗнӗ бутылкăсем кăларса лартрӗ, офицерсем вӗсене пушатсах пычӗç. Шварц ура çине тăрайми пулса çитрӗ, анчах çаплах-ха хăйне кашни черкке ярса памассеренех хăлаçланса çухăрчӗ.

— Хайль Гитлер!.. Хайль!..

Унăн куçӗсем чарăлса, çамки айӗнчен сиксе тухас пек çаврăнкаларӗç...

Ӳсӗрӗлсе çитнӗ офицерсенчен пӗри юрлама пуçларӗ. Ун хыççăн ыттисем те çухăрма тытăнчӗç. Ванюшка нимӗçсем юрланине пуçласа илтрӗ те, вăл ăна этемсем юрланă пек мар, кашкăр эшкерӗ ӳленӗ пек туйăнса кайрӗ...

Вăхăт шурӗ. Çурçӗр те çитрӗ пулмалла ӗнтӗ. Нимӗçсем юрлайми те пулса çитрӗç. Шварц тула тухма тăчӗ те тикӗс çӗртех такăнса урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ. Ăна денщикӗ аран тăраткаласа алăк патӗнчи вырăн çине вырттарчӗ те, каска пек йăвантаркаласа, кительне хывса илсе пăтана çакрӗ, аттипе брюкине хывса илчӗ. Самантрах вăл вилнӗ пек çывăрса кайрӗ...

«Хăнасем» те тек лармарӗç вара, саланкаласа унтакунта выртрӗç. Вӗсем те часах çывăрса кайрӗç пулас, пӳртре харăсах темиçе тӗрлӗн хăрлаттарни илтӗнме пуçларӗ. Денщикӗ çеç çывăрмарӗ-ха: вăл тула тухса кӗчӗ, унтан лампа çутине пӗчӗклетсе сӗтел хушшине, çурăмӗпе алăк еннелле ларчӗ те пӗр-пӗччен ӗçме-çиме тытăнчӗ.

Хыпас енчен вăл та хăйӗн пуçлăхӗнчен кая мар пултарать-мӗн. Сахалран та пӗр сехет ларчӗ пулӗ ӗçсе-çисе. Ванюшка кăмака çинчен ăна пăхса выртса йăлăхсах çитрӗ. Унăн куçӗсем те хупăнма тытăнчӗç, анчах вăл пурпӗр ыйăха парăнмарӗ.

— Акă, çак çывăрса каять те, ерипен тухса шăвăнатăп... Тоньăсем килеççӗ те пуль ӗнтӗ, вăхăт нумай пулчӗ, ӗлкӗрмелле халиччен...

Юлашкинчен денщик те малти кӗтессе темскерсем

сарса çывăрма выртрĕ. Пӳртре шăп пулчĕ, ӳсĕр фашистсем йывăррăн сывлани тата тахăшĕн кĕсйинче сехет чиклетни çеç илтĕнчĕ.

Ванюшка тата тепĕр хушă ним хускалмасăр выртрĕ. Унтан çав тери шăппăн, сывлама та чаръннă пек пулса, кăмака çинчен хуллен-хуллен шăвăнса анчĕ те чăлантан тухса алăк еннелле чĕрне вĕççĕн утса кайрĕ...

Сĕтел çинче хăюне антарнă лампа тĕксĕммĕн çунса ларать, ун çути алăк патне те çитеймест. Нимĕçсем вилнĕ пекех çывăраççĕ. Хăшĕ сак çинче, хăшĕ урайĕнче. Юнашарах, кровать çинче, Генрих Шварц. Вăл месерле, аллисене ик еннелле сарса пăрахсах çывăрать. Пуçĕ минтер çинчен анса кайнă, хăй ывăннă лаша пек сывлать...

Ванюшка алăк хăлăпĕнчен тытрĕ. Унăн ĕнтĕ алăка чĕркуççипе кăшт тĕксе тухса каймалла çеç, анчах вăл çаплах-ха тытăнса тăчĕ.

Сасартăк вăл Шварц пуçĕ вĕçĕнче унăн кителĕпе юнашар, кортик — пĕчĕк çутă кинжал — çакăнса тăнине курчĕ.

— Питĕ лайăх-çке ку...

Ванюшкăн чĕри çав тери хыттăн кăрнтлатса, кăкăртан кĕç-вĕç сиксе тухас пек тапма тытăнчĕ, пĕтĕм шăмшакĕ вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕ...

Вăл иккĕ-виççĕ ярса пуссах кровать вĕçне çитсе кинжала пăтаран вĕçертсе илчĕ, ăна чĕтрекен аллисемпе йĕннинчен кăларчĕ.

Питĕ çивĕч иккен кинжалĕ...

Ванюшка пӳрт ăшчиккине тата тепĕр хут вăшт кăна пăхса çаврăнчĕ те Шварц патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ... Малалла тем пулатчĕ — ăна пĕлме çук, анчах çав самантра чăлантан кил хуçи карчăк сасси илтĕнчĕ:

— Ачам, эс тула тухасшăн-и?..

Ванюшка хăйне хыçалтан тăрук пырса çапнă пекех карт! сиксе илчĕ. Аллинчи кинжал урайне ӳкрĕ... Карчăк ыйтнине хирĕç ним каламасăрах, Ванюшка çенĕке

сиксе тухрĕ. Крыльца çинче тĕлĕрсе ларакан часовой ун çине пăхсан, вăл ăна:

— Тула каятăп, пан...— терĕ.

— Гее хинуас,— пуçĕпе сулчĕ лешĕ.

Ванюшка выльăх карти пуçнелле кайрĕ, пĕр-ик самант хăйĕн ĕçĕпе тытăнса тăнă пек пулчĕ, унтан пахчаналла йăпшăнса тухрĕ...

Қаçхи сивĕрех сывлăш ăна уçăлтарсах ячĕ, паçăр пăтранса кайнă шухăшсем йĕркене кĕчĕç, чĕри кăна малтанхи пекех хăвăрт-хăвăрт тапрĕ.

— Тоня патне! Часрах Тоня патне!— терĕ Ванюшка хăйне хăй.— Хăвăртрах çитсе калас, Шварц кунтине пĕлтерес...

Вăл пахчаран, пĕр çурт çуммипе пырса, çатан карта урлă урама сиксе тухрĕ... Инçетрех те мар, сасартăк автомат шатăртатрĕ, Ванюшка тĕлĕпе çутăлакан пульăсем çинçен шăхăрса иртрĕç. Унтан тата тепĕр хут, тата... Акă, гранатă шартлатса çурăлчĕ. Пăшал сассисемпе хутăш вырăсла вăрçса кăшкăрнисем илтĕнчĕç.

— Қилнĕ... Пирĕннисем килнĕ!— тавçăрса илчĕ Ванюшка. Çавăнтах хӳмесем çуммипе пăшал сассисем илтĕннĕ еннелле ыткăнчĕ.

Пĕр аллă-утмăл метр чупса кайсанах, вăл хăйне хирĕç такамсем чупса килнине илтрĕ.

— Тараймастăн, сволочь!..— кăшкăрчĕ те пĕри, умлăн-хыçлăн ик-виçĕ кĕске черет кăларса ячĕ. Тепри вăрăмăн ахлатса илсе çĕре лаплатрĕ.

— Вил, йытă!..

Ванюшка çав самантрах Кравчук сассине уйăрса илчĕ.

— Командир юлташ!— кăшкăрса ячĕ вăл, ун патне чупса пырса.

— Қам ку?

— Эпĕ, эпĕ, Ванюшка...

— Ой, ылттăнăм! Сывах-и эсĕ?— хулпуççинчен ыталаса илчĕ ăна Кравчук.



— Сывах, сывах!

— Ну, хăш тĕлте эсĕ сыхланă нимĕçсем?

— Ав çавăнта... Çавăнта...—Ванюшка Кравчук аллинчен туртса хăй халĕ çеç тухса тарнă кил еннелле кăтартрĕ.

— Нумайăн-и?

— Пиллĕкĕн... Ӳсĕр выртаççĕ!

Вĕсем патне харăсах тата темиçе партизан хашкаса чупса пычĕç. Вĕсемпе пĕрле Санька та пулнă. Аллине вăл та автомат тытнă.

— Кайрăмăр!— аллипе малалла сулчĕ Кравчук.

Ванюшка чупнă çĕртех Санька аллинчи автомат кĕпçинчен çавăрса тытрĕ:

— Мана пар-ха эс куна, мана пар!

Санька ăна хирĕç мĕн те пулин калама ĕлкĕричченех автомат Ванюшка аллине куçрĕ. Вара вăл тата хытăрах малалла ыткăнчĕ.

— Эп ăна... эп ăна... ак халех... халех...— янрарĕ ун пуçĕнче çиçĕм пек шухăш.

...Пирвайхи пăшал сассисем янраса кайсанах, Шварцпа унăн тусĕсене хураллакан часовой, вĕри шывпа сапнă пек сиксе тăрса пӳрте чупса кĕчĕ те ухмаха ернĕ çын сассипе кăшкăрса ячĕ:

— Партизанен! Партизанен!..

Фашистсемшĕн нимрен те хăрушăрах пулнă çак сăмаха илтсен, Шварц çӳлтен пăрахнă мечĕк каялла ывтăннă пекех сиксе тăчĕ. Ӳсĕр пулни те тӳрех иртсе кайнă пек пулчĕ унăн.

— Партизанен!— тепĕр хут çухăрчĕ те часовой, куçран çухалчĕ.

Шварц аттисене хăптăр-хаптăр, çараллах тăхăнса, кительне уртса ярса, ним кăшкăрмасăр, ыттисене команда таврашĕ памасăр, пĕр хăй кăна çăлăнасшăн пулса крыльца çине вăркăнса тухрĕ. Урамра пăшал сассисем кĕрслетеççĕ, гранатăсем çурăлаççĕ, вырăсла кăшкăрнисем илтĕнеççĕ... Анран кайнă Шварц, кĕсйинчи пистолетне туртса кăларса, крыльца çинчен тӳррĕн сиксе анчĕ те пахчаналла тарма пикенчĕ...

Анчах тараймарĕ вăл, çук, хăтăлаймарĕ!

Шварц пахча еннелле пĕр-икĕ утăм тусанах, калинкке яриех уçăлса кайрĕ те, килхушшине никамран малтан Ванюшка сиксе кĕчĕ. Крыльца патĕнчен аяккалла таракан вăрăм мĕлкене асăрхасанах, вăл, хăвăрт кăна автоматне çĕклесе, ытлашши тĕллесе тăмасăрах персе ячĕ.

— Шатăрр... шатăрр!..— турĕ автомат икĕ хутчен умлăн-хыçлăн.

Мĕлке çав самантрах аллисене çӳлелле çĕклерĕ, хăлаçланчĕ те, темле пĕр вырăнтах пĕтĕрĕнсе илсе, çĕре лаплатрĕ.

Ванюшка иккĕ сиксех ун патне çитсе тăчĕ.



Генрих Шварц хускалман. Ванюшка ăна питĕ тĕл лектернĕ-мĕн.

— Пулчĕ-и? — кăшкăрса ыйтрĕ тахăш самантра Ванюшка çумне пырса тăнă хашкакан Санька.

— Тинех тирпейленчĕ!— çăмăллăн сывласа ячĕ Ванюшка.

Вĕсем ун кителĕн кĕсйисене ухтарма тытăнчĕç.

Çав вăхăтра Кравчукпа темиçе партизан пӳрте ыткăнса кĕчĕç. Çывăрнă çĕртен

тин çеç сиксе тăнă виçĕ фашист офицерĕпе ефрейтор—Шварц денщикĕ—партизансене хирĕç тăни усăсăррине кура, аллисене пĕр харăсах çӳлелле çĕклерĕç.

— Туй пулнă-им кунта вĕсен?—терĕ Кравчук, пур çĕрте те пушă кĕленчесем, апат-çимĕç юлашкисем выртнине курса.— Самай сыпнă курăнать хăйсем...

Кĕтмен çĕртен хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Туй мар, хăйсен пумилккине турĕç вĕсем...

Пурте çав сасă еннелле çаврăнса пăхрĕç те тĕттĕмрех чăланран çĕтĕк-çатăк тумланнă, шап-шур çӳç-пуçлă, курпунланнă карчăк тухса тăнине асăрхарĕç. Вăл, партизансем çине пăхса çаврăнса, пилĕк таранах пĕшкĕнсе пуç тайрĕ:

— Тавтапуçах сире, ывăлăмсем... Çак ирсĕрсене пур çĕрте те çакăн пекех пĕтерсе пымалла пултăр сирĕн. Тур пай патăрах!

— Ыр сăмахшăн хăвна тавтапуç, асанне,—терĕ ăна хирĕç Кравчук.

— Ним те хĕрхенмĕттĕм сире валли, анчах ним те хăвармарĕç-çке шуйттансем...

— Пире нимĕн те кирлĕ мар, асанне. Пире эсĕ ăшă сăмах калани те теме тăрать!

Тултан пĕр çамрăк партизан чупса кĕчĕ:

— Командир юлташ, тыткăна илнисене мĕн тумалла?

— Базăна ăсатăр, унта курăнĕ,—терĕ Кравчук.— Кусене те пĕрле илсе кайăр,— сивчир ернĕ пек чĕтресе тăракан пӳртри фашистсем çине кăтартрĕ вăл.

— Есть!

Ĕнтĕ тул çутăлса çитме пуçларĕ. Партизансем пĕрин хыççăн тепри пӳртрен тухма тытăнчĕç. Кравчук, сĕтел çинчи пуш кĕленчесене чавсипе аяккалла сирсе, темскер çырма ларчĕ, анчах çавăнтах, ик-виç йĕрке çырсанах, пӳртре юлнă çынсенчен:

— Ачасем ăçта çав пирĕн?—тесе ыйтрĕ.— Ансăртран тем пулман-и вĕсене?

— Тулта-ха вӗсем,— терӗ тахӑшӗ.

Хӑйсем пирки пӑшӑрханнине сиснӗ пекех, ҫав вӑхӑтра Ванюшкӑпа Санька иккӗшӗ те пӳрте кӗчӗҫ. Ванюшка, никам ҫине пӑхмасӑрах, Кравчук патне пычӗ те ун умне хулӑм та вӑрӑм вӑчӑраллӑ ылтӑн сехет кӑларса хучӗ.

— Акӑ вӑл, эпир сире калани, эпир нумай вӑхӑт шырани...

— Ай-ай, селӗм япала...— ырласа илчӗ командир, ун ҫине пӑхса.

— Санька сехечӗ вӑл,— терӗ Ванюшка.

Кравчук ун ҫинелле тӗлӗнерех пӑхрӗ.

— Епле?..

— Астумастӑр-им, эпир сирӗн отряда пырсанах каласа панӑччӗ...

— А-а! Чӑнах-ҫке! Астӑватӑп. Унӑн ашшӗн пулнӑ вӑл...

— Ҫапла ҫав.

— Ман аттене ӑна оборона наркомӗ парнелесе пана,— терӗ Санька.

— Эппин халь вӑл каллех хӑйӗн хуҫи патне таврӑнать...

Командир сехете Санькӑна пачӗ. Санька ӑна ҫав тери тулли кӑмӑлпа, пӗтӗм чун-чӗрипе пӑлханса тытрӗ. Уншӑн вӑл ахаль сехет кӑна пулман-ҫке-ха. Ҫак япала ӑна хӑйӗн юратнӑ ашшӗ-амӑшне те, партизансем патӗнче пурӑннӑ чухнехи тусӗсене те аса илтернӗ, ҫавӑнпа та вӑл уншӑн калама та ҫук хаклӑ пулнӑ...

Пӳрте тата тепӗр партизан кӗрсе тӑчӗ.

— Командир юлташ, пирӗн йӗкӗтсем ялӑн леш вӗҫӗнче темӗнле ҫынсене тӗл пулнӑ,— терӗ вӑл.— Хӑйсене: эпир те партизансем, теҫҫӗ, тет. Виҫҫӗшӗ кунта килнӗ, сире курасшӑн...

— Тӗрӗс, тӗрӗс, партизансемех пулма кирлӗ,—Кравчука куҫӗнчен пӑхрӗ Ванюшка.

— Эсӗ ӑҫтан пӗлетӗн ӑна?

— Ĕнер пĕрине куртăм эпĕ, разведкăна килсе кайре... Вĕсем кунта килме пулчĕç...

— Ак тамаша!— кулса ячĕ Кравчук.— Эсĕ кунта пĕр-пĕччен партизансен штабĕ туса хунă иккен!..

— Чĕнес-и?— ыйтрĕ халь кĕнĕ партизан татах.

— Кĕрт...

Минутран пӳрте хĕçпăшаллă икĕ арçынпа пĕр хĕрарăм кĕрсе тăчĕç: «Фашистсене — вилĕм!» отряд штабĕн начальникĕ Семен Петрович Коробов, çав отрядри мăн сухаллă тимĕрçĕ Иван Смелов тата Тоня.

— Сывлăх сунатпăр!

Ванюшка тӳрех Коробов патнелле ыткăнчĕ.

— Кукка!.. Кукка!..

— Ванечка!.. Чунăм!..

Куккăшĕ ăна пĕррех çӳлелле çĕклесе темиçе хут чуптурĕ.

— Сывах-ха эппин эсĕ, сывах, э?..

Тăвансем çакăн пек тĕл пулни çине пурте питĕ савăнса пăхса тăчĕç... Унтан Кравчук ытлашши çынсене тухма хушрĕ те, вĕсем Коробовпа иккĕшĕ хăйсен пулас операцийĕсем çинчен, фашистсене тата хытăрах çапа-çапа хавшатмалли майсем çинчен чылайччен калаçса ларчĕç. Юлашкинчен сăмах отрядри ачасем çине пырса тухрĕ.

— Питĕ маттур санăн тăвану, Семен Петрович,— терĕ Кравчук Ванюшка çинчен.— Чăн-чăн герой, тупата. Пуринчен ытла кĕçĕр тĕлĕнтерсе пăрахрĕ вăл мана...

— Вĕренме яма шутлатăп-ха эп ăна,— терĕ Коробов.

— Тĕрĕс. Ăçта ярас шуту пур?

— Халĕ Пысăк Çĕр çинче суворовски училищĕсем пур вĕт. Офицерсем пулса тухаççĕ унтан...

— Питĕ тĕрĕс! Унăн юлташне те ярас пулать унпа пĕрле. Вăл та питĕ пултаруллă ача... Пĕрле асап курнă вĕсем, пĕрле çапăçнă, ан тив — вĕренессе те пĕрле вĕренччĕр!

— Ана та ярас эппин! Пěрле вěренме чăнах та аван пулать вěсене...

* * *

Тепěр эрнерен Ванюшкăпа Санькăна чăнах та Пысăк Çěр çине ăсатрěç. Вěсене ăсатма пысăк уçланкăна нумайăн пухăнчěç. Кашниех ачасен аллисене тыта-тыта чăмăртарě, вěсене лайăх вěренме, Тăван çěршыва нимрен те ытларах юратакан хастарлă совет офицерěсем пулма ырă сунчě.

Çурçěр иртсен ик сехетре самолет сывлăша çěкленчě те вăрман çийěпе пěрре çаврăнса илсе хěвелтухăçнелле, аслă Мускав еннелле, çул тытрě. Ванюшкăпа Санька партизансен вăрманти кăвайчěсене юлашки хут курчěç...





# Калавсем



# ЯЛАВ

(*Командир калавӗ*)

Ку ӗҫ, ачасем, 1942 ҫулта, февраль пуҫламӑшӗнчи пӗр сивӗ кун, эпир фашистсене Красавино ятлӑ чиркӳллӗ пысӑк ялтан хӑваласа кӑларнӑ чух пулчӗ...

Унччен малтанхи кунсенче пирӗн часть нумай ялсене тӑшмансенчен ирӗке кӑларса пычӗ. Анчах Красавино ялӗ патнелле ҫитсе тухсан, пирӗн пӗр вӑхӑтлӑха чарӑнса тӑмалла пулчӗ, мӗншӗн тесен тӑшман кунта питӗ вӑйлӑ укрепленисем тума ӗлкӗрнӗ иккен. Хӑйсене эпир Мускав ҫывӑхӗнчен хӳтерме пуҫласанах, кунта вӗсем аякран пӑхсан пачах курӑнми тӗрлӗ блиндажсем, пулемет йӑвисем, окопсемпе траншейӑсем — темӗн те пӗр тума тапратнӑ. Халь вара ҫав шӑтӑксене арлансем пек кӗрсе ларса пытаннӑ та — пире хирӗҫ персе тӑнӑ...

Ҫитменнине, ялӗ те ҫӳлӗ сӑрт ҫинче ларатчӗ. Пирӗн салтаксен ял патне улӑх тӑрӑх пымалла, улӑхӗ ҫатма пек тикӗс, тӑшман куҫӗнчен пытанма ниҫта пӗр йывӑҫ теми те, пӗр тӗмеске-лупашка та ҫук. Пӗр сӑмахпа каласан, наступлени тума питӗ кансӗр вырӑн пулчӗ...

Çапах та, каçхине чарăнса тăнă хыççăн, эпир ир енне çав Красавино сăрчĕ çине наступлени пуçларăмăр. Малтан, паллах, тăшманăн укрепленийĕсене аркатас, пулемечĕсемпе миномечĕсене шарлами тăвас тесе, хамăр орудисенчен питĕ хытă петĕмĕр. Çур сехет хушши пĕтĕм таврари çĕр чĕтренсе тăчĕ; тупăсем ухлатнипе, снарядсем çурăлнипе, минăсем кĕрслетнипе хăлха та ним илтми хупланса ларчĕ. Сăрт хĕррипе туса тултарнă укрепленисем çулăмпа, тĕтĕмпе пĕрле сывлăшалла сирпĕнчĕç вăл хушăра. Бинокль витĕр хамăр куçпах куртăмăр ăна. Питĕ аван ĕçлерĕ пирĕн артиллери!

Унтан пехота тапранса кайрĕ... Пилĕк таран кĕрт тăрăх ашса сăрт еннелле ыткăнчĕ вăл. Хĕвел тухнă вăхăталла малтисем сăрт хĕрринчи йĕплĕ пралук карти патнех çитрĕç, анчах малалла кайма май килмерĕ: унччен малтан шарламасăр ларнă фрицсем сасартăк пĕр харăс пеме тытăнчĕç. Темрен те переççĕ: минометсенчен те, пулеметсенчен те, автоматсенчен те шăтăртаттараççĕ.

Çулла вĕри хĕвел, эрни-эрнипе хĕртсе, пĕтĕм ӳсентăрана çунтарса ĕнтнĕ хыççăн, вăйлă çумăр пулать-çке? Таврари юр çине пульăсем халь çав вăйлă çумăр çунă пекех тăкăнчĕç, малалла кайма мар—пуçа çĕклеме те çук! Пирĕн боецсем ирĕксĕрех вăхăтлăха юр ăшне чакаланса кĕрсе выртрĕç. Эпир тăшманăн нумай огневой точкисене пĕтерсе хунă пулин те, вĕсем сăрт çинче татах та юлнă иккен-ха, пирĕн наступление çавсем чарса тăнă.

Эпĕ хам — артиллерист, оруди командирĕ пулнă. Мухтанмасăрах калатăп: пит те тĕл переттĕмĕр эпир... Аçта та пулин ик-виç снаряд ярсан, унта вара нимĕн те юлмасть, пĕтĕмпех тăпрапа, хăрăмпа хутăшса каять. Çавăнпа та халь, тăшманăн сăрт çинчи огневой точкисем татах юлнине курсан, пит те кӳрентĕмĕр.

— Пултарайман иккен эпир...

Кĕçех пирĕн пата çĕнĕ приказ персе çитрĕ:

— Фашистсен укрепленийĕсем çине тепĕр хут артна-

лет тумалла, вӗсен пур огневой точкисене те пӗтерсе хумалла!

Эпир ҫакна ҫеҫ кӗтсе тӑнӑччӗ ҫав! Дивизион командирӗнчен приказ илсенех, пирӗн орудисем тӑшманӑн пуҫӗ ҫине ҫӗнӗрен вилӗм сапма пуҫларӗҫ. Каллех пӗтӗм таврари ҫӗр чӗтрерӗ, сӑрт ҫинче каллех юр, тӑпра, ҫулӑм, вӗсемпе хутӑш кирпӗчсем, пӗренесем, каштасем урлӑ та пирлӗ сирпӗнчӗҫ... Ҫав тери хытӑ петӗмӗр!

Ҫур сехетрен шӑпах пулчӗ. Эпир те пеме чарӑнтӑмӑр, тӑшман енчен те пӗр сас та илтӗнмерӗ.

— Ну, халь ӗнтӗ унта пӗр фриц та юлмарӗ пулӗ,— аллипе сӑрт еннелле кӑтартрӗ манпа юнашар тӑракан наводчик, ҫамки ҫине тапса тухнӑ тарне ҫӗлӗкпе шӑлса илсе.— Кун пек ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн та пӗтмесен вара...

— Ҫапла пулмалла пек те, мур пӗлет-ха ӑна,— терӗм те эпӗ ӑна хирӗҫ, каллех бинокльпе ял ҫинелле пӑхма тытӑнтӑм.

Пирӗн пехота татах ҫӗкленчӗ. Боецсем малалла шума тытӑнчӗҫ. Акӑ ӗнтӗ, нумайӑшӗ йӗплӗ пралук картинчен иртсе, сӑрт ҫинелле улӑхма тапратрӗҫ, анчах ҫав вӑхӑтра фашистсен пулемечӗсемпе миномечӗсем тепӗр хут ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Ҫӑва патне кайтӑр! Переҫҫӗ те переҫҫӗ!.. Тарӑхнипе пӗтӗм ӑшчик тулса ларчӗ манӑн. Куҫсем ыратакан пуличченех сӑнама тытӑнтӑм: хӑш тӗлтен переҫҫӗ вӗсем, ӑҫта пытанса ларнӑ вара тӑшман пулеметчикӗсемпе минометчикӗсем?

Ялӑн сулахай хӗрринчен пуҫласа сылтӑм хӗррине ҫитиччченех йӗркипе пӑхса тухрӑм. Ҫук, нимӗн те асӑрхама пулмарӗ. Ҫав тери тӗплӗн пытанса, аякран палӑрмалла мар пулса ларнӑ иккен мурсем! Хӑйсене курма ҫук, анчах пирӗн пехотӑна ниепле те малалла кайма памаҫҫӗ...

Бинокле халь ҫеҫ куҫран уйӑрас тесеттӗм — сасартӑк ялӑн сылтӑм вӗҫӗнче, юр ҫинче, пӗччен темле хусканакан хура пӑнчӑ курӑнса кайрӗ. Вӗлт те вӗлт! тӑвать.

Пĕрре курăнать, тепре çухалать. Унтан каллех курăнать те — татах пытанать.

Тĕлĕнтерчĕ ку мана. Тинкерсех пăхма тытăнтăм. Малтанах уйăрса илме пулмарĕ — те этем вăл, те пĕрпĕр выльăх тавраш? Тăрăхла япала пек те курăнать... Пăхсан-пăхсан, çапах та, уйăрса илтĕм. Çынах иккен вăл. Анчах темшĕн — пĕчĕккĕ. Ну, ку инçе пирки çаван пек курăнать пулĕ, терĕм. Çапах та, мĕнле çын пулма пулатарать-ха вăл? Пирĕн боец-и, нимĕç салтакĕ-и? Апла та, капла та шутлама хĕн. Пирĕннисем вăл енче куçех те пулман, ăçтан сиксе тухтăр пĕччен пĕр боец? Тата мĕншĕн вăл наступлени вăхăтĕнче каялла килет? Суранланнăскер пулсан кăна... Эппин, мĕншĕн винтовкăсăр? Хăй тĕллĕн килме пултаракан боец çапăçу хирĕнче нихçан та пăшалне пăрахас çук! Ахăртнех, хăй ирĕкĕпе плена килекен нимĕç пулĕ?

Этем кĕлетки çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Пĕрре упаленет, тепре тăрса чупать, унтан татах юр ăшне выртать... Кăштах тăхтасан, унăн тумне уççăнах куртăм та, пушшех тĕлĕнтĕм: вăл çар тумĕпе мар, ахаль çынсен тумне тăхăннă. Çиййĕнче темле хура пиншак, пуçĕнче — çуллахи картуз!..

— Пирĕн паталла перебежчик килет, кĕтсе илме хатĕр пулăр,— терĕм эпĕ хамăн боецсене.— Авă, сăнăр!

Халĕ ĕнтĕ ăна бинокльсăр та аванах курма май пулчĕ. Пирĕнтен 200—250 метртра кăна упаленчĕ вăл. Ура çине тăрсан, аллисене çӳлелле çĕклесе чупрĕ: ан перĕр, хамах пыратăп тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку...

Эпир ун çинчен куç илмесĕр пăхса тăтăмăр. Вăл çаплах çывхарчĕ. Хăй питĕ ывăнса çитнĕ пулмалла — пĕр уринчен тепĕр урине аран-аран иртерет. Ман боецсем ăна хавхалантарма тытăнчĕç.

— А ну, хăвăртрах!..

— Чуп часрах, çитетĕн!

Перебежчик юлашки вăйне пухса чупрĕ. Темиçе минутран пирĕн пата çитрĕ те, шатах халран кайса, юр

çине ӳкрĕ... Эпир ăна кăпăрах сырса илтĕмĕр. Ку çын— пĕр 12—14 çулхи арçын ача пулчĕ.

Çĕтĕк-çатăк тумланнă, шуранка сăн-питлĕ, картузпа, алсишсĕр—йывăррăн хашкаса выртрĕ вăл. Куçĕсем çеç хăюллă çутăпа çутатса тăратчĕç унăн.

— Мĕнле çын эсĕ?—тесе ыйтрăм эп унран.

— Мана Кирюха теççĕ,— хашка-хашка каларĕ вăл.— Кирьян, хушаматăм Белкин... Çак ялтан... Красавинăран!.. Çитейместĕп пулĕ тесе хытă хăрарăм. Тăшман вырăнне шутласа, персе вĕлеретĕр пулĕ, терĕм...

Вăл тăрса ларчĕ те пире пурне те пăхса çаврăнчĕ.

— Хăшĕ начальник кунта сирĕн? Ман начальникпе калаçас пулать...

— Мĕн çинчен?

— Эпĕ сире ăçтарах пемеллине кăтартма килтĕм. Нимĕçсен ăçта мĕн пуррине пĕтĕмпех пĕлетĕп...

Эпир ачана тата хытăрах хупăрласа илтĕмĕр. Çавă кирлĕччĕ те ĕнтĕ пире. Тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлсен — ĕç тухать вара!

— Чăнах-и?—васкаса ыйтрăм эпĕ.—Пурне те пĕлетĕн-и? Пулемет точкисем, минометсем...

— Куç хупсах калама пултаратăп,—терĕ ача.—Эсир нумайăшне пĕтертĕр, анчах та пур-ха унта. Пĕлмесĕр тăрукках путарас çук. Çавăн пирки килтĕм. Часрах аркаттарас килет-çке вĕсене... Тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ пусмăрта пурăнатпăр!

— Ма пит çăмăл тумланнă вара эсĕ? Чупма çăмăлтарах пултăр тесе-и?— ыйтрĕ ман боецсенчен пĕри, ача çине шеллĕн пăхса.— Шăнса пăсăлма пулать вĕт...

— Урăх нимĕн те çук та, мĕн тăхăнас?— терĕ ача ăна хирĕç.— Пурччĕ те — пĕтĕмпех çаратса тухрĕç. Юлашки алсише виçĕмкун пĕр ефрейтор туртса илчĕ. Халĕ эсир пирĕн пĕтĕм ялĕпе те пĕр мăшăр çăмата тупас çук, пурте фрицсен урисенче...

— Фашистсем йышлăн-и унта?

— Нумайӑнах мар та, пур ҫав. Укрепленисенче лараҫҫӗ...

— Эс мӗнле вӗҫерӗнсе килтӗн вара? Хӑрамарӑн-и? Тӑшмансем хыҫалтан пеме пултарнӑ вӗт сана?

— Вӗсем халь пурте шӑтӑксенче лараҫҫӗ, эпӗ ҫырма тӑрӑх шуса тухрӑм...

Ыйтусем темӗн чухлех пуласса пӗлсе, текех ачана боецсемпе калаҫтарса тӑмарӑм: хамӑра кирлӗ сведенисене часрах пӗлес тесе, ӑна батарея командирӗ патне илсе кайрӑм.

Эпӗ кама илсе пынине пӗлсен, пирӗн лейтенант питӗ тӗлӗнчӗ, унтан ман пекех савӑнса кайрӗ.

— Ну, маттур йӗкӗт!— тесе ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илчӗ вӑл ачана.— Мӗн ятлӑ-ха эсӗ?

— Кирьян,— терӗ ача.

— Атя-ха ҫӗрпӳрте, Кирюша! Пӑртак ӑшӑн та каласа кӑтарт, пирӗнваскас пулать, пехота каллех чарӑнчӗ ав...

Ӑшӑ ҫӗрпӳртре ӑна вӗри чей ярса пачӗҫ, ҫемҫе ҫӑкӑр ҫине ҫу сӗрсе тыттарчӗҫ. Кӗскен-кӗскен ыйтса, эпир ҫакна пӗлтӗмӗр: Кирьянсен ялӗнче фашистсем кашни ҫурт айӗнчех дзотсем тунӑ иккен, пӳртсем, кӗлетсем тӑррине автоматчиксем лартнӑ, чиркӳ умне икӗ ҫӑмӑл оруди вырнаҫтарнӑ, миномечӗсем хулӑн стеналлӑ чул ҫуртсем хыҫӗнче тӑраҫҫӗ. Салтакӗсем нумайӑнах мар, анчах хӗҫпӑшал ҫителӗклӗ.

— Хут татки парӑр-ха,— терӗ Кирьян, чей ӗҫме чарӑнса.— Акӑ епле вӗсен...

Вӑл ҫавӑнтах, чӑр та чар чӗркелесе, ял планне турӗ. Унтан хӑш тӗлте мӗн пуррине, ӑҫта мӗнле огневой точкӑсем вырнаҫтарнине палӑртрӗ.

Лейтенант ку план ҫине пӗр-икӗ минут пӑхса тӑчӗ те Кирьяна хӑрах аллипе ыталаса илчӗ:

— Тавтапуҫ, шӑллӑм!— Унтан пире пуҫӗпе сулчӗ:— Кайрӑмӑр!

— Ӑҫта каятӑр?— ыйтрӗ Кирьян, ура ҫине сиксе тӑрса.

— Орудисем патне,— терӗ лейтенант.— Халех ҫӗмӗрме тытӑнатпӑр!

— Эпӗ те пыратӑп...

— Ҫук ӗнтӗ, халь сансӑрах майлашатпӑр, даннӑйсем пур. Эсӗ ӑшӑнса лар кунта, выртса канма та пултаратӑн.

— Аюк, аюк,— пуҫне пӑркаларӗ Кирьян, картузне хӑлхисем ҫинех пусса антарса.— Татах кирлӗ пулӑп-ха.

— Ну, юрӗ эппин...

Вӑрман хӗррине тухсан, лейтенант оруди командирӗсемпе наводчикӗсене пухса темиҫе сӑмах каларӗ те хӑй ҫавӑнтах йывӑҫ тӑррине хӑпарчӗ. Кӗҫех команда янраса кайрӗ:

— Прицел... Трубка... Огонь!

— Кӗр-кӗр...— турӗҫ пирӗн орудисем.

— Гранатой... Огонь!

— Левее 0—3... Огонь!

Пуҫларӑмӑр ҫав кисрентерме! Ял ҫинче ҫулӑмпа хӑрӑм кӑна явӑнчӗ. Кашни орудирен пӗр вуншар снаряд кӑларса ярсан, командӑсем вӑхӑтлӑха чарӑнчӗҫ. Эпӗ лейтенант хӑпарнӑ йывӑҫ тӑрринелле пӑхрӑм. Пӗлӗтелле кармашакан чӑрӑшӑн чи ҫӳлти тураттисем ҫинче, лейтенантран та ҫӳлерех, хайхи пирӗн Кирьян лара парать. Вӑл та корректировщик пулса тӑнӑ. Уҫҫӑнах илтрӗм ун сассине — темшӗн лейтенантпа тавлашма тапратнӑ...

— Каларӑм сана, кӑшт сулахаярах пемелле тесе! Ав ҫав хура йӑмра тӗлне пемелле!

— Мӗн вара унта?— ыйтрӗ лейтенант.

— Дзот!

— Тӗрӗс пӗлетӗн-и?

— Тӗрӗс пулмасӑр! Вӑл пирӗн хамӑрӑн пӳрт вӗт, пӳрт айӗнче — дзот, унта икӗ пулемет... Печчӗр ҫавӑнта!

— Хӑвӑр пӳртӗре... шел мар-и?

— Печчӗр тетӗп! Унта шӑпах Ганс Дитрих ларатчӗ-ха, колхоз председателӗн арӑмне персе вӗлерекенни...

— Левее 0—2... Огонь!

Эпир петӗмер.

— Во, тӗрӗс! Шӑпах лекрӗ!— савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ячӗ Кирьян.— Халӗ авӑ ҫав ҫӳлӗ ҫурта шаплаттар! Пӗлетӗп — унта темиҫе автоматчик ларать вӗсен, сирпӗнччӗр.

Каллех команда, каллех залп...

Пӗр ҫур сехет пулӗ ҫапла персе тӑтӑмӑр эпир. Кашни пемессеренех ҫӗнӗ прицел, урӑх тӗл пулчӗ. Пӗр снаряд та сая каймарӗ вара, пурте кирлӗ ҫӗре, Кирьян кӑтартса панӑ тӗле, кайса ҫӗмӗрчӗ...

— Пехота тапранчӗ!— тесе кӑшкӑрчӗ лейтенант пирӗн еннелле.— Тӑчӗҫ, чупрӗҫ!.. Сӑрталла хӑпараҫҫӗ! Пошла-а...

Инҫетрен, сивӗ сывлӑша ҫурса, стрелоксем хӑватлӑн «урра» кӑшкӑрни янраса ҫитрӗ. Тинех пирӗн чӗресем лӑпланса савӑнӑҫпа тулчӗҫ вара! Ӗнтӗ эпир тӑшманӑн огневой точкисене путарнӑ, вӗсене шарлами тунӑ, пехота валли ҫул уҫса панӑ. Пире тахҫанах ҫакӑ кирлӗ пулнӑ!

Лейтенант чӑрӑш ҫинчен сиксе анчӗ, ун хыҫҫӑн — Кирьян.

— Ну, шӑллӑм, пур артиллеристсен ячӗпе те тав сана!— пӗтӗм боецсем умӗнче Кирьян аллине тытса чӑмӑртарӗ лейтенант.— Калама ҫук пысӑк усӑ кӳтӗн эс пире!

— А эсир пире усӑ кӳместӗр-им?— терӗ ӑна хирӗҫ Кирьян.— Эсир пире ирӗке кӑларатӑр...

— Паллах, ку та тӗрӗс...

— Сире эпир кунӗн-ҫӗрӗн кӗтнӗ вӗт!

Ҫак самантра пирӗн пата штабран связной чупса ҫитрӗ. Батарея командирне пӗчӗкҫеҫ хут татӑкӗ тыттарчӗ те:

— Эх, сире мухтаҫҫӗ паян!— терӗ.— Пӗтӗм виҫҫӗмӗш батарейӑна награда памалла тӑватӑп, тет штаб начальникӗ...

Эпир пӗр-пӗрин ҫине пӑхса йӑл та йӑл кула-кула илтӗмӗр. Лейтенант хут татӑкне вуласа тухрӗ те ӑна тирпейлӗн хуҫлатса сумкине хучӗ.

— Малалла куçатпăр, лашасене илсе килĕр,— приказ пачĕ вăл. Унтан ман патарах пычĕ те: пире награда кама шут тунă,— терĕ,— паян кам мĕнле ĕçленине çырса хатĕрлеме хушаççĕ... Эпĕ çак ачана та медаль илме тăратасшăн... Епле шутлатăн, парторг? Тĕрĕссипе, вăл пулăшнипе кăна ăнăçлă пулчĕ вĕт пирĕн ĕç.

— Тивĕçлĕ, тивĕçлĕ,— килĕшрĕм эпĕ.

— Лайăхрах ыйтса пĕл эс унтан: кам ачи, ашшĕ-амăшĕ кам унăн...

— А эпир ăна халех пĕлме пултаратпăр! Ăçта-ха вăл? Кирьян!

Эпир унталла та, кунталла та пăхрăмăр — анчах ача ниçта та курăнмарĕ, куçран пачах çухалчĕ.

— Халь кăна çакăнта тăратчĕ-çке!

— Қама шыратăн?— ыйтрĕ манран пĕр боец.

— Хайхи, ялтан килнĕ ачана, ара...

— Э-э, вăл паçăрах ялалла тапса сикрĕ, эсир калаçма пуçласанах! Кирлĕччĕ-им?

— Питĕ кирлĕччĕ çав! Эккей... Çын награда илме тивĕçлĕ, хăй никама систермесĕр пăрахса каять!—хĕрхенчĕ лейтенант.

Сехетрен эпир орудисене турттарса Красавино ялне пырса кĕтĕмĕр. Пирĕн пехота унччен фашистсене кунтан хăваласа тухса кайнăччĕ ĕнтĕ, пăшал-пулемет сассисем чылай инçетре, ялтан пĕр икĕ çухрăмра илтĕнетчĕç. Нӳхрепсенчен, пытанса ларма юри тунă блиндажсемпе шăтăксенчен тухнă ял çыннисем — ват стариксем, хĕрарăмсемпе ачасем — халь хăйсен килĕсене таврăнма пуçланăччĕ. Кашниех пире пуç тайса саламларĕ, хăйсене ирĕке кăларнăшăн чĕререн савса тав турĕ.

— Спасибо сире, тăвансем!

— Тамăкран хăтартăр...

— Çулăрсем такăр пулччăрах сирĕн, тăшмана çĕнме вăй-хал çиттĕр!

— Часрах тасатăр хамăр çĕршыва вăл мăйракаллă шуйттансенчен...

Тӳсме çук хурлăхлă та асаплă пурнăçран халь çеç хăтălнă совет çыннисене пирĕн салтаксем хавхаланта-ракан сăмахсемпе ответлерĕç.

— Ан хуйхăрăр ĕнтĕ, текех фашист кунта таврă-наймĕ!

— Капут халь вĕсене!

Эпĕ ку хушăра пĕрмаях Кирьян çинчен шухăшласа пытăм. Манăн ăна епле пулсан та тупас килчĕ, çавăнпа та эпĕ пур иртсе пыракан çынсене те сăнарăм. Анчах ăна майлă пĕр çын та курăнмарĕ.

Ял варрине, чиркӳ патнерех çитсен, пĕр ишĕлнĕ пӳрт умĕнче темиçе ача пирĕн çине пăхса тăнине куртăм та вĕсенчен пырса ыйтрăм:

— Кирьян ятлă ачана пĕлетĕр-и эсир?

— Пĕлетпĕр-çке,— терĕç вĕсем.— Ма вара? Эсĕ ăна аçтан паллатăн?

— Курасчĕ манăн ăна... Питĕ кирлĕ!

— Акă, нумай та пулмасть, вăл çакăнтан чупса иртсе кайрĕ!— терĕ пĕчĕкрех хĕрача.— Аллине темле вăрăм патак тытнăччĕ...

— Аçталла кайрĕ?

— Авă — çавăнта, чиркӳ патнелле.

Хĕрача аллипе тăвалла сулса кăтартрĕ. Эпĕ унталла пăхрăм та сасартăк хытсах тăтăм. Çӳлĕ чиркӳ тăрри-нелле çилпе сулкаланса тăракан пралук пусма тăрăх васкасах темле çын чакаланса хăпарнине куртăм эпĕ...

— Кам вăл? Мĕн тума хăпарать унта?— ыйтрăм ачасенчен.

— Кирюха!— терĕ пĕр ачи.

— Çавă, çавă! Куратăр-и, хул хушшинче хайхи па-так!— çирĕплетрĕ тепри.

— Мĕн кирлĕ ăна унта?

— Кам пĕлет...

Чăнах та, питĕ хăрамалла пулчĕ. Пралук пусма çилпе унталла та кунталла сулланчĕ, кĕç-вĕç татăлса анассăн

туйӑнчӗ, анчах Кирьян ним ҫине пӑхмасӑрах ҫӳлелле, чиркӳ хӗресӗ патнелле кармашрӗ.

Эпир часрах тӑвалла чупрӑмӑр. Манӑн ӑна халех каялла антарас, ӑнсӑртран ӳксе вилесрен хӑтарас килчӗ. Анчах та эпир чиркӳ патне ҫитиччен вӑл чӑн ҫӳле хӑпарса, хӗресрен ҫавӑрса тытрӗ.

— Э-эй, мӗн тӑватӑн унта, ан каялла!— тесе кӑшкӑртӑм эпӗ мӗн вӑй ҫитнӗ таран.

Кирьян ответ памарӗ, илтмерӗ те пулмалла. Халӗ вӑл чунтанах аллинчи вӑрӑм патакпа тӑрмашма тытӑнчӗ. Мӗн туни курӑнсах каймарӗ пире. Анчах пӗр-икӗ минутран вӑл унта мӗншӗн хӑпарни пӗтӗмпех паллӑ пулчӗ вара: чиркӳ тӑрринче хӗрлӗ ялав вӗлкӗшме тытӑнчӗ...

Нумай уйӑхсем хушши фашистсен пусмӑрӗнче асапланнӑ ял ҫийӗнче каллех совет ялавӗ ҫулӑм евӗр ялкӑшма пуҫларӗ!

— Ну, маттур та иккен ку!— терӗ ман хыҫра тахӑшӗ.

Эпӗ ҫаврӑнса пӑхрӑм та хамӑрӑн лейтенанта курах кайрӑм.

— Вӑл камне пӗлетӗн-и?— ыйтрӑм эпӗ унран, чиркӳ тӑрринелле кӑтартса.

— Ҫавна-и? Ҫук, пӗлместӗп...

— Хайхи пирӗн ача вӗт вӑл. Паҫӑрхи «корректировщик»!

— Чӑнах-и?

— Точно, курӑн акӑ!

— Хастарлӑ та иккен!

Кирьян каялла анма пуҫларӗ. Анасси — хӑпарассинчен те хӗнтерех пулчӗ. Пусман аялти вӗҫӗ сулланкаласа тӑчӗ. Кирьянӑн урисем унӑн пӗр сыпӑкӗнчен теприне ниепле те лекеймеҫҫӗ.

Анчах ку нимех те марччӗ-ха... Чиркӳ ҫуммипе сасартӑк снаряд шӑхӑрса иртсе кайрӗ. Унтан тепре, тепре! Вӗсем умлӑн-хыҫлӑнах, чиркӳрен пӗр 100—150 метрта ӳксе ҫурӑлчӗҫ. Ҫавӑнтах тавҫӑрса илтӗмӗр эпир: фашистсем чиркӳ тӑррине ҫын хӑпарнине аякранах курнӑ та

ана пеме тытăннă. Кам пĕлет, тен, ăна вĕсем наблюдатель вырăнне шутланă пуль, тен, совет ялавне курайманнипе пенĕ...

— Васкарах ан!

— Часрах, часрах! Аллусемпе тытса шу!— пăшăрханса кăшкăрма тапратрĕç аялта тăракансем. Çав вăхăтра кашниннех ăна пулăшас, вилĕмрен хăтарас килчĕ, анчах ним тума та пулмарĕ.

Çапах та Кирьян майĕпе ансах пычĕ. Чансем çакăнса тăнă тĕлтен чиперех иртрĕ, крыльца тăрринелле çите пуçларĕ. Анчах инçетре те мар тепĕр снаряд шăхăрса килни илтĕнчĕ. Эпир пĕрре куç хупса уçичченех вăл чиркӳ картинче хаяррăн шартлатса çӳрăлчĕ.

Пурте пĕр харăсах çĕре ӳкрĕмĕр. Пирĕн çине тем тери юр сирпĕнчĕ. Темиçе секундран, пуçа çĕклесе, карта урлă пăхрăм: пралук пусма пуш-пушах сулланса тăрать, чиркӳ çумĕнче тĕтĕмпе хăрăм çеç йăсăрланать...

— Пĕтнĕ пирĕн герой!— çиçĕм пек вĕри шухăш касса кайрĕ ман чĕрене. Часрах сиксе тăтăм та карта урлă ыткăнса каçрăм. Пăхатăп — крыльцаран сулахай енче, снаряд ӳксе çурăлнă вырăнтан чылай инçетре, пилĕк таран юр ăшĕнче этем кĕлетки тăрмашать...

— Кирьян! Тусăм! Сывă-и эсĕ?— хыпăнса ӳксе чупса пытăм ун патне.

— Ну, хытă çĕклесе печĕ, шуйттан,— терĕ вăл мана хирĕç, куç-пуçне ерипен юртан тасатса.— Епле вĕçсе аннине те астумастăп. Парашютсăр антăм вĕт-ха...

— Суранлатман-и сана?

— Çук, мана тивет-и вара?— кулса ячĕ Кирьян.— Иртнĕ кĕркунне ик енче ик бомба пĕр харăс çурăлчĕç— итту нимĕн те пулмарĕ, пĕр эрне илтмесĕр пурăнтăм çеç!

Пахчана пирĕн лейтенант сиксе кĕчĕ, унтан ыттисем те кĕчĕç. Нумаях та пулмасть Кирьян пурнăçĕшĕн калама çук хăраса тăнă çынсем халь çак çамрăк паттăр çине çав тери савăнăçлăн, ыгарайми куçсемпе пăхрĕç...

— Еплерен шут турăн-ха эсĕ ялавпа унта хăпарса кайма?— ыйтрĕ унран лейтенант.

— Эпĕ ăна паян мар, тахçанах шутласа хунăччĕ,— терĕ Кирьян.— Ялавне те пытарса усрарăм... Хамăр çар килсенех хăпарса çакатăп тесе пурăнтăм. Вăл вĕт пирĕн пата ирĕклĕ пурнăç таврăннине пĕлтерет! Пурте курччăр, пурте пĕлччĕр эпир фашистсенчен хăтăлнине!..

Кирьян картуз сăмсине туртса çĕклерĕ те çӳлелле, ялав çинелле пăхрĕ.

— Епле илемлĕ вăл... Вут пек çунать! Пирĕн ялав пекки тĕнчипе те çук пуль!..

— Тĕрĕс, шăллăм,— терĕ лейтенант, ăна хулпуççинчен лăпкаса.— Пирĕн ялав пекки тĕнчере чăнах та урăх çук...





## ЁНЕНТЕРЧЁÇ...

Пěрре, кăнтăрла иртсен, сěм вăрманти çырмара чарăнса тăнă партизансен командирě Иван Кузьмич Макеев патне икě арçын ачана илсе пычěç. Пěри — кăвак куçлă, каçăртарах сăмсаллă, красноармеец шлемне тăхăннăскер — пěр вунтăватă çулта пулнă, теприне — унтан лутрарах, шуранка сăнлă, çинçе мăйлă ачине — вунă-вуник çултан ытла пама май килмен. Вěсен иккěшин те çурăмěсем хыçěнче пěчěкçеç кутамккасем çакăнса тăнă.

— Мěн пулнă, ма илсе килтěр?— тесе ыйтрě Макеев.

— Сана курасшăн... Эпир Иван Кузьмича шыратпăр, ун тěлне пěлетěр пулсан, тархасшăн, илсе кайăр, теççě,— ответ пачě дозорта пулнă партизан.— Ну, эпě вара, вěсем сана пěр-пěр кирлě хыпар пěлтересшěн пулě, терěм те — илсе килтěм...

Партизансен командирě пěрре пěр ачи çине, тепре — теприн çине пăхса илчě. Ачасем те, ун çине куç илмесěр пăхса, вăл хăйсемпе калаçма тытăнасса кěтсе тăчěç. Сăмаха малтан хăйсем пуçлама вěсен пăртакках хăюлăх çитеймерě курăнать.

— Ăçтан килтĕр эсир?— ыйтрĕ командир.— Кам ячĕ сире кунта?

— Пире никам та яман, эпир хамăрах килтĕмĕр,— куçĕсене мăчлаттарса илчĕ каçăртарах сăмсалли.— Андреевка салинчен...

— Кунта килме епле пĕлтĕр эппин? Кам та пулин çул кăтартса ячĕ-и? Е хăвăрах тупрăр?— тĕпчеме тытăнчĕ командир.

— Эпир... эпир, Иван Кузьмич, сире виçĕ кун шыратпăр ĕнтĕ, аран тупрăмăр!— персе ячĕ кĕçĕнтерехххи.— Кăтартса яракан пулнă пулсан, тӳрех тупаттăмăр та çав, никам та йĕркеллĕн калаканни пулмарĕ. Камран ан ыйт — пурте: ялта мар ĕнтĕ вĕсем, ăçта та пулин вăрманта шырăр, теççĕ. Анчах вăрманĕ ку таврара тем чухлех...

Командира ку ачасем хытах интереслентерме пуçларĕç.

«Никам та хушса яман, хăйсемех килнĕ, пилĕк кун шыранă, ман ята пĕлеççĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Тĕлĕнмелле!»— шухăшларĕ вăл.

— Ну, ну... Мана ăçтан пĕлетĕр тата?

— Сана-и? Сана пĕлмен çын та çук пулĕ! Эпĕ хам сана виçĕмçултаппах паллатăп, эсĕ пирĕн атте патне темиçе хут та пынă, пĕрре ман вырăн çинче те çывăртăн,— терĕ шуранка сăнлиех.

— Ак тата япала!— кулса ячĕ Макеев.— Хурăнташ мар-и эпĕ сире?

Вĕсем калаçнă çĕре пухăннă ытти партизансем те лăх-лăх кулса илчĕç.

— Тен, эсĕ унăн хреснашшĕ пуль, Иван Кузьмич?

— Е вĕсен ялĕнче туйра пулнă?

Анчах ача çухалса каймарĕ. Вăл кăштах çиленнĕ пек пулчĕ те партизансем çине пысăк хура куçĕсемпе хăюллăн пăхса çаврăнчĕ.

— Ним кулмалли те çук!— терĕ вăл.— Иван Кузьмич темиçе çул хушши райземотдел пуçлăхĕ пулнă, а пи-

рĕн атте — колхоз председателĕ... Ҫавăнпа та вăл пирĕн пата час-часах пынă. Пĕлмесĕр каламастăп ĕнтĕ!

Ку сăмахсем хыççăн партизансен командирĕ, темĕн аса илнĕ пек пулса, шĕвĕр пӳрнине çӳлелле çĕклерĕ.

— Чим-ха, чим-ха, ачам... Эсир Андреевка салинчен тетĕр-и çав?

— Ийя.

— Эппин, эс Парфен Ветлугин ывăлĕ?

— Ҫавăн...

— Во-он мĕн! Апла пулсан — тĕлĕнмелли çук, паллах, эс мана пĕлме кирлĕ. Сирĕн патăрта пулкаланă эпĕ, тĕрĕс...— Иван Кузьмич, слон шăмминчен тунă чĕлĕмне кăларса, табак тултарма тытăнчĕ.— Аван çынччĕ сирĕн ашу, колхоза яланах йĕркеллĕ ертсе пыратчĕ. Фашистсем ăна персе пăрахнă тенине илтсен, питĕ хытă хĕрхентĕм...

Партизансен командирĕ хăйсемпе тăруках кăмăллăн калаçма пуçланипе хăюлланса, ывăннă ачасем ун çывăхĕнче выртакан шанкăсем çине ларчĕç. Иван Кузьмич тăраннăн сывласа илчĕ те ачан ашшĕ нимĕçсен аллине епле лекни çинчен ыйтрĕ.

— Мĕншĕн аяккалла пăрăнман-ха вăл пĕреххут, ялтах юлнă?

— Май пулмарĕ çав,— терĕ ача.— Малтанах, нимĕçсем колхоз кĕтĕвне самолетсем çинчен пулеметсемпе пеме тапăнсан, вăл, ытти колхозниксемпе пĕрле выльăхсене çăлас тесе, вăрманалла хăваласа чупрĕ. Ҫавăн чух ăна хытă суранлатнăччĕ. Нимĕçсем яла пырса кĕнĕ вăхăтра эпир ăна анкартинчи пусса пытартăмăр, анчах пурпĕр шыраса тупрĕç... Тахăшĕ вăл коммунист пулни çинчен каласа панă пулмалла. Пусăран туртса кăларчĕç те калаçса та тăмарĕç — çавăнтах персе пăрахрĕç...

— Эх, мĕн тери маттур партизан пулмаллаччĕ вăл çын!— татах шеллесе илчĕ Иван Кузьмич.— Эпир, вĕт, граждан вăрçинче унпа пĕрле пулнă, вунсаккăрмĕш çулта нимĕçсене пĕрле хăваланă...

Қалаҫу темиҫе самантлăха татăлчĕ. Иван Кузьмич, чĕлĕмне йăсăрлантарса, иртнĕ вăхăтсене аса илме пикенчĕ пулмалла, ытти партизансем тăлăха тăрса юлнă ача ҫине хĕрхенсе пăхса тăчĕҫ.

«Шутласан, мĕн чухлĕ ача-пăчана ашшĕ-амăшĕсĕр тăратса хăварчĕҫ вăл фашист ҫынҫиенĕсем, мĕн чухлĕ асаппа хурлăх кӳчĕҫ вĕсем савăнса ҫеҫ телейлĕн ӳсекен совет ачисене! Юнпа, тăхланпа, хăйсене кашни утăмрах ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынипе ҫеҫ тавăрма пулать уншăн фашистсене!»— шухăшларĕ кашни хăй тĕллĕн.

— Атте вырăнне халь эпĕ килтĕм,— терĕ ҫав вăхăтра колхоз председателĕн ачи сасартăк.

Пурте харăсах ун ҫинелле ҫаврăнса пăхрĕҫ.

— Мĕн терĕн эсĕ?— ыйтрĕ Иван Кузьмич.

— Атте вырăнне эпĕ партизан пулас тетĕп!— пурне те илтĕнмелле, татăклăн каласа хучĕ ача лăпкăнах.

— Партизан?!

— Ийя ҫав. Эпĕ те, ак Федька та...— Вăл хăйĕн юлташĕ ҫине тĕллесе кăтартрĕ.— Фашистсем ăна та ман пекех тăлăха хăварчĕҫ: ун амăшне — чылай пулать ĕнтĕ — ытти ҫамрăкрах хĕрарăмсемпе пĕрле таҫта илсе кайрĕҫ те, халь пĕчченех пурăнать вăл. Ҫавăн пирки вара эпир иксĕмĕр те партизан пулма шутларăмăр, фрицсене тавăрма!

Партизансем пĕр-пĕрин ҫине пăхкаласа илчĕҫ, хăшĕсен сăнĕсем ҫинче ҫемҫе кулă палăрчĕ. Анчах, ачасене тăруках кӳрентерес мар тесе, нихăшĕ те ним те каламарĕ: ачасем фашистсене хăйсен вăйĕ ҫитнĕ таран тавăрма чĕрере нех ĕмĕтленнĕ-ҫке. Халь пурте — ачасем те, партизансем те Иван Кузьмич мĕн каласса кĕтрĕҫ, мĕншĕн тесен ĕҫе пĕр вăл кăна татса пама пултарнă...

Иван Кузьмич ҫав хушăра сӳннĕ чĕлĕмне атă пуҫне шаккаса тасатрĕ те ăна майĕпе, васкамасăр, кĕсйине чиксе хучĕ. Унтан колхоз председателĕн ачине куҫран пăхрĕ.

— Эсĕ мĕн ятлă-ха çав?— ыйтрĕ вăл лăпкăн, ашшĕ хăйĕн ывăлĕпе калаçнă пек.

— Эпĕ-и? Володя. Владимир. Эпĕ шăп Ленин çуралнă кун çуралнă та, атте мана юриех çав ята панă.

— Аван ят... Миçе çулта-ха эсĕ?

— Кăçал вуниккĕ тултартăм.

— Санăн юлташу тата?

— Федька-и? Вăл...

— Эпĕ кăçал Хĕрлĕ Çар уявĕнче вунтăватта кайрăм,— хăйĕншĕн хăех ответ пачĕ унăн юлташĕ.

— Питĕ телейлĕ-çке эсир,— çемçен кулса илчĕ Иван Кузьмич,— пĕри Ленин кунĕсенче, тепри Хĕрлĕ Çар уявĕнче çуралнă...

Ачасем те кулса ячĕç. Вĕсем ĕнтĕ, партизансен командирĕн кăмăлĕ уçăлса кайнине кура, хăйсене кĕçьвĕç отряда илессе шанса, хăйсен ăшĕнче савăнсах тăчĕç.

— Хăвăр та пит маттур ачасем пулмалла,— терĕ малалла Иван Кузьмич,— анчах сире партизан пулма иртерех-ха, ачамсем! Ытла çамрăк эсир, сирĕн пăртак ӳсес пулать... Партизан пуласси — çăмăл япала мар вăл, ăна валли вăй та, тӳсĕм те нумай кирлĕ. Çавăнпа та, ан çиленĕр те ĕнтĕ мана, эпĕ сире йышăнма пултараймастăп — юрамасть.

Ĕç кун пек çаврăнса тухасса ачасем ниепле те кĕтменччĕ. Партизансен командирĕ хăй сăмахне каланăçемĕн вĕсен сăнĕсем улшăнса пычĕç, иккĕшин те чĕрисем кӳтсе, куççулĕсем капланса килчĕç.

— Çапла çав, ачасем. Сирĕн каялла, килĕре каймалла пулать... Куншăн кӳренмелли нимĕн те çук,— хушса хучĕ вăл кăшт тăрсан, Володьăпа Федька хытă пăлханнине кура.— Эсир, вĕт, алла винтовка та тытса курман, пеме те пĕлместĕр пулĕ...

Ку таранччен ним чĕнмесĕр тăнă ачасем, кăна илтсен, харăсах хавасланса кайрĕç.

— Эпир-и?

— Пеме пĕлместпĕр-и?

— Питĕ лайăх пĕлетпĕр!

— Аллă метртан йывăç çинчи салакайăка ним те мар персе антарма пултаратăп эпĕ!

— Тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех «ворошиловский стрелок» нормине панă!— пĕрне-пĕри пÿлсе, вăскасах ĕнентерме тапратрĕç туссем.

— А винтовкăсем пур-и-ха сирĕн?— ыйтрĕ партизансенчен пĕри.— Вăрманта сире валли хĕçпăшал никам та хатĕрлесе хуман вĕт, партизансем хăйсене валли хĕçпăшал хăйсемех тупаççĕ!

Қапла калани те ачасене парăнтарма пултараймарĕ.

— Уншăн ан кулян, мучи,— ватăрах партизан çине пăхса, хăрах куçне хĕссе илчĕ каллех хăюлланса кайнă Володя.— Нимĕç винтовкисемех пур пирĕн, пĕр ещĕк патрон та пур...

— Қурмастăп-çке, ăçта вара вĕсем сирĕн?— ыйтрĕ Иван Қузьмич.

— Пăшалсене эпир... килте михĕпе чĕркесе çĕр айне пытарса хунă,—терĕ Володя.

— Тÿрех çĕклесе тухсан, пĕр-пĕр фриц тĕл пулса туртса илесрен хăрарăмăр,— хушса хучĕ Федька.— Малтан сире шыраса тупас терĕмĕр эпир...

— Вĕсене эпир ыранах илсе килме пултаратпăр.

Қалаçу каллех татăлчĕ. Иван Қузьмич татах чĕлĕмне кăларса тултарма тытăнчĕ. Тĕрĕссипе каласан, ку ачасем ăна ытларах та ытларах кăмăла кайма пуçларĕç, унăн вĕсене отряда илес шухăш та çуралма пуçларĕ, вĕсем ытла çамрăкки çеç иккĕлентерсе тăчĕ ăна. Вăрçă пуçланнăранпа нумай ачасен асапне курнăскер вăл халь ачасене çав тери хĕрхеннĕ, унăн тин ÿсекен çамрăксене ниепле йывăрлăх та кÿрес килмен. Партизансен пурнăçĕнче пысăк походсем те, хаяр çапăçусем те, сивви те, йĕпи те, тепĕр чух выççи те пулать. Пысăк тÿсĕм кирлĕ! Çук, ку ачасемпе ĕç тухмасть... Ытла çамрăк. Қайран чăрмав çеç пулма пултарать...

Çапла шут турĕ партизансен командирĕ. Володьăпа Федькăна та çавнах каласа пачĕ. Кусем вара каллех ним калама аптраса тăчĕç. Ĕмĕчĕсем тепĕр хут татăлчĕç вĕсен.

— Иван Кузьмич, эсир пире сăнаса пăхăр кана... Чăнах пултараймастпăр пулсан — эпир хамăрах кайăпăр,— кĕç-вĕç макăрса ярас сасăпа юлашки хут ыйтрĕ Володя.— Темиçе кунлăх та пулин хăварăр!

Анчах Иван Кузьмич кăмăлĕ пурпĕр çемçелмерĕ.

— Çук, ачасем, ан та ыйтăр, май тухмасть. Текех ан та калаçăр ун çинчен... Эй, Павел Петрович!—çырма тĕпĕнче йăсăрланакан кăвайт еннелле кăшкăрчĕ вăл.— Çак ачасене халех апат çитерсе яр! Утма вăй ытларах пултăр... Хырăмĕсем выçă пулĕ-ха?

— Выçă мар эпир...

— Пĕртте çиес килмест пирĕн, хырăм выççан çимелли хамăрăн та пур,— кӳренсе каларĕç ачасем. Вĕсен кăмăлĕсем хуçăлни халĕ гаçтанах палăрса тăчĕ. Çапах та, повар илсе пынă пĕр котелок çăра шӳрпене шăпăртах çаварса хучĕç вĕсем. Иван Кузьмич кăшт аяккарахра вĕсем çине пăхса кулкаласа çеç тăчĕ. Ачасем юлашки кашăксене сыпнă чух вăл, кĕсйинчен вĕрсе каламалли купăс кăларса, хаваслă çемĕ калама таппратрĕ...

— Акă, асăнмалăх манран çак япалана илĕр,— терĕ вăл, ачасем патнелле пырса.— Пĕр фриц кĕсйинчен тупнăччĕ эпĕ ăна. Вату партизанран асăнмалăх пултăр сире...

Володя Иван Кузьмич аллинчи купăса илсе çавăркаласа пăхрĕ те ăна йĕм кĕсйине чикрĕ.

— Халĕ ĕнтĕ сывă пулăр...— хулпуççисенчен лăпкаса илчĕ ачасене Иван Кузьмич.— Каçчен каяс пулать сирĕн, çулĕ çывăхах мар. Кăмăлсăр пулса ан кайăр, ялти çынсене пиртен салам калăр, анчах... эпир хăш тĕлте тăнине никама та калама юрамасть, астăвăр!

— Ăна пĕлетпĕр,— терĕ Володя.

Вăл кăштах шухăша кайнă пек пулса тăчĕ те Иван Кузьмич çине юлашки хут çав тери темскер ыйтасшăн пек пăхрĕ.— Ахалех йышăнмарăн эсĕ пире,— хаштах сывласа илчĕ вăл.— Тен, усси пулатчĕ?

— Ну, çитĕ, ачасем... Сывă пулăр.

Урăх ним калаçмалли те юлмарĕ. Паçăр командир патне илсе пынă партизанах ачасене вăрттăн сукмаксем тăрăх мăн çул çине илсе тухрĕ. Вăл, вĕсене киле чиперрĕн çитме сунса, чăтлăха каялла кĕрсе кайсан, Володьăпа Федька пĕр-пĕрин çинелле калама çук кӳренсе пăхса илчĕç.

— Ну, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?— ыйтрĕ Федька.

— Шухăшлас пулать,— терĕ Володя.

...Кĕрхи вăрман хуллен кăна кашларĕ, инçетрен, хĕвелтухăç енчен, мăн йышши тупăсем кĕрĕслетни илтĕнчĕ, çумăр хыççăн типсе çитмен çул çинчи пылчăк ачасен урисем айĕнче лăчăртатса пычĕ.

* * *

Çакăн хыççăн темиçе кун иртрĕ. Партизансем вăл хушăра çав малтанхи вырăнтах тăчĕç,— вĕсем пĕр чугун çул станцинчи тăшман гарнизонне тапăнса аркатма хатĕрленчĕç.

Разведка пĕлтернĕ тăрăх, станцире фашистсем Иван Кузьмичăн партизанĕсенчен икĕ-виçĕ хут ытларах пулнă, вĕсем автоматсемпе, пулеметсемпе хĕçпăшалланнă, тупăсем те, минометсем те пулнă. Вăйсем пĕр тан пулман, çавăнпа та тăшмана аркатмашкăн питĕ тĕплĕн хатĕрленмелле пулнă. Иван Кузьмич пуринчен ытла тăшмана пачах та кĕтмен çĕртен, сасартăк пырса çапнипе ăнран кăларса ярасса шаннă. Çавăн пирки хатĕрленӳ питĕ вăрттăн, никам сисмелле мар пулса пынă: хăйсене палăртас мар тесе, командир хăйĕн партизанĕсене кутаврара пăшал пеме мар, ăнсăртран йывăç тураттине хуçса сас кăларма та чарнă.

Çапах та, отряда икĕ ача пырса кайнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче, отрядран ытла инçетре те мар, икĕ хутчен умлăн-хыçлăн пăшал сасси кĕрĕслетни илтĕнчĕ. Юлашки вăхăтра пĕрмай шăп пулнă вăрманта вĕсем таçта çитиех янраса кайрĕç...

Пăшал сассисене илтсен, Иван Кузьмич калама та çук пăлханса кайрĕ.

— Кам печĕ? Кам мурĕ? Епле ухмахăн ăс çитрĕ пулать кун пек хăтланма?!— терĕ вăл тарăхса.— Пурĕпĕр пĕлетĕп, кашнин пăшалне тытса шăршлатăп, анчах çапах та тупатăп вăл пÿтсĕре! Пĕлсенех отрядран хăваласа кăларса яратăп!.. Тус мар, тăшман вăл пирĕн! Пĕтĕм ĕçе пăсса хума пултарать!

Вăл пур партизансене те йăпăр-япăрах пĕр çĕре пухтарчĕ.

— Каласа парăр тÿррипе, кам печĕ?— тĕпчеме тытăнчĕ вăл вĕсене.— Миçе хут асăрхаттарнă сире, пĕр сас та кăларма юрамасть тесе? Хамăра çеç сиен тăватпăр вĕт, никама та мар!

Пăшал перекенсем тупăнмарĕç. Дозортисене тĕрĕслесе пăхрĕç — вĕсем те пемен иккен, пăшалĕсем пурин те таса.

— Апла пулсан, пирĕн таврара такам çÿрет,— тесе шут турĕ Иван Кузьмич.— Тен, нимĕçсем мĕн те пулин асăрханă пулĕ те — пире шыраççĕ?

Çавăнтах отрядран вăтăр çын уйăрса, пĕтĕм таврари вăрмана «хыпашласа» тухма хушрĕ. Вĕсемпе пĕрле хăй те кайрĕ.

Анчах вăрманти шăплăха хускатакансене вĕсен нумай шыраса çÿремелле пулмарĕ. Авкаланчăк сукмаксем тăрăх çывăхри проççек çине тухсанах партизансем хăйсем патнелле икĕ лаша кÿлнĕ лав пынине курчĕç. Ку вĕсене питех те тĕлĕнтерчĕ: проççек тăрăх нихçан та никам та çÿремен...

— Пур енчен те çавăрса илĕр!— тесе приказ пачĕ те Иван Кузьмич партизансене, темиçе самантран вĕсем

пурте, винтовкисемпе автомачĕсене «на-перевес» тытса, йывăçсем хушшинчен çав лав патне пĕр харăс сиксе тухрĕç.

— Стой!

— Руки вверх!

Лав тăпах чарăнчĕ. Партизансем ун çинче ларакан икĕ çын çине пăхрĕç те — тĕлĕнсе хытсах тăчĕç. Те чăн ку, те куçа курăнать...

— Володя!

— Федька!..

Пăлханнипе тата хытă чупнипе хашкама ернĕ Иван Кузьмич тăруках ним калайманнипе антăхса кайса тăчĕ. Унтан, сыхланмалли-тумалли çинчен манса кайсах, хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн хăтланса çӳретĕр эсир кунта, мур чĕпписем? Акă, эпĕ сире пĕрре...

Анчах Володя ăна каласа пĕтерме памарĕ.

— Ним те хăтланса çӳреместпĕр, Иван Кузьмич,— терĕ вăл хаваслăн,— сирĕн пата тепĕр хут çаврăнса килес терĕмĕр çеç.

Çапла קаларĕ те, лав çинчен вăшт кăна сиксе анчĕ.

— Çапах та, мĕне пĕлтерет ку?— ыйтрĕ Иван Кузьмич, нимĕн те ăнланаймасăр.

— Килте пурăнма ниепле те чун чăтмасть-çке-ха,— ним пулман пекех калама тытăнчĕ Володя.— Шутларăмăр-шутларăмăр та, сирĕн пата тепре килсе пăхас терĕмĕр...

— Лашисем камăн кусем?

— Лашисем... малтан нимĕçсен пулнă, халь — пирĕн ĕнтĕ.

— Эс ăнланмалларах каласа пар, йĕркипе!— куçлăхне шăлса тăхăнчĕ Иван Кузьмич, ачасем темле пысăк ĕç тунине сисме пуçласа.— Ну-ка, лавне вăрманалла кĕртсе тăратăр-ха малтан!— хушрĕ вăл партизансене.— Ют куç тĕлне пулас мар.

Çур минутран лав сарлака çулçăллă вĕренесем айĕнче пытанчĕ. Володя вара партизансене çав виçĕ кун хушшинче хăйсемпе мĕн-мĕн пулса иртни çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Питĕ кӳренсе таврăнтăмăр эпир сирĕн патăртан,— терĕ вăл.—Киле çитрĕмĕр те—иксĕмĕр те ниçта кайса кĕме пĕлместпĕр, аптранипе хуть те шыва кайса сик! Пĕр кун иртрĕ, иккĕ иртрĕ çапла—анчах сире ниепле те манмалла мар, пĕрре курса кайнă хыççăн пушшех аса килетĕр. Вара Федькăпа иксĕмĕр калле-малле лайăххах шухăшласа пăхрăмăр та сирĕн пата тепĕр хут килме шут тытрăмăр. Мĕн пулать, мĕн килет... Винтовкăсене çĕр айĕнчен чавса кăлартăмăр, хутаççене пăртак çимелли чикрĕмĕр те—вăрманалла шăвăнтăмăр. Хамăр çавах шикленетпĕр-ха, эсир татах каялла ярасран хăратпăр. Унтан, темлерен, çакăн пек ăс пырса кĕчĕ пире: тавай, отряда çитиччен пĕр-ик фрица шаккаса хурас, хамăр мĕн тума пултарнине малтанах кăтартас!

— Ун çинчен малтан эпĕ каларăм,— хушса хучĕ лав çинчен пăхса ларакан Федька. (Вăл мĕншĕн çĕре анманнине никам та пĕлмерĕ-ха...)

— Иксĕмĕр пĕрле ĕнтĕ!— ун çине аллипе сулчĕ Володя.

— Кирек хăшĕ каланă пулсан та — çавах вăл, ĕçĕ пулнă пултăр,— терĕ Иван Кузьмич.— Кайран мĕн турăр вара?

— Ĕнер каç çакăнти мăн çул хĕррине пытанса выртрăмăр та кĕтме тытăнтăмăр...

— Кама?

— Фрицсене. Пирĕн хурлăха, çĕр каçа çул тăрăх пĕр пытă та иртмерĕ...

— Çĕрле çӳреме хăраççĕ вĕсем,— терĕ пĕр партизанĕ.

— Çапла пулмалла çав. Хĕвел тухсан тин куртăмăр вĕсене. Анчах чылайăнччĕ, пĕр аллă çын пулĕ, станци еннелле кайрĕç. Вĕсене тапăнма пултарайман эпир.

Унтан каллех кётрёмёр... Чылайран çул кукри хыçёнче урапа сасси илтёнчё. Пăхатпăр — çак лав килет, ун çинче икё нимёç ларaççё. Самаях ÿсёр курăнать, пёри ларнă çёртех сывăрать, тепри сăмса витёр юрласа пырать. Кăт! тёкрём Федькăна чавсапа. Эс — ку енчине, эпё — лешне, терём... Вара вёсем шăп хамăр выртнă тёле çитсен, пёр харăсах кёрслеттертёмёр. Лашисем хăранипе малалла тапса сикрёç, сывăраканни урапа çинчен кутăн кёпёртетсе анчё, тепри хăяккăн ÿксе аллинчи тилхепине пăрахрё... Эпир, сиксе тăрса, лашасене хăваласа çитрёмёр те, часрах лав çине хăпарса ларса, кунталла хăваласа тапратрăмăр. Эпё лашисене хăвалатăп, Федька çав вăхăтра нимёçе хупласа пырать... Ак çак проççек тёлне çитсен вара, тёмески-тункати çине пăхмасăрах, часрах çултан пăрăнса кёрсе кайрăмăр. Ну, унтан пире эсир куртăр...

Володя калама чарăнсанах Федька лав çине витнё брезента уçса ячё. Партизансен куçё умне сысна шăрчё пек сухаллă самăр фашист вилли тухса выртрё.

— О-о, ачамсем, ахаль салтак мар ку, фельдфебель!— терё Иван Кузьмич, нимёçён погонёсене курса.— Çăханнех лектернё!

— Тьфу! Эрех пички пекех... шăрш перет!— йёрёнсе сурчё пёр ватă партизан.

— Кÿпсе лартнă ёнтё, тăраничченех!

— Çавăнпа юрласа пынă та вăл...

— Ирсёр...

Фельдфебелён кёсйинчен хутсене кăларса илсен, Иван Кузьмич ăна вăрмана аяккарах илсе кайса пăрахма хушрё. Унтан çÿлте тăракан Федька лав çинчи япаласене кăларма тапратрё. Пёр автоматпа винтовкăсăр пуçне, унта пётёмпех çимелли тултарнă иккен: халь çеç пуснă сысна тушки, мăйёсене пăра-пăра хунă хур-кăвакалсем, икё ещёк çăмарта, çур катка çу, пёр витре пыл...

— Тахăш ялта çаратнă, бандитсем!— терё Иван Кузьмич çилёпе.— Тутлă çиесшён пулнă...

— Халь пире юрарӗ ӗнтӗ,— хушса хучӗ тахӑшӗ.

— Паллах, кӑларса пӑрахмастпӑр! Пирӗн ҫимеллисем шӑпах сахалланса ҫитнӗччӗ-ха,— ҫынсем хушшипе лав патнерех хӗсӗнсе тухса, сас пачӗ отряд поварӗ Павел Петрович.

— Отряда икӗ ҫӗнӗ боец хутшӑннӑ ятпа пылпа чей ӗҫетпӗр эппин!— терӗ тепри.— Уяв пулать!

— Тӗрӗс!

— Паллӑ тӑвас пулать ку япалана!— шакӑлтатса илчӗҫ ытти партизансем.

— Юрӗ ӗнтӗ... Ачисем чӑнах та питӗ маттур иккен, хӑйсен маттурлӑхне ӗҫпех кӑтартрӗҫ,— терӗ Иван Кузьмич, пӗчӗк партизансем ҫине кӑмӑллӑн пӑхса кулса илчӗ.— Йышӑнмаллах пулать вӗсене...

Володьӑпа Федька савӑннипе тапӑртатса ҫеҫ тӑчӗҫ, вӗсен тутисем кулчӗҫ, куҫӗсем ҫав тери савӑнса ялкӑшса илчӗҫ...

* * *

Ҫак историе мана Иван Кузьмич Макеев хӑй каласа пачӗ. Вӗсен районне тӑшмансенчен тасатсан, вӑл каллех малтанхи вырӑнта ӗҫлеме тытӑннӑ: ҫарта пулмалли вӑхӑт тахҫанах иртнӗ пулнӑ унӑн. Володьӑпа Федька кайран отрядра питӗ паттӑр разведчиксем пулчӗҫ, тет. Анчах вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ыйтса пӗлме пулмарӗ, мӗншӗн тесен эпир фашистсене хӗвеланӑҫнелле хӑваласа часрах малалла кайма васкаттӑмӑр.





## МЕДАЛЬ

...Нимӗҫсем кунтан чакса каясси халь пуриншӗн те паллӑ пулчӗ. Кашни каҫах хӗвеланӑҫнелле тӑшманӑн обозӗсем, орудийӗсем, машинисем шурӗҫ, уйрӑм-уйрӑм батальонӗсемпе ротисем иртсе кайрӗҫ. Яла таҫтан пырса кӗнӗ хыпар тӑрӑх, хӗвелтухӑҫ енчен хӗссе килекен совет полкӗсем тӑшмансене икӗ енчен хыпкӑчпа хӗстернӗ пек ҫавӑрса илме тапратнӑ имӗш, ҫавӑнпа та халь вӗсем, тимӗр унка лекесрен хӑраса, часрах тарма пикеннӗ.

Халӑх савӑнчӗ. Ку темрен те ырӑ хыпара пӗр-пӗрине пӗлтерсе, ҫынсем Гитлер хурахӗсен пусмӑрӗнчен хӑтӑлса ҫитмелли саманта кӗтрӗҫ.

— Ах, часрах тасалччӑрччӗ! Каллех этемсем пек пурӑнма тытӑнӑттӑмӑр, ирӗклӗн сывлама пуҫлӑттӑмӑр!..

Ачасем те часах илтрӗҫ кун ҫинчен. Илтрӗҫ кӑна мар, хӑйсен куҫӗсемпех курса тӑчӗҫ фашистсем вӑрттӑн шӑвӑнма тытӑннине, вӗсем мӑннисем пек те мар, уҫҫӑнах калаҫма пуҫларӗҫ кун пирки. Хӑрамасть вӗт ача-пӑча!

Сенька Горохов, вӑрҫӑ пуҫланиччен ялти шкулӑн пиллӗкмӗш класӗнчен «отлично» паллӑпа вӗренсе тухнӑскер, пӗр каҫхине урамри пур ачасем умӗнчех ҫапла каларӗ:

— Фрицсене капут çитрĕ! Сисетĕр-и, епле тикать* тăваççĕ! Ыр пурнăçран мар ĕнтĕ çав — пирĕннисем хĕссе килеççĕ!

Амăшне те çав сăмахсенех каларĕ вăл, анчах амăшĕ çавăнтах пӳлчĕ ăна:

— Асту эсĕ, такам умĕнче персе ан яр! Лешсем илтсен, юлашки сехетрех мăйна пăрса хăварĕç...

— Халь ĕнтĕ нимĕн те мар!— терĕ ăна хирĕç Сенька.— Чи хăрушши иртрĕ, часах каллех ирĕклĕ пулатпăр, курăн акă!

— Эпĕ ăна хам та пĕлетĕп, анчах та вĕсем ялсенчен чакса кайнă чух пушшех ураççĕ, тет,— лăпланмарĕ амăшĕ.— Илтрĕн пулĕ, Уварово тăрăхĕнче пĕр ял та хăварман, пĕтĕмпех çунтарса янă, тет, тата кашни ялтах аллăшар-çĕршер çынна персе пăрахнă...

— Илтнĕ,— аллипе сулчĕ Сенька.— Çапах та, тин эпĕ лекес çук ĕнтĕ.

— Епле пит шанатăн вара? Ак, вĕсем çак самантра килсе кĕрес пулсан, мĕн тăвассу пур? Тытаççĕ те — илсе тухса каяççĕ вĕт?

— Ак вĕсене!— Сенька хăйĕн çĕтĕк шалаварĕн кĕсйинчен парабеллум** кăларса кăтартрĕ.— Пĕр-иккĕшне вĕлеретĕп те — таратăп!

Амăшĕ пушшех хăраса кайрĕ. Фашистсем кам патĕнче те пулин хĕçпăшал тупсан, ăна вырăнтах вĕлернине вăл питĕ лайăх пĕлнĕ.

— Турăçăм!— аллисене хире-хирĕç шартах çапса илчĕ вăл.— Мĕн хăтланатăн эсĕ? Юлашки самантра пуçна çиессӳ килет-и? Халех ăçта та пулсан кайса пытар, куçăм ан куртăр ăна!

— Юрĕ-çке, юрĕ...— терĕ ăна ывăлĕ лăпкăнах.— Ан хăра. Эпĕ ку япалана сакăр уйăх пытарса пурăнтăм, халь тин, кирлĕ пулать тесе, кăларса тасатрăм.

— Немуйсем курсан?

---

* *«Тикать»* — украинла «тарни» тени пулать.
** *Парабеллум* — нимĕçсен револьверĕ.

— Пĕрре курать те — çавăнтах курми пулать!

Сенька, револьверне каллех кĕсйине чиксе, урамалла тухрĕ. Çаç пулма пуçланă ĕнтĕ, хĕвел анасси те инçе юлман. Вăрçăччен ку вăхăтра яланах хиртен кĕтӳ кĕрлесе, тусан мăкăрлантарса килекенччĕ. Халь шăпах, çерçисем çеç сиккелесе çӳреççĕ урам варринчи çул çинче. Пĕр-ик эрне каялла фашистсем ялти юлашки выльăхсене хăваласа кайрĕç: камăнне — качака путекки, камăнне — сысна çури, тепринне — ăнсăртран упранса юлнă пĕртен-пĕр сурăхне. Выльăх-чĕрлĕх çуккипе халĕ урамсемпе килхушшисенче пилĕк таран курăк ӳссе ларнă, хуть те пытанмалла выля!

Ĕнерхи-виçĕмкунхи пекех, Сенька çак чĕрене ыраттаракан шăплăхпа тулнă урам тăрăх ял вĕçĕнчи çӳлĕ сăрт çине тухса тăчĕ. Кунтан питĕ инçе курăннă. Сăрт çуммипе Вазуза шывĕ юхса выртать, унтан çатма пек тикĕс çарансем пуçланаççĕ те таçта çитиех тăсăлаççĕ. Пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ пек курăннă çĕрте — инçетри горизонтра — вăрман мĕлки кăвакарать, вăл вăрманта чугун çулăн пĕчĕк станцийĕ пур. Астăвать Сенька: фашистсем хĕвелтухăçнелле кайнă чух çав станци патĕнче тăватă кун çапăçу кĕрлерĕ...

Сенька шучĕпе, Хĕрлĕ Çар халь çав енчен килмелле пулнă. Çак сарлака улăхпа, унăн ик енчи сĕвек сăрчĕсем тăрăх хамăр'ăн танксем кĕмсĕртетсе килессине, вĕсем хыççăн вĕçĕ-хĕррисĕр боецсем «урра» кăшкăрса чупассине вăл халĕ питĕ кĕтнĕ. Мĕншĕн тесен вĕсемпе пĕрле яла çăлăнăç, ирĕклĕх, телей килессине вăл питĕ лайăх пĕлнĕ-çке, ăна пĕтĕм чĕрепе туйса тăнă...

Халь, сăрт çине тухсан, Сенька каçхи уçă сывлăша кăкри туличчен шалалла туртса илчĕ те каллех йĕритавралла пăхма тытăнчĕ. Малтан чечексем айне пулнă симĕс улăхалла пăхрĕ вăл, унтан унăн куçĕсем кантăк пек çутăлса выртакан Вазуза çине куçрĕç. Çав тери илемлĕ ĕнтĕ, ытармалла мар илемлĕ! Анчах ку илем халлĕхе никама та савăнтармасть çав, мĕншĕн тесен

ун çинче пусмăрлăх-ха... Ав, пур çĕрте те тĕмескесем курăнаççĕ. Сенька пĕлет: вăл тĕмескесене дзотсем, теççĕ, вĕсен айĕнче пулеметсем тăраççĕ... Ял халăхне виçĕ уйăх ĕçлеттерчĕç çавсене тунă çĕрте.

— Пурпĕрех аркатаççĕ ак вĕсене!— шухăшларĕ Сенька.— Çĕр айне пытаннипе те нумаях хăтăлаймĕç!..

Сасартăк вăл инçетре, вăрманта, чугун çул станцийĕ патĕнче, снаряд çурăлнине илтрĕ. Самантран тепри çурăлчĕ. Унтан çине-çинех шартлатма тытăнчĕç. Вăрман çийĕнче пĕлĕт пек хура тĕтĕм йăсăрланса хăпарчĕ.

— Пуçланчĕ! Тупата пуçланчĕ!— савăннипе чутах кăшкăрса яратчĕ Сенька. Вăл тата кăшт тăркаларĕ те часрах килнелле чупрĕ.

— Илтетĕн-и, пирĕннисем килеççĕ!—хавасланса пĕлтерчĕ вăл амăшне киле пырсан, аллипе хĕвелтухăçнелле кăтартса.— Халăхри сăмах ахаль пулман иккен!.. Ав, кĕмсĕртеттерме пуçларĕç! Тен, пирĕн пичче те килсе тухĕ, э? Пулма пултарать вĕт çавăн пек телей?

— Қам пĕлет, те чĕрĕ-ха пиччу, те тахçанах пуçне хунă,— терĕ ăна хирĕç амăшĕ пăшăрханса.— Шанмастăп ĕнтĕ...

Çапах та, инçетри тупă сассисене вăл тула тухсах итлерĕ.

— Чăнах переççĕ... Пирĕннисемех пулмалла. Турă вăй патăрах пирĕн салтаксене çак усал тăшмана çапса хуçма!

— Ан хăра, вăй çите-ет!— хăй çапăçма каяс пек аллисене сăтăркаласа илчĕ Сенька.— Қурăн акă, епле çĕмĕрсе килĕç!

Инçетре снарядсем ӳке-ӳке çурăлнине вĕсем чылай хушă итлесе тăчĕç.

— Мĕншĕн çывăрмастăр? Мĕн тума урамра тăратăр?— кĕтмен çĕртен кăшкăрса пăрахрĕ вĕсене таках çав вăхăтра.

Вĕсем патне икĕ нимĕç салтакĕпе ялти полицейски— ĕлĕк лаша вăрри пулнă Васька-Вор пырса тухрĕç.

— Эсир çак таранччен те пурнăç йĕркисене пĕлмеестĕр-им? Е саламат тутанса пăхас килет-и?— хаяррăн пăхрĕ Сенькăпа амăшĕ çине Васька-Вор.— Хĕвел аннă хыççăн никамáн та урама тухма юрамасть вĕт!

— Қаçарăр...— Сенька амăшĕ шуралсах кайрĕ.— Пĕр чăх пур та пирĕн, çав таçта кайнă...

— Қăтартăп сире чăх! Хĕрлисене кĕтетĕр пулĕ-ха?— Вăл аллинчи туйине выляткаласа илчĕ.

— Ăçтан килччĕр ĕнтĕ вĕсем... Асра та çук...

— Пĕлетпĕр сирĕн асра мĕн пуррине! Анчах та эсир кĕтни кăлăхах пулать, хĕрлисене нимĕçсем каллех Мускав патнелле хăваласа кайнă, часах акă Мускава та илеççĕ вĕсем! Марш киле!

Васька-Вор чышкипе юнаса илчĕ. Сенькăпа амăшĕ ăна хирĕç тек нимĕн те каламарĕç, килелле кĕчĕç.

— Хăçан хăтăлăпăр-ши ку шуйттансенчен!—хурлăхлăн сывласа илчĕ амăшĕ.

— Часах ĕнтĕ, часах...— каллех хавхалантарчĕ ăна Сенька.— Нумай юлмарĕ кĕтмелли...

Вĕсем тĕрлĕ курăксенчен пĕçернĕ тăварсăр симĕс шӳрпе сыпкаларĕç те çывăрма выртрĕç. Тĕлĕкре Сенька питĕ телейлĕ пулчĕ: ĕнтĕ яла Хĕрлĕ Çар çитсе кĕнĕ пек, пĕтĕм халăх савăнать, совет салтакĕсем ял çыннисенчен нимĕçсем вăхăтĕнче епле тӳскелесе пурăнни çинчен ыйтаççĕ, Сенькăна тутлă çемçе çăкăрпа хăналаççĕ... Сенька çиет, çиет, анчах ниепле те тăранаймасть. Лешсем ăна çаплах:

— Çи, çи, пирĕн нумай халь, пурне те çитет,— теççĕ...

...Ир енне вăл снарядсем çывăхрах çурăлнине илтнипе вăранса кайрĕ. Пăхать — амăшĕ çук. Часрах урама сиксе тухрĕ. Хĕвел халь çеç хĕрелсе хăпарма тытăннă-мĕн-ха, курăк çине çăра çутă сывлăм выртнă — кашни пусмассеренех йĕр пулса юлать.

— Анне!— кăшкăрчĕ Сенька.

— Мĕн? Кунта эпĕ!— урамри нӳхрепрен сас пачĕ амăшĕ.

— Мĕн тăван эс унта?

— Апăр-тапăрсене пухса нўхрепе антаратăп-çке, пушар пулсан ахалех çунса каяççĕ...

— Э-э, тупнă ĕç!— мăн çын пекех аллипе сулчĕ Сенька.— Пуç сывă пултăр!

Снаряд ял вĕçĕнче, Вазуза хĕрринче, ўксе çурăлчĕ. Тепри пулсан çак самантра часрах пытанса лармалли вырăн шырамалла, анчах Сенькăн чĕри нихçанхинчен те хаваслăрах тапма пуçларĕ те, вăл снарядсем ўкнĕ еннелле чупрĕ. Унăн халь ял патнелле çывхарма пулгаракан совет салтакĕсене курасси килчĕ. Паллах ĕнтĕ, çурăлакан снарядсем—совет снарячĕсем пулнă, вĕсем хыççăн хамăрăн боецсем килме тивĕç. Часрах курасчĕ вĕсене, часрах кĕтсе илесчĕ!

Вăл каллех ĕнер тавралăха сăнаса тăнă вырăна чупса çитрĕ. Улăхра никам та курăнмарĕ, анчах та унта та кунта мăкăрланса тăракан фашистсен дзочĕсем тавра шĕнче снарядсем ўке-ўке çурăлни аванах курăнчĕ. Акă, вĕсенчен пĕрине снаряд тĕп-тĕрĕс пырса тиврĕ те, вăл сывлăшалла сирпĕнчĕ. Самантранах тепри арканса кайрĕ.

— Çав кирлĕ! Çавă чух!— тесе савăнса тăчĕ Сенька.

Сасартăк вăл Вазузăн леш енчи çыранне пăхрĕ те унта нимĕç салтакĕсем упалене-упалене темскер ĕçленине курчĕ. Сахалтан та пĕр 20—25 салтак пулĕ. Хăвăрт кăна ăшăх шăтăк алтаççĕ те унта темле япала илсе хураççĕ, кайран çиелтен çĕрпе витеççĕ. Питĕ васкаса éçлеççĕ хăйсем. Чугун çул енчен снаряд шăхăрса килни илтĕнсен, çĕр çумне лăпчăнса выртаççĕ, унтан каллех чакаланма тытăнаççĕ.

— Мĕн мурĕ тăваççĕ кусем капла?— ăнланаймасăр тăчĕ Сенька.

Вăл çул тăрăх çырманалла икĕ лаша кўлнĕ нимĕçсен лавĕ аннине асăрхарĕ. Лавĕ çине туллиех çатма пек çаврака симĕс коробкăсем тиенĕ.

— Аха-а! А-авă мĕн!..— тавçăрса илчĕ те Сенька,

пуçне кăтăртаттарса хыçса илчĕ.— Минăсем лартаççĕ, шуйттан фрицĕсем! Хĕрлĕ Çара минăсем ларгнипе чарасшăн!

Мина мĕн иккенне Сенька пит лайăх пĕлнĕ... Шутсăр сиенлĕ япала вăл! Çиелтен пăхма ахаль лаптак коробка кăна хăй, анчах ун ăшне сиктерсе яракан япаласем туллнех тултарнă. Çĕре кăшт кăна алтса, ăна курăнми туса хураççĕ те, ун çине кам та пулин пырса кĕрсен вара — чĕррĕн юлаймасть. Çынсене çеç мар, танксене те çĕмĕрсе сывлăшалла сирпĕнтерет вăл. Хĕрлĕ Çар кунталла çывхарнă май фашистсем халь Сенькăсен ялĕ патнелле пымалли çулсем çине те, шыв хĕррине те минăсем лартнă.

— Капла мĕн пулса тухать-ха?— хыпăнма пуçларĕ Сенька.— Пирĕннисем килеççĕ те ял патне çитиччен пурте минăсем çине тăрăнса вилсе пĕтеççĕ вĕт!

Темиçе самант хушши вăл ним тума аптраса тăчĕ, унăн чĕри пăлханса кайнипе хытăран хытă тапма пуçларĕ.

— Пире çăлма килекенсене вĕлереççĕ вĕт ку шуйттан япалисемпе!

Вазуза леш енче снарядсем тата çăрарах ӳкме пуçларĕç. Мина лартакан фашистсем, кĕпер урлă каçнă лав патне чупса пырса, хайхи симĕс коробкăсене тата хытăрах васкаса çĕклеме тытăнчĕç. Пĕрисем çĕклесе каяççĕ, теприсем çĕре чава-чава хураççĕ. Акă ĕнтĕ минăсене кĕпер патне лартма тытăнчĕç,— кашни утăмрах лартаççĕ. Леш енче лартса тултарсан, ку енче лартма пуçларĕç. Пĕр вунпилĕк-çирĕм минут хушшинче лав çинче пĕр мина та юлмарĕ. Унтан вара салтаксем пурте тăвалла чупса хăпарчĕç те, çуртсем хушшинелле кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç.

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас?!— çаплах татăклă шут тăваймасăр хыпăнса тăчĕ Сенька.— Çула пĕтĕмпех картларĕç, кунтан халь пĕр боец та иртеймест...

Вăл çапла шухăшларĕ кăна — Вазуза леш енчи сăрт

хысакӗ енчен вунӑ-вуникӗ танк — паллах, совет танкӗсем! — шуса тухрӗҫ. Вӗсем, пӗр харӑсах секундлӑха чарӑнса тӑрса, тупписенчен Сенькӑсен ялӗ ҫинелле печӗҫ, снарядсем Сенькӑн пуҫӗ ҫийӗпех ӳлесе иртсе кайрӗҫ, унтан малалла ыткӑнчӗҫ. Вӗсем кӗмсӗртетни таҫта ҫитиех илтӗнчӗ.

Сенькӑн сывлӑшӗ тухми пула пуҫларӗ.

Танксем ҫывхарса килнӗ май, Сенька вӗсем ҫинче темӗн чухлӗ боецсем ларнине асӑрхарӗ. Вӗсем ӗнтӗ Сенькӑна, унӑн амӑшне, вӗсен ялӗнчи пур совет ҫыннисене те фашист тискерӗсен пусмӑрӗнчен хӑтарма, вилӗмрен ҫӑлма кӗрлеттерсе пынӑ, анчах ял патне ҫитсен — вӗсен ҫулӗ татӑлма пултарнӑ.

— Пӗтеҫҫӗ вӗт... Пурте пӗтеҫҫӗ!.. — пӑшӑлтатса илчӗ Сенька.

Текех шухӑшласа тӑма юраман. Халь кашни самант хаклӑ пулнӑ: часах танксем те, вӗсем ҫинчи десант та минӑсем ҫине пырса кӗресси курӑнсах тӑнӑ.

— Пӗлтерес! Хуть те тем пулсан та ҫитсе пӗлтерес вӗсене! — терӗ те вара Сенька, сӑртран чупса анса, йывӑҫ тӗмӗсем, май таран ӳснӗ курӑксем хушшипе, шыв хӗррипе аналалла вӑркӑнса пычӗ, унӑн сарӑ вӑрӑм ҫӳҫӗ ҫеҫ вӗлкӗшрӗ.

— Ишсе каҫатӑп та ав ҫав пӗчӗк варпа чупатӑп. Унта мина пулма кирлӗ мар... — шут турӗ вӑл.

Унӑн аллисене, питне-куҫне вӗлтрен пӗҫертрӗ, ҫара урисене пӗлтӗрхи курӑксем тирчӗҫ, анчах ӑна халь ним те чарса тӑма пултараймарӗ.

— Часрах ҫитесчӗ кӑна, часрах пӗлтересчӗ... Минӑсем ҫине пырса кӗме парас марччӗ!

Питӗ хытӑ чупса, шӑпах шоссе кӗперӗпе ҫуллахи кӗпер хушшине ҫитсен, Сенька пӗр йывӑҫ тӗмӗ хыҫӗнчен сиксе тухрӗ те сасартӑк курӑк ӑшӗнче пӗшкӗнсе ларнӑ ҫын ҫурӑмне курах кайрӗ. Ку ытла та кӗтмен ҫӗртен пулнипе тӑпах чарӑнса тӑчӗ вӑл. Ҫав вӑхӑтрах унӑн сылтӑм алли хӑй кӗсйинчи пистолетне ҫавӑрса тытрӗ...

Тепĕр самантĕнче çав пĕшкĕнсе ларнă çын пуçне çаврчĕ те вăштах сиксе тăчĕ. Ку çын — Васька-Вор, хайхи полицейски, каçхине Сенькăпа амăшне урамран хăвалаканни пулнă-мĕн...

Урнă кашкăр пекех пăхрĕ вăл Сенька çине.

— Эс... эс мĕн шыраса çӳретĕн кунта, йытă çури?— терĕ те вăл, çăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса, Сенька патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ.

— Эс мĕн шыратăн, эпĕ те çавнах шыратăп,— терĕ Сенька, пистолетне тата хытăрах чăмăртаса.

— Хĕрлисене кĕтетĕн, коммунист чĕппи! Ак эпĕ сана!..— Васька-Вор сылтăм аллипе часрах пистолет кабурне вĕçертме пикенчĕ, анчах та вăл пистолетне туртса кăлариччен Сенька ăна шăпах кăкринчен тĕллесе персе ячĕ. Васька-Вор «ы-ы-ых!» теме çеç ĕлкĕрчĕ, унтан çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ...

Сенька текех пĕр самант та тытăнса тăмарĕ. Калама та çук хытă пăлханса кайнăскер вăл шыва сикрĕ те тепĕр еннелле ишме тытăнчĕ. Хăмăшсем ăшĕнчен тухса Вазуза варрине çитсен, кая юлнă çыран енчен автомат сасси илтĕнсе кайрĕ...

— Чăк-чăк! Чăк-чăк!— шыва пырса тирĕнчĕç пульăсем.

— Мана переççĕ! Хăшĕ те пулин курнă ĕнтĕ... Е эпĕ пенине илтсе чупса тухнă-и... —хăвăрт кăна шухăшласа илчĕ Сенька.— Ултталас пулать кусене...

Хăйне çине-çинех персе тивертесрен Сенька чееленме шут тытрĕ. Чипер ишсе пыраканскерех вăл шыв тĕпнелле чăмса анса кайрĕ те малтанхи вырăнтан анатра пуçне кăларчĕ. Анчах çӳлтен перекенни ăна каллех шыраса тупрĕ пулас, пульăсем каллех чаклатрĕç шыв çине.

— Тытасшăн, анчах... Анчах тытаймастăн!..

Сенька каллех чăмрĕ те, пĕтме пуçланă мĕнпур вăйне пухса, леш енчи хăмăшсем патне çитиех чăмса пычĕ. Кунта ĕнтĕ ăна никам та курма пултарайман. Çыран патне шăмпăртатса çитсен, чĕри сиксе тухас пек тапни-

пе, пĕр вăй та юлманнипе унăн сывлăш çавăрмалăх месерле тăсăлса выртмалла пулчĕ. Анчах ик минут та иртмерĕ пулĕ, вăл каллех сиксе тăчĕ те, паçăрах сăнаса хунă пĕчĕк лупашка тăрăх улăха тухса, çывхарсах килекен танксем еннелле кăшкăра-кăшкăра чупрĕ:

— Чарăнăр!.. Э-эй, ан кайăр, тăхтăр-ăр!..

Танксем унран чылай аякра пулнă-ха, анчах ăна асăрхарĕç: çӳлте ларса пыракан салтаксем йĕри-тавра хытă сăнаса пынă пулас. Малти танкĕ тăпах чарăнса тăчĕ. Сенька ун патне çитесси пĕр çĕр аллă метр юлсан, танк çинчен темиçе салтак сиксе анса ăна хирĕç чупрĕç.

— Мĕн пулнă? Ăçта чупатăн?— тесе ыйтрĕ Сенька патне пуринчен малтан ыткăнса çитнĕ çӳлĕ сержант.

— Сирĕн пата... Сире пĕлтерме,— аран сывласа илчĕ Сенька.— Минăсем нумай лартрĕç, пĕтетĕр...

— Хăш тĕлте?

— Çул çинче, кĕпер патĕнче, шыв хĕрринче...

— Атя-ха эппин пирĕн командир патне!

Çӳлĕ сержант тата унпа пĕрле чупса пынă ытти боецсем те ура çинче аран тăракан Сенькăна хулĕсем айĕнчен тытса танксем патне илсе кайрĕç. Сержант çавăнтах танк çинчен сиксе аннă майора пĕлтерчĕ:

— Çак ача каланă тăрăх, фашистсем кунта мина нумай лартнă, иртме çук! Ăçта лартнине тĕплĕрех ыйтса пĕлес пулать...

Майор васкасах Сенька умне пырса тăчĕ:

— Минăланă вырăнсене кăтартса пама пултаратăн-и?

— Пултаратăп,— терĕ Сенька,— эпĕ пĕтĕмпех курса тăтăм... Çавăнпа чупса килтĕм, пĕлтерес терĕм.

— Тавтапуç, ывăлăм! — ăна ыталаса чăмăртарĕ майор.— Эсĕ кăна чăн-чăн патриот пек тунă! Тем пама хатĕр эпĕ сана куншăн!

— Мана ним те кирлĕ мар,— пуçне пăркаларĕ Сенька.— Эсир хăвăр килни маншăн нимрен те хаклă...

...Сенька кăтартса панипе красноармеец сапeрсем ик-

çĕр мина ытла чавса кăларчĕç. Тепрер сехетрен яла пырса кĕмелли çул пĕтĕмпех тасалса çитрĕ, анчах боецсем хăйсен мина шыраса тупмалли хатĕрĕсемпе халь çеç тасатнă вырăнсене тата тепĕр хут тĕрĕслеме тытăнчĕç...

— Ансăртран пĕри юлнă пулсан та, сиен тума пултарать!

Çав хушăра Сенька хайхи Васька-Вор çинчен аса илчĕ. Питĕ пĕлес килчĕ халь унăн: вилмеллипех вилнĕ-ши вăл бандит, е аманнă кăна-ши? Лекесси лекнех ентĕ, ахальрен ÿкес çук вăл...

— Атя-ха çавăнта, пĕр çĕре кайса килер йăпăрт,— терĕ вăл боецсене ертсе пыракан сержанта.— Пĕр интерес пулма пултарать...

— Мĕнле интерес?

— Пĕр çын... Çук, çын мар, полицейски пулма кирлĕ...

— Аçтан пĕлетĕн?

— Хам персе ÿкернĕ япалана епле пĕлместĕп вара?

— Епле персе ÿкертĕн, хăçан?

Сенька ăна кĕскен кăна паçăр ĕç мĕнле пулса иртни çинчен каласа кăтартрĕ. Çамрăк ачан паттăрлăхĕнчен тĕлĕнсех кайнă сержант вара хапăл тусах пычĕ унпа пĕрле.

Васька-Вор малтан мĕнле ÿкнĕ — çаплипех выртать иккен. Урăх хускалайман та вăл, пуля ăна питĕ тĕрĕс пырса тивнĕ курăнать. Сержант унăн пистолетне илсе чикрĕ, кĕсйине ухтарса пăхрĕ те юлашкинчен хăй çине лач! сурчĕ.

— Ирсĕр! Çав кăна кирлĕ ун пеккисене!

Унтан вăл сасартăк курăк ăшĕнче тăрăхларах сарă ещĕк выртнине асăрхарĕ.

— Чим-ха, ку мĕскер?— тесе кукленчĕ вăл ун патне.— Ара, ку взрывчатка вĕт, сиктерсе яракан япала! Тем тесен те, вăл çав кĕпере сиктерсе ишĕлтересшĕн пулнă, урăх ним те мар! Ах, прохвост!

Сенька та ун шухăшĕпе килĕшрĕ. Шоссе çинчи кĕперсĕр пуçне ку таврара сиктерсе ямалли нимĕн те пулман.

...Танксем, кĕпер урлă чип-чиперех каçса, яла хăпарчĕç. Фашистсем унччен тухса тарнă пулнă та, ял çыннисем танкистсене хирĕç çав тери савăнăçлăн чупса тухрĕç. Асаплă пурнăçпа пурăнса ырханланса çитнĕ çынсен куçĕсем хаваслăн çутăлчĕç, вĕсем, хăйсене ирĕке кăларакансене тем пекех тав туса, ытала-ытала чуптурĕç. Хăй тĕллĕнех митинг пуçланса кайрĕ.

Паçăр Сенькăран минăсем çинчен ыйтса пĕлнĕ майор, халăх хăйсене çакăн пек ăшшăн йышăннăшăн тав туса, хĕрӳллĕ сăмах пуçларĕ. Вăл хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар хăватлă наступлени туса пыни çинчен, тăван çĕршыв часах тăшманран тасалса çитесси çинчен, унтан пурин те Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пымалли çинчен каларĕ.

— Ку тĕлĕшрен сирĕн ял ачи Сеня Горохов пеккисенчен пример илес пулать,— терĕ майор.— Сеня Горохован пиччĕшĕ те питĕ паттăр воин, фашистсене хирĕç çав тери паттăр çапăçнăшăн икĕ орден илчĕ ĕнтĕ, ăна эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр, вăл пирĕн чаçрех, анчах Сеня та пиччĕшĕнчен юлмасть иккен...

Халăх шăп пулчĕ. Хĕрлĕ Çар офицерĕ хăйсен ялĕнчи çынсем çинчен калаçма тытăнни халăха тĕлĕнтерсех ячĕ, çавăнпа та майор сăмахĕсене сывлама чарăннă пекех шăп тăрса итлерĕç.

— Паян çав çамрăк патриот Сеня Горохов хăй пурнăçне шеллемесĕр пире наступление хăвăртлатма пулăшрĕ... Хăйне персе тăни çине пăхмасăрах, шыв урлă ишсе каçса пирĕн пата чупса çитрĕ, нимĕçсем минăланă вырăнсем çинчен пĕлтерчĕ. Ăна пула, эпир ним сиен те курмарăмăр. Çав вăхăтрах тата Сеня Горохов, сирĕнтен мăшкăлласа пурăннă Васька-Вора персе пăрахса, мăн çул кĕперне ишĕлтересрен хăтарнă. Çак паттăр ĕçсене шута илсе, командовани ячĕпе Сенькăна эпĕ «За боевые заслуги» медальпе наградăлатăп...

Такамăн вăйлă аллисем Сенькăна çĕклесе, танк çине хăпартса тăратрĕç, майор ун кăкри çине çап-çутă медаль çакса ячĕ.

Пĕтĕм халăх хавасланса алă çупрĕ. Сенька, кăштах вăтаннă пек пулса, танк çинче кулкаласа тăчĕ, хăй çав вăхăтрах куçĕсемпе амăшне шырарĕ.

— Курать-ши вăл мана?

Анчах амăшĕ ăна вăл танк çине хăпарсанах курнă, ывăлĕ çине пăхнă май, унăн куçĕсенчен савăнăç куççулĕ юхнă, ватă чĕри çĕнĕ вăйпа тулса тапма тытăннă.





## СЕНКЕР МОДЕЛЬ

Темиçе çул каялла, кĕр енне, пĕр лăпкă, хĕвеллĕ ирхине, эпĕ Шупашкарăн Хĕрлĕ площадьне тухрăм та хаçат сутакан киоск умĕнче хамăн фронтри тусăма, Ылтăн Çăлтăрлă летчик-капитана тĕл пултăм. Эпир пĕр-пĕринпе юлашки хут курнăранпа пĕр виçĕ çул иртнĕччĕ те, халĕ çакăн пек ăнсăртран тĕл пулнăшăн иксĕмĕр те çав тери савăнса кайрăмăр.

— Салам, Семен Ильич! Хăçан килсе тухрăн тăван çĕршыва? Еплерех пурăнатпăр?—Геройăн аллине чăмăртаса, ыйту çине ыйту пама тытăнтăм эпĕ.



— Салам, салам, тусăм! Пурнăçĕ лайăх-ха, пĕр-ик эрнелĕх отпуска килтĕм, аннене кайса курасшăн,—терĕ вăл.

— Питĕ аван ку, ватăсене хисеплес пулать... Паянах каятăн-и вара? Тен, пĕр-ик кун пурăнатăн пирĕн патăрта?

— Хальлех каясшăнччĕ те-ха, тытса чарчĕç.

— Камсем?

— Ачасем.

— Мĕнле ачасем?— тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Пионерсем,— терĕ капитан.— Эпĕ килни çинчен таçтан пĕлнĕ те, ирхине сакăр сехетрех гостиницăна пĕр вунпиллĕкĕн кĕпĕрленсе пычĕç. Паян пирĕн авиамоделистсен ăмăртăвĕ пулать, сире курма пыма чĕнетпĕр, эслă судья пулма ыйтатпăр, пымасан — кӳренетпĕр, теççĕ. Нимĕн тума та çук — килĕшмелле пулчĕ, пыратăп тесе сăмах патăм...

Вăл аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ.

— Каймалла ĕнтĕ, тăхăр сехет... Вĕсен ăмăртăвĕ вуннăра пуçланмалла терĕç.

— Манăн хамăн та пырас мар-и санпа?— терĕм эпĕ.— Паян вырсарникун, ĕçе каяс çук...

— Питĕ аван! Унтан таврăннă май сан патна кĕрсе тухма та пултаратпăр,— терĕ Семен Ильич.— Кайса курар, мĕнле смена ӳсет пирĕн. Ачасем нумайăшĕ летчик пулма ĕмĕтленеççĕ вĕт-ха...

— Тĕрĕс.

— Кайрăмăр!

Эпир Карл Маркс урамнелле пăрăнса гостиница еннелле утрăмăр. Сасартăк горн сасси илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, параппан танкăртатни илтĕнчĕ. Тăвалла пăхрăмăр та, хамăра хирĕç пĕр аллă-утмăл пионер, тĕрлĕрен авиамодельсем çĕклесе, стройпа аннине куртăмăр.

Урамри çынсем вĕсем çине чарăна-чарăна тăрса пăхса юлаççĕ. Эпир те тротуар хĕрринче чарăнса тăтăмăр. Пирĕнпе танлашсан (летчик-героя курнипе пулас ĕнтĕ), малта пыракан пионерсенчен пĕри, сенкер сăрпа сăрланă пысăк модель çĕкленĕскер, хавассăн юрласа ячĕ.

Все выше, и выше, и выше...

Çав самантрах ун çумне ыттисем те хутшăнчĕç:

Стремим мы полет наших птиц,
И в каждом пропеллере дышит
Спокойствие наших границ...

Пĕтĕм аслă урам ачасен хаваслă сассисемпе янраса кайрĕ.

— Маттур ачасем...— терĕ Семен Ильич, çамрăк авиамоделистсем çине кăмăллăн пăхса.— Тупата, чун савăнать вĕсене курсан! Ахаль те ачасене эпĕ питĕ юрататăп та...

Тепĕр çур сехетрен эпир гостиница умне пырса тăнă йăм-хура автомобиль ăшне кĕрсе лартăмăр та аэродрома вĕçтертĕмĕр...

...Авиамоделистсен ăмăртăвне курма хулари ачасем çеç мар, мăннисем те пайтах пынăччĕ. Вĕсем пурте, ăмăрту пуçланасса кĕтсе, пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса тăратчĕç.

Шăп вунă сехетре, команда тăрăх, ăмăрту пуçланчĕ. Сывлăша пĕрин хыççăн тепри самолет моделĕсем хăпарма пуçларĕç. Пит те илемлĕччĕ вĕсем сывлăшра: шурă, сарă, кăвак, хĕрлĕ, сенкер...

Малтан ахаль модельсене вĕçтерчĕç, унтан вара бензинпа ĕçлекен пĕчĕк мотор лартнă модельсене яма хушакан команда илтĕнчĕ.

— Кусем интереслĕрех пулма кирлĕ,— терĕ манпа юнашар тăракан Семен Ильич.— Ку ĕнтĕ — техника...

Сывлăша умлăн-хыçлăн 10—12 модель вĕçсе хăпарчĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ тӳрех паçăр хула урамĕнче юрă пуçласа янă ача аллинче пулнă сенкер моделе асăрхарăм.

— Ытла та пысăк-ха ку, йывăрскер, инçех вĕçеймест пулĕ...— шухăшларăм эпĕ ун пирки.

Анчах та эпĕ йăнăшнă иккен. Сенкер модель хăпарнăçемĕн хăпарса пычĕ, хăвăртран хăвăрт кайма пуçларĕ. Темиçе минутран вăл ытти модельсене хыçала пăрахса хăварчĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çĕре ана-ана ларчĕç, анчах сенкер модель çаплах-ха малалла вĕçрĕ.

— Пăх-ха, епле кайрĕ вăл!— терĕм эпĕ Семен Ильича.— Чăн-чăн самолет пек ярăнтарса пырать, э?

— Пит аван!— терĕ вăл, çӳлелле пăхса.

Эпир çеç те мар, аэродромри пур çынсем те халь çав сенкер модель çине кăна пăхрĕç. Ытти модельсем ĕнтĕ пурте çĕре ларса пĕтрĕç, анчах ку — малтан мала, инçетрен инçете, Атăл еннелле ярăнса пычĕ. Курса тăракансем — пуринчен ытла ачасем — куç умĕнчех пĕчĕкленсе пыракан модель çине кăтартса аллисемпе сулкалама, савăнăçлăн кăшкăрма тытăнчĕç.

— Ка-айрĕ ку!..

— Атăл урлах вĕçтерчĕ!

Çав хушăрах вĕсенчен нумайăшĕ модель хыççăн чупрĕç. Анчах тахăшĕ вĕсене çавăнтах:

— Ан чупăр пустуй, пурпĕр çитейместĕр!— тесе кăшкăрчĕ.

Эпĕ Семен Ильич çине пăхса илтĕм. Вăл куçран çухалма пуçланă моделе пĕчĕк бинокль витĕр сăнаса тăрать иккен.

— Пĕлесчĕ, кам моделĕ-ши ку?— терĕ вăл, тепрер минут пек пăхса тăрсан.— Çав тери лайăх каять...

— Пирĕн ача тунă ăна,— терĕ пирĕн хыçра тăракансенчен пĕри.

Семен Ильичпа иксĕмĕр те пĕр харăсах каялла çаврăнса пăхрăмăр та куçлăх тăхăннă, кукша пуçлă, ватăрах лутра çынна куртăмăр.

— Мĕнле сирĕн ача? — ыйтрĕ Семен Ильич.— Ывăлăр-и?

— Çук, ман ывăл мар, пирĕн детдом ачи, Миша Чоботов. Ашшĕ-амăшĕ çук унăн. Хĕрĕх виççĕмĕш çулта вăл пирĕн пата Белоруссирен килчĕ. Ачи сахал мар хурашур курнăскер. Вилĕмрен партизансем хăтарнă ăна. Пысăк Çĕр çине самолетпа ăсатса ячĕç, тет. Çавăнпа авиацишĕн çунать, летчиксене никамран та мала хурать...

Семен Ильич çак куçлăхлă çын çине чăр-р... пăхрĕ. Темшĕн унăн сăнĕ тăруках улшăннă пек туйăнчĕ мана. Вăл пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан сасартăк:

— Белоруссирен килнĕ тетĕр-и?— тесе ыйтрĕ.

— Çавăнтан. Бобруйск патĕнчен, тет.

— Ăна хамăр енне самолетпа ăсатнă, тет-и?

— Самолетпа, тет. Фронт урлă каçнă чух летчикне амантнă, анчах та вăл пит паттăрскер пулнă, тет те, кусене хамăрăннисем патне пурпĕрех илсе çитернĕ, тет...

— Интереслĕ ку...— терĕ манăн тус, сăмахне тăсса. Унтан шухăша кайнă пек пулса тăчĕ те кукша пуçлă çынтан:

— Эсир хăвăр кам пулатăр?— тесе ыйтрĕ.

— Детдом директорĕ,— терĕ лешĕ.

— Вăл ачи хăй кунта-и?

— Кунтах. Модельне вăл хăех тапратса ячĕ...

— Кайран эсир мана унпа паллаштарăр-ха... Маттур ача пулма кирлĕ пек туйăнать вăл мана.

— Тархасшăн, тархасшăн! Кăмăлăр пулсан, халех чĕнсе килме пултарăп!— терĕ директор.

Летчик-офицер, Совет Союзĕн Геройĕ çамрăк авиамоделиста курма кăмăл туни ăна калама çук хумхатса ячĕ пулас. Вăл хăйĕн хĕсĕкрех куçĕсене час-часах мăчлаттарса, кукша пуçне сăмса тутрипе сăтăркаласа илчĕ те сăмах вĕçĕсене çăта-çăтах каласа пама тытăнчĕ.

— Тĕлĕнмелле ача вăл, пирĕн Миша... Тĕлĕкре те самолет курать пулмалла. Летчиксене юратса каçсах каять. Койки тĕлĕнче унăн, стена çумĕнче, пур паллă летчиксен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ. Чкалов, Громов, Талалихин, Гастелло... Хамăрăн Федот Орловăн сăнне те хаçатран касса кăларса çыпăçтарнă. Йăнăшмастăп пулсан...— Детдом директорĕ Семен Ильич çине куçлăхĕ витĕр тинкеререх пăхса илчĕ.— Сирĕн сăнăр та пурччĕ пулас-ха унта. Эсир Совет Союзĕн Геройĕ Ильин юлташ пулатăр вĕт-ха?

— Çавă,— ответ патăм эпĕ Семен Ильичшăн.

— Во, во... Эпĕ хам сире куçкĕретĕн нихçан та курман, анчах фотографисем тăрăх палласа илтĕм. Тĕрĕс, тĕрĕс, сирĕн сăнăр та пур пирĕн Мишăн...

Çав вăхăтра, ăмăрту пĕтнине пĕлтерсе, горнист отбой парса кăшкăртса илчĕ. Унта та кунта командăсем, пионерсене пĕр çĕре пухăнма хушнисем илтĕнчĕç. Пирĕн пата пĕр тулли питлĕ комсомолка-вожатăй чупса пырса тăчĕ. Аллине вăл флажок тытнăччĕ.

— Семен Ильич,— терĕ вăл Героя,— ăмăрту результачĕсене хулара, Пионерсен Çуртĕнче пĕлтеретпĕр, призсене те унтах паратпăр. Эсир пыратăр пуль? Призсене эпир сире партарасшăн тата ачасемпе хăйсемпе кăштах калаçтарасшăн...

— Юрать, пыратăп,— яштах тӳрленсе тăрса честь парса илчĕ Семен Ильич. Унтан çавăнтах детдом директорĕ еннелле çаврăнчĕ те:

— Ну, ăçта сирĕн Миша?— терĕ.

— Çавăнта пулма кирлĕ,— пирĕнтен пĕр çĕр метрта пухăнса тăнă пионерсен ушкăнĕ еннелле кăтартрĕ директорĕ.— Каяр-и?

— Атьăр.

Эпир пурсăмăр та пионерсем патнелле утрăмăр. Директор каллех Миша çинчен калама тытăнчĕ.

— Пĕтĕм авиаци историне пĕлет вăл. Тинĕс офицерĕ Можайский мĕнле çын пулнă?— тесен, тӳрех каласа парать: тĕнчери чи пирвайхи аэроплана тăваканни, вырăс çынни, тет. Авиаци историнче чăн малтан нумай моторлă самолет тăваканни кам?— тесен: вырăс конструкторĕ Сикорский, тет. Чăн малтан сывлăшра «мертвая петля» тăвакан летчике, Нестеров капитана та, пит аван пĕлет, унăн сăнне те таçтан тупнă. Аслă ача... Ĕненмелле те мар...

— Ма ĕненес мар? Пит те ĕненетпĕр,— терĕм эпĕ, директор кăмăлне хуçасран шикленсе, мĕншĕн тесен вăл çав эпир палламан ачана калама та çук юратни унăн кашни сăмаххинчен палăрса тăчĕ.

Семен Ильич чĕнмерĕ, вăл тем çинчен таран шухăша кайса пынă пек туйăнчĕ.

Темиçе минутран эпир строя тăнă пионерсем патнелле пытăмăр. Витĕрех курайман директор тӳрех унăнкунăн пăхкалама тытăнчĕ.

— Миша! Чоботов!— кăшкăрчĕ вăл.

— Эпĕ!— илтĕнчĕ ăна хирĕç янравлă сасă.

— Кил-ха кунта!

— Вожатăй ирĕк памасăр стройран тухма пултараймастăп,— ответ пачĕ ача.

— Сан патна çынсем килчĕç,— терĕ директор.

— Пурпĕрех тухма пултараймастăп. Хушман.

Çав самантрах колоннăн тепĕр енчен пур ачасем пекех майне хĕрлĕ галстук çыхнă сар çӳçлĕ хĕр çаврăнса тухрĕ.

— Миша Чоботов кирлĕ-и сире? Халех, директор юлташ,— терĕ те вăл, çавăнтах:— Чоботов, стройран тух!— тесе кăшкăрчĕ.

Пирĕн умма шурăрах çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлă, шĕвĕртерех сăмсаллă, çав тери кăмăла каймалла сăнлă 13—14 çулхи арçын ача тухса тăчĕ. Эпир пурте ун çине пăхнă пирки вăл именчĕ пулас, пуçне чикерех çĕрелле пăхрĕ те галстук вĕçне пĕтĕркелеме тытăнчĕ.

— Ан вăтан,— терĕ ăна директор,— санпа Совет Союзĕн Геройĕ калаçасшăн... паллаш...

Миша Семен Ильич çине пăхса илчĕ те пушшех хĕрелсе кайрĕ. Паллах ĕнтĕ, хăйĕнпе çакăн пек летчик-герой калаçасса кĕтмен вăл.

— Здравствуй, Миша!— çемçен кулса алă тытрĕ ăна Семен Ильич.— Амăртура çĕнтернĕ ятпа саламлас терĕмĕр сана. Савăнтартăн эс паян пире!

Миша унăн аллине хăюсăррăн тытса чăмăртарĕ.

— Спасибо.

— Аçта кайрĕ-ха ĕнтĕ санăн модель? Çухалчĕ-и?

— Çухалман... Атăл леш енне, хăйăр çине ларнă. Ана илме кайрĕç,— терĕ Миша.

— Пуринчен те инçерех вĕçнĕ эппин вăл санăн, э?

— Çапла пулчĕ пулмалла...— Миша каллех именсе çĕрелле пăхрĕ, анчах хăйĕн тутисем кулса илчĕç.

— Маттур! Çавăн пек кирлĕ те...

Семен Ильич ăна çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ.

— Атя-ха ав çав йывăç айне, машинăсем тăнă çĕре, кайса ларар... Каласăпăр санпа. Ак çак çын... (Семен Ильич ман еннелле кăтартрĕ) сан çинчен хаçата çырасшăн пулмалла...

— Мĕн тума?— тĕлĕнчĕ Миша.

— Ытти ачасем санран пример илччĕр, сан пекех лайăх модельсем туччăр, ӳссен летчиксем пулма хатĕрленччĕр. Эсĕ ху та летчик пуласшăн вĕт-ха, çапла-и?

— Çапла...— терĕ Миша шăппăн.

Эпир аэродром хĕрринчи пĕр вată çăка айне вырнаçса лартăмăр.

— Ну, Миша, каласа пар ĕнтĕ ху çинчен,— терĕ Семен Ильич, ачана хăй çумнерех лартса.— Ăçта çуралнă эсĕ, мĕнле пурăннă, кунта мĕнле килнĕ, мĕнле вĕренетĕн, мĕне ытларах юрататăн...

— Вĕренессе вăл отлично вĕренет-ха,— терĕ детдом директорĕ васкаса, Миша йăнăш каласран хăранă пек пулса.

Ача тăруках чĕнмерĕ. Вăл палăрмаллах пăлханса, сăмахне пуçлаймасăр, пирĕн çине пăхмасăр, сарăхма пуçланă вăрăм курăк тăррисене таткаласа ларчĕ.

— Каласам ĕнтĕ, кĕттерме аван мар,— васкатрĕ ăна директор.— Ăçта çуралса ӳснĕ-ха эсĕ?

— Эсир ăна пĕлетĕр вĕт...— терĕ Миша.— Белоруссире, Бобруйск облаçĕнче, Голубовка ялĕнче...

— Аçу-аннӳсем камсем пулнă?

— Колхозниксем.

— Халь пур-и вĕсем?

— Çук... Вăрçă пуçлансанах атте çара кайрĕ, эпир аннепе çеç юлтăмăр. Унтан пирĕн пата фашистсем пыр-

са кěчěç... Пире хамăр пӳртрен мунчана хăваласа кăларчěç. Пӳрте пирěн атте вăрçă пуçланас умěн çеç туса пěтернěччě, питě лайăх, пысăкчě те вăл, унта нимěçсен комендатури вырнаçрě. Кашни кун, кашни каç пирěн çынсене асаплантаратчěç унта. Кайран вара нахчана, çырма хěррине илсе тухатчěç те пере-пере пăрахатчěç...

— Эс ху та курнă-и ăна?— ыйтрě директор.

— Курнă... Пěррехинче икě ачана персе пăрахрěç.

— Мěншěн?

— Партизансен разведчикěсем пулнă, терěç.

— Камсем каларěç?

— Ялта çавăн пек сăмах сарăлчě...— Çаксене аса илме Мишăна питě йывăр пулчě пулмалла, вăл ассăн сывласа илчě.—Икě çула яхăн асапланса пурăнтăмăр,— терě вăл малалла,— ялан выçăллă-тутăллă, ялан хăраса... Унтан сасартăк ялта тиф чирě пуçланса кайрě. Çынсем шăнасем пек вилме пуçларěç. Пирěн анне те, йăмăкпа шăллăм та чирлерěç, юлашкинчен эпě те урапан ӳкрěм... Пěри те тăраймастпăр, хамăра валли шыв та ăсса кěрейместпěр. Юрать хуть, кӳршěри пěр карчăк пыра-пыра пăхкалатчě. Мунчана хутса ăшăтатчě, унтан-кунтан бульба* тупкаласа килсе, яшка пекки пěçерсе паратчě...

— Çитě ěнтě сире тек мунчара пурăнма, пӳрте куçăр,— терě çав карчăк пěр каçхине пырсан.— Ялта пěр фашист та çук!

— Епле çук? Ăçта кайса кěнě вара вěсем?— тěлěнтěмěр эпир.

— Тифран хăраса тухса тарнă, теççě...

— Тиф кăна мар, халера лектěрччě вěсене,— терě анне ылханса.

Хăй вăл çав тери начарланса çитнěччě ěнтě, аранаран сывласа выртатчě. Çапах та эпир ирхине мунча-

---

*) Çěрулми (*белорусла*).

ран пӳрте куçма шут турăмăр. Кӳршĕ карчăкĕ пире пулăшма пулчĕ. Анчах пулаймарĕ пирĕн куçасси...

Çĕрле анне йыварлансах çитрĕ. Эпĕ темиçе хут та тăра-тăра ăна шыв ĕçтертĕм, пуç айне тӳрлетрĕм, лайăххах витсе вырттартăм. Сасартăк çĕр варринче мунча чӳречинчен шалалла çутă ӳкрĕ. Тĕлĕнсе хытсах кайрăм... Мĕн ку? Вăйăм çук пулин те, тула сиксе тухрăм та, хамăрăн пур çуртсене те — пӳрте, кĕлете, выльăх картине вут хыпса илнине куртăм... Темĕн пысăкăш кăвайт пек, шатăртатса, шартлатса, чашкăрса çунать. Ним тума аптраса, унăн-кунăн пăхса илтĕм. Куратăп, кӳршĕсен килĕсем те çавăн пекех çунаççĕ.

— Анне! Пушар, çунатпăр!— тесе, ухмаха ернĕ пек кăшкăрса чупса кĕтĕм эпĕ каялла. Анчах анне нимĕн те чĕнмерĕ...

— Илтместĕн-им, çунатпăр!— тата хытăрах кăшкăрса ятăм эпĕ.

Анне каллех чĕнмерĕ. Эпĕ ăна чавсинчен тытса лăскарăм,— сасă памарĕ. Вара эпĕ вăл вилсе кайнине ăнланса илтĕм...

Çĕрĕпе макăрса лартăм ун умĕнче. Хамăр мунчана вут хыпса илесрен те хăратăп. Ун пек пулсан, чирлĕ шăллăмпа йăмăка мĕнле хăтарас, ăçта кайса хурас!.. Анчах мунчи пирĕн пахчан тепĕр вĕçĕнчехчĕ те — çулăм унта çитеймерĕ, эпир хăтăлса юлтăмăр.

Тул çутăлсан пирĕн пата вилес пек хăраса ӳкнĕ кӳршĕ карчăкĕ хашкаса чупса çитрĕ. Анне вилĕ выртнине курсан, вăл манран та хытăрах макăрма тытăнчĕ. Куççулĕ витĕр хăй пĕрмай фашистсене ылханчĕ...

— Çĕр çăттăрччĕ вăл шуйттансене, вĕсен кил-çурчĕ çеç мар, пĕтĕм çĕршывĕ çунса кĕл пултăрччĕ!— тет.

— Пушарĕ мĕнрен тухнă-ши?— тесе ыйтрăм эпĕ, вăл кăштах лăпланнă пек пулсан.

— Мĕнрен тухнă пултăр?— терĕ вăл.— Вĕсемех тивертсе янă! Çуртсене бензин сапсах тивертсе çӳрерĕç вĕт!..

(Кайран кун çинчен нумай калаçрĕç. Фашистсем тиф ернĕ ялсене юриех хыптарнă иккен. Пушарта тифпа чирленĕ çынсем те пайтах çунса кайнă вăл каç...)

Кăнтăрла çитеспе ял çунса пĕтрĕ. Урамсенчи, пахчасенчи юр хăрăмпа хуралса ларчĕ. Фашистсем яла çунтарма тытăннă чух унта-кунта тарса пĕтнĕ çынсем кĕлпе кăмрăк айĕнчен хăйсен тăванĕсен çунса кайнă кĕлеткисене чава-чава кăларчĕç...

Шăн çĕре алтма пултарайманнипе, эпир, кӳршĕ карчăкĕпе иксĕмĕр, аннене пахчана йăтса тухса юрпа çеç витсе хутăмăр.

— Хамăр сывă пулсан, çуркунне йĕркелесех пытарăпăр-ха, терĕмĕр.

Хăйĕн килĕ çунса кайнă пирки вăл пирĕнпе пĕрле мунчара пурăнма пуçларĕ. Куншăн эпĕ чунтанах савăнтăм, меншĕн тесен вăл пирĕншĕн анне вырăннех пулчĕ.

Пĕр-икĕ кунтан эпĕ тепĕр хут чирлесе ӳкрĕм—пушар вăхăтĕнче ăшă мунчаран тула сиксе тухсан, унтан анненe пытарнă чухне эпĕ шăннă пулмалла. Ним пĕлмиех пулнă вара...

Пĕрремĕш хут куçа уçса пăхсан, эпĕ хам темле пĕрене маччаллă тĕттĕмрех пӳртре выртнине куртăм. Нумайччен ним чĕнмесĕр шухăшласа выртрăм:

— Аçта килсе лекнĕ вара эпĕ?

Анчах та ĕçсем çакăн пек пулнă иккен. Пирĕн яла фашистсем çунтарса янине пĕлсен, хамăр тăрăхри партизансен отрячĕ чĕрĕ юлнисене те пулин çăлас тесе шут тунă. Пирĕн яла вĕсем малтан разведка янă, унтан вара лавсемпе пынă та ялта кам пур — пурне те вăрмана, хăйсен лагерьне тиесе кайнă. Ыттисемпе пĕрле мана та, шăллăмпа йăмăка та илсе кайнă.

Пĕр виçĕ эрне пурăнтăмăр эпир партизансем патĕнче. Вĕсен хăйсен тухтăр пур-мĕн, вăл пире куллен эмеллесе тăчĕ, вара эпир майĕпе сывалса пытăмăр. Анчах тухтăрĕнчен ытларах пирĕншĕн отряд командирĕ хыпкаланатчĕ. Кунне виç-тăвата хут пырса каятчĕ эпир выр-

такан ҫӗрпӳрте, сывлӑхсем ҫинчен ыйтса пӗлетчӗ, пире лайӑхрах пӑхма хушса хӑваратчӗ.

— Сывалӑр, ачасем, вӑй илӗр пӑртак, часах сире Пысӑк Ҫӗр ҫине ӑсатӑп, унта аван пулать,— тетчӗ.

— Хушаматне астумастӑн-и унӑнне?— Мишӑна пӳлсе ыйтрӗ Семен Ильич.

— Астӑватӑп. Глебов, тетчӗҫ ӑна. Борис Петрович...

Семен Ильич тарӑнӑн сывласа илчӗ те пирус чӗртсе ячӗ.

— Ну, кайран вара?

— Кайран пире, чӑнах та, Пысӑк Ҫӗр ҫине ӑсатрӗҫ...

— Мӗнле майпа?

— Ун ҫинчен пире каҫхинех пӗлтерчӗҫ. Кӗҫӗр каятӑр, хатӗр пулӑр, тумлансах ҫывӑрӑр, самолет килсен, тытӑнса тӑмалла ан пултӑр, терӗҫ. Манӑн шӑллӑмпа йӑмӑк тата ытти пӗчӗкрех ачасем каҫ выртсанах ҫывӑрса кайрӗҫ, анчах манӑн ыйхӑ килмерӗ, эпӗ ҫӗрӗпех ҫывӑраймарӑм. Мӗнле кайӑпӑр-ши, мӗнле ҫиткелӗпӗр?— тесе шухӑшласа выртрӑм... Фронт урлӑ вӗҫсе каҫнӑ чух хамӑрӑн самолета тӑшмансем тапӑнасран та шиклентӗм...

Ҫурҫӗр тӗлне кӗтнӗ самолет темшӗн ир енне тин ҫитрӗ. Вӑл килни ҫинчен пӗлтерсенех пире ҫӗрпӳртрен илсе тухрӗҫ те сӗм вӑрман хушшипе, аран ҫеҫ палӑракан сукмак тӑрӑх уттарса, шӑнса ларнӑ пысӑк кӳлӗ хӗррине илсе пычӗҫ. Қӑвак тӗтре витӗр эпӗ пӑр ҫинче темӗн пысӑкӑш самолет ларнине асӑрхарӑм.

— Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл...

Самолет ҫине малтан йывӑр аманнӑ партизансене — пӗр ҫич-сакӑр ҫынна наҫилккасем ҫинчен иле-иле кӗртсе вырттарчӗҫ, унтан вара пире, ачасене, кӗртсе лартрӗҫ.

Ӗнтӗ тул та ҫутӑлса килет. Самолет ҫине ларнӑ пулсан та, лӑпланаймастӑп... «Ҫутӑ вӗт-ха, фронт урлӑ мӗнле каҫса кайӑпӑр?» тетӗп. Хӑвӑрах пӗлетӗр, тӑшман асӑрхама пултарать...

— Чухлатпӑр пӑртак,— ҫемҫен кулса илчӗ Семен

Ильич.— Ну, мӗнле вӗҫкелесе килтӗр вара хамӑр енне?

— Эпир фронт патнелле вӗҫсе пынӑ чух тул ҫутӑлса ҫитрӗ. Кӗҫех хӗвел те курӑнчӗ. Эпӗ чӳрече ҫумнерех ларнӑччӗ те пӑхсах пытӑм. Питӗ ҫӳлтен вӗҫетпӗр хамӑр. Унччен те пулмарӗ — йӗри-тавра зенитка снарячӗсем ҫурӑлма пуҫларӗҫ. Хуп-хура, ҫӑмламас ҫӗлӗксем пек чӑмӑрккасем пулаҫҫӗ. Аҫталла ан пӑх — пур ҫӗрте те ҫав хура чӑмӑрккасем... Темӗн чухлӗ! Ҫав тери хӑрушӑ пулса кайрӗ... Сывламасӑр, стена ҫумне йӑпшӑнса ларса пыратпӑр. Халь-халь персе тивертессӗн туйӑнать. Анчах ҫапах та, пирӗн самолет малаллах вӗҫет...

Юлашкинчен взрывсем сайраланчӗҫ, унтан пачах та курӑнми пулчӗҫ. Тата кӑштах вӗҫсен, пирӗн самолет аялалла анма пуҫларӗ... Эпӗ ҫӗрелле пӑхрӑм та типтикӗс хирте темӗн чухлӗ самолет ларнине куртӑм. Эпир хамӑр аэродрома ҫитнӗ иккен. Чиперех ҫитрӗмӗр, фашист зенитчикӗсем нимӗн те тӑваймарӗҫ, темле персен те!

Анчах пире кӑна чипер ҫитнӗ пек туйӑннӑ ҫав ..

Самолет ҫӗре анса ларсанах пире пӗрерӗн-пӗрерӗн кӑларма тытӑнчӗҫ. Эпӗ тухмалли алӑк патне ҫитсе пуҫа тулалла кӑларсанах, пирӗн самолет патнелле шурӑ халатлӑ санитарсем наҫилкка йӑтса чупнине асӑрхарӑм. Ҫав вӑхӑтрах иккӗн-виҫҫӗн пирӗн летчика хӑйӗн кабининчен ҫӗклесе кӑларчӗҫ. Вӑл чӗп-чӗр юнччӗ, пичӗ-куҫӗ те палӑрмастчӗ унӑн. Фашистсем ӑна амантнӑ-мӗн Анчах та вӑл, хӑй аманнӑ пулсан та, самолета хамӑр енне илсе ҫитернӗ... Тӗлӗнмелле паттӑр летчик, чӑн-чӑн герой пулнӑ вӑл... Нихҫан та манас ҫук эпӗ ӑна. Вӑл пире вилӗмрен хӑтарчӗ. Пӗлместӗп, те пурӑнать вӑл халь, те ҫавӑн чухнех вилсе кайнӑ... Анчах та манӑн вӑл пурӑнатех тесе шанас килет. Ун пек ҫынсем вилме тивӗҫ мар. Хӑҫан та пулсан эпӗ ӑна шыраса тупатӑпах.

Миша калама чарӑнчӗ те ассӑн сывласа илчӗ.

— Ҫавӑн пек хӑюллӑ та паттӑр летчик пулас килет манӑн,— терӗ вӑл кӑшт тӑрсан.— Детдомран тухсанах

çар шкулне каятăп... Унччен авиаци çинчен кĕнекесем вулатăп, модельсем тăватăп...

— Вăл летчике санăн питĕ курас килет эппин?— ыйтрĕ Семен Ильич, темшĕн чĕтреме тытăннă пӳрнисемпе портсигарĕнчен пирус кăларса.

— Çав тери!— терĕ Миша.

— Анчах эсĕ ăна мĕнле майпа тупма шутлатăн-ха?

— Хаçатсене çыратăп, çар министрĕнчен ыйтса яратăп...

— Анчах та унăн хушаматне пĕлетĕн-и-ха эсĕ?

Миша тăруках пӳлĕнсе ларчĕ.

— Пĕлместĕп... Çапах та, ун пек паттăр летчике вĕсем пурпĕрех тупма пултараççĕ тесе шутлатăп.

— Қалама йывăр...— пуçне пăркаласа илчĕ Семен Ильич.— Ун пеккисем питĕ нумай пулнă вĕт вăрçă вăхăтĕнче...

— Шыраттарсан та усси пулмасть-ши вара?—хыпăнса ӳкрĕ Миша.

— Усси-мĕнĕ... Шыраттарма кирлех те мар пулĕ, тетĕп...— Семен Ильич сăн-пичĕ çинче чеерех кулă палăрчĕ.

— Мĕншĕн кирлĕ мар?— тĕлĕнчĕ Миша.— Вăл маншăн никамран та хаклă çын вĕт!

— А вăл сан умăнта ларать, çавăнпа...

— Ăçта?— ăнланаймарĕ ача.

— Эпĕ пулнă вăл, Миша...

Эпир пурте — Миша та, детдом директорĕ те, эпĕ те — куççене чарса пăрахса, хытнă пек пултăмăр. Миша тутине çыртса лартрĕ. Пĕр хушă нихăшĕ те пĕр сăмах та чĕнеймерĕмĕр, мĕншĕн тесен ку ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ...

— Ĕненместĕн-им?— куларах ыйтрĕ Семен Ильич, Мишăна куçĕнчен пăхса.— Акă, çавăн чух пулнă паллăсем...

Вăл картузне хыврĕ те тăнлавĕнчен кăшт çӳлерех

çутăлса тăракан çĕвеке, унтан кителĕн сулахай çаннине хăпартса, аллинчи кивĕ сурана кăтартрĕ.

— Апла... апла... пире çăлакан чăнах эсир пулнă?— çав тери хĕпĕртесе сиксе тăчĕ Миша.— Ой, епле телей!— Вăл летчике мăйĕнчен ыталаса илсе темиçе хут чуптурĕ. Аçтан кăна хăюлăхĕ тупăнчĕ пулĕ унăн! Çав вăхăтрах унăн çаврака питçăмартийĕсем тăрăх шултра куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Çав тери пысăк тав сире... çав тери... Нихçан та манассăм çук...

— Лăплан, тусăм, лăплан,— пуçĕнчен ачашласа илчĕ ăна Семен Ильич.— Малашне яланах туслă пурăнăпăр, эпĕ сана вĕренме те пулăшса пырăп. Ман пекех летчик пулăн...

Вĕсем çакăн пек телейлĕн тĕл пулнăшăн эпир те чунтанах савăнтăмăр...

* * *

Çак истори çинчен эпĕ пачах манса кайнăччĕ.

Нумай пулмасть, пĕр ирхине, ман хваттере почтальон пырса кĕрсе Семен Ильич çырăвне тыттарчĕ. Питĕ савăнтарчĕ ку мана, мĕншĕн тесен эпĕ унран пĕр-икĕ çул хушши нимĕнле хыпар та илменччĕ. Хĕвелтухăçĕнчи çикĕре пурăнать иккен. Аван пурăнать. Шупашкарта юлашки хут тĕл пулнă хыççăн вăл капитанран подполковнике çитнĕ, истребительсен полкĕн командирĕ пулса тăнă. Авланнă, ывăл çуралнă, ăна Владимир ятлă хунă. Килес çул отпуск илсен Атăл çине пыратăп-ха, тăван çĕршыв пирки тунсăхласа çитрĕм, тенĕ.

Çыру вĕçĕнче «P. S.» лартса, тепĕр лайăх хыпар пĕлтернĕ:

«Астăватăн-и, Шупашкар аэродромĕнче эпир пĕр ачана тĕл пултăмăр? Çав Миша Чоботова кайран куçран çухатмарăм эпĕ, пулăшсах пытăм та, халĕ вăл манран инçетре мар, В. хулинче авиаци шкулĕнче вĕренет, пит маттур каччă пулса кайрĕ — паллас та çук!» тенĕ.

Çакă вара мана пĕтĕмпех аса илтерчĕ.

Куç умне сенкер самолет моделĕ сывлăшалла хăпарни, шурăрах çӳçлĕ те кăвак куçлă Миша хăйĕн хурлăхлă пурнăçĕ çинчен каласа пани, унтан вăл Семен Ильича савăнăçлăн ыталаса илни тухса тăчĕ...

— Ĕмĕчĕ тулать эппин, летчик пулатех вăл...— шухăшларăм эпĕ, ăшăмра çав ачашăн савăнса.



## КĔНЕКЕ АВТОРĔ ÇИНЧЕН

Вăтăр çул каялла, 1928 çулхи çуркунне, «Çамрăк хресчен» хаçатра «Çивĕччи» ятлă калав пичетленсе тухнă. Калавра пĕр тăлăх ача килтен тухса кайса тем те пĕр курса çӳрени, унтан ачасен çуртне лексе вĕренме, телейлĕ пурăнма тытăнни çинчен çырса кăтартнă. Çак калавăн авторĕ Етĕрнери педтехникумра вĕренекен çамрăк, çав районри Çуткассинчи учитель çемйинче 1910 çулта çуралса ӳснĕ (кайран «Канаш» поселока куçнă) Леонид Агаков пулнă. Çавăн хыççăн унăн калавĕсем Шупашкарти хаçатсемпе журналсенче («Сунтал», «Капкăн», «Ĕçхĕрарăмĕ», «Хатĕр пул») тăтăшах пичетленме тытăннă.

Етĕрнери педтехникумран вĕренсе тухнă хыççăнах (1928 ç.) Л. Агакова Шупашкара ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Малтан вăл «Канаш» хаçатра, унтан «Хатĕр пул» журналта, кайран Чăвашсен патшалăх издательствинче илемлĕ литература тата ача-пăча литературин редакторĕ пулса ĕçленĕ. Çав вăхăтрах ачасем валли калавсем («Вĕтлĕхри отряд», «Юлашки юмах» т. ыт.) çырнă, вĕсем уйрăм кĕнекесем пулса тухнă.

1932 çулта Леонид Яковлевич Агаков Мускава, А. В. Луначарский ячĕпе тăракан Театр искусствин институтне, литература факультетне вĕренме кайса кĕрет. 1935 çулта унтан вĕренсе тухса Шупашкара таврăнать. Кунта вăл писательсен союзĕнче, искусство учрежденийĕсенче ĕçлет. 1938 çулта ăна Совет Çарне илеççĕ. 1939 çулта, Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăра пулса, Л. Агаков аманать.

Анчах ăçта пулсан та Л. Агаков творчество ĕçне пăрахмасть. Вĕреннĕ чух «Ултав» ятлă пьеса тата «Сунтал», «Капкăн» валли калавсем çырать, çарта чухне «Çунатлă хĕр», «Артистка» ятлă пысăк калавсем, «Пĕрре çуркунне» ятлă повесть çырса кăларать. Финлянди вăрçинче пулнă хыççăн «Манăн туссем» ятлă калавсен кĕнекине çырать.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансанах Л. Агаков фронта кайӑ. Малтанах вӑл стрелковӑй рота командирӗ пулнӑ, унтан ӑна дивизи хаҫачӗн редакцине ӗҫлеме куҫарнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл урӗ ултӑ кӗнеке ҫырса кӑларнӑ, вӗсенчен паллӑраххисем: «Фронтри ачасем» (1942 ҫ.), «Тӑван юншӑн» (1943 ҫ.), «Ҫапӑҫу хирӗнче» (1944 ҫ.). Кусемсӗр пуҫне вӑл «Вилӗмрен те вӑйлӑрах», «Ҫӑпала Иванӗн калавӗсем» т. ыт. ҫырнӑ.

Фронтран таврӑннӑ хыҫҫӑн та Л. Агаков вӑрҫӑ тематикипе нумай ӗҫлет. Вӑрҫӑра пухса пынӑ материалсемпе усӑ курса, вӑл «Пӗр хулара» (1946 ҫ.) тата «Ылтӑн вӑчӑра» (1947 ҫ.) повӗҫсем ҫырнӑ. Ҫак икӗ произведенире те тӗп геройсем—ҫамрӑк патриотсем, совет ачисем. «Ылтӑн вӑчӑрана» икӗ хутчен вырӑсла пичетлесе кӑларнӑ, вӑл кӗнеке пӗтӗм Совет Союзӗпех сарӑлнӑ.

Кусемсӗр пуҫне, юлашки темиҫе ҫул хушшинче Л. Агаковӑн «Ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсем», «Кулас килет» (сатирӑлла калавсем), «Хастарлӑх» (очерксен пуххи) пичетленсе тухнӑ.

Л. Агаков вырӑсларан чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ. Классиксенчен вӑл А. Н. Островский, А. И. Герцен, Л. Н. Толстой, А. П. Чехов, А. М. Горький кӗнекисене, хальхи совет писателӗсенчен А. Фадеев, В. Катаев, Б. Горбатов, В. Василевская тата ыттисен произведенийӗсене куҫарнӑ. Вӗсем хушшинче ачасем валли ҫырнӑ кӗнекесем нумай.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тӗрлӗ ҫулсенче Л. Агаков Чӑвашсен патшалӑх издательствин главнӑй редакторӗ, Чӑваш писателӗсен союзӗн правлени председателӗ, «Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн тата «Капкӑн» журналӑн литература пайӗсен заведующийӗ пулса ӗҫленӗ. Хальхи вӑхӑтра творчество ӗҫӗпе кӑна пурӑнать.

1951—1954 ҫулсенче писатель Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ пулнӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче палӑртнӑ хӑюлӑхпа хастарлӑхшӑн Л. Агакова Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе, «За боевые заслуги», «1941—1945 ҫулсенчи Отечественнӑй вӑрҫӑра Германие ҫӗнтернӗшӗн» медальсемпе, литературӑра тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн 1945 ҫулта Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Хисеп Грамотипе, «1941—1945 ҫулсенчи Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хастарлӑ ӗҫленӗшӗн» медальпе, 1950 ҫулта Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑ.

## ТУПМАЛЛИ

Пĕр хулара *(повесть)* . . . . . . . . . 3
Ылтăн вăчăра *(повесть)* . . . . . . . . 151
Ялав *(калав)* . . . . . . . . . 327
Ĕнентерчĕç *(калав)* . . . . . . . . . 340
Медаль *(калав)* . . . . . . . . . 353
Сенкер модель *(калав)* . . . . . . . . 366
Кĕнеке авторĕ çинчен . . . . . . . . 382

**АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ**

***В одном городе, Золотая цепочка***

Повести и рассказы

**на чувашском языке**

Иллюстрации Ф. Осипова и Л. Осинского.

Редактор *И. Н. Вашки.* Технич. редактор *Т. А. Андреев.*
Худож. редактор *М. А. Ильин.* Корректор *З. Г. Федотова.*

НТ 03275. Сдано в набор 25.VIII-58. Подписано к печати 12.XI-58 г.
Формат 84×108 1/32. Объем в печатных листах 19,68 Уч. изд. л. 16,49.
Изд. № 115. Заказ № 2037. Тираж 5000 экз. Цена 6 р. 45 к.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

г. Чебоксары, Володарского, 5.